Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликкĕ

Ахтономлă
Ҫăваш оплăçĕ

Шкулра та, килте те вулама йурăхлă кĕнеке

Йуман çырнă.

РЕСПУПЛИККĂРИ
ҪĂВАШ КĔНЕКИНЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
ШУПАШКАР 1923.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

АХТОНОМЛĂ ÇĂВАШ ОПЛĂÇĔ

Шкулра та, килте те вулама йурăхлă кĕнеке

ИУМАН çырнâ

РЕСПУПЛИККĂРИ
ÇĂВАШ КĔНЕКИНЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ

ШУПАШКАР ▫ 1923.

Областлит № 55. Чебоксары. Печ. 5000 экз.
Типография Чувашгосиздата.

I. ТĂВАН ÇĔРШЫВ.

1. Тĕнҫе, çĕр ҫăмăрĕ. Тĕнҫе вĕçĕмсĕр аслă: унăн тĕпĕ çук, тăрри çук, хĕрри çук. Куçа курăнакан çутçанталăкăн вĕçне пуçне курма, тупма, пĕлме ан шухăшла. Пире пĕлĕт пысăках та мар каратăран шăналăкпа хӳпĕрлесе тăнă пек туйăнать, куç умĕнҫе инçех те мар пĕлĕт айалалла анса çĕрпе сыпăçнă пек курăнать, тĕттĕм каçпа пӳрт тăрринҫен нумай çӳлех те мар çăлтăрсем пĕр вырăнта йалтăртатса тăнă пек туйăнаççĕ. Анҫах çакă пурте куç ултавĕ. Тĕнҫе тĕпсĕр, тăрăсăр, пуççăр, вĕççĕр. Унăн вĕçне-хĕррине пирĕн айван куçпа мар, çунатлă вĕçĕмсĕр вĕçекен шухăшпа та çавăрса илме çук. Уйăх, хĕвел, çăлтăрсен инçĕшне, пысăкăшне епĕр тĕплĕ хисеплесе те кăларма пултараймастăпăр.

Вĕсем сывăхăн курăнни—пирĕн куçа илĕртсе виртленни çеç пулать. Унтан тĕнҫере куçа пĕрте телескоппа та курăнман çăлтăрсем вĕçĕмсĕр нумай. Вĕсен инçĕшне хисеплеме те етем ăсĕ пултараймасть. Çавăнпа ăслăлăх тĕнҫене вĕçĕмсĕр тет. Çав тĕнҫен вĕçĕмсĕр аслăлăхĕ тата ак мĕнтен курăнать: вĕçĕмсĕр тĕнҫен ăнлайми хăваҫĕпе—пĕтĕм çутçанталăк пĕр куçхуппи вăхăтне те пĕр вырăнта тăмасть: йалан шăвать, куçать, çавăрăнать. Çав хăватпа çĕр ҫăмăрĕ те, çавраçилпе вĕçекен тусан пĕрҫи йе куçа курăнми пĕҫĕкçĕ çӳпĕ пек, кунĕн çĕрĕн, ĕмĕртен ĕмĕрне пĕр ҫарăнми хĕвел тавра, хăй йĕритавра çавăрăнать. Çапла çĕр ҫăмăрĕн вăйĕхăваҫĕ тĕнҫе вăйĕпе танлаштарсан каллех нимĕн вырăнĕнҫе те тăмасть.

Çапах та çĕр ҫăмăрĕ тĕнҫепе танлаштарсан мĕн ҫухлĕ кĕçĕн, çавăн ҫухлĕ вăл пирĕн куçумĕнҫи таврапа танлаштарсан питĕ пысăк, аслă. Çĕр ҫăмăрĕ йĕритавра çеç виççе тухсан 36 пин çухрăм ытла, ăна çуран купĕн çĕрĕн пĕр ҫарăнми утсан та, виç-тăват çулта та çавăрăнса тухас çук. Çĕр ҫăмăрĕ çинҫе питĕ нумай патшалăх, пине йахăн тĕрлĕ халăх, мĕнпурĕ мĕљйарт çурă ытла етем пурăнать. Çав патшалăхсенҫен питĕ аслиРаççей: вăл пур типĕ çĕрĕн ултăмĕш пайне йышăнса тăрать, унта 110 тĕслĕ тĕрлĕ халăх пурăнать, 130 мĕљйун ытлашшипех етем пурăнать. Çĕр ҫăмăрĕ çинҫе Раççей патшалăхĕнҫе ҫăваш халăхĕ пурăнать. Ҫăваш мĕнпурĕ мĕљйун çурра йахăн, çапла çĕр ҫăмăрĕ çинҫи пин сынран пĕри ҫăваш, Раççейри çĕр сынтан пĕри ҫăваш.

Ҫăваш халăхĕн ҫурри Раҫҫейре тĕрлĕ тĕлте саланса пурăнаҭ, ҫурри хăйне уйрăм ҫĕр йышăнса пурăнаҭ. Ҫав ҫĕр—Ҫăваш облăҫĕ пулаҭ.

2. Раҫҫей, Ҫăваш Облăҫĕ. Раҫҫей питĕ аслă: вăл хĕвелтухăҫĕнҫен хĕвеланăҫнелле 10000 ҫухрăма йахăн, сивĕрен кăнтăралла виҫ-тăват пин ҫухрăма ҫитиҫен тăсăлса выртаҭ. Ҫăваш облăҫĕ йышăнса тăракан ҫĕршыв Раҫҫейрен 2-3 пин хут кĕҫĕн. Ҫăваш облăҫĕнҫе пур Раҫҫейри етемĕн ҫĕрутмăлмĕш пайĕ пурăнаҭ. Ҫакă Ҫăваш облăҫĕнҫе халăх хĕсĕнсе пурăннине, Раҫҫейре пушă йе етем сайра пурăнакан ҫĕршывсем пуррине кăтартаҭ. Унтан ҫакă Ҫăваш облăҫĕ Раҫҫейĕн питĕ пĕҫĕкҫĕ пайĕ пулса тăннине кăтартаҭ. Раҫҫейре ĕлĕк 64 кĕпĕрне пулнă, ҫăваш тĕп ҫĕрĕ пĕр вăтам кĕпĕрнен виҫҫĕмĕш-тăваттăмĕш пайĕ пулса тăнă. Халĕ Раҫҫейре кĕпĕрне тытăмĕпе пурăнакан уйрăм ҫĕрсем 93, вĕсенҫен виҫҫĕрен икĕ пайĕ вырăс кĕпĕрни, ытти тĕрлĕ халăхсен ахтономлă респупликкăсем, йе облăҫсем. Ҫăваш облăҫĕ пысăкĕшĕпе хаҫхи вырăс кĕпернисен иккĕмĕш-виҫҫĕмĕш пайĕ пулса тăраҭ, хăшĕ кĕҫĕнрех: Тулă, Пренскă, Калукă, Арўл кĕпĕрнисемпе танлаша та пыраҭ. Йевроппăри Раҫҫейĕн ахтономлă облăҫсенҫен Ҫăваш облăҫĕнҫен кĕҫĕннисем Ҫармăс, унтан Нимĕҫ облăҫсем. Ҫăваш облăҫĕ йепле пĕҫĕкҫĕ пулсан та тĕнҫере пирĕн тăван облăҫран кĕҫĕн патшалăх та нумай; Йевроппăри кулҫтурă, техникă, пурлăхпа ҫаплă патшалăхсем те хăшĕ Ҫăваш облăҫĕнҫен ытла нумайах та аслă мар. ҫапла тĕнҫере паллă патшалăхсем: Пеҫки, Тани, Швейтсари, Колланти ҫăваш облăҫĕнҫен ик-виҫ хут ҫеҫ аслăрах.

Раҫҫейре ҫи йышлă, ҫи хăватлă халăх вырăс халăхĕ: вăл авалран ытти халăхсене пăхăнтарса, хаҫхи Раҫҫейĕн ҫĕршывне ҫавăрса илсе тĕнҫере ҫи пысăк патшалăх тунă. Патшалăх тытăмĕ ĕлĕк вырăссен аллинҫе, вырăс улпуҫĕсенпе пуршуаллă классен аллинҫе ҫеҫ пулнă, ытти халăхсем пусмăрта пурăннă. Патша тўрешари вĕсене пурне те вырăса ҫавăрма тăрăшнă: вĕсене хăйсен ирĕкĕпе, хăйсен йăлипе, тĕнĕпе пурăнма паман. Револютси ырлăхĕпе вак халăхсем ҫав пусмăра сирсе пăрахрĕҫ: хăйсен ирĕкĕпе пурăнма респупликкăсем (халăхтытăмсем) унтан ахтономлă облăҫсем турĕҫ. Ҫавăнпа Раҫҫейĕн йаҫĕ те улăшĕнҫĕ: халĕ ăна вырăс патшалăхĕ темеҫҫĕ—Канашлă Сотсиалисăмлă Респупликкăсен Ушкăнĕ теҫҫĕ. Ҫакă халĕ Раҫҫей вырăс пусмăрĕпе тытăнса тăманнине кăтартаҭ, вăл пур халăхсем те таннине, вĕсем пĕрлешсе туслă пурăннине кăтартаҭ. Пирĕн патшалăх тĕп сакунĕпе—халĕ кашни халăх хăй ирĕкĕпе Раҫҫейрен уйрăлса харпăр хăйне ирĕклĕ патшалăх тума пултараҭ. Анҫах канашлă вырăс патшалăхĕнҫен халĕ пĕр халăх та пĕтĕмпех уйрăлашшăн мар: пĕрле ҫыхăнса пурăнашшăн. Ҫавăнпа пур ирĕклĕ халăхсем те пĕрлешсе халĕ пĕр ушкăнлă патшалăх турĕҫ—вăл авалхи Раҫҫейрен те тĕреклĕрех, мĕшĕн тесен халĕ уншăн вырăс халăхĕ ҫеҫ мар, пур

ҫуралăхра пуранна вак халăхсем те ҫунпа тăраҫҫĕ. Раҫҫейри вак халăхсем хăшĕ респупликкă йĕркипе, хăшĕ оплăҫ йĕркипе пурăнаҫҫĕ: оплăҫсем тытăм йĕркипе вырăс кĕпĕрнисемпе танлашаҫҫĕ, респупликкăсем нумай ирĕклĕрех пурăнаҫҫĕ, хăшĕ тата вĕсенҫен Раҫҫейрен уйрăм пекех пурăнаҫҫĕ. Халиҫҫен вак халăхсенҫен ахтономлă оплăҫсем туса хăйсен ирĕкĕпе пурăнаҫҫĕ: Йевроппăри Раҫҫейре ҫăвашшем, ҫармăссем вуҭексем, сыренсем, карелсем, нимĕҫсем, калмăксем. Ҫĕпĕрте пуретсем, йаккутсем, Алтай халăхĕсем, унтан Капкасра нумай вак халăхсем. Респупликкă йĕркипе ирĕкре пурăнакан халăхсем: хахулсем (Украйнă), Атăл тутарĕсем, Крым тутарĕсем, Капкас тутарĕсем (Асерпейтшан), кăркăссем, круҫинсем, арменсем, Капкас тăвĕ ҫинҫе пурăнакан халăхсем, Туркестан халăхĕсем (сартсем ыттисем те). Унтан тата Раҫҫейпе туслашша килĕштерсе пурăнакан икĕ респупликкă пур—вĕсем Хивăпа Пухарă. Канаш ирĕкĕ ҫăвашшене те респупликкă тума ҫармасҭ, анҫах ҫăваш тĕп ҫĕрĕ ытла кĕҫĕн, халăхĕ те йышлă мар, ҫавăнпа ăна ахтономлă оплăҫ йĕркипе пурăнма ытларах килĕшет.

Ҫăваш оплăҫне тумалли текрет 1920-мĕш ҫулта ҫĕртмен 24-мĕшĕнҫе тухнă; ҫăваш ҫĕрĕнҫе патшалăх ирĕкне ҫăваш пуҫлăхсем хăйсен аллине илсе, ҫав ҫулах утăн 6-мĕшĕнҫе ĕҫлеме тытăннă: ҫак кунсем ҫăваш историнҫе паллă кунсем, ҫăваш ҫĕрĕн ҫулран ҫула, ĕмĕрне уйавлă кунсем пулса тăҫĕҫ.

3. Территори, ҫикĕсем, кӳршĕ ҫĕрсем. Ҫăваш оплăҫĕ ҫĕр ҫăмăрĕн сивĕ йенҫи сарлакĕшĕн 54°38′-па 56°25′ хушшинҫе, ҫĕр ҫăмăрĕн хĕвелтухăҫ йенҫи тăрăхĕн (вăрăмĕшĕн) 45°50′-па 48°20′ хушшинҫе выртаҭ. Ҫăваш оплăҫĕн кăвапи Мускавпа, унтан Хусанпа ҫĕр сарлакĕшин пĕр йĕр ҫинҫе, ҫапла ҫăваш оплăҫĕ Раҫҫейĕн вăтам интустрилĕ таврапа пĕр сарлакăшра, хĕвеланăҫри Йевроппăри нумай патшалăхсенҫен сивĕ йенҫе тăраҭ. Ҫăваш оплăҫĕ ăшă йенелле Ҫĕмпĕр, Сарăту, Аҫтăрхан кĕпĕрнисемпе, Нимĕҫ, Калмăк оплăҫĕпе, хĕвелтухăҫри Капкаспа ҫĕрĕн пĕр тăрăхĕнҫе, сивĕ йенелле Ҫармăс оплăҫĕпе, Ҫулхула, Веткă, Волоктă, Арханкĕлҫскă кĕпĕрнисен, Сырен оплăҫĕн хĕррисемпе, унтан Сивĕ Пăрлă оккеанăн Тшех тутипе тата Колкуйĕв уттипе пĕр тăрăхра. Оплăҫ хĕрринҫи пăнҫăсем: сивĕ йенҫе Мăн Кокшак ҫармăс ҫĕрĕнҫен ҫăваш ҫĕрне йухса тухнă ҫĕрте, хĕвелтухăҫ йенҫе Ҫăваш оплăҫĕпе Тутар респупликкăн ҫики Атăл ҫине тĕкĕннĕ тĕлте (Тĕрлемеспе Куславка таврашĕнҫе), ăшă йенҫе Шамкай вулăсĕн кăнтăрти ҫики ҫинҫе, хĕвеланăҫ йенҫе Хĕрлĕ Ҫутай вулăсĕн Сăрă тăрăх пыракан ҫики ҫинҫе.

Оплăҫ тĕпĕпе сивĕ йенелле, тăррипе ăшă йенелле сулăнакан виҫкĕтес йевĕрлĕ. Оплăҫ ҫикисен йĕрĕн тăршшĕ мĕнпурĕ 700 ҫухрăм ытла, оплăҫ сарлакăшĕ 145 ҫухрăм, тăршшĕ (ҫурҫĕртен кăнтăралла) 215 ҫухрăм. Оплăҫ пысăкĕшĕ 13540 тăваткăл ҫухрăм ытларах.

Оплăç кӳршисем: сивĕ йенҫе Çармăс оплăçĕ, хĕвеланăçра Ҫулхула кĕпĕрни, кăнтăрта Ҫĕмпĕр кĕпĕрни, хĕвелтухăçра Тутар респупликки. Сивĕ йенҫен оплăçа Атăл сĕмвăрманĕ, хĕвеланăç йенҫен Сăрă сĕмвăрманĕ хӳпĕрлесе тăрать. Ҫăваш оплăçĕ Раççейре Вăтам Атăл районĕнҫе (тавринҫе) хисепленсе тăрать. Вăл çав районпа Тĕп Интустрилĕ (Мускав) районĕн хушшинҫе ҫике вырăнĕ йышăнса тăрать. Çапла Ҫăваш оплăçĕ пĕр урипе Раççейĕн интустрилĕ тĕп районĕнҫе, тепĕр урипе Вăтам Атăл районĕнҫе тăрать. Çакă авалран йышăннă вырăн ҫăваш халăхĕшĕн, ҫăваш çĕрĕшĕн, ҫăвашшен пурăнăçĕшĕн пĕр йенҫен питĕ усăлă, тепĕр йенҫен питĕ сийенлĕ. Вăл акă мĕнрен килет: Ҫăваш оплăçĕ Атăл çинҫе, унăн сылтăм хĕрринҫе, хĕвеланăç йенҫе; вăл Мускавран ултçĕр çухрăм çеç айакра. Мускава Ҫăваш оплăçĕ пек çывăх ахтономлă оплăç урăх Раççейре те çук. Пур хĕвелтухĕç халăхĕсенҫен ҫăваш халăхĕ авалранпах Раççей ҫĕрине-Мускава ҫи çывăх пурăнать. Нумай авал пиртен хĕвеланăçнелле ҫăвашпа вырăс хушшинҫе хвин йăхĕсем: мурăм, мерĕ, веç, мăкшă, ирçе пураннă. Çав халăхсенҫен мурăм, мерĕ, веç славинсемпе хутшăнса пĕтсе хăйсен йăхне пĕтĕмпех çухатнă; халҫхи вырăс халăхĕ çапла славинпа хвин йунĕ хутшăнса пулнă йăхран тухнă. Пирĕн саманара çак халăхсенҫен мăкшăпа ирçе йулнă, анҫах вĕсем те ĕнтĕ çурри вырăсланнă, çавăнпа револютси пулнăранпа та ахтономлă оплăç тума тапăнкаларĕç те саланса пурăннипе, хăйсен литераттурă, кулҫтурă çуккипе пултараймарĕç. Çапла пирĕнпе кӳршĕлĕ пурăнакан хвин йăхĕсене вăйпа, пурлăхпа, кулҫтурăпа паттăр вырăс халăхĕ хăйпе хутăштарса, вырăслантарса пĕтернĕ. Атăлăн сылтăм йенҫе тĕп авалтан пурăнакан вак халăхсенҫен ҫăваш хура халăхĕ çеç хăй ҫĕлхине, хăй натсилĕ сăн-питне çухатман. Вырăс халăхĕ тĕп ҫăваш çĕрĕ çине килсе пусни ĕнтĕ 400 çул ытла (1524 ç. Вырăссем Сăрă Атăла тухнă çĕрте Васиҫсурск крепăçне тунă), вырăс халăхĕ тĕп ҫăваш çĕрне хупăрласа илни ĕнтĕ 350 çул ытла (çакна вырăссем ҫăваш çĕрне пусса, сыхласа, тытса тăма хуласем, крепăççем тунă самана кăтартать: Сĕве хулине 1550 çулта, Шупашкара 1556 çулта, Тетĕше, Çĕрпĕве, Ҫикмене 1578—1584 çулсенҫе, Йетĕрнене 1602 çулта вырăс крепăçĕсем тунă).

Çапла ҫăвашшем вырăс колонисатсийĕн йухăмĕ айне пулса йулни ĕнтĕ 400 çула йахăн çитет. Вырăс халăхĕ ĕмĕртен ĕмĕре Мускав таврашĕнҫен куççа сарăлса, ытти çĕрсене пусса, пăхăнтарса хăй патшалăхне аслăлатнă, тĕреклĕлентернĕ. Вырăс халăхĕ хĕвелтухăçнелле пусса сарăлса пыракан тĕп çул Атăл тăрăх ҫăваш çĕрĕ урлă иртнĕ. Çапла ҫăваш çĕрĕ вырăс колонисатсийĕн аслă çулĕ çинҫе выртни ҫăваш халăхĕшĕн питĕ сийенлĕ пулнă: пур усăлă çĕршывсене: Атăла, Сăрă шывне, ҫăваш хулисене вырăс улпуҫĕсем, вырăс çарĕ тĕрлĕ колонисаттăрсем туртса илсе пĕтернĕ, ҫăвашшене пур йенҫен те хĕссе çĕрсĕр, йурлăхлă пурăнăçа хăварнă. Ҫăваш историйĕн

тĕп тымарне пĕлес тесен, унăн тĕп никĕсне ăнлас тесен ҫи малтан епĕр ҫăваш ҫĕрĕ ҫав колонисатси хумĕсем айĕнҫе 300—400 ҫул йепле таптаннине асăнса тĕплесе пĕлмелле. Ҫăвашшен тырă тума ҫĕр сахалли, наҫарри, хуласем, пристăньлĕ, сутилўлĕ йалсем ҫукки, халиҫҫен промышлĕнăҫ тапранманни, халăх йурлăхпа тĕттĕмре пăнҫăхса пурăнни—пурте ҫав епĕр питĕ вăрахăн колонисатси пусмăрĕнҫе пурăнинҫен килет. Ҫак тĕлĕшĕнҫен пур ытти хĕвелтухĕҫ халăхĕсем телейлĕрех пулнă: вĕсем колонисатси йухăмĕ айне 200—300 ҫул кайарах лекнĕ, вĕсене айаккарах пурăнни пирки, йе Мускав тавринҫен сарăлакан колонисатсин аслă ҫулĕсем ҫинҫе выртманни пирки (авал колонисатси Атăл пек аслă шывсем тăрăх пынă) колонисатси хумĕсем ҫăвашшене лăсканă пек хытă лăскаман. Ҫавăнпа пушкăртсен, кăркăссен, ытти Ҫĕпĕр, Туркестан, Каппкас халăхсен ҫĕршывĕ пирĕннĕ пек хĕсĕк, йурлăхлă мар, мĕшĕн тесен, вĕсен ҫĕр пурлăхĕ—пуйанлăхĕсене Раҫҫей колонисаттăрĕсем туртса, пусса илсе пĕтереймен.

Ҫапла Ҫăваш оплăҫĕ Мускав ҫывăхĕнҫе, историре ҫаплă Атăл ҫулĕ ҫинҫе выртнин питĕ усăлă йенĕ те пур. Ҫăваш ҫĕрĕ Раҫҫейĕн тĕп промăшленăҫлă районĕ ҫумĕнҫе выртаť, унăн ҫики урлă урапа пуссанах епĕр Мускав тавринҫе пулатпăр. Мускавран Ҫăваш оплăҫне ҫитиҫен 600 ҫухрăм ҫеҫ: ҫав ҫула ҫукунҫулпа тавлăкран та кайа пыратăн. Мускав—Раҫҫейĕн ҫĕри, мимми, кăвапи; Мускав хăй районĕпе Раҫҫейе тытса тăраť; Мускавра пурлăх, пуйанлăх, культурă ҫуттипе пур пурăнăҫ йалтăртатса тăраť. Мускав тавринҫе хапрăксем, савăтсем, алăсталăхпа тупăшлу, хăватлă сутилў. Малашне ҫăваш халăхĕ те ҫак таврапа йунашар пурăннипе ирĕклĕ-ирĕксĕр вăтам кĕпĕрнесен интустрилĕ, культурăлă ҫутă ҫулĕ ҫине ўкмелле. Ҫапла пуласси—истори саккунĕ. Промăшлĕнăҫ, культурă ҫутти хĕвеланăҫĕнҫен йеррипен хĕвелтухăҫнелле куҫҫа килет, ҫав ҫул ҫинҫе пур хĕвелтухăҫ халăхĕсенҫен ҫăвашшем малта, пуҫра тăраҫҫĕ, ҫавăнпа вĕсем ҫав ҫул ҫине ҫи малтан пусмалла. Хĕвеланăҫнелле пурăнакан вак, имшерке, ҫухăн, тĕттĕм халăхсем: латышсем, естсем ыттисем те пирĕн ĕмĕртех ҫав ҫул ҫине тухса кайрĕҫ; 50 ҫул кайарах вĕсем ҫăвашшенҫен пĕрте уйрăм пулман, анҫах нимĕҫпе, вырăспа йунашар пурăнса, ҫак халăхсенҫен вĕренсе вĕсем хăвăртах натсилĕ культурă турĕҫ.

Ҫăвашшем хăвăртах ҫав вăтам кĕпĕрнесен, хĕвеланăҫ халăхĕсен ҫулĕ ҫине тухасси револютси пулнăранпа пĕтĕмпех шанҫăклă пулса тăҫĕ: револютси вак халăхсене паттăр халăхсен пусмăрĕнҫен, таптăвĕнҫен кăларҫĕ, Раҫҫейре аслă халăхсен империалисăмлă политтиккăна пĕтерҫĕ, ҫăваш ĕҫлекен массисене Раҫҫей пролеттариаҫĕпе пĕрлештерҫĕ.

Ытти ҫăваш оплăҫĕпе кўршĕлĕ ҫĕрсем ҫăвашшемпĕн ырлăхлă та, усаллăхлă та мар. Веткăпа Ветлукă районĕнҫе пурăнакан ҫармăссем шутсăр аслă сĕмвăрманта сайрак сапалан-

са пуранаҫҫӗ, вӗсем кулͅтура тӗлӗшӗпе ҫ̌авашшенҫ̌ен те пайтах кайра тăраҫҫӗ. Ҫавăнпа вӗсенҫ̌ен мӗне те пулин вӗренмелӗх ҫук. Ҫармăс—хвин халăхӗ, ҫавăнпа вӗсен ҫ̌ӗлхи, йăли те ҫ̌авашшенҫ̌ен нумай уйрăм. Анҫ̌ах ҫармăссем ӗмӗртен ҫ̌авашшемпе хутшăнса йе кӳршӗлӗ пурăннă, тӗп авал ҫ̌аваш кулͅтурине пăхăнса тăнă, нумайӗшӗ авал ҫармăссем ҫ̌аваша та тухса пӗтнӗ—ҫавăнпа ҫармăссем урăх ăруран тухнă пулсан та, ҫ̌авашшене ҫывăх халăх. Ҫак ҫывăхлăха ӗмӗрхи истори уйрăлми ҫыхăпа ҫыхăнтарса хунă: ҫ̌авашпа ҫармăс ӗмӗртен пӗрле асап курнă, пӗр пусмăр айӗнҫ̌е тапаланса пурăннă, ҫавăнпа вӗсем халӗ те ирӗклӗхшӗн алтивӗҫҫӗн тытăнса кӗрешеҫҫӗ.

Унтан Ҫ̌аваш оплăҫӗнҫ̌ен хӗвелтухăҫнелле тата пӗр паллă кӳршӗлӗ ҫӗр пур—вăл Тутар респупликки. Ҫак ҫӗр ҫ̌авашран паттăртарах тутар халăхӗ аллинҫ̌е. Тутар ҫ̌авашпа пӗр ăруран тухнă: иккӗшӗ те вӗсем тӳркă (тӗрӗк) йăхӗ. Тутарсен тӳркă йунӗ тасарах, ҫ̌авашшен йунӗ хвин йунӗпе тӗп авал хутшăнарах панă. Тутар ҫ̌ӗлхи ҫ̌аваш ҫ̌ӗлхине вырăспа хахул ҫ̌ӗлхисем пек ҫывăх. Ҫавăнпа тутарпа ҫ̌аваш пӗр пӗрне тăван халăхсем тесе шутлаҫҫӗ. Анҫ̌ах историре паллă ӗмӗрсенҫ̌е ҫакă йунпа тăван халăхсем килӗштерсе туслашша пурăнайман. Паттăр тутар имперкерех ҫ̌аваша йаланах пусмăрлама тăрăшнă. Ҫапла ҫ̌аваш ҫӗрне 700 ҫул кайа славин йăхӗ пусиҫ̌ен Ҫӗпӗртен тутарсем ҫилтăвăл пек килсе кӗрсе ҫ̌авашшен ҫӗрне пусмăрласа илнӗ; ҫ̌ а в а ш ш е н п а т ш а л ă х йӗркине салатса пăрахнă, хулисене, йалӗсене ҫунтарса пӗтернӗ, усăллă шывшурсене туртса илнӗ. Вырăс колонисатси пуҫламăш—300 ҫул тăршӗпе ҫ̌аваш халăхне хӗвелтухӗҫӗнҫ̌ен килекен колонисатси йапăхтарса тăнă. Ҫав тутар пусмăрланипе ҫ̌авашшем авалран йышăннă тырă тума лайăх Тӗп Атăл, Ҫ̌улман Атăл, Шурă Атăл, Ҫарăмсан, Сӗве тăрăх вырткан ҫӗрӗсене пăрахса Тӗп Атăл урлă каҫҫа халͅхи Ҫ̌аваш оплăҫне йышăнмалла пулнă, ҫак тулă, ҫырмалă-ҫ̌армалă, сӗмвăрманпа витӗннӗ ҫӗрелле сӗкӗнмелле пулнă. Ҫак тутар колонисатсинҫ̌ен йулнă сӗрӗмрен епӗр халиҫ̌ҫ̌енех уралаймастăпăр. Унтан тутар пусмăрӗ авалхи ҫ̌авашшемшӗн акă мӗшӗн питӗ хăрушă пулнă: тутар ҫ̌аваша йунӗпе, ҫ̌ӗлхипе, йăлипе тăван халăх, ҫавăнпа ҫ̌авашшем пусмăртан тухас тесе аптăраннă йенне питӗ нумай тутарланса пӗтнӗ. Ҫапла халͅхи Хусан, Арскă, Сӗве, Тетӗш таврашӗнҫ̌и ҫ̌авашшем уйесӗ уйесӗпе тутара тухса пӗтнӗ. Тутар питӗ паттăр халăх, ҫавăнпа вăл авалран вырăсăн империалисăмлă пусмăрне парăнмасăр кӗрешнӗ. Вырăс патшисен, улпуҫ̌ӗсен, муллă классен панслависăмлă политтиккă пулнă: ҫапла пур халăхсене те славин йăхне, вырăса ҫавăрма тăрăшакан йӗркене калаҫҫӗ. Ҫакна тума ҫ̌и малтан вак халăхсене ирӗксӗр вырăс тӗнне йышăнтарттарнă, ҫапла вырăс империалисăмлă пусмăрăн ҫ̌ҫ̌ пуҫӗнҫ̌е пупсемпе миссионерсем тăнă. Ҫакна хирӗҫ тутарсем урăх хăватлă империалисăмлă йӗркене йышăннă: ăна панисламисăм теҫҫӗ, вăл пур халăхсене те мă-

сађман йе ислам тĕнне кўртсе пĕрлештерсе вырăссене, славинсене, Йевроппăри пусмăрлакан халăхсене парăнмалла мар хирĕç тăратма тăрăшнине пĕлтерет. Çапла ђăвашшем икĕ хăватлă панслависăмпа панисламисăм политиккăсем хĕрўлĕ кĕрешнĕ çĕрте икĕ вăйлă вут хушшинђе тăрса йулнă: ђăвашшен аптăранă йенне ирĕксĕр йе вырăса, йе тутара тухмалла пулнă. Тутара тăван халăх вырăнне хисеплесе ђăвашшем ытларах тутарланнă. Çапла тутарсем, ытларах та вĕсен муллисем илĕртнипе ђăвашшем пирĕн ĕмĕрте те йалĕ йалĕпе тутара тухкаласа кайрĕç. Иртнĕ ĕмĕрте тутарланнă ђăвашшене вырăс тўрешари хĕсме тытăнсан, мăсăђман тĕнне йышăннă ђăвашшем хăшĕ Тĕрĕк патшалăхне вăртăн тарса ўксе тĕрĕке те тухкаланă. Халĕ самана улăшĕнђĕ: канаш ирĕкĕ халăхсем пĕр пĕрне пусмăрлас йĕркене тĕпĕтымарĕпе çĕмĕрсе салатрĕ. Çапла ђăваш хура халăхĕн, унăн ĕçлекен массисен вырăспа та тутарпа та истори çылăхĕсене манса тин туслă пурăнмалли вăхăт çитрĕ.

Тутарсем Раççейĕн хĕвелтухăçĕнђе империалисăмпа кĕрешекен халăхсен хушшинђе малтарах тăраççĕ, çавăнпа ђăвашшем вĕсемпе кўршĕлĕ пурăнни пире питĕ паха.

Унтан Тутар респупликки пирĕншĕн ак мĕн тĕлĕшĕнђен хаклă: тутар çĕрĕнђе ђăвашшем те 250000 çын ытлашшипех пурăнаççĕ, çапла Тутар респупликкинђе нумай ђăваш пурăнат. Тутарпа ђăваш питĕ хутшăнса пурăннине Тутар респупликкипе Ђăваш облăçĕн ђикисем халиђенех тавлашулă, çапла Ђăваш облăçĕ Ђĕмпĕр кĕпĕрнинђи Упи, Кратиша, Пăрăнтăк, Рункă, Сўнтĕк, Тархан, Тимĕрçен вулăсĕсенђе пурăнакан ђăвашшене хăй патне илешшĕн тăрăшат, анђах вĕсене вĕсем тутарпа хутăш пурăннипе Тутар респупликки памаст.

Унтан тата Тутар респупликкăн пуçхули Хусан ђăвашшемшĕн ĕмĕрхи ђаплă, паллă, тăван хула: вăл пире сутилў, пурлăх—кĕскен каласан економиккă тĕлĕшĕпе туртса тăрат, унтан вăл пирĕншĕн кулђтурлă ђентăрĕ: унта вак халăхсене пĕлекен ăслăлăх ушкăнĕсем, аслă шкулсем, вĕсенђе нумай ђăваш ађи вĕренет. Хусанта ђăваш шкулĕсем те пур, тĕрлĕ ђăваш халăхне çутта кăларма тăрăшакан ушкăнсем хĕрўлĕ ĕçлеççĕ. Ђăваш облăçĕ економиккăпа кулђтурă тĕп никĕсĕсене Мускав йенелле, хĕвеланăç йенелле, интустри йенелле, хĕвеланăç кулђтурĕ йенелле сулăнтарсан та çапах Хусан Ђăваш облăçĕшĕн пысăк усăлă хула.

Ђăваш облăçĕ пĕр йенђен вырăссен вăтам кĕпĕрнисен, тепĕр йенђен Тутар респупликкăн хушшинђе тăни ђăваш халăхĕ Йевроппăпа Аçи хушшинђе хĕсĕнсе тăнине кăтартат. Ђăваша тĕп истори, ђĕлхе, авалхи йăласем Аçи йенелле туртаççĕ, йулашки ĕмĕрсенђе йышăннă кулђтурă, йăласем, прокрес туртăвĕсем Йевроппă йенелле туртаççĕ. Халĕ ђăваш халăхĕ хăрах урипе Аçире, теприпе Йевроппăра пусса тăрат пулсан, çав Аçире тăракан хăрах урине ђасрах туртса илсе,

вăл Йевроппă йенелле хăвăртрах васкаса утса каймалла, вара тин вăл куԓтурлă халăхсен шутне кĕрĕ.

4. Çĕр çийĕ. Ԓăваш оплăçĕ Атăлпа Сăрă хушшинԓи тĕмене йышăнса тăрат̆. Нумай тĕлте пирĕн çĕр тинĕсрен 100 хăлаçа (ԓалăша) йахăн çӳлте выртат̆. Çав ту пек çӳлĕ вырăнсем Атăлăн сылтăм хĕрринԓе, Сĕве, Çавал, Сăрă шывĕсен хушшинԓе выртаççĕ. Ԓи çӳлĕ вырăнсем Йĕпреçпе Йетĕрне уйесĕнԓе Мăн Çавалпа Сăрă хушшинԓи тĕме çинԓе выртаççĕ, унтан Шупашкар уйесĕнԓе Атăлăн сылтăм хĕррипе çӳлĕ тулă вырăнсем выртаççĕ, Сĕве уйесĕнԓи Весовăй тусен тапписем кунта тĕлĕпе тинĕсрен 85 хăлаç çӳлте выртаççĕ. Ԓăваш çĕрĕн çийĕ сивĕпе хĕвелтухăç йенелле тайăлат̆, çавăнпа шывсем, çырмасем те çав йенеллех тайăлса йухаççĕ. Ԓăваш çĕрĕ çӳлĕ, ртлăран тĕрлĕ çырмаԓăрмапа питĕ каскаланнă, тĕрлĕ лапсемпе ԓакаланнă, тĕмесемпе купаланнă. Çавăнпа ԓăваш çĕрĕ куçа тулă çĕр пек туйăнат̆, çавăнпа та ԓăваш тĕп çĕрне авалхи кеокрăхсем Раççейĕн тулă савăтлă районĕнԓе хисепленĕ. Йепле Ԓăваш оплăçĕ çӳлĕ çĕр йышăннине пĕлес тесен çакна пĕлес пулат̆: Хусан тинĕсрен 37,5 хăлаç, Атăлтан 18,3 хăлаç çӳлĕ çĕрте выртат̆, Хусан Аçтăрхантан 100 меттăр çӳлĕ, Питĕртен оккеанран хисеплесен 8 хут çӳлĕ, Мускавран икĕ хут айалта, Ԓăваш оплăçĕн çĕр çийĕ вăтамран хисеплесен Хусантан икĕ хут ытла çӳлте, çапла оплăç Питĕртен 16 хут, Мускавран кăшт çӳлĕрех тăрат̆. Ԓăваш оплăçĕнԓе лутра çĕрсем те пур, вĕсем оплăçăн хĕррисенԓе выртаççĕ, çав аслăрах лапсенԓен ԓи паллисем, Атăлăн сулахай йенԓи Шупашкар уйесĕн çĕрĕсем, унтан Йетĕрне уйесĕн Сăрăн сулахай йенԓи татăкĕ, çав лапсем тинĕсрен 30-50 хăлаç çӳлĕрех выртаççĕ. Тата оплăç варринԓе икĕ Çавал, Енĕш тата ытти йухăм шывлă çырмасем тăрăх лутра лаплă çĕрсем тĕлпулкалаççĕ. Ԓăваш оплăçĕ çапла тĕмелĕ çӳлĕ çĕре йышăнса тăнни пĕрте усăлă мар, сийенлĕ анԓах: тарăн, шутсăр нумай типĕ çырмасем, тарăн çыранлă йухăм шывсем çĕрĕн айĕнԓи нӳрне, çĕр çийĕнԓи шывшура туртса тăраççĕ, çĕрĕн тырăпулă тумалли тĕрлĕ сĕткенне, усăлă тирĕсрен нулнă тăпрана, усăлă минералсене ирĕлтерсе çуса Атăла хăваласа тăраççĕ. Унтан тĕмелĕ çĕрте тырăпулла çилтăвăл нумай сийен кăтартат̆, çырмалă-ԓăрмалă çĕре ԓипер ĕçлеме майĕ çук, тата çырмалăԓăрмалă çĕрпе çӳреме, тавар туртарма кансĕр.

5. Çĕр сийĕсем. Çапла çĕр çийĕ тĕрлĕ тĕлте тĕрлĕ пулат̆. Çакă ԓи малтан çĕр ԓăмăрĕн хуппи тĕрлĕ тĕлте тĕрлĕ сисенԓен пулнинԓен килет. Тарăн çыран хĕррисене сăнасан, тарăнрах пус тавраш алтнине сăнасан епĕр çĕр хуппи тăтăш пĕр тĕслĕ йапаларан пулманнине куратпăр. Çĕре мĕн ԓухлĕ нумай ԓавалатăн. çавăн ԓухлĕ тĕрлĕ сисем тĕлпулатăн: хăйăр, тăм, ԓул. Хăш тĕлте çĕр сисенԓен çийеллерехи, тăтăш хулăнраххи ԓул пулат̆, тепĕр тĕлте тăм йе хăйăр йе ытти йапала. Тăпра айĕнԓи ԓуллă сисем çийелти нӳре туртмаççĕ,

витĕр йамаççĕ, йухăм шыв çунипе ишĕлмеççĕ, ҫĕркеленмеççĕ, тăмлă сисем тăпра нӳрне туртаççĕ, анҫах витĕр йамаççĕ, тăпра айĕнҫех усраççĕ, унтан тăмлă сисем йухăм шывпа çăвăнса çулран çула ишĕлсе пырса, тарăн çырансемпе ҫĕркеленеççĕ, хăйăрлă сисем çийелти нӳре витĕр айалалла йараççĕ, йухăм шывпа хăвăртах ишĕлсе, йухса кайса пĕтеççĕ. Çавăнпа та çĕршыва тĕплĕ пĕлес тесен—тăпра айĕнҫе выртакан çĕр сийĕсене тĕплесе пĕлес пулаҭ.

Ҫăваш оплăçĕн Атăлпа Сăрă хушшинҫи тĕми тăмлă, унтан хăйăрлă сисенҫен пулнă. Ҫуллă сисем Атăл хĕррипе çеç сайра тĕлте тĕлпулкалаççĕ. Çав Ҫăваш оплăçĕнҫи тăмлă, хăйăрлă сисем тĕп авал, етем çĕр çинҫе çуралиҫен, пирĕн çĕре хупласа тăнă тинĕсрен ларса йулнă. Çавă пирĕн ĕмĕртен шутсăр айакра авал пулнă. Çав авалта тикĕс çĕр хăпарса туланса хисепсĕр ĕмĕр тăршĕнҫе йухăм шыв çĕмĕрнипе ҫакаланса çырмасемпе ҫĕркеленсе пĕтнĕ.

Ҫуллă, хăйăрлă, тăмлă сисенҫен пуçне пирĕн çĕрте тĕрлĕ минерал сийĕсем çукпа пĕрех, çавăнпа çĕр айĕнҫи пурлăхсен тĕлĕшĕнҫен епĕр питĕ ҫухăн.

Тăмлă сисен хушшинҫе тĕрлĕ вак ҫулсем: шуйтан пӳрнисем (каҫăмăҫисем) ыттисем те тупăнкалаççĕ. Унтан çĕр сийĕсен хушшинҫе тĕрлĕ авал пурăннă ҫĕрҫунсен шăммисем, шăлĕсем тупăнаççĕ; Атăл хĕрринҫе исвĕç ҫулĕсен хушшинҫе тĕрлĕ тинĕс шапахуранĕсем тупăнаççĕ. Оплăçра пысăкрах шывсем тăрăх выртакан айлăмсенҫе, лапçĕрсенҫе лăйма сийĕсем тĕл пулаççĕ. Çав лăйма сийĕсем йухăм шывсем йуппăн çунипе пулнă. Çавăн пек сисем Атăлпа Сăрă, икĕ Çавал айлăмĕсенҫе пур. Лăймалă айлăмсенҫе тыра тума лайăх, анҫах ун пек çĕрсенҫе сывлăхшăн сийенлĕ лаҫакасем пур. Унтан Атăлпа Сăрă тăрăх шыв çунă хăйăрлă тĕмесем нумай, вĕсен хушшинҫе кӳлсем пулаççĕ.

Çапла пирĕн çĕрĕн сийĕсем çӳлте выртнипе, ҫакаланса ҫĕрĕлсе пĕтнипе, минералсен тĕлĕшĕнҫен пуйан маррипе пирĕншĕн сахал усăлă.

Ҫăваш çĕршывĕ етем çуралиҭҫен йепле пулнă.

Епĕр пĕлетпĕр, çĕр ҫăмăрĕ, етем ăсĕпе шутласа илме çук авал, хаҫхи пек хытă хупăлă пулман. Вăл хĕвел пек йалтăртатса шăранса, хĕрӳлĕ вĕресе тăнă. Ун ҫухне çĕр çинҫе пĕр ҫĕрĕ ҫун та пулма пултарайман. Пыра киле çĕр сивĕнсе пынă, йеррипен хытă хупăпа хупăланнă. Ăслăлăх кăтартнă тăрăх—çĕр ҫăмăрĕн ăшĕ халĕ те хĕрӳлĕ вĕресе тăраҭ, çавăнпа çĕре айалалла ҫаваланăçемĕн ăшă, пăҫă, нумайрах ҫаваласа ансан етем тӳсеймест те. Çĕр сивĕнсен ун çинҫе пурăнăç йепле тапранса кайнине пĕлме çук. Анҫах ăслăлăх пĕлет: çавă нумай мĕҫйун çул авал пулнă пулмалла. Унтан тата пĕлетпĕр: авал ҫи малтан халĕ тĕнҫере ӳсмен курăксем, вăрмансем, халĕ çĕр çинҫе çук тĕрлĕ ҫĕрҫунсем пулнă. Çакăн

çинҫен пире çĕр хăй çыруринҫен лайăх каласа кăтартаĭ. Епĕр малтах каласаттăмăр—çĕр хуппи айĕнҫе тĕрлĕ сисем пĕр пĕрин çинҫе выртаççĕ. Çав тĕрлĕ сисем пĕр пĕрин çине купаланнине ҫипер астусан—çĕр ҫăмăрĕ йепле сивĕнсе, хытă хупăлă пулнине пĕлме пулаĭ. Унтан çав сисен ăшĕнҫе те хушшинҫе те тĕрлĕ ÿсетăрансен, ҫĕрҫунсен йулашкийĕсене тупатпăр. Çапла çакна сăнаса епĕр çĕр çинҫе пурăнăç йепле çуралса аслăланса йе хĕсĕнсе пынине ҫухлама пултаратпăр. Çак етем историйĕ тапраниҫҫен пулнă ĕççене кеолоки йатлă ăслăлăх тĕплесе пĕлет. Кеолоки етем çуралиҫҫен пулнă çĕр историйĕ çинҫен кĕскен çапла каласа кăтартаĭ: етем ăслăлăхĕ халиҫен тĕплесе пĕлнĕ тăрăх, çĕр историне тăвата вĕçĕмсĕр пекех вăрăм саманана уйăрма йураĭ. Çав вăрăм саманасене кеолоки крек сăмахĕпе ерăсем тет. Çав ерăсен йаҫĕсем: архей, палеосой, месосой, кайносой; çак йатсене ҫавашла куçарсан çакна пĕлтереççĕ; пуçламăшлă ерă, авалхи ерă, вăтам авалхи ерă, çĕнĕ ерă. Çак ерăсен вăхăтĕнҫе пулнă йапаласене çĕр сийĕсене тĕплесе пĕлсе пĕлме пулаĭ. Тĕп пуçламăшлă ерăра пулнă сисем ҫи айалта выртаççĕ, весем çинҫе, унтан пĕр пĕрин çинҫе кайарахри ерăсен сийĕсем выртаççĕ. Архей еринҫен йулнă сисенҫе çĕр çинҫе ҫи малтан çуралса ÿснĕ тĕрлĕ ÿсетăрансен йулашкисем тупăнаççĕ. Çав ÿсетăрансем çĕр айĕнҫе хисепсĕр нумайҫҫен выртса ҫул пулса тăнă. Çак ҫи тĕп сисене Америккăра Лавренти шывĕ хĕррине ҫаваласа кăларнă. Çак ерăн йулашки периотĕнҫен йулнă сисенҫе ҫĕрҫун йевĕрлĕ йапаласен йулашкийĕсем те тупăнаççĕ. Çак сийе Курон кÿлĕ хĕрринҫе тĕплесе пĕлнĕ. Çавăнпа архей ерине икĕ периота уйăраççĕ: Лавренти периоҫĕ, унтан Курон периоҫĕ.

Палеосой ери тăвата периота уйăрăлса тăраĭ: çилури периоҫĕ, тевон периоҫĕ, çĕр кăмрăк периоҫĕ, унтан перĕм периоҫĕ (çилури—Анклире пурăннă авалхи халăх йаҫĕ, тевон—çак саманан сийĕсем выртакан вырăн йаҫĕ, перĕм—Перĕм тавринҫи пирĕн çĕре авал хупласа тăнă тинĕс йаҫĕ). Малтанхи периотра ҫеҫексĕр ÿсетăрансем, кораллсем, тинĕсри моҫускăсем, пулăсем, скорпионсем пулнă; иккĕмĕш периотăн сийĕсенҫе йĕпçулçăлă йăвăççем тĕлпулкалаççĕ, çĕр кăмрăкĕн периотĕнҫе питĕ вăйлă шултăра йĕпçулçăлă йывăççенҫен пуçне пулă, унтан ҫи малтан шапа йăхĕ нумай тупăнаĭ, перĕм периотĕнҫе питĕ вăйлă ÿсетăрансем, унтан ҫи малтан калтасем, çĕленсем тупăнаççĕ.

Месосой ери виçĕ периота уйăрăлса тăраĭ: триас периоҫĕ—çак вăхăтра ҫи малтан вĕçен кайăксем, унтан сĕт ĕмекен ҫĕрҫунсем курăнаççĕ; йура периоҫĕ—çак саманара вăйлă йĕпçулçăлă йăвăççен хушшинҫе шуйтан пÿрни тийекен ҫулсем, йашҫĕрсем, шăллă вĕçенкайăксем, хутаçлă ҫĕрҫунсем курăнаççĕ; пур периоҫĕ—çак периотра çемçе çулçăлă вăр-

мансем, паӡмӑсем, тинӗс ӡӗрӗпӗсем, шӑмӑлӑ пулӑсем; тиносаврсем, плесиосаврсем, ихтиосаврсем, крокотилсем, шӑллӑ пулӑсем тухаҫҫӗ.

Йулашки кайносой ери икӗ периота уйӑрӑлса тӑрат, пӗрне вырӑсла третичный, тепӗрне четвертичный теҫҫӗ. Малтанхи периотран йулнӑ сисенӡе хаӡхи тропиккӑри ӳсетӑрансен, хаӡхи тунасӑр ӡӗрӡунсен, лашанӑн, пӑланӑн, упан, йӑтӑн, упӑтен (маймӑлӑн) йулашкийӗсене тупма пулат. Иккӗмӗш периотран йулнӑ сисенӡе хаӡхи пур ӳсетӑрансене, мамӑнта, ҫӗпӗр носорокне тупма пулат; унтан ҫак периотри сисене тӗплесе пӗлсен ҫак вӑхӑтра етем те ҫӗр ҫинӡе пурӑнма тытӑнни паллӑ. Ҫапла пирӗн ура айӗнӡи ҫӗр сийӗсем тӗнӡере йепле, унтан хӑҫан пурӑнӑҫ тапранса кайнине, йепле вӑл йеррипен вӗҫӗмсӗр вӑрӑм вӑхӑт тӑршшӗпе улӑшӑнса пынине йепле хаӡхи пур ӳсетӑран, пур ӡӗрӡун, ҫуралса сарӑлса кайнине каласа кӑтартаҫҫӗ. Унтан ҫав сисем пур ӡӗрӡунӑн патши вырӑнне хисепленекен етем ӡи кайран ҫуралса ҫӗр ҫинӡе пурӑнма тытӑннине пӗлтереҫҫӗ.

Ӡӑваш оплӑҫӗнӡи ҫӗр сийӗсене те ӑслӑлӑхҫӑсем тӗплесе пӗлсе тухнӑ. Вӗсем кӑтартнӑ тӑрӑх, пирӗн ҫӗршывӑн етем ҫуралиӡенхи историйӗ ҫапла пулнӑ: архей ери тӑршшӗпе, унтан палеосой ерисен ҫилурипе тевон периоӡӗсен тӑршшӗпе пирен ҫӗре тинӗс шывӗ хупласа тӑнӑ. Ҫак вӑхӑтра Йевроппӑри Раҫҫейӑн нумай ҫӗрӗсем Урал тӑвӗсене ҫитиӡен шыв айӗнӡе, тинӗс тӗпӗ пулса тӑнӑ. Тевон периотӗнӡе ҫав тинӗс Палти тинӗсӗне хутшӑнса тӑнӑ, сивӗ йенӡе унӑн ӡикки хаӡхи Аслӑ Устук, ӑшӑ йенӡе Ӡӗмпӗр патӗнӡе пулнӑ. Ҫӗр кӑмрӑкӗпе перӗм периотӗнӡе те пирӗн ҫӗр тинӗс айӗнӡе тӑнӑ, анӡах ҫав тинӗс ҫак периотсенӡе Раҫҫейӗн хӗвелтухӑҫ йенне ҫеҫ хупласа тӑнӑ; ҫак тинӗс питӗ пысӑк пулнӑ: вӑл Пӑрлӑ оккеана кӑнтӑрти оккеанпа пӗрлештерсе тӑнӑ. Месосой еринӡе пирӗн ҫӗр хӑпарса тинӗсрен хӑтӑлма тытӑннӑ. Ҫапла триас периотӗнӡе хаӡхи ӡӑваш ҫӗрӗ типӗ ҫӗре ҫаврӑннӑ, ҫак саманара Йетӗрне, Ҫӗрпӳ, Патӑр уйесӗсем ҫеҫ тӗлӗ-тӗлӗпе шыв айӗнӡе пулнӑ. Анӡах малалла пур периотӗнӡе пирӗн ҫӗре каллех пӗтӗмпех тинӗс пуснӑ. Кайносой еринӡе ҫеҫ ӡӑваш ҫӗрӗ хӑпарса типӗ ҫӗр пулса тӑнӑ. Ҫак саманаран пуҫласа пирӗн ҫӗр урӑх тинӗс айне йулман. Ҫак саманара пӗр вӑхӑта ӡӑваш тавра ҫӗрӗ тинӗс хӗрри пулса тӑнӑ. Ҫав Аралпа Каҫпи тинӗсӗсен таппи пулнӑ, ҫак тапӑ Сӗве, Тетӗш, Спас, Ӡистай уйесӗсене Хусана ҫитиӡен хупласа тӑнӑ. Кайносой ерин малтанхи периоӡӗ пӗтнӗ ӡухне ҫав тапӑ Ӡӗмпӗртен айаларах аннӑ. Ҫак саманара пирӗн ҫӗр ҫинӡе халӗ пурӑнакан ӡӗрӡунсенӡен 90% йахӑн пурӑннӑ теҫҫӗ. Кайносой ерин йулашки (четвертичный) периотӗнӡе икӗ епохӑ хисепленет: пӑр епохи, унтан ҫӗнӗ епохӑ. Пӑр епохинӡе пирӗн ҫӗре хӑрушӑ пӑр хупласа илнӗ. Ҫав калама ҫук пысӑк хулӑн пӑрсем пирӗн ҫӗршыв ҫипе Скантинави, унтан Хинӡанти тӑвӗсен ҫинӡен шуса анса

килсе пуснă. Çав тăтăш пăрсем кăнтăрпа хĕвелтухăç йенелле шунă. Çав пăрсем хăйсемпе пĕрле сивĕ йенђен ђул, тăм, пылђăк тĕртсе аннă. Ђул пăрпа çĕр çинђе шуса пынипе ваклаиннă, йапйака йакалнă, çапла йака ђул (галька) пулнă. Пăрсем Веткăран тытăнса Ђăваш оплăçне хупласа илнĕ; унтан вĕсем хĕвеланăçнелле халђхи Херсон кĕпĕрни патнех аннă; пиртен кăнтăралла йе хĕвелтухăçнелле пăр ђикисем кайайман, çапла вĕсем халђхи Хусан вырăнĕ патнелле те çитейнен. Çак пăрсем питĕ вăрахăн йерипен ирĕлсе Пăрлă оккеан патнелле ђакса пынă. Çав пăрсем ирĕлнипе пирĕн таврана шыв пуснă, пăрсем ирĕлсе пĕтсен вĕсемпе аннă тăм, хăйăр, ђул йулнă. Çав пăрсем хăйсем анса ђакнă çулпа пăрсем ирĕлнĕ саманара çӳлти Атăл шывĕ пулса йулнă; вăл Хусан патне çитекен Каçпи таппине йухса тухса, кайран тинĕс таппи кăнтăралла ђаксан вăл çав тапă хыççăн тăсăлса халђхи Каçпи тинĕсне йухса кĕме пуçланă. Çапла халђхи ђаплă хăватлă Атăл пăрлă епохăра пулса тăнă. Вăл çав саманара питĕ аслă пулнă, çапла Ђăваш оплăçĕн Атăлăн сулахай йенĕ, унтан Красно-Кокшайск уйесĕн нумай çĕрĕсем авал Атăл шывĕпе хупланса тăнă. Ђăваш оплăçĕнђе пăрсем пулнине йака вак ђулсем (галька), тата сивĕ йенђи тăм, хăйăр тĕмисем кăтартса тăраççĕ.

Пăрлă епохăра пирĕн таврара çĕр шăтăкĕнђе пурăнакан упа, хирĕни, пăлан, авалхи вăкăр, тур, супăр, лаша, носорок, мамонт унтан, пур халђхи хайар ђĕрђун çийекен хирвăрман кайăкĕсем: кашкăрсем, тилĕсем ыттисем те пурăннă. Çак епохăрах пирĕн таврара етем пурăнма тытăнни курăнаĭ. Çав етем пирĕн пек пулман: вăл *вăрăм* пуçлă пулнă, пурăнма вăл çĕр шăтăкĕсенђе пурăннă, пулăпа кайăк ашне çисе тăранса тăнă; вăл шăмăран, ђултан хăйне кайăксене тытма, тăшмансемпе кĕрешме кирлĕ йапаласем тукалама пĕлнĕ, анђах тăмран савăтсапа тума, килçурт таврашĕнђе кирлĕ йапаласем тума вăл пĕлмен. Çапах та вăл çак саманара вут кăларма пĕлнĕ. Çак тĕп авал пирĕн çĕрте пурăннă вăрăм пуçлă етемĕн йĕрĕсене халĕ ăслăлăх шыраса тупаĭ. Çапла унăн шăммисем, тĕрлĕ шăмăран, ђултан тунă йапалисем тупăнаççĕ. Çак саманаран йулнă сисен хушшинђе унăн пурăнакан шăтăкĕсене те тупнă, çапла Ђăваш оплăçĕн тавринђе Пăртас йалĕ патĕнђе, тата ытти тĕлсенђе те унăн çĕрайĕнђи çурђĕсене тупнă. Унтан оплăçра авалран çырмасенђе, шывсен çыранĕсен хĕррисенђе малта асăннă ђĕрђунсен: мамонтсен, носороксен, писонсен, пăлансен, лоççен шултăра шăммисем, шăлĕсем тупăнаççĕ. Тĕлĕ тĕлĕпе авал Перĕм тинĕсĕнђе пурăннă акролепис, унтан палеонискус йатлă шултăра пулăсен йулашкийĕсем тĕлпулкалаççĕ. Унтан исвĕс ђулĕсен хушшинђе тĕрлĕ тинĕс ђĕрђунсен йулашкийĕсем: шапахуранĕсем, раковинсем, кораллсем курăнаççĕ. Вĕсем те Перĕм тинĕсĕ ђаксан ларса йулнă. Вĕсем халђхи тинĕссен айĕнђе купаланса ĕрђекен ко-

раллсенҫен йе шыв айӗнҫи раковинсен тӗмисенҫен пӗрте уйрӑм мар.

Йулашки (четвертичный) периотӑн ҫӗнӗ епохинҫе Раҫҫей ҫӗрӗсене тинӗс тавраш хупламан, ҫавӑнпа ҫак епохӑран йулнӑ сисем йухан, йур, ҫумӑр шывӗсенҫен ларса йулнӑ лӑймаран пулнӑ. Ҫак сисенҫе тӗрлӗ ҫӗрҫунсен шӑммисем питӗ нумай тупӑнаҫҫӗ. Ҫав шӑмӑсем кӑтартнӑ тӑрӑх ку саманара пирӗн ҫӗрте ҫапла ҫӗрҫунсем пурӑннӑ: сивӗри пӑлан, хирӗни, капан (хир сысни), хир лаши, каҫака, мулкаҫ, сопӑљ, попӑр, хӑмӑр упа, йус, тилӗ, пӑсара, кунитсӑ, вытрӑ, кашкӑр, йатӑ, ӑсан, пӑҫӑр, шурӑ, хирҫӑххи, аккӑш, кӑвакал, ҫарлан, ҫуйӑн, уланкӑ, шампа. Ҫапла йулашки кеолоки епохинҫе, пирӗн ҫӗршывра етем пурӑнма тытӑннӑ вӑхӑтра тӗрлӗ питӗ пысӑк ҫӗрҫунсем: мамонтсем, носороксем (мӑйракасӑмсасем) пурӑнман—вилсе пӗтнӗ. Ҫапах та унҫухне халӗ пирӗн ҫӗрте ҫук хӑрушӑ капансем, хайар хир лашисем, лоҫҫем нумай пулнӑ. Ҫак епохӑра пирӗн ҫӗрте вӑрӑм пуҫлӑ ҫынах пурӑннӑ, анҫах вӑл леш епохӑн етемӗнҫен нумай уйрӑм пулнӑ, пирӗн йевӗрлӗрех пулнӑ. Ҫав етем тӑрӑх, кӗҫӗн пуҫлӑ, ҫалӑш ҫамкалӑ, пысӑк йанахлӑ, шултӑра шӑллӑ, вӑрӑм алӑлӑ пулнӑ, унӑн тӗсӗ—кӗрен сарӑ пулнӑ, куҫ лупашки тарӑн пулнӑ, куҫхупписем вӑрӑм пулнӑ, унӑн ӳҫӗ хаљхи етемрен ҫӑмлӑрах пулнӑ. Вӑл тум тумланма, хӑйне тӗрлӗ илемлӗ йапаласем тӑхӑнса, ҫакса илемлӗлетме пӗлнӗ. Вӑл хӑйне кирлӗ йапаласене тӑмран, йӑвӑҫран, шӑмӑран, мӑйракаран тума пӗлнӗ. Унтан ҫак етем ҫи пысӑк ӗҫ тунӑ: тӗрлӗ вӑрман йе хир кайӑкӗсене вӑл вӗрентсе алла илсе вӗсенҫен усӑ курма тытӑннӑ. Ҫапла вӑл ӗнесене, лашасене, йӑтӑсене етемпе пӗрле пурӑнма вӗрентнӗ. Етем вилсен, вӑл тӗп авалхи пек унӑн ӳтне ӑҫта килнӗ унта пӑрахман—ӑна тирпейлесе пытарма пӗлнӗ. Унтан вӑл етемӗн ҫунӗ леш тӗнҫере те пурӑнат тесе шухӑшланӑ. Епохӑн йулашки ӗмӗрӗсене икӗ пайа уйӑраҫҫӗ: палеолит (авалхи ҫул) ӗмӗрӗ, неолит (ҫӗнӗ ҫул) ӗмӗрӗ. Малтанхи ӗмӗрте тӗрлӗ кирлӗ орутисене етем вутҫулӗнҫен (кремеҥрен) тунӑ, анҫах ӑна йакатса хӑйраса ҫивҫӗлетме пӗлмен, йулашки ӗмӗрте вӑл вӗсене питӗ ӑста тума вӗренсе кайнӑ. Ҫак саманасем иртсе кайнӑ ҫӗре пирӗн ҫӗршывра хвин йахӗ сиксе тухат; ҫав йӑх пӗтӗм хӗвелтухӑҫри Раҫҫей ҫӗрӗсене сарӑлат, авалхи вӑрӑм пуҫлӑ етемпе хутшӑнса ӑна хвина ҫавӑрат. Ҫак вӑхӑтран истори самани тытӑнса кайат. Ҫак вӑхӑтран пуҫласа пирӗн ҫӗршывра ҫӑнтан етем вырӑнне хисепленме пултаракан ҫӗрҫун пурӑнма тытӑнат. Ҫакӑ хвин йе ҫуҫ йахӗ пулат.

Ҫул ӗмӗрӗсенҫен йулнӑ йапаласем Ҫӑваш оплӑҫӗнҫе нумай тӗлте тупӑнаҫҫӗ. Ҫапла ҫак иртнӗ ҫулсенҫе ҫеҫ Ҫӑваш Ӑслӑлӑхҫисен Ушкӑнӗ Апаш патӗнҫи хулату йатлӑ тӗмене ҫаваласа ҫултан йе тӑмран тунӑ тӗрлӗ йапала тупнӑ; ҫав йапаласене Раҫҫей ӑслӑлӑхҫисем ҫул ӗмӗрӗсенҫен йулнӑ йапаласем теҫҫӗ.

Çапла пирĕн çĕршывăн ĕмĕрĕ вĕçĕмсĕр вăрăм. Çĕр сийĕсем хăçан пулнине, ÿсетăрансен йулашкийĕсем мĕн ђухлĕ вăхăтра кăмрăкланма йе ђула çавăрăнма пултарнине, хайăртан, тăмран ытти йапаласенђен пусăрăнса тăрса йе çĕрĕн авалхи хĕрĕвĕпе мĕн ђухлĕ вăхăтра тĕрлĕ ђулсем пулма пултарнине тата та тĕрлĕ йенђен ђухласа ăслăлăх çав çĕр сийĕсен, çĕр çинђи пурăнăçăн ĕмĕр тăршшĕне те кăтартаť. Çапла кеолоки каланипе—пирĕн çĕр сийĕсем 100 мĕљйун çул ытла малтан пулма тытăннă. Çав вĕçĕмсĕр вăрăм вăхăт çапла уйрăлса тăраť: археснй ери тăршшĕ 52 мĕљйун çул, палеосой вăрăмĕшĕ 34 мĕљйун çул, месосой тăршĕ 11 мĕљйун çул, кайносой вăрăмĕшĕ 3 мĕљйун çул. Етем ăрăвĕ çак йулашки ерăра пуçланса кайни паллă. Çав историђенхи етем пиртен нумай уйрăм, çапах та унăн çĕр сийĕсен хушшинђи шăммисем, йапалисем вăл етемех пулнине витĕр кăтартса тăраççĕ. Çапла етем ăрăвĕ çĕр ђăмăрĕ çинђе 3-мĕљйун çул ытла пурăнни пире тĕрĕсрен паллă. Историђенхи етемĕн, çыру çинђе çырăнман, анђах çĕр сийĕсенђе ĕмĕр пĕтми çырăнса йулнă, кулђтура историйĕ пире çапла курăнса тăраť: етем ђи авал кайносой ерин виççĕмĕш периотĕнђе пурăнма тытăнни паллă, çак саманаран етем тыткаланă, унăн йакатман вутђулĕнђен тунă орутисем нумай йулнă, çак саманан вăрăмĕшне ăслăлăх 2-3 мĕљйун çул хисеплет. Малалла пăрлă периот (ăна тата тиљуви теççĕ), унăн вăрăмăшне $^1/_2$-$1^1/_2$ мĕљйун çул хисеплеççĕ. Çак епохăра етем ђулран орутисем тума питĕ ăста пулнă, вăл слон шăммисенђен, ђулсенђен, раковинсенђен, шапахуранĕсенђен тĕрлĕ илемлĕ йапаласем тунă; çак çĕр сийĕсен хушшинђе тупăнакан йапаласенђен халĕ те тĕлĕнмелле: вĕсем илемлĕ, тĕрлĕ картинкăлă; çак епохăн йулашки ĕмĕрне авалхи ђул ĕмĕрĕ теççĕ. Малалла кайносой ерин тăваттăмĕш периођĕ тытăнаť. Çак çĕнĕ самана пире питĕ витĕр паллă: çак саманаран çĕр çинђе хисепсĕр нумай йапала йулнă. Вăл уйрăм ĕмĕрсене çапла уйрăлса тăраť:

1) çĕне ђул ĕмĕрĕ; çак ĕмĕрте етем вутран усă курма тытăннă, хăй пурăннă çĕрте унăн вуђах пулнă, вут çинђе хĕртсе вăл тăмран савăтсапа тунă, тĕрлĕ илемлĕ йапаласем тунă: малтах асăннăђĕ—çак ĕмĕртен йулнă йапаласене ђăваш ăслăлăхçисем Ђăваш оплăçĕнђе те тупнă, çак ĕмĕр Христос çуралиђђен 15-25 пин çул малтан пулнă; 2) пăхăр ĕмĕрĕ, ку ĕмĕртен етем пăхăртан тунă йапала нумай йулнă, вăл Христос çуралиђђен 3 пин çул малтан пулнă; 3) пронсă ĕмĕрĕ, çак ĕмĕртен пирĕн таврара пронсă савăтсапи йулнă, вăл Христос çуралиђђен икĕ пин çул çурă малтан пулнă; 4) авалхи тимĕр ĕмĕрĕ—çак Христос çуралиђђен пин çул малтан пулнă, 5) çĕнĕ тимĕр ĕмĕрĕ—Христос çуралнă саманара пулнă.

Çапла пирĕн çĕршывăн ĕмĕрĕ вĕçĕмсĕр вăрăм. Пирĕн çĕршыв çинђе етем хисепсĕр нумай авал пурăнма тытăннă. Çакă ђăвашшен сăмахĕнђен, халлапĕсенђен те паллă. Ђăваш асĕнђен

ĕмĕр пĕтми тĕмесем хăварнă улăпсем, етемле калаçакан вăрман упăтисем, вĕçекен çĕленсем, çын çийекен çынсем халиҫҫенех каймаççĕ. Çакă халăх асĕнҫе йулнă самах тахçан авал пулнă йе пулма пултарнă йапаласене пĕлтерет; халлапра нумайĕшне йуптарса каланă пулсан та—вĕсем тахçан авал етем урăхла пулнине пĕлтереççĕ.

6. Тăпрасем. Çĕр çийĕ тăпрапа витĕнсе тăрат. Тăпра çинҫе курăк ÿсет, йăвăççем ÿсеççĕ, тырă акăнат. Çавăнпа тăпра етеме, выҫăх-ҫĕрлĕхе тăрантарса тăрат теме йурат. Тăпра тĕрлĕ пулат: хура, тăмлă, хăйăрлă, кĕллĕ. Унтан нумай тĕлте хураçĕр, тăм, хăйăр, кĕллĕ çĕр хутшăнса пулнă тĕрлĕ тĕслĕ хутăшлă тăпра пулат. Пурте пĕлетпĕр—тĕрлĕ тăпра çинҫе тырă пулă тĕрлĕ пулат. Çавăнпа çĕр ĕçĕшĕн, йалпурлăхĕшĕн çĕр çийĕ йепле тăпрапа витĕнсе тăни питĕ виттĕр сăнаса тĕплеме тивĕçлĕ йапала.

Тăпрасенҫен ҫи усăлли—хураçĕр, унтан тăмлăх, йулашкинҫен кĕллĕхпе хăйăрлăх. Ҫăваш оплăçĕнҫе йепле тăпрасем нумайрахши?

Раççей тăпра тĕлĕшĕнҫен икĕ пайа уйăрлса тăрат: хураçĕрлĕ Раççей, хураçĕрсĕрлĕ Раççей. Хураçĕрлĕ пайпа хураçĕрсĕр пайĕн ҫикки хĕвеланăçĕнҫен хĕвелтухăçнелле тăсăлса пырса Раççей варри урлах каçса кайат. Çав ҫикĕ Ҫăваш оплăçĕ çумĕнҫен иртсе кайат. Çав ҫикĕрен кăнтăралла хураçĕрлĕ тăрăх выртат, сивĕ йенелле хураçĕрсĕр тăрăх выртат. Ҫикĕ пирĕн таврара Улатăр-Пăва-Хусан тавраш ĕсенҫе иртет, çапла Ҫăваш оплăçĕ пĕтĕмĕшпех ҫикĕрен сивĕ йенҫе, хураçĕрсĕр сонăра (пойăсра, тăрăхра) выртат.

Тăпрасем те, авалхи çĕр çийĕсем те ăшăпа сивĕпе, нÿрпе, çилпе ванса, саланса, ирĕлсе унтан ÿсетăрансен, ҫĕрҫунсен йулашкийĕсен çĕрĕкĕпе хутшăнса пулнă. Курăк тымарĕсен çĕрĕкĕнҫен пулнă тăпра хураçĕр, вăрман вырăнĕнҫе пулнă тăпра çеремлĕ кĕллĕх пулат. Çавăнпа çеçенхирсенҫе епĕр хураçĕрлĕ тăпра куратпăр, вăрманлă çĕрсенҫе çеремлĕ-кĕллĕ тăпра куратпăр. Çапла малта асăннă хураçĕрлĕ тăрăх çеçенхирлĕ, хураçĕрсĕр тăрăх вăрманлă. Ҫăваш оплăçĕ çак тĕлĕшĕнҫен вăрманлă йе çеçенхирпе вăрман хутăшлă сонăра тăрат. Пирĕн çĕрте те улаҫăла хураçĕрсем тĕлпулкалаççĕ, вĕсем авалран вăрмансен хушшинҫе пулнă çеçенхирлĕ уçланкăсен вырăнĕсенҫе тĕлпулаççĕ. Шупашкар уйесĕ авал тăтăш вăрманпа витĕнсе тăнă, çавăнпа унта тăтăш кĕллĕ тăпра нумай. Унтан ăçта йĕпçулçăллă вăрман ÿсет—унта хăйăрлă тăпра пулат, çавăн пек тăпрасем Атăлпа Сăрă сĕмвăрмансенҫе выртаççĕ.

Çапла тăпра тĕлĕшĕнҫен Ҫăваш оплăçĕ пуйан та мар, ытлах йурлă та мар, анҫах кÿршĕ Ҫĕмпĕр кĕпĕрнипе йе Тутар респупликкипе танлаштарсан вăл нумай кайра тăрат.

Тăпра тĕлĕшĕнҫен Ҫăваш оплăçĕнҫе çапла районсем паллă: Шупашкар уйесĕ: Атăлăн сылтăм хĕрринҫе Шупашкар, Шурҫа, Мăнал, Тутаркасси, Сĕнтĕр вулăсĕсенҫе кĕллĕх, улаҫăла çес

тăмлă-хăйăрлă тăпрасем, ытти вулăссенҫе кĕллĕхпе хутшăннă сăрă тăмлăх. Ҫĕрпӳ уйесĕ: икĕ Ҫавал хушшинҫе Ҫĕрпӳ, Ҫурапăк, Мами, Шăпăҫкă вулăсĕсенҫе хураçĕрлĕ тăпра, ытти вулăссенҫе сайра пĕрре хураçĕрпе. нумайрах кĕллĕхпе хутшăннă тăмлăх; Йетĕрне уйесĕ: хураçĕрлĕ тăпра Туçи, Нурăс, Кĕçĕн Йавăш вулăсĕсенҫе, ытти тĕлте сайра хура çĕрпе сапаланнă сăрă тăмлăх, Сăрă тăрăх, унтан Кăрмăш уйесĕнҫен куçнă вулăссенҫе тĕлĕтĕлĕпе хăйăрлă тăпрасем тĕлпулкалаççĕ; Патăр уйесĕ: уйес варринҫе, унтан Ҫĕрпӳпе Тетĕш уйесĕнҫен куçнă вулăссенҫе хураçĕрлĕ тăпра. Сăрă варманĕ тăрăх хăйăрлă тăпрасем тĕлпулкалаççĕ. Тăпра тĕлĕшĕнҫен оплăçра Патăрпа Ҫĕрпӳ уйесĕсем пуйантарах. Шупашкар уйесĕ питĕ йурлă.

7. Шывшур. Ҫăваш оплăçĕ Раççейре ҫи пысăк Атăл шывĕ хĕрринҫе выртаҭ. Атăл пур оплăçри шывшурăн тымарĕсене туртса, шывшурăн йĕркине тытса майласа тăраҭ. Атăл йепле авал пăрлă еппоххăра пулнине епĕр малта каланăҫҫĕ. Атăл тени тĕп ҭурк сăмах тымарĕпе çырмалă йухăм шыва пĕлтерет. Атăла мăкшăсем Ра, çармăссем Йул теççĕ, вырăссем Волкă йатне авал пирĕн çĕрте пурăннă укăр йахĕн сăмахне йышăнса йулнă.

Атăл сарлакĕшĕпе, тарăнăшĕпе, шыв нумайипе, хытă йухнипе пĕтĕм çĕр ҫăмăрĕ çинҫе паллă çырма. Вăл Твер кĕпĕрнинҫен тапранса Раççей урлă каçça Каçпи тинĕсне йухса тухаҭ. Унăн тăршшĕ $3^1/_2$ çухрăма йахăн, сарлакĕшĕ вăтамран пĕр çухрăм, тарăнăшĕ тарăнрах тĕлте 10 хăлаçа çитет. Вăл пĕр çекунтра 1120 куплă хăлаç ҫухлĕ шыв хăвалаҭ, тавлăкра хисепсĕр нумай йушкăн лăйми хăвалаҭ. Атăлăн сылтăм хĕрри çӳлĕ, тулă, сулахай хĕрри лутра, айлăмлă. Аслăлăх кăтартнă тăрăх çакă çĕр ҫăмăрĕ хăй йĕри тавра çавăрăннинҫен килет. Атăл шывĕ йалан сылтăм йенелле сулăнса йухаҭ, сылтăм хĕрринҫи çĕр çийĕсене çăваҭ, ишет, сулахай хĕррине илсе кайса йушкăн çутараҭ. Ҫапла Атăл çулран çула йерипен хĕвеланăçнелле сулăнаҭ. Авал Хусан Атăлăн сулахай хĕррин- ҫе пулнă, халĕ Атăл 5 çухрăм сулахайра иртет. Атăлăн сылтăм хĕрри пирĕн куç умĕнҫех çĕмĕрĕлсе пыраҭ, çапла Атăл хĕрри Шупашкар патĕнҫе, Ҫĕмпĕр, Хура-Йар патĕнҫе халĕ ишĕлет. Атăл сылтăмалла куçни пире тата ак мĕншĕн виттĕр курăнса тăраҭ: Атăлăн сулахай хĕрринҫе халĕ виçĕ пусма питĕ паллă курăнса тăраҭ, пирĕн саманара иккĕмĕш пусмине шыв çуркунне çеç çывăхараҭ; çав пусмасем авал Атăл хĕрри пулнă. Атăл Ҫăваш оплăçĕ виттĕр хытă йухаҭ, Хусанран айалалла вăл тăватă хут йеррипен йухма тытăнаҭ, çав айалалла çĕр тӳремрехрен килет. Ҫăваш оплăçĕ виттĕр Атăл 140 çухрăм тăршĕпе йухса тухаҭ. Шупашкартан Атăлăн çӳлти вĕçĕ 1367 çухрăмра, айалти вĕçĕ 1928 çухрăмра. Васиҫсурскран тытăнса Ҫулман Атăл патне çитиҫҫен Атăл çыранĕ питĕ сарлака, тĕлĕтĕлĕпе 10-12 çухрăма çитет, анҫах Шупашкар патĕнҫе вăл 2-3 çухрăма çитиҫҫен тăвăрланаҭ. Атăл куккăрмаккăр йух-

нипе, хĕррисене йалан перĕнсе çуса çĕмĕрнипе питĕ йушкăнлă. Çав йушкăна çуса вăл çĕнĕрен çĕнĕ утравсем, çурутравсем, шыв урисем, сатунсем тăват. Çав йушкăнах йухăм шыв çулĕ çине çуса вăл хăй хварватерне ăшăхлатса пăрахутсем çӳреме кансĕрлесе хурат.

Атăл Ђăваш оплăçĕшĕн пĕр йенђен питĕ сийенлĕ шыв. Таран çыранлă пулнипе, çĕр çийĕнђен нумай айалта йухнипе Атăл пур оплăçри шывшура: йуртан, çăмăртан тăпра çинђе пулакан шыва та, тăпра айĕнђи нӳре те питĕ хытă туртса пирĕн çĕршыва типĕтсе тăрат. Çавăнпа ку йенђен ăна сийенлĕ çырма теме йурат. Анђах Атăлăн усси те хисепсĕр пысăк. Авалран Ђăваш халăхĕ Атăл çинђе пурăнат: ун хĕрринђе авал ђăваш хулисем. пысăк йалсем выртнă, Атăл тăрăх ђăвашшем тĕнђепе: арапсемпе, перссемпе, ерменсемпе, вырăссемпе, нимĕççемпе, шветсемпе сутилӳ тунă. Пăлхар патшалăхĕ, пăлхар кулђтурĕ çав Атăла пула çеç пулнă. Авал ђăвашшем Атăл çинђе кимĕсем тума, пулă тытма ăста пулнă, Атăл тăрăх çӳлелле те айалалла та тавар турттарнă. Анђах халĕ Атăл тăрăх пĕр ђăваш йалĕ те çук: ђăвашшене Атăл хĕрринђен тутарсемпе вырăссен улпуђĕсемпе патшисен тарçисем пусмăрласа айакалла ђактарнă. Çапах та халĕ те Атăл ђăвашшемшĕн хисепсĕр усăллă.

Ђăваш оплăçĕнђе тепĕр пысăк шыв—Сăрă. Сăрă ђăваш оплаçĕнђен инçех те мар Атăла йухса тухат. Сăрă ђăваш оплăçĕн хĕвеланăçри ђикки тăрăх йухат. Сăрă ђăваш историнђе питĕ паллă шыв: вăл хăйĕн сĕмвăрманĕсемпе ђăвашшене хĕвеланăçĕнђен пусса килекен вырăс колонисатсийĕн хумĕсене ђарса тăнă, вĕсене ђăваш çĕрĕнђен айакалла сирсе тăнă, çавăнпа ăна Ђăваш оплăçĕшĕн историлĕ хӳтлĕх теме йурат. Çавăнпа та вырăс колонисатсийĕ пирĕн çĕре çавăрса илме тытăнсан ђи малтан Сăрă шывне хăй алине тытса илнĕ: Хусана илиђђен 30 çул малтан вырăссем Сăрă Атăла тухнă çĕре ђăвашшемпе çармăссенђен çапăçса туртса илсе Ваçилђсурск йатлă вырăс хули тунă. Çапла Сăрă çулне питĕрсе хурсан Атăлăн сылтăм йенђи ђăвашшем те, çармăссем те ирĕксĕрех колонисаттăрсене пăхăнмалла пулнă. Сăрă ђăваш оплăçĕ тăрăх тăршĕпе 120 çухрăм ытла йухса тухат. Сăрă питĕ куккăрмаккăр, йеррипен йухат. Сăрă çыранĕ таврашĕнђе питĕ аслă айлăмсем нумай, шывĕ варринђе утравсем пайтах. Сăрă çинђе питĕ нумай хăйăрлă йушкăн çăват, çавăнпа ун тăрăх пăрахутсем çӳретме, сулăсем хăвалама, кимĕсемпе тавар турттарма кансĕртерех. Çапах та Сăрă шывĕ Ђăваш оплăçне усă питĕ нумай кӳрет. Малашне Сăрăн йухăм шывĕн çулне йушкăнран тасатсан вăл тата нумай усăллă пулмалла. Унтан Сăрă питĕ пулăран пуйан: Сăрă стерђăђĕ питĕ витекен тавар—ăна нумай айакри таврасенђе те пĕлеççĕ

Малалла Ђăваш оплăçĕнђе ђи паллă шывсем—Мăн Çавалпа Кĕçĕн Çавал. Тĕп авалах Çавалсем Хусан таврашĕнђи Каç-

пи тинĕсĕн таппин ури пулнă. Авалранах Çавалсем ђăвашшемшĕн питĕ усăллă пулнă: вĕсен хĕрринђе ђăваш хулисем, сутуилӯллĕ йалсем, пристăњсем пулнă. Вырăс летопиçĕсем Çавала 1183-мĕш çултах асăнаççĕ: çавăн хĕрринђе Улатимĕр кнеçĕ Вçевăлăт пăлхарсемпе çапăçнă. Кайарахпа Атăл çинђе тĕрлĕ вăрăхурахсем, ушкуйниксем иртĕннĕ вăхăтра пĕр хĕррингђе пытанса тăракан Çавалсем çинђе вăйлă сутилӯ, нумай пуйанлăх пулнă. Халĕ те Çавал тăрăх çуркуннепе сулăсем çӯреççĕ.

Тата Ђăваш оплăçĕнђе Атăлăн сулахай йенђе Мăн Кокшак йухса тухат. Çак шыв сулă çӯретме, вăрман хăваламă питĕ лайăх. Хăй те вăл тăтăш вăрман виттĕр иртет. Малашне Ђăваш оплăçĕнђе аслăланас вăрман промăшлĕнăçĕшĕн çак шыв питĕ паха пулмалла.

Унтан татах Ђăваш оплăçĕнђех паллăрах шывсем: Атăла тухакан Енĕш, Мăн Çавала йухакан Ункă, Сĕвене тухакан Кĕтне. Кĕсенђен пуçне тата вак шыв, пуринђен ытла типĕ çырма пирĕн хисепсĕр нумай. Оплăç варри çӯлте выртнипе шывшуртан пуйан мар, питĕ типĕ. Лађака, кӯл, шур тавраш унта çукпа пĕрех. Сайра пĕрре лутрарах çĕрсенђе çеç кĕçĕн кӯлсем тĕлпулкалаççĕ. Çав оплăç варринђе шывшур вăйлă марри тырăпулă тума кансĕрлет, анђах çавах етеме сывлăхшăн питĕ усăллă. Оплăçра пăрахутсем йе сулăсем çӯреме йурăхлă шыв çулĕ мĕнпурĕ 310 çухрăм, çапла пирĕн 100 тăваткăл çухрăма 2.3 çухрăм шыв çулĕ лекет.

8. Климăт. Ђăваш оплăçĕ климăт тĕлĕшĕнђен çĕр ђăмăрĕн вăтам тăрăхĕнђе выртат. Ашăпасивĕ оплăçра вăтамран хисеплесен çапла пулат: çулталăкра +3,3°; хĕлле—13,7°, çулла +20,2°, кĕркунне +1,6°, çуркунне +4,2°. Ђăваш çĕрĕнђе хĕлле шартлама сивĕсем 30°-40° тата пулкалаççĕ, çулла шăрăхсем те тӯсме çук пулкалаççĕ—35°а та çитеççĕ, çавăнпа пирĕн климăта конттинентталлă климăт теççĕ. Вăл çанталăк типпине, унтан сивĕпе ăшăн хушши пысăккине пĕлтерет. Çапла пирĕн мăнкăрлађра сивĕ кунсемпе ăшă кунсен хушши 17° çитет, пушра, унтан акара çав пĕр вăхăтри кунсенех сивĕпе ăшă уйрăмĕ вăтамлăхран 20°. Çапла пирĕн вăтамлăхран хĕллехи сивепе çу варринђи ăшă уйрăмĕ 34° çитет. Парижра çавсен хушшийех 15°, Перлинра 18°, Мускав тавринђе 30°, Питер тавринђе 25°. Çакă Ђăваш оплăçĕ климăт тĕлĕшĕнђен хевеланăç çĕрĕсемпе танлаштарсан пађартарах çĕрте тăнине кăтартат. Оплăçра ђи сивĕ уйăх кăрлађ, ђи шăрăххи утă. Çуркунне ăшă ђăнтан ака уйăхĕнђе тытăнат, малтан çур ăшă пулат, унтан Атăл пăрĕ тапрансан, тырă акма тытăнсан каллех сивĕсем пулаççĕ. Хăш çулсенђе çу уйăхĕнђе тăмсем ӯксе, сайра йурсем те çуса ӯсетăрана, тырра сийенлеççĕ. Кĕркуннепе çулĕçулĕпе çурларах тăм ӯксе кайран пулакан тырăсене, пахђа çимĕççене сийенлет. Ђăваш оплăçĕнђе хĕллеи тăршĕне 5 уйăх хисеплеме йурат (ђӯк—пушă), çур тăршĕне 1 уйăх

(ака), ҫула тăрщĕне 4 уйăх ҫурă (ҫу—авăнăн ҫурри), кĕр тăршĕне уйăх ҫурă (авăнăн ҫурри—йупа). Шывшурсем пирĕн акара пăртан тасалаҫҫĕ, ђукре шăнса лараҫҫĕ; ӳсетăрансем хĕллехи ыйхăран вăранса ҫура ҫулҫăпа витĕнеҫҫĕ, авăнта хăйсен илемлĕ йешĕл витĕмне пăрахаҫҫĕ, вĕҫен кайăксем кăнтăртан пушăпа акара кайалла ҫавăрăнса килеҫҫĕ, авăнпа йупара каллех пире пăрахса кайаҫҫĕ.

Тырă ӳсекен вăхăта ăслăлăх векетатси вăхăђĕ тет. Ҫак вăхăтра кулленкуна пулакан ăшша хутăштарса хисеплесен—векетатси периођĕнђи температурăн суммине тупатпăр. Ҫав суммă Ђăваш оплăҫĕнђе вăтамлăхран 2300 кратуса йахăн пухăнаť,Мускавăн ăшă йенђи тавринђе 2500 кратуса йахăн, Самар тавринђе 2500 кратусран ытла. Ҫакна акă мĕншĕн пĕлме кирлĕ: ăслăлăх кăтартнă тăрăх кирек мĕнле тырă та хăйне ӳссе ҫитĕнме ҫителĕклĕ ăшă сумми ыйтаť: ҫапла ыраша 1700, тулла 1870, сĕлле 1940, урпана 1600, вире 2050, кукуруса 2370 кратус кирлĕ. Ҫав пирĕн ăшă сумми сахалĕпе пирĕн ҫĕрте вир сахал ҫул ĕлкĕрет, кукурусă ĕлкерейместь. Ҫапах та ҫуллахи ăшă пирĕн ҫителĕклĕ теме йураť. Епĕр тĕп сиййене ăшă сахалинђен мар, нӳр ҫитменнинђен куратпăр. Утă уйăхĕнђе тырăсем ĕлкĕрнĕ вăхăтра ытла пăрăхсем пулнипе пĕлĕтрен ӳкекен нӳр ҫителĕклĕ пулмасť: шăрăх ҫĕре, пур ӳсетăрана пăслантарса типĕтсе тăраť, ҫăмăрпа анакан нӳр шăварса ҫав расхута саплаçа ĕлкĕреймест. Ҫавăнпа ҫак вăхăтра пур ҫĕрĕн йешĕл витĕмĕ йапăхма, типме, хăрма тытăнаť, ҫавăнпа тырăсем те йаланах аван пулаймаҫҫĕ. Унтан тата Ђăваш оплăҫĕ 4-5 ҫултан пĕрре уйăр ҫула кураť, ҫавăн пек ҫулсем питĕ типĕ шăрăхлă пулаҫҫĕ те тырăсем вĕтеленсе ҫунса кайаҫҫĕ, ҫапла оплăҫ ĕмĕртен 4-5 ҫултан пĕр ҫук выҫлăх курса асапланаť.

Сывлăшнӳрне ҫăмăрпа йе йурпа тинĕссенђен ҫилсем хăваласа килеҫҫĕ. Ҫиллĕ кунсем Ђăваш оплăҫĕнђе нумайрах ђукпе нарăсра пулаҫҫĕ, ҫилсĕр кунĕ ҫанталăк ытларах утăпа ҫурлара пулаť. Ҫилсем йаланахкă нтăрпа хĕвеланăҫ хушшинђен вĕреҫҫĕ, кĕркуннеле сивĕпе хĕвелтухăҫ хушшинђен вĕркелеҫҫĕ; сивĕрен вĕрекен ҫилсем сиййенлĕ пулаҫҫĕ—ҫĕре типĕтеҫҫĕ, ҫанталăка тĕксĕмлетеҫҫĕ, йешĕл йапалана ӳсме ђарса тăраҫҫĕ. Вăхăђĕпе ҫула кăнтăртан вĕри ҫилсем вĕркелеҫҫĕ—вĕсем те питĕ сиййенлĕ пулаҫҫĕ—тырра вăхăтсăр пултараҫҫĕ, курăксене ҫунтарса хăртараҫҫĕ. Хăш ђухне хĕвеланăҫпа сивĕ йенђен питĕ ҫирĕплĕ ҫил пулаť—ҫав ҫил Кољштрем йатлă оккеанăн ăшă йухăмĕнђен тапраннă пĕлĕтсене хăваласа килсе ҫĕре ҫула ăшă ҫăмăрпа шăвараť, хĕлле ăшă йурпа витет. Ҫил пирĕн ҫĕрте вăйлă кăнтăр таврашĕнђе, кунĕ ҫĕрле пулаť. Сайра пĕрре хăрушă ҫилтăвăлсем пулкалаҫҫĕ, ҫав тăвăлсем ҫула тырра йе ӳкереҫҫĕ, йе тăкаҫҫĕ.

Ҫулталăкра пĕлĕтлĕ кун 68% пулаť. 100 кун хушшинђе пирĕн йĕпесапалă, нӳр шăршилĕ кун 37, ҫурма уйăр ҫурма пĕлĕтлĕ кун 40, таптаса уйăр кун 23. Тĕтрелĕ кун ҫулталăкра

24 пулаҫ, ҫумӑрла йе йурла кун 121 пулаҫ. Ҫулталӑкра оплӑҫра мӗнпурӗ нӳр 400—500 милӗметӑр ӳкет. Ҫурпа кӗр вӑхӑтӗнҫе нӳр пӗр пек ӳкет, ҫула нӳр ҫуркуннехинҫен икӗ хут ытла ӳкет, хӗлле кӗркуннехинҫен икӗ хут сахал ӳкет. Ҫӳлтен нӳр ҫи нумай утӑ уйӑхӗнҫе ӳкет, анҫах ҫак уйӑхра питӗ шӑрӑх танипе ҫав нӳр ҫӗре тӑраниҫҫен шӑвараймасҫ. Ҫула шултӑра тумлалӑ ҫапласа йухтарса ҫӑвакан ҫумӑрсем пулаҫҫӗ: вӗсем 3—5 сехетрен иртсе кайаҫҫӗ, кӗркунне ҫасах ерне тӑршӗпе вак тумлаллӑ ҫумӑрсем пӗрӗхеҫҫӗ. Аслати оплӑҫра кашни тӗлте вӑтамлӑхран ҫулталӑкра 20 хут авӑтаҫ.

Пур ҫӳлтен ӳкекен сывлӑшнӳрӗ Ҫӑваш оплӑҫӗнҫе тырасене, ҫарансене, вӑрмансене ӳсме ҫителӗклӗ, анҫах ҫав нӳр вӑхӑтла анманни ҫеҫ пире аптӑратаҫ: ҫапла ҫасах тырӑ акна, шӑтна, пӗрҫе ларна вӑхӑтра уйар пулаҫ, йӗпе кирлех мар ҫухне ҫӑмӑрсем ытлашши те ҫаваҫҫӗ. Ӑслӑлӑх тырра шӑтса, ӳсме ӗлкӗрме мӗн ҫухлӗ нӳр кирлине хисепленӗ, ҫавна аса илсен—пирӗн оплӑҫра ҫумӑрпа, йурпа, пӑспа, тӗтрепе сывлӑшнӳрӗ мӗнпурӗ кирлӗ таранран икӗ хут ытла ӳкет. Ҫапла епӗр типӗлӗхрен ҫулран ҫула сийен курни хамӑртан ҫеҫ килет: епӗр ҫав нӳре сыхлама пӗлместпӗр (ун ҫинҫен маларах тӗплӗ калӑпӑр).

Йулашкинҫен ҫакна калас: климӑт пирӗн наҫар мар: ытлах ӑшах та мар, сивех те мар, ытла типех те мар, йӗпех те мар. Атӑл ҫинҫе ӗмӗртен пулакан периотлӑ уйарсем те Ҫӑваш оплӑҫӗнҫе Самар таврашӗнҫи пек вӑйлӑ пулмаҫҫӗ. Нумайӗшӗ климӑт ӑслӑлӑхҫисем климаттолоксем Ҫӑваш оплӑҫне Раҫҫейӗн вӑтам районӗн климӑт сонинҫе (тӑрӑхӗнҫе) хисеплеҫҫӗ. Ҫавӑнпа климӑтӑн сийенлӗхӗ ҫи малтан хамӑртан, пирӗн тӗттӗмлӗхрен килет. Ҫакна ҫӑваш халӑхӗ авалранах хӑй те пӗлнӗ, ӑспа тӗплӗ ӑнлаймасан та ҫӗрепе, инстиктпа сиснӗ. Ҫавӑнпа ҫӑвашпем авалран климӑта питӗ сӑнанӑ: вӗсем Раҫҫейре ҫанталӑка ҫи тӗплӗ сӑнакан халӑх вырӑнне хисепленеҫҫӗ. Иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнҫе климӑт ӑслӑлӑхҫи А. В. Смоленски ҫӑвашпем ҫанталӑк ҫинҫен каланӑ сӑмахсене пухса кӗнеке кӑларнӑ, ҫав кӗнеке ҫинҫен вырӑссен климаттолоки литтераттуринҫе нумай ҫырнӑ та, ҫыраҫҫӗ те. Малашне те ҫӑвашпем ҫанталӑка малтан ҫухласа тӑма, ун пулас сийенӗсене сирсе тӑма вӗренме тӑрӑшмалла. «Тырӑ Турӑ парсан пулаҫ, памасан пулмасҫ, Илйе пророк лашисене ӗрӗхтерсе ҫӳресен ҫумӑр ҫаваҫ, ахаль вырттсан пулмасҫ, пирӗн ҫӗр йурӑхсӑр типӗ ҫанталӑклӑ—унпа кӗрешме тӑрӑшмалли те ҫук» тени айван йе йурӑхсӑр йулхав ҫын сӑмахӗ ҫеҫ пултӑр.

9. Ӳсетӑран тӗнҫе. Епӗр ҫӗр ҫӑмӑрӗн ӑшӑпасиве тӗлӗшӗнҫен, сывлӑшнӳрӗ тӗлӗшӗнҫен килӗшӳлӗ вырӑнӗнҫе пурӑнатпӑр. Климӑтӑн вӑтам пойӑсӗнҫе, унтан вӑрманпа ҫеҫенхир хутӑш сонӑра пурӑннипе, пирӗн ҫӗрӗн йешӗл витӗмӗ питӗ паттӑр, усӑлла, хитре. Авал Ҫӑваш оплӑҫне тӑтӑш сӗмвӑрман хупласа тӑнӑ. Етем ӗрҫесен, вырӑспа тутар колонисат-

сийĕ хĕсе пуçласан, ҫаваш вăрман ăшне шалран шала кĕрсе, касса, хăртса тасатса йалсем, уйсем тунă. Ҫавашсăн, унăн ĕмĕрхи йăвăр пурăнăçĕнҫе, вăрман етеме парăнми хўтлĕх пулнă. Вăрман урлă çар иртме, вăрăхурах çўреме пултарайман, вăрман çине ытти паттăр халăхсем пусса куççа ларма кăмăл туман. Вăрман ҫаваша Аçире йышăннă кĕтўкĕтнĕлĕ пурăнăç йăлине пăрахса, пĕр вырăнта пурăнма вĕрентнĕ, кил çурт çавăрма пулăшнă, сивĕ çанталăка парăнма паман. Çавăнпа сĕмвăрмана ҫаваш питĕ хисеп тунă, сумасунă—унта унăн хисеплĕ туррисем пулнă. Халĕ оплăçра вăрман ытла нумайах йулман: вăрман оплăçăн виççĕмĕш пайне кăшт ытларах витсе тăрат. пур тырă уйĕсем ҫухлĕ йахăн çĕр йышăнса тăрат. Оплăç варринҫе вăрман çукпа пĕрех—уйрăм кĕçĕн рошҫасем çеç сайра ларкалаççĕ. Ун выранне оплăç икĕ ҫикинҫе Аталпа Сăрă тăрăх çын çўремен, куçкурми ҫăтлăхлă сĕмвăрмансем выртаççĕ. Çавăнпа оплăç картти çине пăхсан кукша пуç йевĕрлĕ. Оплăçра йĕпçулçăлă хĕрлĕ вăрман та, çемçеçулçăлă хура вăрман та нумай.

Çапла Ҫаваш оплăçĕнҫе вăрманпа çеçенхир пĕр пек, пĕрне пĕри парăнмасăр тавлашаççĕ. Çакă питĕ лайăх, çакна кура çĕрĕн йешĕл витĕмĕ пирĕн тĕрлĕ тĕслĕ, пуйан.

Пирĕн кашласа ларакан сĕмвăрмансенҫе, уйсенҫе кукшаллă ларакан рошҫасенҫе хисепсĕр нумай тĕрлĕ йăвăç ўсет.

Çав йăвăççенҫен паллăрахисем: йуман, хыра, ҫарăш, ăвăс çăка, хурăн, вĕрене, йăмра, тирĕк, хурама, çирĕк, çўçе, хăва, шăлан, катăркаç, кăпҫанкă, каврăç, уртăш, йĕлме, тупăлха ыт. те. Вăрмансенҫе, сатсенҫе тутла, усăллă çимĕç паракан йăвăççем ўсеççĕ: улмуççи, ҫийе, хăмла çырли, хурлăхан, çĕмĕрт, пилеш, палан, шĕшкĕ ыт те.

Тата сатсенҫе тĕрлĕ илемлĕ йăвăç нумай ўсет: акатси, паçина, çирен, йĕплĕхулă.

Вăрмансенҫе хăмла йăтăнат, măйăр, икел нумай пулат, çулĕпе кăмпа хисепсĕр нумай пулат.

Вăрман уçланкисенҫе, шывшур айлăмĕсенҫе ҫеҫен çарансем ўсеççе, çарансенҫе тĕрлĕ усăллă курăксем ўсеççĕ: шурути, тăхранпуç, кĕпçесем, пултăран, серте, унтан тĕрлĕрен çĕр çырлисем пиçеççĕ.

Пахҫасенҫе тĕрлĕ çимĕçлĕ ўсетăрансем аван ĕлкĕреççĕ: çĕрулми, хăйар, кишĕр, ҫекĕнтĕр, çарăк, кăшман, сухан, кавăн, мăкăнь, тапак, хĕвелçавнăш, анҫах ăна сахалтараххипе арпус çитĕнеймест, çапах пăмитор ĕлкĕрет.

Уйсенҫе тинĕс пек тырăпулă кашласа ларат. Пирĕн акакан тырăсем: ыраш, сĕлĕ, тулă, урпа, пăрçа, йасмăк, хуратул. Ҫаваш оплăçĕ тырă ўстернĕ тĕлĕшĕпе Раççейĕн ырашла сĕлĕлĕ сонинҫе хисепленет. Çулă, техниккăлă ўсетăрансенҫен йĕтĕнпе кантăр акăпат.

Унтан уйсенҫе, çарансенҫе, вăрмансенҫе, лаҫакасенҫе тата та тĕрлĕрен усăллă та, сийенлĕ ўсетăран ўсет: мăк, хăмăш,

шурçырли, калемпĕр, тĕрлĕ хăйахсемпе хупахсем, ерĕм, майан ыт. те.

Пур оплăçри ӳсетăрана хисеплесе пĕтерме, пурин йаҫĕсене пĕлсе пĕтерме те çук. Çавăнпа çак тĕлĕшĕнҫен епĕр пуйан, телейлĕ çĕрте пурăнатпăр теме йурат. Анҫах çакна астума кирлĕ: хаклăрах тырă: тулă, вир, ыттисене те акса усă курма, çулă техниккăлă ӳсетăрансене: йĕтĕн, кантăр, хĕвелçавнăш, мăкăнь, тапак нумайрах ĕрҫетме, урăх усăлă йапаласене: арпус, куккурусă тавраш пайтахрах ӳстерсе усă курма пирĕн тăпра ырханлăхпа йурăхлах мар, климăт та килĕшӳлех мар, çапах та ытти тырăпулă, сат, пахҫа çимĕçĕ тума епĕр наҫар мар çĕрте пурăнатпăр.

10. Ҫĕрҫунлă тĕнҫе. Оплăçра мĕн ҫухлĕ тĕрлĕ ӳсетăран нумай, çавăн ҫухлех тĕрлĕ ҫĕрҫун йышлă. Пуринҫен ытла ҫĕрҫунпа пирĕн вăрмансем пуйан. Атăлпа Сăрă сĕмвăрманĕсенҫе халиҫенех тискер кайăксем: упа, кашкăр, лоç, пплан, хирĕни ыттисем те пурăнаççĕ. Унтан вăрмансенҫе пурăнакан ҫĕрҫунсем: тилĕ, пурăш, пăсара, пакша, мăнйус, арлан, мулкаҫ, хуратилĕ, сăсар, сăвăр, ҫиркас ыттисем те.

Çаксенҫен ашне çиме йураканнисем: упа, пăлан, хирĕни, мулкаҫ; тирĕпе хаклисем: упа, кашкăр, тилĕ, сăсар, пăсара, пурăш, мăнйус.

Авал вăрман тăтăш ҫухне çакан пек кайăк пирĕн çĕрте хисепсĕр нумай пулнă—ҫăвашшем вĕсене тытса вĕсен тирĕпе Мускав патшисене, тĕрлĕ тӳресене хырăç та тӳлесе тăнă. Анҫах етем ĕрҫенĕçемĕн, вăрман ҫакнăçемĕн çав кайăксем пĕтсе пыраççĕ, хăшĕ вĕсенҫен: упа, пăлан, хирĕни, сăсар, пурăш ĕнтĕ питĕ сахал йулнă. Авăлрах пирĕн хăрушă вăрман сыснисем те пулнă, анҫах халĕ вĕсем пăҫах пĕтнĕ.

Унтан вăрмансенҫе, çарансенҫе, кӳлсен хĕррисенҫе, Атăлпа Сăрă тăрăх çула тĕрлĕ вĕçен кайăк питĕ нумай вĕркĕшет, çапла пирĕн çĕрте çиме йурăхлă вĕçенҫунсем пулаççĕ: ăсансем, пăҫăрсем, кайăккăвакалсем, шывтакисем, текерлĕксем, шывҫăххисем, тăрнасем, карăшшем, вăрман ҫăххисем, ҫĕлтисем, шурă хирҫăххисем, туткăшшем.

Авал пирĕн çĕрте ҫарăнса кайăк хурсем, тăрнасем, акăшшем çу каçнă, анҫах етем нумайлансан, шывшур ҫаксан вĕсем халĕ пирĕн урлă иртсе çеç çӳреççĕ.

Оплăçра йурлакан йе çухăракан кайăк питĕ нумай, вĕсенҫен паллăрахисем: шăпҫăк, тăри, шăнкăрҫă, кăсйа, саркайăк, ҫăпаркайăк, путене, ҫĕкеç, кукку, курак, ҫакак, ҫавка, çерçи тата ытти те нумай.

Усал çăткан вĕçенкайăксенҫен паллăрахисем: çăхан, тăманасем, улакурак, хурҫăка, караппăл. Авал ăмăрткайăксем те пулнă, халĕ те вĕсен йăхĕнҫен кĕçĕнрехххи кукăрсăмса, вырăсла перкут, сайра пĕрре Вăтам Аçирен çула вĕççе килет.

Шывшурсенҫе оплăçра авалран пулă нумай пулнă, анҫах пирĕн ĕмĕрте Атăлпа Сăрăра та пулă сахалланнăçем са-

халланса пыраҫ. Пирӗн ҫӗршывӑн паллӑрах пуллисем: ҫуйӑн, стерӗак, ҫӑртан, уланкӑ, ҫупах, шампа, кӑртӑш, ҫӗленпулӑ, лӗкӗпулӑ ыт. те.

Оплӑҫ варринӗе кӳлсем, шурсем. тарӑн шывлӑ ҫырма сахаллипе ӗӑваш пулӑран сахал усӑ кураҫ. Ӗӑнтан пулӑҫӑсем те оплӑҫра питӗ сахал: вӗсем Ҫӗрпӳ уйесӗнӗе пӗр вулӑсра. Йетӗрне уйесӗнӗе икӗ вулӑсра, Шупашкар уйесӗнӗе ҫиӗӗ вулӑсра пур.

Ҫӗр ҫинӗе тӑсӑлса ҫӳрекен ӗӗрӗунсенӗен паллӑрахисем: хураҫӗлен, пӑхӑрҫӗлен, калтасем. шапасем, ыттисем те.

Халӗ ҫак ӗӗрӗун сахал йулнӑ, авал вӑрмансенӗе нумайрах пулнӑ пулмалла: ҫапла ӗӑвашшем урана тӑла ӗӑлха тӑхӑнас, ытларах та хӗрарӑмсем хура ӗӑлхапа урана ӗӗркес йӑлана ӗлӗк ҫӗленсем нумай пулнӑран йышӑннӑ пулӗ теҫҫӗ.

Оплӑҫра тӗрлӗ сийенлӗ хурткӑпшанкӑ нумай: тӗрлӗ лӗпӗшшем, шӑнасем, вӑрӑмтунасем, пӑвансем, ӳпресем; вӗҫекен хурткӑпшанкӑран сийенлӗрехи йӗпвӑрри, унтан сайра пӗррә Аҫирен вӗҫҫе килекен ҫунатлӑ шӑрӗӑк (саранӗӗа). Авал ҫак шӑрӗак кӑнтӑртан ҫулӗ ҫулӗпе, пӗлӗӗӗ пӗлӗӗӗпе пирӗн ҫӗре килсе ӳккеленӗ, тырӑсене ҫисе сийен тунӑ.

Етем килҫурӗӗ таврашӗнӗе пурӑнакан ӗӗрӗунсенӗен авал ӗӑвашшем тӗвепе, ашакпа паллашулӑ пулнӑ пулмалла, анӗах вӗсен халӗ оплӑҫра тӗсӗ те ҫук. Унтан ӗӑваш сӑмахӗнӗе тата нумай тискер ӗӗрӗунсем асӑнӑнаҫҫӗ: арӑслансем, ҫынпа тавлашакан ҫӗленсем, тискер тимӗр шапасем. ӑмӑрткайӑксем, урхамахсем; вӗсем пирӗн ҫӗрте авал та пулман пулмалла, вӗсемпе ӗӑвашшем ҫак ҫӗре ӑшӑрах йенӗен килиӗӗен паллашнӑ пулмалла.

Оплӑҫра етеме кирлӗшӗн усранакан выӗӑхӗӗрлӗх: лаша, ӗне, сурӑх, ҫысна, каӗака, вӗҫенкайӑк: ӗӑхӑ, хур, кӑвакал, кӑркка. Унтан пирӗнпе пӗрле килҫуртра уйрӑлми тискер кайӑксен йӑхӗсем йӑтӑпа кушак пурӑнаҫҫӗ (йӑтӑ—кашкӑр йӑхӗ, кушак—тикӑр йӑхӗ).

Ҫапла Ӗӑваш оплӑҫӗ тӗрлӗ ӗӗрӗунпа питӗ пуйан. Ӗӗрӗунсенӗен хӑшӗ ӗӗрӗунсен патшипе—етеме усӑллӑ, нумайӗшӗ вӗсенӗен сийенлӗ, ҫакна кура етем сийенлисене пӗтерме, усӑллисене ӗрӗетме тӑрӑшаҫ, анӗах тӗттӗмлӗхпе йе усаллӑхпа ҫын ӗасах хӑйне сийенсӗр йе усӑлах ӗӗрӗунсене те пӗтерет, ҫапла ӗӑваш хирӗнисене. пӑлапсене, ӗӗрӗпсене, хурткӑпшанка пӗтерекен вӗҫен кайӑксене таках тытса, хӑратса пӗтерсе вӑл хӑйне хӑй сийен тӑваҫ.

11. **Ҫӗрайӗнӗи пурлӑхсем** Пур малта каланӑ ҫӗршыв пурлӑхӗсем: тӑпрасем, шывшурсем, ӳсетӑранлӑ, ӗӗрӗунлӑ йапаласем ҫӗр ҫинӗе сийелте, пирӗн куҫ умӗнӗе тӑраҫҫӗ.

Анӗах пурӑнӑҫра кирлӗ пурлӑх нумайӗшӗ тата ҫӗр айӗнӗе пытанса выртаҫ. Пур хаклӑ. пурӑнӑҫра питӗ кирлӗ йапала ҫӗрте выртаҫ: ылтӑн, кӗмӗл, пӑхӑр, тимӗр, тӑхлан, ҫӗр кӑмрӑкӗ. нехтӗ тата та хисепсӗр нумай хаклӑ йапала. Малта асӑннӑӗӗ: етемӗн кулӗттурлӑ историйӗ ӗул, пронсӑ, пӑхӑр, ти-

мӗр ӗмӗрӗсене уйӑрӑлса тӑрать. Ҫакӑ етем куљттурӗ ђи малтан етем ҫӗрайӗнђи пурлӑхсене шыраса тупса, кӑларса усӑ йапала тума пӗлнинђен килет. Ҫакӑ хаљхи саманара тата та ытларах тӗрӗс: хаљхи пур куљттурӑ, техниккӑ, пур илемлӗ сивилисатсилӗ пурӑнӑҫ йӗрки етем ҫӗр айӗнђи пурлӑхсене усӑланнињен килет. Пирӗн саманана тимӗрпе пӑс ӗмӗрӗ теҫҫӗ, малашне електрӑ ӗмӗрӗ кайать теҫҫӗ. Ҫакӑ ак мӗне пӗлтерет: пур хапрӑксем, савӑтсем, ђукунҫулсем, трамвайсем, вӗҫекен кимӗсем, пӑрахутсем—пурте пӑспа електрӑ вӑйӗпе ӗҫлет. Пурне те тимӗртен, ђукунтан, хурҫӑран тунӑ; ҫак хӑватсемпех хуласенђе, ытти куљттурлӑ вырӑнсенђе лайӑх ҫуртсем тӑвӑҫҫӗ, ҫуталаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӑҫта тимӗрпе ҫӗр кӑмрӑкӗ—унта интустри, куљттурӑ, ӑҫта вӗсем ҫук—унта пурӑнӑҫ кайра тӑрать.

Ҫакна аса илсен, Ђӑваш оплӑҫне йурлӑ ҫӗр теме килет. Ђӑнахах та пирӗн ҫӗр айӗнђе метталл йе ҫӗр кӑмрӑкӗн шӑрши те ҫук. Ҫавӑнпа та епӗр халињђен интустриленеймен. Анђах ҫапах та пирӗн те, питӗ усӑлӑ ҫӗрайӗнђи пурлӑхсем пур.

Ҫав пурлӑхсенђен ђи малта лађака кӑмрӑкӗ торх тӑрать. Торхлӑ сисем Атӑлӑн сулахай йенђе Шупашкартан 4—5 ҫухрӑмра вырташшӗ. Ҫав сисем сайра вӑрманлӑ, лађакалӑ айлӑмсенђе вырташшӗ. Халињђен тӗплесе пӗлнӗ тӑрӑх сисем 4122 теҫеттине вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ; пӗлекенсем торх сисем тата 5 пин теҫеттине йышӑнса тӑмалла теҫҫӗ. Ҫав тӗплесе пӗлнӗ тӗлсенђе 4 мӗљйун куплӑ хӑлаҫ торх кӑларӑнмалла, тӗплесе пӗлмен ҫӗрсенђе тата 10 мӗљйун к. х. ытлашшипех пулмалла теҫҫӗ. Шупашкар торхӗ смалаллӑ, ҫавӑнпа хӗрӳлӗ, унтан тӗреклӗ кирпӗҫҫем туса айакка илсе кайма лайӑх. Пӗр куплӑ хӑлаҫран типӗтнӗ хутмалли питӗ лайӑх хатӗр 60 пӑт тухать. Торх сийӗсем тӗлӗпе 7—8 аршӑнра хулӑн. Ҫапла пирӗн лађакасен айӗнђе хисепсӗр нумай вутӑ выртать. Анђах хамӑр тӗттӗмлӗхпе епӗр унтан усӑ курма пӗлмен, хамӑра хамӑр сийен туса вӑрмансене ҫунтарса пӗтернӗ. Малашне апла пулмасть (ун ҫинђен малалла уйрӑм калӑпӑр).

Тата пирӗн оплаҫра хвосворитлӑ ђул пайтах. Хвосворит вӑл ҫаврака пысӑк мар ђул катӑкӗсем пек, вӗсен тӗсӗ тӗттӗм сӑрӑ, вӗсем авалхи сӑрӑрах йе хамӑртарах тӑм сийӗсен хушшинђе пулаҫҫӗ. Хвосворит питӗ усӑллӑ йапала: ӑна авӑртса ҫӑнӑх туса йе савӑтсенђе унтан суппенхвосват йатлӑ йапала туса тырӑ акакан ҫӗре сапаласа ҫирӗплеҫҫӗ: хвосворит ђи хаклӑ усӑллӑ ҫӗр имҫамӗ. Вӑл пирӗн ырхан тӑпрана питӗ кирлӗ, анђах тӗттӗмлӗхпе епӗр халињђенех унтан усӑ курма пӗлместпӗр. Хвосворит сийелерех сисенђех тупӑнать, ӑна ђаваласа кӑларма ҫӑмӑл, авӑртса ҫӑнӑх тума та ахаљ армансенђех авӑртма пулать. Оплӑҫра хвосворит нумайине ӗслӑлӑхҫӑсем тӗплесе пӗлнӗ—Раҫҫейӗн ҫӗрайӗнђи пурлӑхсен карттисенђе те пирӗн хвосворит курӑнса тӑрать. Хвосворит Сӑрӑпа Ҫавал хушшинђи Йетӗрне уйесӗнђе Нурӑс таврашӗнђи тӗмере ну-

май, унтан хвосворитлӗ сисем Атӑлан тулл̆а хӗррин̈ҫе те тупӑнкалаҫҫӗ.

Ҫав хвосворитлӗ тӑм сийӗсен̈ҫех тата кӳкӗртлӗ кал̈ҫатан нумай тупӑнаҭ. Кал̈ҫатан та ҫаврака ҫул катӑкӗсем йеверле выртаҭ. Ҫак ҫул питӗ хаклӑ—унтан саватра тимӗр ҫавӗ (серная кислота) туса кӑлараҫҫӗ.

Ҫӑвашшем халиҫҫен ҫак ҫултан усӑ курма пӗлмен—ӑна авалтан Йараслав кӗпӗрнин̈ҫи химилӗ саватсене турттарса тӑнӑ. Кал̈ҫатан ытлах та нумай Мӑн Ҫавал тураҫӗн Хӗрлӗ Сырми тӑрӑх тупӑнаҭ. Кал̈ҫатан малта асӑннӑ авалхи йура йатлӑ саманаран йулнӑ ҫӗр сийӗсен хушшин̈ҫе выртаҭ.

Тата ҫак таврарах ҫунакан ҫул слантсӑ пур тесе калаҫҫӗ, анҫах ӑна халиҫҫен никам та тӗплесе пӗлмен. Халах хушшинҫе, ӑслӑлӑхҫӑсен хушшин̈ҫе те оплӑҫра хӑшхӑш телте тимӗр тавраш пулмалла тесе те сӑмах ҫӳрекелет, анҫах ҫакӑ тӗрӗсех мар пулӗ.

Оплӑҫра ҫӗрайӗнҫи усӑллӑ сисенҫен ҫи нумайи—перем саманинҫен йулнӑ исвӗслӗ, тӑмлӑ, хӑйӑрлӑ сисем. Ҫав сисем Атӑлпа Сӑрӑ тӑрӑх, унтан пур ҫӳлӗрех тӗмелӗ вырӑнсенҫе выртаҫҫӗ. Ҫав сисенҫен ҫул, исвӗҫ, алепастӑр кӑлараҫҫӗ. Анҫах ҫак ӗҫ Ҫӑваш оплӑҫӗнҫе тытӑннӑ-тытӑнман ҫеҫ тӑраҭ: сайра пӗрре вырӑс йалӗсем ҫеҫ ӗҫлекелеҫҫӗ. Ҫак айалти сисенҫен мар, епӗр ҫӗрӗн ҫийелти хӑйӑрлӑ йе тӑмлӑ сисенҫен те усӑ курма пӗлейместӗпӗр. Пирӗн кирпӗҫ йе савӑтсапа тумалли питӗ лайӑх тӑм, Атӑлпа Сӑрӑ тӑрӑх кӗленҫе тумалли аван хӑйӑр сийӗсем хисепсӗр нумай выртаҫҫӗ, анҫах вӗсем усӑсӑр, сайа кайса выртаҫҫӗ.

Ҫапла епӗр ҫӗрайӗнҫи пурлӑхран пуйан мар, ҫавӑнпа пирӗн пурӑнӑҫ малашне те ҫаплах, аслӑ интустрилех пулмалла мар. Ҫавӑнпа та пирӗн ҫӗрайӗнҫи пур пурлӑхсене ҫӗплесе пӗлсе вӗсенҫен те пулин усӑ курса пурӑнӑҫа малалла йамалла.

* * *

Малта епӗр тӑван ҫӗршыва тӗрлӗ йенҫен пӑхса тухрӑмӑр. Хамӑр ҫуралнӑ ҫӗршыв, хамӑр ҫуралса ӳснӗ килҫурт пек: тирпейлӗ килҫуртра ҫителӗклӗ тирпейлӗ пурӑнӑҫ пулаҭ, саланнӑ йурлӑ килҫуртра наҫар, ҫуклӑхпа пӑнҫахнӑ пурӑнӑҫ пулаҭ. Авалхи ҫӑвашшен ама вырӑнне хисеплепекен ҫӗр пуйан пулсан—уп ҫинҫе пурӑнакан етемӗн пурӑнӑҫӗ ҫаплӑ пурлӑхлӑ пулаҭ, апла пулмасан—пурӑнӑҫ та ӗмӗтлӗ пулмасҭ. Пӗр ӑслӑлӑхҫӑ каланӑ тӑрӑх—ҫӗр ҫӑмӑрне етем йӑхӗн сӑпки вырӑнне хисеплеме пулаҭ: йепле аҫа сӑпкара аҫапланса ӳсӗ аталанаҭ, ҫавӑнпекех етем ҫӗр ҫинҫе унӑн сӗткенне, ырлӑхне ӗмсе, унтан усӑ курса пурӑнӑҫ йӗркине майлаҭ. Ҫавӑнпа ҫӑваш пурӑнӑҫне пӗлес тесен ҫи малтан унӑн тӑван ҫӗршывне тӗплесе пӗлес пулаҭ. Ҫакна пӗлтерес тесе епӗр ҫӑваш ҫӗршывӗ ҫинҫен тӗрлӗ йенҫен каласа кӑтартрӑмӑр: унӑн ҫӗр ҫа-

мăрĕ çинҫи, унтан Раççейри вырăнĕ çинҫен, унăн пысăккăшĕ, ҫиккисем, кӳршисем çинҫен, унăн çĕрĕн çийелти çийĕсем, айалти сийĕсем, тăприсем, шывшурĕсем, çанталăкĕ, ӳсетăранĕсем, ҫĕрҫунĕсем, çĕрайĕнҫи пурлăхĕсем çинҫен.

Çакна пурне те асăрхасан, сăмах вĕçĕнҫе мĕн калама килĕшӳлĕши?

Çакна калас пулаť: ҫăваш çĕршывĕ хăйĕн тĕрлĕ пурлăхĕпе ытла пуйан та мар, ытла йурлă та мар—вăтам ырлăхлă. Тырă тăвас тĕлĕшĕнҫен Раççейĕн çурри ытла çĕрĕсем Ҫăваш оплăçĕнҫен кайра тăраççĕ. Çавăнпа çак йенҫен пирĕн пĕртте ӳпкелешмелли çук. Тĕрлĕ йенҫен тупăшлă ĕçе тапратса йама, оплăçа интустрилеме пирĕн çĕр айĕнҫе метталл таврап та сахал. Анҫах çак тĕлĕшĕнҫен Раççейĕн çурри ытла кĕпĕрнисем те пирĕн оплăçран ытла уйрăмах мар, нумайĕшĕ оплăçран наҫартарах çĕр те йышăнса тăраççĕ. Епĕр Раççейре ҫи лайах Атăл шывĕн çулĕ çинҫе урапа пусса тăратпăр, унтан тавар хăвалама, сулă хăвалама пирĕн Сăрă, Кокшак, Çавал шывсен çулĕсем пур, пирĕн Раççейре те, ытти патшалăхсенҫе те паллă йуманпа хырă вăрманĕ нумай, çĕр айĕнҫе те пирĕн пурлăхсем сахал пулсан та çапах пур—çавăнпа пирĕн çĕрте промăшлĕннăç та малапне ӳссе аталанма пултарĕ.

Анҫах çапла пирĕн çĕршыв наҫар пулмасан—мĕшĕн епĕр ытла та йурлă пăнҫăхса пурăнатпăрши? Çакă çĕршывран мар, халăхран хăйĕнҫен: унăн историйĕнҫен, йышăннă пурăнăç йĕркинҫен, хастарлăхĕнҫен, пĕлнинҫен килет. Çавăнпа çак тĕлĕшĕнҫен айăп хамăра çеç тивет, ун çинҫен тĕплĕрех малалла калăпăр.

II. ХАЛӐХ ПУРЛӐХӖ.

Халӑх пурлӑхӗ, унӑн пуйанлӑхӗ икӗ тӗп никӗс ҫинҗе лараҋ: пӗр никӗсӗ—ҫӗртен, ҫаранран, вӑрманран, сатран, пахҗаран, выҗӑхран, ытти тӗрлӗ җӗрлӗхрен усӑ курасси, тепӗр никӗсӗ—ҫӗр айӗнҗе выртакан тӗрлӗ пурлахсене: кӑмрӑка, тимӗре, пӑхӑра, тӑвара ытти йапаласене те җаваласа илсе хапрӑксенҗе, савӑтсенҗе йусаса усӑллӑ тӑвасси, унтан ҫӗрӗҫлӳрен, выҗӑх, ытти тӗрлӗ җӗрлӗх усраса, вӑрман ӗҫӗпе кӗрмешше туйаннӑ тӗрлӗ йапалана: пӗрҗе, тире, ҫӑма, йӑвӑҫа ытти йапалана та ҫав савӑтсенҗех йусаса тата та усӑлӑрах тӑвасси. Ҫаксенҗен пӗр пурлӑх никӗсне епӗр йалхуҫалӑхӗ, йалпурлӑхӗ тетпӗр, теприне тупӑшлу, интустри, промӑшлӗннӑҫ тетпӗр. Ҫапла тӗнҗери пур пуйанлӑх, пур халӑхӑн пурлӑхӗ йалхуҫалӑхпа промӑшлӗннӑҫран килет. Ҫавӑнпа Җӑваш оплӑҫӑн халӑх пурлӑхне тӗплесе пӗлес тесен, ӑна җи малтан ҫак икӗ йенҗен тишкерсе пӑхас пулаҋ. Унтан тата халӑх пурлӑхӗ тӗреклӗ пултӑр тесен пур тунӑ усӑллӑ йапалана пӗр вырӑнта вырттармалла мар: ӑна ӑҫта кирлӗ ҫӗре ӑсатмалла, сутмалла, улӑштармалла, ҫавӑнпа халӑх пурлӑхӗ малалла җарӑнми йусанса пытӑр тесен, тавар ҫӳретме йурӑхлӑ җукун, шыв, җул ҫулӗсем, кӗскен каласан транспорт ҫӳлӗсем кирлӗ. ҫапла ӗҫлесе тунӑ тавара айакран кайалла малалла ҫавӑрӑнтарса тӑма, тата телехвонсем, телекрахсем, ратиосем, кӗскен вырӑсла каласан ҫвеҫ, җӑвашла каласан ҫыхӑ кирлӗ; унтан тавар ҫавӑрӑнӑҫне майласа йусаса тӑма питех сутилӳ мулӗ, сутилӳ вырӑнӗсем кирлӗ; йулашкинҗен тата ытларах йалпурлӑхӗнҗен, промӑшлӗнӑҫран, сутилӳрен пулакан мул уйрӑм каппитталҫӑсен аллине ан лектӗр тесен тӗрлӗ хӑватлӑ пурлӑх пӗрлешӗвӗсем коопператтси кирлӗ. Ҫак пур асӑннӑ йенҗен җӑваш халӑх пурлӑхне тишкерсе пӑхса тухсан ҫеҫ епӗр Җӑваш оплӑҫӑн хуҫалӑхне пӗлетпӗр ӗнтӗ теме пултаратпӑр. Ҫавӑнпа малалла пур асӑннӑ пурлӑх йенӗсем ҫинҗен епӗр кӗскен уйрӑм калатпӑр.

1. Йалхуҫалӑхӗ.

Йалхуҫалӑхне йусаса малалла йарасси җи малтан ҫӗршыв ырлӑхӗнҗен йе усаллӑхӗнҗен килет. Ун ҫинҗен епӗр малта тӗплӗ каласаттӑмӑр. Унтан тата йалхуҫалӑхӑн усӑллӑхӗ, хӑватӗ халӑх мелӗнҗен, пӗлнинҗен, вӑл авалран йышӑннӑ пур-

лăх йăлисенҫен, йеркисенҫен килет. тата та ытла халăха хупăрласа тăракан историрен ларса йулнă пĕтĕм пурăнăç йĕркинҫен, ытларах та, тата економиккă условисенҫен, йĕритавра халăха ыталаса тăракан пурлăх йерки—хăватĕнҫен килет. Малтан епĕр ҫăваш йалхуçалăхĕн историйĕ йе аваллăхĕ çинҫен кĕскен калăпăр.

Аслăлăх кăтартнă тăрăх тĕп авал етем хиркайăк пек пурăннă—мĕн тĕлпулнă ана çинĕ: курăк тымарне, хурткăпшанка, йăвăç çимĕçĕсене. Выҫăх усрама, çĕр ĕçлеме, кайăкçăласа ашпăш тупма вăл пĕлмен. Мĕҫйуншар çулсем иртсен çак историҫҫенхи етем хăйне çимĕç тупма ҫулран йе шăмăран орутисем тума вĕреннĕ, хăйне пурăнма хӳшĕ тавраш тума пĕле пуçланă, вуткăвартан усă курма йурăхлине сиснĕ, çеçенхирсенҫе йе вăрмансенҫе çӳрекен усăллă ҫĕрҫунсене хăйĕн вуҫахĕ хӳшши тавращĕнҫе пурăнма илештерне. Авал етем пĕр вырăнта пурăнман: йалан хăйне усăллăрах вырăнсем шыраса пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçça çӳренĕ. Çак куçça çӳрекен етемсем çĕре ҫавалакаласа тырăсем аккаласа, кĕтӳсем усраса, кайăкçăласа, пулăсем тытса хăйсене тăрантарнă.

Çапла хуçалăх йеркипе пурăнакан халăх халĕ те тĕнҫере пайтах, çапла ҫăвашпа пĕр ăруран тухнă халăхсем: кăркăссем, сартсем ыттисем те хаҫиҫҫенех пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçça çӳресе кĕтӳсем усраса тăранса пурăнаççĕ. Христос çуралнă саманасенҫе ҫăвашшем те Аçире пĕр вырăнтан куçça çӳресе тăранса пурăннă. *Çапла авал ҫăвашшен йӳрĕклĕ вырăсла каласан коҫҫевой йатлă пурăнăç йĕрки пулнă.* Ҫăвашшем авал çапла пурăнни тĕрлĕ йенҫен паллă: пирĕн сăмахра, халлапсенҫе, йурăсенҫе, тĕрлĕ калавсенҫе асăнанакан тинĕссем, арăслансем, ăмăрткайăксем, урхамахсем, упăтесемпе маймăлсем, тĕрлĕ хăрушă çĕленсем ытти пирĕн çĕршывра пулман, çапах халăх ăсенҫе йулнă йапала та ҫăваш халăхĕ авал тĕнҫене касса тĕрлĕ тĕле куçça çӳренине палăртать. Унтан ҫăвашшем хаҫхи тăван çĕре пусиҫҫен (вăл Христос çуралсан VII-мĕш ĕмĕрте пулнă) йӳрĕклĕ пурăнăç йĕркипе пурăннине пирĕн ҫĕлхе тĕпех тĕрĕсрен каласа парать: ҫăваш сăмахĕ пӳрт çармăссенҫен хвин йăхĕнҫен йышăннă сăмах, çакă ҫăвашшем Раççей çĕрĕнҫе хвинсемпе кӳршĕленниинҫен йăвăçран пĕр тĕлте пурăнма пӳртсем тума пĕлменнине, çак ĕçе хвинсенҫен вĕреннине пĕлтерет пулмалла, тепĕр йенҫен ҫăваш сăмахĕ çурт халĕ Аçири пирĕн тăван халăхсен йурт тенĕ сăмаха пĕлтерет, йурт тесе вĕсем ĕмĕр пĕр вырăнта пурăнма тунă çурта каламаççĕ—çапла вĕсем шалçасем лартса, пирпе, кĕççепе витсе тунă хӳшĕсене калаççĕ, çавăнпа ҫăваш сăмахĕ çурт авал çав йӳрĕклĕ пурăнăçра кирлĕ хӳшше пĕлтерет пулмалла; ҫăвашшен карта тенĕ сăмахĕ те хвинсенҫен йышăннă сăмах, çакă та авал ҫăвашшем карта тытас йăлана пĕлменнине кăтартать, апла пулсан çак вĕсем пĕр вырăнта нумайҫҫен пурăнманнине пĕлтерет. Унтан ҫăвашщен карташĕнҫе хӳшĕ йевĕрлĕ лаç

таваҫ йала. йашкапа ђукунпа мар, хуранпа пĕҫерес йала ытти тĕрлĕ йаласем те ҫавнах пĕлтереҫҫĕ.

Ҫак саманара ђавашшем *вылђах усраса кĕтӳсем ĕрђетсе таранса пуранна.* Ҫакан ҫинђеп те ђĕлхе историйепе йаласем пире каласа параҫҫĕ. Йышла, паттар вырас халахĕ лашана халĕ лошат тесе ђĕнет, авал вал ана коң тесе ђĕннĕ, аслалах ҫак самаха вырассем тутарсенђен йе ытти тӳрк халахĕсенђен мар, ђавашшенђеп ҫеҫ йышанна тет. Венкрире пуранакан майарсем вакара пĕлтерекен самаха ђавашшенђен йышанна, ђавашшене ҫывах пуранакан ытти хвин йахĕсем те вылђах йађĕсене нумайĕшне ђавашшенђеп йышанна. Ҫак ђавашшен авал вылђах нумай, кĕтӳсем йышла та вайла та, пулнине, вĕсем вылђахпа славин йахĕсемпе, хвин йахĕсемпе сутилӳ питĕ вайла тунине пĕлтерет. Ҫакна ђавашшем халĕ те вылђаха йуратса усрани, ана вай ҫитмесен те ĕрђетме тарашни те пĕлтерет.

Ҫак авалхи саманарах ђавашшем *ҫĕр ĕҫлеме, акса тыра ӳстерме пĕлнĕ.* Анђах ҫак ĕмĕрсенђе вĕсем тыра сахал акна —ытларах аш ҫисе пуранна (такана пĕтĕмпех хурана йарса пĕҫерсе ҫара аша ҫакарсар ҫийес йала тĕлĕ тĕлĕпе пирĕн манасаттесен ĕмĕрĕнђе те пулна). Ҫак вахатра ђавашшем вир, урпа, тула акна. Ыраш тенĕ самаха ђавашшем вырассенђен йышанна: ҫак каллех ђавашшем авал ыраш акман Аҫи ҫĕрĕсенђе пуранннипе, ырашпа халђхи ҫĕршыва килсе пуссан ҫеҫ паллашнине пĕлтерет. Ђантан ҫĕр ĕҫлеме ђавашшем Аталан ватам таврине йышансан ҫеҫ тытанна. Ҫĕр ĕҫлекен орути ђавашшен тĕп авал вĕҫне пахар хывна йываҫ турађĕ пулна. ана ака тенĕ. ҫак самаха вĕсем ҫак саманара кӳршĕлĕ пуранна майарсене те йышантарттарна. Палхари патшалахĕ вахатĕнђе ђавашшем пĕр тĕренлĕ, ик-виҫ тĕренлĕ те акапуҫҫем тума вĕрĕннĕ: акапуҫĕн станне йаваҫран туна, тĕренĕсен вĕҫне хурҫалана тимĕр хывна, акапуҫне таватшар, ултшар, саккаршар лашапа турттарттарна. Ҫак акапуҫне тума вĕренсен ђавашшем тыра питĕ нумай акма тытанна—питĕ тырапа пуйса кайна, тырапа вайла сутилӳ туна, тырра Атал тарах славинсене леҫҫе тана, выҫлах ҫулĕсенђе выҫа вилекен вырассене тыра нарса вилĕмрен хатарна. Ҫаванпа ҫак акапуҫ ђавашшен питĕ пысак хисепре тана, ҫаванпа та ана акас ĕҫĕн пуҫĕ тесе йат пана, акана хисеплесе туна акатуйсене тĕп авал акапуҫҫене те илсе тухна, вылђаха, етеме ђир аптаратма тытансан хераки туна: йал тавра херсем акапуҫне турттса ҫаварсан ђир йала кĕме пултараймаст тенĕ, акапуҫ тимĕре ђире харатат, йамаст тенĕ. Ҫак ĕмĕрсенђе ђавашшен *тыра пусĕсем пулман:* вĕсем тырра уйра аҫта аван ҫĕрте ҫерем уҫҫа улађала акна, пĕр ҫерем уҫҫа апа туна ҫĕрте тырра 10—50 ҫул акна, унтан ҫĕр ырханлансан ҫав анасене парахса урах тĕлте ана туна, ҫав парахна, канма хаварна ана вырăнĕсене парлак тенĕ. Унтан пыра киле ђавашшем *уйсене икĕ*

пуссă çавăрнă: пĕр пусне тырă акнă, тепри пĕр çул канса тăнă. Çĕр тăвăрлана пуçласан, ытлаш нумай акма тытăнсан *йулашки ĕмĕрсенҫе ҫăвашшем уйсене виçĕ пусса çавăрнă*. Çĕр тăвăрланса çитсен, уçмалли çеремсем сахаллансан, вылҫăх та ҫаксан ҫăвашшем вырăссенҫен пĕр лапа кӳлмелли орути сухапуç йышăннă. Унтан тата çак сухапуçне йышăнасси ак мĕнтен килнĕ: тутарпа вырăс пусмăрĕ хĕстере пуçласан ҫăвашшем çурри ытла вăрманпа витĕннĕ çĕрсене ҫикĕннĕ: тымар кăларса тунă уйсене сухапуçпе сухалама авантарах пулнă, унтан çав çĕрсем сăртлă, çырмалă ҫăрмалă çĕрсем пулнă: вĕсене акапуçпе акалама меллĕ пулман. Çапла ҫăвашшем çĕр ĕçлеме тытăнни пин çул ытла, хаҫхи виçпуслă уй йĕркине йышăнни 2—3 çĕр çул ытла. Çĕрĕçлӳрен, вылҫăхусруран пуçне ҫăвашшем авалранах *сат, пахҫа, хурт ĕçĕпе, кайăксем. пулăсем тытса усă курнă.* Анҫах Аçийĕн çеçенхирсенҫе куççа çӳренĕ ҫух çак йалхуçалăх тĕлĕшĕсенҫен вĕсем сахал усă илнĕ пулмалла: вĕсем çӳренĕ çĕрсенҫе вăрман, шывшур сахал пулнă, çак пирĕн тăван ҫĕлхерен те паллă: сат, хăмла, ухута (кайăкçăлу) йаҫĕсем вырăс ҫĕлхинҫен йышăннă сăмахсем, пахҫа йаҫĕ те йут сăмах. Çапах та çак ĕççемпе те ҫăвашшем авалах паллашнă пулмалла: ҫăваш ҫĕлхинҫе пур кайăкçăлама йе пулă тытма кирлĕ орутисен йаҫĕсем пур, пур çимĕçлĕ йăвăççен пахҫасенҫе ӳсекен çимĕççен йаҫĕсем пур, çав йапаласене пĕлтерекен сăмахсене ҫăвашшем кӳршĕлĕ хвин йăхĕсене те йышăнтарттарнă. Çак историрен те паллă: вырăссен летăпĕç тийекен çулçырăвĕсенҫе ҫăвашшем Мускава авалран пыл леçнине, кайăксен хаклă тирĕсене леçнине йаланах историçĕсем асăнаççĕ. Çапла ҫăваш йалхуçалăхĕ 1000 çул ытла ĕмĕрлĕ. Çавăнпа пур Раççейри *аслăлăхçăсем те ҫăвашшене тĕп авалтан çĕр ĕçлесе пурăнакан халăх теççĕ.* Çак хаҫхи саманара та ҫăвашшем çĕре ытти кӳршĕлĕ халăхсенҫĕн: тутарсенҫен, çармăссенҫен, хамăр çĕрти вырăссенҫен те тирпейлĕрех ĕçленинҫен те паллă. Çапла ĕнтĕ епĕр кĕскен ҫăваш йалхуçалăхăн авалне, историне каласа патăмăр, малалла хаҫхи йалхуçалăх çинҫен тĕплĕрех калăпăр.

Ҫăваш йалхуçалăхăн *ҫи пысăк сийене, ҫи ĕмĕртен ылхавлă сийене çĕр çитменнинҫен, çĕр тăвăрринҫен килнĕ.* Ҫăвашшене 600—700 çул авал паттăр халăхсем тутарпа вырăс йĕритавра хупăрласа илсе, ҫăваш çĕршывне колонисаттсилеме тытăнсанах ҫăвашшен çĕр хĕсĕнме тытăннă. Ҫăваш историнҫе пулнă вăрçăсем, çапăçусем, пăлхавсем ытти тĕрлĕ кĕрешӳсем пуринҫен ытла çĕршывпăн тавлашнинҫен тухса кайнă. Ҫăваш пĕр пусăм çĕрне те, пĕр татăк шыва, вăрмана, çарана та колонисаттăрсене çапăçса ывăнмасăр паман, пирĕн таврари пур çĕр те авалран пирĕн мăнасаттесен йунĕпе пĕвенсе тăраннă. Ҫăваш хура халăхĕн ирĕклĕ çĕрне авалран ҫăваш мăрсисем, турханĕсем, тӳрисем туртса илсе аптăратнă, кайарах тутар ханĕсен, тата кайарах ытларах та вырăс патшисен

тарçисем: улпуҫёсем, çарпуçлăхсем, тўрёсем, хўсахсем, унтан тёрлё вăрхурахланса çўрекен сынсем ҫăвашшене ёмёртен пуранна çёршывран хăваласа ирёклё çёртен тăвăр çителёксёр çёре хăварнă. Ҫăваш халăхён йулашки ёмёрёсем пуринҫен ытла çёршён тавлашни пе иртнё: çавă нумай йалсенҫе 3—4 çёр тăршшёпе сыхланакан тёрлё хутсенҫен паллă, авалхи кёнекесенҫен те паллă. Хайар Иванран пуçласа йулашки ёмёрҫенех ҫăвашшем йалан Мускава шалупа çўрене, Кётерине патша ҫухнехи çёнё саккун кăларма пухнă камиççпре 7 ҫăваш пулнă—вёсен малтанхи сăмахё «ҫăвашшен çёр тăвăр, ҫăваша улпутсем пусмăрлаççё» тенё сăмах пулнă. Ҫăваш оплăçёнҫе пёр арçын йатне виç пусра 4 теçеттине çеç хирани тивни ёнтё çёр çул ытла иртрё. Çапла çак саманарах ҫăвашшен çёр ирёккён акса уса курса пурăнма çителёклё пулман.

Пирён ёмёрте ҫăвашшене çёр çитменни пётёмпех касса тăрать. Ҫăваш оплăçёнҫе етем пите хёсёнсе, пёр пёрне тăвăрласа пурăнать, ҫăваш оплăçёнҫе тăваткăл çухрăма 60 сын йышăнса тăрать, ҫăваш çёрёнҫе йал çинҫе йал ларать—мёнпурё 1800 йал ытла. Çак тăваткăл çухрăмра миçе сын пурăннине вырăсла *плотнăç* теççё, ҫăвашла *питеш* теме йўрать. Кўршё çёрсенҫе питёш çапла паларса тăрать: Сармăс оплăçёнҫе тăваткăл çухрăмра 22 сын, Тутар респупликкинҫе 48 сын, Ҫулхулапа Ҫёмпёр кёпёрнисенҫе 47 сын, Самар кёпёрнинҫе 30 сын. Ҫăвашшенҫен питёшрех Раççейре Мускав кёпёрни, унтан Кийев таврашёнҫи кёпёрнесем çеç пурăнаççё. Унтан тата Ҫăваш çёрён виççёмёш пайне вăрман хупласа тăрать, çавăнпа пирён çёр ытларах та хёсёк. Аçта çёр тăвăрланса çитет, унта халăх тёрлё йенҫен тупăшласа промăшлёнăçпа тăранса пурăнать йе çёнё етем пусман çёрсене куçать, вёсене колонисатсилет. Хёвеланăçăнҫи аслă патшалăхсенҫе питёш питё пысăк: çапла Анклире тăваткăл çухрăмра 154 сын пурăнать, Керманире 128 сын, Итталире 124 сын, Хрантсире 78 сын, анҫах унти халăхсем çёр ёçё çине çеç тёрепсе пурăнмаççё—вёсен интустри питё аслă, хăватлă, уп тупăшёпе çав халăхсем питё пуйан. Çавăнпа *аслăлах интустрийен пёр никёслё пуканё халăх питёшлё пурăннинҫен килет* тет. Анҫах çакă натсилё пуçмăрпа, колониаллă политтиккăпа лăсканнă халăхсен телёшёнҫен тёрёс мар: Киттайпа Интире питёш хёвеланăçри патшалăхсемпе танлаштарсан 2—3 хут пысăк, çапах унта интустри çук; Ҫăваш оплăçёнҫе те питёш вырăс вăтам кёпёрнисенҫен те пысăк пулсан та промăшлёнăç çук—çак та ҫăвашшем натсилё пусмăр айёнҫе пурăнниңҫен килет. Унтан аçта çёр тăвăрланса çитет—унтан *халăх урах çёрсене куçма тытанат*: çапла вырăссем вăтам кёпёрнесенҫен халăх ёрҫекёçёмён хёвелтухăçнелле куçнă, çёпё çёрсене йышăннă, вёсене колонисатсиленё, анҫах çуклăхпа пăнҫахнă, пусмăрпа аптăранă, тёнҫене тухма хăранă. патшалăх ҫёлхипе пёлмен ҫăваш халăхё ытти çёрсене: Сепёре, Туркестана, Капкаса куçма

ытти халăхсем пек хавас пулман, историллĕ колонисатси йухăмĕнђен пĕр хĕррин ђетăнă. Савăнпа та ђăваш оплăçĕ пĕтĕм Атăлăн тавринђе ђи хĕсĕк çĕр, çавăнпа та пирĕн пек тăвăрланса пирĕн таврара никам та пурăнмасť.

Оплăç територине çапла *укотисем* йышăнса тăраççĕ: тырани 46°/₀, вăрман 34°/₀, çаран 3,9°/₀, çуртвырăнĕ 3,3°/₀, кĕтӳани 2,9°/₀, йурăхсăр çĕрсем 9,3°/₀.

Çак укотисенђен йурăхлă çĕрсене тытса *уса курса тăраççĕ*: хресђенсем 56,1°/₀, патшалăх 34,6°/₀, хуласем 0,5°/₀, йалпурлăхлă коллективсемпе тĕрлĕ пĕрлешӳсем 0,2°/₀. Çапла пирĕн çĕрĕн виççĕмĕш пайĕ ытлашшипех хысна аллинђе тăраť—çав хысна аллинђе тăракан çĕрсем пирĕн вăрмансем пулаççĕ. Вăрманлăх пысăккипе, тата вăрмансем хысна аллинђе тăнипе ђăваш хресђенне çĕртăвăрлăхĕ çак майпа тата та ытла хĕссе тăраť.

Халĕ пирĕн йата çĕр мĕнпурĕ теçеттине ытларах, пĕр килйыша ултă теçеттинерен кайарах тивет, уйрăм вулăссенђе çĕр тата та ытла сахал—çапла хăш вулăссенђе килйыша икĕ теçеттинерен те кайа çĕр тивет. Ђăваш шен йепле çĕр сахаллине пĕлес тесен çакна пĕлес пулаť: XX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламашĕнђе Раççейре вăтамран пĕр килйыша 11 теçеттине çĕр тивнĕ, çав вăхăтрах Самар кĕпĕрнинђе 17.6 теçеттине, Хусан кĕпĕрнинђе 10.1 теçеттине, Хусан кĕпĕрнин ђăваш уйесĕсенђе 7 теçеттине тивнĕ. Револђутси пулнăраппа пирĕн çĕр çитменни ытти çĕрсемпе, ытти халăхсемпе танлаштарсан тата ытла витĕр курăна пуçларĕ: ђăваш оплăçĕнђе улпут çĕрĕ пĕртех пулман, хыснан та вăрманран пуçне аналлă çĕр пулман, çавăнпа револђутси ырлăхĕпе ђăваш хресђенĕ пĕр шит çĕр те тӳйанаймарĕ, улпутпа хысна çĕрĕсем ĕлĕкхи улпутлă хресђенсен аллисене çеç лекрĕç. Çапла пирĕн истори парнеленĕ телейсĕрлĕх ытла та пысăк, ытла та йăвăр: патшана сирпĕтсен, улпутсене хăваласа йарсан та епĕр ĕмĕр ĕмĕтленнĕ çĕр касăлса ӳсессине курайммарăмăр. Çак çĕртăвăрлăхăн сийенĕ, вăл халăха аптăратни каламасан та паллă, анђах çапах ун çинђен епĕр пĕр сăмах каламасăр пултараймастăпăр: йалхуçалăхне мала йама, ăна ăслăлăх кăтартнă пек ĕçлеме, кĕскен ăслăлăх ђĕлхипе каласан ăна интенсихвитсплеме хресђен килйышне ђи малтан мул кирлĕ, унтан çав мула усламлă хума прĕккĕн çĕр кирлĕ: çителĕклĕ çĕр пулмасан нихăçан та мул пулмасť, унтан йепле те пулсан мул тупсан ăна çук çĕр çине йарсан, вăл усăсăр пĕтет. Çапла йалхуçалăхне ђăнтан интенсихвитсилес тесен çĕре хаклă машшинăсемпе ĕçлес пулаť, ăна çĕр имçамĕсемпе çирĕплес пулаť, хаклă култтурăсем акас пулаť, пумай лайăх йăхлă выђăх тӳйанас пулаť, анђах çапла тума ђи малтан мул кирлĕ. Пирĕн хресђенĕн йата вăтамран 0,45 теçеттипе, килйыша 2,28 теçеттине акăнаť, акнă тырри ăна çиме те çитмест, апла пулсан йепле майпа вăл хайĕн хуçалăх йĕркипе малалла йама пултарĕ? Çав çук çĕр

çинҫе хăйĕн хуçалăх йĕркине малалла йама тĕрлĕрен тăрăшшан та, çак ĕçе йепле те пулса тупнă мулпа малалла йама тăрăшшан та—унăн хуçалăхĕ малалла кайас çук, унăн тăрăшни, ĕçленни, хунă мулĕ тивĕçлĕ услампа сапланас çук. Çакăн çинҫен хресҫен хуçалăхĕн еккономиккă йатлă ăслăлăх тӳрех калаť: *хресҫенĕн килйыша çĕр 8 теçеттинерен кайа тивсен хуçалăхĕ малалла кайаймасť*, çавăн пек хресҫен çĕре нумай пусăлă туса, куракксем акса, выҫăх ĕрҫетсе, çĕре машшинăпа ĕçлесе, ăна имçампа мăнтăрлатса пурăнăçне малалла йараймасť. Çак тĕрĕсси ҫăваш йалхуçалăхне астусан питех те паллă: ҫăваш йалхуçалăхĕ кӳршĕ халăхсенҫен халĕ кайра тăраť, нумайĕшĕ çавăншăн ҫăвашшене айăплаççĕ, «вĕсем хăйсем çавăн пек тĕттĕм, çĕре машшинăпа ĕçлешшĕн мар, шултăра авăн выҫăха йуратмаççĕ» теççĕ; анҫах çак пĕтĕмпех йăнăш сăмах: ҫăваш çĕр ĕçне йуратаť, тăрăшша ĕçлет, анҫах çав ĕçе малалла йама ăна халҫхи малта асăннă еккономиккă условисем памаççĕ. Çак тĕрĕсси ытти патшалăхсенҫи хресҫенсен хуçалăхне сăнасан та паллă: çапла йалхуçалăхпа малта пыракан Америккă хермĕрĕсем, Тани, Кермани хресҫенĕсем пирĕн хресҫен пек çук çĕр çинҫе пăнҫăхса пурăнмаççĕ, вĕсен çĕр пирĕннĕнҫен нумай ирĕклĕрех. Ак мĕншĕн епĕр малта пирĕн çĕр çитменни, çĕр сахалли ҫи пысăк, ҫи ĕмĕр ылхавлă сийен терĕмĕр. Çак сийене епĕр пайанхи кун çеç мар, малашне те тахçанҫен сисмелле; çак сийен пайан çеç пирĕн хресҫене аптăратса тăмасť, вăл унăн малашнехи ĕмĕтне те касса, татса тăраť. Çавăнпа ҫăваш йалхуçалăхне ҫăнтан малалла йарас тесен çĕр ĕçлекен хресҫенĕн çĕрне ирĕклĕлетмелле: ҫăваш хресҫенне йата çĕр икĕ теçеттинерен кайа ан тивтĕр, килйыша 10 теçеттинерен кайа ан тивтĕр—вара тин ҫăваш та хĕвеланăçри халăхсен йалхуçалăх йĕркине йышăнĕ. Анҫах çакна йепле тума пулаťши? Çак пирĕн йалхуçалăхăн, пирĕн пур пурлăх йĕркийĕн, пур еккономиккăн никĕслĕ ыйтăвĕ, тĕп тупсăмĕ: çак ыйтăва сӳтсе пăрахмасан, çак тупсăма тупса çӳретмесен епĕр йалхуçалăха малалла хаватлă йама пухăшлама та пултараймастăпăр. Çапла тăвас тесен пирĕн халĕ ĕçленекен çĕр çинҫе хресҫенĕн çурри çеç ĕçлесе пурăнмалла, ытти çурри урăх ĕç йе урăх вырăн шырамалла. Пĕр сухапуçне виççĕн тытас йăлана пăрахса, лашасăр йе пĕр лашаллă хуçалăх тăвас йăларак писсе ҫăвашшенҫен çурри ытла тĕрлĕ урăх йенҫен тупăшлама тăрăшмалла: тĕрлĕ ăсталăха вĕренсе усă курма, хапрăксенҫе, савăтсенҫе ĕçлеме, хуласене куçса хула пурăнăçне хăнăхма тăрăшмалла. Çапла тăвас тесен *ҫăваш çĕрне пĕтĕмпех интустрилеме кирлĕ*: хапрăксем тума, савăтсем тума, алăсталăхлăха малалла йама, ҫăваш хулисене ҫăвашлатса аслăлатма кирлĕ. Çапла ҫăваш йалхуçалăхĕн никĕслĕ ыйтăвĕ тепĕр пирĕн еккономиккăн тĕп никĕслĕ ыйтупа—промăшлĕнăç тăвас ĕçĕн ыйтăвĕпе уйрăлми çыхăнса тăраť. Анҫах пĕлес пулаť: интустри пĕлĕтрен анас çук, ăна вăрахăн тарласа ĕçлесен çеç ту-

ма пулаҭ, ҫавӑнпа ҫӗре ирӗклетес тесен урӑх йенҭен те шухӑшлас пулаҭ: ҫак урӑх йенӗ хресҭенрен пӗр пайне ҫӗнӗ ҫӗре куҫарасси. Ҫак тӗлӗшӗнҭен ҭи малтан ҭӑваш ҫӗрӗнҭи сӗмвӑрмансене, *Атӑлпа Сара шывӗсен тарӑх ирӗк выртакан ҫӗрсене ҭавашшем куҫҫа йышӑнмалла, вӗсене колонисатсилемелле.* Анҭах пирӗн оплӑҫра ҫапла куҫҫа ларма йурӑхлӑ ҫӗр 100,000 теҫеттинерен те ытла мар, ҫапла ҫав ҫӗрсене пурне те йышӑнсан та пирӗн йалсенҭен мӗнпурӗ 50,000 ҫын ҫеҫ куҫма пултараҭ, ҫапла оплӑҫра ҫӗнӗ ҫӗрсем ҫинҭе хресҭенӗн вунпиллӗкмӗш пайӗ ҫеҫ шӑнӑҫма пултараҭ. Ҫавӑнпа епӗр урӑх айакри ҫӗрсене: Ҫӗпӗре, Турккестана, ытти тӗлелле те куҫма та тишкерсе шухӑшламалла. Анҭах халӑха йӗлӗкхи пек куҫармалла мар: куҫакансене патшалӑх пысӑк пулӑшу памалла, ҭӑвашшене ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе уйрӑм вулӑссене, уйрӑм уйессене куҫармалла, Ҫӗпӗрте, Турккестанра ҫӗнӗ ҭӑваш вулӑсасем, уйесӗсем тумалла.

Ҫапла йентӗ ҭӑваш йалхуҫалӑхне малалла йарас тесен епӗр ҭи малтан ҫӗре ирӗклӗлетмелле, йепле те пулин ӳстермелле терӗмӗр. Анҭах ҫак тӗлӗшӗнҭен тӳрех калас пулаҭ: пирӗн ҫӗрӗҫлекенсен ҫӗрӗ нихӑҫан ытла нумайах ӳсес ҫук, мӗн ӳсни те халӑх ӗрҭесе ыннипе нимӗне тухса пырӗ. Ҫавӑнпа пирӗн тӗп шухӑша урах йенне йамалла: ҫав шухӑш халӗ йышӑнса тӑракан анаҫарана ӑслӑлӑх кӑтартнӑ пек, хӗвеланӑҫри халӑхсем пек ӗҫлесе ҫителӗклӗ усӑ курассине кӑтартмалла. Ҭӑнах та пирӗн сахал ҫӗрпе те ӑна ӑслӑлӑх мелӗпе ӗҫлесен ҭипер пурӑнма пулаҭ: епӗр пӗлетпӗр—Киттай йе Йаппун хресҭенӗсен пирӗн хресҭенсенӗнҭен ҫӗр темиҫе хут сахал, ҫапах вӗсем те хайсене тутӑ тытмалӑх тырӑ тӑваҫҫӗ; унтан епӗр пӗлетпӗр—хӗвеланӑҫра нумай тӗлте хресҭенсен ҫӗр пирӗнӗнҭен ытла мар, ҫапах вӗсем пуйан куҭттурлӑ пурӑнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Ҫав сахал ҫӗртен те нумай усӑ курни халӑх йышӑннӑ йалхуҫалӑхӑн лайӑх йӗркинҭен килет. Ҫавӑнпа пурӑнӑҫа малалла йарас майсене шырас пулсан епӗр ҭӑвашшем авалран йышӑннӑ хуҫалӑх йеркине тишкерсе пӑхса тухмалла.

Ҭӑвашшен йалхуҫалӑх йеркине ӑслӑлӑх *екстенсивла йӗрке* тет, хӗвеланӑҫри халӑхсен хуҫалӑх йӗркине интенсивлӑ йӗрке тет. Ҫак ак мӗне пелтерет: ҭӑваш ҫӗрӗҫлӳрен нумайрах усӑ курас тесен ҭи малтан нумайрах ҫӗр йышӑнса, нумай тырӑ акса, нумайрах выҭӑх усраса усӑ курма тӑрӑшаҭ, анҭах сахалтарах ҫӗртен, тырӑран, сахалтарах выҭӑхран та ҫавӑнҭухлех йе ытларах та усӑ курас майсене вӑл шырамасҭ. Кӑркӑс пӗр килйыша 100 теҫеттине тивсен те сахал тет кунпа тӑранаймастӑп тет: тӗрӗсрен те тырӑ акмасӑр ҫав ҫӗр ҫинҭе кӗтӳ кӗтсе ҫеҫ пурӑнсан вӑл ытлах тутӑ пулаймасҭ; пушкӑртсем, Ҫӗпӗр хресҭенӗсем пӗр килйыша 20-30 теҫеттине тивсен те ҫӗр ҫителӗклех мар теҫҫӗ: ҭӑнах та ҫавӑнҭухлӗ ҫӗртен те вӗсем ытла усӑ кураймаҫҫӗ, мӗшӗн тесен вӗсем тырра ҫӗрӗн ик-виҫ пайне ҫеҫ акаҫҫӗ, ӑна та уйра уйрӑм пусӑсем тумасӑр

улаҫӑла аккалаҫҫӗ, ҫаванпа акнӑ тырра выҫӑхпа таптатса пӗтерессӗ, ҫӗре наҫар йулхавлӑ ӗҫлеҫҫӗ, ҫителӗклӗ тухӑҫ илеймеҫҫӗ. Ҫак кӑркӑссемпе Ҫӗпӗр хресҫенӗсен йалхуҫалӑх йӗрки пирӗннӗнҫен те кайра тӑрат, пирӗннӗнҫен те екстенсивлӑрах. Хаҫхи пирӗн ҫӗрӗҫлӗвӗн йӗркине уйа виҫӗ пусӑ туса тырӑ акмалли йӗрке теме йурат. Малтах каланӑҫҫӗ: ҫак ҫӗр йӗркине епӗр йышӑнни ӗнтӗ 200-300 ҫул иртрӗ. Ҫак саманара уйсене виҫӗ пусса уйӑрни питӗ усӑллӑ пулнӑ, вӑл халӑх прокреслӑ ҫулпа пӗр-ик утӑм малалла утнине пӗлтернӗ: унҫҫен темӗн ҫухлӗ ҫӗр ахаҫ выртнӑ, йӗркеллӗ ӗҫленеймен, виҫӗ пусӑ тусан ҫӗрӗн виҫҫӗрен икӗ пайӗ тырӑпа акӑнмалла, виҫӗ ҫултан пӗр ҫул ана канмалла, пӗр ана ҫинҫе ҫулран ҫула пӗр кӗр йе ҫур тырри улӑшӑнмасӑр акӑнмалла мар йӗрке тухнӑ. Ҫак йӗркене йышӑнсанах ҫӑвашшем авала пӑхнӑ ҫӗрте ҫӗрӗҫлӳрен ик-виҫ хут ытла усӑ кура пуҫланӑ. Ҫак йӗркене пур тӗнҫӗри куҫттурлӑ халӑхӗсем те пӗр вӑхӑта йышӑннӑ пулнӑ, анҫах вӗсем ҫӑвашшем пек ҫак йӗрке ҫине 200-300 ҫул тӑршшӗпе тирӗнсе тӑман—малалла утнӑ, уйсене тӑватӑ, ултӑ, сакӑр, тӑхӑр пусса ҫавӑрса ӗҫлеме тытӑннӑ, ҫӗре нумайуйлӑ ӗҫлес йӗркене йышӑннӑ, ӑслӑлӑх ҫӗлхипе каласан интенсивлӑ хуҫалӑх ҫиҫтемине йышаннӑ. Йепле епӗр халӗ кӑркӑссен, пушкӑртсен, Ҫӗпӗр хресҫенӗсен ҫӗрӗҫлӳ йӗрки ҫине йутшӑнса хӑррӑн пӑхатпӑр, ҫавӑн пекех ҫӑвашшен виҫпуслӑ хуҫалӑх йӗрки ҫине куҫттурлӑ халӑхсем ыррӑн мухтаса пӑхмаҫҫӗ, хӑйсем вӗсем ҫак йӑлана тахҫанах пӑрахса маннӑ, ӑна вӗсем авалхи халӑх теттӗмре пурӑннӑ ҫухнехи йӗрке теҫҫӗ. Ҫак ҫӑваш йалхуҫалӑхне мӑйӗнҫен пуса тӑракан виҫпуслӑ йӗркен сийенӗ ҫинҫен нумайах калама та асапӗ ҫук: *ҫав виҫпусла уйсен йеркин пасӑклахе пирӗн куҫ умӗнҫе.* Кӗскен ун ҫинҫен ҫапла калама йурат: ҫак виҫпуслӑ уйсем пирки епӗр хамӑрӑн ҫитмен ҫӗрӗн виҫҫӗмӗш пайне ҫулран ҫула сайа кайтарса выртаратпӑр (хура пусӑ), ҫак йӗрке пирки ҫӗре халӑхпа тытса епӗр пӗрне пӗри лайӑх, вӑхӑтлӑ ӗҫлеме, тирӗс тӑкса, ҫӗр имҫамӗпе сапаласа ӑна ҫирӗплетме памастпӑр, ҫак йӗрке пиркийех епӗр тырӑ пуссисене ҫулран ҫула пӗр тӗслӗ тырӑсем акса йапӑхтаратпӑр, ҫӗре ҫителӗклӗ канма памастпӑр, ӑна мӑнтӑрлатакан курӑксем акса ҫирӗплейместӗпӗр. Тӗрӗсрен каласан—ҫӑвашшен виҫпуслӑ ҫӗрӗҫлӳ йӗркийӗ пӗтӗм ӑслӑлӑх, акрономи, куҫттурлӑ халӑхсен оппӑҫе, йулашкинҫен хамӑрӑнах тӑнпуҫ каланине хирӗҫ пырат. *Ҫавӑнпа виҫ пусса ҫемӗрсе уйсене нумай пуслӑ тавитҫен ҫӑваш йалхуҫалӑхне малалла йама шухӑшлама та ҫук*, ҫавӑнпа епӗр ҫӑвашшем ҫак ҫулсенҫех нумайпуслӑ уйсен йӗркине йышӑнассинҫен ҫӑваш йалхуҫалӑхӗн пӗтӗм малашнехи ӗмӗҫӗ килет тетпӗр.

Ҫапла ҫӑвашшем ытла та виҫпуслӑ уйсен йӗркипе ҫыхӑнса тӑни нехекрен йе халӑх ытла та виҫ пусса йуратнинҫен килмен: ҫак йӑлапа халӑха пурӑнӑҫ, пурлӑх йӗркисем, еккономикка условисем, йулашкинҫен истори мӑйкӑҫӗсем ҫыхса тӑ-

нă. Епĕр пĕлетпĕр—тĕп авал ђăвашшем ăрăвĕ ăрăвĕпе уйрăм пурăннă, уйрăм ăрусем уйрăм йалсем, йе темиçе ăру пĕр йалта пурăнсан, уйрăм урамсем йышăнса пурăннă. Çак саманара уйрăм ăрусен çĕрĕсем, уйĕсем те уйрăм пулнă. Анђах пыра киле ђăваш хура халăхĕ хăй ирĕклĕхне çухатнă: вăл ђăваш мăрсисен, турханĕсен, тӳрисен, кайарахпа тутарпа вырăс патшисен тĕрлĕ тарçисен: улпутсен, çарпуçлăхсен, тӳресен аллине ђуралăха кĕрсе ӳкнĕ. Çак хура халăх йунне ĕмекен пуçлăхсен пĕр шухăш пулнă—йеппе те пулсан хура халăхран нумайрах усă курас шухăш. Çак шухăша тытса вĕсем ђăвашшен уйрăм ăрăвĕсене пĕрлештерсе пысăкрах йалсем тунă, хăйсене пăхăнса тăракан йалсене çĕре пĕрле ĕçлеттерме тăрăшнă, мĕшĕн тесен, çапла майпа хырăç пухма, халăха алăра тытма çăмăлтарах пулнă. Çапла çĕре халăхпа тытас йăла авалран пулса йулнă—ун çинђен пире халăх сăмахĕ, унăн йăлисем виттĕр каласа тăраççĕ: çапла нумай тĕлте ђăвашшем çĕре тăхăр йалпа, вуник, тата та нумай йалпа ĕмĕртен пĕрле тытса тăраççĕ, пирĕн ĕмĕртех çав йалсем пĕрле пухăнса уђуксем тăвађђĕç, çав уђуксенђе хăйсен çĕрĕн пĕр хуçине асанађђĕç. Малашне те çĕре халăхпа тытас йĕрке, опшинăпа ĕçлесе пурăнас йĕрке патшалăхшăн усăллăрах пулнă: хыснана хырçă пухма, хысна вађђи халăха ĕç ĕçлеттерме, салтак илме лайăхрах пулнă. Çапла халăх пĕр пĕринпе çыхăнса пĕрле пурăнни авал хура халăхшăн хăйшĕн те меллĕрех пек туйăннă: авал хăравçă ђăваша тĕрлĕ таркăнсем, хусахсем, вăрăхурахсем аптăратнă, çавăнпа ђăвашшем пĕр пĕринђен хӳтлĕх шыраса ирĕклĕренех те пĕрлешше пĕрле пурăнма тытăннă. Çапла ђăваш халăхĕ йалхуçалăхне опшинă йĕркипе çеç тытни, çĕре çулран çула халăхпа валеççе акса тăнни—пирĕн авалхи пурăнăçăн парнийĕ, пирĕн телейсĕр историйĕн пиллĕхĕ пулса тăрат.

Халĕ Ђăваш оплăçĕнђе куттăр тавраш, çĕре уйрăм акакансем çукпа пĕрех: революци уммĕн те çĕре уйрăм каснă хресђенсем пĕр прођђăнран та ытла пулман. Çĕрсене уйрăм кастарма, йатсене уйрăм акса пурăнма ђăвашшен майĕ те пулман, халĕ те питĕ кансĕр: оплăçра 1800 йалтан 450 йалĕ çеç çĕре уйрăм пĕрер йалпа тытса тăраççĕ, ытти 1350 йалĕ çĕре темиçешер йалпа пĕрле тытса тăраççĕ, хăшхăш тĕлте çĕре 40—50 йал пĕрле тытса тăраççĕ. Çак йăла Раççейре ниçта та çукпа пĕрех, анатри ђăвашшен хушшинђе те вăл çук. Ђăваш оплăçĕнђе çĕре нумай йалпа пĕрле тытса валеççе пурăнас йĕрке çапла пулса йулнă. 1860-мĕш çулсенђе, хресђене улпутсен аллинђен кăларнă саманара, çĕрсене уйрăм йалсене виççе, татса парса çӳренĕ, анђах ђăваш уйесĕсенђе ĕçлекен çĕрвиçӳсем ӳркенсе, ђăвашшене мăшкăласа, Хусана çапла хыпар тунă: „ђăвашшен çĕрĕсем питĕ пăтранђăклă, йал йађĕсем вырăс халхине ăнланмалла илтĕнмеççĕ. Ђăвашшене кашни йала çĕр уйрăм касса çӳресен ĕçе вăхăтлă

туса пĕтерейместпĕр,“ тенĕ, вара Хусантан аслă тӳресем ђăвашшене ҫĕре нумай йала та пĕр ђикерен виҫҫĕ касма хушнă. Ҫапла патша тарҫисем ӳркенсе, унтан ђăвашшене мăшкăлласа туса хăварнă ҫĕр йĕрки ђăваш йалхуҫалăхшĕн хисепсĕр сийенлĕ: вăл халăха йалан тавлаштарат, пĕр пĕринпе йӳҫентерет, ҫĕр ҫине пĕр тĕле тăранса, тăрăшша ĕҫлеме памаст. Ҫапла *пирĕн оплаҫра ҫĕре хресђен опшинăла йĕркепе ҫеҫ тытса тăрат.* Ҫак авалран йулнă йĕрке йалхуҫалăхпăн сийенлĕ йĕрке: вăл ҫĕре ăслăлăх калапă пек ĕҫлеме ђарат, уйрăм пĕлекен, тăрăшакан хресђенсен хастарлăхне пусарса тăрат. Унтан ђăвашшем опшинăпа пурăнма вĕреннĕскерсем питĕ ҫĕре ҫуллен валеҫме йуратаҫҫĕ: йалан ҫĕнĕпе тăвашшăн кĕрмешеҫҫĕ, ҫук ҫĕрне ҫулран ҫула вакласа, алăран алла ҫӳретеҫҫĕ; ҫапла 1907-мĕш ҫулта 452 ђăваш опшининђен 32 опшинă ҫеҫ ҫĕре ревиҫ вăхăтĕнђен валеҫмесĕр пурăннă, ҫав вăхăтрах Хусан кĕпĕрнинђи вырăс хресђенĕсен 1377 опшинăран 701 опшини ҫĕре валеҫмесĕр тытса тăнă. Ҫак *ҫĕре йаланах валеҫес йăлан сийенлĕхĕ* ҫинђен калама та кирлĕ мар—вăл ахаљ те паллă. Ҫак йăла та ђăвашшем авалран йут халăхсен пусмăрĕнђе, патшалăх ђуралăхĕнђе пурăннипе пĕр пĕринђен хӳтлĕх шыраса йалпа пĕрлешше, ĕҫе ирĕксĕр халăхпа пĕрле тума вĕреннине кăтартат.

Ҫак йăларанах ђăвашшем ытти халăхсемпе танлаштарсан ҫĕре пĕр пĕрин хушшинђе тикĕсрех тытас йĕрке тухат: ђăваш хушшинђе ĕмĕртенех *нумай ҫĕрлĕ ҫын та сахал, пĕтĕмпех ҫерсĕр ҫын та ҫукпа пĕрех.* Хусан кĕпĕрнинђе 1907-мĕш ҫулта хресђен аллинђи ҫĕр ҫапла курăнса тăнă: кашни 100 килйыш пуҫне:

	вырăссен	тутарсен	ђăвашшен
Иата 2 теҫеттине тивет	30	25	7
„ 2—4 „ „	53	75	90
„ 4 „ ытла „	17	3	3
ҫĕрсĕр килйышшем	10	4	1/2

Ҫапла ђăвашшенђен 97% ĕлĕкренпех ҫĕр тăвăррипе асапланса пурăннă. Ђăвашшенђен ҫĕрсĕр хресђен ĕлĕк пулманни ђăвашран тĕрлĕ ăсталăхпа, ремеслапа, хапрăк-савăт ĕҫĕпе йе хула пурăнăҫĕпе ҫыхăнса пурăнакан ҫын сахал пулнине пĕлтерет. Ђăваш хресђенĕ нађар пурăнни, унăн хуҫалăхĕ йурлă. пĕђĕкҫĕ пулни тата ак мĕнтен курăнат: вăрҫă уммĕн оплăҫра лашасăр хресђен 20—25%, пĕр лашаллă хресђен 73—75%, икĕ лашаллă хресђен 3%—ран ытла пулман. Епĕр пĕлетпĕр—Раҫҫейре нумай тĕлте пĕр лашаллă хресђен хуҫалăхне нимĕн вырăнне те хумаҫҫĕ—тĕрĕсрен те пĕр лашапа нумай ҫĕре ђавалас ҫук, нумай тырă тăвас ҫук.

Ҫĕр сахаллипе, ђăнтан аслă хуҫалăх тума майĕ ҫуккипе ђăвашшем *вак килйышпа пурăнма йуратаҫҫĕ*: оплăҫра хресђен килйышĕ 150 пинрен ытла, пĕр вăтам килйышра пилĕкшер ђун ҫеҫ пурăнат, ҫакă ђăвашшем ҫитĕнĕ ҫитĕнмен, авланнă

авланман тĕп килтен уйрăлса кашни хăйне пеҫ̌екҫĕ те пулин уйрăм йăва ҫавăрма йуратнине пĕлтерет. Ҫапла хуҫалăха, килйыша ытла ваклани те ҫ̌ăваш йалхуҫалăхне питĕ сийенлĕ йапала.

Ҫ̌ăваш оплăҫĕнҫ̌е ҫулран ҫула тырăпа 360 пин теҫеттине акăнат, пĕр ҫ̌уна 0,45 теҫеттине, пĕр килйыша 2,3 теҫеттине акнă тырă тивет. Пур уйессенҫ̌е те тыра пĕр пек акăнмаст: ҫапла Шупашкар у. 0,38 теҫ., Сĕрпӳ у. 0,49 теҫ, Йетĕрне у. 0,39 теҫ., Патăр у. 0,55 теҫ. тырă акăнат.

Уйсенҫ̌е *уйрăм тырăсем* ҫапла акăнаҫҫĕ: ыраш 50,6%, сĕлĕ 34,7%, тулă 2,3%, урпа 1,4%, пăри 5,8%, хуратул 1,3%, вир 0,3%, пăрҫа 2,4%, йасмăк 0,7% йĕтĕн 0,1%, кантăр 0,1%, хирти ҫĕрулми 0,1%, усăлă куракссем 0,017%. Ҫапла пирĕн уйсенҫ̌е пĕрҫ̌ĕ тырăсем ҫеҫ акăнаҫҫĕ, нумай усă паракан ҫĕрте ӳсекен йапаласем: ҫĕрулми, ҫ̌ĕкĕнтĕр таврашĕ, ҫу, сӳс паракан хаклă ӳсетăрансем: йĕтĕн, кантăр, макăҥ, хĕвелҫавнăш тавраш, усăллă куракссем, унтан уйара парăнсах кайман тырăсем (вир) пĕртте те акăнмаҫҫĕ. Ҫакăн пек хуҫалăха ăслăлăх пĕрҫ̌ĕлĕ хуҫалăх тет, унтан уйсенҫ̌е тăтăшран ыраша сĕлĕ ҫеҫ акăннăран пирĕн хуҫалăха ырашпа сĕлĕ хуҫалăхĕ тет.

Ҫакă та каллех ҫ̌ăваш йалхуҫалăхĕ ытти ҫĕрсемпе танлаштарсан питĕ кайра тăнине кăтартат: ҫ̌ăвашпем наҫ̌артарах ĕҫлесен те, ҫĕре имҫампа мăнтăрлатмасан та пулакан йӳн, сахал усăллă пĕрҫ̌ĕ тырăсем ҫеҫ акаҫҫĕ. темиҫе хут нумай тухăҫ паракан, рынăкра витекен хаклă йапаласене пĕртте акмаҫҫĕ. Ҫак тĕлĕшĕнҫ̌ен ҫ̌ăваш йалхуҫалăхне пĕлес тесен ҫак танлаштарулă кăтартусене аса илес пулат: Керманире ҫĕрулми пур акăнакан уйсен 17% йышăнса тăрат, Мускав таврашĕнҫ̌и кĕпĕрнесенҫ̌е ҫĕрулми уйсен 7% йышăнса тăрат, ҫапла ҫ̌ăвашпем пĕрҫ̌ĕрен нумай ытла усă паракан ҫĕрулмине хĕвеланăҫри ҫĕрсемпе танлаштарсан нимĕн вырăнне те хумаҫҫĕ; унтан хамăрпа кӳршĕлĕ вăтам интустрилĕ районра йĕтĕн, кантăр, ытти ҫулă куҫ̌ттурăсем уйсен 6—7% йышăнса тăраҫҫĕ, усăллă куракссем те ҫавăнтан кăшт ҫеҫ сахал вырăн йышăнса тăраҫҫĕ, ҫ̌ăвашшен ҫак куҫ̌ттурăсем каллех нимĕн вырăнĕнҫ̌е те тăмаҫҫĕ. Ҫакă тĕрĕсрен мĕне пĕлтеретши?

Ҫакă ҫ̌ăваш хуҫалăхĕ тĕксĕмне, авалхи йăлапа пурăннине пĕлтерет, ҫакă ҫ̌ăвашшем тырă, ытти йапала акса тунă ҫ̌ух хăйсен хырăмне, тире витме хăйсене кирлĕ тумтир тума йурăхла йапалапа ҫеҫ ӳстерме тăрăшнине пĕлтерет, ҫакă ҫ̌ăвашшем тишкерсе шухăшласа усăларах йапаласем ӳстерсе таварлă сутăнакан, рынăкра витекен, нумай услам, тупăш паракан йапаласене акса тăвассинҫ̌ен йутшăнса тăнине пĕлтерет, ҫакăн пек хуҫалăха ăслăлăх *наттуралллă хуҫалăх* тет. Ҫапла 105—200 ҫул кайа хĕвеланăҫри халăхсем те пурăннă, анҫ̌ах пыра киле вĕсем ҫак авалхи йурăхсăр хуҫалăх йĕркинҫ̌ен пĕтĕмпех писнĕ. Ҫ̌ăвашшен тавар вырăнне йӳнĕҫекен тырă

пěрре çеç—вăл та пулин йӳн хакпа çӳрекен сĕлĕ: сĕлле ҫăвашшем питĕ нумай акаççĕ, ăна вĕсем улăмĕшĕн, ытларах та пĕрҫĕшĕн акаççĕ: анҫах çав пĕрҫе вĕсем килте пĕртте расхутламан, ăна хырăç тӳлеме, тĕрлĕ тăкаксене саплама сутса укçа тунă. Çапла ҫăваш хуçалăхне те авалранах *таварлă хуçалах* шăрши те кĕнĕ, анҫах ҫăвашшен çав таварлă тырă выҫăх çимине йурăхлă, йӳн, çĕре тиркемен сĕлĕ çеç пулнă, çулă, техниккăлă куҫттурăсене, ытти хаклă куҫттурăсене ӳстерсе тавар кăларса усă курасси çинҫен вĕсем шухăшламан та (кантăрпа йĕтĕне ҫăвашшем хăйсене кирлĕ таран çеç аккалаççĕ).

Çапла килте кирлĕ йапалана çеç туса кăларакан йĕркене тата ăслăлăх ҫĕлхипе вырăсла *потрепиттеллĕ хуçалах* теççĕ. Анҫах çак тĕлĕшĕнҫен те ҫăваш хуçалăхĕ йурăхсăр, йăнăш çул çинҫе: ҫăваш пĕрҫĕ тырă çине тăранса пурăнаҫ, авал çĕр ирĕкрех ҫухне, выҫăх нумайрах усранă ҫухне, пĕрҫĕ тырă ҫăвашăн çителеклĕ пулнă, анҫах пирĕн аттесен емĕрĕнҫен тытăнса ҫăваша хăй тунă пĕрҫĕ тырă тутă пурăнма та çитмест. Апла пулсан ҫăвашшен тахçанах мĕн тумалла пулнăши? Вĕсем виç-тават хут ытла нумай çимĕç паракан çĕрулми, тĕрлĕ пахҫа çимĕçĕсем акмалла пулнă; çапла епĕр пĕлетпĕр—çимĕç çитми пулсан нимĕççем, паҫексем, вăтамри вырăссем нумайĕшне çапла майпа тăранса пурăнаççĕ. Анҫах телейе хирĕç тĕттĕм ҫăвашшем хăйсен авалран йулнă хуçалăхăн йĕркин пăсăкне тĕплĕ хаҫиҫҫен те сисмесĕр пурăнаççĕ.

Хаҫхи йалхуçалăх пире тăранмалăх та çителĕклĕ усă наманни пирĕн куç умĕнҫе. Ҫăваш оплăçĕнҫе паллăрах тырăсен вăтамлă *тухăçĕ* çапла курăнса тăраҫ: пĕр теçеттинерен ыраш 49,6 пăт, сĕлĕ 43,4 пăт, тулă 40,2 пăт, урпа 47,8 пăт, вир 38,2 пăт, хуратул 30,8 пăт тухаҫ. Ҫăваш оплăçĕнҫи тырăн вăтамлă тухăçĕ пĕтĕм Раççейри вăтамлă тухăçпа танлашаҫ, анҫах хĕвеланăçри патшалăхсенҫи тухăçран 2—3 хут сахал. Çапла ҫăваш оплăçĕнҫе тырă вăтам пулнă çул 16—17 мĕҫйун пăт пĕрҫĕ пухăнаҫ, вăрлăх тăкакне, выҫăх пайне кăларсан пĕр етемме вăтамран 10—12 пăт пĕрҫĕ çеç тивет; çакă епĕр хамăра ҫăнтан тăранмалăх та тырă тăвайманнине пĕлтерет. Унтан çакă ҫăвашшем çĕре пĕлсе мелпе ĕçлеменнине, çавăнпа тырăран тухăç сахал илнине пĕлтерет. Çапах çак тĕлĕшĕнҫен çапла калас пулаҫ: ҫăвашшен çĕрĕ наҫар пулсан та тырă тухăçĕ Раççейĕн ытти çĕрсенҫи тухăçран кайа мар: çакă ҫăвашшем тырра тăрăшарах ĕçленинҫен килет. çапла ҫăваш оплăçĕнҫи ҫăвашшем анасене тирĕспе çирĕплеме питĕ тăрăшаççĕ; ҫăваш ăслăлăхçи хресҫен Кеверле Пурисĕ калана тăрăх—йетĕрне уйесĕнҫи ҫăвашшем пĕр теçеттине çине вăтамран 22 ăлав, Çĕрпӳ ҫăвашшем 15 ăлав, Шупашкар ҫăвашшем 21 ăлав тирĕс тăкаççĕ, çапла тирĕсне çĕре çирĕплесе ҫăвашшем çуллен пĕр теçеттинерен 19 пăт тырă пĕрҫи ытлашши илеççĕ. Çапла хаҫхи саманара çĕре тăрăшарах ĕçлесе тырă тухăçне ӳстерттерни пирĕн йалхуçа-

лăхăн историйĕнҫен те паллă: нумай авал тырă тухăҫĕ пирĕн вăтамран 30 пăтран иртмен, 1885—1891 ҫулсенҫе ыраш тухăҫĕ оплăҫра 42 пăт ҫеҫ пулнă. Ҫапла авал тырă аван пулнă тенĕ сăмах пĕтĕмпех йăнăш сăмах.

Вырăс кĕнекеҫисем ҫăвашшем ҫĕре ытти таврари халăхсенҫен тирпейлĕрех, тăрăшарах ĕҫлеҫҫĕ, теҫҫĕ. Анҫах ҫака тĕрĕс пулсан та ҫакна асра тытас пулаť: ĕҫ тăрăшнипе ҫеҫ йусанмасť, мелпе, пĕлсе ĕҫлесен ҫеҫ малалла кайаť. Ҫăвашшем халĕ ҫĕре *пĕлсе, ăслăлăх, акрономи кăтартнă майпа пĕрте ĕҫлемеҫҫĕ:* кĕрхи суха тумаҫҫĕ, ҫурхи акана икĕ хут акаламаҫҫĕ, ҫĕртмене вăхăтра тумаҫҫĕ, тарăн сухаламаҫҫĕ; ҫĕре ҫăвашшем наҫар ĕҫленни тата пин йенҫен курăнса тараť: ҫăвашшем ҫĕре машшинăпа сайра ĕҫлеҫҫĕ, пирĕн выракан, ҫулакан, ҫапакан машшинă тавраш ҫукпа пĕрех, тимĕр акапуҫ те 15 киле пĕрре ҫеҫ, тимĕр сӳре 150 киле те пĕре тимест, ҫăвашшем ҫĕре имҫам сапаласа ҫирĕплени, ăна усăллă куракĕсем акса ҫĕнетни ҫинҫен каласа сăмаха сайа йама та кирлĕмар—ҫак ĕҫ ҫăваш хушшинҫе пĕтĕмпех пăрахăҫра тăраť.

Выҫăх усрас тĕлĕшĕнҫен те ҫăвашшем нумай ытти халăхсенҫен кайра тăраҫҫĕ. Ҫăвашшен выҫăх пайтах, анҫах вак, имшеркке, сахал усăллă: ҫапла ҫăвашшем Хусан кĕпĕрнинҫи вырăссемпе танлаштарсан выҫăх нумайрах усраҫҫĕ, анҫах ҫăваш выҫăхĕ питĕ наҫар: лаши така пек, ĕни каҫака пек; ҫапла 1915—мĕш ҫулта Хусан кĕпĕрнинҫе выҫăха ҫапла хакланă: ҫăваш лаши 46 тенкĕ, ĕни 46 тенкĕ, сурăхĕ 5 тенкĕ, сысни 8 тенкĕ, ҫав вăхăтрах вырăс лаши 87 т., ĕни 63 т., сурăхĕ 6 т. 50 пус, сысни 14 т. тăнă.—Ҫаплах тата пĕлсе ҫитнĕ: Хусан кĕпĕрнинҫе вырăс ĕни вăтамлăхран 20 пăт туртнă, 66 ҫетвĕрт сĕт панă, ҫăваш ĕни 12 пăт туртнă, 37 ҫетвĕрт сĕт панă. Нумайĕшĕ ҫăваш оплăҫĕнҫи наҫар имшеркке выҫăха курсан, ҫăвашшен вак выҫăхне курсан ҫăвашшем вак выҫăха йуратаҫҫĕ, выҫăха шеллемесĕр усраҫҫĕ—ăна аван ҫитермеҫҫĕ теҫҫĕ; ҫак сăмах тĕрĕс мар: анаҫаран ирĕклĕ ҫĕрте ҫăвашшен те выҫăх шултăра, кĕр, сатур; оплăҫра выҫăх наҫар усранăнни ҫиме ҫитменнинҫен килет: статтистиккă хисепленĕ тăрăх—пирĕн пĕр шултăра выҫăх пуҫне ҫулталăка вăтамлăхран 14 пăт утă ҫеҫ тивет, Тутар респупликкинҫе 20 пăт, Ҫулхула кĕпĕрнинҫе 25 пăт, Мускав кĕпĕрнинҫе 45 пăт, Питĕр таврашĕнҫе пĕр пуҫа 62 пăт утă тивет. Ҫак пĕр выҫăх пуҫне тивекен утă хисепĕ пире тӳрех калаť: пирĕн оплăҫра усăллă куракĕсем акса утă тума тытăниҫҫен шултăра, аван йăхлă, пысăк усăллă выҫăх усранма та пултараймасť—вăл наҫар апатпа вилсех пĕтет. Унтан хресҫен йурлипе пирĕн выҫăх пĕрҫĕ ҫимĕҫ питĕ сахал кураť: ҫăвашшем шултăра выҫăха ҫулталăкра 10 пăт пĕрҫĕ те ҫитермеҫҫĕ. Ҫапла пирĕн выҫăх ĕрҫетсе усрас ĕҫ те питĕ йапăхса пăнҫăхса тăраť. Епĕр малта ҫăвашшем авал питĕ йышлă та, вăйлă та кĕтӳсем усраса пурăннă тесеттĕмĕр, халĕ пирĕн саманара ҫăвашшем ытти ҫĕрсемпе танлаштарсан ҫи наҫар выҫăх усранине куртăмăр

(ӟăвашшен пек наӟар выӟăх Йевроппăра Пелоруççипе Калитсире çеç). Нумай каламасан та паллă—çак *выӟăх ĕçĕ йурăхсăра тухни калӟех пирĕн телейсĕр историйĕн пиллĕхĕ*: вăл епĕр ирĕклĕ çĕршывран татăлса хĕсĕке йулнинӟен килнĕ. Йулашки çулсенӟе пирĕн хресӟен выӟăх тĕлĕшĕнӟен ытла та наӟар пурăнăçа йулӟĕ—пирĕн хресӟенсенӟен виççĕмĕш пайĕ лаша та, ĕне те усраймасть. Выӟăх пирĕн ĕмĕртех питĕ ӟакса пыни ак мĕнтен курăнать: 1858-мĕш çулта ӟăвашшен 100 киле 190 лаша, 130 ĕне тивнĕ; 1882 ç. 140 лаша; 1890 ç. 120 лаша, 90 ĕне; 1916 çулта 110 лаша, 80 ĕне тивнĕ; халĕ 100 киле лашапа ĕнĕ 80-шар пуç та тивмест.

Выӟăха та ӟăваш хайне кирлĕшĕн усрама тăрăшать: майракаллă выӟăха сĕттурăхшăн, сурăха çăмшăн, ашпăшшăн, сыснана ашпăшпа шăнçушăн, лашана ĕç ĕçлеттерншĕн, унтан пурне те йышлăрах вăл тирĕс нумайрах тăвасшăн тăрăшса усрать, анӟах аван йăхлă, шултăра, нумай усăллă сутма йурăхлă *таварла выӟах* усрама вăл пултараймасть, çапла тума вăл йалхуçалăхĕн йĕркине пĕтĕмпех çĕмĕрсе малта калана пек улăштарса йарсан çеç пултарĕ: хирсене нумай уйа çаварсан, усăллă курăксем, тĕрлĕ çĕрте çĕрулми пек ӳсекен выӟăх çимĕçĕ нумай тусан çеç вăл ӟăнтан йышлă выӟăх курĕ.

Çунатла тъӗрӟунсенӟен ӟăвашшем ӟăхă усраса пайтах усă кураççĕ: вăрçă уммĕн ӟăвашшен ӟăхă нумай пулнă, вăтамлăхран пĕр килйыша 35 пуç тивнĕ, ӟăваш ӟăххи вак пулсан та çăмарта нумай тунă, çав çăмарта питĕ витекен тавар пулнă, ăна сутилӳçĕсем ытти патшалăхсене йарса тăнă. Çавăнпа нумайĕшĕ тĕрĕсрен ӟăвашшем ӟăхă йышлă ĕрӟетсе усрани ӟăвашшем те ирĕклĕ ирĕксĕр йеррипен таварлă промăшлĕннăçлă хуçалăх йĕркине йышăннине пĕлтерет теççĕ. Кăвакал, хур, кăркка таврашĕ онлăçра сайра тĕлте çеç тĕлпулкалать, çапах та вăрçăӟӟен онлăçран Канашпа Йĕпреç таврашĕнӟен çуллен нумай хур кĕтĕвĕ пухса сутилӳçĕсем Мускава, Питĕре, ытти патшалăхсене те йарса тăраӟӟĕç. Хура, кăвакала нумай усрама онлăçра майĕ те çук—шывшур сахал.

Пахӟа ĕçĕ те шывшур, айлăмлă çĕр сахаллипе пирĕн питĕ кайра тăрать: пахӟасемпе пирĕн 10000 теçеттине ытларах çеç карталаннă. Пахӟасенӟе ӟăвашшем хăйар, ӟĕкĕнтĕр, çарăк, сухан, кавăн, купăста, кăшман, хĕвелçавнăш, мăкăнь, тапак, çĕрулми лартса ӳстереççĕ. Йулашки çулсенӟе ӟăвашшем помитор, ретис, сахăрлă ӟĕкĕнтĕр ытти те усăллă йапаласене ĕрӟетме тытăнаççĕ. Пахӟа тырăран нумай хут ытла усă парать, анӟах нумайĕшĕ тĕттĕм ӟăвашшем ăна тăнламаççĕ, пахӟа ĕçĕ вăл аӟапăӟа ĕçĕ, хĕрарăм ĕçĕ теççĕ. Малашне тутă пулас тесен, апата авантарах çийес тесен ӟăвашшем пахӟа ĕçне аслăлатма тăрăшмалла. Пирĕн ĕмĕрте хăш хăш тĕлте ӟăвашшем пахӟан усăллăхне сиссе пахӟасене аслăлатаççĕ, пахӟа çимĕçĕ нумай туса ăна хуласене сутса тăраççĕ, çавăн пек промăшлĕннăçлă пахӟалăха епĕр Енĕш тăрăш Куснарта, Нурăс таврашĕнӟе, унтан Канашпа Йĕпреç таврашĕсенӟе куратпăр.

Сат ӗҫӗ те пирӗн ҫителӗклӗ хисепре тӑмасӑ: нумай тӗлте сат тавраш пӑҫах ҫук, унтан пулсан та сатсем пирӗн пӗҫӗкҫӗ, вӗсем паракан ҫимӗҫ килтех ҫийӗнсе пӗтет. Аслӑрах промӑшлӗнӑҫлӑ сатсем пирӗн питӗ сахал—пинте пӗрре. Сат ӗрҫетме пирӗн ҫӗр те, климӑт та йурӑхлӑ, унтан сат ӗрҫетме питӗ лайӑх, тырӑ акма ҫырмапа ҫӑрмаланнӑ йурӑхсӑр ҫӗр нумай, ҫав ҫӗр халӗ сайа кайса ҫеҫ выртаӑ.

Сат ӗҫне аслӑлатма пирӗн ӗеократхвиллӗ вырӑн та пире хушаӑ: Ҫӑваш оплӑҫӗ сатсенҫе ҫимӗҫлӗ йавӑҫҫем ӳсекен сонӑн сурҫӗр йенҫи ҫиккине ҫывӑх вырӑн йышӑнса тӑраӑ, унтан оплӑҫран хӗвелтухӑҫнелле те оплӑҫран инҫех те мар ҫимӗҫ йавӑҫӗсем тӳсеймеҫҫӗ, ҫавӑнпа сат ҫимӗҫ тупӑшлӑ сутма пирӗн рынӑксем ҫывӑх, ҫав сат ҫимӗҫӗ витекен вырӑнсем: Нерӗм тавраш, Урал, Атӑлӑн ҫӳл вӗҫӗнҫи кӗпӗрнесем: унта сат таварне леҫме пирӗн Атӑл, Ҫулман Атӑл, Сӑрӑ аслӑ шыв сулӗсем йунашар выртаҫҫӗ. Хӑш хӑш ӑслӑрах ҫӑвашшем сат усӑллӑхне сиссе пысӑк сатсем тӑва пуҫларӗҫ, ҫапла Йетӗрне ҫӑвашӗ Шумилӑх пирӗн ӗмӗрте сат ӗрҫетсе пӗтӗм Атӑл тавринҫе ҫапа тухса пуйса кайрӗ. Малашне ҫавӑн пек Шумилӑхсем ҫӑваш хушшинҫе нумайланҫҫӑр, сат ӗҫне пӗтем хура халӑх харӑс тапранса хастарланса аслӑлаттӑр тесе епӗр сунатпӑр. Ҫӑваш хӗсӗк ҫӗрӗнҫе пӗр шит те йурӑхсӑрланса ан выртмӑр: тырӑ акма йурамасан, пахҫа тума йурамасан, ҫырмаллӑ, сӑртлӑ, наҫар тӑпраллӑ пулсан ҫӗре сата ҫавӑрас пулаӑ: ҫимӗҫ йавӑҫӗсем ун пек ҫӗре те тиркемеҫҫӗ.

Сат ӗҫне асӑнсан—уйрӑм *хӑмла ӗрҫетсе ӳстерес ӗҫе* асӑнас пулаӑ. Хӑмла пахҫи пирӗн оплӑҫра йышлӑ, ҫак тӗлӗшӗнҫен епӗр пӗтӗм Раҫҫейре те уйрӑм паллӑ вырӑн йышӑнса тӑратпӑр. Хӑмла ӗҫӗ питӗ усӑллӑ ӗҫ—пӗр теҫеттине хӑмла ӗрҫетсе ӳстерсен темиҫе килйыш тутӑ та, пуйан та пурӑнма пултараҫҫӗ. Пирӗн ӗмӗрте ҫӑвашшем хӑмлана килте сӑра тума ҫеҫ ӗрҫетмеҫҫӗ—ӑна ытларах та сутса усӑ курма ӗрҫетме тытӑнҫеҫ. Хӑмлана ҫирӗплесе сутма, унӑн хакне ҫӗклеме оплӑҫра хӑмлана хӑмла савӑҫӗсенҫе кӳкӗртлетсе лайӑхлатаҫҫӗ. Ҫапла хӑмла ӗҫӗ пирӗн промӑшлӗнӑҫлӑ ӗҫ пула пуҫларӗ, промӑшлӗннӑҫлӑ хуҫалӑх йӗркине кӗре пуҫларӗ.

Веллехурҫӗ усрас ӗҫ ҫӑвашшен хушшинҫе пирӗн самапара ҫакса пыраӑ. Авал вӑрман нумай ҫухне, шывшур ирӗк ҫухне пирӗн хурт нумай пулнӑ, вӑрмансенҫе те, килкартисенҫе те вӗлле тулли пулнӑ, ҫӑвашшем пылран пуйанниле Атӑл тавринҫе ҫаплӑ пулнӑ, Мускава нумай ӗмӗр тӑршшӗпе пыл сутса, пылпа хырҫӑ тӳлесе пурӑннӑ. Анҫах пыра киле вӑрмансене касса пӗтерсен, вӗсене пӗрремӗш Петӗр вӑхӑтӗнҫе ҫӑвашшенҫен хысна аллине туртса илсен, унтан ҫеремлӗ ҫеҫен хирсене уҫҫа апаласа пӗтерсен, ҫарансем сахалалансан, халӑх ҫухӑнланса ҫитсен—вӗллехурҫӗ усрас ӗҫ ирӗксӗрех сӳнсе ларнӑ. Ҫапах та оплӑҫра халӗ те ҫӗр килйыша ҫирӗм вӗлле усрапаӑ, ҫаксенҫен тӑхӑрӗшӗнҫен пӗри рамлӑ вӗлле,

ыттисем авалхи каска вĕллесем. Вĕлле йышлăлатса хурт нумай усрасан тырă акмасăрах пурăнма пулаҭ, ҫак ĕҫ питĕ тупăшлă ĕҫ, ҫавăнпа малашне ҫак ĕҫе ҭăвашшем каҭҭех ҫанна тавăрса тытăнĕҫ. Анҭах каҭҭех ҫак ĕҫ малалла кайма пирĕн йалхуҫалăх йеркине ҫĕнетмесĕр, нумайпусăлла уйсене усăлла пыллă курăксем акмасăр пултараймĕ.

Ҫапла ĕнтĕ епĕр хамăрăн йалхуҫалăхĕн, йалпурлăхĕн тĕрлĕ сийенĕсене сисрĕмĕр, тĕплесе пĕлтĕмĕр. Унтан епĕр кĕскен ҫав сийенсене йепле сирсе пăрахмалли майсене, мелсене вăй ҫитнĕ таран кăтартрăмăр. Йулашкинҭен пирĕн сăмах ҫапла пулĕ: авалран йулнă хуҫалăх йĕрки пирĕн пăсăк, сийенлĕ, халăха тутă тытаймасҭ, вăхăҭĕпе уйар ҫулсенҭе ăна выҫă вĕлерттерсе пĕтерет, ҫавăнпа епĕр куҭттурлă хăлăхсем, ăслăлăх, акрономи кăтăртакан йĕркене йышăнмалла; ҫав йĕрке пире опшинăна пĕтерме, анасене уйрăм килйышшене кастарма, вĕсене коллекттивлетме, ҭăвашла каласан тĕрлĕ пĕрлешӳлĕ ушкăнсемпе ҫыхăнса ĕҫлеме хушаҭ, ҫав ҫĕнĕ йĕрке пире виҫпуслă уйсене нумайпусăлла тума, вĕсене машшинăпа аван ĕҫлеме, имҫампа ҫирĕплеме, кĕл, тирĕс тăкса лайăхлатма, унта хаклă усăлла йапаласем: ҫĕрулми, ҭĕкĕнтĕр, усăллă курăксем, ҫулă техниккăлă куҭттурăсем акса, лартса ӳстерме хушаҭ, ҫав ҫĕнĕ йĕрке пире лайăх йăхлă выҭăх усрама, сат, пахҭа, хăмла, вĕлле хурҭĕ ĕрҭетме хушаҭ, ҫав йеркех пире пур йурăхсăр ҫĕрсене йурăхлăлатма, ҫĕре уйара парăнмалла мар тума хушаҭ. Унтан ҫав йĕркех пире пур акса ӳстерсе тунă ҭĕрĕ йапалана: пĕрҭе, ҫăва, ҫăма, тире, хăмлана, ҫăмартана, сатсен, пахҭасен ҫимĕҫне, пыла—пурне те хапрăксенҭе, савăтсенҭе кирлĕшĕн йурăхлăлатса йусаса сутма тăрăшма, кĕскен каласан *йалхуҫалăх интустрине, промăшлĕнаҫне малалла йама хушаҭ*, унтан вăлах пире ҫĕре машшинапа, тĕрлĕ мехханиклă вăйпа ĕҫлеме хушаҭ. Йулашкинҭен ҭăваш йалхуҫалăхне малалла йарас тĕлĕшĕнҭен ăслăлăх калаҭ: йалхуҫалăхĕ унăн тунă хатĕрĕсем витĕмлĕ хаклă пулмасан, кĕскен каласан ҫывăх рынăк пулмасан нихăҫан та ҭăнтан малалла кайаймасҭ: ҫавăнпа йалхуҫалăхне ҫĕнĕ йĕркепе йама тăрăшас пулсаҫ ҭп малтан ҭăваш ҫĕрĕнҭе пысăк хапрăксем, савăтсем тумалла, ҫĕр ĕҫĕпе пурăнман ĕҫлекенсене пролеттариата йышлăлатмалла, ҭăваш хулисене аслăлатса ӳстерме тарăхса тытăнмалла, оплăҫурлă ҭукун ҫулсем хывма тăрăшмалла, кĕскен каласан оплăҫра йепле те пулин промăшлĕнăҫа аслăлатса хăватлăлантармалла.

2. Промăшлĕнăç.

Пирĕн ĕмĕре промăшлĕнăç ĕмĕрĕ, интустри ĕмĕрĕ теççĕ. Çакă мĕне пĕлтеретши? Вăл ак мĕне пĕлтерет: пирĕн саманара пире пурăнăçра кирлĕ пур йапалана та ҫи малтан, ҫи нумай промăшлĕнăç туйантарат. Мĕнле кирлĕ йапалана ан асăн—вăл пурте хапрăксенҫен, савăтсенҫен тухнă. Ҫăнах та килте пин тĕслĕ кирлĕ йапала пурте хапрăксенҫе, савăтсенҫе йусанса кирлĕшĕн йурăхлă пулнă: илетне тимĕртен, ҫукунтан, хурçăран тунă тĕрлĕ тавара: пăтасене, çурлана, çавана, акапуçне, сӳрене, сенĕке, кĕреçене тата хисепсĕр нумай тавара—ăна пурне те епĕр промăшлĕнăç ырлăхĕпе çеç туйанатпăр, илетне тĕрлĕ тум тумланмалли йапалана: çитсă таврашне, суканана, ытти тĕртсе тунă шутсăр нумай йапалана, сăрансене ыттисене те пурне те пире çав промăшлĕнăçах туйантарат, илетне тата та пин тĕслĕ пурăнăçра кирлĕ йапалана: шăрпăка, тăвара, кĕленҫене, тĕрлĕ савăт сапана—пурне те пире промăшлĕнăç çеç парса тăрат. Ку сахалха: епĕр йалта акса ӳстерсе тунă пур ҫĕрĕ йапала та савăтсенҫе йусансан çеç кирлĕшĕн йурăхлă пулат: пĕрҫе армансенҫе çăнăха йе кĕрпене çавăрмасăр епĕр çийейместĕпĕр, кантăр, йĕтĕн вăррине савăтра пусмасăр епĕр çу тавраш кураймастăпăр, çăма савăтра тапмасăр епĕр авăрлаймастăпăр, тире савăтра йусамасăр унтан епĕр йурăхлă йапала çĕлейместĕпĕр. Çавăнпа промăшлĕнăçа пурăнăçăн тытки, хуçалăхăн тĕп тымарĕ теççĕ. Çапла калани пĕрте ытлашши мар: промăшлĕнăçăн хăватне, вăл паракан ырлăха шутласа каласа пĕтерме те çук. Пирĕн ĕмĕрте пур тĕлĕнмелле йапала: хула пек пысăк пĕр сехетре хисепсĕр нумай тавар кăларакан хапрăксем, савăтсем çĕре йĕритавра та урлă пирлĕ те кăшăллакан ҫукун çулсем, сывлăшра вĕçекен кимĕсем аеропплансем, тинĕссем урлă, шывсем тăрăх çӳрекен карапсем, пăрахутсем, пĕлĕт çӳлĕш, йалран пысăк çуртсем, телекрахсем, телехвонсем, ратиосем, калаçакан та, йурлакан та крамохвонсем—пур те çакă промăшлĕнăç ырлăхĕ, интустри парни. Авал промăшлĕнăç пулман саманара пурăнăç йурăхсăр наҫар пулнă, етем кайăк—ҫакак пек пурăнна, хăйне кирлĕ йапалана питĕ асапланса тунă, йапалана машшинăпа тăвассине вăл пĕлмен те, тĕлленмен те. Çак саманара йепле пурăнăç наҫаррине пĕлес тесен, çакна çеç асăнма йурат: авал етем çăнăха алă арманĕпе авăртса тунă, вуткăвара пĕр йăвăçа тепĕр йăвăç çумĕнҫе сăтăрса кăларнă. Анҫах пыра киле ҫулран, шăмăран, йăвăçран тунă авалхи орутисене пăрахса тĕрлĕ метталлран машшинă тума вĕренсен етем пурăнăçĕ пĕтĕмпех улăшăнса кайнă. Етем хăйĕн вăй çитменнине кура хăйшĕн тĕрлĕ машшинăна ĕçлеттерме мел тупнă. Малтан вăл машшинă таврашне алăпа хăй çавăрнă, унтан пыра киле ăна çавăрма вăл выҫăха: лашана, вăкăра вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах вăл хăй вырăнне, йе выҫăх вырăнне çак ĕçе ĕçлеттерме сан-

талăк вăйне çиле, çĕршыв вăйне шыва кÿле пуçланă (çиларманĕсем, шыварманĕсем). Çапла нумай ĕмĕрсем иртсен, йулашки ĕмĕрте етем пăс вăйне хăй аллине çавăрса илме мел тупнă. Пăса хăйшĕн ĕçлеме вĕрентсен, етем пĕтĕмпех урăхла пурăнăçпа пурăнма тытăннă, хаљхи пурăнăç йĕркине ÿкнĕ. Çавăнпа халĕ пирĕн ĕмĕре пăс ĕмĕрĕ теççĕ. Йулашки вăхăтра етем çанталăкăн тата та хăватлă вăйне—çиçĕм вăйне. хăрушă аслати вăйне,—електрă вăйне хăйне пăхăнтарнă: ăна вăл халĕ машшинăсене çавăрттарттарать, ун çуттипе тĕнђене çутаттарттарать, ун ăшшипе хăйне ăшăттарттарать. Çавăнпа малашне електрă ĕмĕрĕ пулмалла теççĕ. Унтан авалах етем орутисене, машшинăсене нумайă тÿсеймен ђулран, йăвăçран тунă, пирĕн ĕмĕрсенђе вăл вĕсене пурне те ĕмĕре пыракан тимĕртен, тăвать, çавăнпа пирĕн ĕмĕре тата пăспа тимĕр ĕмĕрĕ теççĕ. Пăспа електрă вăйĕ пĕлĕтрен ахаљ ÿкмест—ăна етем пуринђен ытла вутă йе урăх хутмалли йапала çунтарса шыва вĕретсе тупать. Çавăнпа пăсăн, електрăн, промăшлĕнăçăн вăйĕ ђи малтан хутмалли хатĕрсенђен: вутăран, çĕркăмрăкĕнђен, лађака кăмрăкĕнђен торхран, нехтĕрен, вырăсла пĕр сăмахпа каласан топливăран, килет. Çак хатĕрсенђен ђи хăватли, ђи тĕнђере нумайи, ђи йышли, промăшлĕнăçа ђи пысăк усă кÿрекенни—çĕркăмрăкĕ. Çавăнпа та, тата пирĕн ĕмĕре тĕрĕсрен пăс, тимĕр, çĕркăмркăкĕ ĕмĕрĕ теççĕ. Çапла пĕлĕтре, сывлăшра, çĕр айĕнђе выртакан хăвата пăхăнтарса кÿлме етемĕн ăсĕ, унăн ăсталăхĕ пулăшать. Çапла ăсталăхпа тĕрлĕ меллĕ орутисем, тăвас, акăшмакăш пысăк, хăватлă, пин винтлă, çĕршер кусатăранлă машшинăсем тăвас ăсталăха техникă теççĕ. Çавăнпа та, тата йулашкинђен пирĕн ĕмĕре промăшлĕнăçпа техникă ĕмĕрĕ теççĕ. Çапла ĕнтĕ пирĕн пурăнăçăн халĕхăвађĕ, пĕтĕм тĕнђен пурлăхĕ, телейĕ, илемĕ ђи малтан промăшлĕнăçпа техникăран килет пулсан—епĕр ђăвашшем те çак промăшлĕнăçпа техникă тĕлĕшĕнђен мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕплесе тĕрĕсрен пĕлмелле. Çакна пĕлесси пирĕншĕн пур ытти ĕççенђен пысăк ĕç, пур ытти ыйтусенђен пысăк ыйту, мĕшĕн тесен, промăшлĕнăçпа техникă йĕркине кĕреймесен епĕр тĕнђе култтурĕн çулĕ çине нихăçан та тухаймăпăр, култтурлă халăхсен çумне нихăçан та çыпăçаймăпăр, ĕмĕр ђикансем пек пăнђăхса пурăнса, хамăр йăха вилсе пĕтсе çухатăпăр, ăру йатне те тĕнђене хăвараймăпăр. Çавăнпа пирĕн ђуна пăшăхтаракан, ђĕрене сикттерекен ђи йăвăр шухăш çакă: ђăвашшем промăшлĕнăçпа техникăн аслă çулĕ çине тухма пултарĕçи, çуки? Çакна пултарнине, пултарайманне пĕлес тесен малтан пирĕн ун çинђен ђăваш историйĕ мĕн калапине пĕлес пулать.

Аслăлăх катартнă тăрăх—тÿрк ăрăвĕн йăхĕсен Атăл тăврашне куçса килнĕ саманарах вĕçне пăхăр йе тимĕр хывнă сухапуççем пулнă, çавăн пек авалхи сухапуç тĕренĕсене тÿрк йăхĕсем ђи малтан пурăннă вырăнсенђе нумай тупнă. Апла пулсан—çак саманарах тÿрксем пăхăрпа тимĕре шăратса кир-

лĕ йапала тума пĕлни паллă. Çак археолоки кăтартуне тĕрĕсе хурсан, тўрксем ку вăхăтрах пăхăрпа тимĕртен ытти метталлсенђен те тĕрлĕ хайсене кирлĕ йапаласене шăратса тума пĕлнĕ. Пăлхари патщалăхĕ вăхăтĕнђе ђăвашшен техниккă вăйлă пулни пире пĕтĕмпех тĕрĕсрен паллă: ăна пире çав саманаран йулнă йапаласем витĕр кăтартса тăраççĕ. Çав вăхăтри ђăваш техникки çинђен пире истори çапла калаť: ђăвашшем çĕре тимĕр хывнă тĕренлĕ акапуççемпе сухаланă, вăрман касса пысăк кимĕсем тунă, çав кимĕсемпе Атăл тăрăх çўлелле Атăл вĕçне çитиђђен, айалалла Каçпи тинĕсне çитиђђен таварпа çўретнĕ, вĕсем килçуртсем, йалсем, хуласем тунă. хуласенђе арăп ăстисенђен вĕренсе тĕрлĕ питĕ стиђђĕ, илемлĕ çуртсем тума вĕреннĕ, вĕсем тăшмансемпе кĕрешме тĕрлĕ крепăççем тунă, вĕсен çар пулнă, çар валли сăнăсем, хĕççем, хурçăланă çĕмĕрен уххисем пулнă, вĕсен армансем, тир савађĕсем пулнă, вĕсем тĕрлĕ метталлăран: ылтăнран, кĕмĕлрĕн, пăхăртан, тăхланран укçа çапма, тĕрлĕ илемлĕ йапала тума пĕлнĕ, тимĕртен çава, çĕçĕ, çăра, уçă, хайђă, пуртă, сăнђăр, хĕç, пăшал, çĕмĕрен, йĕнерпусми тума пĕлнĕ, вĕсем кĕленђе, кирпĕç, питĕ илемлĕ савăтсапа тума пĕлнĕ. Унтан ђăвашшем питĕ илемлĕ тумланма вĕренсе кайнă: вĕсем ука тирсе тумтир çĕлеме, тума пурçăнпа, тĕвеçăмпе хитрелетме, ахахсенђен, мерђесенђен, кĕмĕл нухрађĕсенђен ытармалла мар лайăх шăрçасем, çеçтенкĕсем, тухйасем, хушпусем, сарăсем ытти тум йапалисем те тума вĕренсе кайнă. Вĕсем çĕр айĕнђен тĕрлĕ ђула ђаваласа кăларса ђулран касса, йакатса, ватса тĕрлĕ кирлĕ йапала тунă, исвĕçлĕ ђула хĕртсе исвĕс тума пĕлнĕ, унтан семент тума та пĕлнĕ; ђаплăрах çынсем вилсен вилнĕ çын шăтăкĕ çине мрамăртан, ытти илемлĕ тĕреклĕ ђулран памĕтниксем туса лартнă. çаван пек памĕтниксем Атăл тавринђи авалхи масарсем çинђе нумай тĕлте хађиђђенех сыхланнă, çав памĕтниксем çине арап пуквисемпе çыру çырса хăварнă. Çав çырусене нумайĕшне халĕ те вулама пулаť, вуласан вĕсене ђăвашла, ђăваш ђĕлхипе çырни паллă. Çапла ђăвашшен тĕп авал техниккă вăйлă пулнă. Кайарахпа та тутарпа вырăс патшисен аллине ђуралăха кĕрсе ўксен те ђăваш хăй ăсталăхне сасартăках çухатман, ăна пĕр кĕрешмесĕр хăй аллинђен ĕçермен. Ун çинђен пире йулашки тăватă çĕр çул çинђен кăтартакан истори токкуменђĕсем питĕ витĕр каласа тăраççĕ. Вĕсем пире çапла калаççĕ: çак саманара ђăваш хура халăхĕ йалсенђе çĕрĕçпе кĕрмешше пураннă, пур хуласенђе пуранакан ђăваш улпуђĕсем, сутилўçĕсем, тĕрлĕ ăстасемпе ремеçлĕнниксем пыра киле йе тутара, йе вырăса тухса пĕтнĕ. Çапах та йалсенђе ăсталăх, тĕрлĕ йенђен тупăшлас йăла пĕтĕмпех сўнсе ларман: йалсенђе ђăваш тимĕрçисĕм, пăхăрçисем, кĕмĕлçисем пуранна, унта тĕрлĕ армансем пулнă, унта пур хресђен пуранаçĕнђе кирлĕ йапаласене тăвакан аластисем пуранна. Ђăвашшем вăрман касса Атăлпа Сăрă тăрăх тавар çўретме

пысӑк кимӗсемпе паршӑсем тунӑ, ҫӑвашшемех таврари хуласенҫе тара кӗрӗшпе ҫул ҫуртсем тунӑ, ҫул ҫулӗсем хывнӑ. Ҫапла ҫӑвашшен хушшинҫе ӑсталӑх патшасен пусмӑрне кӗрсе ӳксен те сӳнсе ларманнине историйӗн пулнӑ ӗҫӗсем ҫапла кӑтартса тӑраҫҫӗ: вырӑс колонисатсийӗ ҫӑваш ҫӗршывне хупӑрласа илсен—ҫи малтан патшасем ҫӑваш хулисене вырӑслатма хушнӑ, ҫапла тӑвас тесе ҫӑвашшене хуласенҫен хӑваласа кӑларма хушнӑ, вӗсен вырӑнне унта вырӑс ҫар ҫыннисене, вырӑс улпуҫӗсен ҫурисене, унтан тӗрлӗ ремеҫленниксемпе сутилӳҫӗсене Мускав тврашӗнҫен куҫарнӑ. Ҫав вырӑса ҫавӑрнӑ хуласем малтан вӑрҫӑ крепӑҫӗсем йевӗрлӗ ҫеҫ пулнӑ: унта ҫӳлӗ тӗмесем ҫинҫе тупӑсем тӑнӑ, кунӗнҫӗрен сыхӑра ҫар тӑнӑ, хуласем патне ҫӑвашшене ҫывӑха пыма та хушман. Анҫах ҫапла ҫарпа ҫӑваш хура халӑхне пусмӑрласа тӑма, йалан ӑна вӑрҫӑпа хӑратса тӑма ҫӑмӑл пулсан та—ҫак ӗҫ колонисаттӑрсен инттересӗшӗн, вӗсен пурӑнӑҫӗшӗн килӗшӳллӗ пулман, мӗшӗн тесен хуласем пӗр йенҫен пур йалхуҫалӑх туйантаракан ҫимӗҫе ҫӑваш хура халӑхӗнҫен ҫеҫ илме пултарнӑ, тепӗр йенҫен ҫӑваш хура халӑхӗ ҫав хуласемпе ҫыхӑнса тӑмасӑрах хӑйне ирӗккӗн пурӑнма пултарнӑ: тырра, тӗрлӗ ҫимӗҫе вӑл хӑйех ҫӗр ӗҫлесе тунӑ, тӗрлӗ кирлӗ йапалана йалсенҫе ҫӑваш ӑстисем тунӑ, кирлӗ тавара ҫӑваш сутилӳҫисем вырӑнтан вырӑна ҫӳретсе тӑнӑ. Ҫапла колонисатси хӑй ӗҫне вӗҫне ҫитиҫҫен татса хурас тесен, хӑйне ӗмӗр кисренми тӗреклӗлетес тесен ҫи малтан ҫӑваш хура халӑхне пурлӑх тӗлӗшӗнҫен, економиккӑ йенҫен пӑхӑнтармалла пулнӑ. Ҫак ӗҫ халӑха ҫарпа йе вӑрҫӑпа пӑхӑнтарассинҫен йавӑр пулнӑ, ҫавӑнпа вӑл темиҫе ӗмӗр тӑршшӗпе пырсан та, револютси саманине ҫитиҫҫенех пырсан та тӗпӗ йӗрӗпе пулса пӗтеймен, колонисатси хӑйӗн колоңиаллӑ политтиккипе ҫӑваш хура халӑхӗн пурлӑхне вӗҫне ҫитиҫҫен ҫавӑрса илсе пӗтереймен. Колонисатси умӗнҫе ҫапла питӗ пысӑк ыйту тӑнӑ: колонисатси ӗҫне ӗмӗре никӗслӗ тӑвас тесен пур ҫӑваш хура халӑхӗн мулне, пурлӑхне, каппитталне пӑхӑнтармалла пулнӑ, халӑха економиккӑ майкӑҫӗпе ҫавӑрса илмелле пулнӑ. Анҫах ҫӑваш хура халӑхӗ умӗнҫе тепӗр йенҫен ҫавӑн пекех тепӗр пысӑк ыйту тӑнӑ: вӑл калана—хура халӑх малашнехи ӗмӗтне пӗтӗмпех ҫухатас мар тесен, йепле те пулин ҫут тӗнҫере пурӑнас тесен—вӑл ҫи малтан хӑй пурлӑхӗшӗн кӗрешмелле, тавлашмалла, ҫапӑҫмалла тенӗ, пур пурлӑхӑн ырлӑхӗсене, хуҫалӑхӑн тымарӗсене, пурӑнӑҫӑн сӗткенне колонисаттӑрсене памалла мар тенӗ. Ҫавӑнпа та ҫӑвашшен йулашки ӗмӗрсен историйӗ тӑршшӗпе пирӗн хура халӑх вырӑс патшалӑхӗн, улпуҫӗсен капитталҫӑсен колониаллӑ политтиккӗпе кӗрешпе иртернӗ. Ҫак ӗмӗрхи кӗрешӳ ҫинҫен епӗр малта та каласаттӑмӑр, анҫах епӗр унта ҫӗршӗн, шывшӑн, ҫараншӑн, вӑрманшӑн кӗрешни ҫинҫен ҫеҫ каларӑмӑр. Анҫах пирӗн хура халӑх ӗнси ҫинҫе ӗмӗртен выртакан пусмӑр пире ытти нумай тӗлӗшӗнҫен те

калама çук хытă ласканă, ытти йенҫен те халиҫҫен сĕвĕрĕлейми сийенсем тунă. Çав сийенсене пула пирĕн авалран тапраннă промăшлĕнăçпа техниккă пăҫах сўнсе ларнă, сутилў ĕçĕ те пĕтĕмпех пĕтсе ларнă, халăх пурлăхĕ, мулĕ каппитталĕ саланса çухалса кайнă.

Çак ĕçе тума колонисаттăрсене ҫи малтан ҫăваш хулисене, унтан аслă шывсен хĕрринҫе ларакан пысăк ҫăваш йалĕсене туртса илни, ҫăвашшене сутилў çулĕсенҫен айакалла хăвалани пулăшнă. Анҫах колонисатсийĕн кунпа çеç кăмăлĕ тулман—хура халăха пĕтĕмпех екномиккăн пур тĕлĕшĕнҫен те ерешмен картипе шăнана çавăрса илнĕ пек илме тăрăшнă. Çапла пире истори токумĕнҫĕсенҫен паллă: XVI-мĕш ĕмĕртен пуçласа колонисаттăрсем ҫăваш йалĕсенҫи армансене тĕрлĕ сăлтавпа туртса илсе пĕтереççĕ: (тĕпе кĕмепшĕн, тўсмелле мар пысăк хырçă хурса, парăмсене тўлейменшĕн, ҫăваш хуçисене политтиккă тĕлĕшĕнҫен шанҫăксăра кăларса ытти сăлтавсемпе те), унтан ҫăвашшене хăйсен шывĕсенҫе те пулă тытма йурамасť, хăйсен вăрманĕсенҫе те кайăксене тытма йурамасť тесе патшасемпе вĕсен тарçисем уккассем кăлараççĕ, ҫăвашшене вăрман касса тупăшлама памаççĕ, ҫăвашшене килте тунă тĕрлĕ йапалапа та: çуна, урапа, тăла, пир, пушăт, çăпата таврашне те, çăнăх, кĕрпе, çăкăр, кулаç, аппăш таврашне те хуласенҫе йе пасарсемпе йармăнккасенҫе сутса тупăш тума памаççĕ, пур пасарсене, йармăнккасене айакран килсе пуснă колонисаттăрсен аллине парса ҫăвашшене çав усламçăсем урлă çеç тавара илме те, сутма та кирлĕ тесе уккассем тухаççĕ. Пыра киле, пĕтĕм Раççейри хресҫен пурăнăçĕ наҫарланнăçемĕн, хресҫен улпутсен аллипе пĕтĕмпех ҫураллăха кĕнĕçемĕн—ҫăваш хура халăхĕн пурăнăçĕ пĕтĕмпех йурăхсăра тухса кайаť. Нихăш йенҫен те тупăшмалла пултарайман хресҫен çука йерет, парăма кĕрсе пĕтет; XVIII-мĕш ĕмĕрте ҫăвашшем вырăс хресҫенĕпе танлаштарсан хырçă икĕ хут ытла тўлесе пурăнаççĕ, ҫăвашшем панкăсенҫе кивçен укçа кирлĕшĕн илме пултараймаççĕ—вĕсем кивçен укçапа тавар тавраш улпутсенҫен, унтан колонисаттăрсенҫен —сутилўçăсенҫен çулталăкне 50-шар проҫҫăн тўлемелле илсе ĕмĕр пĕтми парăма кĕрсе пĕтеççĕ. Çак йăвăр саманара ҫăвашшенҫен нумайăшĕ çурҫĕсене пăрахса пуçĕпе тарса саланса пĕтеççĕ, хăшĕ аптăранă йенне улпутсен аллине ĕмĕрлĕхе ҫуралăха кĕрсе ўкеççĕ. Çапла пурлăх саланкине кура хура халăх ирĕксĕр пăлханма тытăнаť, çав пăлхавсене халăх улпутсене, тўресене, ҫиновниксене, пупсемпе миççионерсене хирĕç тапратса хумханаť; ҫăвашшем ҫи нумай, ҫи вăйлă Раçин Çтаппанĕн пăлхавĕ вăхăтĕнҫе хумханаççĕ: çак саманара вĕсем хăйсем тупăсем, пăшалсем хĕççем, сăнăсем туса, уйрăм ҫăваш пулккисем туса Мускав патши çарĕпе çапăçаççĕ. Çапла хура халăх пăлханнине кура—патшалăх ăна тата хытăрах хĕсме тытăнаť. Ҫăвашшемшĕн ҫи йăвăр самана Пĕрремĕш

Петӗр патша вӑхӑтӗнҗе тытӑнаҭ: ҫак патша җӑвашшем тимӗрпе хурҫӑ тытса пӑлханас йӑлана пӑрахҗӗр тесе, халӑх пӑлханма ан пултарайтӑр тесе җӑваш ҫӗрне вӑтам кӗпернесенҗен тӗрлӗ ҫарҫыннисене: пушкарсене (тупӑҫӑсене), стрелтсисене (перӳҫӗсене), хусахсене йалӗ йалӗпе ирӗксӗр куҫараҭ, ҫав вӑхӑтрах пур җӑваш йалсенҗи тимӗрҫӗсене, ытти ӑстасене, тӗрлӗ ремеҫлӗнниксене мопилисаттсилесе ытти ҫӗрсене хысна ӗҫне ӗҫлеме хӑваласа кайма хушаҭ. Ҫапла җӑваш йалӗсенҗе тимӗрҫӗ лаҫӗсене ишше пӗтереҫҫӗ, җӑваш йалӗсенҗе җӑваш ӑстисен йӑхне те хӑвармаҫҫӗ, җӑваш хура халӑхне пур килте кирлӗ ҫук йапалашӑн та хуласенҗи ӑстасемпе ремеҫлӗнниксене йӑлӑнмалла тӑваҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра пур вӑйпитти, унтан кӑшт та пулин ӑсталӑхлӑ ҫынсене пиншерӗн пиншерӗн парттисем туса Атӑл ҫине, Тон шывӗ ҫине карапсем тума, Питӗрпур хулине тунӑ ҫӗре ҫуртсем тума пуҫиле хӑваласа кайаҫҫӗ. Унтан тата ҫак вӑхӑтрах йалсенҗе йулакан җӑвашшене хысна ӗҫне ӗҫлеттерсе: ирӗксӗр вӑрман кастарса, тавар Мускава туртарттарса йапӑхтарса пӗтереҫҫӗ. Калама та кирлӗ мар—ҫак вӑхӑта җӑваш пурлӑхӗ, хӑлӑх мулӗ пӗтӗмпех вӑйран тайӑлаҭ, җӑваш ӑсталӑхӗ, авалтан тапранма тытӑннӑ промӑшлӗнӑҫӗпе техникки пӑнҗахаҭ, темиҫе ҫӗр ҫул кайалла җакса кайаҭ: җӑваш аллинҗе пӗр ҫӑпата тума йурӑхлӑ шӗшлӗ тӑрса йулаҭ, ӑна та пулин вӑл хулари мишҗенсенҗен туйанмалла пулаҭ. Ҫапах та ҫак хӑрушӑ йӑвӑр саманара та җӑваш ҫӗрӗнҗе промӑшлӗнӑҫ пӗтӗмпех сӳнсе лараймасҭ: ҫапла 1773-мӗш ҫулта Шупашкарта промӑшлӗнӑҫ хаљхинҗен нумай вӑйлӑ пулнӑ; ҫавӑнпа Кӗтерине патша Шупашкара курсан вӑл Җулхуларан пӗртте кайа мар тенӗ: ун җухне Шупашкарта 14 тир, ҫу, җан тӑвакан савӑт пулнӑ, 49 пысӑк тырӑ кӗлеҗӗ пулнӑ, 38 сутилӳ лавки пулнӑ, 1037 сутилӳҫӗсемпе ӑстасем пурӑннӑ. Ҫак савӑтсен хуҫисем, сутилӳҫӗсем, ӑстасем йе вырӑссем, вырӑсланнӑ җӑвашшем пулнӑ пулмалла, ҫапах та ҫакӑ җӑваш ҫӗрӗнҗе авалранах промӑшлӗнӑҫ пулнине тӗрӗсрен пӗлтерсе тӑраҭ. Ҫапла XVIII-мӗш ӗмӗрте Шупашкар Җулхулапа танлашша тӑни питӗ пысӑк йапалана пӗлтерет: вӑл җӑваш ҫӗрӗнҗе ҫав саманара тӗрлӗ савӑтсем валли җӗрӗ хатӗр сырйо ирӗккӗн пулнине, пирӗн ҫӗрте унта ӗҫлеме ҫителӗклӗ маҫтӑрсем пулнине, халӑх хушшинҗе авалран йулнӑ промӑшлӗнӑҫпа кӗрмешмелли йӑласем пулнине, унтан ҫав промӑшлӗнӑҫа тапратса аслӑлатма ҫителӗклӗ мул пулнине пӗлтерет. Унтан ҫаках җӑваш ҫӗрӗ XVIII-мӗш ӗмӗрте вӑтам хаљхи интустрилӗ вырӑс кӗпернисенҗен кайра тӑманнине пӗлтерет, ҫаках тата ҫак саманара вырӑс патшалӑхӗн колониаллӑ политтикки җӑваш ҫӗрне пӗтӗмпех ҫаратса, пӑҗах ҫуклӑха хӑварма ӗлкӗрейменнине пӗлтерет. Анҗах малашне җӑваш ҫӗрӗшӗн промышлӗнӑҫ тӗлӗшӗнҗен тата та йӑвӑр кансӗр самана ҫитет. Вӑл ак мӗншӗн килет: Раҫҫейре җӑнтан промӑшлӗнӑҫлӑ ӗмӗр вырӑнне XIX-мӗш ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫурринҗе тапранса кайаҭ: интус-

три аслă пăс машшинсене тума тытăнсан, ђукун çулсене тума пуçласан, халăха улпутсен аллинђен ђуралăхран кăларсан çеç вăйлăланса кайаť. Раççейре промăшлĕнăç вăйлăланнă çемĕн ђăваш çĕрĕ ытти нумай çĕрсемпе танлаштарсан кайа йулнăçемĕн кайа йулса пыраť. Вăл ак çаканшăн килет: ђăнтан промăшлĕнăç вырăнне йулашки саманара аслă интустрийе çеç епĕр хисеплетпĕр, аслă интустри пирĕншĕн хуласем пек пысăк хапрăксене, савăтсене, вĕсенђе калама çук аслă пăс машшинисем ĕçленине, вĕсенђе кăпнине вуншар пин ĕçлекенсем ĕçлесе тăранса пурăннине, вĕсем кунĕнçĕрĕн хисепсĕр нумай, лайăх, йӳн тавар кăларнине пĕлтерет. Вăйлă аслă интустри пур авалран йулнă вак промăшлĕнăçа, уйрăм пĕђĕкçĕ промышлĕнăлă претрийаттисене, алăстисене, ремеслаçăсене таптаса пĕтерсе пыраť, мĕншĕн тесен, вăл лайăх, хитре, тӳсĕмлĕ, йӳн тавар хисепсĕр нумай кăларса, вак промăшлĕнăçăн таварне йӳнеçтерме памасť. Çавăнпа ђăваш çĕрĕнђе авалран йулнă вак промăшлĕнăç пăнђăхмаллах пулнă йе вăл аслă интустрийе çавăрăнмалла пулнă. Анђах пирĕн аслă интустри пулма пултарайман. Мĕншĕнши? Аслă интустри тума, хапрăксем, савăтсем тума ђи малтан питĕ пысăк, нумай капиттал кирлĕ; Раççей историйĕн сутилӳлĕ капитталисăм саманинђе пур мул, пур нумай капиттал Мускав таврашĕнђе, унти усламçăсемпе сутилӳçĕсен унтан патпалăх аллинђе пулнă, çавăнпа сутилӳлĕ капитталисăм промăшлĕнăллă капитталисăмпа çавăрăннă вăхăтра пур хапрăксем, савăтсем, тĕрлĕ интустрилĕ претприйаттисем Мускавпа Питĕр таврашĕнђе тăвăнаççĕ, кайарахпа сутилӳреп пулнă капитталпа пуйан ытти Ђулхула, Хусан пек хуласен таврашĕнђе тăвăнаççĕ. Интустрийе пуçламĕшĕнђе тăвакан класса епĕр пуршуаçи тетпĕр, ђăваш халăхĕн пуршуаллă класс пулайман, вăл колонисатси пусмăрĕ айĕнђе пăнђăхса йе вырăсланса пĕтнĕ, ђăваш çĕрĕнђи пуршуаçи нађар пулнă, вăл тĕрлĕ колонисаттăрсенђен пулнă, вăл йут капитталпа ĕçленĕ, вăл сутилӳлĕ капитталăн колонийĕ вырăнне хисепленекен ђăваш çĕрĕнђен пур промăшлĕнăçа кирлĕ ђĕрĕ хатĕрсене ђăваш хура халăхне тĕрлĕ йенђен улталаса, пусмăрласа йута леççе çеç тăнă, ђăваш çĕрĕнђе промăшлĕнăлă претприйаттисем тума вăл тăрăшман. Ђăваш çĕрĕнђи капитталçăсем ђăвашăн натсилĕ пусмăр айĕнђе, çуклăхпа аптăранă çĕрĕ çине сиввĕн пăхнă, унта пĕр вăхăта пуйиђђен çеç пурăнма тăрăшнă, ĕмĕр пурăнма йăва çавăрма, çуртсемпе претприаттисем тума вĕсем ытти-аслăрах хуласен йенелле кăмăлĕсене тытса тăнă. Кĕскен каласан пирĕн ђăнтан промăшлĕнăллă капитталçăсем пулман та, пирĕн пуршуаçи вак усламçăсемпе кулаксенђен çеç тăнă. Çакна тĕрĕслес тесе примерсене шыранса тăма асапĕ те кирлĕ мар: пирĕн ĕмĕртех хресђенрен тухнă ђăваш капитталçисем: Çеливан хуçисем, Осипăх таврашĕсем те, пур хăйсен пурлăхне ђăваш çĕрĕнђе сутилӳлесе тусан та, хăйсем вырăсла ђăн-

тан калаҫма пĕлмесен те, ĕмĕрне пурăнма ђул ҫурђĕсене Хусанта тунă, ђăваш ҫĕрĕнђе туйаннă капиттала Хусана леҫнĕ, ҫапла хура халăхран тухнă ђăваш капитталҫисем айкашнă пулсан, вырăс йе тутар капитталҫисем ҫинђен ҫак тĕлĕшĕнђен каласа сăмаха сайа йама та кирлĕ мар. Унтан йулашкинђен хуҫалăхăн ђăнтан капитталисăмлă ҫиҫтеми ђăваш ҫĕрĕ пек капитталисăмăн колонисен вырăнне хисепленекен ҫĕрсемшĕн ак мĕншĕн пит хăрушă сийенлĕ пулнă: авал ђукун ҫулсем хывиђђен, шывсем тăрăх пăрахутсем ҫӳреме тытăниђђен тавара ăлавпа йе шывсем тăрăх пурлаксем сĕтĕрекен кĕҫĕнрех кимĕсемпе ҫеҫ ҫӳретме майĕ пулнă, ҫавăнпа промăшлĕнăҫа кирлĕ ђĕрĕ хатĕрсене айакка леҫҫе тăма майĕ пулман, ирĕклĕ ирĕксĕрех промăшлĕнăллă претприаттисене ђĕрĕ хатĕрсен вырăнĕнђех тумалла пулнă. Анђах ђукун ҫулсем хывсан, пăрахутсем ҫӳреме пуҫласан ҫак ĕҫ пĕтĕмĕшпех улшăнса кайнă: ђĕрĕ хатĕрсене темиҫе пин ҫухрăмран савăтсене, хапрăксене леҫҫе тăмалли май тухса кайнă. Ҫапла капитталисăмăн колониаллă политтикки ҫак ĕҫе тусан темиҫе хут ытла хăватлăланса кайнă: вăл колонисен пур пурлăх сĕткенне, пур хăйне кирлĕ йапалапа илме, колонисене ђарусăр ҫаратма пултарнă. Ак мĕшĕн ђăваш ҫĕрĕ XVIII-мĕш ĕмĕрте Ђулхула кĕпернинђен промăшлĕнăҫ тĕлĕшĕнђен нумайах кайа тăман, ак мĕшĕн йулашки ĕмĕрте ђăваш ҫĕрĕнђе промăшлĕнăҫ малаллала мар, кайалла ђакса пынă. Ҫакна виттĕр ăнласа илес тесен ҫакна ҫеҫ асăнас пулаť: пирĕн ҫĕртен ҫуллен темĕн ђухлĕ тĕрлĕ хатĕр йут ҫĕрсене кайса тăраť, ҫапла Мускава, Питĕре, ытти патшалăхсене те ҫăмарта, ҫăм, тир, ҫĕтĕкҫурăк, йуман йăваҫĕ, ытти йапала та кайса тăраť, пур ҫав йапала та айакри хапрăксемпе савăтсенђе ĕҫе кĕрет, ђукун ҫулсемпе пăрахутсем пулмасан ҫав ђĕрĕ хатĕр айакка кайаймĕђђĕ, ирĕклĕ ирĕксĕрех вĕсене йусама, таварлатма пирĕн ҫĕртех кĕҫĕн те пулин хапрăксемпе савăтсем тумалла пулнă пулĕђђĕ.

Ҫапла ĕнтĕ епĕр кĕскен пирĕн ҫĕрте авалран промăшлĕнăҫ йепле сӳтĕленсе пынине кăтартрăмăр. Ҫак истори кăтартăвĕнђен пире ҫакă паллă пулђĕ: тĕп авал ђăвашшен ăсталăхпа техниккă, пĕтĕм маттериаллă кулђттурă ытти халăхсенђен кайа тăман, нумай халăхсенђен малта та тăнă, ђăваш ăсталăхĕпе техникки йут халăхсен пусмăрĕ, унтан капитталисăм пусмăрĕ таптанипе ҫеҫ вăйсăрланса пăнђăхнă. Ҫапла пулсан ҫакă ђăваш ĕҫ халăхĕ, ђăваш хура халăхĕ асăннă пусмăрсене сирсе пăрахнăранпа каллех техниккă йышăнса вăйлăлатма, промăшлĕнăҫ, аслă интустри тума пултарнине пĕлтерет. Ҫапла пуласси пирĕн ҫăмăл кăмăл ĕмĕтленекен ĕмĕт ҫеҫ мар—вăл историн саккунĕ. Ҫакна хытă астуса, малалла епĕр промăшлĕнăҫ Ђăваш оплăҫĕнђе халĕ мĕлле тăнине, унăн малашнехи кунĕсем мĕлле пулмаллине тишкерсе пăхса тухăпăр.

Халĕ оплăҫра ђăнтан *аслă интустри*: пиншер ҫын ĕҫлесе тăракан хапрăксем, савăтсем пăђах та ҫук. Мĕшĕн пирĕн

вăл пулманнине епĕр малта каларăмăр. Пур оплăçри промăшлĕнăçа, пур промăшлĕнăллă претприйаттисене те *вăтам интустри* вырăнне хисеплеме йурат. Унтан пирĕн çĕр айĕнҫен метталл, кăмрăк, нехтă, тăвар, ытти йапала таврашне ҫаваласа кăларакан претприйатти те çук, çавăнпа пирĕн промăшлĕнăçа *çамăл интустри, йусакан промăшлĕнăç* вырăнне хисеплес пулат, пирĕн *йавăр интустри, кăларакан промăшлĕнăç* çуках теме кирлĕ.

Вăтам ĕçлесе тăракан промăшлĕнăллă претприатти мĕнпурĕ пирĕн вăтăр çеç хисепленет. Çав кашни претприаттире 16 çын ытла тара кĕрĕшше ĕçлесе пурăнат, мĕнпурĕ çав претприаттисенҫе вăрçă умĕн 2000 çын ĕçлесе пурăннă, халĕ *1200 çын тара кĕрĕшше йалан ĕçлесе* пурăнат. Çапла пирĕн оплăçра ҫăнтан пролеттариат вырăнне хисепленме пултаракан çын пĕр проҫҫăнран та ытла мар (çĕр ĕçлемесĕр хапрăксемпе савăтсенҫе тара кĕрĕшше ĕçлесе, тăранса пурăнакан çын, ĕçлекенсен çемйисене те хисеплесен 6-8 пин ҫуна йахăн). Çапла пирĕн халăхăн *пролеттарлă классĕ* çўхи пирĕн оплăç интустриленў тĕлĕшĕнҫен кайра тăнине кăтартат. Çакна витĕр пĕлес тесен çапла танаштарулă кăтартусене аса илес пулат: Мускавпа Питĕр кĕпернисенҫе пур пурăнакан етемĕн пролеттариат сийĕ 10-15 проҫҫăна çитет, Йевроппăра нумай интустрилĕ вырăнсенҫе пролеттариат сийĕ 50 проҫҫăнран та иртет. Унтан çав асăннă оплăçри пролеттариат хушшинҫе те ҫăваш çурри те çук, çакăнтан пирĕн куç умĕнҫе йаланах тăракан тепĕр ыйту тухат, çак ыйту пире хăвăртрах ҫăваш пролеттариаҫĕ тума, хăвăртрах ҫăвашшене хапрăксенҫе, савăтсенҫе ĕçлесе пурăнма вĕрентме, вĕсене пролеттарлă пурăнăça хăнăхма вĕрентме хушат.

Çав 30 претприаттисем *уйрăм происвотлăхсен тĕлĕшĕнҫен* çапла хисепленеççĕ: хăма çуракан савăтсем 17, пăслă (паровые) çăнăх арманĕсем 6, çу çаптаракан савăт 1, йăвăç каскалакан савăт 1, тир савăҫĕ 1, йалхуçалăхĕн машшинĕсене тăвакан савăт 1, метталла йусакан савăт 1, мепĕл хапрăкĕ 1, ҫăваш аслă типокрахвийĕ 1. Вăрçă уммĕн оплăçра тата çаксем пек вăтам претприаттисем пулнă: ерех савăҫĕсем 2, супăнь савăҫĕ 1, парахутсем тăвакан савăт 1. Çапла пирĕн оплăçра ĕçлекен савăтсенҫен 60 проҫҫăнĕ ытлашшипех вăрманпа йăвăç йусакан савăтсем, йалхуçалăх паракан ҫĕрĕ хатĕрсене йусакан савăтсем 25 проҫҫăна йахăн, метталла йусакан савăтсем 6 проҫҫăнран та ытла мар. Çак кăтартусем ҫи малтан мĕне пĕлтереççĕши?

Çакă ҫи малтан пирĕн çĕрте *вăрманпа йăвăç каскалакан промăшлĕнăçĕ вайлине*, малашне те вăйлă пулмаллине ҫĕлтерет. Çапла пуласси пирĕн çĕрте лайăх ĕçе йурăхлă вăрман нумайинҫен килет. Пирĕн оплăçра халĕ вăрман 500 пин теçеттина йахăн, çавсенҫен виççĕмĕш пайĕ гĕрлĕ ĕçе кайакан хырă, пиллĕкĕмĕш пайĕ ҫи хаклă каскаламалли хатĕр йуман. Çуллен оплăçра 6 пин теçеттине йахăн вăрман касăлат, кас-

нă вăрманран 200 пин куплă хăлаçа йахăн вутăпа каскалама йурăхлă йăвăç тухаТ. Çак вутăпа йăвăç саппасĕ оплăçа пур йенђен те кирлĕшĕн çителĕклĕ çеç, çав саппасран ытти тĕлелле хăваламалли йăвăç питĕ сахал йулмалла. Çапла пурте ђăвашшем пўртсене çителĕклĕ йалан вутăпа хутсан, çуртсене пурте лайăх ђăнтан туса çавăрсан пулмалла. Анђах нумайĕшĕ ђăвашшем вутă курмаççĕ те—пўртсене улăмпа, хăрăктуратпа, çўпĕçапăпа ăшăтса пурăнаççĕ, çурђĕсене те пĕђĕкçĕ хўшĕсем пек çеç нумайĕшĕ тукалаççĕ. Çавăнпа пирĕн вăрман нумайипе халăх вăрманпа йăвăçа ирĕккĕн кирлĕшĕн расхутласа пурăнаТ теме йурамасТ. Халăх вăрманран çителĕклĕ ырă курса пурăнманни пĕр йенђен халăх йурлинђен килет, тепĕр йенђен пирĕн Атăлпа Сăрă сĕмвăрманĕсем оплăçăн айакри ђиккисем тăрăх выртнинђен килет: епĕр пĕлетпĕр — вăрман 30—35 çухрăм айакра выртсан ăна касса турттарса усă курма майĕ çук. Çавăнпа та тўрех калас пулаТ: оплăç вăрман тĕлĕшĕнђен пуйан пулсан та, оплăçăн çурри йахăн, ытла та Çĕрпўпе Патăр уйесĕсен нумай вулăсĕсем, вăрман уссине курмасăрах пурăнăçа иртереççĕ. Çакăнтан ђăвашшем вăрмансене питĕ сыхланса касма тăрăшасси, вăрмансене пĕтерес йăлана пăрахасси, ўсекен ђĕрĕ вăрмансене тырпулла сыхланă пек сыхласа ўстересси тухаТ, кĕскен каласан çакăнтан ђăваш халăхĕшĕн *вăрман хуçалăхне те ăслăлăх кăтартнă пек тытса тăма кирли* тухаТ. Пĕлес пулаТ: вăрмана ђарусăр касса пĕтерессн, ўсекен вăрмана выђăх çўретсе минкетесси авал çеç килĕшўллĕ пулнă: ун ђухне вăрман ытлашши нумай пулнă, унтан пур лайăх вăрмансем улпутсемпе патша хысни аллинђе пулнă, халĕ вăрман хамăра расхутлăх та çителĕклĕ мар, халĕ вăрман, пур ытти пуйанлăх та ĕçлекенсен аллинђе, Ђăваш оплăçĕнђе ђăваш ĕçлекенсемпе хура халăх аллинђе. Пĕлес пулаТ: вăрман оплăçа хисепсĕр нумай усă параТ: авалран çемствăсем хăйсен расхутĕнђен çуррине ытла вăрман тупăшĕпе сапласа тăнă, пирĕн саманара та оплăç пўтшеђĕ пĕтĕмпех вăрман тупăшĕ çине тайанса тăраТ, унтан вăрманăн ђи калама çук пысăк усси оплăçа интустрилеме, промăшлĕлеме пулăшнинђен килет.

Çапла ĕнтĕ пирĕн вăтам промăшлĕнăçăн çурри ытла вăрманпа йăвăç каскалакан промăшлĕнăç. Çак промăшлĕнăç авалах ђăвашшен питĕ вăйлă пулни çинђен епĕр малта каласаттăмăр. Анђах çакăнта сăмах хушшинђе ыйтма тивĕçлĕ: йепле çак промăшлĕнăç та пирĕн пăнђăхса сўнсе лараймашши? Çакă ак мĕнтен килнĕ: вăрмана ђукун çулпа айакка турттарса çўреме йурамасТ: вăл ырăнта нумай йышăнаТ, йăвăрне те йăвăр, çавăнпа вăл хăй çул расхутне те саплаймасТ. Ак мĕншĕн капитталисăм саманинђе те вăрмана ђĕррĕн пирĕн çĕртен айаккала интустрилĕ районсене леççе тăма майĕ пулман, ак мĕншĕн капитталçăсем ирĕклĕ ирĕксĕр пирĕн çĕртех хăма çуракан савăтсем, йăвăç каскалакан савăт, мепĕл хапрăкĕ ту-

малла пулнă. Çапла пирĕн вăрман промăшлĕнăç пурри те етем иртейми економикка саккунĕнҫен çеç тухаť. Çав саккунах малашне пирĕн çак промăшленăç питĕ вăйлăланассине кăтартса тăраť. Унтан вăрман промăшлĕнăçăн тымарĕсене тĕпĕпех пĕлес тесен çакна та аса илес пулаť: пирĕн вăрмансем Атăлпа Сăрă хĕррин҈е ÿсеççĕ, вăрмана шыв тăрăх йухăм майĕпе сулă туса йе паршăпа ҫĕррĕн хăваласан та çул расхуҫĕ нимĕне те тăмасť. Çакă пире пĕр йенҫен усăллă, тепĕр йенҫен сийенлĕ: пĕр йенҫен вăл пире каснă вăрмана кăнтăралла Атăл тăрăх вăрмансăр тарăхса пурăнакан Аçтăрхан таврашне йÿн расхутпа леççе тăма пулăшаť, тепĕр йенҫен пирĕн çĕрте ҫăнтан йăвăç каскалакан промăшлĕнăçа аслăлатассине ҫарса тăраť. Çавăнпа епĕр халĕ авалран йышăннă йăлапа вăрмана çуррине ытла пĕрене халлĕн сулăпа Атăл тăрăх айалалла ăсатса тăратпăр, çак йăлана пăрахсан, каснă вăрманран савăтсенҫе, унтан хапрăксенҫе йусаса терлĕ йапала туса çеç сутса тăрсан епĕр вăрманран темиçе хут ытла усă курăттăмăр. Халĕ оплăçран çуллен 150 пин куплă хăлаç йăвăç кайса тăраť, çавсенҫен çурри пĕрене халлĕн, çурри хăма халлĕн йут çĕре кайса тăраť, çак вăрман хăма халлĕн кайнине те епĕр мухтамалла мар: йăвăç таварне хăма халлĕн йариҫҫен йăвăç каскалакан савăтсенҫе тĕрлĕ пурăнăçра йе промăшлĕнăçра кирлĕ йапаласем туса сутма кирлĕ. Çапла оплăçра йăвăçа тĕрлĕ йенҫен йусакан савăтсем пулмалла. Мепĕл хапрăкĕпе йăвăçкаскалакан савăтĕнҫен пуçне оплăçра авалран йăвăçа ытти йенҫен йусакан савăтсем те пулкаланă, çапла йăвăçран канихвоҙ, скипитар, йăвăç спирҫĕ, уксус йÿçси, креосот, поташ, кусатăран маçĕ кăларакан савăтсем пулнă, йăвăç сĕткенĕнҫен хаклă йышши супăҥ тăвакан савăт вăхăтлăха пулнă. Раççейри халăх пурлăхĕн малашнехи çулне кăтартакан план тăрăх Ҫăваш оплăçĕнҫе хысна вăйĕпе, унтан кооператсипе уйрăм капитталçăсен вăйĕпе те çапла тĕслĕ происвотлăхсем пулма пулаççĕ: йăвăçран çыракан хут тăвас ĕç (хут тума пирĕн çĕтĕкçурăк та нумай та, лайăх та, мĕншĕн тесен, ҫăвашшем килте тĕртнĕ тум тумланаççĕ), йăвăç сĕткенĕнҫен тĕрлĕ химиллĕ хатĕрсем кăларакан ĕç, йалхуçалăхне кирлĕ машшинăсене: акакан, сăвăракан, çапакан ытти тĕрлĕ тĕслĕ машшинăсене тăвас ĕç, вăрçăра кирлĕ йапалесене тăвас ĕç, çутакан шăрпăк тăвас ĕç, хаклă йышши супăҥ тăвас ĕç, пăрахутсем, паршăсем, кимĕсем тăвас ĕç. *Çапла сывăх çулсенҫех пирĕн çĕрте хут, химиллĕ хатĕрсен, йалхуçалăх машшинисен, шăрпăк, супăҥ савăҫĕсем тăванмалла.* Çак йенҫен оплăç вăйлă интустрилленесси халĕ пĕтĕмпех палăрҫĕ: хысна питĕ пысăк шăрпăк савăҫĕ тума та тапратрĕ ĕнтĕ, унтан Сĕнтĕрвăррин҈и ерех савăтне çак çулсенҫех канихвоҙ, скипитар, супăҥ тăвакан савăта çавăрҫĕç. Малашне патшалăх капитталĕ хура халăх аллине лекнĕренпе, колониаллă политтикка пĕтнĕренпе çав савăтсемпе хапрăксем ҫăваш çĕрĕнҫе пуласси тĕлĕшĕнҫен пĕрт-

те иккĕленмелле мар. Анҫах йулашкинҫен вăрманпа йăвăçкаскалакан промăшлĕнăç тĕлĕшĕнҫен каллех тепĕр хут çакна калас пулат: вăрмана епĕр нимĕн выранне хумасăр, ҫарусăр касса пĕтерсе ҫĕррĕн, нимĕн хака оплăçран кăларса тăратпăр, вăрман хуçалăхне епĕр тирпейлĕ тытмастпăр. Унтан тата çакна калас пулат: пур вăрман савăҫĕсем пирĕн Атăлпа Сăрă таврашĕнҫи сĕмвăрмансен çывăхĕнҫе, ҫăвашшем унта сахаллăн пурăнаççĕ, çавăнпа пур савăтсем те йут халăхсен йалĕсен йе хулисен çывăхĕнҫе, оплăç ҫиккисен таврашĕнҫе, çавăнпа унта ĕçлекенсем те нумайĕшĕ ытти халăх ĕçлекенĕсем ĕçлесе усă курса пурăнаççĕ. Савăтсене ҫăвашшен хушшине куçарма майĕ çук—савăтсем вăрман ăшĕнҫе йе çывăхĕнҫе пулмалла, çавăнпа ҫăвашшем тĕрлĕ йенҫен тупăшлас тесен, промăшлĕнăллă ĕçе хăнăхас тесен, ҫи малтан ҫăваш çĕрĕнҫи савăтсенҫе те пулин хăйсем ĕçлеме тăрăшмалла. Çак савăтсенҫен ҫăваш хушшинҫе ĥĕр Урмарти мепĕл хапрăкĕ çеç: çак хапрăкра авалрах ҫăвашшем йалан икшер çĕр çын таранҫҫен ĕçлесе пурăнаҫҫĕç, çак хапрăк ырлăхĕпе пирĕн пин çын ытла ҫăваш сĕтелçисем вĕренсе йалсене сарăлҫĕç. Çапла çак хапрăк усси унта ĕçлекенсене çеç мар, пĕтĕм халăха та тивет.

Малалла иккĕмĕш вырăн пирĕн вăтам промăшлĕнăçра *йалхуçалăх паракан ҫĕрĕ хатĕрсене йусакан промашлĕнăç* йышăнса тăрат. Çак ĕç пирĕн калама çук кайра тăрат: пирĕн йалхуçалăхĕпе пĕтĕм халăх кĕрмепше пурăнсан та оплăçра ултă пăслă (паровые) çăнăх арманĕ, пĕр çу çапакан, пĕр тир савăҫĕ çеç. Пирĕн оплăçран вăтамран çуллен ниллĕк мĕлйун пăта йахăн пĕрҫĕ, темĕн ҫухлĕ çăм, çăмарта, тир, пайтах сĕс, шăрт, ытти йапаласем те кайса тăраççĕ, анҫах çавсене йусаса таварласа сутса пысăк усă курма епĕр пĕлместпĕр, ҫĕррĕн йӳн хакпа сутса пурăнатпăр. Çак йапаласене ҫĕррĕн йута йарса тăриҫҫен епĕр хамăр çĕрте хаклă кăпăш çăнăх тăвакан армансем, тĕрлĕ кĕрпесен арманĕсем, тир, супăҫ, вĕреп савăҫĕсем, çăм хапрăкĕсем, шăртран кирлĕ йапала тăвакан савăтсем, крахмал, спирт, сăра, çĕпра савăҫĕсем, ытти те çĕр тĕслĕ савăтсем те хапрăксем те тумалла. Хаҫхи çак йышши савăтсенҫен ҫи ҫапли—йетĕрне çывăхĕнҫи çу çапакан савăт. Çак савăтра 160 çын ытла йалан ĕçлесе тăрат, çак савăт кантăр, йĕтĕн, хĕвелçаврнăш çуне çапса кăларат, унтан тата олихвă çуне кăларат, çуллен 300 пин пăт ытла вăрăлă пĕрҫĕ пĕтерет. Çак савăт пур Раççейри çу çапакан савăтсен хушшинҫе паллă вырăн йышăнса тăрат. Ҫĕрĕ хатĕрсене çак савăт ытти çĕрсенҫен: Çĕпĕртен, Тутар респупликкинҫен, унтан Ҫĕмпĕр, Самар, Ҫулхула кĕпернисенҫен илсе тăрат, оплăçра хатĕрленĕ çулă ӳсетăрансен вăрри унта виçĕ проҫҫăнран та ытла кĕмест. Çапла пирĕн çĕрте, йут çĕртен килекен ҫĕрĕ хатĕрпе, йут сырйопа ĕçлекен савăт та пур. Çакă пире тӳрех ҫăвашшем хăйсем тăрăшшан ҫăваш çĕрĕнҫе те аслă хапрăксемпе савăтсем пулма пултарнине кăтартат. Анҫах çак

савӑт ҫинҫен те каллех калас пулат: унта ҫӑвашшем сахал ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, унта пуринҫен ытла Ҫулхула ҫыннисем ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Тӳрех паллӑ: малашне интустри йӗрне ӳкнӗ ҫӑвашшем ҫак савӑта хавасланса кӗрсе, ҫу ҫапас ӗҫе вӗренсе маҫтӑрланмалла, савӑт пурӑнӑҫӗпе пурӑнма хӑнӑхмалла, ҫакӑн пек аслӑ савӑтсем ҫӑваш пролеттариаҫӗн шкулӗ, тытки, тымарӗ пулмалла.

Метталла йусакан савӑтсем оплӑҫра иккӗ ҫеҫ: пӗр вактӗвек тавар тӑвакан савӑт, тепри йалхуҫалӑхне кирлӗ машшинӑсем тӑвакан савӑт. Ҫак савӑтсем питӗ пӗҫӗкҫӗ, ӗҫе ҫӗнӗрен тытӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпа халиҫҫен ура ҫине тӑрайман. Авалран пирӗн мӗлле металлӑ промӑшлӗнӑҫ пулни ҫинҫен, унтан мӗлле истори сӑлтӑкӗсене пула вӑл сӳнсе ларни ҫинҫен епӗр малта тӗплӗ каласаттӑмӑр. Халӗ пӗр ик сӑмах малашне ҫак промӑшленӑҫ вӑйлӑланасси ҫинҫен кӗскен калас пулат. Металла ҫӗртен ҫаваласа кӑларакан промӑшлӗнӑҫ, йӑвӑр интрусти тӗлӗшӗнҫен пирӗн малашне шанҫӑк питӗ сахӑл: оплӑҫра ҫӗр айӗнҫи енсенҫе металл ҫук пулмалла. Ҫапах та металла йусакан савӑтсем пирӗн пулмаллах: епӗр Урал тӑвӗн ҫывӑхӗнҫе, унтан Уралран Раҫҫейе иртекен шыв ҫулӗсен те, ҫукун ҫул тӑрӑх та пурӑнатпӑр, ҫавӑнпа металлӑ промӑшлӗнӑҫа кирлӗ сырйона пирӗн оплӑҫа турттарса килме майӗ пур—ҫак тӗлӗшӗнҫен пирӗн кеокрахвилӗ вырӑн нумайӗшӗ вӑтам кӗпернесенҫен те усӑллӑрах, майлӑрах. Металла епӗр интустрийӗн тымарӗ терӗмӗр, ҫавӑнпа пирӗн малашне металлӑ промӑшлӗнӑҫ тӑвашшӑн хисепсӗр хытӑ тӑрса тӑрӑшмалла. Ҫак ӗҫе тӑвасси пӗр йенҫен истори мӑшкӑлне, Петӗр патша ҫӑваш тимӗрҫисене пӗтернине тавӑрассине пӗлтерет, тепӗр йенҫен оплӑҫра металла йусакан промӑшлӗнӑҫ пулмасан нийепле ытти тӗслӗ промӑшлӗнӑҫ та малалла кайма пултараймаст, мӗншӗн тесен, кирек мӗлле машшинӑ та тимӗртен, хурҫӑран, ҫукунтан тӑвӑнат.

Унтан оплӑҫра кӗнеке ҫапакан икӗ хапрӑк *типокрахвипе литокрахви* пур. Ҫак ҫаплӑ, хӑватлӑ хапрӑксене епӗр ҫӑваш ӗҫхалӑхӗ хӑй ирӗкӗпе автономи йӗркипе пурӑнма тытӑнсан ҫеҫ куртӑмӑр: авал вӗсем пирӗн ҫӗрте пулман, вӗсене ҫӑваш ӗҫлекенсем хӑйсем тӑрӑшнипе тунӑ. Ҫав хапрӑксенҫе ҫӑваш хаҫаҫӗсем, шурналӗсем, кӗнекисем ҫапӑнса тухаҫҫӗ. Ҫак хапрӑксенҫе ҫӑваш пролеттарисем ҫанна тавӑрса ҫӗнӗ халиҫҫен курман ӗҫе вӗренсе, ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, вӗсене типокрахви ӗҫне вӗренме ҫак хапрӑксенҫе пӗр шкул пур. Ҫак малта асӑннӑ 30 вӑтам претприйаттисем пур те ӗҫре тӑраҫҫӗ. Унтан оплӑҫра вӑрҫа йе револютсийе пула хупӑннӑ савӑтсем вунпа йахӑн хисепленеҫҫӗ, ҫавсенҫен паллӑраххисем Свеник саттонӗнҫи пӑрахутсене йусакан йе ҫӗнӗрен те тӑвакан савӑт, ҫав саттонрах кӗленҫе савӑҫӗ, Сӗнтӗрвӑрринҫе ерех савӑҫӗ, Йетӗрнере ерех савӑҫӗ, унтан тӗрлӗ тӗлте тата ӗлӗкрех супӑнь, тир, кирпӗҫ ҫавӑҫӗсем пулнӑ. Ҫак савӑтсене Ҫӑваш оплӑҫӗ пурне те йеп-

ле те пулин каллех ёçе йарашшăн тăрăшат. Çак ёç пуласси пирĕн куç умĕнђе: ђăваш ĕçхалăхĕ ирĕке тухнăранпа кивĕ саланнă савăтсене тўрлетме çеç мар, çĕнĕ савăтсем те тума пултарђĕ: выçлăхпа халăх хуçалăхĕ ишĕлнине пăхмасăр 1920—1923 çулсен хушшинђе оплăçра çĕнĕ вăтам претприйаттисем те пулса тăђĕç, çаксенђен паллăраххисем: сатпа пахђа çимĕçĕсене типĕтекен савăт, крахмалпа çĕрулми пылĕ тăвакан савăт, шерпетлĕ (хруктăлă) шыв кăларакан савăт. Çак савăтсем халĕ ĕçлеме тапратаççĕ. Вĕсене çак йăвăр саманана пăхмасăр та пулин туни—ђăваш ĕçхалăхĕ промăшлĕнăçа ђăваш çĕрĕнђе аслăлатма пултарнине пĕлтерет.

Унтан çак çывăх çулсенђех оплăçра вăтам *кăларакан промăшлĕнăç* тапранасси те паллă пулса тăђĕ. Çапла промăшлĕнăç тĕлĕшĕнђен ђи малтан *лађака кăмраке торх* кăларас ĕçе асăнас пулат. Çак ĕçе Ђăваш Халăх Пурлăхĕн Канашĕ хăй ĕçлеме тытăнсанах тапратса йађĕ. Çак промăшлĕнăç оплăçра малашне питĕ вăйлă пулмалла. Çапла пуласси пирĕн Шупашкар таврашĕнђи çĕрайĕнђи пурлăхран торхран килет—çав торх çинђен епĕр тĕплĕ, кĕнекенĕн 26-мĕш йенĕнђе каласаттăмăр. Оплăç тăрăшнипе виçĕ çул хушшинђех çак торха, вăл нумайлăхне, унăн усăллăхне тĕрлĕ ăслăлăхçăсемпе техникксен урлă тĕплесе пĕлнĕ, торх вырăнĕнђи пин теçеттине ытла лађакасене вăрманран тасатнă, шывшуртан тасатнă, торх кăларакан машшинăсене туйанма тапратнă. Çак торх килçурта хутма та, ытларах та тата хапрăксемпе савăтсем валли вутă хутне кĕрекен йўн топливă вырăнне каймалла. Çак промăшлĕнăç пĕтĕм Раççейре те питĕ вăйлă тапранса кайат, пирĕн те вăл питĕ вăйлă пулмалла: торхран тупакан пăспа електрă вăйĕпе хапрăксемпе савăтсем ĕçленмелле, хуласемпе йалсем çутăнса тăмалла, çĕр ĕçлекен машшинăсем трактăрсем çўремелле, ђукун çулсем тăрăх вакунсем ђупмалла. Çак торăхăн усси ытлáрах та малашне пĕр 20—30 çултан пирĕн електрихвиккатси, енеркеттиклă хуçалăх самани çитсен пулмалла, çак хуçалăх йĕрки çинђен малалларах йулашкинђен тĕплĕ калăпăр.

Унтан малта епĕр хвосворитлă ђулпа пуйан тенĕђђĕ. Çак *хвосворита каларса йусакан* промăшлĕнăç та пирĕн çывăх çулсенђех тапранса кайат: çав ђула кăларса, ватса çĕре имçамлатма пирĕн хресђенсем те тапратса йађĕç, оплăçри Халăх Пурлăхĕн Канашĕ те супперхвосватлă савăтсем тăвашшăн вĕриллĕ тăрăшат. Тата епĕр малта оплăçран авалран *калђатан* йатлă ђул йут çĕрти нумай савăтсене кайса леçĕнсе тăнă тенĕђђĕ—малашне апла пулмалла мар: хамăр çĕртех çав ђулран тимĕр çăвĕ кăларакан савăтсем тăвăнмалла. Унтан йулашкинђен оплăçра пысăк *кирпĕç, исвес, семент, претприйаттисем* пуласси палăрђĕ, çапла оплăçра пĕр çу тăршшĕпе мĕлйуншар кирпĕç кăларакан Кохмăн кăмакалă кирпĕç савăт тăвасси выçлăх йулашкийĕсем иртессине çеç кĕтсе тăрат. Çапла ĕнтĕ пирĕн халĕ вăтам промăшлĕнăç вăйсăртарах пулсан та

—вăл çак сывăх çулсенҫех хăватлăланасси хамăртан çеç килет: пур промăшлĕнăçа вăйлăланма кирлĕ екеономиккăн никĕслĕ условисем те пирĕн çĕрте çителĕклĕ, лайăх—пирĕн *хамăр çумрах сырйо та, топливă та, ĕçлекен етем вăйĕ* те ытлашши йатăнса ахаҫ ĕçе шăнăçмасăр выртать.

Вăтам промăшлĕнăçран пуçне оплăçра çителĕклĕ йышлă вырăн *вак промăшленăç* йышăнса тăрать. Çак вак промăшлĕнăç йе тата йал интустрийĕ тийекен ĕç вăрçă умĕн çапла палăрса тăнă: оплăçра мĕнпурĕ вак савăтсем: армансем, мастерскуйсем ытти тупăшлу вырăнĕсем 3000 йахăн пулнă, çак вак претприаттисенҫе 2700 вак хуçа, 2500 тара кĕрĕшше ĕçлекен çын ĕçлесе пурăннă. Вак промăшлĕнăлă претприаттисен хисепĕ тĕлĕшĕнҫен епĕр нумай вăтам кĕпернесенҫен те кайа тăмастпăр. Çак вак промăшлĕнăç йышли каллех пире пирĕн çĕрте промăшлĕнăç пулма пултарнине, авал вăл ирĕксĕр пусăрăнса тăнине кăтартать.

Унтан тата çакнах пирĕн *алăсталăх* питĕ вăйли пĕлтерет. Алăсти йе кустар тесе ăслăлăх пĕр йенҫен çĕр ĕçлесе, тепĕр йенҫен ĕçрен пушă вăхăтра ăсталăхпа тупăш тăвакан хресҫене калать. Пур тĕнҫери çĕрсенҫе те ăçта аслă интустри пур--çав интустрирен малтан алăсталăх ĕçĕ, унтан вак промăшлĕнăç вăйлăланнă. Çак интустриленес йĕркен çулĕ çине ҫăвашсем те пусасси çавăнпа пире тĕрĕсренех паллă. Пирĕн оплăçра хут çине çырăннă паллă алăстисем 30.000 çын ытлашшипех, çапла вăйпитти çынсенҫен пирĕн $10^0/_0$ ытла алăстисем. Пирĕн оплăçра алăстисем 150 ытла тĕрлĕ тавар туса кăларса тăраççĕ. Алăстисем тĕрлĕ ĕçпе кĕрмешше пурăнаççĕ, проҫҫăнпа вĕсем çапла уйрăм палăрса тăраççĕ: тимĕрçĕсем $2^0/_0$, сĕтелçĕсем $1^0/_0$, касмăкçăсем $1^0/_0$, карçинкăçăсем $4^0/^0$, çуна йе урапа тăвакансем $4^0/_0$, йуманран клепкă тăвакансем $8^0/_0$, смала кларакансем $1^0/_0$, кĕреçеçĕсем $2^0/_0$, ҫăптаçăсем $30^0/_0$, пушăтпа çăпатапа кĕрмешекенсем $43^0/_0$, вĕрен йавакансем, çăмат пусакансем, тĕртӳçĕсем, тĕрӳçĕсем ыттисем те пĕршер проҫҫăнран та сахал. Алăстисен хисепĕ тĕлĕшĕнҫен оплăç кӳршĕ çĕрсенҫен те нумай ытти кĕпернесенҫен те малта тăрать, анҫах пирĕн алăстисем йӳн ĕçпе, ытларах йăвăçпа, пушăт таврашне кĕрмешше çеç иртереççĕ, çакă халăх питĕ йурлă та, пысăк тĕттĕмлĕхре пурăннине те пĕлтерет. Анҫах çакă тĕрĕсрен тепĕр йенҫен халăх ирĕклĕ ирĕксĕр йалхуçалăх пурлăхĕпе, çĕрĕçпе пурăнма пултарайманнине, вăл авалранах йалхуçалăх никĕсĕнҫен хускалса интустри йенне сулăннине пĕлтерет.

Çапла сулăнма ҫăваш хура халăхне *пурăнăç, пурлăх йĕрки, економиккăн тимĕрле саккунĕсем* хушаççĕ. Çапла сулăнма ҫăваш хура халăхĕ авалранах тытăнни çинҫен епĕр малта нумай каласаттамăр. Йулашки ĕмĕрте ҫăваш халăхĕ интустри йенне сулăнни пĕтĕмпех паллă: йулашки ĕмĕрте ҫăвашран йут çĕре кайса: Çĕпĕре, Капкаса, Тонпаса кайса, Питĕре,

Мускава ӗҫе ҫӳресе 10% ытла тӑранса пурӑнаҭҭӗ. Атӑл тӑрӑх вӑрман касса, сулӑсем хӑваласа авалах пурлакра ҫӳресе, пӑрахутсемпе паршӑсем ҫинҭе ӗҫлекен ҭӑвашшем нумай пиншерӗн хисепленеҭҭӗҫ. Атӑл ҫинҭи хуласенҭе вырӑсла пӗлмен ҭӑваш хӗрарӑммисем те хисепсӗр нумайӑн ӗҫлесе ҫӳреҭҭӗҫ. Йалсенҭе 10%-ран ытла ҭӑвашшем алӑсталӑхпа йӳн ӗҫпе те пулин кӗрмешше тӑранса пурӑнаҭҭӗҫ, пӗр-ик проҭҭанӗ оплӑҫрах ҫӗрӗҫӗнҭен пӗтӗмпех уйӑрӑлса пролеттариленсе пурӑнаҭҭӗҫ, ҫапла *ҭӑвашран 20% ытла интустриле ӗҫрен тупӑш шыраса тӑранса пурӑнаҭҭӗҫ*. Пиртен 30-40 ҫул кайа та ҭӑвашшенҭен нумайӗшӗ йалхуҫалӑх тупӑшӗпе мар, промӑшлӗнӑлӑ йӗркепе пурӑнма тӑрӑшни пире паллӑ: ҫапла 1897-мӗш ҫулхи перепӗҫ кӑтартнӑ тӑрӑх ҭӑвашшенҭен ҫав саманара 93% ҫеҫ ҫӗрӗҫпе тӑранса пурӑнни паллӑ, анҭах ҫак кӑтарту ҭӑваш оплӑҫӗнҭи ҭӑвашшем ҫинҭен ҫеҫ каламасӑ, пӗтӗм ҭӑваш халӑхӗ ҫинҭен калаӑ, ҫавӑнпа оплӑҫ тӗлӗшӗнҭен ҫак кӑтарту тӗрӗсех мар. мӗшӗн тесен анатри ҭӑвашшем нумай тӗлте ҫӗрӗҫпе ҫеҫ кӗрмешше тӑранса пурӑнаҫҫӗ. ҫавӑнпа ҫав кӑтартӑва оплӑҫри ҭӑвашшене уйрӑм хисепленӗ пулсан – вӗсем промӑшлӗнӑллӑ ӗҫпе ытларах ӗҫлесе тӑранса пурӑнни паллӑ пулнӑ пулӗҭҭӗ. Ҫапла *халӑха интустри йенне суланма ҫитменни, ҫуклӑх, нуша хушаӑ.* Пирӗн ҭӑваш прохвесӑрӗ Никоҭски Микулайӗ тӗреклӗ тӑракан ҭӑваш та ҫулталӑкпе вӑтамран 250 тенкӗрен ытла тупӑш илеймен тет. тепӗр йенҭен ҭӑваш ӑслӑлӑхҫи—хресҭенӗ Кевӗрле Пурисӗ вӑтам ҭӑваш хресҭенӗн тупӑшне ҫулталӑка 80 тенкӗрен ытла хумасӑ. Ҭӑнах та епӗр *халах пурлӑхӗн пӳтшетне* ҭухласан та ҫаплах тухаӑ: епӗр тырӑ тухӑҫӗ оплӑҫра вӑтамран ҫулталӑка 16-17 мӗҭйун пӑт пӗрҭӗрен ытла тимест терӗмӗр. ҫав тырӑ вӑрҫӑ умӗн 13-14 мӗҭйун тенкӗ тӑнӑ. унтан оплӑҫ вӑтам. вак. алӑсталӑх промӑшлӗнӑҫӗнҭен 2-3 мӗҭйун тенкӗ тупӑш илнӗ. ҫапла 800.000 ҫынна ҫав тупӑша уйӑрсан, пӗр ҫынна ҫулталӑкне 20 тенкӗ. килйыша 100 тенкӗ ҫеҫ тивет. Ҫак ҫук тупӑшпа халӑх хӑйне те тӑрантармалла. куланай та тӳлемелле, тум та тумланмалла. ӗҫкӗҫикӗ те тумалла пулнӑ. Ҫапла ҭӑваш халӑхне йепле ҫуклӑх касса, пусса тӑнине виттӗр курас тесен ҫак танлаштарулӑ кӑтартусене асра тытас пулаӑ: вӑтам интустрилӗ районӑн килйышӗн тупӑшне ҫулталӑка ӑслӑлӑх 400 тенкӗрен кайа хисеплемест. Йевроппӑри пӗр вӑтам килйыш тупӑшне линшер тенкӗ хисеплет. ҫав нумай тупӑша вӗсем ҫӗрӗҫӗнҭен мар, пуринҭен ытла промӑшлӗнӑҫран илсе тӑраҫҫӗ. Ҫапла тӗрлӗ йенҭен тупӑшлама ҭӑваш хура халӑхне ҫуклӑх майкӑҫӗ. ҫитменлӗх асапӗ сӗтӗрсе пыраӑ. Ҫав майкӑҫа сирсе пӑрахса хӑвӑртрах интустри ҫулӗпе кайма авал ҭӑваш халӑхне истори, йавӑр пурӑнӑҫ йӗрки, екконoмиклӑ та, натсилӗ те пусмӑр паман. анҭах малашне апла пулмалла марри пирӗн куҫ умӗнҭе.

Ҫапла ӗнтӗ ҭӑваш хура халӑхӗн ҫаланӑҫӗ ҭасрах промашлӗнӑлӑ пурӑнӑҫ йӗркине кӗрессинҭен килет. Ҫав ҫул ҫине

тухса ёлкёреймен халăхсем ĕрҫейме те, куҫттурланма та пултараймаççĕ—пăнҫăхсах пĕтеççĕ. Нумайĕшĕ ăнлайман ҫăвашшем халĕ хура халăхăн сулăнăçне, унăн туртăмне урăх йенҫен шырама шухăшлаççĕ: пушкăртсемпе кăркăссем таврашĕнҫе, Çĕпĕрте, Турккестанра çĕр ирĕклĕрех йышăнас та, унта çĕрĕçпе, хăшĕ тата йе йурĕклĕ пурнăç йĕркипе выҫăх нумай усраса пурăнма май тупас теççĕ. Çак çул йăнăш çул—вăл халăха кайалла истори çулĕнҫен ҫакаракан, ăна пĕтерекен çул. Пирĕн пур ĕçхалăхăн пĕр сулăнăç пулмалла: ҫăваш çĕрĕнҫе аслă интустри, ăна тума йăвăр пулсан вăтам промăшлĕнăç йулашкинҫен вак промăшлĕнăçпа аласталăх ĕçне малалла йарасси, ҫăваш çĕрĕнҫи хуласене ҫăваш ĕçхалăхне йышăнтарса аслăлатасси, ҫăваш пролеттариатне йышлатса хăватлантарасси пулмалла. Ҫăваш хура халăхĕн нихăш урăх йенҫен те çалăнăç шыранассин шăрши те пулмалла мар. Авалхи пусмăрпа, ҫуралăхпа аптаранă, çука йерне, куҫттурсăрланнă ҫăваш хресҫенĕ вырăс пролеттарийĕнҫен, ҫулхула хресҫенĕнҫен çĕнĕ пурăнăç йĕркипе пурăнма вĕренмелле. Халĕ пĕр етеме тепĕр етем пусмăрлас йĕрке, пĕр халăха тепĕр халăх пусмăрлас йĕрке пĕтрĕ, çавăнпа ҫăваш ĕççынни, ҫăваш хресҫенĕ Ҫулхулапа Мускав йенне, йевроппă йенне авал патшасен усал кăмăлĕпе ирĕксĕрлесе илсе кайнă тимĕр сунталпа тимĕр мăлатука шырама каймалла, çав сунтала ҫăваш çĕрне илсе килсе ҫăваш çĕрне машшинă сассипе, хапрăксен, савăтсен, маçтерскуйсен сассипе çеç йанăраттартармалла.

Çапла ĕнтĕ епĕр малта хаҫхи оплăçри промăшлĕнăç çинҫен, унăн истори çинҫен, çывăх малашĕ çинҫен каласа патăмăр, унтан ҫăваш халăхĕ мĕшĕн интустри çулĕ çине сулăнмалли çинҫен тĕрлĕ йенҫен хĕрӳлĕ кăтартрăмăр. Оплăç промăшлĕланасси çинҫен пĕртте иккĕленӳ ан пултăр тесен—йулашкинҫен интустрипе техниккăн хăйĕн айаккарах малашĕнҫе пĕтĕм тĕнҫене, пĕтĕм пурăнăçа ăçта туртса пыни çинҫен кĕскен калăпăр, унтан каллех оплăç çав тĕнҫе çулĕнҫен пĕр хĕррине мĕшĕн пăрăнса йулма пултарайманнине кăтартăпăр. Епĕр ҫи малтанах кăтартсаттăмăр—интустрийĕн никĕсĕ етем хăй вырăнне машшинăна ĕçлеттернинҫен килет, тĕнҫе вăйне: çиле, шыва, пăса, електрă вăйне хăйне пăхăнтарса хăй аллине илнинҫен килет тесеттĕмĕр. Çав çĕршыв, çутçанталăк, тĕнҫе вăйĕсене епĕр ?слăлăх сăмахĕпе енерки тетпĕр, çавăнпа çитес ĕмĕрте, çав вăйсене пĕтĕмпех етем хăй аллине çавăрса илсе, интустрийе калама çук аслăлатса тăвас халăх хуçалăхĕн йĕркине, ăслăлăх *енеркеттиклă хуçалăх* тет. Çав енеркеттиклă хуçалăхăн малашĕнҫе ҫи хăватлă вăй електрă вăйĕ пулмалла, çавăнпа пире ҫи çывăх малашнехи саманана епĕр *електрихвикатси самани* тетпĕр. Тĕрĕссипе каласан—епĕр халĕ çак саманан пуçламăшĕнҫе пурăнатпăр: интустри тĕлĕшĕнҫен малта пыракан халăхсем халĕ те пурăнăçа çурри ытла електрихвитсиленĕ, çапла Америккăра халĕ пурăнăç пĕтĕмпех електрă

вайё ҫине тайана пуҫлана: унта електра вайёпе ђукун ҫулсем ђупаҫҫё, парахутсем, акашмакаш карапсем тинёссем тарах ишеҫҫё, аеропланосем пёлёт ҫинђе вёҫеҫҫё, пёлёт ҫулёш ҫуртсем таванаҫҫё, хапраксем, саватсем, маҫтерскуйсем, йалсем хуласем те електра вайёпе ҫуталаҫҫё те, сивёре ашанса та тараҫҫё. пирён пек караҫҫин ҫутни ҫине америккансем халё епёр хайё ҫутни ҫине харран пахаҫҫё; унта пур машшинана та електра вайёпе ёҫленсе тарат, пур ёҫ те електра вайёпе ёҫленсе тарат: ҫапла Америкка хресђенёсем ҫёр ёҫне те електра вайёпе ёҫлеме тапратрёҫ: акапуҫне лаша кулсе акалас вырание вёсем трактарсене електра вайёпе сухалаттараҫҫё, ҫав вайпах тырра выраҫҫё, пуҫтараҫҫё, ҫапаҫҫё, саваpаҫҫё, аллаҫҫё, авартаҫҫё. Пирён пек ҫапйаваҫпе, ҫурлапа, сенёкпе, ҫавапа асапланас йалана вёсем пётёмпех парахна. Електра вайне вёсем пурнаҫра кирлё ҫёрсенђе ёҫлеттернине хисеплесе пёлтерме те ҫук: унпа тыра пухна вахатра ҫёрле те ёҫлеме уйсене ҫутатаҫҫё. ун вайёпе йашка, ҫакар, ҫимёҫ пёҫереҫҫё, кёпе ҫаваҫҫё. Ҫак Америкка ҫулё ҫине халё пётём Йевроппа уксе пырат, Раҫҫей те тёлё тёлёпе ҫак йёр ҫинех тухса пырат. Електрихвиккатсин ырлахне, унан хисепсёр усаллахне каласа пётерме те ҫук: електрихвиккатси пётём пуранаҫа пуйтарса, ҫамаллаттарса, хитрелетсе, кујттурлантарса йарат: етеммён йавар ёҫлесе пуранас йалана пётерет, ана ҫунатлантарса пётём тёнђене хайне пахантарма вай парат. Ака мёшён канаш ирёкё Раҫҫейе пётёмпех, мён вай ҫитнё таран хавартрах електрихвитсилеме тарашат. Ђаваш оплаҫё те хаҫан та пулин ҫак ҫул ҫине тухмаллаши, ҫукши? Епёр ђантан ёненсе тёрёсрен калатпар: 20—30 ҫултан оплаҫ та електрихвитсиленет. Ҫапла пуласси пиртен ҫеҫ килмест: вал ђи малтан истори пире ҫав ҫул ҫине туртнинђен, екконоликка саккунёсем пире ҫав ҫул ҫине сётёрнинђен килет, мёшён тесен Раҫҫей електрихвитсиленсен оплаҫ пёр хёрринђе тарса йулма пултараймаст. Раҫҫейе електрихвитселеме аслалахҫасем малтан тёплё шухашласа план туна—ҫав план ҫинђе пирён ҫёр те палла выран йышанса тарат. Ҫаванпа пиртен хамартан ҫав ҫул хавартрах йе кайарах тухасси ҫеҫ килет. Ҫав план тарах—оплаҫ урла ђи малтан пёр питё хаватла електра линийё иртмелле: вал Мускавран Ђулхула, Шупашкар урла Хусана, унтан пёр йёрё Кётеринпур урла Ҫёпёре, тепёр йёрё Атал тарах Капкаса ҫитиђђен каймалла. Ҫав линийён хаваҫё лини тарах йёритавра алла ҫухрама пур хаватла хапраксене саватсене маҫтерскуйсене ёҫлеттерме хресђене ҫёре пётёмпех америккансем пек електра вайёпе ёҫлеттерме, пур хуласене, йалсене ҫутса та, ашатса та тама ҫителёклё пулмалла. Ҫав линийён пёр питё вайла стантсийё Шупашкарта пулмалла: ҫав стантси хай хаваҫёпе електра вайё парса Ђулхулапа Хусана ҫыхса тамалла. Ҫак линийе те стантсана та хысна хай вайёпе тумалла. Шупашкар стантсин вайё ђи малтанах алла пин

лаша вăйĕ ӡухлĕ пулмалла, çапла çак стантса халĕ оплăçри мĕнпур лашасен çур вăйĕпе танлашмалла. Çак стантсан хăватне тишкерсе пĕлес тесен çакна аса илмелле: пур малта асăннă оплăçри 30 вăтам претприйаттисен механикклă вăйĕ халĕ пĕр пин лаша вăйĕпе çеç танлашаť, çапла çак стантса пĕӡӡен хаӆхинӡен аллă хут аслă интустрийе çĕклесе тăма пултараť. Çак стантса вăйа лаӡака кăмрăкне торха çунтарса тупнă хăватран илсе тăмалла. Çак стантсана тусан пирĕн çĕрте Атăл тăрăх промăшлĕнăç урăмсурăм аслăланасси çинӡен çавăнпа пĕртте иккĕленмелле мар. Унтан оплăç урлă тепĕр хăватлă електрă линийĕ иртмелле: унăн йĕрĕ ӡукун çул тăрăх пымалла, çак линийе каллех хысна хăй вăйĕпе тумалла. Çапла електрихвиккатсийĕн çулĕнӡен пĕр хĕрринӡе оплăçăн уйрăм ӡике вĕçĕнӡе выртакан çĕрсем çеç йулмалла, çав ырăнсене електрихвитсилеме хамăр вăйпа та çăмăл: ун пек вырăн сахал, унтан çав вырăнсем вăрманран пуйан. Йулашкинӡен тата Раççей халăх пурлăхне малалла йарас план çинӡе пирĕншĕн тата пĕр питĕ усăллă йапала пур: çывăх çулсенӡех хысна хăй вăйĕпе Мускав, Ӡулхула, Ӡикме, Сарапул, Кĕтеринпур урлă, пĕтĕм Çĕпĕр урлă иртсе кайакан халиӡӡен пулман сверхмакистраӆ тийекен ӡукун çул хываť. Çав çул тăрăх пăссаширсем çўремелле пулмаççĕ, вăл çула промăшлĕнăç валли сырйо, топливă, унтан тĕрлĕ тавар туртарма тăваççĕ; çав çул електрă вăйĕпе çўремелле, вăл кашни талăкра вун мĕлйун пăт ытла тавар каллĕмаллĕ леççе тăмалла. Çав çул оплăç çумĕнӡен, ӡикки хĕрринӡен иртсе кайсан та—пирĕн çĕршĕн вăл хисепсĕр усăллă пулмалла: пирĕн çумрах çав çул тăрăх калама çук аслă промăшлĕналлă претприйаттисем тăвăнмалла

Çапла електрихвиккатси, енеркеттиклă хуçалăх пире ирĕклĕ ирĕксĕрех çĕнĕ халиӡӡен пулман аслă интустри урапи çине лартмалла. Çапла пуласси тĕнӡе хуçалăхĕн саккунĕ.

Епĕр пĕлетпĕр—çакна вулаканăн йулашкинӡен пĕр шухăш пур, çав шухăш ăна çав вăхăтра ӡăваш пурнăçĕ мĕлле пуласси çинӡен инттерес илет. Анӡах çак шухăшăн ыйтуне хирĕç епĕр малта нумай каларăмăр, çавăнпа халĕ тепĕр хут ик сăмахпа çеç калăпăр: çак саманара ӡăваш çĕрĕнӡе лăк тулли хапрăк, савăт пулаť, аслă хуласем пулаççĕ, пĕтĕм пурăнăç електрă вăйĕпе йăлтăртатса тăраť, аластисем пĕтеççĕ—вĕсем хапрăк пролеттариаӡĕ пулса кайаççĕ, çурри ытла ӡăваш халăхĕнӡен пролеттариата тухса кайаť, çурри çеç çĕр ĕçлесе пурăнаť. Анӡах çак çурри хресӡен те пĕтĕмпех урăх пурăнăçпа пурăнма тытăнаť: çав саманара *йалхуçалăхĕ те интустриленет*. Вăл ак мĕне пĕлтерет: çĕр ĕçĕ пĕтĕмпех машшинăпа ĕçленет, йал пурăнăçĕ пĕтĕмпех електрă вăйĕпе йусанса тăраť, çав машшинăсене туйанса усă курса пурăнма халăх тĕрлĕ ушкăнсем, пĕрлешўсем, йулташлăхсем туса çĕре ерттелпе ĕçлесе, пур хуçалăх пĕрлешпе тăраť, кĕскен каласан

хаҫхи уйрӑм вак хуҫалӑх вырӑнне хресҫенӗн коллективлӑ хуҫалӑх пулаҫ, хаҫхи йалсем вырӑнне йалхуҫалӑх хапрӑкӗсем пулаҫҫӗ. Ҫапла йалхуҫалӑхӗн те ҫӑн усӑллӑ ҫутӑ ҫул ҫине тухасси ӑна интустрилессинҫен килет, тата йалхуҫалӑх ҫав ҫул ҫине тухасси аслӑ промӑшлӗнӑҫ тӑвассинҫен, енеркеттӗклӗ хуҫалӑх тӑвассинҫен килет. Ҫак малашне пулас пурӑнӑҫ халлапри пек илемлӗ, вӑл пулассине тӗттӗм етемӗн ӗненесси те килмест. Ҫӑнахах та халӗ ҫӑваш пурӑнӑҫӗ йурӑхсӑр наҫар: ҫӑпата туса, ҫӑпта ҫапса виҫӗ пушшӑн вӑл сывлӑхне ҫухатаҫ, лашалӑ лашасӑр хӑйне уйрӑм хуҫалӑх тытса вӑл кунӗн те, ҫӗрӗн те сухапуҫпе, тӑпаҫпа, ҫурлапа, ҫавапа кӗрмешше пурӑнаҫ, ҫапах пӗр канмасӑр ӗҫлесен те тутӑ мар, ҫара, наҫар ҫуртра пурӑнаҫ. Анҫах ҫапах ҫӑвашшем те малашнехи шанҫӑка ҫухатмалла мар, йалан вӑй ҫитнӗ таран пурӑнӑҫа малалла тытма тӑрӑшмалла, тӗлӗкре те ҫав малалла пулас ҫӗр ҫинҫи рай ҫинҫен тӗлленмелле. Ҫав ӑслӑлӑх кӑтартакан ҫул йенне сулӑнни пирӗн аҫамӑрсемшӗн ҫӑнтан усӑллӑ пулӗ, анҫах ҫав ҫул йенне сулӑнса епӗр халӗ те хамӑр та пысӑк. халиҫҫен тӗлленмен усӑ курма пултаратпӑр. Раҫҫейре халӗ нумай тӗлте пирӗн пек тӗттӗм хресҫенсемех пӗрлешше кооператсисем туса хӑйсен таврине електрихвикатсилеҫҫӗ, торх кӑлараҫҫӗ, хвосворит кӑларса авӑртса ҫӗре ҫирӗплесе пурӑнаҫҫӗ, ҫӗре акрономи кӑтартнӑ пек ӗҫлемелли майсене шыранаҫҫӗ, йалхуҫалӑхне пӗрлешше йусаҫҫӗ, алӑсталӑх ӗҫне, тӗрлӗ тупӑшлу ӗҫне пӗрлешше, пӗҫӗкрех те пулин хапрӑксем те, савӑтсем те тӑвассипех тӑваҫҫӗ. Ҫапла вӗсем авалхи сӑмаха: „пӗр ҫын сураҫ типсе пыраҫ, халӑх сураҫ—кӳлӗ пулаҫ“ тенӗ сӑмаха тӗрӗслесе хамӑр тӗттӗм пурӑнӑҫа ҫутатаҫҫӗ, малашнехи ҫӑнтан ырӑ пурӑнӑҫа пирӗн аҫасем хӑвӑртрах курассине ҫывӑхартаҫҫӗ. Ҫапла халех тӗрлӗ йенҫен халӑх ҫанна тавӑрса пурӑнӑҫпе йусама тытӑнмасан, пӗрлешше йалхуҫалӑхне, алӑсталӑх ӗҫне, вак промӑшлӗнӑҫа та пулин ӳстерме тӑрӑшмасан малта асӑннӑ интустри самани, електрихвикатси вӑхӑҫӗ ӗмӗрне те килес ҫук. Ҫавӑнпа епӗр халӗ йепле хӗрӳлӗ аслӑ интустрипе вӑтам промӑшлӗнӑҫ тума тӑрӑшатпӑр, ҫавӑн пекех хресҫен халӑхӗ хӑй вӑйӗпе пӗрлешше вак промӑшлӗнӑҫ тума, алӑсталӑха аслӑлатма, йалхуҫалӑхне пин йенҫен вӑй ҫитнӗ таран лайӑхлатма тӑрӑшмалла. Вара тин ҫӑваш хура халӑхӗ тӗнҫен аслӑ прокресслӑ ҫулӗ ҫине хӑвӑртах тухӗ, хӑвӑртах тӗнҫери интустрипе техниккӑлӑ пурӑнӑҫ йӗркине йышӑнӗ, Йевропӑри куҫттурлӑ халӑхсен ҫемйине кӗрӗ.

---

3. Транспорт.

Транспортлă çулсем тесе етеме пěр тěлтен тепěр тěле куçма, тавара, тěрлě йапалана айакка леçме те, айакран кӳме те лайăхрах, меллěрех çулсене калаççě. Çавăн пек çулсем тăватă тěслě пулаççě: шыв, ђукун, ђул, крунтлă çулсем. Çак çулсем пěтěм пурăнăçра та, ытларах та, тата халăх пурлăхě тěлěшěнђен питě паллă роль йышăнса тăраççě, çавăнпа вěсене нумайěшě транспортлă çулсем—пурăнăçăн йун тымарěсем, йун çулěсем тесе калаççě. Ђăнахах та çав çулсем пулмасан—халăхсем пěр пěринпе пěрлешеймěђђěç, етем ăçта çуралнă çавăнтах хăй тěллěн пăнђăхса пурăнěђђě, тавар пěр тěлтен тепěр тěле куçаранаймěђђě, çавăнпа транспортлă çулсем пулмасан тěнђере промăшлěнăç та, техникă та, культтурă та пулма пултараймěђђě. Çав çулсен ырлăхне пěлес тесен иртнě вырăха çеç аса илес пулаť: çав çулсемпе айакран оплăçа тырă килмен пулсан, ђăвашпем пěтěмпех вилсе пěтнě пулěђђěç, анисене те акса хăварма пултарайман пулěђђěç. Транспорт тěлěшěнђен оплăç ытти çěрсемпе танлаштарсан меллě вырăн йышăнса тăраť: вăл аслă шыв çулěсен çумěнђе выртаť, унтан ун урлă икě йуплě ђукун çулě иртсе кайаť.

Шыв çулěсентђен ђи асли, ђи ђапли Атăл. Епěр малтах асăнсаттăмăр—ђăвашпем пин çул ытла кайа çак шыв тăрăх арапсемпе, перссемпе, ерменсемпе, вырăссемпе, ытти халăхсемпе те сутилӳпе çыхăнса тăнă: кун çинђен пире истори те, ђěлхе те тěрěсрен кăтартса тăраť. Пăлхари патшалăхне тутарсем пусса пăрахсан та, Атăл хěрринђе пулнă нумай ђăваш хулисене тутарсем çěмěрсе, çунтарса, тутарлантарса пěтерсен те ђăвашпем Атăлран усă курас йăлана пăрахман: Атăл тăрăх çӳлерех улăхса вырăн йышăнса Атăлпа тавар çӳретсе тăнă. Çавăнпа XVI-мěш ěмěрěн пуçламěшěнђе ђăвашпем хěвеланăçěнђен хупласа килекен вырăс колонисатсине хирěç тăрса ђи малтан вырăсемпе Атăл çинђе, Атăла вěсене парашпăн мар çапăçнă: çапла 1524-мěш çулта ђăвашпемпе çармăссем Сăрă Атăла тухнă çěрте вырăс çарěпе питě хытă çапăçнă, çак çапăçура вырăссем ђăвашпене çěнтернě те Васильсурск йатлă хула туса хунă; малашне те çав колонисатси ђăваш çěршывне пěтěмпех пусиђђен ђăвашпемпе çармăссем Мускав, Ђулхула ытти хулари вырăс патшисен çарěпе те йаланах Атăл çинђе çапăçнă: çапла 1530-мěш çулта ђăвашпемпе çармăссем Атăл тăрăх анакан вырăс çарне Атăла пěренепе пěвесе, сулăсем лартса çула пӳлнě. Çакăн пек кăтартусем историре тата та нумай. Вěсем мěне пěлтерессě? Вěсем тěп авалран Атăл ђăваш çěрěшěн аслă историлě çул пулса тăнине пěлтереççě. Унтан 1526-мěш çулта Мускава нимěç çыруçи Керпенштейн килсе кайнă, вăл хăй курнине нимěçле çырса хăварнă, çав кěнекинђе вăл Атăл çинђе ђăвашпем пурăнаççě, вěсем кимěсем, паршăсěм тума питě ăста тесе çыраť. Çак кăтарту ђăвашпем

ҫак саманара Атӑл тӑрӑх тавар ҫӳретсе пурӑннине витӗр пӗлтерет. Ҫапла ӡӑвашшем Атӑл ҫинӡе кимӗсем, паршӑсем, сулӑсем туса тавар ҫӳретме авалран хӑнӑхнине, тата ак мӗн кӑтартаҭ: 1710—1718 ҫулсенӡе Петӗр патша хушнипе ӡӑвашшене Хусана, Ӡулхулана, Питӗре, Тон шывӗ ҫине, Асӑв тинӗсӗ ҫине карапсем тума хӑваласа кайнӑ; ҫапла 8 ҫул хушшинӡе пӗр Хусанта ҫеҫ 400 карап тунӑ, ҫав карапсем валли ӡӑвашшемех хӑйсен ҫӗрӗнӡи йуманлӑ вӑрмансене касса туртарса тӑнӑ. Пыра киле пӗтӗм хура халӑх ӡуралӑха кӗрсе ӳксен, ӡӑвашшем ытла та хыснапа улпутсен пусмӑрӗ айне кӗрсе ӳксен—Атӑл тӑрӑх сутилӗве пӗтӗмпех пуйан сутилӳҫӗсем ҫеҫ тытса тӑнӑ. Анӡах ҫак саманара та ӡӑвашшем Атӑл ҫинӡе ӗҫлесе ҫӳрес йалана пӗтӗмпех пӑрӑхман: вӑл пире авалран йулнӑ йурӑсенӡен, унтан тӗрлӗ ваттисем сӑмахӗнӡен паллӑ—ҫав йурӑсемпе сӑмахсенӡен ӡӑвашшем нумайӗшӗ пурлакра асапланса ҫӳрени паллӑ. Ҫак авалран йулнӑ йалапах ӡӑвашшем халӗ те нумайӗшӗ Атӑл ҫинӡе ӗҫӗ йывӑртарах пулсан та вӑрман касса, сулӑ хӑвалама, паршӑсемпе пӑрахутсем ҫинӡе ӗҫлеме йуратарах параҫҫӗ. Ҫакӑ урӑхла пулма та пултарайман, мӗшӗн тесен, ӡӑвашшем Атӑл тӑрӑх пурӑнма тытӑнни ӗнтӗ 1200 ҫул иртрӗ.

Атӑл оплӑҫа паракан ырлӑха каласа та пӗтерме ҫук: пур пысӑк парттипе оплӑҫа килекен тавар та, оплӑҫран кайакан тавар та Атӑлпа ҫӳрет: Атӑлпа оплӑҫран йавӑҫ тавар, тырӑ, аласталӑх хатӗрӗ, промӑшлӗнӑҫӑн тӗрлӗ таварӗ кайса тӑраҭ, Атӑлпах оплӑҫа пур халӑха кирлӗ йапала: тӑвар, кӑраҫҫин, ытти йапала та килсе тӑраҭ. Шывпа тавара ҫӳретме йӳнтерех, ҫавӑнпа ҫак Атӑл ҫулӗнӡен пирӗн пӗтӗм халӑх усӑ курса пурӑнаҭ. Атӑл хӗррипе пирӗн хуласем, промӑшлӗнӑлӑ та сутилӳлӗ те йалсем, ӡаплӑ пристӑӊсем; ҫак пристӑӊсенӡен паллӑрахисем: Иӆйинкӑ—вӑрманпа тырӑ пристӑнӗ, Шашкар—вӑрман пристӑнӗ, Шупашкар—авал ҫак пристӑӊран 2 мӗӆйун пӑт тавар кайса тӑнӑ, Колоҭаихӑ—вӑрман пристӑнӗ, Пушкар—вӑрман пристӑнӗ, Ҫетелниккӑвӑ—вӑрман пристӑнӗ, Сӗнтӗрвӑрри—ҫак пристӑӊран авал ҫуллен 1 мӗӆйун пӑт ытла тавар кайса тӑнӑ, Кокшайск—авалхи хула, Кокшакӑ Атӑла йухса тухнӑ ҫӗрте, ҫак пристӑӊ витӗр ҫуллен ӗлӗк 5 мӗӆйун пӑт ытла Кокшакӑ тӑрӑх иртекен вӑрман иртсе тӑнӑ, Ҡушниккӑвӑ—вӑрман пристӑнӗ, Ӡекурӑ (Ҫвеникски саттон)—авалран аслӑ пристӑӊ ун патӗнӡе авалранпах пӑрахутсем тӑвакан савӑт, Кривуш—пӑрахут пристӑнӗ, Ҡуславкка—хӑватлӑ вӑрман, тырӑ, ҫӑмарта пристӑнӗ. Атӑлпа ҫак пристӑӊсене пула епӗр пӗтӗм Раҫҫейпе тавар кӑларса та, илсе те ҫыхӑнса тӑратпӑр: Атӑла пула епӗр йӳн, меллӗ шыв ҫулӗпе Питӗрпе, Ӡулхула, Перӗм, Самарпа Аҫтӑрхан таврисемпе, Ӡаритсӑн урлӑ Тонпасспа та ҫыхӑнса тӑратпӑр. Нумай йенӡен ҫак Атӑла пула ҫеҫ пирӗн хаӆхи промӑшлӗнӑҫ та пулнӑ, ҫавна пула ҫеҫ вӑл малашне те хӑватлӑланмалла.

Атӑлран пуҫне тата пирӗн ҫапла шывсем ҫул шывӗсен вырӑнне хисепленме пултараҫҫӗ: Сӑрӑ шывӗ—пӑрахутсем те,

сулӑсем те ҫӳреҫҫӗ, пристаӊсем Йетӗрнепе Выла; Кокшака, Ҫавал, Енӗш, Пасна—вӗсем тӑрӑх ҫурхи шывпа сулӑсем ҫӳреҫҫӗ, Ҫавал ҫинҫе тырӑпа вӑрман пристанӗ те пур (Руткӑ). Ҫапла оплӑҫра мӗнпурӗ шыв ҫулӗсен тӑршшӗ 350 ҫухрӑм ытла, ҫапла пирӗн 100 тӑваткӑл ҫухрӑма икӗ ҫухрӑм ҫурӑран кайарах шыв ҫулӗ тивет.

Ҫукун ҫул тӗлӗшӗнҫен те оплӑҫ телейлӗ кеокрахвиллӗ вырӑн йышӑнса тӑрат: оплӑҫ урлӑ Мускавпа—Хусан ҫукун ҫулӗ иртсе кайат. Ҫав ҫул оплӑҫ варринҫен хӗвеланӑҫнелле икӗ йуппа йӳпленсе кайат: пӗр йупӑ—Канаш—Арсамас—Мускав, тепӗр йупӑ Канаш—Улатӑр—Русаевккӑ; малтанхи йуппа пула епӗр тӳп тӳрӗ ҫулпа Мускавпа, тепӗр йупне пула Раҫҫейӗн хӗвеланӑҫпа кӑнтӑр таврисемпе ҫыхӑнса тӑратпӑр. Унтан ҫак ҫукун ҫул пире Хусанпа, Кӗтеринпурпа, унтан Ҫӗпӗр хулисемпе ҫыхӑнтарса тӑрат. Ҫак ҫула пула епӗр Мускава талӑкра, Хусана 3—4 сехетре, Кӗтеринпура талӑкра кайса ҫитме пултаратпӑр. Ҫак ҫулӑн ырлӑхӗ ҫинҫен каласа та пӗтерме ҫук: Атӑл шӑнса ларнӑ вӑхӑтра пирӗн тавар пӗтӗмпех ҫак ҫулпа ҫӳрет, ҫу тӑршшӗпе те тавар каллӗн-маллӗн пӗр ҫарӑнми ҫак ҫулпах ҫӳрет, ҫак ҫула пула ҫеҫ епӗр ҫулталӑк тӑршшӗпе пӗр ҫаранми пӗтӗм Раҫҫейпе пӗрлешпе ҫыхӑнса тӑратпӑр. Ҫак ҫул пире промӑшлӗнӑҫа малалла йама, йалхуҫалӑхӗн хатӗрӗсене таварласа хакла сутма пулӑшат, ҫак ҫул халӑха тӗнҫене тухма ытти ҫӗрсене ӗҫе кайма, унтан тавар кӳме, унта тавар леҫме пулӑшша тӑрат. Пирӗн оплӑҫ урлӑ ҫак ҫул иртмен пулсан, оплӑҫ ҫукун ҫултан пӗр ҫӗр ҫухрӑма йахӑн айакра пулсан, епӗр тата та тӗттӗм, тӗксӗм, тӗнҫерен йутшӑнса, хамӑрпа хамӑр пӑнҫӑхса пурӑнӑттӑмӑр. Ҫакна епӗр халӗ хамӑр та тӗплӗ сиссе илейместӗпӗр, анҫах тирпейлӗрех шухӑшласан—тӳрех калас пулат: оплӑҫ куҫттурланасси, йалхуҫалӑхне ӑслӑлӑх ҫулӗпе йарасси, интустри ҫулӗ ҫине тухасси нумай йенӗпе ҫак ҫукун ҫул ырлӑхӗпе ҫеҫ пулма пултарат.

Ҫак ҫул ҫинҫе ҫи аслӑ, сутилӳпе ҫи хӑватла стантса *Канаш* (Шӑхран). Ҫак стантсара вӑрҫӑ уммӗн аллӑ ытла сутилӳлӗ хирмӑ пулнӑ. Халӗ ҫукун ҫулпа ҫӳрекен таварӑн ҫурри ытла ҫак стантсире тийенет те, хывӑнат те. Ҫавӑнпа ҫак стантсана тӗрӗсрен оплӑҫӑн пурлӑх кӑвапи, еккономиклӑ ҫентӑр теҫҫӗ. Ҫакна пӗлсе оплӑҫа тунӑ ҫух оплӑҫӑн пуҫхули вырӑнне Канаша шутлама шухӑшланӑҫҫӗ, анҫах ҫав стантса ҫывӑхӗнҫе хула ҫуккипе ҫеҫ пуҫхула вӑхӑтлӑха Шупашкар пулса тӑҫӗ. Ҫак стантса урлӑ вӑрҫӑ умми пӗр пӗрҫӗ тырӑ таварӗ оплӑҫран икӗ мӗлйун пӑт ытла кайса тӑнӑ. Унтан тата ҫак ҫул ҫинҫе ҫапла аслӑ стантсасем пур: Вӑрнар, Урмар, Йӗпреҫ, Тӗрлемес, Ҫӗмӗрлӗ, вӑрҫӑ уммӗн Урмар урлӑ оплӑҫран мӗлйун пӑт пӗрҫӗ кайса тӑнӑ. Йӗпреҫпе Тӗрлемес урлӑ пилӗкшер ҫӗр пин пӑт пӗрҫӗ кайса тӑнӑ. Ҫак аслӑ стантсасенҫен пуҫне ҫак ҫул ҫинҫе кӗҫӗн стантсасем пур, ҫавсенҫен палӑраххисем: Йӑва, Мыслетсӑ, Пинер, Аҫҫакасси, Шоркӗсри.

Малта епӗр оплӑҫ ӡукун ҫул тӗлӗшӗнӡен телейлӗ терӗмӗр, ҫакӑ нумай ытти тӗлсемпе танлаштарсан тӗрӗсех, анӡах ҫапах та ӡукун ҫул пирӗн ҫителӗклӗ мар: ӡи малтан пирӗн Канашран Шупашкара ӡукун ҫул тураӡӗ хывмалла, унтан Патӑрпа Йетӗрнене ҫитиӡӡен икӗ турат хывмалла, вара тин епӗр оплӑҫ транспортлӑ ҫулсен тӗлӗшӗнӡен аптӑрамасӗ теме пултарӑпӑр, пур йалсем те, пур вулӑссем ӡукун ҫул ҫывӑхӗнӡе пурӑнса унтан усӑ курса пурӑнаҫҫӗ теме пултарӑпӑр. Тата оплӑҫра Атӑлпа Сӑрӑ сӗмвӑрманӗсем тӑрӑх вӑрман турттармалли ӡукун ҫулсем хывмалла—вӗсене хывмасан вӑрмана касса турттарасси малалла кайас ҫук, вӑрман промӑшлӗнӑҫӗ те аслӑланас ҫук. Малта асӑннӑ Канашпа Шупашкар хушшинӡи турата оплӑҫ хӑй вӑйӗпе ҫак ҫулсенӡех хывашпӑн, ӑна тума икӗ мӗлӡйун тенкӗлӗх ылтӑн ҫеҫ кирлӗ. Оплӑҫра халӗ ӡукун ҫул тӑршшӗ мӗнпурӗ икӗ ҫӗр ҫухрӑм ытларах, ҫапла пирӗн территорире 100 тӑваткӑл ҫухрӑма ӡукун ҫул ҫухрӑм ҫурра йахӑн тивет.

Ӡул ҫулсен йенӡен оплӑҫ питӗ ӡухӑн: ҫав авал ҫемствӑсем наӡар ӗҫленинӡен килет. Тӗп авал ӡӑваш ҫӗрӗнӡе Хусан йенӡен хывнӑ ӡул ҫулсем ҫеҫ пулнӑ Хусана вырӑссем пӑхӑнтарсан оплӑҫ урлӑ Мускавран Ӡулхула урлӑ килекен аслӑ ҫул тунӑ. ҫав ҫул Хусан витӗр Ҫӗпӗре ҫитиӡӡенех пынӑ. Ҫав ҫулпа ӡӑвашшем авал Мускава тӗрлӗ тавар лавпа леҫҫе тӑнӑ, ҫав ҫулпа ҫар ҫӳренӗ, тӗрлӗ Мускав патшисем ӡиновникӗсем ҫӳренӗ. ӡӑвашшем хӑйсем те тӗрлӗ ӗҫпе, ытларах та шалу таврашпе йе сут ӗҫӗпе ҫав ҫулпах йаланах Мускава ӡуптарнӑ. Кӗтерине патша ӡӑваш ҫӗрӗ урлӑ иртсе кайсан—вӑл ҫав ҫула икӗ йенӡен те хурӑн лартса тухма хушша хӑварнӑ; ҫав хурӑнсене ӡӑваш хура халӑхӗ лартса, сапса ӳстернӗ. Ҫак икӗ йенӡен йешӗл хурӑнпа хӳтлӗхленнӗ ҫул питӗ хитре те, питӗ лайӑх та ҫулӡӗ, анӡах ҫак саманара ҫав хурӑна ӡарусӑртарах ҫынсем такак касса пӗтерӡӗҫ. Авал халӑх ҫак ҫула йуратах паман: ӑна пула ҫывӑх йалсен хресӡенӗсене хысна лав хӑвалаттарса аптӑратнӑ, ҫав ҫулпах усал вӑрӑхурахсен шайккисем ҫӳренӗ, ҫав ҫулпах Раҫҫейрен Ҫӗпӗре катторшниксене хӑвалана, вӗсемпе пӗрле политтиккӑшӑн пуҫӗпе Ҫӗпӗре йанӑ асаплӑ мӗскӗн ҫынсене те авалран ҫуран хӑваласа кайса тӑнӑ, ҫапла ҫак ҫулпа авал Ҫӗпӗре Меӈшикӑха, текапристсене, Тостоевскийе, Ӡернышевскийе ытти ӡаплӑ ҫынсене те сӑнӡӑрласа лавпа йе ҫуран уттарса, хӑваласа илсе кайнӑ. Ҫак ҫулӑн ӡаплӑлӑхӗ ӡукун ҫулсене хывсан ҫеҫ ҫухалнӑ. Ҫапах халӗ те ҫак ҫул халӑхшӑн питӗ усӑлӑ: вӑл оплӑҫӑн пӗтӗм Атӑл тӑршшинӡи таврашӑн Тӗрлемес стантсине те, Хусана ҫитиӡӡен те, ҫӳреме те меллӗ лайӑх ҫул вырӑнӗнӡе хисепленет. Унтан паллӑ ӡул ҫулӗсем оплӑҫра ҫаксем: Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Йетӗрне хушшинӡи ҫулсем, Патӑртан Йӗпреҫе, Канашран Ҫӗрпӗве кайакан ҫулсем, тата йулашкинӡен паллӑ вырӑн Куславкка пристӑнӗпе Тӗрлемес стантсине ҫыхӑнтарса тӑракан

çул: вăл Атăлпа çӳрекен пассаширсене те, тавара та ӡукун çул çине куçарма йе ӡукун çулпа пыракан пассаширсемпе тавара Атăла антарма пулăшша тăрать. Çапла ӡул çулсен тăршĕ оплăçра мĕнпурĕ 508 çухрăм. Анӡах çак çулсен тĕлĕшĕнӡен çакна асра тытас пулать: çав çулсем нумайранпа тӳрлетменнипе ишĕлсе пĕтеççĕ, ӡакаланаççĕ, çырмаланаççĕ, кĕперĕсем те йурăхсăра тухса кайаççĕ. Малашне апла пулмалла мар: оплăçа нимĕç çĕрĕнӡи йевĕрлĕ пĕтĕмпех ерешмен карти пек ӡул çулсемпе карталанмалла, вĕсене тирпейлĕ тытса тăмалла, мĕшĕн тесен, вĕсем пулмасан тĕнӡене те тухма çук, вĕсем пулмасан тавара та каллĕ-маллĕ хăвалама çук: кашни çын хăй йалĕнӡе çеç пăнӡăхса пурăнмалла. Унтан çак çывăх саманарах пирĕн пассашир та, тавар та туртармалли автомопиӆсем пулĕç—çав çулсем пулмасан вĕсем çӳреме пăӡах пултараймаççĕ.

Халăх куӆттурсăрлăхпа, ӡăвашшем тĕнӡене тухма йутшăнса пурăннипе, вĕсем наттураллă хуçалăх йĕркине йышăнса тăнипе, çавăнпа сутлăх тавар кăларса айакка йарса йе айакран кирлĕ тавара илсе тăманнипе ӡăвашшем транспорта çĕнетесси, йусасси, лайăхлатасси çинӡен сахал шухăшлаççĕ. Ӡăваш йаланах çӳрекен çул—*крунтлă çул*, çапла çĕр çине пĕр йусамасăр хывнă çулсене калаççĕ, çавăн пек çулсем йалпа йал хушшинӡе выртаççĕ. Çав *йал çулĕсен* тăршшĕ оплăçра мĕнпурĕ 10 пин çухрăма йахăн. Çав çулсем нумайĕшĕ йурăхсăр наӡар: ӡакаланса пĕтнĕ, çырмасемпе ӡĕркеленнĕ, кĕперĕсем тийенĕ ăлавпа ӡасӡасах каçма та йурамаççĕ. Çав çулсене халăх хăй вăйĕпе хăй тирпейлесе тăмалла, мĕшĕн тесен, унăн усси халăха хăйне çеç тивет; халĕ наӡар çулпа кĕркунне тырă сутнă вăхăтра асапланса сийен курнине хисеплесен, лашасене вĕлернине, пăснине, урапа çуна çĕмĕрнине çеç хисеплесен те епĕр çав çулсем наӡар пирки хура халăх хăй çине шутсăр нумай сийен илнине куратпăр. Çапла ĕнтĕ пурлăха малалла йарас, пурăнăçа илемлĕлетес, хуçалăха тирпейлес йĕркере транспорта, тĕрлĕ çулсене майласа лайăхлатас йĕрке те питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать.

---

4. Сыхă (çвеç).

Халăх пурлăхне ӡăнтан тытса, майласа тăрас тесен, пурăнăçра ăслăлăх, куӆттурă, техникă паракан ырлăхран ырă курса пурăнас тесен, тĕнӡе пурăнăçĕн йĕркине кĕрес тесен—шыв, ӡукун, ӡул сулĕсенӡен пуçне, шыв çинӡе ӡупакан пăрахутсенӡен, вакунсенӡен, ахтомопиӆсенӡен пуçне, пĕлĕт çинӡе сывлăш тăрăх вĕçекен аеропласенӡен пуçне—тата пĕтĕм тĕнӡери халăхсене, пур çĕр ӡăмăрĕ çинӡи етемме, пур етемйышне пĕр пĕринпе ӡарăнми те, калама та хăвăрт хыпар çӳретсе пĕрлештерекен йапала кирлĕ: çавна ӡăвашла сыхă, вырăсла

çвеç теме пулаТ. Çапла епĕр лапапа, пăрахутпа, ҫукун çул тăрăх пĕр вырăнтан тепĕр вырăна хыпар çӳретекен пушта, çаплах епĕр пĕр куçхуппи тăршшĕнҫех хыпара пиншер çухрăма леçекен телекраха, çапла епĕр пĕр пĕринпе çĕршер çухрăм айакран сăмахлама пулăшакан телехвона, çапла епĕр пиншер çухрăм айакра калаçакан, йурлакан сынсен сассине, вĕсен тĕсне питне итлеттерекен те, кăтартакан та ратиосыхха калатпăр, çаплах епĕр куçхуппи вăхăтĕнҫе хыпара пĕтĕм çĕрҫăмарĕн йĕритавра çавăракан ратиосыхха калатпăр. Çапла хыпар çӳретекен йĕркене епĕр техниккăлă сыху, техниккăла çвеç тетпĕр. Çак техниккăлă çвеç пулмасан халĕ вут пек, йухăн шыв çинҫи авăр пек çавăрăнакан пурăнăç пĕтĕмпех шанса, хытса ларĕҫҫĕ: етемсемпе халăхсем пĕрпĕрин çинҫен нимĕн пĕлмесĕр пурăнĕҫҫĕç, пĕрпĕрин патне карапсемпе, пăрахутсемпе, аеропланаемпе çӳреме те, тавар çӳретме те пултараймĕҫҫĕç. Çавăнпа халăх пурлăхне тĕрлĕ йенҫен ҫипер тишкерсе пĕлес тесен, транспортран пуçне сыхă йе çвеç йепле майпа халпа тăнине пĕлес пулаТ.

Çак тĕлĕшĕнҫен пирĕн оплăç Раççейре питĕ наҫар вырăн йышăнса тăраТ, вăл мĕнтен килнине малалла кĕскен кăтартăпăр.

Çвеç çинҫен каланă ҫух ҫи малтан *пушта* çинҫен калама кирлĕ. Епĕр пĕлетпĕр—тĕнҫере ăçта халăх пуйан, унтан техниккăпа та куҫттурăпа вăйлă—унта пуштă çӳретĕвĕ питĕ хăватлă, çавăнпа нумайĕшĕ тĕрлĕ халăхсен куҫттурлăхне танлаштарса кăтартас тесен ҫи малтан тĕрлĕ халăхсен хушшинҫе çулталăкра пĕр ҫун пуштăпа миçе çыру çӳретнине хисеплесе кăтартаççĕ. Ҫăнахах та халăх çыру йе нумай, йе сахал çӳретни мĕне пĕлтерме пултараТши? Тӳрех палла: халăх пуйан пулсан, унăн хуласем, хапрăклă йе саватлă ҫентăрсем пулсан, вăл вăйлă сутилӳ тусан, йут çĕрсемпе тĕрлĕ ĕçпе сыхăнса тăрсан, вăл çырăва ăста пĕлсен, хаçатсемпе шурналсене вуласа пурăнма хăнăхнă пулсан—çак халăхăн пуштă çӳретĕвĕ калама çук вăйлă; анҫах халăх ҫăвашшем пек йурлă пулсан, тĕнҫене тухма хăраса пурăнсан, унăн наттураллă хуçалăх йĕрки пулсан, вăл тĕнҫене тавар кăлармасăр, йутран тавар илеймесĕр пурăнсан, вăл тĕттĕм пулсан, унăн кĕнекине ĕне çинĕ пулсан—йепле, ăçтан, кампа, мĕшĕн вăл пуштăпа хыпар çӳретĕ? Çапла ĕнтĕ оплăçра пуштă ĕçĕ наҫарри ҫи малтан пирĕн халăх авалхи йурăхсăр пурăнăç йĕркипе пурăннинҫен килет. Унтан çак ĕç наҫарри тата ҫăвашшем хăйсен ирĕккĕпе халĕ çеç пурăнма тытăннинҫен килет. Авал пушта патшалăхпа çемствăсем пĕр йенҫен хура халăха пусса тăракан тытăм йĕркине тĕреклĕлентерешшĕн, тепĕр йенҫен сутилçусемпе капитталçăсене вĕсен ĕçне тума çăмăллаташшăн туса тытса тăнă. Çуклăхпа, унтан пусмăр айĕнҫе пăнҫăхнă ҫăваш çĕрĕ никампăн та, нихăш йенҫен те инттереслă пулман, çавăнпа та пирĕн пуштă ĕçĕ наҫар пулнă: пуштă çулĕсем трак-

тăсем çителĕклĕ те, йурăхлă та пулман, пуштă вырăнĕсем кантурсемпе оттеленисем ђăваш çĕрĕнђе сахал пулнă. Унтан оплăçа тăвиђђен пур пуштă çулĕсене те, вырăнĕсене те пушта йе Хусана, йе Ђĕмпĕре леçме меллĕрех пултăр тесе тунă, халĕ пирĕн пуçхула Шупашкар, анђах çак хулапа пур ђăваш вулăсĕсен хушшинђе пуштă çўретме пуштă трактĕсем те килĕшўлĕ мар, ĕлĕкхи пуштă вырăнĕсем те меллĕ вырăнта лармаççĕ. Унтан пуштă пирĕн лашапа çеç хăваланаţ: пирĕн ахтомопиљ тавраш çук, ахтомопиљсем çўреме йурăхлă çулсем те çук, авалхи пуштă çулĕсем кукăрмакăр çавăрăнса çўреççĕ, нумай вулăссемпе йалсем пуштă вырăнĕсенђен айакра тăраççĕ, çавăнпа халăха çыру йе хут çўретме питĕ кансĕр, çырусем вăраххăн çўреççĕ, ђасах çул çинђех çухалса та кайаççĕ. Малашне ђăваш хура халăхĕ ђăнтан пурăнăç йĕрки çине ўксен апла пулмалла мар: пур пысăкрах йалсенђе, пур вулăссенђе пуштă вырăнĕсем пулмалла, меллĕ тўрĕ пуштă çўлĕсем пулмалла, пушта ахтомопиљсемпе, велоçипетсемпе, аеропплансемпе хăвăртрах хăвалама тăрăшмалла. Çакă ђасах пирĕн çĕрте пулас çук, çапах çапла пирĕн ĕмĕртех пуласси пире пĕтĕмпех паллă: çĕнĕ пурăнăç йĕркине ўкнĕ ђăваш ĕç халăхĕшĕн лайăх пуштă питĕ кирлĕ.

Пуштăран пуçне тата пире питĕ *телекрах* кирлĕ. Авал епĕр телекрах йупи çумĕнђен иртсе кайсан унăн тимĕрхулли уланине илтсен патша хыпарĕ иртет теттĕмĕр. Ђăнахах та авал ђăвашшем телекрахран пĕр усă та курайман: вăл патша тарçисемпĕн, правиттĕљствăн акĕнђĕсемпĕн, унтан аслă мулçăсемпĕн çеç усăллă пулнă. Анђах ђăваш ĕç халăхĕ влаçа хăй аллине илнĕренпе апла пулмалла мар, çавăнпа ăна майа йама питĕ епĕр тăрăшмалла. Телекрах ĕçĕ халĕ пирĕн пуштăран та йурăхсăр: нумай вулăссем, Патăр уйесĕ пĕтĕмпех те тĕнђепе телекрахпа çыхăнмасăр тăраţ, пирĕн пуçхула хăй те ытти хуласемпе тўрĕ линисемпе çыхăнмасăр тăраţ.

Çаплах нађар пирĕн *телехвон* ĕçĕ. Ĕлĕк те пирĕн пур вулăссенђе те телехвон çукђĕ, халĕ телехвонлă вулăс питĕ те сайра, телехвонпа пирĕн хуласем çеç çыхăнса тăраççĕ. Телехвон питĕ кирли тата та пире виттĕр паллăрах: пур вулăсенђе те телехвон пулсан хура халăх лашапа 100—150-шар çухрăм хăваласа тумалли нумай ĕçе телехвон урлă тума пултарĕђђĕ, хресђен çук справкăшăн лашапа хулана ђуптарса вăхăт иртерес йăлана пăрахма пултарĕђђĕ.

Йулашкинђен *ратио* çинђен асăнас пулаţ. Пирĕн Шупашкарта пĕр ратиостантса пур: çав стантса урлă Мускавран хыпар килет, унтан калаçни те, йурлани те, консерт сасси тэ илтĕнет. Анђах пирĕн стантсаран ытти çĕрсене хыпар йама майĕ çук—унăн аппараţĕ килĕшўлĕ мар. Çак çулсенђех çĕнĕ аппарат лартсан— ђăваш оплăçĕ тĕнђепе ратиоçыххипе çыхăнса тăрĕ. Унтан çак çулсенђех оплăçри уйессен хулисенђе те çавăн пек стантсасем пулмалла. Çапла аслăлăхпа техникă ыр-

лахёпе малашне ђаваш çёрне тёнђе хыпарё, шухăшё, сăмахё куçа хупса илиђђен те хăвăртрах килсе çитё, пирён хыпар та çаплах хăвăрт тёнђене вёççе саланё.

5. Сутилў.

Çапла ёнтё халăх пурлăхён тёп никёсё йалхуçалăхпа промăшленăçран пулса тăрат̆: пур пурăнăçра кирлё йапалана, пур тавара вёсем çеç туйантараççё. Çак икё тёслё просвотсвăсен ырлăхёпе çеç епёр пур тёнђери пуйанлăха, пур халăх пурлăхне малалла йама пултаратпăр. Анђах çак просвотствăсенђен пуçне халăх пурлăхне малалла йарас тесен епёр транспортпа çвеç кирлине куртăмăр: вёсем хăйсем пёр кирлё йапала та пире параймаççё, нимёнле усăллă тавар та кăлараймаççё, ку сахалха: вёсене йусаса тăрас тесен темён ђухлё, темён хаклă промăшлёнăç туйантарнă йапалана, тавара пётермелле (тимёр, йăвăç, çёр кăмрăкё, ђул ытти йапала та), çапах та транспортпа çвеç пулмасан халăх пурлăхё ђантан малалла кайаймассине, вёсем çине йалхуçалăхпа промăшлёнăç пётёмпех тайанса тăнине епёр куртăмăр. Пирён саманара халăх пурлăхне тёрёсренех тёреклёлентерсе, тёрёс çулпа йарас тесен, тата та тепёр йапала кирлё: вăл та транспортпа çвеç пек хăй нимёнле усăллă йапала, нимёнле тавар та туса кăлармаст̆, анђах унсăр пуçне йалхуçалăх та, промăшлёнăç та ђантан йусанса хăватланма пултараймаст̆. Ана тавар çаврăнăçё, улăштару, сутилў теме йурат̆. Епёр малта нумай тёлте кăтартсаттăмăр: интустри, вак промăшлёнăç, алăсталăх, ђантан интенсивлă йалхуçалăхё хăйён происвотствипе ђи малтан тавара хăйне кирлёшён тума тăрашмаст̆, ăна ытти çёрсене салатма тăват̆, унтан кирек йепле происвотствă та ытти тёлтен килекен тёрлё хатёрсемсёр: сырйосăр, топливăсăр, машщинăсемсёр ёçлеме пултараймаст̆. Çавăнпа тавара пёр вырăнтан тепёр вырăна леçес йёрке, кёскен каласан таварçаврăнăçё халăхсен пурăнăçёнђе, тёнђе хуçалăхён картишёнђе питё паллă вырăн йышăнса тăрат̆. Çавăнпа пирён оплăçри халăх пурлăхне пёлес тесен, епёр çак тёлёшёнђен Раççейре те, тёнђере те, хамăр çёрте те мёлле вырăн йышăнса тăнипе тёплесе тупас пулат̆.

Ђавашшем тёп авалранах сутилў туса пурăнни çинђен епёр малта тёрлё сăлтавпа нумай тёлте каларăмăр, çавăнпа халё епёр ун çинђен икё сăмах çеç калăпăр. Аçрен Йевроппа куççа килнё саманарах ђавашшем выђăхран пуйан пулса, выђăхпа вăйлă сутилў туни çинђен пире ђёлхе историйё тёрёсренех кăтартса тăрат̆: славин йăхёсем вырăссем, хвин йăхёсем мат̆йарсем, çармăссем ыттисем те нумай выђăх йађёсене ђаваш ђёлхинђен йышăнни авал ђавашшем выђахпа сутилўлени çинђен тёрёсренех шантарат̆. Пăлхари патшалăхё

пĕтĕм тĕнҫепе питĕ паттăр сутилў туни ҫинҫен истори ик кĕленмелĕх пĕр вырăн та хăвармасӗ: пур авалхи историҫĕсем те ун ҫинҫен хăйсен ҫырăвĕсенҫе асăнмасăр йулман. Пăлхарсем хĕвелтухĕҫĕнҫи халăхсемпе: арапсемпе, перссемпе, ерменсемпе, пуххарсемпе ыттисемпе те, унтан хĕвеланăҫĕнҫи славинсемпе, нимĕҫсемпе сутилў туса пурăнни пире виттĕр паллă: ун ҫинҫен пире авалхи кĕнекесемпе авалхи ҫырусем кăтартса тăраҫҫĕ, ун ҫинҫенех пăлхарсен укҫисем халĕ те Кĕҫĕн Аҫире, Капкасра, Турккестанра, Палтти тинĕсĕ таврашĕнҫе, Шветси ҫĕрĕнҫе тупăнни палăртса тăраӗ. Нумайĕшĕ ăслăлăхҫăсем пăлхарсене пăҫах ҫăвашшен мăнаслашшĕсен вырăнне хисеплеме йурамасӗ теҫҫĕ, пăлхарсем тесе тĕрлĕ халăхсенҫен: арапсенҫен, йеврейсенҫен, ерменсенҫен, пĕрссенҫен, вырăссенҫен, унтан Пăлхари ҫĕрĕнҫе пурăнакан тĕрлĕ халăхсенҫе ҫăвашшенҫен, хвин йăхĕсенҫен хутшăнса пулнă хуласенҫен пурăнакан халăха каланă теҫҫĕ, пур патшалăхри влаҫа та, пур сутилĕве те ҫав инттернатсионаллă хула халăхĕ тытса тăнă теҫҫĕ, ҫăвашшем ҫĕр ĕҫлесе тырă туса ҫеҫ пурăннă теҫҫĕ. Ҫав вăхăтрах нумай паллă ăслăлăхҫăсем пăлхарсем тĕп ҫăваш ăрăвĕ пулнă теҫҫĕ. Анҫах пĕр ăслăлăхҫă та ҫăвашшем Пăлхарире пулман та темест, пĕр ăслăлăхҫă та Пăлхарире пурăнакан халăхсенҫен ҫăвашшем куҫттурăпа малта тăнипе хирĕҫ каламасӗ. Ҫавăнпа йепле пулсан та, малта кăтартнă истори ыйтăвне йепле майпа сўтсе пăрахсан та—ҫăвашшем Пăлхари пурăнăҫĕнҫе пысăк роҫ тытса тăни паллă. Пирĕн ҫĕлхере хисепсĕр нумай арап сăмахĕ, пайтах перссемпе йеврейсен сăмахĕсем, унтан хĕвеланăҫри халăхсенҫен епĕр пайтах сăмах авалран йышăннă; ҫакна примерсемпе тĕрĕслес тесен ҫакна асăнма йураӗ: Н. И. Ашмарин кăтартнипе карас тенĕ сăмах тĕп крек сăмахĕ, ăна ҫăвашшем литовтсăсем урлă йышăннă пулаҫ, ҫапла пулсан—ҫăвашшем авалран Палтти тинĕсĕ хĕррин ҫи халăхсемпе сутилў туса паллашни паллă; унтан историрен пăлхарсем те, ҫăвашшем те пылран пуйан пулни паллă, ҫавăнпа карас тенĕ сăмаха ҫăвашшем литовтсăсемпе пылпа сутилў тунă майпа йышăннă теме йураӗ. тепĕр йенҫен ҫав паллă ăслăлăхҫă кăтартнипех авалран нимĕҫсем те ҫăваш сăмахĕсене йышăнса йулнă, ҫапла пулсан Пăлхари авал Канса Сойусĕпе хăватлă сутилў тунă саманара ҫăвашшем те ҫав ĕҫре пулни тўрех паллă. Урăхла авал пулма та пултарайман: ҫăвашшем питĕ аван ҫĕршыв йышăнса тăнă, ҫĕр ĕҫлеме авалран хăнăхса питĕ пуйан пулнă, Пеироппа Аҫипе ҫыхса тăракан тĕнҫере паллă Атăлпа Ҫулман Атăл тавринҫе пурăннă, ҫав шывсен хĕрринҫе вĕсен хуласем пулнă. Халĕ нумай историҫĕсем, ытларах та тутар историҫисем ҫăвашшем пăлхарсем пулайман, мĕшĕн тесен вĕсем сутилў ĕҫне йуратмаҫҫĕ теҫҫĕ, тутар историҫисен шухăшĕпе пăлхарсем тутарсен мăнаслашшĕсем пулнă пулаӗ, ҫавăнпа та авалран йулнă йăлапа тутарсем халĕ те сутилў ĕҫĕпе кĕрмешше пурăнма

питĕ йуратаççĕ пулат. Анђах пирĕн шухăшпа, пирĕн саманара ђăвашшем сутилў ĕçĕнђен писсе тăни вĕсен мул çуккинђен, йурлă пурăннинђен, улт-çиђçĕр çул пусмăрта асапланса пурăннинђен, вĕсене аслă транспортлă шыв çулĕсен хĕрринђен айаккала хăваласа йанинђен, вĕсен хулисене ирĕксĕр çĕмĕрсе салатса пĕтернинђен çеç килет. Пурлăхпа мул пулсан, çителĕклĕ капиттал пулсан ђăвашшем те сутилў тума пĕлеççĕ, сутилўлесе ытти патшалăхсене те çитсе çўреççĕ. Йулашки ĕмĕрсенђе йепле ђăвашшене сутилў туса тупăш курма паманни çинђен епĕр малта та асăнсаттăмăр: истори кăтартнă тăрăх— XVII—XVIII ĕмĕрсенђе ђăвашшене пасара тухма та паман, пур кирлĕ йапалана вĕсем Мускав патшисен усламçисем урлă çеç илмелле пулнă; вăхăђĕпе ђăвашшем хуласенђе хăйсен йапалисемпе те сутилўлеме кăна мар—хуласен çывăхпе те пыма пултарайман. Çавăнпа ĕнтĕ епĕр ђăвашшем сутилў ĕçне те, ытти пур ĕçе те пушкарнă пек пушкараççĕ тетпĕр. Çакна каласа, малалла ђăваш çĕрĕнђе таварçаврăнăçĕпе сутилў мĕлле халпа палăрса тăнине кăтартăпăр.

Кирек мĕлле çĕрĕн таварçаврăнăçне пĕлес тесен те—ăпа икĕ йенђен тишкерсе пăхас пулат: сăнанă çĕртен мĕнђухлĕ йепле тавар айакка йута кайса тарат—ку пĕр йенĕ—ăна тавар кăларăвĕ йе тухăвĕ (вырăсла вывос, експорт) теççĕ; сăнанă çĕре мĕнђухлĕ, йепле тавар йутран кĕрсе тăрат—ку тепĕр йенĕ ăна тавар кўрĕвĕ (вырăсла ввос, импорт) теççĕ. Оплăçри таварçаврăнăçа та епĕр çак икĕ йенђен тишкерсе пăхăпăр.

Пирĕн *тавар кăларăвĕ йе експорт* çапла курăнса тăрат: оплăçран авалран ђи нумай тавар пĕрђĕ тырăпа вăрман кайса тăнă. Пĕрђĕ тырă çуллен вăтамлăхран 5 мĕљйун пăт сутăннă, пĕрђĕрен ытларах сĕлĕ сутăннă, пирĕн пĕрђĕ вăрçă уммĕн ытларах Атăл тăрăх Питĕре, унтан çурçĕр йенђи кĕпернесене кайса тăнă, сахалрах ђукун çулпа Мускава йе Хусана кайса тăнă. Пĕрђĕ тырă пирĕн çук хакпа сутăнса тăнă: ăна кĕркунне халăхран хырçă пухнă вăхăтра хуласенђи, пристăнђсенђи, стантсасенђи сутилўçĕсем йури тырă хакне ўкерсе илсе пĕтернĕ, мĕшĕн тесен укçасăр аптăранă хресђен хăй тыррипе пĕр пĕрђĕ таранђен сутса пĕтермесĕр пултарайман. Пĕрђĕрен пуçне оплăçран çуллен йалхуçалăх туйантаракан ытти ђĕрĕ хатĕрсем те кайса тăнă: çăмарта, çăм, тир, ашпăш, выђăх, ђăхђĕпĕ, улма, хăмла ытти йапала та. Ђăхђĕпĕ йышлă усранипе оплăçран питĕ нумай çăмарта кайнă—ăна сутилўçĕсем Керманийе те, Анклийе те леççе тăнă (ђăваш сутилўçи Селиван Лонтонра уйрăм çăмарта кантурĕ тытса тăнă). Унтан ытти патшалăхсене çуллен пайтах ђăхђĕпĕ, хуркăвакал кайăнса тăнă. Аш, унтан пусмалли выђăх оплăçран çулталăкра çĕрпин пăт ытла кайнă—ăна сутилўçĕсем Мускава, Хусана, Ђулхулана леççе тăнă. Оплăçран çуллен тĕрлĕ тĕле хăмла нумай кайнă, хăмла сутилўçисем хăмла сутса нумай тупăш тунă—вĕсен хăмла савăђĕсем те пулнă. Выђăх тирĕ оплăçран Хусана унтан

ђулхула йенне кайса тăнă. Пирĕн çĕртен тата та йалхуçалăх туйантаракан нумай ђĕрĕ тавар кайса тăнă: хĕлĕх, шăрт, пыл, пахђа çимĕçĕ ытти йапала та, анђах çак пур йапала та ђĕрĕ халлĕн йӳне сутăннă, мĕшĕн тесен, ђĕрĕ хатĕртен хаклăрах тавар тума пирĕн хапрăксем те, савăтсем те пулман. Унтан оплăçран çуллен питĕ нумай вăрман кайса тăнă: вăрман пĕрене йе хăма халлĕн Атăлăн айал йенне кайса тăнă, йуман клђепки ытти патшалăхсене те кайса тăнă, вăрман йепле нумай кайнине кăтартас тесен çак примера кăтартма йурать: 1910-мĕш çулта Шупашкар тистантси виттĕр çеç 1272 кимĕпе паршă, 57 сулă тухнă, çавсемпе 11 мĕљйун пăт ытла йăвăç хăваласа кайнă, çав таварăн хакĕ виçĕ мĕљйун çурă ылтăн тенкĕ йахăн тăнă. Йулашкинђен оплăçран çуллен нумай алăстисен хатĕрĕ кайса тăнă, çак таварăн хакĕ пĕр икĕ мĕљйун ылтăн тенкĕ йахăн хисеплеме пулать. Хапрăксенђе, унтан саватсенђе ĕçлесе тунă тавар пирĕн питĕ сахал сутăннă—вĕсен çулленхи протуксийĕ виççĕр пин ылтăн тенкĕрен ытла та шутланман.

Çапла пирĕн çĕртен тавар пайтах тухать, анђах çав пур тавар та ђĕррĕн тухать, йӳне сутăнать: çав тавар промăшлĕнăлă районсене кайса тăрать, вĕсене сырйопа топлива парса тăрать, çакă пирĕн çĕр ытти интустриллĕ районсен колони ырăнĕнђе тăнине пĕлтерет.

Тавар кӳрӳ йе импорт оплăçра питĕх те нађар. Пирĕн çĕре йутран пурăнăçра ытлах та кирлĕ тавар çеç килсе шăнăçать: тавар, кăраççин, шăрпăк, тимĕр тавар; ытти тĕлсенђе питĕ витекен тавар ситсă йе сахăр тавраш те пирĕн хушпăмарта питĕ сахал кайать. Çакă пĕр йенђен ђавашшем пур хăйсен пурăнăçĕнђе кирлĕ тавара хăйсемех тума тăрăшнинђен килет, тепĕр йенђен вăл халăх питĕ йурла пурăннинђен килет. Çавăнпа пирĕн експортпа импорта танлаштарсан пирĕн çĕртен тавар нумай тухни, сахал кĕни палăрса тăрать. Пур халăхсем те, пур патшалăхсем те ытти çĕрсене тавар нумайрах хăвалама, сахалтарах кӳртме тăрăшаççĕ, çапла пулсан çеç халăх та, патшалăх та пуйан, пурлăхпа тĕреклĕ пулать. Анђах тĕнђере пур малта тăракан халăхсем те експорта импортран иртерес тесе тавара ђĕррĕн йӳне сутма памаççĕ, ăна хапрăксемпе савăтсенђе йусаса хаклăлатса сутаççĕ, çав вăхăтрах хăйсен çĕрне тавара ђĕррĕн çеç йӳне илсе кӳртме тăрăшаççĕ. Епĕр усал истори ырлăхĕпе çуклăха йерсе, тĕттĕмре пăнђăхса пурăнса урăхла тăватпăр: хамăрăн çук тавара та ђĕррĕн çук хакпа ытти тĕлелле леççе тăратпăр, хамăра кирлĕ йапалана ытти çĕрсенђи хапрăксенђе йусанă тавара туйанса тăратпăр. Çапла майпа ĕмĕртен пурăнса пирĕн халăх пур Раççейри халăхсенђен те ытла çука йернĕ. Халĕ епĕр оплăçран пайтах тавар кăларсан та, ăна епĕр питĕ нуша пуснипе çеç кăларатпăр: пирĕн тырă пĕрђи хамăршăн та ђăнтан тăранса пурăнсан çителĕклĕ мар, епĕр ăна çапах сутатпăр; çапла хăмара

пур кирлĕ йапалана ђĕррĕн сутса пĕтерсен теђăвашшен алăра шăрпăк илмелĕх те мул çук. Çак тĕрĕс пулсан—ђăвашшем малашне мĕн тумаллаши? Вĕсем хуçалăхăн çĕнĕ йĕркине йышăнса йепле те пулсан тавар нумайрах тума, йалхуçалăхпа промăшлĕнăç протуксине йепле те пулин ўстерме тăрăшмалла, унтан ђăваш çĕрĕнђен тавара ђĕррĕн кăларас йăлана пăрахса, оплăçра хапрăксем, савăтсем туса, пур ђĕрĕ йапалана хаклă тавара çавăрса çеç сутса тăма тăрăшмалла. Çапла тусан çеç халăх пурлăхĕ тĕреклĕленĕ, ђăваш хура халăхĕ ђипер çителĕклĕ пурăнăç йĕркипе пурăнма тытăнĕ.

Епĕр малта ђăваш оплăçĕ ытти çĕрсемпе çутилў туни çинђен каларăмăр, малалла икĕ сăмах *оплăçра сутилў мĕлле пынине* кăтартма кирлĕ. Анђах оплăçран тавар сахал кайаŤ ытларах та тата сахал кĕрет пулсан—тўрех паллă: оплăçра сутилў питĕ нађар. Пирĕн халĕ *вак сутилў* çеç, çав сутилў пасарсемпе йармăнккасенђе пулаŤ. Пирĕн аслă сутилў тăвакан уђрештенисем, хирмăсем йе тĕрлĕ хăватлă сутилўçĕсем çукпа пĕрех. Çакă ђи малтан ђăваш халăхĕн тавар илме хал çуккинђен килет, оплăçра тавар витменнинђен килет.

Оплăçра 63 *пасар*: Шупашкар у. 19. Çĕрпў у. 18. Йетĕрне у. 17. Патăр у. 9, оплăçра ерпере пасарлă кун 70, оплăçра пĕр пасар 30 йала тивет. Пирĕн хресђен тавара пуринђен ытла пасарта илет. Ђăвашшем пасара питĕ йуратаççĕ, унта вĕсем тавар илме çеç мар, ахаљ курма çеç кайса та вăхăта иртерсе çўреççĕ: вăл пĕр йенђен халăх тĕттĕминђен, унăн ђунне пусарма урах майĕ çуккинђен килет, тепĕр йенђен вăл авалран йулнă йаларан килет: авал ђăвашшем хурăнташшемпе, тăвансемпе пасарта курăнаçнă, унтах кађђа кайас хĕрсене курса кађђа илме суйласа айкашнă.

Пасарсенђен пуçне оплăçра нумай тĕлте *йармăнккăсем* пулаççĕ: ђаплăрах йармăнккăсем хуласенђе унтан аслăрах йалсенђе пулаççĕ. Ђи пысăк йармăнккăсем Çĕрпўре, Шупашкарта, Йетĕрнере унтан Йухмара (Патăрта) пулаççĕ, çав йармăнккăсенђе кашнинђе вăрçа уммĕн çуллен 30—40 пин тенкĕлĕх тавар сутăнна. Çав йармăнккăсенђе пуринђен ытла хресђен товарĕ, аластисен тĕрлĕ хатĕрĕ сутăнаŤ.

Унтан пасарлă йалсемпе хуласенђен пуçне пирĕн *сутилў вайлă пристăнљла йе стантсаллă йалсенђе пыраŤ*, çав йалсенђен ђи ђапли Канаш стантси—вăл пур пирĕн хуласенђен те хăватлăрах сутилў тăваŤ.

Сутилў тавара мулпа çавăрса тăраŤ, çав тавара çавăракан сутилў мулĕ халĕ уйрăм мулçăсен аллинђе тăраŤ. Çак уйрăм пуйан сутилўçĕсенђен пуçне сутилў ĕçĕпе халĕ патшалăх та, коопператси те хытă тăрăшша кĕрмешет. Епĕр пĕлетпĕр—уйрăм сутилўçĕсем хăйсен уссишĕн çеç ĕçлеççĕ, вĕсем хура тĕттĕм халăха улталаса унтан тавара йўне илсе, ăна кирлĕ тавара хакла сутса ĕçлеме çеç тăрăшаççĕ. Çак сутилўрен уйрăм çынсен аллинђе пухăнакан мулпа ĕçлекенсем, пур хура халăх,

патшалăх харăс тăрса кĕрешмелле. Çапла тумасан—хура халăх нихăçан та телейлĕ пурăнас çук. Пур оплăçри пысăк сутилўлĕ ĕççене: тырă, çăмарта, алăстисен хатĕрĕсене, вăрман ăсатса сутас ĕçе йе патшалăх йе коопператси çеç тумалла. Унтан пур йалсенђи, пасарсенђи сутилĕве те хура халăх хăй аллине илме тăрăшмалла: ку ĕçпе патшалăх кĕрмешес çук, ăна хура халăх пĕрлешше коопператси ĕçне тĕреклĕлентерсен çеç тума пултарĕ. Пирĕн саманана халĕ патшалăхлă капитталисăм самани теççĕ, вăл пĕр йенђен патшалăх уйрăм мулçăсене вак промăшлĕнăçпа вак сутилўпе кĕрмешше пурăнма ирĕк панине пĕлтерет, тепĕр йенђен патшалăх хăй аллинђе аслă интустрипе хăватлă сутилĕве çеç тытса тăнине пĕлтерет. Пирĕн оплăçра вак сутилў çеç, çавăнпа çак ĕçе патшалăх çителĕклĕ мул хурас çук: патшалăхăн сутилўлĕ вырăнĕсем кĕрмешшен тырăпа, çăмартапа, вăрманпа кĕрмешĕç. Çавăнпа сутилў ĕçне хура халăхшăн усăллă тавас тесен вăл пĕр пĕринпе пĕрлешше сутилў ĕçне хăй аллине илмелле, çапла вăл хăватлă коопператси урлă çеç тума пултарать.

---

6. Коопператси.

Коопператси йађĕпе епĕр пĕрле ĕçлесе усă курас тесе пĕрлешнине калатпăр. Коопператсийĕн лосункĕ çапла: *«пурте пĕриншĕн—кашни пери пуриншĕн те»*. Çак лосунк пур коопперативлă пĕрлешĕве кĕрекен çынсем те алтивĕççĕн ĕçлесе пурăнса, пĕр пĕриншĕн тăрăшша, пĕр пĕрин хутне кĕрсе пурăннине пĕлтерет. Коопператси тĕнђере ђăнтан йулашки ĕмĕрте çеç тапранса кайнă, çапах та вăл халĕ нумай патшалăхсенђе питĕ вăйлă—Йевроппăра коопперативлă пĕрлешўсенђе халĕ пилĕк çынран пĕри тăрать. Коопперативлă пĕрлешўсене ĕçлекенсем, хресђенсем, унтан вырăнта тăракансем çеç тăваççĕ, мullă çынсем пур тĕлте те йаланах коопператсийе хирĕç пыраççĕ. Урăхла пулас та çук, мĕшĕн тесен, коопператсийе ђи малтан уйрăм капитталçăсемпе уйрăм мулçăсен мулĕпе кĕрешме, мулсăр çынсем мул пусмăрĕнђен хўтлĕх шыранса тăваççĕ. Çавăнпа коопператси ĕçлекенсемпе хресђенсене, унтан вырăнта тăрса шалу илкелесе тăранса пурăнакан çынсене çеç кирлĕ, тĕрлĕ мулçăсемпе тĕрлĕ пурăнăçри çăхансем коопператсийе йаланах хирĕç пыраççĕ. Ђăваш хура халăхĕ ĕмĕртен капитталпа натсилĕ пусмăр айĕнђе тарăхса пурăнса пурлăхран тайăлнă, çителĕклĕ тĕреклĕ пурăнăçран татăлнă, çавăнпа ђăвашшен хушшинђе коопператси тата та ытла вăйлă пулмалла. Епĕр пĕрне пĕри пулăшмасан, пĕрлешше тупнă мулпа пурлăха тўрлетмесен, пĕрлешўлĕ вăйпа çĕнĕ хуçалăх йĕркине йышăнма паттăр харăс тапăнмасан—нихăçан та ырă пурăнăçа курас çук. Пирĕншĕн коопператси ытла та кирли тата ак мĕнтен килет: пирĕн йалхуçалăхĕ пĕтĕмпех уйрăм килйышпа пур-

лăхпа хуçалăха тытса тăракан хресҫенсен аллинҫе, промăшлĕнăç та пирĕн вак. вăл та нумайĕшĕ уйрăм хуçасен аллинҫе, сутилŷ мулĕ те пирĕн уйрăм сутилŷçĕсен аллинҫе, çав вăхăтрах пирĕн пурăнăçа орканисатсилесе тŷрлетме пĕлекен пролеттариат сахал. çав вăхăтрах пирĕн хресҫен авалран ҫуралăхра пурăннипе ирĕклĕ пĕрлешŷлĕ пурăнса пурăнăçа малалла йама хăнăхман.

Ленин йул. каланă тăрах пĕтĕм хура халăха, ытларах та хисепсĕр йышла, вак хуçалăх йеркипе пурăнакан *хресҫен халăхне сотсиалисăм çулĕ çине коопператси урлă* çеç *йеррипе ı каларма пулат* Ҫăнахах та–хура халăх хăй хушшинҫи хăй йунне ĕмекен вак капитталçăсемпе, мулçăсемпе, усламçăсемпе, тĕрлĕ кулаксемпе хăй пĕр пĕринпе пĕрлешше кĕрешмесен—йалсенҫе капиттал пусмăрне пĕтерме майĕ те çук. Çавăнпа пур ĕçлекенсене ирĕке кăларас прокраммăра коопператсийе тĕреклĕлетес ĕç питĕ палла вырăн йышăнса тăрат.

Коопператси мĕн тума пултарат? Вăл халăх пурлăхне тĕрлĕ йенҫен йусама пулăшат, вăл халăх пурлăхне йапăхтарса тăракан тĕрлĕ сийене сирсе пăрахма пулăшат.

Ҫи малтан коопператси хура халăха пĕрлешше тĕрлĕ происвотсвăсене тапратса йама. пур происвотства хăватлăлантарма пулăшат; çапла хресҫенсем пĕрлешше çĕр ĕçлеме кирлĕ машшинăсем, выҫăх, вăрлăх, çĕр имçамĕ туйанма пултараççĕ, пĕрлешше коопператив урлă çĕр йышăнса ĕçлесе тăма пултараççĕ, пĕрлешше тĕрлĕ ҫĕрĕ хатĕрсене йусакан савăтсем тума пултараççĕ: армансем, çу, тир. хăмла савăҫĕсем, пĕрлешше йурăхсăр çĕрсене йурăхла çавăрма, вырăсла каласан вĕсене мелиоратсилеме пултараççĕ, йулашкинҫен хресҫенсем пĕрлешше йала електрă çуттипе çутатма, електрă ăшшипе ăпăтса тăма пултараççĕ; хресҫен пĕрлешŷлĕ ушкăнсем, сойуссем, йулташлăхсем, комунăсем урлă мĕн тума пултарнине каласа та пĕтерме çук, çак тĕлĕшĕнҫен ваттисен сăмахĕ: «пĕр çын сурат—типсе пырат, халăх сурат—кŷл пулат» пĕтĕмпех тĕп тĕрĕс; унтан хресҫенсемпе ĕçлекенсем пĕрлешше тĕрлĕ тупăшла ĕç, тĕрлĕ промăслă тума пултараççĕ; çапла авалран халăх ерттелленсе вăрман касат, сăмала хăвалат, ҫăпта çапат, авалран мулсăр етемсемех тĕрлĕ маçтерскуйсем, тĕрлĕ савăтсем, кĕçĕнрех те пулин хапрăксем тăваççĕ. Çакăн пек коопператсийе *происвотителлĕ коопператси* те́ççĕ, мĕшĕн тесен вăл тĕрлĕ происвотствă таврашне лайăхлатма та, çĕнĕрен тапратма та тăрăшат. Ҫăваш оплăçĕнҫе çакăн пек коопперативсем мĕнпурĕ 430, вĕсенҫе ҫленсем 8.500 çынна йахăн хисепленеççĕ.

Çак коопператси икĕ тĕслĕ: пĕрне *йалхуçалăх коопператсийĕ*, теприне *промăслăлă коопператси* теççĕ, мĕшĕн тесен, пĕр тĕслĕ коопператси йалхуçалăхне лайăхлатма пулăшат, тепĕр тĕсли вак промăшлĕнăçпа аласталăха пулăшат. Уйрăм йалхуçалăх коопператсийĕ оплăçра çапла палăрса тăрат: йулташлăхсемпе ерттелсем 148, вĕсенҫе 3.200 ҫлен ытларах, коммунăсем

10, вěсенҫе 100 ҫын ытларах пурǎнаҭ, арман тытса тǎракан эрттелсем 17, вěсенҫе ҫленсем 200 ҫын ытла. Ҫапла пирěн оплǎҫра 350 пин вǎйпитти хресҫенрен виҫě пин ҫурǎ ҫеҫ йалхуҫалǎх кооперативěсенҫен тǎраҭ, ҫапла ҫěр ěҫлесе пурǎнакан хресҫенсенҫен оплǎҫра пěр проҫҫǎнě ҫеҫ йалхуҫалǎх коопперативěнҫе тǎраҭ. Йалхуҫалǎхне малалла йарасси ҫи малтан йалхуҫалǎх коопператсийěнҫен килет, ҫавǎнпа малалла апла нулмалла марри каламасǎрах паллǎ. Пирěн саманара пěтěм Раҫҫейре те йалхуҫалǎх коопeратсийě вǎйлǎ мар: вǎл авал хресҫене улпутсен пусмǎрěнҫе тытса тǎнинҫен килнě.

Промǎслǎлǎ коопператси пирěн вǎйлǎрах, тапранма та вǎл авалран тапраннǎ: ҫапла ҫǎпта ҫапакансен коопперативěсем ěҫлеме тапранни ěнтě вǎтǎр ҫул ытла иртрě. Халě пур промǎслǎлǎ коопперативсем оплǎҫра 250 ытла, вěсенҫе ҫленесем 5.000 ҫынна йахǎн. Ҫак ҫул оплǎҫри промǎслǎлǎ коопператси ҫапла курǎнса тǎраҭ: вǎрман касакан эрттелсем 21, вěсенҫе ҫленсем 1.113 ҫын, смала хǎвалакан эрттелсем 7, вěсенҫе 180 ҫлен, ҫǎпта ҫапакансен 94 коопператив, вěсен 1390 ҫлен, ҫуна тупанěпе кусатран тукунě авакан эрттел 12, ҫав эрттелсенҫе 270 ҫын ěҫлесе тǎраҭ, ҫаксенҫен пуҫне урǎх эрттел нумаҭ, ҫав эрттелсем мěнпурě 150 йахǎн, вěсем тěрлě ěҫпе кěрмешпе тупǎшласа пурǎнаҫҫě, вěсен хушшинҫе ҫапла ǎсталǎхпа ěҫлесе пурǎнакансем пур: ҫунасем, урапасем тǎвакансем, сěтелҫěсем, токкǎрсем, пиҫкеҫěсем, касмǎкҫǎсем, карҫинǎсем авакансем, каскалакансем, кирпěҫěсем, ҫўлмекҫěсем, исвěҫ ҫунтаракансем, тимěрҫěсем, тирěҫěсем, атǎ ҫěлекенсем, хǎмǎт ҫěлекенсем, ҫǎматǎ пусакансем, ҫěвěҫěсем, ҫěлěк ҫěлекенсем, супǎнҫǎсем, пулǎҫǎсем ытти йенҫен те тупǎшлакансем. Ҫапла оплǎҫра промǎслǎлǎ коопператси пайтах йышли пирěн халǎх промǎшлěнǎҫ йенне сулǎнма, туртǎнма тытǎннине пěлтерет. Епěр малта оплǎҫа йепле те пулин хǎвартрах интустрилемелле тесе темиҫе хут каларǎмǎр, ҫак алǎсталǎха, вак промǎшлěнǎҫа, вǎтам интустрийе малалла йарас ěҫе промǎслǎлǎ коопператси паттǎр ěҫлемесен епěр тума пултараймǎпǎр, ҫавǎнпа ҫак коопператсийе хǎватлǎлатма епěр пěтěм вǎйпа тǎрǎшмалла.

Унтан ҫапла тěрлě происвотствǎсене асǎрхакан коопператсирен пуҫне тата тепěр тěслě питě аслǎ, питě кирлě коопператси пур—ǎна *потрепиттěллě коопператси* теҫҫě. Ҫак коопператси таварҫаврǎнǎҫне, сутилěве пěтěмпех хǎй аллине илсе, сутилўҫěсене, усламҫǎсене ҫак ěҫрен пǎрса хǎварса, вěсене пěтерсе, тавара тўрех хапрǎксенҫе, савǎтсенҫе, хресҫен хушшинҫе туйанса, кěскен каласан тавара ǎна тǎвакансенҫен, ǎна кǎларакансенҫен, вырǎсла каласан происвотиттěлсенҫен тўрех туйанса ǎҫта кирлě ҫěре леҫҫе, валеҫҫе тǎмалла; вǎл тавара шыранса, тупса, унтан усǎ куракансене, ǎна ěҫе кўртекенсене, вырǎсла потрепиттěлсене леҫҫе, валеҫҫе тǎмалла. Ҫак коопператси тавара тўрех происвотиттěлрен илсе потрепиттěле леҫҫе

тăрашшăн, вĕсен хушшинче тавар çӳретсе аппаланса услам илекен сутилӳçе пĕтерешшĕн, тавара потрепиттĕлшĕн йӳнерехе хăварашшăн, çавăнпа та ăна потрепиттĕллĕ копператси теççĕ. Çавăнпа йепле происвотиттĕллĕ копператси промăшлĕнăлă капитталпа кĕрешет, çаплах потрепиттĕллĕ копператси сутилӳлĕ капитталпа кĕрешет, çавăнпа çак копператси те питĕ пурăнăçра кирлĕ йапала. Чăваш оплăçĕнче çак копператсийе вайлăлатма кирли тата ак мĕнтен килет: оплăçра сутилĕве хуласенчи, пристăнлĕ йе стантсалă йалсенчи сутилӳçĕсем тытса тăраççĕ, нумайĕшĕ çав хуласем те, йалсем те оплăç чиккинче лараççĕ, вĕсенче сутилĕве йутран килнĕ мулçăсем тытса тăраççĕ, оплăçра тунă сутилӳ мулне вĕсем пирĕн çĕрте ĕçе кӳртме, промăшлĕнăлă ĕçе кӳртме тăрăшмаççĕ. ăна хайсем ăçтан килнĕ çавăнта илсе кайма тăрăшаççĕ. Тӳрĕрен каласан, епĕр халĕ те авалхи пекех сутилӳлĕ капитталшăн колони вырăнĕнче çеç хисепленетпĕр. Çавăнпа епĕр пĕрлешше ытларах та тарăхса сутилӳçĕсемпе кĕрешмелле. Çак кĕрешĕве чи малтан потрепиттĕллĕ копператси хай çине илмелле. Оплăçра халĕ мĕнпурĕ 73 потрепиттĕллĕ копперативсем, вĕсенче пирĕн саккунпа пур вăйпитти çынсем членсем вырăнне хисепленеççĕ, унтан пирĕн 30 ирĕклĕрен тунă копперативсем, вĕсенче 3000 члене йахăн хисепленет. Анчах çак копператси хисеппе паттăр пек пулсан та, ĕçпе питĕ начар, вăйсăр: вулăссенче копперативсем питĕ начар ĕçлеççĕ, пур йалсенчи, йал пасарсенчи, йармăнккăсенчи сутилӳ уйрăм сутилӳçĕсен аллинче. Çакă пĕр йенчен копперативсен те, хресченĕн те çаврăнăçлă капиттал çуккинчен, тепĕр йенчен халăх хай çак ĕç çине тăрса ĕçлеме тăрăшманнинчен килет. Малашне апла пулмалла мар: пур йалсенче, вулăссенче вăйлă копперативсем пулмалла, пур йал хушшинчи сутилĕве вĕсем çеç тытса тămалла.

Йулашкинчен тата тепĕр тĕсĕ копператси пур—ăна *кретитла копператси* теççĕ. Çак копператси кирлĕшĕн укçа, йапала, тавар кивçен парса тăрат. Епĕр пĕлетпĕр. кирек мĕлле тăнпуçлă çын та хай пурлăхне малалла йама тăрăшат, анчах ăна çапла тума часах пĕлмеппи çеç чармаст: мул çукки касса тăрат. Пирĕн саманара пĕтĕм хресчен çĕнĕ йалхуçалăх йĕркине йышăнас тесен те, тĕрлĕ ĕçлекенсем, кустарсем маçтерскуйсемпе савăтсем тăвас тесен те, ăна мулсăр тума пултараймаççĕ Ку сахалха: пирĕн хресчен ĕмĕртен парăма кĕрсе панчăхса пурăннă, пирĕн хресчен ерешмен карти çаврса илнĕ шăна пек тĕрлĕ усламçăсен аллинче ĕмĕртен асапланса пурăнат; епĕр пĕлетпĕр: XVIII-мĕш ĕмĕртех Кĕтерине патша пухнă çĕнĕ саккун кăлармалли камиççире пулнă чăвашшем вулăссенче кивçен паракан панккăсем уçма ыйтнă: вĕсем калана—хресчен улпутсене, тĕрлĕ усламçăсене парăма кĕрсе пĕтрĕ, вĕсем çулталăка аллăшар проччăн илеççĕ, нумайĕшĕ хресчсенсем парăма татаймасăр улпутсемпе усламçăсен аллине ĕмĕрлĕхе чуралăха сутăнаççĕ тенĕ. Пирĕн саманара та çукрах

çынсем ёмӗр парăмран татăлаймасăр асапланса пурăнни виттӗр курăнса тăрать. Çавăнпа çак кретитлă копператси питӗ кирли çинчен урăх сăмах сайа йама та асапӗ çук. Пирӗн оплăçра халӗ 60 кретитлă йулташлăх, вӗсенче 37000 член. Анчах çак çулсенче çак йулташлӗхсем начартарах ӗçлеччӗç. Малашне апла пулмалла мар: халӗ патшалăх хăй кретитлă копператсийе тӗреклӗлентерешшӗн тăрăшать. Çак тӗслӗ копператсийе тӗреклӗлентерешшӗн 1923-мӗш çултанпа Шупашкарта Кретитлă Аксионерлӗ Ушкăн ӗçлеме тапратрӗ.

Копператси тата та пин тӗслӗ усăллă йапала тума пултарать: пурăнăçра мӗн кирлӗ—ăна пӗрлешше тусан тӗлӗкре те тӗлленмен йапала тума пулать. Пурлăха йусассинчен пуçне копператси ытла тăрăшша культтурă ӗçне малалла йарашшăн ӗçлет. Копперативсем халăх çурчӗсем, театăрсем, пиплиотексем тăваççӗ, копперативсем шкулсем, техниккумсем, университетсем уçаççӗ, копперативсем кӗнекесем, хаçатсем, шурналсем кăлараççӗ. Çак ӗçе тума тата нумай çӗрте уйрăм копперативлă ушкăнсем те уçаççӗ. Епӗр пӗлетпӗр, культтурă тӗлӗшепе чăвашсем нумай халăхсенчен кайра тăраççӗ, епӗр татах пӗлетпӗр чăвашсен хушшинче культтурă çуттине аслăлатасси чăваш халăхӗнчен хăйӗнчен килет. Каллех епӗр пӗлетпӗр: çак ӗçе чăваш халăхӗ чи малтан копперативлă ушкăнсем урлă çеç тума пултарать. Çавăнпа епӗр йулашкинчен калатпăр: копператси—пите пысăк ӗç, вăл халăх ӗçӗ, вăл ӗçлекенсемпе хресченсен ӗçӗ.

* * *

Çапла ӗнтӗ епӗр халăх пурлăхне тӗрлӗ йенчен тишкерсе пăхса тухрăмăр. Епӗр куртăмăр: чăваш халăхӗн пурлăхӗ тайăннă, çак пурлăхпа халăх тирпейлӗ, телейлӗ пурăнма пултараймасть. Унтан епӗр сисрӗмӗр: пирӗн пурлăх йӗрки, хуçалăх йӗрки авалран йышăннă çулпа пырать, çав çул пирӗн саманара пӗтӗмпех йăнăш çул. Тата епӗр тӗплесе пӗлтӗмӗр: чăваш халăхӗн пурлăхӗ икӗ никӗслӗ пукан çинче ларать: пӗр пуканӗ—йалхуçалăх, тепӗр пуканӗ—интустри. Çак икӗ пукана тӗреклӗлентермесен пирӗн пурлăр ишӗлетех. Çав пукансене тӗреклӗлентерме епӗр техниккă урлă, культтурă урлă çеç пултаратпăр, çапла тума епӗр ăслăлăх кăтартăвӗсене вырăна хурсан çеç пултаратпăр. Çавăнпа пирӗн тӗп сулăну, туртăну интустри йенне, техниккă йенне, хапрăксен, савăтсен, хуласен йенне пулмалла. Пирӗн умра урăх çул çук, вăл тӗнче çулӗ, ытти çулсем пурте авалхи чуралăх йенне туртса тăраççӗ. Емӗртен йулнă йăлапа ирӗклӗ çӗрсене, хӗвелтухăçӗнчи çеçенхирсене тарса ӳксе унта авалхи пурăнăç йӗркипе пурăнас ӗмӗте епӗр манмалла, алла тимӗр млатук тытса епӗр хӗвеланăçнелле сулăнмалла, Мускавпа Чулхула ӗçлекенӗнчен сунталпа кӗрмешше вӗренсе хăнăхса таврăнса хамăр çӗрте маçтерскуйсем, хапрăксем, савăтсем тумалла. Нумай çӗр касăласса, тупăнасса шанса тăрас йăлана пăрахса, епӗр хамăр тăван

çĕршыв синҙех çĕнĕ йалхуçалăх йĕрки йышăнса тутă пулма тăрăшмалла. Пирĕн çĕршыв наҙар мар, ун çинҙе халăх пурăнма пултарать. Çак çĕршыв çинҙех халăх тирпейлĕ, пурлăхлă, телейлĕ пурăнма пултарать, çапла пуласси халăхран хăйĕнҙенех килет. Халăх пурлăхĕн пусĕнҙе ĕçлекенсемпе хресҙенсем тăраççĕ, халăх пурлăхĕн ҙăн хуçи ĕç халăхĕ, хура халăх. Çак тарпа, ĕçпе писнĕ халăха хăйĕн пурлăхне хăй йусас ĕçĕн терҙĕ хăратса тăрас çук—çавăнпа епĕр малалли пурăнăç сине шанҙăклă ĕмĕтпе пăхатпăр. Çак иккĕленмелле мар шанҙăкăн тĕп тымарĕ ĕç халахĕ пĕрлешўлĕ, солитарлă ĕçленинҙен килет, çавăнпа епĕр йулашки сăмахра ҙунтан сунатпăр: ĕçпе ăслăлăх çыхăнтăр, млатукпа çурла ыталаштăр, хулапа йал пĕрлештĕр, ĕçлекенпе ĕçлекен алтивĕççĕн тăрса ĕçлетĕр.

III. ХАЛĂХ, УНĂН КУЛЬТТУРĔ, ПУРĂНĂÇ САНĔ, ЙĂЛИСЕМ.

Малта епĕр çĕршыв çинчен, унăн пуйанлăхĕ çинчен, пурăнăçри пурлăх çинчен, хуçалăх йĕркисем çинчен тĕплесе пĕлме тăрăшрăмăр, анчах пирĕн çĕрте пурăнакан етем çинчен, халăх çинчен тĕрлĕ пĕлÿсем тишкерсе шырама чарăнса тăтăмăр. Çав вăхăтрах епĕр калатпăр: етем çĕр чăмăрĕ çинче пĕртен пĕр хуçа, пур çĕршыв, пур тĕнчери пуйанлăх, пур çутçанталăк етем телейшĕн, пур техникка, культтура, хуçалăх, тĕрлĕ происвотствăсем етеме пурăнăçра кирлĕшĕн, усăшăн тесе. Авалранпа çырура етеме тĕрĕсрен çĕршыв патши теççĕ. Апла пулсан—мĕншĕн епĕр чи малтан етем çинчен, пирĕн çĕрте пурăнакан халăх çинчен, унăн ÿттирлĕ кĕлетки, унăн чунлă культтурĕ, сăнпичĕ, пурăнăç йĕрки, йăлисем çинчен каламарăмăрши? Çакна епĕр етемпе халăх çинчен кайран калама йури пĕлетăра турăмăр. Ăна епĕр ак мĕншĕн çапла тăватпăр: авалхи вĕрентÿпе етем хăй пурăнăçне хăй прĕкĕпе, хăй кăмăлĕпе çеç тăваť, унăн пурăнăç йĕрки, йăлисем, культтурĕ хăйĕнчен çеç килет, етем историне етем çеç туса пыраť, етем хăйĕн вĕçĕмсĕр хăватлă прĕкĕпе пĕтĕм тĕнчене çаварма пултараť, уйрăм хăватлă çынсем пĕр пĕччен пĕтĕм халăх пурăнăçне урăхлăлатма пултараççĕ, уйрам çынсем хăйсен вăйĕпе халăх историне урăх çулпа пăрса йама пултараççĕ теччĕç. Анчах çак вĕрентÿ тĕрĕс мар: етемпе халăхăн ÿтпĕвĕ, ÿттирĕ, кĕлетки, сывлăхĕ, санĕ, чунĕ, йăлисем, йуррисем, вăйисем—пур чунлă культтурă та чи малтан çĕршывпа хуçалăх йĕркинчен, ытларах та пурлăхпа економиккă условисенчен килет. Çавăнпа чăваш хăлăхĕ мĕлле халăх иккене тĕплесе пĕлес тесен малтан чăваш çĕршывĕпе халăх пурлăхне, хуçалăх йĕркине тĕплесе пĕлме кирлĕ. Йепле чăваш халăхĕ, унăн культтурĕ, пурăнăçĕ, йăлисем, ĕненĕвĕсем, çĕршывпа унтан пурлăхпа хуçалăх йĕркипе çыхăнса тăни çинчен епĕр малалла калăпăр. Анчах чăваш халăхĕ çинчен тĕплĕ калама тытăниччен малтан чăваш çĕрĕнче пурăнакан ытти халăхсем çинчен кĕскен те пулин калама тивĕçлĕ. Унтан каллех çах халăхсем çинчен, чăвашсем çинчен те каличчен малтан чăваш çĕрĕнче историлĕ саманара йепле чи авалхи халăхсем пурăнни çинчен калама кирлĕ; çав авалхи чи малтан пирĕн çĕршыва пуснă халăхсем çинчен пĕлмесен, епĕр пирĕн саманара пурăнакан халăхсем çинчен чăнтан пĕлÿсем шыраса тупма пултараймастпăр.

Пирĕн çĕршывăн тĕп халăхĕсем.

Пирĕн çĕршывра историчченхи епохăра хăçан, йепле етем пурăнма тытăннине епĕр малта каларăмăр. Малалла пирĕн çĕршывра историлĕ епохăра чи малтан пурăнма тытăннă ха-

лăхсем çинђен калăпăр. Епĕр малта асăнсаттăмăр, историђђенхи етем çĕр çинђе йулашки тăваттăмĕш кеолоки периотĕнђе пурăнма тытăннă. Çав вăрăм. тăрăх пуçлă етем хаљхи Раççейпе Йевроппăра авалхи ђул, уйтан шăмă ĕмĕрĕсен тăршшĕпе пурăннă. Ку етем çинђен, çав халăх çинђен ăслăлăх тĕплĕ пĕлеймест, унăн шăмшаккине, унтан тĕрлĕ орутисене тупкаласа çеç ђухлаŤ, çавăнпа та çав халăха историђђенхи саманара пурăннă теççĕ. Çĕнĕ ђул ĕмĕрĕнђе Христос çуралиђђен*) нумай малтан Раççейе урăх пĕђĕк пуçлă йăх килсе пусаŤ, вăл тăрăх пуçлă йăха хăйпе хутăштарса пĕтерсе унăн авалхи кулђтурне йышăнаŤ. Çак пĕђĕк пуçлă йăх çинђен христианлă саманара истори çырăвĕсенђе çыраççĕ. Ђи малтан пирĕн çĕршывра пурăнакан авалхи халăхсем çинђен крек историçи Керотот Христос çуралиђђен 500 çул маларах çырса хăварнă, анђах çак историçĕ пирĕн çĕршыври халăхсем çинђен халапла аташша çеç çырса хăварнă: вăл пирĕн çĕрте кукша пуçлă, хăрах куçлă, кађака ураллă етемсем пурăнаççĕ тенĕ. Пирĕн авалхи халăхсем çинђен тĕплĕрех палăртса рим историçи Татсит çырса хăварнă, вăл Христос çуралсан 100 çул кайарах пурăннă. Вăл каланă тăрăх, çав вăхăтра Çĕпĕртен пуçласа Палтти тинĕсĕ патне çитиђђен хвин йăхĕ пурăннă (çав йата вăл керманисенђен йышăннă, вырăссем ăна ђўт тенĕ.) Вăл каланă: „хвинсем питĕ ухмах, калама çук ђухăн, вĕсен хĕçпăшал та, лашасем те çук, çимĕçĕ вĕсен курăк, тумтирĕ тир, çывармалли вырăнĕ çĕр, вĕсем хăйсен çĕмĕренĕсем уххисем çине анђах шанма пултараççĕ, анђах ухă йĕпписене те вĕсем тимĕре пĕлмен пирки ђулсемпе кăна хăйрама пултараççĕ". Çак йăх Христос çуралиђђен нумай малтан Уралпа Алттай тăвĕсен таврашĕнђе пурăннă. Авалхи тĕмесене ђаваласа тупнă йапаласене сăнаса, ђухласа ăслăлăх çак йăх шывсем тăрăх хĕвеланăçнелле куççа килнĕ, малтан Урал урлă каççа, Шура, Ђулман, Аслă Атăлсем тăрăх, унтан Веткă, Ђусовайа, Епхў шывĕсем тăрăх вырăнаçнă тет. Унăн орутисем ђулпа шăмăран тунă çĕçĕсем, пуртăсем, çĕмĕренсем, сăнăсем пулнă. Малтан çак йăхăн уйрăм пысăк ăрусемпе уйрăм халăхсем пулман. Нумай вăхăт иртсен, çак йăх пĕтĕм Раççейе салансан çеç пысăк ăрусем, унтан уйрăм халăхсем пулса кайаççĕ. IV-мĕш ĕмĕрте çырнă истори çырăвĕнђе хвин йăхĕн уйрăм халăхсем: мăкшăсем, çармăссем, мерсем пурăнни паллă. Шыв йађĕсенђен, çĕрсен йађĕсенђен, унтан кайрантарах çыраннă истори çырăвĕсенђен ђухлаеан та. Атăлпа Ђулман Атăл таврашĕнђе çак саманара хвин йăхĕсем: ками, укăр, веç, мерĕ, мăкшăпа ирçе пурăнни паллă. Ђи малтанхи вырăс летăпĕçĕнђе те çак халăхсене, унтан çармăссене асăнăнаççĕ. Тўрк йăхĕсем Атăл таврашне хĕвелтухăçран иккĕмĕш ĕмĕр тĕлĕнђе çеç килме тап-

*) Авалхи вăхăта та, хаљхи саманана та епĕр емĕртен пулнă йăлапа çеç христианлă ерăран пуçласа хисеплетпĕр, çапла хисеплени епĕр етем историйĕн пуçĕнђе христианствă тăраŤ тенине пĕлтермест.

ратаççĕ. Çапла ĕнтĕ историлĕ епохăра пирĕн çĕршывăн тĕп авалхи халăхсем пирĕн тăван урал-алттай çемйин хвин турађĕн йăхĕсем пулаççĕ. Çапла ĕнтĕ пăлхарсем-ђăвашшем Атăл çине килсе вырăнаçиђђен пирĕн çĕршыв тавринђе çапла халăхсем пурăннă: çармăссем (курукмарипе кошламари йăхсем), мортвасем (мăкшăсем, ирçесем, каратай йатлă йăхсем), укăр ăрăвĕнђен йулнă мошар йăхĕ, унтан ками йăхĕ. Çав авалхи халăхсенђен нумайĕшĕ халĕ те пур, анђах хăшĕ вĕсенђен пăђах пĕтнĕ: çапла каратай йатлă халăхран Тетĕш уйесĕнђе, унтан Ђĕмпĕр кĕпĕрнинђе мăкшăлла тумланакан, анђах тутарла калаçакан уйрăм каратай йалĕсем çеç йулнă, унтан пирĕн саманара Капкасра карађай йатлă халăх пур, тата ђăвашшен хушшинђе Карађура йатлă йалсем пур—вĕсене ăслăлăхçăсем ђăвашланнă каратайсенђен пулнă пулĕ теççĕ. Укăр тесе историђђенхи саманарах пирĕн çĕршыв урлă иртсе кайнă хвинсен пĕр пысăк ăруне каланă. Çав халăх малтан Раççейĕн çурçĕр йенђе пурăннă, христианлă ерăн пуçламăшĕнђе ытти хвин йăхĕсем хĕснипе вăл Атăл çине аннă, анђах кунтан та вăл мăкшăпа çармăс хĕснипе ђасах тата айалалла кайса Тонпа Тăнай шывĕсен таврашĕнђе тӳрк йăхĕсемпе хутшăнса пĕтнĕ. Халĕ пур вырăсла, ђăвашла та нумайăшĕ *ка*, *кă* йе *нкă* самах татăкĕсемпе пĕтекен шывсемпе йалсен йађĕсем: Волкă, Ока, Ветлукă, Кокшакă, Свийакă, Рункă, Карланкă ытти çавăн пек йатсем те укăр ђĕлхинђен йулнă. Çак историђђенхи хвин ăрăвĕнђен пирĕн çĕрте мошар йатлă йăх татăлса вырăнаçса йулнă. Çак йăх халĕ пĕтĕмпех çухалнă, вăл йăх çинђен вырăссем Хусана илнĕ çул (1552 ç.) вăл вырăссем майлă çапăçнă тенĕ хыпар авалхи кĕнекесенђе пур. Историçĕсем çак йăха вырăсланса, унтан тата ђăвашланса пĕтнĕ теççĕ, пирĕн çĕрте Мошар йе Мишер йатлă çырмасемпе йалсен таврашĕнђе çав ђăвашланнă мошарсен йăхĕсем пурăнаççĕ, Кĕтне тăрăх пурăнакан мишер йатлă ђăвашшем мошар йăхĕ иккенĕ тӳрех паллă теççĕ. Çак авалхи мошарсем хађхи мишерсенђен уйрăм: мишерсем те хвин йăхĕнђен пулнă, анђах вĕсем мешђерă халăхĕнђен пулнă, Атăл çине кайарахри саманасенђе килсе пуснă, халĕ вĕсем тутарпа хутшăнса тӳркланса кайнă. Ками йатлă халăх халĕ çук, çав халăхăн йăхĕсем вуйексемпе (арсем) пермексем пулаççĕ. Çак йăх та укăрсемпе пĕрлерех пирĕн таврана çурçĕр йенђен аннă, çак халăхран *ма* йе *ва* сăмах татăкĕсемпе пĕтекен шывсен йађĕсем йулнă. Çапла: Кострома, Клеçма, Москва, Кама, Ђишма, Нурма, Муçирма, Турма тата çавăн пек нумай йатсем ками ђĕлхинђен йулнă.

Çак халăхсем пирĕн çĕршыв çинђе сайра сапаланса çеç пурăннă. Çак саманара пирĕн çĕршыв пĕтĕмпе тенĕ пекех калама çук вăйлă тăтăш вăрманпа витĕнсе тăнă, вăл шывшуртан: йухăм шывсенђен, кӳлсенђен, лађакасенђен питĕ пуйан пулнă, хађхи хисепсĕр нумай типĕ çырмасенђе авал шыв йухнă. Çавăнпа ун ђухне пирĕн çĕршыв тĕрлĕ ђĕрђунсенђен: вăр-

ман, çеçенхир кайăкĕсенҫен, пулăран питĕ пуйан пулнă. Вăрмансенҫе хăрупă капансем, упасем, кашкăрсем, лоççем, алла вĕренмен лашасем хисепсĕр нумай пулнă. Çавăнпа çак епохăра етем аслăрах йухăм шывсем тăрăх çеç пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçса çÿренĕ. Тĕп авал хвинсем пурăнмалли хÿшесене те шывсем тăрăх çеç тунă. Историçĕ Татсит кăтартнă тăрăх, хвинсем хÿшĕсене йăвăç тураҫĕсенҫен тунă. Хĕлле сивĕре пурăнма хвинсем çĕре шăтăк алтнă. ăна çапăпа, унтан тăпрапа витсе вĕсем çав шăтăксенҫе хĕл каçнă. Етеме çак саманара тĕрлĕ хайар кайăксем питĕ пусмăрланă, аптăратнă, çавăнпа вăл хÿшĕсене çÿлĕ, ҫăнкă çырансен хĕрринҫе тунă; хÿшĕн картишĕ виçĕ йенҫен никам улăхмалла мар ҫăнкă çыранпа пÿлĕнсе тăнă, тăваттăмĕш тикĕс йепĕ етем хăй алтса тунă çыранпа унтан валпа пÿлĕнсе тăнă. Çавăн пек картишĕн сарлакăшĕ 10-20 хăлаç, тăршшĕ 15-40 хăлаç пулнă. Çак етемĕн орутисем шалçапа ҫул çеç пулнă, çавăнпа вăл алтса тунă çыранпа вала темиçе çул тăршшĕпе тунă, çавăнпа çав валсене халĕ ҫаваласан вĕсем тĕрлĕ сисенҫен пулни паллă, çав сисен хушшинҫе кĕл, кăмрăк, шăмăсем тупăнаççĕ. Çапла авалхи хвинсем пурăннă вырăнсене нумай тĕлте тупнă, пирĕн таврара та Кокшайск патĕнҫе тупнă. Çав вырăнсене ҫаваласа тупнă йапаласем тăрăх хвинсем йепле пурăннине ҫухлама пулаҭ. Вĕсем ҫăнкă çыранлă тĕмесем çинҫе пурăнни ҫи малтан вĕсем выҫăх усрама пĕлменнине пĕлтерет; вĕсем *кайаксемпе пуласем тытса тăранса пурăннине* пĕлтерет. Унтан вуҫахсенҫен йулнă кĕл тĕмисене ҫаваласан та паллă: хвинсем кайăкçăсем пулнă, çĕр ĕçлеме пĕлмен, çăкăр таврашне пĕлмен, йăвăç çимĕçпе, унтан ашпа тăранса пурăннă; çав кĕл тĕмисенҫе упа, лоç, капан, лаша, тĕрлĕ пулăсен, вĕçен кайăксен шăммисем тупăнаççĕ; аша хвинсем вут çинҫе ăшăласа çинĕ; унта вĕсем шапахуранĕсенҫи сĕлексене çини паллă. Хусан археолокĕсем пирĕн таврара пĕр тĕлте вуҫах йулашкийĕсен хушшинҫе çивҫĕ йапалапа касса татнă етем йанаххин шăммине те тупнă, çавăнпа вĕсем етеме те çиме пултарнă теме йураҭ. Кайăксене хвин сăнăпа, унтан çĕмĕрĕнпе тытнă, кайăксене тытма ăна йăтă пулăшнă. Унтан хвинсен пуртăсем, млатуксем пулнă, вĕсене Атăл тăрăхри псвĕслĕ ҫулран тунă, сайра пĕрре Урал ҫулĕсенҫен тунă орутисем те тупăнаççĕ, çав орутисем суха тунă ҫух уйсенҫе те тĕлпулкалаççĕ, вырăс хресҫенсем вĕсене аслати уххисем теççĕ. Хăш хвинсем пурăннă вырăнсенҫе пăхăр орутисем, пахăр шăратмалли савăтсапа та тупнă, тĕлĕ тĕлĕпе тата тимĕр çĕçĕсемпе хĕççем те тупнă, анҫах çакна питĕ сахал тупнă, çавăнпа хвинсем пăхăрпа та, тимĕрпе те паллашма çеç тытăннă теме йураҭ. Тăмран савăтсапа тума вĕсем ăста пулнă—вăл халиҫҫен сыхланакан тĕрлĕ ҫÿлмек катăкĕсенҫен паллă. Авалхи хвинсем пултăра халăх пулман: арçын вăтамран 2 аршăн та 3 вершук, хĕрарăм 2 аршăн çÿлĕш пулнă. Хвинсем етем вилсен те çĕр çинҫи пекех леш

тӗнӡере пурӑнаҭ тенӗ: ҫав вилнӗ ҫынпа пӗрле вӗсем шӑтӑка ун йапалисене хунӑ. Вӗсем ӑрулӑ йӗркепе пурӑннӑ, ҫавӑнпа масарӗсем те вӗсен капшни ӑрӑвӑн уйрӑм пулнӑ. Ҫапла хвинсем тӗп авал пурӑннӑ. Анӡах ӡӑвашшем, ытти тӳрк йӑхӗсем те Атӑл таврине килсе вырнаҫма тапратнӑ саманасенӡе хвинсен пурӑнӑҫ йӗрки нумай улшӑннӑ. Ҫак саманара ками халӑхӗ кайаксем тытса тӑранса пурӑннинӡен пуҫне ҫӗр ӗҫлеме те вӗренме тытӑннӑ: вӑл вӗҫне йӗс йе тимӗр хывнӑ йӑвӑҫ тураӡӗпе ҫӗр ӡавалана, тырӑ акнӑ, пӗрӡе килӗре тӳсе ҫӑнӑх тунӑ, вӑл кил таврашӗнӡе пурӑнма йӑтта, сысӊана, сурӑха, ӗнене вӗрентнӗ, вӑл тиртен йе тӗртсе тунӑ йапаларан ҫӗлесе тумтир тунӑ, пурӑнма унӑн ҫӗр айӗнӡе алтса йе йӑвӑҫран пураса тунӑ ӑпӑ пӳртсем пулнӑ, вӑл хисеппе виҫе йӗркине пӗлнӗ, сутилӳ тума пӗлнӗ. Ҫак куљттурӑ йӗркине хвинсем пуринӡен ытла сутилӳ сӑлтавӗпе ҫӳрекен иран халӑхӗсенӡен йышӑннӑ. анӡах вӗсем лашаран усӑ курассине пӑлхарсемпе паллашмасӑр пӗлеймен, ҫавӑнпа вӗсен ҫӗрӗҫлӳ йӗрки, ытти хуҫалӑх йӗрки те малалла каймасӑр ӡарӑнса тӑнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ тӳрк йӑхӗсем Атӑл ҫине пусаӡӡен пирӗн ҫӗршывӑн тӗп халӑхӗсем хвинсем ҫителӗклӗ ҫӳлӗ куљттурӑ пусми ҫинӡе тӑнӑ: вӗсем пӗр вырӑнта пурӑнма, ҫӗр ӗҫлесе пурӑнма ханӑхма тытӑннӑ. Тӳрк йӑхӗсем ҫак саманара пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫҫа ҫӳресе кӗтӳусравлӑ хуҫалӑх йӗркипе пурӑннӑ. Ҫапла тӳрксем вӑйпа та, куљттурӑпа та хвин халӑхӗсене пӑхӑнтарни ҫав ирӗклӗ ҫеҫенхирсенӡе кӗтӳсем кӗтсе ҫӳрекен тӳрксен куљттурӗ вӑрмансенӡе пытанса пурӑнакан хвин йахӗсен куљттурӗнӡен кайа тӑманнине, йе тен малта тӑнине те пӗлтерме кирлӗ. Ӡӑнахах та хвинсем пӗр вырӑнта вӑрмансенӡе пурӑнма тытӑнсан та лаша тыткалама та пӗлмен; тӳрксем ҫав вӑхӑтрах йуналӑк ҫинӡен анмасӑр пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куҫҫа ҫӳренӗ, тырӑсем те аккаланӑ, вӗсен калама ҫук вӑйлӑ кӗтӳсем пулнӑ, вӗсем патшалӑх йӗрки, хӑватлӑ утлӑ ҫар пулнӑ, вӗсем тӗнӡене касса ҫӳресе тӗрлӗ халӑхсемпе паллашнӑ, тӗрлӗ куљттурӑсене курнӑ, ҫавӑнпа вӗсем хвинсенӡен куљттурӑн ҫӳлӗрех пусми ҫинӡе тӑнӑ пулмалла, ҫавӑнпа та вӗсене пӑхӑнтарнӑ пулмалла. Ҫав тӳрк йӑхӗсемпе пирӗн ҫӗршыва ӡӑвашшем те килсе вырнаҫнӑ, ҫавӑнпа пирӗн ҫӗршыври етемӗн пурӑнӑҫне малалла та калас пулсан ӡӑваш историйӗ ҫинӡен сӑмах пуҫлас пулаҭ. Анӡах ӡӑвашшем ҫинӡен уйрӑм тӗплӗрех калиӡӡен кӗскен пирӗн оплӑҫра халӗ пурӑнакан ытти халӑхсем ҫинӡен каласа кӑтартма кирлӗ.

Пирӗн ҫӗрте халӗ пурӑнакан йут халӑхсем.

Ӡӑваш оплӑҫӗнӡе 800 пин ытларах етем пурӑнаҭ. Ҫав пур халӗ пурӑнакан етемсем ҫапла уйрӑм халӑхсене уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ: ӡӑвашшем, вырӑссем, тутарсемпе мишерсем, ҫармӑссем, мӑкшӑсемпе ирҫесем. Оплӑҫра ӡи нумай ӡӑваш пурӑнаҭ, ӡӑваш пур халӑхӑн 86 проӡӡӑнӗнӡен ытла, ҫапла оплӑҫра пурӑнакан

кашни çиҫӗ сынран ултташӗ ҫӑваш пулаҭ. Çапла тӗп халӑх йышлӑн пурӑннипе Ҫӑваш оплӑçӗ пур натсилӗ ахтономлӑ респупликкӑсемпе оплӑççен хушшинҫе уйрӑм паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҭ: нумай респупликкӑсемпе оплӑççенҫе тӗп халӑх пур вӗсенҫе пурӑнакан етемсенҫен çурринҫен те иртмест. Çавӑнпа пирӗн çӗре ҫӑваш çӗрӗ тени тӗп тӗрӗс пулса тӑраҭ. Çавӑнпа та кирек кам та оплӑçри халӑха: унӑн пурӑнӑçпе кулҭттурӗне, йӑлисене пӗлес тесен ҫи малтан, ҫи тӗплӗ ҫӑваш халӑхӗ çинҫен тишкерсе тӗрлӗ пӗлӳсем шырамалла. Анҫах ытти пирӗнпе пӗрле сахаллӑн та пулин пурӑнакан халӑхсем çинҫен те пӗлмесӗр тӑма йурамасҭ: пӗр йенҫен нихӑш халӑха та ытти халӑсемпе танлаштармасан пӗлме те майӗ çук. тепӗр йенҫен тӗнҫери халӑхсем пӗр пӗринпе паллашша, пӗр пӗринҫен вӗренсе, историре пӗрле çыхӑнса, çыпӑçça тӑнипе çеç прокресс çулӗпе малалла кайма пултараççӗ. Анҫах çапах та пирӗн çӗрте пурӑнакан йут халӑхсем çинҫен епӗр питӗ кӗскен калӑпӑр: тӗплӗрех калама кукӗнекере вырӑн та çук, унтан тата ҫӑвашшем çинҫен каланӑ ҫух епӗр ирӗклӗ ирӗксӗр йаланах вӗсене асӑнмасӑр хӑварма пултараймаспӑр.

Вырӑссем оплӑçра 10%-ран ытла мар. Вӗсенҫен пӗр ҫӗрӗкӗ хуласенҫе пурӑнаҭ, виçҫӗрӗкӗ йалсенҫе пурӑнаҭ. Вырӑссем аслӑрах шывсем: Атӑл, Сӑра, Çавал тӑрах пурӑнаççӗ, унтан йулашки çулсенҫе ҫукунçул çинҫи стантсисене тулса вырӑнаçаççӗ. Вырӑссем пирӗн çӗре ҫӑнтан пурӑнма, куçма вӗсем Хусана тутарсенҫен илсен çеç тытӑннӑ: вырӑссем пирӗн çӗрте маларахри саманасенҫе те пулнӑ: вӗсем пӑлхарсен, кайарахпа тутарсен хулисенҫе сутилӳ туса пайтахӑн пурӑннӑ, çавӑнпа авалхи арап кӗнекеçисем пӑлхар халӑхӗ тӳрксем славенсемпе хутшӑнса пулнӑ халӑх тенӗ. Анҫах Хусана илиҫҫен вырӑссем пирӗн çӗрте пӗр вӑхӑтлӑха килнӗ хӑнасен вырӑнне çеç хӗсепленнӗ. Хусана илсен вырӑссем Атӑлӑн вӑтам таврине питӗ хӗрӳлӗ колонисатсилеме тапратнӑ, ытларах та Мускав патшисем Атӑл çинҫи вӑрçӑпа пӑхӑнтарнӑ йут халӑхсене пусмӑрта тӗреклӗрех тытса тӑрас тесе пирӗн таврана вырӑссене вырӑнаçтарма тапратнӑ. Çапла вӗсем ҫи малтан пирӗн çӗрти хуласене: Шупашкара, Йетӗрнене, Çӗрпӗве çар тӑракан крепӑça çавӑрнӑ, унтан çав крепӑççенҫе йалан пурӑнма тӗрлӗ вырӑс çар çыннисене, хусахсене, ремеслаçӑсене куçарнӑ. Унтан çав крепӑççем тӗреклӗрех пулҫҫӑр тесе, вӗсен тӑврашӗнҫен ҫӑвашшене хӑваласа унта вӑтам кӗпӗрнесенҫен вырӑс йалӗсене куçарнӑ. Çапла пирӗн çӗршыва вырӑççене Мускав патшисем тӗрлӗ вӑрçӑпа пӑлхав тухас пулсан ҫӑвашшене пусарма çӑмӑлтарах пултӑр тесе, кӗскен каласан стратеки йенҫен тӗплӗ шухӑшласа куçарнӑ. Вырӑелатнӑ хуласемпе вӗсен йӗритавра ларакан вырӑс йалӗсем колонисатси ӗçӗн тӗреклӗ, шанҫӑклӑ пункҫӗсем пулнӑ. Çак шухӑшпах тӗрлӗ тӗлте мӑнастырсем уçнӑ, вӗсене ҫи малтан çӳлӗ стенапа çавӑрса, вӗсенҫе тупӑ йӑвисем туса вӗсене крепӑç йевӗрлех тунӑ, çав мӑнастыр-

сене, вĕсен пуçлăхĕсен кăмăлĕ тулиҫҫен ирĕклĕ çĕр пана, çав çĕр çине вĕсем улпутсенҫен хысна куланайсене тӳсеймесĕр тарса çӳрекен вырăс хресҫенĕсене илме пултарнă. Унтан хысна ҫăваш улпуҫĕсен, турханĕсен, мăрсисен çĕрĕсене туртса илсе вĕсене вырăс улпуҫĕсене парнелесе пана, çав çĕрсем çине вырăс улпуҫĕсем хăйсен Мускав таврашĕнҫи именисенҫен ҫуралăхра пурăнакан хресҫенсене куçарнă. Нумай тĕлте колонисаттăрсем ҫăваш йалĕсене авалран пурăннă çĕр çинҫен ирĕксĕр ăçта куç курат çавăнта хăваласа йанă та, унта вырăс йалĕсене куçарнă, çапла ытларах та аслăрах шывсем тăрăх выртакан йалсене хăваланă; çавăнпа та халĕ Атăлпа Сăрă тăрăх пĕр ҫăваш йалĕ йулман теме те йурат. Анҫах çак ĕçе туна ҫух вырăс хура халăхĕ айăплă пулман, вăл хăй те ҫуралăхра пăнҫăхса пурăннă, ăна куçарма та ирĕксĕр куçарнă, çапла пирĕн çĕре улпутсен, патшан хăйĕн ҫурисене, çар çыннисене, тракунсене, рейтăрсене, перӳçĕсене (стрелцисем), тыткăна илнĕ палексене, тĕрĕксене т. ытти çавăн пек çынсене ирĕксĕр хăваласа килсе ҫăвашшен çĕрĕ çине вырăнаçтарнă.

Çапла пирĕн çĕре вырăссем XVI-мĕш ĕмĕрпе XVIII-мĕш ĕмĕр хушшинҫе килсе вырăнаçнă. Вырăс славен йăхĕ, интăйеврол çемйин халăхе, çавăнпа çак халăх хăйĕн характĕрĕпе, култтурĕпе, йăлисемпе ҫăвашшенҫен нумай уйрăм. Пирĕн çĕрти вырăссем Раççейĕн сивĕ йенҫен Новкăрăт таврашĕнҫен ытларах куçса килнĕ, çавăнпа вĕсем утпӳпе шултăра, сатур. Вырăс хресҫенĕсем хуçалăх йĕркипе ҫăвашшенҫен нумайах уйрăм тăмаççĕ: вĕсен те виçпуслă уйсем, çĕрçлӳ йĕрки авалхипе пырат, анҫах вĕсен вылăх шултăрарах, çĕре те вĕсем машшина таврашĕпе ҫăвашшенҫен ытларах ĕçлеççĕ. Çаксем вырăссем авантарах çĕрпывсем йышăнса, çавăнпа пурлăхлăрах пурăннинҫен килет. Асталăх, çыру вĕренӳ, култтурлă пурăнăç йĕрки тĕлĕшĕнҫен те вырăс хресҫенĕсем ҫăвашшенҫен кăшт çеç маларах тăраççĕ, çакă та вырăссем хуласемпе аслă шывсем таврашĕнҫе пурăннинҫен çеç килет. Вырăс йалĕ ҫăваш йалĕнҫен сахал уйрăм: вăл пĕрпекех тĕттĕмлĕхпе çуклăхра пăнҫăхса тăрат. Авал патшалăх та, çемствăсем те йалан вырăссене уйрăм пулăшарах пана, çапах та вĕсем ҫăвашшенҫен нумай та иртсе кайайман. Çакă ҫăвашшем те малашне култтурлă халăхсен çемйинҫе кĕме пултарнине пĕлтерет. Хулари вырăссем, йе мишҫенсем, йе вырăнта тăракансем—вĕсем хушшинҫе авал та, халĕ те вырăсланнă ҫăвашшем нумай. Çак йалсенҫен нумай уйрăм мар пĕҫĕк хуласен халăхĕ хăй те култтурăпа вăйлах мар, çавăнпа та, тата ытларах та ĕмĕртен йут ҫăваш хура халăхĕпе сивĕнсе пурăннипе вăл ҫăваш халăхне сутă прокреслă çул çине тухма сахал пулăшат.

Çармăссем. Ытти пур халăхсем те пирĕн урал-алттай çемйин йăхĕсем. Çав халăхсенҫен ҫи авал пирĕн çĕрте пурăнакан халăх çармăссем пулаççĕ. Çармăссем авал Сустăл çĕрĕн-

ђе пурăннă мерĕ йатлă хвин ăрăвĕн йăхĕ. Çармăссем пире кÿрщĕллĕ халăхсенђен мăкшасемпе çывăхрах таван. Çармăссем оплăçра çур прођђăн çеç, вĕсем те ђăвашшем пуранман Аталăн сулахай йенђи вăрмансен хушшинђе пурăнаççĕ. XIV-мĕш ĕмĕртен пирĕн оплăçра Аталпа Сăра хушшинђи тĕме çинђе çармăссем пурăннă, вĕсем ĕлекхи Тетĕшпе Пава уйесĕнђи ђăваш çĕрĕсенђе те пурăнна. XIII-мĕш ĕмĕрте Пăлхари патшалăхне тутарсем çавăрса илсен, ђăвашшем тутарсем хĕснипе Аталпа Ђулман Атăл тавращĕнђи çĕрсене пăрахса çурçĕрпе хĕвеланăçнелле сулăннă. XIV-мĕш ĕмĕрпе XV-мĕш ĕмĕр таршĕпе çармăссем ђăвашшем пусмăрланнипе авалран пурăнакан çĕрĕсене пăрахса Аталăн сулахай йенпе каççа Ветлукă, Кокшакă, Иђет шывĕсем тăрăх ÿсекен сĕмвăрмансене йышăннă. Пур вырăнтан хăпмасăр ђăвашшем хушшинђе йулнă çармăссем ђасах ђăвашланса кайнă. Çапла авал пирĕн çĕрте çармăссем пурăнни йал йађĕсенђен паллă: тÿрех çармăс тесе ђĕнекен йалсенђен пуçне пирĕн йал йађĕсем çармăс ђĕлхинђен тухни хисепсĕр нумай, çапла Шуанкер, Атлаш, Куснар, Кукинар, Кушмар, Кушар, Пинер, Кукар, Урмар, Çĕнйал, Итмар, Йĕранар, Куканар, Тайапа тата та нумай çавăн пек йалсем авал çармăс йалĕсем пулнă теççĕ. Нумайĕшĕ ĕлĕкхи Ђикмепе Йетĕрне уйесĕсенђи ђăвашшем вирйалсем çав ђăвашпа çармăс хутшăнса пулнă йăх йе тÿрех хăшĕ вĕсене ђăвашланнă çармăссем теççĕ. Çапла авал ђăваш çармăса пусмăрлани, ăна хĕсни халăх сăмахĕнђен те паллă: ђăвашшен авалран çармăса хăйĕн çĕршывĕнђен тарнăшăн мăшкăласа калана сăмах йулнă: «çармăса Атăл урлă каççан çеç тăн кĕнĕ тет», çармăсем хăйсем те халĕ Веткă таврăшĕнђе пурăнаканнисем те авалхи йăлапа кĕлтунă ђух Атăл хăйăрне асăнса кĕлтăваççĕ.

Тÿрех паллă: çапла çармăссем ђăвашшен пусмăрĕнђе пулни, вĕсене пăхăнса, вĕсенђен тарни йе ђăваша тухса пĕтни вĕсем хуçалăх йĕркипе, куђттура тĕлĕшĕнђен ђăвашшенђен кайра тăнине пĕлтерет. Ђăнахах та историçĕсем ђухланипе, çармăссем пирĕн çĕр çине килсе вырăнаççан авал вăрмансенђе кайăксем тытса çеç пурăннă. Ирĕклĕ çеçенхирсене йышăнса унта нумай выђăх усраса, çĕр ĕçлесе пурăнма çармăссем йутшăнса тăнă. Ђÿтсен ками йăхĕсем пек вĕсем хăйсем тĕллĕн те ытти халăхсенђен те йышăнса пăлхарсемпе, ђăвашшемпе паллашнђђен выђăхусравпа çĕрĕçлÿ йĕркине ђăнтан пĕлмен. Тÿрк йăхĕсемпе пăлхарсем Атăл çине питĕ хăватлăн выђăх кĕтĕвĕсемпе килсе кĕнĕ, ками йăхĕсен çĕрĕсене йышăнса, çак халăхсене хăйсемпе хутăштарса пĕтерсе, вĕсен хуçалăхпа куђттурă йĕркисене ђасах йышăнса, патшалăх туса хăвăртах куђттурă тĕлĕшĕнђен Атăл çинђи хвинсенђен мала иртсе кайнă. Малта епĕр ђăвашшем нумай лĕр вырăнта пурăнма кирлĕ йапалана хвинсенђен, ытларах çармăссенђен йышăннă пулĕ терĕмĕр (пÿрт, карта—çармăс сăмахĕсем), çапла ђăвашшем Атăл çине килсе ÿкнĕ саманан пуçламăшĕнђе пулнă

пулмалла, анҫах малалла ҫармăссем пĕтĕмпех ҫăвашшен култтурлă пусмăрĕнҫе тăни паллă. Авал ҫармăссем каштасенҫен тунă авăн пек ҫаврака хўшĕсенҫе пуранна, пыра киле вĕсем ҫăвашшен авалхи хура пўртне тума вĕреннĕ, тўрк йăхасенҫенех вĕсем ытти кил таврашĕнҫе кирлĕ йапаласене: нўхреп, мунҫа, вите, сарай, ҫатан, пахҫа, таврашне тума вĕреннĕ, лашасем, майракаллă выҫăх, сурăх усрама та вĕсем пăлхарсенҫен вĕреннĕ, вĕсенҫенех турăхпа ҫăкăт тума, акалама, ҫулма, пахҫа ҫимĕҫĕсем: сухан, кăшман лартма, улмуҫҫи ĕрҫетме вĕреннĕ. Пур килсурт ăпне тирпейлес йапалана, ҫимĕҫ хатĕрлес йĕркене, урапапа спруй таврашне, тумтирсене, савăтсапана тума ҫармăссем ҫăвашшенҫен вĕреннĕ. Патшалăх йĕркине пĕлтерекен «тўре» пек ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсене те ҫармăссем ҫăвашшенҫен йышăнна. Н И. Ашмарин. ытти паллă ăслăлăхҫăсем те каланипе ҫармăс ҫĕлхи ҫурри ытла ҫăваш сăмахĕсенҫен пулнă. Ҫакă ҫармăс халăхĕ нумай ĕмĕрсем тăршшĕпе ҫăваш култтурă айĕнҫе пусăрăнса пураннине пĕлтерет.

Тутарпа вырăс колонисатсисен саманинҫен пуҫласа ҫăвашпа ҫармасăн историлĕ пуранаҫĕ пĕр ҫулпа пынă: вĕсен иккĕшин те паттăр йут халăхсен пусмăрĕнҫе тапаланса пуранмалла пулна. Анҫах тутарсемпе вырассенҫен айаккарах та, ҫар ҫўреме кансĕр сĕмвармансенҫе пураннипе те вĕсем ҫав пусмăра ҫасах паранман, унпа хайартарах кĕрешнĕ. Вырăссемпе тутарсем кĕрешне саманара ҫармассем малтан йаланах тутарсем майла пулса ҫапăҫна, вырассем Хусана илсен те XVI-мĕш ĕмĕрте темиҫе хут палхав тапратнă, ҫапла 1455-мĕш ҫулта ҫармăссем тутарсем майла пулса вырăс ҫарне хирĕҫ 30 пин ҫынла утла ҫарпа ҫапăҫнă, 1524-мĕш ҫулта вĕсем Ҫалăм хулатавĕ патĕнҫе вырăс ҫарне пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтернĕ, 1552-мĕш ҫулта вырассем Хусана илнĕ вăхăтра вырăс ҫарне ҫармассен утла ҫарĕ питĕ кансĕрлене, унтан 1553, 1572, 1582, 1592-мĕш ҫулсенҫе ҫармăссем палхав тапратса Мускав патшисен влаҫне паханмасар тăна. Ҫак палхавсене кура, правиттĕлства ҫармăссене хуласен таврашне те нумайан ҫывăха пыма паман, вĕсем хулара ҫер касма пултарайман, вырăс хресҫенĕсем ҫармассемпе паллашша нерле еҫкĕҫикĕ тума та пултарайман: сутилўҫĕсем ҫармăссене тавар сутма та, илме те хуласенҫе уйрăм сутилў тума хунă ҫуртсенҫе ҫеҫ пултарнă, ҫармăссем патне ерехпе тапак таврашне леҫҫе сутма паҫах йураман. Ҫапла ҫармăссен пуранăҫĕ ҫăвашшеннĕпекех йăвар пулнă. Ҫапла малашне те ҫармăссен пуранăҫĕ те, историйĕ те ҫăвашшенҫен пĕрте уйрăм пулман, савăнпа вĕсен историйĕ ҫинҫен уйрăм каламасан та йурать.

Халĕ Раҫҫейре ҫармăс 500 пине йахăн, ҫапла ҫармăссем ҫăвашшенҫен виҫĕ хут сахалтарах. Ҫĕр ĕҫлес тĕлĕшĕнҫен ҫармăссем наҫартарах та ҫĕрсенҫе пуранаҫҫĕ, унтан ҫĕре ĕҫлеме те вĕсем ҫăвашшем пек йуратса тирпейлĕ ĕҫлемеҫҫĕ.

Урăх тĕрлĕ йенҫен тупăшлас тĕлĕшĕнҫен те ҫармăссем ҫăвашшенҫен йулса пыраҫҫĕ. Вĕренес, ҫутта тухас йенҫен, кулҫтура тĕлĕшĕнҫен те ҫармăссем ҫăвашшенҫен кайра тăраҫҫĕ. Ҫармăссем хăйсене мари теҫҫĕ, ҫăвашла ҫармăс, вырăсла ҫеремис тени, хăш ăслăлахҫăсен шухăшĕпе теп ҫăваш сăмахĕ пулса тăрать, вăл вăрҫакан, ҫапаҫакан тăшмана пĕлтерет теҫҫĕ. Ҫармăс йăхĕ икĕ турата уйрăлса тăрать: Атăлăн сылтăм йенҫе пурăнакан туратне курукмари, сулахай йенҫе пурăнаканнине коплламари теҫҫĕ, ҫак туратсем пĕр пĕринҫен нумайах уйрăм мар. Ҫармăссем Ҫăваш опласĕнҫе Шупашкар уйесенҫе пурăнаҫҫĕ.

Мăкшăсемпе ирҫесем оплăҫра ҫур проҫҫăнран та кайарах, ҫармăссенҫен те сахалтарах, вĕсем Патарпа Ҫĕрпӳ уйесенҫе пурăнаҫҫĕ. Мăкшăпа ирҫе пĕр мортва йатлă хвин халăхĕн турачĕсем, анҫах вĕсем пĕр халăх вырăнне хисепленсен те ҫĕлхепе пĕр пĕринҫен питĕ уйрăм, пĕр перне ăнлама та пултараймаҫҫĕ. Ҫак халăх питĕ авалхи халăх, уп ҫинҫен историсĕсем VI-мĕш ĕмĕртен пуҫласа ҫырма тытăннă. Мăкшăпа ирҫе ӳтпӳне питĕ шултăра та, матур та халăх, вырăссенҫен ҫак тĕлĕшпе вĕсем пĕрте кайа мар. Анҫах кулҫтура йенĕпе мăкшăпа ирҫе халĕ ҫăвашшенҫен те наҫар пурăнаҫҫĕ: вĕсем ҫурри вырăсланпа, ҫаванпа тăван ҫĕлхепе ҫырулах тума, тăван ҫĕлхепе верентмелли шкул тума, натсилĕ кулҫтура тума пĕррех те тарăшмаҫҫĕ, ҫав вахатрах вĕсем вырăс халăхĕ ҫумне те пĕтĕмпех ҫыпаҫайман, вырăсла та ҫантанах пĕлсе пĕтерейменҫĕ. Мăкшăпа ирҫе Раҫҫейре ҫăвашшенҫен те йышларах, анҫах вĕсем питĕ сапаланса пурăннипе хăйсене ахтономлă оплаҫ тума та пултараймаҫҫĕ. Ҫак питĕ сапаланса пурăннипех вĕсем натсилĕ кулҫтура тавас еҫ те панҫахса тăрать. Пурлах тĕлĕшĕнҫен те мăкшăсем наҫартарах пурăнаҫҫĕ: ҫĕре питех йуратса тирпейлле еҫлемеҫҫĕ, тĕрлĕ астасем те вĕсен хушшинҫе ҫăвашшен пекех сахал. Авалран ҫăвашшем хушшинҫе пурăннă мăкшăсемпе ирҫесем хăшĕ ҫăваша тухса кайнă, ҫавă халиҫҫенех ирҫе йаҫĕпе ҫенекен пайтах йалсенҫен палла.

Тутарсем, мишерсем, крешĕнсем оплăҫра виҫ проҫҫăн ытларах. Тутар вырăсран пуҫпе Атăл ҫинҫе ҫи йышла, ҫи хаватлă халăх. Пирен ҫершыва тутар XIII-мĕш ĕмерте килсе пусă, тутарсен историйĕ ҫинҫен ҫăваш историне калăпă ҫух калăпăр. Тутар тӳрк йăхĕ, ҫелхепе ҫăвашшене питĕ ҫывăх халăх. Анҫах йунпа тутарсем питĕ хвин йăхĕсемпе хутшăнса пĕтнĕ: вăл нумай ĕмĕрсем таршшĕпе халиҫҫенех ҫармăссем, мăкшăсем, вутексем, мишерсем ыттисем те тутарланса пынинҫен килнĕ. Ҫăвашшем те авалран пирен ĕмер таршшĕне ҫитиҫҫенех йалĕ йалĕпе, вуласĕ вуласĕпе тутара тухса петнĕ: ҫапла XVI-мĕш ĕмĕрте Севе шывĕнҫен хевеланаҫпелле тутар паҫах пулман, халĕ Шупашкар, Ҫĕрпӳ, Севе, Тетĕш, уйесĕсенҫе пурăнакан тутарсем нумайĕпĕ ҫăвашран пулнă, авал Арск, Лаиш уйесĕсенҫе ҫăваш нумай пурăннă, анҫах ҫав ҫăвашшем

пурте тутарланса кайнă; 1826-мĕш çулта Хусан кĕпĕрнинҫе 136 пин тутар хисепленнĕ, 370 пин ҫăваш хисепленнĕ, çапла çĕр çул кайарах ҫăваш тутартан икĕ хут ытла пулнă, анҫах пирĕн саманара Хусан кĕпĕрнинҫе тутар ҫăвашран пайтах ытлаҫҫĕ: çак ҫăвашшĕм те, ытти халăхсем те питĕ нумайăн тутара тухнинҫен пулнă; епĕр малта 1826 мĕш çулта 136 пин тутар пулнă терĕмĕр, çав 136 пин çынран 1897-мĕш çулта 775 пин çын тутар пулса тăнă, çапла 70 çул хушшинҫе халăх 5-6 хут ытла ĕрҫесе йышлаланма пултарайман, вăл ытти халăхсем тутар ҫелхипе тутар йатне йышăннинҫен килнĕ. Çапла вак халăхсем тутара тухас йăла XIII-мĕш ĕмĕртен пуçласа пынă; авал тутар пусмăрĕнҫе пурăннă ҫух тутарсем вак халăхсене ирĕксĕр тутара çавăрнă, патшалăхра тутар хуçа халăх пулнипе вак халăхсенҫен нумайĕшĕ хăйсен ирĕкĕпе те тутарланнă, çапла ҫи малтан вак халăхсен улпуҫĕсем, сутилӳçисем, хула çыннисем тутарланнă. Çапла авалхи кӳҫттурлă сословисем тутарлансан, тутарсем вăйпа Пăлхарийе çавăрса илсе, унăн кӳҫттурĕне йышăнсан вак натсисен хура халăхĕ те ирĕксĕрех тутар кӳҫттурĕ йенне сулăнмалла, туртăнса тăмалла пулнă. Вак халăхсене тутара çавăрма ытларах та хванатисăмлă ислам тĕнĕ пулăшнă: ытти халăхсене ислама çавăрашшăн мулласем çеç мар, пĕтĕм тутар халăхĕ тăрăшнă. Унтан вак халăхсем тутарланасси ак мĕнтен килнĕ: вырăс пусмăрĕ тапрансан вак халăхсене тĕрлĕ тӳресем, ҫиновниксем, улпутсем питĕ ирсĕрленсе тĕрлĕ йенҫен аптăратнă; пĕр пĕринпе пĕрлешше пурăнакан хайар тутар халăхĕнҫен вĕсем шикленерех панă, çавăнпа çав йăвăр саманара вак халăхсем ирĕксĕр хӳтлĕх шыраса тутар çумне çыпçăннă. Тутарсем хăйсене тутар теме йуратмаççĕ, вĕсем хайсене мăсăљмансем тесе ҫĕнеççĕ, çармăссемпе мишерсем вĕсене суас (ҫăваш) тесĕ ҫĕнеççĕ, çакă вĕсем авал ҫăвашшене пăхăнса тăнине, кайарахпа патшалăхра хуçа халăх ҫăваш вырăнне тутар пулса тăнине пĕлтерет. Тутарсем хуçалăх йĕркипе те, пурăнăç сăнĕпе йăласемпе те Атăл çинҫе уйрăм вырăн йышăнса тăраççĕ: тутар халăхĕ çинҫе Аçп пиҫеҫĕ питех палăрса тăрат. Тутарсем вăрмана йуратмасăр çеçенхирсенҫе çеç пурăнсан та çĕрĕçлеме питех йуратмаççĕ, çĕре йулхавлăрах ĕçлеççĕ, ытти кӳршĕ халăхсене нумай çĕрне тара парса актарса тăраççĕ, тĕрлĕ ăсталăх йенне те тутарсем питех туртăнса тăмаççĕ, анҫах хуласенҫе, хапраксенҫе, савăтсенҫе хура ĕç ĕçлесе çӳреме вĕсем йуратаççĕ, унтан вĕсем сутилӳ ĕçĕпе питĕ кĕрмешше пурăнма йуратаççĕ: тутар хресҫенĕсем ҫăвашшенҫен, ытти вак халăхсенҫен те ҫухăнрах пурăнаççĕ, анҫах револютси уммĕн хуласенҫе пуйан тутарсем нумайҫҫĕ, пуршуаллă класс пурҫҫĕ, çавăнпа вĕсен натсилĕ кӳҫттурĕ те вак халăхсеннĕнҫен нумай вăйлăҫҫĕ. Тутарсен хушшинҫе çыру пĕлмен çын та сахал, çак йенҫен вĕсем вырăссенҫен те малта пыраççĕ, тутарсен авалранпа

кӗнекесем, хаçатсем, шурналсем нумай тухаҫҫӗç. Авал тутарсем ислам тӗнӗ пусмӑрласа тӑнипе тӗксӗмрех пурӑнаҫҫӗç, анҫах йулашки саманара вӗсем й е в р о п п ӑ к у љ т т у р ӗ йеппеле йерипен сулӑна пуçларӗç: хӗрарӑмсене авалхи йӑлапа йулнӑ ҫуралӑхран кӑлараççӗ, театтӑрсем тӑваççӗ (ӗлӗк вӗсем хӗлӗх купӑс калама та пултарайман), йевроплӑ тумтир тӑхӑнма тытӑнаççӗ. Çапах та халӗ те тутар хура халӑхӗ, ытларах та йал халӑхӗ, авалхи аçиатлӑ, йӳрӗклӗ пурӑнӑç йӗркиперех пурӑнаї: тутарсен килçурт тирпейлӗ мар, пӳрҫӗсенҫе сӗтелсем, тенкелсем çук, вӗсем сысна ашне çимеççӗ, лаша ашне çиме йуратаççӗ, ӗне вырӑнне каҫака усрама тӑрӑшаççӗ. Килçуртра тутарсем ҫӑвашшенҫен те вырӑс хресҫенсенҫен те нумай тасарах пурӑнаççӗ, анҫах тутар хӗрарӗмӗн мӗнпур ӗçӗ пӳрт ӑшне тирпейлененҫе çеç тӑраї, урӑх ӗç вӑл пӗрте тумасї: тырӑ вырма сахал тухаї, утӑ çулма паҫах тухмасї, авӑрлас, тӗртес йенне вӑл йерӗшмест те. Атӑл тавринҫе ҫӑвашпа тутар пӗр пӗрне ҫи çывӑх тӑван халӑхсен вырӑнне хисеплеççӗ, ытларах та тутарсемпе туслӑ, килӗшӳлӗ анатри ҫӑвашшем пурӑнаççӗ: вӗсем нумай йӑлисене, сӑмахӗсене, тумтир таврашне те тутарсенҫен йышӑннӑ.

Тури ҫӑвашшем пур тутарсене те мишерсем тесе ҫӗнеççӗ. Çакӑ йӑнӑш: *мишерсем* тутарланнӑ хвин йӑхӗ, вӑл мерӗ йатлӑ авалхи хвин халӑхӗн мешҫера йатлӑ туратран пулнӑ. Мешҫерӑ йӑхӗ пӗр пайӗ вырӑсланса пӗтнӗ, тепӗр пайӗ тутара тухса кайнӑ, мишер йатлӑ пулнӑ. Мишерсем пирӗн оплӑçра сахал. Вӗсем ҫӗлхепе те, пурӑнӑç йӗркипе те тутарсенҫен кӑшт çеç уйрӑмрах. Мишерсем хӑйселе ҫӑн тутарсен вырӑнне хисеплеççӗ, Хусан тутарсене ҫӑвашшем тесе ҫӗнеççӗ. Тутарпа мишер пӗр пӗринҫен йутшӑнарах пурӑнаççӗ: вӗсем пӗр тӗппе, пӗр йӑлапа йунашар пурӑнсан та халиҫҫенех пӗр пӗринпе хӗр парса, хӗр илсе хурӑнташланма ҫаранса тӑраҫҫӗç.

Унтан пирӗн çӗрте *крешӗн* йатлӑ тутарсем пурӑнаççӗ, вӗсем икӗ тӗслӗ: авалхи крешӗнсем, çӗнӗ крешӗнсем. Авалхи крешӗнсене Христос тӗнне XVI-мӗш ӗмӗрте, çӗнӗ крешӗнсене XVIII-мӗш ӗмӗрте йышӑнтарттарнӑ. Крешӗнсем тутарла калаçаççӗ, анҫах пурӑнма вырӑссемпе ҫӑвашшен йевӗрлӗрех пурӑнаççӗ. Крешӗнсем авалхи пӑлхарсен, çармӑссен, вутексен, ҫӑвашшен йӑхӗ пулма кирлӗ. Крешӗнсем пӗр йенҫен тутар куљттурӗ, тепӗр йенҫен вырӑс куљттурӗ йенне туртӑнса тӑрса пӑлханарах пурӑннипе ытти халӑхсенҫен наҫартарах пурӑнаççӗ. Çапах та вӗсем те халӗ хӑйсем ҫӗлхипе шкулсенҫе вӗренме, кӗнекесем кӑларма, литтературӑ тума тӑрӑшаççӗ.

Çапла ӗнтӗ епӗр кӗскен пирӗн çӗрте пурӑнакан йут халӑхсем çинҫен каласа кӑтартрӑмӑр, малалла ҫӑваш çӗрӗнҫе пурӑнакан хаљхи тӗп халӑх çинҫен, ҫӑваш халӑхӗ çинҫен уйрӑм тӗплӗрех калӑпӑр.

Пирĕн ăру.

Пур тĕнђери халăхсем те уйрăм тĕрлĕ ăрусенђеп пулнă: тĕнђере халăх питĕ йышлă пулсан та çав ăрусем нумайах та мар. Йепле халăх хăш ăруран, мĕлле халăхсем пĕр ăруран пулнине ăслăлăх ђĕлхе тăрăх, унтан ўтпў, унăн тĕсĕ, пысăкĕшĕ ытти йенђен те тишкерсе пăхса пĕлет. Хăш халăх хăш ăруран пулнине пĕлме питĕ кирлĕ: ăна пĕлмен халăхăн тĕп авалхи историне пĕлме майĕ çук, унтан унăн натсилĕ сăнпитне, унăн характтĕрне, унăн ђунлă пурăнăçăн уйрăм йенĕсене ытти пĕр ăруран пулнă тăван халăхсемпе, хăш ђухне йут ăруран пулнă йут халăхсемпе те танлаштарса пăхмасăр тĕплĕ пĕлме çук. Халĕ ăслăлăх тĕплесе пĕлнипе, пĕтĕм тĕнђере етемйышĕ пирĕн куç умĕнђе пĕр уйрăм ўсекен йăвăç пек виттĕр курăнса тăрат: пĕр хулăн йăвăç туни пĕтĕм етемйышĕ пулса тăрат, çав тунаран нумайах та мар хулăн туратсем—ăрусем ĕрђесе кайнă, çав хулăн туратсенђен йышлă вак туратсем—халăхсем ĕрђенĕ. Çак пĕлĕве пула пире хăш халăхпа мĕлле халăх тăван иккенĕ, вĕсем мĕнђухлĕ çывăх тăван иккенĕ, хăш халăхпа хăш халăх йут иккенĕ тўрех палăрса тăрат. Тĕнђери етемйыш хушшинђе çакăн пек аслă ђĕлхе çемйисем палăрса тăраççĕ: 1) интăйеврöп çемйи, 2) уралалттай çемйи, 3) çемит çемйи. Çак çемйесенђен пуçне Ахрикре, Австралире, Америккăра урăх çемйесем пур, унтан тĕнђере нихăш çемйене те çыпăçма килĕшўллĕ ђĕлхе нумай, çапла киттайсен, йаппунсен, нумай вак халăхсен ђĕлхисем пĕђђен, уйрăм тымартан пулнине кăтартса тăраççĕ. Ђĕлхе çемйисенђен ђи пысăкки, ђи хăватли—интăйеврöп çемйи, ăслăлăх сăмах тымарĕсене, ђĕлхе саккунĕсене сăнаса çак çемйе тĕп авал пĕр амађĕлхерен пулнине тĕплесе пĕлнĕ; çак çемйе тĕрлĕ туратсене уйрăлса тăрат: славен турађĕ (вырăс, паљек, çерп т. ыт. те), палтти турађĕ (латыш, литовтсă), кермаљ турађĕ (нимĕç, акăлђан, швет ыт. те,) иттали турађĕ (хрантсус, испан, румын ыт. те), крек турађĕ, алпан, ермен, иран (перс), инти (индус, ђикан) турађĕсем. Çак ђĕлхесем пурте пĕр тăван, пĕр амађĕлхерен пулнă. Уралалттай çемйи пилĕк турата уйрăлса тăрат: самойет, хвин, тўрк, монкол, тункус-маншур турађĕсем. Çак туратсем пĕр амађĕлхерен пулни тĕлĕшĕнђен хăш ăслăлăхçăсем иккĕленеççĕ, çапах та çак туратсем тымарпа питĕ çывăх тăни çинђен никам та иккĕленмест. Çемит çемйи çапла туратсене уйрăлат: 1) асири турађĕ—çак ђĕлхепе Христос çуралиђђен темиçе пин çул малтан Вавилонпа Ниневире калаçнă, халĕ çак ђĕлхе çухалнă, çак ђĕлхепе ђулсем çинђе çырнă çырулă паметниксем йулнă: 2) ханаан турађĕ—авалхи еврей ђĕлхи, çак ђĕлхепе Пиплийĕн хăш кĕнекисене çырнă, çак ђĕлхене еврейсем Христос çуралиђђен 300 çул малтан çухатнă, урăх ђĕлхе йышăннă, унтан çак туратрах авалхи хвиникийтсăсен ђĕлхи хисепленмелле; 3) арамей турађĕ йе çири турађĕ—çак ђĕлхепе йеврейсем. Палестинăра Христос саманинђе калаçнă. Пипли кĕ-

некисене ҫак ҭӗлхепе ҫырса хӑварнӑ, халӗ ҫак ҭӗлхепе нихӑш халӑх та калаҫмасҭ; ҫак туратра пирӗн саманара Раҫҫейре Каппасра пурӑнакан айсор йатлӑ пеҭӗкҫӗ халӑх ҭӗлхи хисепленет; 4) арап тураҭӗ, ҫак ҭӗлхе ислам тӗлпне пула Аҫипе Ахрикра нумай халӑсен хушшинҭе сарӑлнӑ. Ҫапла ӗнтӗ пӗртен пӗр туна пек тӗнҭери етемйыпӗ ҭӗлхесен тӗлӗшӗнҭен тӗрлӗ ҫемйесемпе тӗрлӗ туратсене уйрӑлса тӑраҭ. Ҭӑваш халахӗ хӑй ҭӗлхипе тӗнҭере мӗлле вырӑн йышанса тӑраҭши? Ҭӑваш ҭӗлхине ӑслӑлӑх ураталттай ҫемйинҭе хисеплет. Ҫак ҫемйе пилӗк турата уйралса танине малта епӗр кӑтартсаттӑмӑр. Апла пулсан ҭӑваш ҭӗлхи хӑш туратра хисепленетши? Ҭӑваш ҭӗлхи сӑмах тымаресемпе, сӑмах ҫаврӑнӑҫӗпе, ҭӗлхе саккунӗсемпе тӳрк тураҭӗнҭе хисепленет, ҫак туратра ҫапла пире тӑван халӑхсем шутланаҫҫӗ: тӗрексем (османсем), тутарсем, кӑркӑссем, пушкӑртсем, йаккутсем, алттайсем, телеутсем, кумантинтсӑсем, уренхайсем, парапинсасем, нухайсем, кумыксем, сартсем, успексем, туркменсем т ыт. те. Ҫак халӑхсем ҭӑвашшемпӗн ҭӗлхепе те йунпа та ҭи тӑван халӑхсем. Унтан ҭӑвашшемпе тӗрлӗ туратра хисепленсен те, ҫапах пӗр ҫемйере хисепленекен пире ҫывӑх халӑхсем хвин йӑхӗсем: тӗп хвин халӑхӗ (суоми), ливсем, лаплантсӑсем, карелсем, естонсем, маҭйарсем, вокулсем, усҭаксем, сыренсем, мӑкшӑсем, ирҫесем, арсем (вуҭексем), ҫармӑссем; монкол йӑхӗсем: калмӑксем, пуретсем, тӗп монколсем; пирӗнпе пӗр ҫемйерех самойетсен тӗрлӗ йӑхӗсем, унтан тункуссемпе маншури халӑхӗсем хисепленеҫҫӗ. Ҫапла ҭӑваш халахӗ хӑй ҭӗлхипе ураталттай ҫемйинҭе хисепленни историҭҭенхи саманара та кайарахри саманара та вӑл Уралпа Алттай тӑвӗсен тавринҭе ҫуралса аталаннине, унӑн куҫкурми айакри тӗттӗм авалра пулнӑ пурӑнаҫӗ пур пӗр ҫемйере тӑракан халӑхсен пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса тӑнине пӗлтерет. ҫакак калэма ҫук тӗп авал ҫак ҫемйери пур халӑхсем те пӗр халӑх пулма пултарнипе пӗлтерет. Ҭӑваш халӑхӗ ураталттай ҫемйин тӳрк туратӗнҭе хисепленни ҭӑваш историйӗн кайарахри саманисене виттӗр пӗлтерсе, кӑтартса тӑраҭ. Ҫапла ӗнтӗ *пирӗн тӑван ару уралалттай тӳпинҭен йӳпленекен тӳрк тураҭе, епер ҫак ӑруран пулнӑ йӑх.* Анҭах авалранпа халиҭҭенех кӗнекесем ҫинҭе йаланах ҭӑвашшене хвин йӑхӗ тесе ҫыраҫҫӗ. Ҫакӑ пӗр йенҭен тӗнҭе ӑслӑлӑхҫисем ҭӑваш ҭӗлхи ҫинҭен тӗплӗ пӗлменнинҭен килнӗ, тепӗр йенҭен ҭӑваш халӑхӗ ытти тӳрк йӑхӗсенҭен пуринҭен те хӗвеланӑҫра хвин йехӗсен хушшинҭе пурӑннинҭен килнӗ. Унтан ҭӑвашшене хвин йӑхӗ вырӑнне хисеплени тата ак мӗншӗн килнӗ: пӗр йевроппӑра йе йевроппа ҫывӑх пурӑнакан тӳрк йӑхӗсем авалран мӑсаҫман тӗнне йышӑнса пӗр тӗслӗрех аҫиатлӑ пурӑнӑҫ йӗркипе пурӑнаҫҫӗ, ҫав йахсенҭен ҭӑвашшем ҫеҫ тӗнпе те йаласемпе те вырӑссемпе кӳршӗлӗ хвин йӑхӗсем йевӗрлӗ пурӑнаҫҫӗ. Йулашкинҭен ҭӑвашшене хвин йӑхӗ тесе йӑпӑшӑн хисеплеме питӗ пысӑк сӑлтав пур. вӑл ак

мĕншĕн килет: епĕр малта етемĕн тĕрлĕ çемйисемпе тураттисене, ăрăвĕсемпе йăхĕсене ţĕлхе йенţен уйăрса, ţухласа кăтартрăмăр. Тĕнţери етемйышне антрополоки йатлă ăслăлăх тепĕр йенţен уйрăм рассăсене, ăрусене, йăхсене уйăрса кăтартат: вăл халăхсен ÿтпĕвне, ÿттир тĕсне, шăмми шаккине асăрхаса, ţухласа тĕрлĕ рассăсен, ăрусене, вĕсенţен пулнă йăхсене кăтартат. Çак йенţен пăхсан ţăвашшем нумай тÿрк халăхĕсенţен уйрăм тăраççĕ: ţăваш хушшинţе сарă çын пайтах, ытти таса тÿрк йăхĕсен хушшинţе сарă çын çукпа пĕрех, нумайĕшĕ тÿрк йăхĕсем ţалăш куçлă, ун пек типсем ţăвашшем хушшинţе çукпа пĕрех. Унтан антрополоки етемĕн пуçшăммине виççе халăх хăш ăруран пулнине ţухлат, çапла ţухлаçан ţăвашшен хушшинţе хвин йăхĕнţен, хвин йунĕнţен пулнă çын пайтаххи паллă. Çапла ÿтпÿ тĕлĕшĕнţен ţухласа хăшхăш халăхсене ăслăлăхçăсем пĕр ăру йăхĕ теççĕ, çав вăхăтрах тепĕр ăслăлăхçăсем халăхăн ţĕлхине çеç ţухласа ăна урăх ăрăвĕн йăхĕ теççĕ. Çакă кирек хăш халăхăн та ţĕлхи йалан улăшăнса пынинţен килет: малта епĕр халиţţенех пурăнакан йеврей халăхĕ авал хăй ţĕлхине улăштарнине, авалхи ханаан ţĕлхине сухатса манса арамей ţĕлхине йышăннине кăтартрăмăр, çав Христос саманинţе пулнă, çавăнтанпа йеврейсем ţĕлхине тата та улăштарнă- халĕ йеврей халăхĕ калаçакан ţĕлхе авалхи йеврей ţĕлхинţен пĕтĕмпех уйрăм. Çапла халăхсен ţĕлхи ытти халăхсемпе пиншер çул кÿршĕлĕ пурăнса вĕсен сăмахĕсемпе сăмах çавăрăнăçĕсене йышăнса пынипе улăшăнса кайат, çапла йунпа пирĕн тăван халăх выранне хисепленекен ťанай пăлхарĕсем халĕ славен ţĕлхипе калаçаççĕ. Апла пулсан — ţăвашшем те хвин йăхĕ пулса тÿрк ţĕлхине çеç йышăнманши тесе ыйтма йурат, анţах çак ыйтăва хирĕç пĕр иккĕленмесĕр хыттăн калас пулат: çук, ţăвашшем тĕрĕсрен тÿрксем. Çакна хирĕç пире антрополоки те нимĕн те татса калаймаст, вăл ţăваш йунĕ хвин йунĕпе кăшт хутшăннине çеç кăтартат, çакна хирĕç пирĕн ţĕлхепе истори пĕтĕмпех касса татса кăтартса тăраççĕ, ун çинţен малалла калăпăр. Çапла ĕнтĕ çĕр ţăмăрĕ çинţи халăхсен хушшинţе епĕр ţĕлхе тĕлĕшĕнţен уралалттай çемйин тÿрк туратĕнţе хисепленетпĕр, йунпа, ÿтпÿ тĕлĕшĕнţен епĕр етемйышĕн монхол рассинţе хисепленетпĕр. Çакă ţăваш çуралса ÿснĕ сăпки, унăн кăвапи тымарĕ Аçире тăнипе пĕлтерет. Çак пирĕн ţĕрере танакан аçиатлă йун, тĕп авал Аçи пурăнăçĕнţе йышăннă йăласем пирĕн пĕтĕм ţунлă та, маттериаллă та култтурă виттĕр курăнса тăрат, пирĕн натсилĕ сăнпит çине çак Аçи пиţеţĕ сирĕлми ларса йулнă.

Ţăваш аваллăхĕ.

Тĕп авал. Пирĕн тĕп авал сирĕлми тĕттĕм шăналăкпа хупланса тăрат. Çапла ţăваш авалĕ çеç мар, пур Раççейри те, тĕнţери нумай халăхсен те Христос çуралнă саманана çывăхаракан йе иртеке авалхи самана куçкурми тĕттĕмре пытанса тăрат.

Нумай халăхсен авалхи самана çинҫен тĕрĕсрен кăтартакан çыру тавраш йулман, çавăнпа халăхсен авалхи историне ăслăлăхçăсем тĕрлĕ йенҫен ҫухласа çеç кăтартаççĕ, çапла ҫухлама вĕсене авалрап йулнă етем шăмшакки, унăн çĕрте сыхланнă тĕрлĕ йапали, унтан авалран йулнă çĕршыв йаҫĕсем, ытти тĕрлĕ ҫĕлхе кăтартăвĕсем пулăшаççĕ. Ҫăваш тĕп авалĕ тĕлĕшĕнҫен тĕрлĕ теорисем пур, анҫах вĕсем çинҫен тĕплĕ калама пирĕн кĕнекере вырăн çук. Ку кĕнекере епĕр тĕп авал çинҫен иквиç сăмах çеç калама пултаратпăр, çавăнпа епĕр кĕскен ҫăваш авалĕ çине ҫăваш паллă историçи Комиссар Курийĕ мĕлле пăхнине çеç кăтартăпăр. Çав ăслăлăхçă каланипе, *ҫăвашсен мăнаслашшĕсем авалхи, тахçан пăҫах историре çухалнă хун йатлă халăх пулнă.* Киттай кĕнекеçисем çырса хăварнă хутсем кăтарнă тăрăх, Христос çуралиҫҫен 1000 çул малтан хунсем Киттай çĕрпе йунашар çурçĕр йенҫе кĕтӳсем кĕтсе, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куççа йӳрĕклĕ пурăнăç йĕркипе пурăннă. Пыра киле хунсем пĕрлешпе патшалăх тунă, çав патшалăх Киттай патшалăхĕпе тапăçма тытăннă. Христос çуралсан 93-мĕш çулта киттайсемпе ытти кӳршĕлĕ халăхсем хунсенĕн патшалăхне çĕмĕрсе тăкнă. Çак самана хун халăхĕ ытти халăхсен пусмăрĕнҫен хăтăлашшăн пĕр йышăннă çĕршыва пăрахса ытти тĕрлĕ ирĕк çĕрсен йенелле сулăннă. Хунсенҫен пĕр пайĕ çурçĕреле кайса вырăн йышăннă, çав пайран йаккут халăхĕ пулнă (йаккут ҫĕлхи ҫăваш ҫĕлхипе питĕ çывăх). Ытти хунсем икĕ пайа уйăрălса хĕвеланăçнеле сулăннă: пĕр пайĕ Тӳркестана кайнă, тепĕр пайĕ Алттай тăвĕ çумĕнҫен иртсе халҫхи Тоболҫск хули патне çитнĕ. Йермак Çĕпĕре хусахсемпе çапăçça илнĕ вăхăтра çак вырăнта ҫăваш тăвĕ йатлă сăрт пулнă, çав сăрт çумĕнҫе Çĕпĕр патши Кăҫăмăн пуçхули пулнă, çав ту çинҫен Кăҫăм хăйĕн çарĕ хусахсемпе çапăçнине пăхса тăнă, çав ту халĕ те пур. Малта асăннă историçĕн шухăшĕпе çав ту йаҫĕ епĕр калакан саманаранах йулма пултарнă. Кĕтӳсем кĕтме лайăх çеçенхирсем, унтан ăшăрах вырăнсем шыраса хунсем кăнтăраллa сулăнса Урал шывĕ çине пырса тухнă, ăна Йейĕк тесе йат панă, çак Христос çуралсан 150-мĕш çул тĕлĕнҫе пулнă. Çак Уралпа Каçпи тинĕсĕ хушшинҫи Аçирен Йевроппă пыракан çул çинҫи хапхана хунсем икçĕр çул тăршшĕпе хăйсен аллинҫе тытса тăнă. Унтан хунсем каллех хĕвеланăçнеле сулăннă, 374-мĕш çулта вĕсем Атăл урлă каçнă та Йевроппă йеннелле çĕмĕрсе кайнă. Малтан вĕсем алансемпе остхотсене çĕнтерсе Хĕвелтухăçри Йевроппăн кăнтăр йенне Урал тăвĕнҫен Тăнай шывĕ патне çитиҫҫен çавăрса илнĕ, унтан Капкас урлă каçça вĕсем персен патшалăхне çĕмĕрсе тухса, Çири çĕрпе çитиҫҫен кайнă. Кĕçĕн Аçирен таврăнсан хунсем каллех Йевроппа питĕ хĕсме тытăннă, вĕсем хĕснипе пĕтĕм Хĕвеланăçри Йевроппăра пур халăхсем те хунсенҫен хăраса тăрса пĕр пĕрне хĕстере пуçланă, çавăнпа пур халăхсен хушшинҫе те хăрушă пăлханупа вăрçăсем тапранса кайнă. Хунсене хирĕç тĕнҫере ҫи аслă ҫаплă Рим патшалăхе тăнă: 451-мĕш çулта Рим çарĕ-

пе хунсен ҫарӗ (пуҫлӑхӗ Аттилла йатлӑ пулнӑ) хаҙхи Хрантсири Марнӑ шывӗ тӑрӑх, выртакан Каталаун лапӗнҙе питӗ хӑрушӑ ҫапӑҫнӑ, ҫак ҫапӑҫура икӗ йӗнҙен 150 пин ҫын пӗтнӗ, Рим ҫарӗ хунсене ҫӗнтерейместӗр кайалла ҙакмалла пулнӑ. Ҫак вӑхӑтра хунсем пӗтӗм тӗнҙене ҙӗтретсе тӑнӑ, хаҙхи Кермани, Австри, Хрантси ҫӗрӗсене пусса, тытса тӑнӑ. Анҙах ҫакӑ питӗ кӗске вӑхӑта пынӑ: хунсен пӗр пӗрин хушшинҙе вӑрҫӑ тухнипе патшалӑхӗ саланса кайнӑ, ҫавӑнпа вӗсем Хӗвеланӑҫри Йевроппӑран Тӑнай шывӗ урлӑ кайалла кӑҫҫа Хура тинӗспе Капкас таврашӗнҙи ҫӗрсене йышӑнмалла пулнӑ. VI-мӗш ӗмӗрӗн иккӗмӗш ҫуринҙе хӗвелтухӗҫӗнҙен тепӗр авар йатлӑ паттӑр халӑх килсен хунсене ҫӗнтерсе, салатса йарса Тӑнайпа Тисса шывӗсен таврашне вырӑнаҫнӑ. Ҫак вӑхӑтран хунсен йаҙӗ ҫухалать: вӗсем салансан вӗсенҙен урӑх йатлӑ халӑхсем пулса тӑраҫҫӗ, хунсен пӗр ушкӑнӗ, пӗр ӑрӑвӗ пӑлхар йатлӑ пулать. Пӑлхар йаҙӗ хунсем Хӗвеланӑҫри Йевроппӑран кайалла ҙакнӑ вӑхӑтрах V-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнҙех курӑнать: ҫапла йатпа крек кӗнекеҫӗсем Асӑв тинӗсӗ таврашӗнҙе вырӑнаҫнӑ хунсене калаҫнӑ. Ҫак пӑлхарсен VII-мӗш ӗмӗр иртиҙҙенех Аслӑ Пӑлхари йатлӑ патшалӑх пулнӑ, унӑн ҙиккисем Тон шывӗнҙен Капкас тӑвӗпе Каҫпи тинӗсӗ патне ҫитиҙен сарӑлнӑ. Пӑлхарсен пӗр пайӗ Тӑнай шывӗ таврашне йышӑнса VII-мӗш ӗмӗрте Кӗҫӗн Пӑлхари йатлӑ патшалӑх тунӑ, ҫав патшалӑх халӗ те пур, анҙах ун авалхи тӳрк халӑхӗ славен хӑлӑсемпе хутшӑнса пӑҙах славенланса кайнӑ. Уптан VI-мӗш ӗмӗртех пӑлхар йатлӑ йӑх Паннонҙи (хаҙхи Венкри) ҫӗрӗнҙе пулнӑ, ҫав йӑх ытти халӑхсем хӗснипе Иттаҙи ҫӗрне кайса ӳксе пыра киле итталиленсе кайнӑ, кӗнекеҫӗсем кӑтартнӑ тӑрӑх вӗсем IX-мӗш ӗмӗрҙҙен хайсен пӑлхар ҙӗлхинех калаҫнӑ.

670-680-мӗш ҫулсенҙе Аслӑ Пӑлхари ҫине паттӑр хосар халӑхӗ килсе пуснӑ. Ҫав пусмӑртан хӑтӑлас тесен пӑлхарсен Асӑв тинӗсӗ таврашӗнҙе йышӑннӑ ҫӗршыва пӑрахса урӑх тӗлелле куҫмала пулнӑ: вӗсенҙен пӗр пӗҙикҫӗ пайӗ Капкаса тарса ӳкнӗ, вӗсен йӑхӗ палккар йатлӑ халӑх халӗ те унта пурӑнать, тепӗр йышлӑ пайӗ ҫурҫӗрелле улӑхса Атӑлпа Ҙулман Атал таврашне килсе ҙарӑннӑ. Хӑш историҫӑсен шухӑшӗпе хунсем IV-мӗш ӗмӗрте Атӑл урлӑ каҫҫа хӗвеланӑҫнелле кайнӑ ҙухнех вӗсенҙен пӗр кӗҫӗн пайӗ Атӑл таврашӗнҙе таталса йулма пултарнӑ. Анҙах малта асӑннӑ Комиссар Курийӗ шухӑшӗпе *ҙӑвашсем ытти хунсемпе пӗрлех ҫӳренӗ, пӑлхар йатлӑ пулса вӗсем Асӑв тинӗс хӗрринҙе пурӑннӑ*, VII-мӗш ӗмӗрте ҫеҫ Атӑл ҫине килсе тухнӑ. Ҫак теорийе пирӗн историҫӗ ҫапла кӑтартусемпе тӗрӗслет: 1) Крым ҫӗрне кӗнӗ ҫӗрте Асӑв тинӗсӗ ҫавни пур, ӑна кӗнеке ҫинҙе „Сиваш“, Крым тутарӗсем „ҙӑваш ҫавнийӗ“ теҫҫӗ, 2) ҫав тинӗс ҫумӗнҙех „ҙӑваш“ йатлӑ хысна ҫӗрӗ пур, 3) ҙӑваш хушшинҙе авалран Крым йатлӑ ҫынсем пур, 4) Харккӑв кӗпернинҙе Ҙукуйӑх йатлӑ хула пур, вӑл „ҙӳк-уйӗ“ сӑмахсенҙен пулнӑ пек туйӑнать, 5) Тӗнеппӑр ҫинҙе халӗ те Кременҙук йатлӑ

хула пур, çав хула йаҫěпе авал пăлхарсен те Атăл таврашěнҫе хула пулнă, çав йат „кермен-ҫукě“ сăмахсенҫен пулнă пулмалла: авал ҫăвашшем кермен тесе крепăçа каланă, 6) ҫăвашшем йаланах халапсенҫе, тăкмаксенҫе, йурăсенҫе тинěсе асăнаççě, унтан кунта пурăнман ҫěрҫунсене: ашака, тěвене, урхамаха, ăмăрткайăка, арăслана асанаççě, 7) ҫăвашшем Кěнçтенттинопоҫ хулинҫен таçта айакра пурăнаççě, çапах та вěсен çав хулана туни çинҫен калакан халап пур, 8) Кěçен Аçире Çивас йатлă хула пур, историçěсем калана тăрăх—çав хула вырăнне авал Çивас çавни патěнҫи халăх куççа йышаннă, хăш историçăсм çав халăха тўрех ҫăвашшем пулна пулě теççě.

Çапла ěнтě тěп авал ҫăвашшен мăпаслашшěсем хунсен уртинҫе, кайарахпа вěсем *пăлхар йатла халах йе ытти халăхсемпе перле пăлхар уртинҫе* пулнă тепě теорийе каласа кăтартрăмăр. Епěр куртăмăр, истори çырăвěсенҫе хунсем çинҫен те, вěсен пěр йахě пăлхарсем çинҫен те тўрех кăтартакан паллăсем пур, анҫах ҫăваш çинҫен çав çырусенҫе пěр сăмах та çук, ҫăвашшем те хунсемпе пăлхарсем хушшинҫе пулнине епěр çěршывăн йе хуласен халиҫҫен йулнă авалхи йатсенҫен çеç сěмленетпěр. Апла пулсан мěне кирлěши пире çак халапри пек тахçан авалхи самана çинҫе ҫакаланса тăма? Çак ыйтăва хирěç çапла çавăрса калама пулат: ҫăвашшем Атăл çине пусиҫҫен хунсемпе пăлхарсен уртинҫе йе пулни, йе пулманни кайарахпа ҫăваш халăхě ҫапла Атăл Пăлхарийěн тěп халăхě пулнине йе пулманнине пěлтерет, çакă ҫăваш историнҫе питě пысăк ыйту, ун çинҫен тěплěрех пăлхар самани çинҫен калана ҫух калăпăр—ку пěрре; хунсемпе пăлхарсем çинҫен историре тěрлě кăтарту нумай, çавăнпа пирěн мăнасаттесем ҫăнахах вěсемпе пулнă пулсан вěсем авалхи пурăнăçне, хамăрăн тěп аваллăха лайăхрах ҫухлама пултаратпăр—ку иккěмěш. Çапла пулсан, хамăртан хамăр тўрех ыйтар: ҫăвашшем тěп авал ăçта, йепле пурăннăши?

Вěсем ăçта пурăннине малта та асăнсаттăмăр: Христос çураличҫен пайтах малтан вěсем Киттай çěре таврашěнҫе пурăннă, христианлă верă пуçлансан вěсем хěвеланăçнелле пěр вырăнтан тепěр вырăна куçça суланнă, IV-мěш ěмěрте Йевроппăн кăнтăр йенҫе куçça çўрене, VII-меш ěмěрте Атăл çине халҫхи пирěн çěршыва килсе пуснă. Анҫах халăх çапла ултçиҫ çěр çул тăрпшěпе тěнҫе тăрăх сěтěрěнсе çўрени халап марпши вăл? Çук, пěрте халап мар. Епěр пěлетпěр, тěнҫе историнҫех çак саманара халăхсен аслă куçу пулнă. Аçирен темиçе çěр çул тăршшěпе Йевроппа халăх хыççăн халăх килсе пусна, кунта пурăнакан халăхсене тăвăрлатнă, ирěксěр пăлхатнă. Хěвеланăçри Йевроппăра патшалăх йěркипе пурăнакан халăхсене хěстерне, вěсене йаланах ирěксěр хěçпăшал çěклеттерне. Çапла пулни историре пин тěслě çырура çырăнса йулнă. Çапла ҫăвашшем те тěп авал çак аслă истори йухăмěн пěр хумě пулнă. Анҫах çапла тěнҫене касса çўресе мěн шыраканҫи вěсем? Ěлěкхи историçěсем вěсем тиккарсем пулнă,

вӗсем вӑрҫӑпа ҫапӑҫу шыраса. ҫын йунне ӗҫешшӗн, ытти халӑхсен пурлӑхне туласшӑн унтан ҫап шыракан пуҫлӑхӗсем илӗртнипе ҫеҫ тӗнҫене каллӗмаллӗ хутланӑ теҫҫӗҫ. Ҫак сӑмах тӗрӗс мар, ҫын авалах ҫынах, халӑх та авалах халӑхах пулнӑ, ӗлӗк те пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна айакка куҫма халӑхшӑн асап пулнӑ. *Ҫак куҫу авалхи хуҫалӑх йӗркинҫен килнӗ: ҫав куҫҫа ҫӳрекен халӑхсем йӳрекле пурӑнаҫ йӗркипе пурӑина, вӗсем кӗтӳсем усраса тӑранса пурӑнна.* Ҫавӑнпа кӗтӳсем валли ҫимӗҫ шыраса вӗсем ирӗклӗ ирӗксӗр пӗр тӗлтен тепӗр тӗле куҫнӑ, йалан авантарах ҫӗршыв шыранӑ. Хӗвеланӑҫ йеннелле ҫӗршыв ирӗкрех пулнӑ, климӑҫӗ те килӗшӳлӗрех пулнӑ, Аҫире халӑхсем тӑварланарах пурӑннӑ, унтан тата ҫасах хайар уйар ҫулсем пулнӑ, ҫав ҫулсенҫе выҫӑх апатсӑр вилсе пӗтнӗ—ак мӗншӗн халӑхсем авал тӗнҫене касса ҫӳрепӗ. Каллех вӗсем ҫилтӑвӑл пек пӗр тӗлтен тепӗр тӗле пырса ӳкмен: кӗтӗвӗсене ҫитерсе йерипен куҫҫа пынӑ, ҫапла хунсем авалхи ҫӗршывран тапранса кайса Урал шывӗ ҫине алла ҫул иртсен ҫеҫ пырса ҫитнӗ. Ҫапла вӗсем 3000 ҫухрӑмлӑ ҫула 50 ҫул хушшинҫе ҫеҫ тухнӑ, вӑл вӑтамран ҫулталӑкне 60 ҫухрӑм ҫеҫ кайнине пӗлтерет. Ҫапла ӗнтӗ ҫавашшӗм хунсен уртинҫе пулни ҫи малтан вӗсем ҫӑнтан кӗтӳусравлӑ йӳрӗклӗ пурӑнаҫ йӗркипе пурӑннине пӗлтерет. Хунсем ҫинҫен остхотсен историҫи Йортанӗс ҫапла ҫырса хӑварнӑ: хунсем лутрашка, илемсӗр ҫынсем, вӗсем етем ҫӗлхипе каласман пулсан вӗсене етем тесе калама та йӑвӑр. Хайсен тӑшманӗсене хӑрушӑрах пулас тесе вӗсем хайсене хайсем илемсӗрлетеҫҫӗ, аҫисен пуҫӗсене лапҫӑтса тутӑрсемпе ҫыхса ҫӳреҫҫӗ; вӗсем кӗске ураллӑ, кӗске, хулӑн майлӑ, сарлака питлӗ, пысӑк пуҫлӑ, хӗсӗк куҫлӑ, лапҫӑк сӑмсаллӑ, тӗксӗм сӑнлӑ, хура тӗслӗ, ҫатам ҫанҫурӑмлӑ. Вӗсем кунӗнҫӗрӗн хайсен ҫивӗҫ лашисем ҫинҫе утланса ҫӳреҫҫӗ, ут ҫинҫе вӗсем ҫийеҫҫӗ те, ӗҫеҫҫӗ те, ҫимӗҫӗ вӗсен кураӑк тымарӗсем, йӑвӑҫпа курӑк ҫимӗҫӗсем, унтан ӑшаланӑ аш. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем тырӑран та апат тума пӗлкелеҫҫӗ. Еҫмеллине вӗсем урпаран тӑваҫҫӗ (йе йӳҫӗ, йе сӑра тупӑ пулмалла). Ҫак историҫӗ ҫыравӗ хунсем ҫӑнахах та тӳрксем иккӗнне, унтан вӗсем ҫав саманара йепле пурӑннине виттӗр кӑтартса тӑрат. Йортанӗс остхот историҫи пулнӑ, остхотсене хунсем ҫапӑҫса ҫӗнтерсе, салатса йанӑ, ҫавӑнпа вӑл хӑранипе те курайманнипе те йуптарарах калат пулмалла. Ҫапах ҫак саманарах хунсем ытла хиркайӑк пек пурӑнманни ун сӑмахӗнҫен те паллӑ: вӑл хунсем тырӑран апат тума вӗренеҫҫӗ, ӗҫкӗ урпаран тӑваҫҫӗ тет, апла пулсан пирӗн мӑнасаттесем ҫак саманара та тырӑ акма пӗлнипе кӑтартат. Ҫавӑнпа ҫак саманапа пирӗн мӑнасаттесем *кӗтӳусравлӑ пурӑнаҫ йӗркинҫен ҫерҫлӳлӗ пурӑнаҫ йеркипе куҫма тытӑннӑ персхотла самана* теме йурат. Ҫак саманарах пирӗн мӑнасаттесен хайсене кура маттериаллӑ култтурӑ пулни те ҫак хунсен историйӗнҫен пире паллӑ: вӗсем тӗнҫере култтурӑпа ҫаплӑ Рим ҫарӗпе ҫапӑҫҫа ӑна ҫӗнтерме пултарнӑ, вӗсен хӑватлӑ утлӑ ҫар пулнӑ, хӗҫпӑшал ҫӗмӗренсем, маттур

пулнă, вĕсем куçça çӳренĕ ҫух аслă шывсем урлă кимĕсемпе суласем тума пĕлнĕ. Унтан малта епĕр Çĕпĕрте тӳрксем иртнĕ çĕрсенҫе авалхи, вĕçне йĕс хывнă сухапуççем пайтах тупăннипе асăнсаттăмăр. Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçça çӳреме вĕсен урапасем пулнă пулмалла, килçурҫĕсем вĕсен халҫхи кăркăссен пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарма мĕлле хушăсем пек йурттăсем пулнă пулмалла.

Пĕр пĕринпе пурăнас йĕрке, опҫĕствăлă, краштанлăхлă пурăнăç вĕсен халҫхинҫен нумай уйрăм пулнă. Ун ҫухне ҫăвашшем *ăрăвĕ ăрăвепе пĕрлешше ҫăмăртанса пурăннă, уйрăм етемĕн уйрăм сопствĕнăç пулман*, кĕтӳсем, хӳшĕсем пĕтĕм ăру сопствĕнăçĕ пулнă, ăру пуçĕнҫе ват арçын ăру пуçлăхĕ пулнă, çав пуçлăх вырăнĕнҫе ҫасах ăрури етемсен мăнаслашшĕ хисепленнĕ, ăру тураҫĕсен, уйрăм çемйесен пуçĕнҫе те ват арçынсем хисепленнĕ, çав ăрусемпе çемйесен пуçлăхсене пурте итлесе, вĕсене сумасуса тăмалла пулнă, вĕсене итлемесен, вĕсен умĕнҫе айăпа йулсан вĕсем кирек кама та вĕлерме те, тĕмĕн тума та пултарнă. Çапла пурăнăç.сăнне патриархат теççĕ, çапла йĕрке йӳрĕклĕ кĕтӳусравлă хуçалăхпа пуранакан халăхсен хушшинҫе халиҫҫенех пырат, çапла кăркăссен пирĕн ĕмĕрте те пур пурăнăçа, пурлăха аксаккалсем (шурă сухалсем) тытса тăраççĕ. Çапла авал ҫăвашшем нумай вăхăт *патриархатлă йĕркепе пурăннин* йулашкийĕсем пирĕн пурăнăçра халĕ те нумай, çапла хĕрарăмсем, ытла та кинĕсем арçынсен умменҫе çарран йе çара пуç çӳреме килĕшӳле мар тенĕ йала çак саманаран йулнă. Аслăлăх кăтартнă тăрăх, тата та авалрах саманара ҫăвашшен урăхла пурăнăç йĕрки те пулнă, ăна матриархат теççĕ: вăл ăру пуçĕнҫе хĕрарăм тăнине пĕлтерет. Çакă ҫăвашшен мăнаслашшĕсем вылҫăхусравлă хуçалăх йĕркине йышăниҫҫен, вĕсем кайăксемпе пулăсем тытса, хурткăпшанкă, йывăç çимĕçĕсене пухса тăранса пурăннă саманара пулнă: ун ҫухне ăрçын кунĕнçĕрĕн вăрманра, уйра, шыв çинҫе апат шыраса çӳренĕ, хĕрарăм вуҫах патĕнҫе тăрса аҫапăҫа ӳстернĕ, вĕсене хайар кайăксенҫен сыхланă. пур апат саппасĕсене усраса тăнă. Çавăнпа çак саманара хĕрарăм кил пуçĕ, çемйе пуçĕ, ăру пуçĕнҫе хисепленнĕ. Матриархат саманинҫе ҫăвашшен пĕр хăрарăмăн нумай упăшка пулнă, ăна ăслăлăх полиантри йĕрки тет, тĕп авал çапла пулни çинҫен ҫăваш халапĕсем халĕ те асăнаççĕ. Епĕр çыракан патриархат саманинҫе пĕтĕмпех урăхла: пулнă хĕрарăм ҫура вырăнĕнҫе хисепленнĕ, пĕр арçын темиçе арăм илсе, нумай арăмсемпе пурăнма пултарнă.

Çак вăхăтра çемйесемпе ăрусен пуçĕнҫе тăракан ватăсем йепле пысăк хисепре тăнă, çавăн пекех халăх пуçĕнҫе те пĕр пуçлăх пулнă. Пер вырăнтан тепĕр вырăна куçça çӳрене çĕрте йалапах халăхсем пĕр пĕринпе йӳççĕлĕ пулмалла пулнă, йалаҫах пĕрне пĕри пыра пыра çапăннă, çĕршывшăн тавлашнă, çавăнпа ҫасах вăрçă пулнă, ҫарăнми çапăçу пулнă; çавăнпа та çак саманара халăхсен пуçĕнҫе вăрçăсенҫе ҫапа тухнă çынсем тăнă, çав ĕмпӳсен власĕ вĕçĕмсĕр хăватлă пулнă: вĕсен ирек-

не пĕтĕм халăх туса, вĕсем каланине итлесе тăмалла пулнă; хунсев ђи ђаплă ĕмпӳ Аттиллă (ђăваш сăмахĕ Атăл йевĕрлĕ) пулнă. вăл пĕтĕм тĕнђене хăратса тăнă. Рим пуçлăхĕсене хайне пуççаптарттарнă.

Тĕн тĕлĕшĕнђен ђăвашшен мăнаслашшĕсем çак саманара *çĕршывпа çутçанталак хаваțесене пуççапса пурăннă* пулмалла, анђах ун ђухне вĕсем халђи ђăнђăвашшем пек çӳлти пĕр турра пĕлмен пулмалла, унтан вĕсем ђӳк йĕркине пĕлме пултараймăн, мĕншĕн тесен, пирĕн ђӳксен, тĕрлĕ кĕлĕсем нумай йĕркине ђăвашшем хосар халăхĕ урла йеврейсенђен йышăннă теççĕ.

Çапла ĕнтĕ пирĕн мăнасаттесен Христос çуралаççенех те нумай малтан, вăл пурăнса иртернĕ саманасенђе те хăйсене кура хуçалăх та култтура та пулнă. Вĕсем тахçан авалах *патшалах тума, ăна йĕркелесе тытса тĕрĕклĕлентерме пĕлнĕ*, вахăђĕне авалхи патшалăхсене: Киттайа, Йевроппă патшалăхĕсене вĕсем çĕнтерсе хăйсене пăхăнтарса, кулапай тӳлеттернĕ. Хунсем авалхи култтурăпа паттăр халăхсенђен: римлансенђен, крексенђен, киттайсенђен, арапсенђен, перссенђен нумай кайра тăнă, çавăнпа вĕсем вĕсене çĕнтерсен те влаçа ђасах ĕçерсе хăйсем саланса пĕтсе йатне çухатмалла пулнă, çапах та ытти ун ђухнехи тĕнђери халăхсемпе таплаштарсан вĕсем çителĕклĕ çӳлĕ култтурă пусми çинђе тăпп палла. Çапла хуçалах йĕрки те, култтурă та çителĕклĕ хăватла пулман пулсан—пăлхарсем Атăл таврашне йышăнсан унта пурăнакан пур хвин йахĕсене пăхăнтарса аслă патшалăх туса, аслă култтурă тума пултараймăн пулĕççĕç.

Йулашкинђен çакна калас пулат: ђăвашшем хунсене пăлхарсем уртисенђе пулни пулманни историре паллах мар, çавăнпа пĕр йенђен çак халап пек шанђаксăр йапала çинђен нумай каласма та кирле мар пек туйăнма пултарат. Епĕр хамăр та халапсемпе атапма йуратмастăпăр, анђах хунсен историйĕ пирĕншĕн ппрен теп авала катартакан тĕнђере пĕртен пер истори: хунсем тӳрксем пулнă, ун çинђен аслăлах пĕрте иккĕленмест, çавăнпа ђăвашшем хунсемпе пĕрле тĕнђене виççе тухман пулсан та, вĕсенђен уйрăлса кайса ђăваш халăхĕ пĕђђен атапшă сӳресе Атăл çине килсе пусна пулсан та—хунсен историйĕ пире ђăвашшемшĕн авал Христос саманинђе мĕлле пурăннине пĕлтерет, мĕншĕн тесен, ђăвашшем хунсем ытти уйрăм йахĕсемпе, халăхесемпе, ăравĕсемпе пер таван пулса вĕсенђеп нумай уйрăм пулма пултараймăн. Ђăвашшем те ытти тӳрк йахĕсем те *çак саманара кетӳусрав ла хуçалăхпа, патриархалла—ăрула пурăнаç йеркипе, па сăрпа тимĕртен орутисем таваккан маттериалла култтурăпа, çĕршывна çутçанталăк хаваțĕсене пуççапакан, çырава пĕлмен ђунлă култтурăпа пурăннă*. Çакна ђипер астуса, ђăваш историйĕ малалла йепле çупла пынине епĕр кескен тишкерсе пăхăпăр.

Пăлхари самани. Çапла ђăвашшен Христос çуралнă йе маларахри саманара пулнă ĕçĕсем çинђеп истори тĕплĕ нимĕн те кăтартмаст, çавăнпа пирĕн авалхи мăнасаттесен пурă-

наçĕ çинђен епĕр тĕрлĕ йенђен ђухласа çеç сĕмленме пултаратпăр. Пирĕн çĕршывăн тĕп авалхи халăхсем хвин йахĕсем çинђен те авалхи кĕнекесем çинђе йађĕсене çеç асăнса çырса хăварнă. Çав халахсем йепле пурăннине епĕр улăп тĕмисене, хула выранĕсене, кивĕ масарсене ђавалаcа тупнă йапаласенђен ђухлатпăр. Ђăнтан историлĕ пурнаç пирĕн çĕрте ђаплă Пăлхари патшалăхĕ пуçланса кайсан çеç тытăнат. Çак саманара пирĕн çĕр пĕтĕм тĕнђере питĕ паллă вырăн йышăнса тăна: Пăлхари патшалăхĕ, унăн култтурĕ, вăйĕ, пуйанлăхĕ çинђен пĕтĕм Йевроппăпа Аçире пĕлсе тана, нумай кĕнекеçĕсем ун çинђен кĕнеке çине çырса хăварнă. Пăлхари патшалăхĕнђен пуçласа ђаваш авалĕ те çуталма, ђаваш историйĕ те виттĕртерех куранма тапратат. Пăлхари çинђен нумай кĕнеке çырсан та пурне те кирлине каласа пĕтерме çук, çапах та епĕр ун çинђен çак кĕнекере вырăн çуккипе питĕ кĕскен каламалла, çавăнпа епĕр Пăлхари çинђен урлăпирлĕ çеç пирĕн шухăшпа мен мĕн питĕ кирлине асăнса илĕпĕр, йулашкинђен Пăлхарире ђаваш халăхĕ йепле вырăн йышăнса тăнине кăтартăпăр.

Çапла ĕнте VII-мĕш ĕмĕртен пуçласа палхарсем ытти халăхсем хеснипе Раççейĕн кантăр йенђен Атăл тăрăх çўлелле улăхса тĕп Атала. Ђулман Атăл йухса тухнă таврара выранаçаççĕ. Анђах ђаплă Пăлхари патшалăхĕ X-мĕш ĕмĕрелле çывахарнăпа çеç историре палла пулат, унђен 300 çул тăршшĕне пăлхарсем йепле пурăнни çинђен истори тĕрĕссĕн кăтартаймаст. Çав самана çинђен ђухласа çапла калама пулат: çав виçĕ ĕмĕр тăршшĕпе пăлхарсем çĕнĕ çĕрте йўрĕклĕ пурăнаçа пăрахса йалан пĕр вырăнта пурăнма йерипен вĕренсе ханăхнă, кетўусравлă хуçалăх йĕркине хăвареа ђăнтан çĕр ĕçлеме вĕреннĕ, авалхи хвин йăхĕсен, ытларах та ками йăхĕн култтурене йышăннă, Атăл тăрăх тĕнђепе сутилў тума тапратса хосарсемпе арапсемпе, перссемпе, ерменсемпе, йеврейсемпе, славенсемпе, вырăссемпе, айакри хвинсемпе паллашпа вĕсем ђасах култтурланса кайна. Анђах палхарсем тĕрлĕ нумай ăрусемпе йăхсене уйрăлса тăнипе ђасах пĕрлешпе пĕр патшалăх тăвайман, çак саманара вĕсем пĕр вăхăтра Аталăн айал йенђи Хосар патшалăхне пăхăнса куланай тўлесе тăнă. X-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнђе Пăлхари патшалăхĕ пулса тăни паларат: ăна „Аслă Пăлхар çĕрĕ", „Хура Пăлхар çĕрĕ" тата хăшĕ „Пилер патшалăхĕ" тесе ђĕннĕ. Пăлхари патшалăхĕ питĕ аслă пулнă, çав патшалăхра пăлхарсенђен пуçне: мăкшăсем, ирçесем, çармăссем, миперсем пурăннă, пăлхарсемпе йунашар хосарсенђен пуçне пушкăртсем, пăртассем, çурçĕр йенђе халђи тĕрлĕ хвин йăхĕсем пурăнна. XIII-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнђе Пăлхари ђиккисем çав тери сарлака пулнă: каййенђи ђикки Окка шывĕ хĕррипе Ђулхула патне çитнĕ, малйенђи ђикки Урал тупе тăрăнса тăнă, çурçĕр йенђи халђи Перĕм патне çитнĕ, кăнтăрлари ђикки Тон шывĕ патне çитнĕ. Пыра киле аслă кўршĕлĕ патшалăхсем хосарсенпе пăртассен патшалăхĕсем салана пуçласан нумай хосарпа пăртас çĕрĕсем те Пăл-

хари патшалăхне куланай тÿлесе тăнă. Çак саманара пĕр вăхăтра Пăлхари патшалăхĕ Йевроппăри Раççейре ҫи аслă, ҫи куҫттурлă патшалăх пулса тăнă. Çапла ҫапа тухма пăлхарсене вĕсем йышăннă çĕршыва пурлăх йерки, хуçалăх йĕрки пулăшнă. Ҫулман Аталтан кăнтăр йенҫи мăнтăр, хура тăпраллă çеçенхирсене йышăнса, пĕр вырăнта çĕр ĕçлеме хăнăхсан пăлхарсем хисепсĕр нумай тырă тăва пуçланă, çав вăхăтрах Пăлхарийĕн кăнтăрпа хĕвелтухăç ҫиккисем таврашĕнҫе халăх ирĕклĕ çеçенхирсенҫе шутсăр нумай выҫăх усранă. çав вăхăтрах вăрманлă вырăнсенҫе халăх кайăксем тытса питĕ уçă курнă, вĕллехурҫĕ усраса нумай уçă курнă, тата çав вăхăтрах ирĕклĕ шывпурсем тăрăх халăх пулă тытса пурăннă. Çапла тăван çĕршыв питĕ пуйаннипе, унтан çителĕклĕ уçă курма меллĕ хуçалăх йĕркине пула пăлхарсем пурлăхпа ытла та тĕреклĕленсе кайнă. Çак пурлăха тума хăватлă маттерналла куҫттурă кирлĕ пулнă, епĕр ун çинҫен малта халăх пурлăхĕ çинҫен каланă ҫух асăнсаттăмăр. Епĕр унта каларăмăр: пăлхарсем тырра пысăк акапуççемпе, сапансемпе сухаланă, кайăксене çĕмĕренсемпе тытнă, пулăсене атмапа, сĕкепе, сăнăпа, сĕрекесемпе, тетелсемпе, шаксемпе тытнă. Çак орутисене тума вĕсем терлĕ метталл: тимĕр, пăхăр, кĕмĕл, йĕс кăларса вĕсене шăратса йе хĕртсе кирлĕ йапала тума пĕлнĕ. Пур килçурта кирлĕ йапалана, тумтир таврашĕнҫе илемлĕ йапалана пăлхарсем тĕрлĕ метталран тума тăрăшнă Пур пурлăхра пулакан ҫĕрĕ йапаласенҫен вĕсем хаклă тавар кăларма вĕреннĕ: çăмран вĕсем тăласем, кĕçесем тунă, тиртеп вĕсем пĕтĕм Асире ҫаплă сăрансем тума вĕреннĕ, çав сăрантан атăсем çĕлесе ată тăхăнса çÿренĕ, пылран вĕсем шерпет йухтарса кăларнă; тăмпа хăйăртан вĕсем савăтсапа, шăмăсенҫен тура таврап. хăйăртап кĕленҫе, исвĕçреп семент тума пĕлнĕ. Пăлхарсем мерҫенсенҫеп, ахахсенҫен ытти тĕрлĕ хаклă ҫулсенҫен тĕрлĕ илемлĕ йапаласем тунă, кĕмĕлпе ылттăнран укçа çапнă, терлĕ йапала шăратса хывнă. Пăлхарсем каскалама, ҫулран çурт тума питĕ ăсталанса кайнă, çавăн пек ăстасем йут çĕрсенҫе выраспа хвинсем хуппинҫе те ĕçлесе çÿренĕ.

Çав вăхăтрах пăлхарсем сутилÿпе питĕ пуйса кайнă: вĕсен ҫаплă пасарсемпе йармăнккасем пулнă. Пăлхари сутилÿçисем таварпа кайса çитмен çĕр те сахал пулнă: вĕсем Арави, Туркестан, Висантти, Скантинави çĕрĕсене те çитнĕ, пуринҫен ытла вĕсем Перăм çĕрнелле, Сырен çĕрнелле, Çĕпĕр йенелле, тата Пăрлă оккеан таврашĕнҫи йукрă йатлă халăх патне çÿренĕ; Пăлхари усламçисем йаланах Перççи, Инти, Хивă, Пуххара çерĕсене, йаланах арапсем, хосарсем, крексем, вырăссем патне тавар сутма та, тавар илме те çÿренĕ. Çапла пăлхарсен сутилÿçĕсен сословийĕ питĕ вăйлă пулнă, çав усламçăсем хуласенҫе пурăннă, вĕсем тавара йÿнерех хакпа тупас шухăшпа пĕҫĕк хапрăксем, тĕрлĕ маçтерскуйсем тума тытăннă.

Пăлхари патшалăхĕн пуçĕнҫе пĕр патша тăнă, çавăнпа пăлхарсен патшалăх йĕркине монарххи теме кирлĕ. Патшалăх

тытăмне тĕреклĕлентерсе тăма Пăлхарире çурапла та, утла çар та пулнă. Патшалăх влаçĕ çӳлти сослови; улпутсенпе тăрăнсен, унтан тӳресен, ытти тĕрлĕ ҫиновниксен те аллинҫе пулнă, хура халăх вĕсене пĕтĕмпех пăхăнса пурăнмаллă пулнă, хула сыннисем çеç кăшт ирĕклĕрех пурăннă. Пăлхарсем ăрăвĕ ăрăвĕне уйрăм пурăннă. кашни ăрăвăн уйрăм хуçа пулнă: пĕҫĕкрех ăрусен пуçĕнҫе таврари сĕршыв хуçисен вырăнĕнҫе хисепленекен улпутсемпе тăрăнсем тăнă, аслăрах ăрусен пуçлăхĕсене патшасем тесе те ҫĕннĕ. Çапла Пăлхарире патшалăх йĕрки вырăссен утил йĕрки, Йевроппăра хвеоталлă йĕрке йевĕрлĕрех пулнă. Кашни ăрăвăн уйрăм йат, уйрăм хуласем пулнă: çак хуласем йĕри тавра йалсем пулнă. Хуласене çӳлĕ тĕмеллĕ вырăнсенҫе тунă, вĕсене тăшмансенҫен хӳтлĕхлĕ тăвас тесе йĕри тавра темиçе хут тарăн канавсем ҫавса çӳлĕ валпа çавăрнă, çапла авалхи хуласем крепăçсем пек пуллă, çав крепăçсене авалхи ҫăвап ҫĕлхипе кармансем йе керменсем тенĕ. Çак авалхи пăлхарсен хулисемпе ҫаплăрах йалсен нумайĕшĕн вырăнĕсем халиҫҫенех паллă: çапла ĕлĕк Хусан кĕпĕрнинҫе çавăн пек вырăнсем 200 йахăн хисепленнĕ, çавсенҫен Шупашкар уйесĕнҫе 20, Çĕрпӳ уйесĕнҫе 5, Йетĕрне у. 6, Ҫикме у. 11. Çав вырăнсене халăх хушшинҫе «хула тăвĕсем», «хула вырăнĕсем», «улăп тĕмисем» теççĕ, апҫах çав вырăнсенҫен нумайĕпĕ пăлхарсенҫен те тахçан малтанхи саманаран пулса йулнă. Пăлхарсен тутарсем килсе пуснҫҫен пуçхули Пӳлер йатлă пулнă, çавăнпа авалхи çыруçасем хăшĕ пăлхарсене те пӳлерсем тенĕ. Пӳлер хули халхи Ҫистай у. Пиҫарск йатлă йал тавраш ĕнҫе пулнă. Унтан кайарахпа ҫи ҫаплă хула Пăлхар йатлă хула пулса тăнă, вăл Атăл хĕрринҫе халхи Спас уйесĕнҫе пулнă, çак хула питĕ сутилӳпе ҫаплă пулнă, çав хулара X-мĕш ĕмĕртех 10 пин çын ытла пурăннă, кайарахпа XIII—XIV ĕмĕрсенҫе 50 пин çынна йахăн пурăннă. Çак хуласенҫен пуçне пăлхарсен тата та нумай ҫаплă хуласем пулнă, вĕсен йаҫĕсем, историйĕ, вĕсен вырăнĕ авалхи çырусенҫен виттĕр паллă.

Пăлхарсен X-мĕш ĕмĕртех çыру тапранса кайнă, çырăва пăлхарсем арапсен саспаллисемпе çырнă. Арапсенҫен вĕреннипе пăлхарсен хăйсен аслăлăхçăсем те пулнă. Арапсенҫенех пăлхарсен хула çыннисем Măхамет тĕнне йышăннă. Çапла Пăлхари патшалăхĕ вырăс патшалăхĕ тытăниҫҫенех питĕ ҫаплă та, питĕ кулҗттурла та патшалăх пулнă. Анҫах çак патшалăхăн ĕмĕрĕ çапах та питĕ кĕске пулнă: пĕр йенҫен хăватлă славен йăхĕсем хĕснипе, тепĕр йенҫен Аçирен куçса килекен халăхсем хĕснипе вăл ҫасах пĕтсе ларнă. Ҫанахах та Пăлхарийĕн кеокрахвиллĕ вырăнĕ çав саманара питĕ ҫелейсĕре йулнă: пĕр йенҫен вăл хĕвелтухăçĕнҫен Аçирен Йевроппă йенелле сулăнакан халăхсене хăйне пусмарласран йаланах кĕрешсе сирсе тăмалла пулнă, тепĕр йенҫен ăна хĕвеланăçран вырăс халăхĕ пĕртте канĕç паман: авалхи вырăс летăпĕçĕсене вуласан—вырăссем X-мĕш ĕмĕртен пуçласа йаланах пăлхарсемпе çапăçни паллă. Çапла вăрçăсемпе Пăлхари вăйсăрлансан—ăна XIII-мĕш ĕмĕрте тутарсем пăхăнтарнă.

Çапла ĕнтĕ пирĕн ĕмĕртен 700 çул маларахах пирĕн çĕршыв çинђе аслă куљттурлă патшалăх пулнă. Нумайĕшĕ ăслăлăхçăсем хаљхи ђăваш халăхĕ çав палхар халăхĕн йăхĕ теççĕ. Çавна ăслăлăхçăсем тĕрлĕ йенђен ђухласа калаççĕ: ђи малтан ăна пăлхарсен саманинђен йулна авалхи масарсем çинђе выртакан ђулсем çинђи çырăва ђăвашла çырнинђен ђухласа илеççĕ, унтан ђăваш ђĕлхинђе хисепсĕр нумай арап сăмахĕ пурринђен ђухласа илеççĕ (авалран ђăваш ђĕлхине çапла арап сăмахĕсем кĕрсе йулнă: халăх, вăхăт, самана, сехет, пирĕшти ыттисем те); йулашкинђен ăслăлахçăсем çакна ђăваш йăлисем пăлхарсен йăлисем йевĕрлине ђухласа, тĕрĕслесе калаççĕ. Анђах нумайĕшĕ çак теорийе йышăнмаççĕ: вĕсем пăлхар йађĕпе ытти халăхсен ăрăвĕ пулнă теççĕ, нумайĕшĕ тата пăлхарсем тĕрлĕ йăхсенђен хутшăнса пулнă: словенсенђен, арапсенђен, перссенђен, ерменсенђен, тÿрксемпе хвин йăхĕсенђен хутшăнса пулнă Пăлхарийĕн хула çыннине çеç калана теççĕ. Анђах йепле пулсан та пире тĕрĕсрен паллă: *Пăлхари патшалахĕн варринђе пуранакан тĕп халăх ђăваш хйлăхĕ пулнă*, вăл куљттурăпа пур хвин йăхĕсене пăхăнтарса тăнă, вĕсене нумайĕшне ђăвашлантарса пĕтернĕ, хăй ђĕлхине йышăнтарттарнă (çармăс ђĕлхинђе çури ытла ђăваш сăмахĕ, авалхи пушкăрт ђĕлхинђе те ђăваш самахĕ питĕ нумай пулнă); Пăлхари патшалахĕн пур пурлăхĕ, мулĕ, хăвађĕ йалхуçалăхĕнђен килнĕ, çавăнпа ђăвашшен хуласем арапсенђен йышăннă куљттурăран айакка рах тана пулсан та вĕсем Пăлхарийĕн никĕсĕ пулса тăни паллă; Пăлхарийен хулисем, ăсталăхĕ, техникки, промăшлĕннăçĕ каллех хура халăх ĕнси çинђе çеç пулма пултарнă, çавăнпа йепле пулсан та çак асла куљттурлă патшалах пĕр йенђен ђăваш халăхĕн вăйĕ, пурлăхĕ, ăспиђе çине тайанса тăни паллă, мĕншĕн тесен, Пăлхарийĕн ђи йышлă халăх ђăваш халăхĕ пулнă, пурăнма та вăл патшалăхăн варринђе пурăннă. Çавăнпа та ђăвашшен аслашшĕсем тÿрех пăлхарсем пулни йе пулманни—пурĕпĕр, епĕр, Пăлхари историйĕ ђăваш историне уйăрăлми çыхăнса тăрат тетпĕр. Çак ыйту тĕлĕшпĕпе XIX-мĕш ĕмĕр тăршшĕпе те халиђђенех те тĕнђе ăслăлăхçисемпе вырас ăслалăхçисем тавлашаççĕ: хăше ђăваш тÿрех пăлхар йăхĕ, хăшĕ çук теççĕ, ђăваш историçĕсем ытларах та хĕрÿлĕ ђăвашшем авал пăлхарсем пулнă тесе тарăхса кăтартма тăрăшаççĕ. Çапла хĕрÿлĕ тавлашма авал пысăк сăлтав пулнă: пуршуаслă наукка ĕлĕк пур тĕнђери халăхсене икĕ пайа уйăрнă: пĕрне историллĕ халахсем тенĕ, тепĕр пайне историсĕрлĕ халăхсем тенĕ. историллĕ халăхсем тесе авалран уйрăм патшалăх, натсилĕ куљттурă тунă халăхсене калана, çавăн пек халăхсем халĕ те хăйсен ирĕкĕпе ытти халăхсене пăхăнмасăр пурăнма пултараççĕ тенĕ. историсĕрлĕ халăхсем тесе авалран патшалăх та, натсиллĕ куљттура та тăвайман халăхсене калана, çавăн пек халăхсем халĕ те, малашне те хăйсен ирĕкĕпе пурăнаймаççĕ, çавăнпа вĕсем историллĕ натсисен пусмăрĕ айĕнђе тапаланса пурăнмалла тенĕ. Анђах револютси çак вĕрентĕ-

вĕн йăнăшне, вăл парахăçлăхне виттĕрех кăтартса паҫĕ: халĕ Раççейре кирек йепле халăх та хăй ирĕкĕпе пурăнма пултарать.

Сăмах вĕçĕнҫе çак самана çинҫен çакна калас пулать: Пăлхари самани ҫăваш халăхĕ хăй ĕмĕрĕнҫе йўрĕклĕ пурăнăç йĕркинҫен пăҫах писсе, кĕтўусравлă хуçалăх йĕркипе парахса çĕр ĕçлеме тытăннине, пĕр вырăнта пурăнма тытăннине, йалсем, хуласем, патшалăх туса пурăнма тытăннине пĕлтерет, унтан вăл ҫăваш хура халăхĕ çĕр ĕçлеме тытăнсан çĕр хуçасен аллине ҫураллăха кĕме тытăннине пĕлтерет, унтан вăл ҫăваш халăхĕ авал нăтсилĕ пусмăр айĕнҫе пурăнманнине пĕлтерет. Тата вăл ҫăваш хушшинҫе промăшлĕнăç та, техникка та, кулҫттурă та авалранах пулма тапратнине пĕлтерет. Унтан тата вăл *ҫăваш халахĕ те вырассемпе, ытти йевроппăри нумай халăхсемпе пĕр вăхатрах тенҫен историлле арени çине тухма тапăнсп пăхнипе пелтерет.*

Тутар периоҫĕ. XIII-мĕш ĕмĕрте Аçирен Атăл çине тутарсем-монколсем килсе пусаççĕ. Çак хайар йўрĕкçĕсем авалхи вырăс вăрçисемпе вăйран тайăлнă Пăлхарийе çăмăллăн хăйсене пăхăнтараççĕ. Унтан тутарсем вырăс çĕрĕсене те хăйсене пăхăнтарса куланай тўлеттерсе тăмалла тăваççĕ. Малтан тутарсем патшалăхне Атăлăн айал йенҫе тăваççĕ, ăна Ылтăн Урта йаҫĕ параççĕ. Çак вăхăтран пуçласа пирĕн çĕрте хура халăхшăн тата та йăвăртарах пурăнăç тытăнать. Пирĕн çĕршыв урлă йалапах каллĕмаллĕ пĕр пĕрипне кĕрешекеп тутар çарĕпе вырăс çарĕ çўрет. Пăлхарсем малтан тутарсене хирĕç тăма тапăнаççĕ, тутарсем вĕсене çавăншăн нумай хулисене, йалĕсене çунтарса пĕтерсе, етемсене вĕлерсе пĕтерсе тавăраççĕ. Çакна кура ҫăваш хура халăхĕ авалран йышăннă Атăлăн сулахай йенҫи ирĕклĕ çĕрĕсене парахса, Атăл урлă каçса Сăрă сĕм вăрманĕсен ăшнелле сулăнать, çак вăхăтра ҫăвашшенҫен нумайĕпĕ тутарсенҫен çăлăнас тесе вырăссем патне Сустăҫ çĕрне те тарса ўкеççĕ. Тутарсем Ылтăн Уртара вырăнаççан пĕр вăхăта пăлхарсене те, вырăссене те куланай çеç тўлесе хăйсен ирĕкĕпе пурăнмалла тăваççĕ Анҫах çапла канлĕ пурăнăç питĕ кĕске вăхăта пырать: тутарсен йаланах вĕсене хирĕç тапăнакан вырăссемпе вăрçмалла пулать, çавăнпа çулран çула Пăлхари çĕрне йе тутарсем йе вырăссем пырса пусмăрласа хуласемпе йалсене çаратса кайаççĕ. Çапла пĕр икçĕр çул иртсен пăлхарсен хулисем пăҫах пĕтсе лараççĕ. Çав вăхăтрах малтан Атăлăн айал йенҫе Каçпи тинĕсĕ таврашĕнҫе вырăнаçнă тутарсем çўлелле хăпарса пирĕн çĕршыва колонисаттсилеме тытăнаççĕ: пирĕн таврара çĕнĕ хуласем тăваççĕ, авалхи пăлхар хулисене пурăнма вырăнаçаççĕ. Йўрĕклĕ пурăнăçпа пурăнакан тутарсем пăҫах хулари пăлхарсен кулҫттурĕне пăхăнса йышăнмалла пулаççĕ: вĕсенҫен хуласенҫе те, йалсенҫе те пĕр вырăнта пурăнмалли пурăнăç йĕркине йышăнаççĕ, тырă ĕçне, сутилў ĕçне хăнăхма тытăнаççĕ, тĕрлĕ ăсталăха вĕренеççĕ, çав хулари пăлхарсенҫенех вĕсем ислам тĕнне те йышăнаççĕ. Пăлхарсем хăйсем те тутарсемпе пĕрлешшме тăрăшаççĕ: вĕсем тутар ханĕсен çумĕнҫе тĕрлĕ

выранçене кĕме тăрăшаççĕ, тутарсемпе сутилŷ таваççĕ, пĕр тĕне йышăнсан пĕр пĕринпе хĕр парса хĕр илме те тапратаççĕ. Çапла хуларн пăлхарсемпе тутарсем хутшăннипе çĕнĕ халăх пулса тăрат, çав халăх çурмалла пăлхарла—тутарла калаçма тытăнат. ăна пăлхарсем те, тутарсем те тесе ђĕнме тытăнаççĕ. XV-мĕш ĕмĕрте пирĕн çĕршывăн пуçхули Хусан (ăна тутарсем 1278 çулта тунă) пулса тăрат, вара Пăлхари натшалăхĕн йађĕ те сухалат. ун вырăнне Хусан патшалăхĕ пулса ларат, йеррипен пăлхар халăхĕн йађĕ те çухалат, ун вырăнне „хусансем" йе „тутарсем" тенĕ йат тухат. Çав вăхăтрах йалсенђе пурăнакан, авалхи пăлхар ђĕлхипе калаçакан халăха ђăваш тесе ђĕнни пуларат. Çапла ђăваш йађĕ историре питĕ кайран çеç паларни ăнламалла мар йапала пек туйăнат, анђах тĕплĕ шухăшласан унтан пĕртте тĕлĕнмелле мар: тĕнђери историре йатне улăштарман халăх та сахал, унтан каллех тĕнђере халăх хăйне йепле ђĕнет, ăна йут халăхсем те çапла ђĕнни те сахал. Пирĕн историçĕсен шухăшĕпе ђăваш йађĕ тĕп авалранах пулма пултарнă (ун çинђеп епĕр историйĕн пуçламăшĕнђех калаçаттăмăр). анђах авалхи кĕнекеçĕсем йе ђăвашшепе уйрăм пĕлеймен, йе авалран ђăвашшене асăнса çырнă кĕнекесем çухалнă, йе авалхи ђăвашшене ытти халăхсем урăх йатпа ђĕннĕ, çапла урăх йатпа ђĕнме пултарнине пире çакă кăтартат: пăлхарсене Атăл çинĕ вырăнаççан малтанхи пуçхули йађĕпе кĕнекеçĕсем, пŷлер халăхĕ, тенĕ, кайран Пăлхар хули йађĕпе авалхи йатпа, пăлхар, теме пуçланă, йулашкинђен тутарсемпе хутшăнсан вĕсене, Хусан халăхĕ, тенĕ. Н. И. Ашмарин шухăшĕпе ђăваш йађĕ авалран пулнине тата ак мĕн виттĕр кăтартса тăрат: çармăссемпе мишерсем хусан тутарĕсене ђăваш йађĕпе ђĕнеççĕ, çакă çармăссемпе мишерсем тутарсене ђăваш çĕршывне килсе пусса ђăваш вырăнне шăнăçнипе ђăвашшем тесе ђĕнме пултарнине пĕлтерет. Кирек мĕлле пулсан та: ђăвашшем авалранах уйрăм ђăваш йатлă тŷрк йăхĕ пулни йе пулмани, йе вĕсене пăлхарсен йађĕ пĕтиђђен тŷрех пăлхарсем тесе йе тата урăх йатпа ђĕнни йе ђĕнмени - пирĕншĕн пурĕпĕр, епĕр çакна çеç пĕлмелле: Пăлхари патшалăхĕн пуçламăшĕнђех ђăваш ăрăвĕ пирĕн çĕршывра пурăннă, çав патшалăхăн тĕп халăхĕ пулнă. Çав патшалăха нумай çĕр çул иртсен тутарсем килсе салатсаç, тутар патшалăхĕ тунă, çав патшалăхра тутар ханĕсене пăхăнса ђăваш халăхĕ пурăнмалла пулнă.

Ђăваш хура халăхĕн пурăнăçĕ çак саманара питĕ йăвăр пулнă. Пĕр вырăнта çĕр ĕçлесе тирпейлĕ пурăнма хăнăхнă ђăвашшене йаланах хĕвелтухăçпа кăнтăр йенђе тутарсемпе тĕрлĕ монколсем пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçса çŷрекенскерсем пыра пыра антăратнă, пусмăрланă çаратнă; ђăваш çĕрĕ урлă йаланах çав кођђевниксен çарĕ çŷренĕ. кăшт хирĕç тăрсанах авалхи хуласемпе йалсене çĕмĕрсе, çунтарса пĕтернĕ. Пыра киле çав кођђевниксем ђăвашшен лайăх çĕрĕсене ирĕксĕрлесе йышăна пуçланă, вĕсене колонисаттсилеме тапратнă. Ђăвашшен тăвантарах култтурлăрах хула çыннисем, йалсенђи улпут-

семпе тӳресем, тӗрлӗ ирӗклӗрех пуранакан сутилӳҫӗсемпе тӗрлӗ ремеслаҫӑсен сословисем ҫасах тутарланса кайнӑ. Юлсенҫе пуранакан ҫаваш хура халӑхӗ ирӗксӗрех сивӗне хӗвеланаҫ йенне наҫар вӑрманла ҫӗрсене куҫҫа тармалла пулнӑ, ӗмертен йана кулҫтгура тымарӗнҫен таталмалла пулнӑ. Унтан хура халӑхӑн пурнӑҫӗ ак мӗншӗн йавӑрланса пынӑ: Пӑлхари патшалӑхӗ канлӗ патшалӑх пулнӑ, вӑл нумай ҫар тытса вӑрҫҫа ҫӳреме йуратман, тутар ханӗсем питӗ вӑрҫма йуратнӑ, йалан тӗнҫене пахӑнтарашшӑн тапаҫнӑ. ҫавӑнпа ҫак саманара ҫавашпене вӑрҫӑ йавӑрлӑхӗ ытларах тивнӗ. Тутарсен патшалӑх йӗрки те хура халӑхшӑн усалтарах пулнӑ: правиттӗлҫстви вӗсен питӗ йышлӑ, питӗ ҫаткан та пулнӑ. Тытӑм йӗрки ҫак патшалӑхра ҫапла пулнӑ: патшалӑх пуҫӗнҫе хан тӑнӑ, пӑтшалӑха тытса тӑма хана аристократлӑ сослови пулӑшнӑ. ҫав сослови ҫарпуҫлӑхӗсенҫен, мӑрсасенҫен, унтан кнеҫҫен йӑхӗсенҫен караҫсемпе пексенҫен пулнӑ, ҫак сословисен тӗрекӗ тӗрлӗ ҫар комантисенҫен улансемпе хусахсенҫен тӑнӑ; ҫавашшемпе ытти таврари халӑхсем крепаҫлӑ правӑпа пуранакан хура халӑх вырӑнӗнҫе мӑрсасемпе пексене пӑхӑнса, ӗҫлесе, кулапай тӳлесе пуранмалла пулнӑ; ҫак мӑрсасемпе пексем хайар та, ҫӑткан та пулнӑ; ӑҫта ҫаваш хура халӑхӗ авалхи ҫаваш тӑрӑнӗсемпе улпутсен аллинҫе пуранна—вӑл та йавӑртарах пуранаҫа лекнӗ: хансем хӗснипе, унтан мӑрсасемпе пексен усаллӑхне кура ҫаваш ҫӗр хуҫисем те ытларах ирсӗрленнӗ. Хусан патшалӑхӗнҫе вӑтам сослови мулласемпе хула ҫыннисем пулнӑ. Мулласем патшалӑхра питӗ пысӑк хӑват илнӗ, вӗсем ислам тӗнне йышӑнман ҫавашшенҫен те хайсене тӑранма мӗн кирлине илме тӑрӑшнӑ, унтан ҫавашшене пусмӑрласа ислам тӗнне йышӑнтарма тӑрӑшнӑ. Хула ҫыннисем авалхи йӑлапа сутилӳпе кӗрмешнӗ, анҫах ҫак ӗҫ те хура халӑхшӑн питӗ хӑрушӑланса кайнӑ: тутар ханӗсен вӑрҫӑсенҫе тыткӑна илнӗ ҫура хисепсӗр нумай пулнӑ, ҫав ҫурасене хансен тарҫисемпе сутилӳҫӗсем Пуххара ҫӗрне леҫҫе сутса пуранна, ҫапла вӗсем ҫасах тӑп пуранакан йал ҫыннисене те тытса кайса Аҫийе ӗмӗрне ҫуралӑха сутса айкашнӑ. Патшалӑхра ҫарусӑр йӗркепе усалланса сутилӳҫӗсем ытти йенҫен те нумай ирсӗр ӗҫ тунӑ. Малтан тутарсемпе вырӑссем пӗр пӗрне пӑхӑнтарашшӑн кӗрешнӗ вӑхӑтра Атӑл тӑршшӗнҫи вак халӑхсем ҫак ӗҫе хутшӑнмасӑр тӑнӑ, анҫах пыра киле Хусан патшалӑхӗ пусмӑрланаҫем пусмӑрланипе кура ҫавашшем вырӑссен йенне сулӑна пуҫланӑ. Вырӑссем Хусан патшалӑхне илиҫҫенех 1550-мӗш ҫулта пирӗн таврара Сӗве хулине тусан, Атӑлӑн сылтӑм йенҫи ҫавашшемпе ҫармӑссем тутар патшалӑхӗнҫен уйарлса вырӑссене пӑхӑнатпӑр тесе сӑмах панӑ, ҫавӑншӑн вӗсене Хайар Иванӗ кулапай сахалтарах тӳлемелле тесе ылттӑн ҫыру панӑ. Ҫакна илтсен Арск таврари Атӑлӑн сулахай йенҫи ҫавашшем хӗҫпӑшалпа Хусана хан патне пынӑ та ӑна вырӑс патшалӑхне пӑхӑн тесе хушнӑ. Вырӑссем Хусана илешшӗн вӑрҫнӑ вӑхӑтра та ҫавашшем вырӑс ҫарне ӗҫмеҫиме леҫҫе тӑнӑ, унтан вырӑс ҫарӗпе

пӗрле тутарсене хирӗç вак халӑхсен утлӑ çарӗ те кӗрешнӗ. çав çарта та ђӑвашшем те пулнӑ пулмалла. 1552-мӗш çулта вырӑссем Хусана илнӗ, тутар патшалӑхне пӗтернӗ.

Вырӑссене пӑхӑнса тӑнӑ самана. Çак саманана тӗрӗсрен вырӑс патшисене пӑхӑнса тӑнӑ самана теме кирлӗ, вал XVI-мӗш ӗмӗрен çурринђен пуçласа халђи революцийђенех пынӑ. Çак 400 çул тӑршшӗлле самана çинђен питӗ нумай çырма пулаť, мӗшӗн тесен, çав саманара пулнӑ ӗççем пире виттӗр палла. Çак вӑхӑтран пуçласа ђӑваш историйӗ вырӑс историйӗпе, ытларах та ђӑваш хура халӑхӗн историйӗ Раççейӗн хресђен историйӗпе уйрӑлми çыхӑнса тӑраť. Кам Раççей историне лайӑх пӗлет, çав ђӑваш историне те ђухлама пултараť. Çавӑнпа ђӑваш историне тӗплӗрех пелес тийекенсен Раççей историне, ытларах та Атӑлтаврари историне тӗплесе пӗлме сунса. епӗр çак самана çинђен питӗ кӗскен каласан та йураť тесе шут тытрӑмӑр.

Çак саманан малтанхи икӗ ӗмӗрне *вырӑс колонисатси* самани теме кирлӗ. Епӗр пелетпӗр, вырӑс историйӗ ђантан Тнеппар шывӗ, Кийев хули таврашӗнђе IX-мӗш ӗмӗрте пуçланса кайаť. Çак саманара Атӑлтан питӗ айакра пурӑнсан та вырӑссем йаланах Пӑлхари çӗрне вӑрçапа киле киле кайнӑ. çав вӑрçӑсем çинђен калама пирӗн выран пулмарӗ, çапах пӗр йапалана халӗ асӑнса илсен йураť: 1183-мӗш çултах Улатимӗр кнеçӗ Всевӑлӑт пӑлхарсемпе çапӑçса Çавал урла Çӗрпӳ патӗнђен каççа иртсе кайнӑ. Çак саманарах Атӑл тарӑх пӑлхарсен хулисенђе нумай вырӑс сутилӳ туса пурӑннӑ. çак вӑхӑтрах вырӑс сутилӳçисем Веткӑ (Нухрат Атӑл) шывӗ хӗрринђе ђапла хула Хлынав туна. Çапах та çак вахатра Вӑтам Атӑл таври тӑрах вырӑссем йалан пуранма хуласемпе йалсемпе вырӑнаçман. Атӑла ђантан колонисатсилеме вырӑссем XIII-мӗш ӗмӗр пуçламӗшӗнђе çеç тытӑнаççӗ. Çав колонисатси вырӑссем Мускав таврашӗнђе хӑватлӑ ерђесе ђантан вырнаççан çеç тытӑнаť. Унђђен малтан вырӑс колонисатсийӗ хӗвеланаçӗнђен хӗвелтухӑçнелле Новкорот тавринђен пиртен айакра çурçӗр йенђен пынӑ. Çав колонисатси çулне пӳлешшӗн 1218-мӗш çулта пӑлхарсем вырӑс хулине Устука илнӗ. Мускав таврашӗнђе халӑх йышлӑлансан вырӑс колонисатсийӗ Атӑл çине Окка шывӗ тӑрӑх пырса тухнӑ. 1221-мӗш çулта Окка Атӑла йухса тухнӑ çӗрте Ђулхула туса лартнӑ. Çапла хӑватлӑ вырӑс халӑхӗ Вӑтам Атӑл таври çине пӗр ђантан пусса колонисатси питӗ хӑвӑрт пирӗн çӗрелле сарӑлма пултарнӑ, анђах çак ӗçе пирӗн таврана паттӑр тутарсем килсе пусни ђарса тӑнӑ. Çавӑнпа вырӑс колонисатсийӗ Ђулхула таврашӗнђен пирӗн çӗршыва 300 çул тӑршшӗпе килсе пӗтӗмпех пусаймасť. XVI-мӗш ӗмӗрте çеç вырас колонисатсийӗ пирӗн çӗр патне çывӑхараť: 1524-мӗш çулта вырӑссем Сӑрӑ шывӗ Атӑла йухса тухнӑ вырӑнта Васильсурск хули тӑваççӗ, унтан ђасах колонисатси йухӑшӗ пирӗн çӗр шыв урлӑ иртсе кайаť: 1550-мӗш çулта Сӗве шывӗ Атӑла йухса тухнӑ çӗрте вырӑссем Сӗве хули тӑваççӗ. Çак

вăхăтран пуçласа пирĕн çĕршыв Мускав патшалăхĕн аллине кĕрсе йулаҫ: Хайар Иван патшалăхĕн кăнтар йенҫи çар сыхласа тăракан ҫикки Сĕвепе Улатăр урлă иртсе тараҫ. Çак XVI-мĕш ĕмĕр тăршшĕпе пирĕн çĕршыва колонисатси хумĕсем йĕритавра çавăрса илеççĕ. XVII-мĕш ĕмĕрте вырăс колонисатсийĕ хăвăртах пиртен айăкри, айаладли Ҫĕмпĕр, Самара, Саратту таврари çĕрсене хупăрласа илет. XVI-мĕш ĕмĕр тăршшĕпех ҫăваш çĕрĕнҫи аслă шывсем хĕрринҫи хуласемпе йалсене вырăссем выранаçаççĕ, нумай çĕрсене, сарапсене, вăрмансене колонисаттăрсем ҫăвашшенҫен ирĕксĕр пусмăрласа илеççĕ. Çапла ҫасах вырăс колонисатсийĕ тутар колонисатси тапратнă ĕçе вĕçне ситиҫҫен туса хураҫ. Ҫăваш хура халăхĕн пурнăçĕ çак вăхăтра йурăхсăр усал пулаҫ: пур çĕршыва Мускав патшин çĕрĕ выранне хисеплеме тапратаççĕ, хура халăх çĕрпе усă курас пулсан Мускав патшин «милăçĕпе» пиллесе парсан çеç çĕртен усă курмалли йĕрке тухаҫ. Пур ҫăваш çĕрĕсене виççе, сырса тухса патшалăх халăх сине цысăк куланай хураҫ; укса куланайне тӳлессинҫен пуçне ҫăвашшем Мускава тырă, пыл, кайăк тирĕсем леççе памалла пулаççĕ. Çав вăхатрах ҫăвашшем патшалăха çар памалла пулаççĕ, çапла вĕсем пăхăнна пăхăнманах Хайар Иван ҫивонипе çапăçнă ҫух, унтан Мускава вырăс пăлхав саманинҫе паҫексенҫен хăтарнă ҫух вырăс çарĕнҫе пулаççĕ. Çапла хура халăх патшалăхшăн нумай йавăр ĕçлесе тăрсан та пурăнаçăн пĕртте йĕрки пулмасҫ: влаç уйессенҫе çарпуçлăхсен аллинҫе пулаҫ, вĕсем халăхна мĕн тăвас тене çавна тăваççĕ. вĕсем хĕтĕртнипе ҫăваш çĕр хуçисем, кнеçĕсем, мăрсисем, турханĕсем, тĕрлĕ улпуҫĕсем те питĕ усаллапаççĕ, çăткăнланаççĕ. халăхран ҫаранми хырçă илсе апăратаççĕ, хăйсене хирĕç тăрсан Мускав патшине хирĕç пыраççĕ тесе вырăс çарпуçлăхĕсене елеклеççĕ. Тӳресем, тĕрлĕ ҫиновниксем пур ĕçе те вçаткăпа çеç тăваççĕ, халăха улталаса суйа хутсем çырса халах çĕрĕсене, çурҫĕсене, арманĕсене турта турта илеççĕ Çав вăхăтрах колонисатси йухăмĕпе килекен вырăс хресҫенĕсем ҫăвашшен çĕрĕ çине ирĕксĕрлесе пыра пыра лараççĕ. хайсем те тĕттемлĕхпе ҫăвашшем çине пурĕ пĕр сын тесе хисеплесе пăхмаççĕ. Çак хурлăхла пурăнаçа патшалăх влаçĕ тата йурахсăра кăлараҫ: ҫăвашшене вырăс хулисен таврашне сывăхарма та хушмаççĕ. Çапла ҫăваш хресҫенĕ авал йышăннă çĕршыв çинҫе йут çĕрте тыткăнра тăшмансем аллинҫе пурăннă пек пуравма тытăнаҫ. Çак усал пурăнаçа кура ҫăвашшем XVII-мĕш ĕмĕрте нумай пăлханаççĕ: вырăс историйĕн пăлхав саманинҫе ҫăвашшем хĕçпăшал çĕклесе те хусахсемпе пĕрлешсе пăлханнă, çав пăлханакансене çĕнтерсен, çарпуçлăхĕ вилнĕ çынсен ӳҫĕсене Шупашкартан 7 çух. тăршшĕпе сарса хума хушнă. ытларах та вĕсем хытă Раçин Çтаппанĕ вăхăтĕнҫе пăлханнă. Раçин пăлхавне пĕтĕм таврари хура халăх хавасланса илнĕ: вырăс хресҫенĕ те, ытти халăхсем те. Çав пăлхавăн лосункĕ çапла пул-

нă: «Кирек мĕлле çын та тепĕр çынпа тан». Çак лосунка пурăнăçа кӳртес тесе Раçин хура халăха пăлхав тапратса пур улпутсене, тӳрессене, усал пупсене вĕлерсе пĕтерме ҫĕннĕ. Пусмăрта, хурлăхпа мăшкăлра пурăнакан ҫăваш хура халăхĕ çак лосăнка ытла та хавас илнĕ. Ҫăвашшем вуласĕ вулăсĕпе пухăнса пухăсем тунă, çав пухăсенҫе „Мускав çарĕ килсен унпа пĕр çын ҫĕрĕ йулмиҫҫен çапăçмалла" тесе ресолҫутсисем йышăннă, çавăнтах пĕрлешпе ҫăваш полккисем, тĕрлĕ отретсем тунă. Çак пăлхав çумне нумай ҫăваш турханĕсемпе улпуҫĕсем те хутшăннă, вĕсем вырăс улпуҫĕсен пусмăрне хăйсен çинҫен сирешшĕн, хура халăха хăйсем тытса тăмалли йĕркешĕн кĕрешнĕ пулмалла. Çапла çак пăлхавра пур ҫăваш халăхĕн класĕсем те кĕрешнĕ теме йурать. Ҫăваш çарĕн хăйĕн утаманĕсем, ессаулĕсем, прапорщиҫăксем пулнă, ҫăваш çарĕ çĕмĕренсемпе, пуртăсемпе, кистенсемпе, сăнăсемпе çапăçнă: çав çарăн нумайăх мар пăшалсемпе тупăсем те пулнă. Ҫăвашшем Мускав çарне хирĕç Ҫикме, Шупашкар, Сĕве, Йетĕрне, Кăрмăш, Çĕрпӳ, Ҫĕмпĕр хулисен таврашĕнҫе темиçе хут çапăçнă. Çак пăлхава Мускав патшисем питĕ хайарăн пусарнă: пăлханакансене çакса, касса, тĕрмесенҫе сăнҫăр хывса вĕлерсе пĕтернĕ.

Пăлхава пусарсан, ҫăвашшен пурнăçĕ тата ытларах йăвăра йулнă. Тата та халăх пăлханма ан пултартăр тесе патшалăх XVIII-мĕш ĕмĕрте халăха тĕрлĕ йенҫен хĕсе пуçланă. Çапла ҫăваш хресҫенсем кӳршĕ вырăсемпе танлаштарсан икĕ хут ытла куланай тӳлемелле пулнă, ҫăвашшен нумай çĕрĕсене те, вăрманĕсене те вырăс улпуҫĕсен, мăнастырсен, патша йатне çырнă, ҫăвашшене йалсенҫе тимĕрçĕ ĕçпе тупăнлама ҫарнă, вĕсене хăйсем тунă йапалана та пасарсенҫе те, йармăккасенҫе сутма ҫарнă, вĕсене хăйсен вăрманĕсенҫе кайăк тытма, шывĕсенҫе пулă тытма паман, ҫăвашшен вăйпитти çыннисене хыснана карапсем тума айăкка хăваласа кайса ĕçлеттерсе аптратнă, унтан ҫăвашшене ĕмĕрне слушпара иртермелле салтака илсе аптăратнă. Унтан çак вăхăтра йăвăр куланайран пуçне хысна хунă пысăк актсиса пула пур халăха кирлĕ тавар питĕ хаклă пулнă, çавăнпа халăх пăҫах пурлăхран тайăлнă, ĕмĕр тухайми парăма кĕрсе пĕтнĕ. Тата йулашкинҫен патшалăх ҫăвашшене тĕне кĕментеп питĕ хĕснĕ: тĕне кĕнĕ ҫăвашшенҫен салтак та, кулапай та илмен, вĕсен парăмĕсене те каçарнă, вĕсене тĕне кĕмен ҫăвашшен çĕрĕсене туртса илсе панă, тĕне кĕмен ҫăваш улпуҫĕсемпе хуçисен çĕрĕсене, çурҫĕсене, арманĕсене ирĕксĕр туртса илмелле уккас тухнă. Çак ĕмĕртех ҫăвашшене нумайĕшне йалĕ йалĕпе Урал саваҫĕсем çумне çырса ирĕксĕр савăтсенҫе ĕçлеттернĕ. Самар кĕпернинҫе икĕ пин ҫăваш Орлов-Тавытăв аллине ҫуралăха кĕрсе ӳкнĕ. Унтан çак ĕмĕртех патшалăх ҫăвашшене кĕтӳсене хăваласа пынă пек шывсен хĕррине салтаксемпе хăваласа анса шыва кĕртсе, вырăс тĕнне пăхăнтарттарат. Çак йăвăр пурнăçа тӳсеймесĕр нумайĕшĕ ҫăвашшем Çĕпĕре тăраççĕ, вăрмапсенҫе пытанса пурăнаççĕ, ирĕкре-

вех вырӑс улпуҫӗсен аллине ҫуралӑха кӗреҫҫӗ, нумайӗшӗ аптӑранӑ йенне мӑсӑҫман тӗнне йышӑнса ҫӑвашлӑха ҫухатса тутарсемпе пушкӑртсен хушшине тарса ӳксе, вӗсемпе хутшӑнса кайаҫҫӗ. Ҫапла пӗр вӑхӑтра Хусан кӗпернинҫи халӑхран тӑваттӑмӗш пайӗ тӑван ҫӗршывпа килҫурта пӑрахса хыснапа усламҫӑсем аптӑратнинҫен хӑтӑлас тесе тӗрлӗ тӗле тарса ҫӳренӗ. Ҫав таркӑн хресҫенсене тивекен куланайа, ӗҫе, салтак парассине вӗсемшӗн пӗр вырӑнта пурӑнакан хресҫенсем тӳсмелле пулнӑ, ҫавӑнпа ҫак хресҫенсен пурнӑҫӗ тата хӑрушӑ наҫар пулнӑ. Ҫак вӑхӑтра вырӑс хресҫенӗн пурнӑҫӗ те йурӑхсӑр йӑвӑр пулнӑ: хресҫенсем пӑҫах улпутсем аллине кӗрсе ӳкнӗ. Ҫапла йӑвӑр пурнӑҫа тӳсеймесӗр хура халӑх каллех пӑлхав тапратнӑ, уп пуҫӗнҫе Пукаҫҫов тӑна Пукаҫҫова та ҫӑвашшем питӗ хаваслӑн кӗтсе илнӗ, вӑл пирӗн ҫӗре килсен ӑна хирӗҫ хура халӑх ҫӑкӑр тӑварпа тухнӑ, вӑл хушнине итлесе тунӑ, ҫапла ҫӑвашшем Ҫӗрпӳре пур улпутсене, тӳресене вӗлерсе пӗтернӗ. Анҫах ҫак пӑлхав та хура халӑха ҫӑмӑллӑх парайман: ӑна ҫасах пусарнӑ, пӑлханакансене вӗлерсе пӗтернӗ. Ҫапла ҫӑваш пурӑнӑҫӗ ӗмӗртен ӗмӗре наҫарланса пыраӗ, ҫӑваш хура халӑхӗн ӗмӗҫӗ тагӑлнӑҫемӗн татӑлса пыраӗ, малашнехи телейӗн шанҫӑкӗ ҫухалнӑҫемӗн ҫухалса пыраӗ.

XIX-мӗш ӗмӗр ҫитет. Ҫак ӗмӗрӗн пуҫламӗшӗнҫе хура халӑх пурӑнӑҫӗ ҫаплах йӑвӑр пулаӗ. XVIII-мӗш ӗмӗрпе танлаштарсан ку ӗмӗрте куланай икӗ хут ытла ӳсет, тӗрлӗ хысна ӗҫне ӗҫлесси те нумай ытла пулаӗ. Ҫав вӑхӑтрах хура халӑхӑн халӑх ӗрҫенипе, унтан хыснана йе улпутсемпе усламҫӑсене тӗрлӗ сӑлтавпа халӑх ҫӗрне касса пынипе ҫӗр тӑварланса пыраӗ, ҫакса ҫитеймин пулаӗ. Ҫак вӑхӑтра Рӑҫҫейре крепаҫлӑ правӑ хытса ҫитет, пур хресҫен те уп мӑйкӑҫне сиккеленеймин кӗрсе ӳкет. Ҫак саманара оплӑҫри ҫӑвашшем пуринҫен нумай хысна хресҫенӗсен шутӗнҫе хисепленсе, хыснана ӗҫлесе тӑраҫҫӗ, оплӑҫа Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫен куҫнӑ ҫӑвашшем утил хресҫенӗсен шутӗнҫе тарса пагшасеп йӑхӗшӗн ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Унтан ҫӑвашшем лашмансем пулаҫҫӗ: вӗсем карапсем тума йурӑхлӑ хысиан йуман вӑрманӗсене хуралласа, касса, туртарса пурӑнаҫҫӗ. Унтан тата кунги ҫӑвашшен хушшинҫе нумайах мар отставккӑри салтаксен йӑхӗсем пурӑннӑ: вӗсен аҫисем пӗр ывӑлган пуҫне пурте салтака каймалла пулнӑ, тата ҫӑвашшен хушшинҫе мӑнастырсен хресҫенӗсем пулнӑ. Катари ҫӑвашшен хушшинҫе ҫак вӑхӑтра нумайах мар хусахсем, тептерсем, савӑтсемпе хӑпрӑксен хресҫенӗсем пулнӑ. Ҫапла пурӑнакан ҫӑваш хресҫенӗсен пурӑнӑҫӗ улпутсен аллинҫе пурӑнакан хресҫенсен пурӑнӑҫӗнҫен уйрӑмах пулман: вӗсене улпутсен вырӑнне тӗрлӗ ҫиновникссемпе тӳресем ирсӗр пусмӑрласа пурӑннӑ. Ҫапах та ҫак саманара хресҫен пурӑнӑҫне кӑшт ҫӑмӑллатакан йапаласем те пулкалаҫҫӗ: хресҫенсем ҫӗр сутӑн илме пултараҫҫӗ, ҫӗр тӑвӑр пулсан урӑх ирӗклӗ ҫӗре куҫма пултараҫҫӗ, ҫӑвашшем аластисен таварне тӑварпа ситсӑ тав-

рапне пасарсенҫе те, хуласенҫе те, сутма та, илме те пултараççĕ. ҫăвашшем тĕрлĕ потрет çĕклесе илме пултараççĕ тесе саккунсем тухаççĕ. Унтан ҫăвашшем патшалăх вырăнĕсенҫе ĕççене суйланă çынсем урла çÿретме пултараççĕ, çыру пĕлекен ҫăваш хресҫенĕсем йалсенҫе патшалăх вырăнĕсенҫе ларма пултараççĕ, ҫăваш хресҫенĕсем хуласене куçса хуçа йе мешҫене тухма пултараççĕ тесе уккассем тухаççĕ. Патшалăх ҫăваш хресҫенĕсен хушшинҫи çĕре тикĕсрех касас, сахал çĕрлĕ хресҫенсене хĕвелтухăçнелле куçарас, хресҫене çĕре ҫинертерех ĕçлеме вĕрентес, сат, пахҫа ĕçне малалла йама хăнăхтарас, шкулсем те уçас тесе тăрăшна пек тăваĭ. Çакна патша тăрçисем хресҫенрен нумайрах усă илес тесе, тăрăшнă, унтан çак саманара хăшĕ вырăс ҫиновниксемпе улпутсем XVIII-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнҫе пулна аслă хрантсус револҫутсийĕн итейсемпе, Раççейре револҫутси тапратма шухăшланă теккаристсен итейсемпе паллашнă пулнă, çавăнпа вĕсем хăшпе ҫунтан та халăх пурнăçне çăмăллатас тенĕ пулĕ. Анҫах хура халăха ҫуралăхран ирĕке кăларипҫен ун пуранăçне пимĕнле майпа та çăмăллатма майĕ пулман. Выҫăхпа йăтă вырăпенҫе патак сисе пурăнакан хура халăх, малашнехи ĕмĕтне шанҫака çухатнă халăх хуçалăха йеркелесе пурнăçа лайăхлатасси çинҫен нийепле те шухăшлама пултарайман, шухăшлама та йураман. Çавăнпа вăл унҫухнехи пуçлăхсем хăш ырă сунса калана сăмахсене, хуçалăха лайăхлатма усăллă катартусене те йышăнма пултарайман, çапла XIX-мĕш ĕмĕрен варринҫе хысна ҫăвашшене çĕрулми лартма вĕрентме тытăннĕ. Çакна хирĕç ҫăваш хресҫенĕсем нумай тĕлте хĕрÿллĕ вирелле тăнă. Акрамăв вуласĕнҫе нысăк пăлхав та пулнă, çав пăлхава Хусантан çар ыреса çеç пусарнă. ҫăвашшем хушшинҫе хысна уçна шкулсене те халăх йышăнашшăн пулман. Çак пин сул тăршшĕпе çĕр ĕçлесе пурăннă ҫăваш халăхĕ çĕрулмирен йутшăнса хĕçпăнзал çĕклени питĕ нумай йапалана пĕлтерет: вăл ҫуралăхра пурăннă халăх питĕ тĕттем пулнине, хуçалăха лайăхлатас тесе шухăшлама та маннине, патшалăх йĕркине, аслăлăх кăтартăвĕсене кураймасăр тăнăне пĕлтерет. Çакăх тепĕр йенҫен ҫăваш йалхуçалăхĕ мĕшĕн пирĕн ĕмĕрҫенех Пăлхари патшалăхĕнҫех йышăнна йĕркепе пĕр вырăнта шăнса, хытса ларнине пĕлтерет. Çапла хресҫен ҫуралăхра пăнҫахса пурăннине пурнăçа малалла йарайма пултарайманни пĕтĕм Раççей историнҫен те паллă: патшалăхра йалхуçалăхне ҫăнтан урапа çине лартасеп, промашленăçа ҫантан тапратса йарасси хресҫене ирĕке кăларипҫен пулма пултарайман. Çавăнпа патшалăхăн ирĕклĕ ирĕксĕрех хресҫене ирĕк памалла пулнă. Епĕр пĕлетпĕр, çакă XIX-мĕш ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенҫе пулнă.

Çак вăхăтран пуçласа пĕтĕм Раççей хресҫенĕн те, ҫавашшен те авалхинҫеп нумай лайăхрах пурăпăç тытăпаĭ. Анҫах ҫăвашшен вĕсене хыснапа утил пусмăрĕнҫен кăларсан та çĕр пĕрте саралмасĭ, çапах та вĕсем хăйсен çĕрне хăйсем

хуҫа пулса тӑрсан вӗсен пурлӑхӗ лайӑхланаҭ. Унтан йалсемпе вулӑссенђе патшалӑх тытӑмӗ халӑх ҫуйланӑ ҫынсен аллине кӗрсен, ҫемствӑсем тусан, салтак служппне кӗскетсе салтака ытти сословисене те иле пуҫласан, ҫӗнӗ тӗрӗслӗрех сут йӗрки тусан, хресђен хӑй ирӗкӗпе кирек ӑҫта ҫӳреме пултарсан — халӑх кӑшт сывласа йараҭ. Ҫак вӑхӑтрах ђӑвашшене ҫырӑва вӗрентес ӗҫ тапранса кайаҭ. Анђах самотершавлӑ патшалӑх йӗрки халӑх ирӗклӗрех пурӑннине тӳеме пултарайманҭ, ҫавӑнпа вӑл ђасах хресђене тӗрлӗ йенђен мӑйкӑҫласа илет: ҫемствӑсене улпутсен аллине параҭ, хресђене ҫемски натђаԓниксемпе уретниксен аллине параҭ, хресђен ҫине хунӑ куланайа ӳстерет, халӑха вӗрентес ӗҫе пусарма тапратаҭ, пур патшалӑхри ырлӑха творенсене ҫеҫ парса тӑрса хресђен пурлӑхне тӗрлӗ йенђен сийен тӑваҭ, патшалӑхра промӑшлӗнӑҫа аслӑлатассипе ђарса тӑраҭ. Ҫапла XIX-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнђе каллех Раҫҫейре пӗтӗм халӑхсем, ђӑвашшем те питӗ йапахса кайаҫҫӗ. Ҫапла йапӑхнипе 1905-мӗш ҫулта револԓутси тапранса кайаҭ. Ҫак револԓутсийе ђӑвашпем те питӗ хавассӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ђӑваш хура халӑхӗ тинӗс пак хумханса кайаҭ: хресђенсем пӗрлешпе патшалӑхпа кӗрешме ушкӑнсем тӑваҫҫӗ, хысна, улпут, утил ҫӗрӗсене ирӗксӗр туртса илме тапратаҫҫӗ, вӑрмансене касаҫҫӗ, улпут ҫурђӗсене ҫӗмӗреҫҫӗ, политсийе, ҫемски натђаԓниксене хӑвалаҫҫӗ; уйрӑм ушкӑнсем хӗҫпӑшал ҫӗклесе террор йӗркипе патша правиттӗлствипе кӗрешеҫҫе: хура халӑхпа пӗрле ђӑваш иптелликентсийӗ те пӗтӗмпех револԓутси йенне ҫуланаҭ: унӑн хушшинђе темократтилӗ те сотсиалисӑмлӑ та вӗрентӳсем сарӑлаҫҫӗ, тӗрлӗ ҫав саманари Раҫҫейри политтикӑлӑ парттисен ушкӑнӗсем те пулса тӑраҫҫӗ, унтан ђӑваш иптелликентсийӗ хушшинђе тӗрлӗ натсионаллӑ ушкӑнсемпе пӗрлешӳсем пулса тӑраҫҫӗ: кӗсем ђи малтан натсиллӗ куԓтурӑ тума ирӗк илешшӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтрах ђӑвашшен хушшинђе пролеттариат та йӑтса ӳсмӗ тапратпи паллӑраҭ: Хусан хапрӑксемпе саваҭђӗсенђе, унтан Урмарта мапеԓ хапрӑкӗнђе ӗҫлекенсем револԓутсишӗн кӗрешме пӗрлешеҫҫӗ, ђӑвашшен хушшинђе сотсиал-темократтилӗ парттийӗн йӑвисем те пустарӑнма тапратаҫҫӗ. Ҫапла ҫак вӑхӑтра ђӑваш хура халӑхӗ класслӑ та натсиллӗ пусмӑра хӑй ҫинђен сирсе пӑрахашшӑн вӑйпа кӗрешме тытӑнни палӑраҭ. Ҫак револԓутсийе патша правиттӗлстви ҫӗнтерсе пусараҭ, вӑл 1917-мӗш ҫулта нарӑс уйӑхӗнђе ҫӗнӗрен тапранса патшана персе ӳкерсе: хӑй ҫийеле тухаҭ. Анђах ҫак револԓутсийӗн пуҫӗнђе пуржуаслӑ классем тӑнипе вӑл патшалӑхан самотершавлӑ йӗркипе темократтилӗ йӗркепе ҫеҫ улӑштарса капиталисӑм йеркипе ӗлӗкхи пекех хӑварма тӑрашаҭ, натсилӗ ыйту тӗлӗшӗнђен вӑл халӑхсене куԓттурлӑ самоопретелени парассипе ҫеҫ йыпӑнаҭ. Ӗҫлекенсемпе хресђенсене кӑмӑлпе ҫак прокраммӑ тултарма пултараймасҭ, ҫавӑнпа вӗсем йупа уйӑхӗнђе ҫӗнӗрен ҫӗкленсе [illegible]эслӑ классене пӑрса пӑрахса. Раҫҫейре Кававшпен [illegible]

хураççӗ Çак уйӑхран Раççей ӗçлекенӗсемпе хресҫенӗсен çӗнӗ пурӑнӑç тытӑнат: вӗсем хӑйсен пурӑнӑçӗн хӑйсем хуçа пулса тӑраççӗ. Çак револютсиренех пӗтӗм ҫӑваш хура халӑхӗн çӗнӗ историллӗ еппохӑ тапранат: ҫӑвашшем 700-çул тӑршшӗпе аптӑратса тӑнӑ натсилӗ пусмӑра сирсе пӑрахса хӑйсен çӗрӗнҫе хӑйсен ирӗкӗпе пурӑнмалли йӗрке туса тӗнҫен историллӗ аренӑ çине пусаççӗ.

Çапла ӗнтӗ пирӗн историйӗн тӗп еттапӗсем çакӑн пек палӑраççӗ: Христос çуралиҫҫен нумай пин çулсем малтан историҫҫенхи саманара ҫӑваш йӑхне пуçласа йаракан етемсем Аçийӗн хӗвелтухӑç йенерех çӗрсенҫе хир вӑрман кайӑкӗсем пек нимӗн ӗçле пӗлмесӗр мӗн килнӗ унпа тӑранса пурӑннӑ: унтан пыра киле вӗсем ҫултан орутисем тума вӗренсе, кайӑксене, пулӑсене тытса, çӗре те патаксемпе ҫавалакаласа тырӑ аккаласа тӑранса пурӑннӑ пулмалла; малтан çак саманара етемсем кӗтӗвӗ кӗтӗвӗпе пурӑннӑ: вӗсен çемйе йе ӑру тавраш, авлану йӗрки, уйрӑм арçын пӗр хӗрарӑмпа пурӑнас йӗрке таврапӗ пулман: çӗр ӗçлеме малтан хӗрарӑм тытӑннӑ теççӗ: вӑл аҫасене сыхласа пӗр вырӑнта пурӑнса, аҫисене çимӗç шыраса тырӑ ӳстерсе усӑ курма мел тупнӑ, çавӑнпа çак самапара ӑрусен пуçӗнҫе хӗрарӑм, ама тӑнӑ. Пӑхӑрпа тимӗр ӗмӗрӗсен саманинҫе çав етемсен уртисене ытти халӑхсем Аçийӗн ирӗклӗ çеçенхирӗсем çине тӗртсе кӑлараççӗ, çак çеçенхирсене пулӑ вӗсем кӗтӳсем усраса, вӗсене пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна куçça çӳресе тӑрантарса пурӑнма тапратаççӗ. çак кӗтӳсене арçын кӗтсе усраса çӳренӗ, çавӑнпа çак саманара ӑрусен пуçлӑхӗ арçын пулса тӑрат, çак вӑхӑтсенҫе çынсем уйрӑм çемйесемпе пурӑнма тытӑнаççӗ, çак вӑхӑтрах çак ӑрусем выҫӑх çимӗппӗн пӗр нӗрипе йалана çапӑçаççӗ, хӑш ҫухне пӗрлешпе куçça çӳренӗ ҫух тӗл пулакан ытти йут йӑхсемпе çапӑçаççӗ. çапла çак йӳрӗкçӗсем вӑрçӑ йенне ӑсталанаççӗ, вӗсен çар пуçлӑхӗсем ӗмпӳсен влаçне йышӑнаççӗ. Çак йӗркепе ҫӑвашшен аслашшӗсем Христос çуралсан малтанхи ӗмӗрсенҫе Атӑл çине килсе тухаççӗ. Атӑл таврашӗнҫи вӑрманлӑ çӗрсем çине шырса тухнипе унтан кайалла Аçи йеннелле ытти халӑхсем хӗснипе кайма майӗ пулманнипе. вӗсем ирӗклӗ·ирӗксӗрех çӗр ӗçлесе пӗр вырӑнта пурӑнма тапратаççӗ. Çерем уçса уйсем тума, вӑрман касса, хӑртса, çунтарса, тымар кӑларса тырӑ пусенсем тума уйрӑм çемйесемпе уйрӑм пӗҫик ӑрусем пултарайман—вӗсем пӗрлешпе ӗçлесе çеç ӑна тума пултарнӑ- çапла йалпа халӑхпа пурӑнас йӗрке тухса кайнӑ. Малтан йалсенҫе çӗр ӗçлесе тупнӑ пурлӑха пӗрле уйрӑм пысӑк ӑрусем тытса тӑнӑ. пыра киле çӗре тырӑ акма килӗшӳлӗ тусан нумайӑн пӗрле пурӑнма нуши пулман, çавӑнпа ӑрусем пӗҫиккӗленнӗ çемӗн пӗҫӗкленсе пынӑ, кайарах кашни çемйе хӑй килçуртӗнҫе пурӑнмалли йӗрке тухса кайнӑ, пӗр арпа пӗр ама пурӑнмалли йӗрке те çак вӑхӑтсенҫе пулса тӑнӑ. Çапла йалсемпе çӗр ӗçлесе пӗр вырӑнта пурӑнмалли йӗркерен патшалӑх йӗрки тухса кай-

нă: пĕр вырăнта тырă акса каплĕ пурăнма тĕреклĕ тытăм йĕрки кирлĕ пулнă, куçса çӳрекен халăхсем пусмăрлассине сирсе тăма, тăшмансене парăнмасăр çителĕклĕ вăйлă хӳтлĕх кирлĕ пулнă. Çапла Пăлхари патшалăхĕ пулса тăнă. Малтан ҫăваш хура халăхĕ çак патшалăхра ирĕклĕрех пурăннă: вăл çарпуç-лăхĕсемпе тӳресене куланай натурăпа тӳлесе тăнă, хăй çĕр ирĕккĕннипе пĕр тĕлтен тепĕр тĕле куçса ларма пултарнă. Анҫах ҫасах ҫăвашшен пурăнăçĕ ытларах хĕсĕнмелле пулнă: Атăл шывне пула Пăлхарире тĕнҫипе сутилӳ тапраннă, аслă хуласем пулса тăнă, сутилӳлĕ капитталисăм çуралса, аталанса вăйлăланнă. çĕр ĕçе паракан тавара сутса илсе тупăш курмалли йĕрке тухса кайнă. Çавăнпа çарпуçлăхĕсемпе тӳресем ҫăваш йалĕсене хăйсен аллине илсе, вĕсен çĕрĕсене хăйсен çĕрĕ, вĕсем хресҫенĕн хуçисем тесе хура халăха алла илсе ĕçлеттерсе тăма тытăннă. Çапла ҫăваш халăхĕн пĕр йенҫен тăрăхсен, турхансен, улпутсен классĕ, тепĕр йенҫен хура халăх классĕ пулса тăнă. Унтан сутилĕве пула укçаллă хуçалăх тапранса кайсан, патшалăх та, улпутсем те ҫăваш хура халăхне куланай натурăпа çеç мар, укçан та илсе аптăрата пуçлапă. Çак вăхăтрах улпутсем хăйсен çине ĕçлеттерсе тăма ҫурасем тытса тăрас йĕрке те тухса кайнă. Çапла ҫăваш çĕрне тутарсемпе вырăссем пусиҫҫенех пирĕн хвеоталлă йĕрке пулнă, çав йĕркĕ крепостлă йĕркене çавăрăнасси те палла пулнă. Анҫах тутарпа вырăс колонисатси тапраннипе çак йĕрке пĕтемпех пулса тăраймаи, вăл урăх çулпарах кайнă: тутарпа вырăс колонисатсийĕ пирĕн улпутсен классне паҫах пĕтернĕ, ҫăвашшем патшалăхпа утилĕн крепăстлă пусмарĕнҫе пумай ĕмĕр иртермелле пулнă. Ҫăваш çĕрĕ вырăс патшалăхне кĕрсе ӳксен—ҫăваш хура халăх историйĕ вырăс историйĕн çулĕпе пырать; ун çинҫен епĕр малтах каласаттăмăр, çавăнпа халĕ йулашки сăмахра çакна çеç калăпăр: ҫăвашшем вырăссен аллине Мускав патшалăхĕнҫе сутилӳлĕ капитталисăм вăйлăланса çитсен кĕрсе ӳкеççĕ, çавăнпа та колонисатсийĕн малтанхи кунĕсемех ҫăваш хура халăхешĕн тӳсме çук йăвăр пулаççĕ: пур колонисатеп вăхăтенҫи ирсĕр еççем çав çăткан сутилӳлĕ капитталисăма пирки пулнă: ҫăвашшенҫен транспортла шыв çулĕсене, çĕрĕсене, вăрманĕсене туртса илесси, вĕсене хуласенҫен хăваласси, хырçăпа кулапайпа аптăратасси, ăсталăха пĕтересси, сутилĕве ҫарасси, хыспапа утил аллинҫе хĕстересси пурте çав ҫи малтан сутилӳлĕ капитталисăм иттересĕшĕн пулнă. XVIII-па XIX-мĕш ĕмĕрте Раççейре промăшлĕнăлă капитталисăм çамапи тапрансан пирĕн çĕр унăн колонийĕ, апа сырйопа топливо паракан çĕр пулса тăрать. Çапла ҫăваш хура халăхĕ Раççейре 400 çул тăрăшшĕне класслă пусмăр айĕнҫе çеç тапаланса пурăнать. Çитменнине тата вăл йаланах пателлĕ пусмăр айĕнҫе асапланса пурăнать, ун çинҫен епĕр малта çителĕклĕ каларăмăр, малалла та ҫăваш кулҫтурĕ çинҫен каланă ҫух асăнкалăпăр.

Ђӑвашшен ӳт вӑйӗ, ђун халӗ.

Епӗр хамӑр тӳрк ӑрӑвӗнђен пулни ҫинђен калана ђухнех тӗнђери халӑхсем ђӗлхерен пуҫне ӳтпӳ тӗлӗшӗнђен пӗр пӗринђен уйрӑм куранса тӑнине асӑнсаттӑмар. Ђӑнахах та халӑхпа халаха танлаштарсан весен ӳтпӳ ҫӳлӗшӗ, сарлакӑшӗ тӗлӗшӗнђен, унӑн станӗ тӗлӗшӗнђен, ӳттир тӗсӗ тӗлӗшӗнђен ытти йенђен те уйрӑм паллӑсем куранса тӑраҫҫӗ. Ҫак йенђен хӑш халӑхсем ытла та ҫивђӗ уйрӑм палӑрса тӑраҫҫӗ, ҫапла киттайа, каркаса, ђикара, йеврейе, ермене, круҫина ытти нумай етемме пӗр пӗђђенне курсанах вӑл мӗлле халӑх ҫынни иккенне тӳрех пӗлетӗн. Ана епӗр етем тӗсӗнђен, унӑн пысӑкӑшӗнђен, куҫ хӑй лупашкинђе йепле ларнинђен, сӑмсаран, ҫавартан, хӑлхаран, алӑ ӳраран ытти нумай йенђен те ђухласа илетпӗр. Етем ҫинђен тӗплесе пӗлекен антропологи йатлӑ ӑслӑлӑх халӑхсене тӗрлӗ рассӑсене уйӑрнӑ ђух ҫапла пирӗн пек ђуххӑм ҫеҫ ђухланнине ђаранса тӑмаст, вӑл халӑхсен ӳтпӳ уйрӑмӗсене нумай урах йенђен те тишкерсе пӗлет, ытларах та вӑл шӑмшакка виҫҫе сав уйрӑмӗсене ђпелала хисеп тӑрӑх кӑтартат. Унтан халӑхпа халӑхӑн уйрӑмӗ весен вӑйӗнђен, весем йе паттӑр, йе имшерккинђен килет, тата ҫав уйрӑм халӑх ӗрђенинђен паларса тӑрат: хӑш халӑх хӑватлӑ, хӑш халӑх йеррипен йышлаланса пырат, тата хӑшӗ ҫулран ҫул ђакса пӗтсе пырат Пур малта кӑтартнӑ халӑхсен уйрӑмӗсене ӑслӑлах ђӗлхипе хвиҫикла уйрӑм теҫҫӗ. Анђах ку сахалха: халӑхпа халӑхӑн уйрӑмӗсем тата ђун халӗнђен килет: хӑш халӑх ӑспитпе, тӑнпа паттӑр, тепри хайарлахпа ҫивђе, тепри искусствӑ йенне туртӑнарах тӑрат, хӑш халахсем пур ђунла кулђттурӑ йенђен те айвантарах. Аслӑлӑх халахсене ҫак йенђен те ђухласа илме тӑрӑшат, ҫав ӑслалах авалран ђӑваш халӑхӗпе нумай интересленмен, ҫапах та унӑн ђӑвашшем ҫинђен уйрӑм кӑтартнисем пур. Анђах ҫав кӑтартусем ҫинђен калама тапратиђђен ҫакна калама тивӗҫлӗ: весем нихӑҫан та тӗп тӗрӗс пулма пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, весене тӗрӗс тӑвас тесен пӗтӗм халӑха пӗр ҫын таранђђен тишкерсе пӑхса виҫҫе тухмалла, апла никам та тума пултараймаст, ҫавӑнпа ҫав кӑтартусене нумайах та мӑр ҫынсене ҫеҫ пӑхса вӑтамлӑхран ђухласа кӑлараҫҫӗ. Ҫапах та авалхи ӑслӑлӑхҫасем халӑхсен уйрӑмӗсем, весен уйрӑм натсилӗ характӗрӗсем ҫинђен питӗ вӗриленсе ҫырађђӗҫ. Ҫапла тума весен питӗ пысак политтиккӑлӑ салтав пулнӑ. Епер пӗлетпӗр, империалисӑм саманинђе тӗнђери халӑхсем икӗ пайа уйрӑлса тӑраҫҫӗ: пӗрисем асла натсилӗ натшалӑхсем туса, капитталисӑм йеркипе пуранса ытти имперккерех халӑхсене пусмӑрта тытса весене ласкаса пурӑнаҫҫӗ, теприсем весен айӗнђе тапаланса, асапланса пуранаҫҫӗ. Ҫак ирсӗр йӗркепе тӗрӗсе кӑларма, вӑл кирлине кӑтартма асла халӑхсен аллинђе тӑракан тӗнђе наукӑи ҫапла вӗрентеве йышаннӑ: вӑл кашни халӑхӑн ӳтпӗвӗ те пӗтемпех уйрӑм, кашни халӑхӑн ӗмӗр пӗтми уйрӑм хал, ӗмӗр

ӯлӑшӑнми уйрӑм натсилӗ характӗр пур тенӗ. Ҫапла пулсан ҫав суйа пуршуаслӑ ӑслӑлӑх шухӑшӗпе халӗ натсилӗ патшалӑх туна, хӑйсен ирӗкпе, унтан ытти халӑхсене туласа пурӑнакан халӑхсем малашне те ӗмӗрне ҫапла пурӑнмалла, мӗншӗн тесен, вӗсен те халӑхсен тӗрлӗ туррисенҫен те таҫтан туйанна ӗмӗр петми те, ӯлӑшӑнми те вӑй. хал. характӗр пур пулат. Ҫав вӑхӑтрах ҫав ӑслӑлӑх шухӑшӗпе нумай халӑхсем хаљхи хӑйсен вӑйӗпе, халӗпе, натсилӗ характӗрӗпе авал та пурӑннӑ, малашне те ҫапла пурӑнмалла пулат. Ҫак вӗрентӯ мӗлле пулса кайни пире виттӗр курӑнса тӑрат: ҫак суйа наукӑ ҫапла майпа капитталисӑм ҫистемӗ унӑн ытти халӑхсене пусмӑрлас империалисӑмлӑ йӗрке ӗмӗр пӗтмелле те, ӯлӑшӑнмалла та маррине кӑтарташшӑн ҫеҫ тарӑшнӑ. Ҫапла майпах хаљхи уйрӑм асла наттӑр халӑхсен ӑслӑлӑхҫисем кашни хӑй халахне аслӑраха хурашшӑн тавлашаҫҫӗҫ: ҫапла XIX-мӗш ӗмӗр тӑршшӗпе нимӗҫ ӑслӑлӑхҫисем вырӑс халахӗ нимӗҫҫем пек йе Йевроппӑн ытти халӑхсем пек пуҫлӑ мар, вырӑс кӗске, лутра, пӗҫӗк пуҫла тесе йалан ҫыраҫҫӗҫ, ҫав кӑтартусемпе вӗсем вырӑс халахӗ историлӗ халӑх мар, вӑл куљттурӑ тума пултараймасӗ теҫҫӗҫ, мӗншен тесен, антрополкире ҫавӑн пек пуҫлӑ халӑхсем ӑслах мар тесе кӑтартакан суйа теори пурҫҫӗ. Ҫак наукӑн суйа кӑтартавӗнҫен нимӗҫҫен политтикка ҫыннисем хӑйсене усӑлла ҫапла ӗмӗт ӗмӗтленеҫҫӗ: вырӑс халӑхӗ тӗнҫерӗ хӑй тӗллӗн пурӑнма пултараймасӗ, вӑл чавус (тӯрех ҫапла ҫыраҫҫӗҫ), вӑл кермансен куљттурне ӯстермелли тапрӑ вырӑнӗнҫе ҫеҫ пулма пултарат теҫҫӗҫ. Вырассем хӑйсем те вӗсен натсионалисҫӗсем Раҫҫейри пур вак халӑхсем те наҫар расеӑ йӑхӗсем, вӗсем хӑйсен ирекӗпе ирӗк парсан та пурӑнаймаҫҫӗ, ирӗк пама та тивӗҫлӗ мар, мӗншӗн тесен, вӗсем куљттурланма пултараймаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем вырӑс пусмарӗнҫе пурӑнни вӗсен телейӗ вӗсемшӗн ыра теҫҫӗҫ. Ҫапла майпа авалхи Раҫҫейри ытти халӑхсене пусмарласа вырӑслантарма тарӑшакан политикка тӗрӗсӗ килнӗ пек пулаҫҫӗ. Ҫапла халиҫҫенех шкулсенҫе вӗрентмелли кӗнекесем ҫинҫе ҫавашшем ҫинҫем йаланах хурласа ҫыраҫҫӗҫ: вӗсен ӑс сахал, тӑн ҫивҫӗ мар, вӗсем тӗпле шухӑшлама пултараймаҫҫӗ теҫҫӗҫ, авалрах XVIII-па XIX-мӗш ӗмӗрсенҫе ҫавашшем ҫинҫен вӗсем вулама, ҫырма та вӗренме пултараймаҫҫӗ, наукка тавращне пыма та пултараймаҫҫе тесе нумай кӗнекесем ҫинҫе ҫырна. Пур малта катартна теорисемпе вӗрентӯсене хаљхи аслалӑх тепӗпе суйана кӑларат: ҫи малтан стем ӑсӗ пуҫ пысӑккӑшӗнҫен, пуҫшӑмми хурминҫен йе миме нумайинҫен килнине аслалӑх тӗрӗслесе кӑтартаймасӗ, унтан ниййепле халах та пӗр пек мар: вӑл авалран тӗрлӗ йӑхсемпе хутшӑнса пулнипе ун хушшинҫе пур тӗрлӗ тӗслӗ ҫин та пур, унтан ӑслалӑх нихӑш халӑха та пӗтӗмпех пӑхса тухайман, ҫавӑнпа ун кӑтартӑвӗсем ҫухласа калани ҫеҫ пулат. Кашни халӑхӑн халӑх ҫуралнӑ саманара ӗмӗр ӯлӑшӑнми хӑват йе уйрӑм натсилӗ характӗр пур тени пӗтӗмпех суйа вӗренту: халӑха, унӑн пурӑ-

наçне, историне екконоиккапа çĕршыв нуйанлахĕ çаватса пырат, вĕсем улăшăнсан халăхăн хăваҫĕ те çапла улăшанса пыраТ. енĕр тĕнҫе историнҫе нумай пĕр вăхăтра паттăр та, куҫттурлă та халăхсем пăҫах пĕтсе ларнипе, нумайĕшĕ наҫарланнине куратпăр, çав вăхăтрах наҫартарах халăхсем те пыра киле хăватлăланнине куратпăр, халăхăн хăваҫĕ, куҫттурĕ, характĕрĕ çеç мар, унăн ӳттир тĕсĕ улăшанса пыраТ, çапла апа йенҫе нумайран пуранакан халăхсем хуралансa, сивĕ йенҫе выран йыпăннă тĕксĕмрех халăхсем те йеринен йалаҥ саралана пыраççĕ, çапла йеврейсем Палестинăра пураннă ҫух пурте пăҫах хура пулна, халĕ сивĕ йенҫе нумай пуранни пе вĕсем нумай саралнă, вĕсен хушшинҫе сапсара çынсем те йыпплă ланаççĕ.

Çапах та кашни халăхăн халĕ хăйĕн уйрăмĕсем пур, çав уйрăмсем халăх пуранакан çĕршывран, ана йĕритавра хупăрласа тăракан çутçанталăкрап, ытларах екконоиккă йĕркинҫен, унтан çав йĕркенех тĕп авалран йунра ларса йулнă уйрăм йенҫен килет. Ҫăваш халăхĕн мĕлле уйрăмсем пурши?

Прохвессăр Анучҫин кăтартнипе, Хусан кĕпернинҫе салтаксене илнĕ ҫух виçнине ҫухласан, ҫăваш арçынăн вăтамлăхлă çӳлĕшĕ 1626 миллиметтăр, çав вăхăтрах вырăс арçынăн вăтамлăхлă çӳлĕшĕ 1667 миллиметăр, çапла вырăс ҫăвашран вăтамлăхран 41 миллиметăр йе пĕр вершука йахăн çӳлĕрех, Ҫăвашием ӳтпӳ çӳлĕшĕпе çапла уйрăм ушкăнсене уйăрăлаççĕ: лутрасем 1600 м.м., вăтам пӳрен лутрисем 1650 м.м. вăтам пӳрен çӳлерехисем 1700-1750 м.м., çӳлĕ пӳсем 1800 м.м., Çапла ҫăваш халăхĕ шултăра вырăс халахĕнҫен нумай вак. çапах та вăл тĕнҫере вăтам пӳлĕ халăх выранĕнҫе хисепленет.

Пуç пысăкăшĕ ҫăвашшен вăтамлăхран 228,87 миллиметтăр хисепленет, вăл пĕвĕн 13,9% пулаТ. Ҫăваш пуç пысăкăшне, унăн хормипе монкол расснн вăтам типсем патне çывăхараТ.

Ӳттир тĕсĕпе ҫăваш тĕксĕм халăх, ҫăваш хушшинҫе хура çӳçлĕ, хура куçлă çын сара çынран нумай йышла. Вăл çаплах пулмалла, мĕншĕн тесен, епĕр хура тӳрк йахĕ. Пирĕн хушăмăрта сара çын та пайтаххи епĕр нумай ĕмĕрсем тăршшĕне сивĕ йенҫе пураннинҫен, унтан ытти сара йут халăхсемпе йуна хутăштарнинҫен килет пулмалла. Ҫăвашшем сара тĕсе йуратарах параççе, йурăсенҫе йаланах сара хĕрсемпе сара каҫҫăсене мухтаççĕ, ытти тӳрк йахĕсем хура тĕслĕ етемме йуратарах параççĕ. вĕсен хушшинҫе сивĕ йенҫе пуранакан йахсенҫен пуçне сара çын сахал та; çапла ҫăвашшем сарра йуратни пĕр йенҫен вĕсен хушшинҫе сара çын сайринҫен килет пулмалла, тепĕр йенҫен ҫăваш тухтăрĕ Йехрим Елекçейĕ çырнипе вăл ак мĕнтен килет: авал ҫăвашшем нумай ĕмĕр хура пӳртре тĕтĕмпе хăрăм çинҫе пураннă, сара çын хăрăм вĕçни ларсан та питех сăнран каймаи, хура çын çаван пек пӳртре упăте пекех тискер пулнă, унтан сарăпа шура

тӗс ҫав хура пӳртсенҫе пуранакан шурă тумтирлӗ ҫынсем йалапах ҫавăнса хастарласа таса пурăннине пӗлтерне. ҫавăнпа ҫак тӗссем хисепре тăнă.

Ђăвашшем хӗсӗк куҫлă, ђалăшрах куҫлă ҫынсем те пур, лапђăкрах та, нӗђӗккӗн те самсалă, сарлака йанахлă, сарлака питлӗ. Сӳҫпе, сухалпа, ҫăмпа ђăваш ӳтпӗвӗ пуйанах витӗнмен, ђăвашшен хушшинҫе сухалсăр арҫынсем те пайтах. Ҫапла етем ҫăмпа сахал витӗнни вăл питӗ ватă йăхран пулнине, ҫăмпа кайаксем пек нумайрах витӗнни кайрантарах пулнă ҫӗнӗ йăхран тухнине пӗлтерет. ҫавăнпа йакарах ӳтпӳлӗ монкол расси—ватă рассă вырăнне хисепленет.

Ђăваш куҫне айакран ҫивђӗ курай̆ теҫҫӗ, вăл авал ҫеҫенхирсӗнҫе нумай пурăннинђен килет пулмалла, ҫывăхран ҫеҫ куракан ҫынсем ҫукпа пӗрех, вăл ђăвашшем куҫа ҫырупа пăсманнинђен килет пулмалла, ђăваш хăлхи лайăх илтет, ҫавăнпа вăл мусăка йуратакан халăх хисепӗнҫе тăрай̆.

Ђăваш вăйсăр халăх: вырăспа, тутарпа, мăкăшăпа танлаштарсан вăл ӳтпӳ йăвăрăшӗпе те, ытларах та тата вăйпа вӗсенђен нумай кайа. Ҫакă ђăваш йурлă пурăнса наҫар апат ҫипинђен, унтан ђирђӗрпе йапăхса пурăннинђен килет; авал ђăвашшем апата ирӗккӗн ашпа ҫупа ҫителӗклӗ тăранса пурăннă ђух шултăрарах та, вăйлăрах та пулнă. Ҫапах та ђăваш органисăмӗ тӗреклӗ. ђăвашшем нумайӗшӗ ватăллиђђен пурăнаҫҫӗ; тата ђăваш органисăмӗ терлӗ асапна сийене тӳсме хăпăхнă, ăна ӗмӗрхи усал пурнăҫ ирӗксӗр хăнăхтарнă.

Ерђес йе хунас тӗлӗшӗнђен ђăваш йăхӗ ҫителӗклӗ хăватлă: авал ђăвашшем ҫуллен 1,1%. кӳршӗ вырăссем 1%, тутарсем 1,2% ӗрђесе пынă. Вырăссем йеррине рех ӗрђени хула ҫыннисем сахал хунанинђен килнӗ: хула ҫынсем унтан нумайӗшӗ куђтурлă халăхсем йериперех ӗрђесе пыраҫҫӗ, вăл вӗсем ађа сахалтарах ӳстерме тăрăшниннђен килет. Ђăвашшем хастарлăрах ӗрђени пӗр йенђен вӗсен оппинăлă ҫӗр йеркинђен килнӗ пулмалла: кашни хресђен нумайрах йат пайӗ йышăнашшăн тăрăшнă. Ђăваш халăхӗ ҫапла ӗрђесе 50-60 ҫулта икӗ хут йышлăланай̆. Анђах ҫапла ӗрђесен те тӗрӗссипе ђăвашшем питӗ йеррипен йышлăланса пыраҫҫӗ, вӗсем авал питӗ нумай тутарланса пӗтнӗ. Ҫапла авал Сӗве шывӗнђен хӗвелтанăҫнелле тутар пулман, халђхи Сӗве, Ҫӗрпӳ, Шупашкар, Тетӗш, Патăр уйесӗнђи тутарсем ђăвашран пулнă, ӗлӗк Арск, Лаиш уйесӗнҫе те ђăвашшем пулнă, халӗ вӗсем пăђах тутара тухса пӗтнӗ. Истори кăтартнă тăрăх. Хусан кӗпернинҫе 1740-1764-мӗш ҫулсенҫе пӗр Хусан таврашӗнҫе ҫеҫ 300 пин ђăваш тӗне кӗнӗ, малта калапă пек ӗрђесе пырсан ҫав ђăвашшенђен ҫеҫ халӗ виҫӗ мӗлђйунлă халăх пулмалла пулнă, пур ђăваш халăхӗ ҫав хисепрен 5-6 мӗлђйунлă пулмалла пулнă, халӗ епӗр мӗлйун ҫурăран та кайа. Йулашки саманара ђăваш вырăсланса пырай̆. Ҫапла ђăваш халăхӗ йышлăланаспне авалран натсилӗ пусмăр ђарса тăнă, малашне патсилӗ пусмăр пӗтсен

те вырӑс халӑхӗн аслӑ культтурӗ туртнипе пуманӗшӗ ђӑвашшем вырӑса тухса пырасси пулӑрат̆. Унтан малашнехи ҫывӑх саманара ђӑваш халӑхӗ малалла ӗрђеме пӑрахасси те, хӑш ђӑваш аслӑлӑхҫисен шухӑшӗпе ђакма тытӑнасси (вырождение) те курӑнса тӑрат̆. Халӑх ӗрђесси ђи малтан ҫителӗклӗ пурлӑхрап килет. ҫавӑнпа ђӑваш халӑхӗ куҫалах йӗрки ҫӗнетсе малта кӑтартнӑ интустрилӗ ҫул ҫине тухмасан малалла хунама ђарнималлах пулат̆.

Етнокрӑхсем кӑтартнипе, ђӑвашпен ђунлӑ пуранаҫ ҫапла пулӑрса тӑрат̆: ђӑвашӑн асӗ йе пӑмӗђӗ терекле, вӑл йапалана ђас манмаст̆. унӑн тӑнӗ те ҫителӗклӗ ҫивђӗ. анђах ҫав тӑнпа йапалана питӗ айакран та тӗпрен те ҫавӑрса илсе шухӑшлама вӑл йуратмаст̆. шухӑшлана ђух йерринен шухӑшлат̆. унтан йаланах конкретлӑ шухӑшлат̆: унӑн ђӗлхинђе те тӗнђере куҫпа курма, алӑпа тытма пултармалла йапаласене пӗлтерекен сӑмахсем ҫӗҫ пур. отвлеђонӑла анлавсене пӗлтерекен сӑмахсем сахалтарах: шухӑшлана ђух та, калаҫнӑ ђух та вӑл конкретлӑ ҫаврӑнӑҫпа шухӑшлама та, калаҫма та йуратарах парат̆. ҫавӑнпа вӑл кӗскен «ӗҫлӳ усӑллӑ» йе «пуйанлӑх етемме пасат̆» тесе калас вырӑнне «ӗҫлекен ҫын усӑ курат̆», «пуйан етем пасӑлат̆» темо тӑрӑшат̆. Анђах ҫаплах пур тӗнђери йалтӑ пуранакан хресђенсем те шухӑшлаҫҫӗ. ҫавӑнпа вӑл ђӑвашшен аспит хале нађаррипђен килмест. вал вӗсем йалта, уйсемпе вӑрмансенђе тӗнђене тухмасӑр капӗҫлӗ пурӑннинђен, наттуралӑ хуҫалах йӗркипе ҫӗр ӗҫлесе пураннинђен килет. Пирӗн шухӑшпа пирен таврари вырас хресђенӗсем ҫак тӗлӗшӗнђен ђӑвашшенђен пӗрте уйрӑм мар. Ђӑвашшен аспитне тӑнпуҫ халӗ ытти халӑхсенђен кайра тӑманни халӗ пӗтӗмпех пулӑрђӗ: ђӑвашшем халӗ вӑтам та, аслӑ та шкулсенђе ытти йӑхсенђен кайа мар ҫинђе вӗренеҫҫе.

Унтан ђӑвашшем кирек мӗлле йапалана та тӗплӗрех те, тӗрле те йенђен пелме тӑрӑшаҫҫе. йапалана хайсен тӗллӗп сӑпама йуратаҫҫӗ. ҫапла ђӑвашшем сантала́к ҫинђен тӗплӗ сӑнанинђен вырас аслӑлахҫисем те тӗлӗнеҫҫе.

Характер сулӑнавӗсен тӗлӗшӗнђен етнокрӑхсем ђӑвашшене ђейе, хӑйсен шухӑшне вӑрттӑн тытакан унтан мӗн тӑвас тенине йепле те пулин тума тӑрӑшакан халӑх теҫҫӗ, ҫакӑ та пирӗн историри усал та, нађар та пурӑнаҫран килни тӳрех паллӑ: пин ҫула йахӑн ђуралӑхра пурӑнна халах ђейерех те пулмасан. йапалапа вӑрттӑн та, ҫине тӑрса та тума пӗлмен пулсан вӑл пӑђах пӗтес ларнӑ пулӗђђе. Анђах пуманӗшӗ великотершавлӑ вырӑс шовинисђӗсенђен ђӑваш халӑхӗ ҫине вырӑс халӑхне вӗҫкӗртес тесе ҫак характер сӳлӑнавӗсем ытла ӳстерсе калаҫҫӗ те, ҫыраҫҫӗ те: ҫапла вӗсен хушшинђе йаланах ђӑвашшем Атӑл ҫинђи йаппупсем, йеврейсем тенӗ курайма́сӑр калана сӑмах илтӗнет.

Кӑмӑл тӗлӗшӗнђен ђӑвашшем йӑваш. хурлӑхпа пусӑранна кӑмаллӑ: вӗсен пуранӑҫра, йурӑра, сӑмахра савӑнӑҫлӑ та,

кулăшла та йапала сахал. Çакă пуринђеп ытла авал та, халĕ те ђăвашшем пурлăхлă та, ирĕклĕ те пурăнăçра пурăнмаллиннђен килет.

Ђăваш шкулĕ, халăх çутăланăвĕ.

Халăхăн ђунла кулђттурĕне авантарах пĕлес тесен унăн шкул ĕçне, халăх тĕнђе аслăлăхне йышăнса çуталаннине, вăл авалран хай халĕпе тĕнђе çинђен тĕрлĕ пĕлўсем тыраса тупнине тишкерсе пăхас пулаť. Малтан авал çинђен калăпăр. Ђăваш ђĕлхине асăрхасан, ђăваш халăхĕ хай халĕпех тĕп авалран пространствăпа вăхăта виççе ђухлама пĕлнĕ, унăн виçессем: пусăм, пит, хăлаç, çухрăм пулнă, çак виçесене вăл хай çапла ђухласа тунă пулнă пулмалла: пусăм йе утăм урапа утса пĕрре пусассипе пĕлтернĕ хăлаç—хулсене икĕ йенелле уçса тăснипе пелтернĕ, çухрăм—çухăрсан илтмелле айакрине пелтернĕ пулмалла; вăхăта та вăл хай хаљђĕнех çулталăка, 13 уйăха (пĕлĕтри уйăх çаврăнăçĕпе), ернесене, кунсене уйăрса тăнă, вĕсене уйрăм йатсем парса çавсен хисепĕпе ĕçе уйавсене, кĕлĕсене туса тăнă; пыра киле ђăвашшем арапсенђен вăхăта тата тĕплĕрех хисеплеме тапратнă, çавна вĕсенђен йышăнна талăк, сехет тепĕ сăмахсем пĕлтереççĕ. Ђăвашшем тĕп авалранах кватратлă та, куплă та виçесене пĕлнĕ, пин ђухлă пине ситиђђен хисеплеме пĕлнĕ. унтан вĕсем йаварлăха мыскал таранђђен виçме пĕлнĕ, укçа шутне хисеплеме пĕлнĕ. Вĕсем авалранах çанталака тĕплĕ сăнанă, çĕршыва тĕплесе пĕлнĕ: пур ўсетăрана, ђĕрђуна, хурткăпшанка уйрăм йатпапа, çĕр ĕçне аста пĕлнĕ, ђирђĕре тўрлетме ђухланă, вĕсем тĕнђе вĕçĕмсĕррипе, ĕмĕр пĕтменлĕхне ђухланă. Çапла наукка тĕплесе пĕлекен йапаласене ђăвашшем авалран хайсем хаљђĕн те пĕлме, ђухлама тарăшнă. Анђах ђăваш хура халăхĕ çырулăх тăвайманнипе, шкул ĕçне, аслăлăха тапратса йарайманнипе халăх пĕлĕвĕ малалла кайайман, пĕр вырăнта шăнса тăнă: çавăнпа халĕ çыру пĕлмен тĕттĕмрех ђăвашăн пĕлĕвĕ пин çул малтан пурăннă ђăваш пĕлĕвĕнђеп нумай малта мар.

Шкул ĕçĕ пирĕн таврара Пăлхари патшалăхĕ вăхăтĕнђе тапраннă. Пăлхарире шкулсене пăлхарсем Х-мĕш ĕмĕрте măсăљман тĕнне йышăнсан уçнă, вĕсенђе малтан пăлхар аслăлăхçисем вĕрентсе тăнă. Кайарахпа пăлхари хушшинђи хăйсен аслăлăхçисем: маттематăксем, астрономсем, метиксем пулни паллă. Унтан пăлхарсем хушшинђе ислампа христиан тĕнĕсен ўкĕтçисем пурăнни паллă. çапла пăлхарсем хăйсен хушшинђеп Христос тĕнне йышăннă икĕ çынна вĕсем вĕрентсе сарса пурăннăшăн вĕлернĕ, çавсем халиђђен вырăс тĕнĕ вĕсене таса çынсен вырăнне хисепленекен Аврăмпа Хĕветĕр пулнă. Çапла шкулсем те, çырăва вĕрентў те ђăвашшен хушшинђе те пулни йе пулмани—истори кăтартаймасť, пулнă пулсан та вăл хулара ытти халăхсемпе хутшăнса пурăнакан

ҫӑваш тӳрисемпе сутилӳҫисен хушшинҫе ҫеҫ пулнӑ пулмалла, вӗсем кайран тутарланса кайнӑ пулмалла. Ҫапла хулари ҫӑвашшен хушшинҫе арапсенҫен йышӑннӑ литтераттурӑпа ӑслӑлӑх пуҫланса кайнине авалран йулнӑ масарсем ҫинҫе выртакан ҫулсене хӑшне ҫӑваш ҫӗлхипе ҫырнинҫен ҫухлама пулаҭ. Ҫаплах ҫак саманара арап ҫыруне ҫӑваш турханӗсемпе улпуҫӗсем йышӑнса тӑнӑ тесе ҫухласа калама пулаҭ. Анҫах хура халӑх ҫак саманара пӑҫах ҫыру пӗлмесӗр пурӑнни паллӑ, ҫавӑнпа унӑн шкулсем пулни ҫинҫен калама та кирлӗ мар. Малалла тутарпа вырӑс колонисатсийӗсен саманинҫе пирӗн ҫӗршыв таврашӗнҫӗ пӗр ҫарӑпми хӗҫпӑшал ҫеҫ выҫанӑ: кулҭтура ӗҫӗ ҫинҫен ун ҫух никам та шухӑшламан. XVIII-мӗш ӗмӗрте ҫеҫ вырӑс колонисатсийӗ ӗҫне туса пӗтерсен, Атӑл ҫинҫи ҫӗрсене ҫавӑрса илсе тутарсемпе вак халӑхсене вӑйпа пӑхӑнтарсан, патшалӑхӑн ҫав халӑхсене ҫунпа, кӑмӑлпа та хӑйне парӑнса тӑмалли йӗрке тупмалла пулнӑ Ҫав йӗрке, ун шухӑшӗпе, пуринҫен ытла ҫав халӑхсене вырӑс тӗнне йышӑнтарнинҫен килнӗ. Вырӑс тӗнне ҫыру шкул урлӑ ҫеҫ йышӑнтарма май пулнӑ. Ҫавӑнпа XVIII-мӗш ӗмӗрте пирӗн таврара ҫӑвашшемпе ытти вак халӑхсене вӗрентмелли шкулсем уҫӑлаҫҫӗ. Ҫак ӗмӗрӗн пуҫламӗшӗнҫех Хусанта ерхерей ҫуртӗнҫе ҫавӑн пек шкул уҫӑлаҭ, унта ҫӑваш аҫисем те вӗренеҫҫӗ, анҫах ҫав аҫасем вӗсене наҫар усранипе унтан вырӑс вӗрентекенсем вӗсене, вырӑсла пӗлменскерсене, ҫӑнтан вӗренте пӗлмесӗр асаплантарнипе вӗсем питӗ вилеҫҫӗ, ҫавӑнпа аҫасем ҫак шкулта таках вилсе пӗтеҫҫӗ те ӑна кӗперна тӑр хупса лартаҭ. Ҫак шкула хупсан Хусанта пупсене хатӗрлекен ҫеминари уҫӑлаҭ, унта ҫӑвашшем те вӗренкелеҫҫӗ, унтан ҫӑваш аҫисем тӗрлӗ мӑнастирсенҫе вӗренкелеҫҫӗ. унтан ҫӑваш аҫисене вӗрентмелли шкул 1733-мӗш ҫултан пуҫласа Сӗве хулинҫе, кайарахпа Ҫӗрпӳре уҫӑлаҭ, Ҫӗрпӳ шкулӗ кайарахпа аҫасем вилсе пӗтнипе, траххумӑпа антранипе хупӑнса Хусана куҫарӑнаҭ. унтан вӑл 1800-мӗш ҫулта хупӑнса лараҭ Ҫак шкулра пайтах ҫӑваш аҫи вӗренет: ҫапла унта 1740—1764 ҫулсенҫе 320 аҫа, 1765—1793 ҫулсенҫе 400 аҫа вӗреннӗ. Ҫак шкулсен пуҫӗнҫе миҫсионерсем тӑнӑ, вӗсем ҫав ҫӑвашшенҫен тӗне вӗрентекенсене, пупсене хатӗрленӗ. Ку вӑхӑтра миҫсионерсем пӗр йенҫен халӑха ирӗксӗр шыва кӳртнӗ, пусмӑрласа вырӑс тӗнне йышӑнтарнӑ: ҫак ӗҫе тума Хусанта йури ҫӗнӗкрешӗнсен кантурӗ йатлӑ патшалӑх вырӑнӗ тунӑ. ҫак кантурӑн халӑхсене ирӗксӗрлесе шыва кӳртме уйрӑм ҫар камантисем пулнӑ, ҫав ҫар камантисем хӗҫпӑшалпа ҫӑвашшене ҫырмасемпе кӳлсен хӗррине хӑваласа анса шыва кӳртертернӗ, тӗне йышӑннӑ ҫӑвашшене авалхи тӗнне пурӑнакан ҫӑвашшем тӗне кӗнӗшӗн ҫиленсе пусмӑрласран сыхланӑ, тӗне кӗмесӗр хытӑрах тӑракан ҫӑвашшене пурӑнакан вырӑнтан, хӑваласа вӗсен ҫӗрпе кӗрешӗн ҫӑвашшене илсе панӑ Анҫах ҫӑвашшене ҫапла майпа тӗне йышӑнтарассипе миҫионерсем хӑйсем те шанман: ҫӑваш

ђелхепе ӳкӗтлесе ӑнлантармасан, ђӑвашшен хушшинђен ђӑваш миççионерӗсем ӗçлемесен халӑх тӗне ђунпа йышӑнаймассине вӗсем пӗлсе тӑнӑ. Çакӑншӑн çеç миççионерсем ђӑвашшене шкулсенђе вӗренткелесе хӑтланнӑ. Ђӑнахах та миççионерсем хайсем тӑвас тенине нумайӗшне çапла майпа тунӑ: çав шкулсенђе вӗреннӗ ђӑваш пупӗсем XVIII-мӗш ӗмӗртех ђӑваш хушшинђе вырӑс тӗнне саралтарса тӗреклӗлентерме нумай пулӑшнӑ: пирӗн таврари хаљхи вырӑс пупӗсен авалхи ӑрӑвӗсен хушшинђе çав вӑхӑтра вӗренсе пупа тухнӑ ђӑвашшенђен пулнӑ ӑрусем пайтах. Çапла XVIII-мӗш ӗмӗрте пулнӑ шкулсем хура халӑха верентме тӑрӑпиман, вӗсем колонисатсипе руççихвикатсп ӗçне тӗреклӗлентерме ђӑвашшенђеп хайсенђеп ђӑваш халӑхӗн пусмӑрçисене хатӗрленӗ.

XIX-мӗш ӗмӗртен пуçласа ђӑваш çӗрӗнђе шкул ӗçӗ урӑхла рах çулпа кайнӑ. Çак ӗçе тума миççионерсенђен пуçне хыснапа утил те хутпӑна пуçлапӑ. Ку вӑхӑтра вӗсем хресђенсене питӗ çӗр ӗçлеттерсе усӑ курса пурӑнӑ. Халӑха тӑрӑшарах, хытӑрах ӗçлеттерме, унтан хырçӑ нумайрах, вӑхӑтлӑрах пухма, халӑх хушинђен патшалӑхӑн крепӑçлӑ тытӑм йӗркине тӗреклӗрех тытса тӑма тӳресемпе тӗрлӗ тийексем хайсен вӗççӗн çеç пултарайман, вӗсене халӑх хушшинђех çӗр ӗçлесе пурӑнакан тӗрлӗ пулӑшуçӑсем, акентсем: теçетниксем, писсӑрсем, çӗрвиçӳçӗсем ытти тарçӑсем кирлӗ пулнӑ. Кӗсем çыру пӗлмесен çав ӗçе тума пултарайман, çавӑнпа халӑх хушшинђе хыснапа утил сайра пӗрре шкул уçма тунӑ. Çав вӑхӑтрах çак шкулсене халӑх хушшинђе вырӑс тӗнне тӗреклӗлентерес тесе те тунӑ. Çапла ђӑваш историнђе ђӑваш йалӗсенђе шкул пулас ӗç тапранса кайаҭ. Пирӗн çӗрте, пире маларах Çӗрпӳ уйесенђе Пӑртас йалӗнђе шкул уçӑлни паллӑ: вӑл 1807-мӗш çулта пулнӑ, çак шкула уçнӑ ђух исправник хирӗç тӑни паллӑ: вӑл „ђӑвашшем çыру вӗренсен çӗр ӗçлеме пӑрахӗç“ тенӗ; çак вӑхӑтрах сайра пӗрре ытти йалсенђе те шкулсем уçӑлни тен, анђах ӑна епӗр пӗлейместӗпӗр, унтан пире 1821-мӗш çулта Хӗрлӗ Ђутайра шкул уçӑлни паллӑ. Ђӑнтан йышлӑрах ђӑвашшен хушшинђе шкулсем 40-мӗш çулсенђе уçӑтаççӗ, çапла пире 1846-мӗш çулта 27 шкулӑ пулни, вӗсенђе 1198 ађа вӗренни, 992 ађа вӗренсе тухни паллӑ. Çапла хресђенсене крепӑçлӑ тытӑм пусмӑрӗнђен кӑларнӑ самана çывӑхарнӑ вӑхӑталла пирӗн вулӑсра пӗрер шкул пулна. Анђах çав шкулсем халӑх хушшине кулӗтурӑ сарма пултарайман: вӗсен вӗрентекенӗсем отставккӑри салтаксем пулнӑ, вӗсем хӗнесе, рускӑпа çаптарса ађасене вӗрентнӗ, вӗрентессе тӳрех вырӑсла вӗрентнӗ. Вӗсенђе вӗренекен ађасем нумайӗшӗ ђирлесе вилсе пӗтнӗ, вӗренсе тухсан вӗсенђен ытларах усал сынсем пулнӑ: вӗсем тӗрлӗ вырӑнсенђе тӑрса халӑха пусмӑрласа крепӑçлӑ майкӑçра тытса тӑрас ӗçе пулӑшнӑ, хайсем те хура халӑх йунне ӗççе пурӑннӑ. Авантарах вӗрӗнсе тухнӑ ађасене тӳресем хула шкулӗсене илсе кайнӑ, вӗсенђен вырӑсланнӑ ђиновниксем пулнӑ. Çавӑнпа хура халӑх çав шкулсене

йуратман, аҫасене вӗрентешшӗн пулман. Хыснапа утил вӗрентме аҫасене ирӗксӗр илнӗ, ытла те вӗрентес мар тийекен ҫавашшем аҫисене шкулран тӑрресене вҫеткӗ. парса ҫеҫ хатарнӑ. Ҫаваш хӗрарӑммисем аҫисене шкула ҫитӗннӗ ывӑлӗсене ӗмӗре салтака ӑсатнӑ ҫухнехи пек ӗсӗклесе ӑсатнӑ. Нумай тӗлте ҫавашшем усал, ашкӑнакан, вӑрлакан. тӗрлӗ ирсӗр ӗҫ тӑвакан аҫана „шкулҫник" тесе вӑрҫаҫҫӗ, ҫак сӑмах ҫав самана́рап йулнӑ.

Пирӗн шкул ӗҫӗн ҫӗнӗ еттапӗ 60-мӗш ҫулсенҫе пуҫланса кайат. Хресҫене крепӑҫлӑ пусмӑртан кӑларсан, семствӑсем ӗҫлеме тапратса шкул ӗҫӗ нумай улшӑнса кайат. Семствӑсене вырӑнти улпутсем кӗреҫҫӗ. вӗсен хушшинҫе халӑха ҫутта кӑларас тийекен инттелликентсем те пулкалаҫҫӗ. унтан вӗсемпе пӗрле сахаллӑн пулсан та хресҫенсем те пулаҫҫӗ. Семствӑ тата хресҫенрен пухнӑ тохотпа пурӑнат. ҫавӑнпа вӑл ирӗклӗ ирӗксӗр халӑха мӗлле те пулин ырӑ ӗҫпе пулӑшмалла пулат. Ҫавӑнпа пирӗн семствӑсем ӗҫлеме тапратсанах шкулсем уҫалма тапратаҫҫӗ. Тата ҫак вӑхӑтрах пирӗн историре палла тепӗр ӗҫ пулса тӑрат. Хусанта Н. И. Илҫмински вак халӑхсене тӑван ҫӗлхепе вӗрентес ӗҫе тапратса йарат. Сапла вӗрентес йӗркене йеррипен правиттӗлства та йышӑнат. Сапла вӗрентес йӗркене вӑл ак мӗншӗн йышӑнат: малтанхи самана́ри шкулсенҫе вак халӑхсене вырӑс вӗрентекенсем малтанах вырӑсла вӗрентме тапратнӑ, вӗсен тӑван ҫӗлхе урлӑ вӗрентме меллӗрехне вӗсем тишкерейман. Сапла вӗрентнипе аҫасем анкӑминкӗленнӗ. паҫар вӗреннӗ. нумайӗшӗ йалти шкулсенҫе те вӗренсе тухайман. ҫавӑнпа ҫак шкулсенҫен вак халӑхсем пӑҫах писсе тӑнӑ, вырӑссене. вӗсен кулҫттурне, йӑлисене. пурӑнас йӗркине йуратман. вырас тӗнӗнҫен те йуташӑнса нумайӗшӗ пӗрре тӗне кӗнӗ ҫынсем те ислам тӗнне йышӑннӑ. Сапла вак халӑхсем ҫунӗпе вырӑс кулҫттурӗне хирӗҫ тӑнӑ. Вӗсен кӑмалне вырӑс кулҫттурӗ йенне ҫаварма. вӗсен хушшинҫе патшалӑх йӗркине тӗреклӗлентерме, вӗсене ҫунпа патшасене пӑхӑнтарма ҫӗнӗ мел кирлӗ пулнӑ. ҫав мел вак халӑхсене хӑйсен ӑнлавла тӑван ҫӗлхипе кӗлтума, шкулсенҫе вӗренме. кӗнекесем пиҫетлеме ирӗк пани пулнӑ. Н. И. Илҫмински каланӑ: „вак йут халӑхсене вӗсен тӑван ҫӗлхи урлах вырӑс ҫунне парӑр—ытти пур мӗн кирли те хӑйех пулат" тенӗ. Сак вак халӑхсене вӗрентес теори правиттӗлствӑшӑн питӗ усӑлла пулнӑ. ҫавӑнпа ӑна Попетоностсев пек реаксионерсем те хавассӑн йышӑннӑ. Сапла майпа ҫавашпен те ытти вак халӑхсен хушшинҫе те шкул ӗҫӗ унҫухнехи саманапа ҫухласан ҫителӗклӗ вӑйлӑ тапранса кайнӑ. Сак вӑхӑтрах ҫаваш хура халӑхӗнҫен пӗр паллӑ, нумай вӗреннӗ, паттӑр ҫын сиксе тухнӑ—вӑл Кӑнлакушки ҫавашӗ Йакку Иванӗ пулнӑ. Иван Йаккӑлҫа Илҫмински ҫиҫтемипе ҫаваш хушшинҫе ӗҫлеме тапратса 50 ҫул тӑршшӗпе ҫаваш халӑхне ҫутта кӑларас ӗҫӗн пуҫӗнҫе тӑрат. Вӑл малтан ҫак ӗҫе тӗрӗслеме ҫаваш вӗрентекенӗсенҫен пуҫне тума йураманнине пӗлсе ҫи малтан ҫав вӗрентекенсене хатӗрлекен шкул уҫат. ҫав 1868-мӗш ҫулта уҫалнӑ

Ђёмпёр шкулё пулаѓ. Çак шкула туни нысăк историллё ĕç пулаѓ: çав шкула пула пирĕн интелликентси пулса тăраѓ, çырулăх тапранаѓ, халăх кăшта та пулин тăван ђёлхепе çырнă литтераттурăпа та, науккăпа та паллашаѓ. Иван Йаккăлђă тăрăшнипе йалсенђе çемствă шкулёсем, министерствă шкулёсем, ђиркӳ шкулёсем уçăлаççё: вăл пихăшне те тиркемест, ђăваш хушшинђе кирек йепле пулсан та шкул йышлăрах пултăр тет. 1874-мёш çултан пуçласа 30 çул тăршшёпе вăл пур Хусан округёнђи ђăваш шкулёсен инспектăрё пулса тăраѓ. Ђёмпёр шкулёнђен пин çын ытла вёренсе тухаѓ, çав вăхăтрах ђăваш ађисем Хусанти вак халăхсен семинаринђе таврари ытти çеминарисенђе нумайăн вёренеççё. Çапла ђăваш йалёсенђе ђăваш вёрентекенсем йышлăланаççё. Куђттурăн тăван ёçлекенсене кура, шкулсенђе, кёнекесем çинђе тăван ђёлхепе вёрентнине кура—авал шкулран йутшăнса тăнă халăхăн кăмăлё çавăрăнса ӳкет. Ђăваш хресђенё ађине йепле те пулин çырăва вёрентме тăрăшаѓ. Пётём хура халăх пёлнёлёхпе çутă йенне сулăнма тытăнаѓ. Йалта твухклассла (70-мёш çулсенђе), второклассла (1898-мёш ç.) шкулсем уçăлаççё—унта ђăваш хăй ађине хавасланса вёрентет. Ку сахалха: хулари вёрентекенсем хатёрлекен çеминарисенђен пуçне ђăвашшем ађисене хулари вăтам шкулра вёрентме тапратаççё. XIX-мёш ёмёрён вёçёнђе ђăвашшем аслă шкулсене кёме тапратаççё. Çапла пёр 30 çул тăршшёнђех ђăваш историнђе питё нысăк куђттурлă пăрăм пулаѓ, ђăваш хура халăхё хушшинђе çыру, шкул, науккă, куђттурă йенне туртăнакан çителёклё хăватлă йухăм пăлăраѓ. Иван Йаккăлђă хăй çиçтемипе самотершавла патшалăха сийен тăвашшăн пулман, ыра тăвашшăн пулнă: вăл ђăваш хура халăхне патшасемпе ђиркёве ђунтан пăхăнтарса тăмалла тăвашшăн пулнă, анђах çавна вăл ђăваш ђёлхи урлă, ђăваш интелликентси урлă халăха вырăс куђттурне йышăнтарнă майпа тăвашшăн пулнă. Çапла майпа вăл пёр йенђен самотершавлă патшалăха усă панă: ђăваш пупёсем урлă вырăс тённе ёлёкхинђен кăшт ытларах тёреклёлентернё. Анђах вăл хăй те сиссе çитереймен: хура халăх çутăланнăçемён патшалăха хирёç пыма тытăннă, ун хушшинђе револютсилё итейăсем сарăлма тапратнă, ђăваш интелликентсийё сотсиалисăмлă итейăсемпе паллашнă, ытларах натсионаллă итеалсемпе, натсилё куђттурă тăвас итеалсемпе вёриленсе ёçле пуçланă. Пӳрократти малтапах та Илмински çиçтеми çине хăррăнтарах пăхнă, пыра киле унăн сийенне сиссе ăна хирёç пыра пуçланă. Вăл „ђăвашшем натсилё куђттурă тăваççё, вёсем вырăссенђен уйрăлмалли çеппаратисăмла политтикка йышăнма тăрăшаççё“ теме пуçланă. Ку саманари ђăваш натсилё куђттурё çинђен калаçни килёшӳллех пулман: ку саманара ђăваш ађисене шкулсенђе ђăвашла малтанхи пёремёш çулё вёрентешшён çеç тăрăшнă, унтан тён кёнекисене ђăвашла куçарашшăн çеç тăрăшнă, анђах çав куђттура тăвас шухăпшем ђăваш

интелликентсем хушшинҗе саралнаҫем саралса пына. Ҫак йенне ђӑваш интелликентсине сулӑнтарма правиттӗлствӑпа вырӑс шовинисђӗсем хӑйсемех пулӑшнӑ: тӗн ђӑвашшене малтан тӑван ђӗлхепе вӗрентес ӗҫ тапрансанах вӗсем ҫав ӗҫ ҫине хӑррӑн пӑхнӗ. ӑна кирлӗ кирлӗмарпа ђӑрманлантарнӑ, ђӑваш вӗрентекенӗсене тӗрлӗ сӑмахпа хурлантарнӑ, ҫилентернӗ, вӗсене шанман, ӗненмен.

Пур ђӑваш ҫӗрӗнђи интелликентсийӗ: вырӑс пупӗ, вӗрентекенӗсем, йалсенђи писсӑрсем, хуласенђи ђиновниксем авалхи колонисатси саманинђен йулнӑ йӑлапа ђӑваш халӑхӗ ҫине вӗсене ӗмӗр тӑрантарса тӑракан, малашне те ҫаплах тӑрантарса пурӑнмалла ђура халӑх ҫине пӑхнӑ пек пӑхнӑ. Ђӑваш интелликенсийӗ ҫав колонисаттӑрлӑ вырӑс интелликентсишӗн тӗрӗсрен конкурентлӑ вӑй пулнӑ, ҫавӑнпа пӗтӗм таврари вырӑс интелликентсийӗ ђӑвашшем вӗреннике хирӗҫ пыра пуҫланӑ, ытларах та вӑл ђӑвашшем хуласенђи аслӑрах шкулсенҗе вӗрнние хирӗҫ пынӑ. Ҫапла вырӑс интелликентсийӗ Иљмински ҫиҫтемине хирӗҫ пыни патшалӑх инттересне асӑрхассинђен пулман, вӑл ҫав интелликентси вак халӑхсен хушшинҗе йышӑннӑ вырӑнсене, авалран тытса тӑнӑ роља парас килменнипе пулнӑ. Ҫапла майпа 50 ҫул тӑршшӗпе пирӗн ҫӗрте вырӑспа ђӑваш интелликентсийӗ пӗр пӗринпе сивӗнсе пурӑнаҫҫӗ, пурӑнӑҫа тавлашша иртереҫҫӗ, ҫав тавлашура вырӑссем ђӑвашшене йаланах „есӗр вырӑссенђен уйрӑлашшӑн, уйрӑм куљттурӑ тӑвашшӑн, есӗр патшалӑха хирӗҫ пыраттӑр“ тесе аптӑратаҫҫӗ, ҫаплах каласа вӗсем ҫинђен хаҫатсенҗе, шурналсенҗе, кӗнекесенҗе ҫыраҫҫӗ, правиттӗлства елеклӗ токлатсем ҫыраҫҫӗ, вӑрттӑн тӗрлӗ тоноссем йараҫҫӗ. Ҫапла ђӑваш ҫӗрӗнҗе ђӑвашран тухнӑ куљттурлӑ ӗҫлекенсем питӗ канӑҫҫӑр пурӑнаҫпа ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, вӗсем хӑйсен ҫӗрӗнҗе тӑшман ҫӗрӗнҗе пурӑннӑ пек пурӑнмалла пулаӗ. Унтан пур аслӑ шкулсенҗе йе вӑтам шкулсенҗе вӗренсе тухнӑ ђӑвашшене ђӑваш ҫӗрӗнҗе вырӑн памаҫҫӗ: шкулсене пӑхса тӑракан инспектӑрсен пек аслӑрах вырӑнсене вырӑссен аллине ҫеҫ параҫҫӗ. 1903-мӗш ҫулта Иван Йаккӑљђа та пур ђӑвашшен йалсенђи шкулсене пӑхса тӑмалли инспектӑр вырӑнӗнђен кӑларса пӑрахаҫҫӗ. Ҫакӑ ђӑваш интелликентсине таса пӗлӗтре аслати авӑтнӑ пек малтан тӗлӗнтерсе ӑнтан йараӗ, унтан тӑн кӗрсен унӑн ҫиллине тултарса ӑна револютси йеннеле сулӑнтарса йараӗ: ҫак саманаран нумайӗшӗ ђӑваш пупӗсем те самотершавлӑ патшалӑха хирӗҫрех пыма тапратаҫҫӗ, ун ҫине хунӑ шанђӑка ҫухатаҫҫӗ. Ҫапла майпа шкул ӗҫне ђӑнтан никӗс ҫине лартасси малашне револютсиллӗ политтиккӑпа ҫыхӑнса кайаӗ. 1905-мӗш ҫулта револютси пуҫлансан, ђӑвашшен интелликентсийӗ пӗтӗмпех тенӗ пек хура халӑхпа пӗрле револютси йенҗе тӑраӗ. Ђӑваш интелликентсийӗн револютсиллӗ прокраммин никӗсӗнҗе ђӑваш халӑхӗ куљттурлӑ ахтономи илесси тӑраӗ. Ҫав прокраммӑпа ђӑваш халӑхне вӗрентес ӗҫе пӗтӗмпех ђӑваш халӑх аллине

памалла пулаҫ. Ҫак прокрамма монархиллӗ патшалӑх нихӑҫан та йышӑнма пултарайманнине сиссе ратикаллӑ ҫӑваш интелликентсийӗ темократиллӗ респупликкӑшӑн кӗрешме тапратаҫ. Ҫак вӑхӑтра пӗтӗм ҫӑваш халӑхӗн парттисӑрлӑ интелликентсийӗ пӗрлешше култтурлӑ автономишӗн кӗрешмелли ушкӑн тӑваҫ. уйессенҫе кӗпӗрнесенҫе ҫӑваш вӗрентекенсем пӗрлешше прохвеҫиллӗ сойусем туса пӗтӗм Раҫҫейри вӗрентекенсен сойусӗпе ҫыхӑнса тӑрса, ҫӑвашшен шкул ӗҫне ирӗке кӑларса ахтономлӑ ҫулпа йарашшӑн кӗрешеҫҫӗ. 1905-мӗш ҫулхи револютси сӳнсе ларсан, пирӗн шкул ӗҫӗ тата та кансӗртерех йулаҫ: правиттӗлствӑ ҫӑваш вӗрентекенсене тӗрмесене лартса пӗтӗрет, вырӑнсенҫен кӑлараҫ, ҫӑваш шкулӗсене вырӑс пуп хӗрӗсемпе мишҫенсен кимнаҫисенҫе вӗренсе тухнӑ хӗрӗсене лартаҫ. Ҫак вӑхӑтра нумай уйессенҫе ҫӑваш шкулӗсенҫе ҫӑваш пукварне те вулама ҫарма тытӑнаҫҫӗ, правиттӗлствӑ Ҫӗмпӗр шкулне хупса ӑна вырӑс ҫеминари тума шухӑш тытаҫ. Анҫах ҫасах 1917-мӗш ҫул персе ҫитет, малтан нарӑс револютсийӗ, унтан йупа револютсийӗ пулса тӑраҫ. Ҫӑваш ӗҫлекен массисем хӑйсен револютсиллӗ енеркине ҫӑваш хура халӑхшӗн политтиккӑлӑ ахтономи тӑваҫҫӗ, ҫапла тусан култтурлӑ ахтономи хӑй тӗллӗн пулса тӑраҫ, ҫапла пирӗн шкул ӗҫӗ ҫӗнӗ историллӗ ҫул ҫине тухаҫ.

Ҫапла ҫӑваш халӑхӗ ҫутӑланас ӗҫӗн историне 4 еттапа уйӑрма пулаҫ. Малтанхи периоҫӗ XVIII-мӗш ӗмӗрӗн 30-мӗш ҫулсенҫе пуҫласа XIX-мӗш пуҫламӑшӗҫҫен пыраҫ, ҫак вӑхӑтра ҫӑваш йалӗсенҫен уйрӑм аҫасене тӗн шкулӗсене, унтан мӑнастырсене, ерхерейсен ҫурҫӗсене илсе кайса вӗрентеҫҫӗ, вӗсенҫен тӗн вӗрентӳҫӗсем, ӳкӗтлекенсем, пупсем тӑваҫҫӗ. Иккӗмӗш периоҫӗ XIX-мӗш ӗмӗртен пуҫласа хресҫене крепӑҫлӑ пусмӑртан кӑлариҫҫен пыраҫ, ҫак периотра ҫӑвашшене йалсенҫех вӗрентеҫҫӗ, вӗсене тӳрех вырӑсла вӗрентеҫҫӗ, ҫак саманара ҫӑваш хура халӑхӗ хушшинҫе йалсенҫе ҫыруҫӑсем пулаҫҫӗ анҫах шкул сайрипе вӗсем питӗ сахаллӑн пулаҫҫӗ, унтан ҫырӑва вал вӑхӑтра наҫар вӗрентни те вӗсем алӑпусма та, вулакалама ҫеҫ пӗлеҫҫӗ, хура халӑх ку саманара шкул ӗҫӗнҫен писсе пурӑнаҫ. Виҫҫӗмӗш периот хресҫене крпаҫлӑ пусмӑртан кӑларсан револютсиҫҫен пыраҫ, ҫак периотра ҫӑваш йалӗсенҫе шкул йышлӑланаҫ: пӗтӗм ҫӑваш хушшинҫе кӗҫӗн шкул 1200 ытла пулаҫ, 20 твухклассӑ шкул пулаҫ, вӗсенҫе 1800 ҫынна йахӑн вӗрентекен вӗрентсе тӑраҫ, шкулсенҫе аҫасене малтанхи ҫул ҫеҫ ҫӑвашла вӗрентеҫҫӗ, ҫӑваш ҫӗлхи вырӑс ҫӗлхипе, вырӑс култтурне йышӑнассин орутийӗ вырӑнӗнҫе ҫеҫ тӑраҫ, ҫапах та ҫӑвашла ҫак саманара пин тӗслӗ йахӑн кӗнеке тухнипе, нумай ҫӑвашшен култтурлӑ ӗҫлекенсем ҫӑваш ҫӗлхишӗн, ҫырӑвӗшӗн, шкулӗшӗн хӗрӳллӗ ӗҫленипе хура халӑх ҫӑваш шкулне йуратакан, хисеплекен пулаҫ, аҫасене вӗрентмесӗр хӑварашшӑн мар тӑрӑшаҫ, аҫасене хуласенҫи аслӑрах шкулсенҫе вӗрентме тапратаҫ, ҫапла майпа ҫӑваш интелликентсийӗ

пулса тăрат, çак интелликентси ђăваш натсилĕ кулђттурне хăватлăлантарашшăн тăрашат. Тăваттăмĕш периот пирĕн самана пулса тăрат.

Пирĕн саманара Раççейри ĕçлекенсен массисем, вĕсен канашшен патшалăхĕ пĕтĕм тĕнђери пролеттарисене пĕрлештерсе, капиталисăм çиçтемине пĕтерсе пĕтĕм тĕнђере пĕр канашшен респупликкă тăвашшăн кĕрешет. Çав политтиккăпа пырса, пролеттариат кулђттурă тĕлĕшĕнђен те интернатсионаллă кулђттурă патне çывăхарашшăн кĕрешет. Пуршуаслă пурăнаç йĕркипе, тĕнђере кашни паттăртарах натсилĕ патшалăх туса, ытти халăхсемпе патшалăхсене тăшман тăрса хайĕн кулђттурĕне те уйрăм çулпа йарашшăн тăрăшнă, пĕрлешес йенпе шухăшламан, йалан ытти халăхсен кулђттурĕне хурласа халăх кăмăлпе ытти халăхсене хирĕç тăратма тăрăшнă. Çапла майпа кашни халăх хайĕн уйрăм натсилĕ сăнпит пур, унăн ытти халăхсенђен уйрăмрах тăракан литтераттурă, искусствă пур, унăн пур пурăнăç йĕрки, йăлисем ытти халăхсенђен уйрăм тесе мухтаннă. Çапла майпа кашни халăх ытти халăхсенђен тата уйрăмрах пулма тăрăшнă, çапла майпа вăл шкул ĕçне наукка кăтартнă пек йама тăрăшман, натсилĕ шкул тăватăп тесе вăл ăна суйа çулпа, халăх çине халăха тăратакан, унтан вăрçă кăларакан çулпа йана, çав çулпах вăл наукка, литтераттура, искусства йанă, çав çулпах вăл пĕтĕм ђунлă пурăнăçа йама тăрăшнă. Çак йĕркепе халăхран халăх тумтир таранђен уйрăм пулас тесе пурăннă. Халăхсен çапла кулђттурлă сулăнăç йĕркине пула пуршуаçи ĕçлекенсемпе хресђенсене, пĕтĕм ĕç халăхне улталантарнă, ытти халăхсене кураймасăр тăнă, пуршаçи вĕсемпе вăрçă тапратсан вĕсене хирĕç çапăçнă. Çак йĕркене пĕтерешшĕн кĕрешекен пролеттариат кулђттура çине урăхла пăхат. Вăл калат: пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсем влаçа хайсен аллине илсе малашне пур халăхсем те ĕмĕр килĕшулĕ пурăнмалла, пĕрлешпе пурăнмалла, пĕр пĕрне тулас, пĕр пĕринђен йутшăнас, пĕр пĕринпе вăрçас йăлана манса халăхсем тĕнђере пĕр çемйе пулмалла. Çавăнпа авалран историлĕ ларса йулнă кашни уйрăм халăхăн уйрăм кулђттурлă туртăмĕсене ытти халăхсемпе пĕр çулпа йама тăрăшмалла, ытларах пĕр кулђттурăпа тепĕр вайсăртарах халăхăн кулђттурне пусмăрлас йăлана пĕтĕмпех манмалла. Çапла ђăваш кулђттурĕн те тĕп тĕллевĕ интернатсионаллă кулђттура çывăхарассинђе тăмалла. Çав интернатсионаллă кулђттурă халĕ класслă пролеттарлă кулђттурă, ĕçхалăхĕн кулђттурине тăвассинђен килет. Çав кулђттурă пролеттариат итеолокипе çупатланса, ун шухăшĕпе, кăмăлĕпе тулса малалла çĕкленсе каймалла. Çапла пирĕн саманара интернатсионаллă кулђттурă тени пур уйрăм халăхсен кулђттурĕ те пĕр никĕс çинђе ларнине, пĕр йенпе сулăннине, пĕр тĕллев тытнине пĕлтерет. Çав тĕллев ĕçлекенсене пур йенђен те ирĕке кăларса вĕсен пурнăçне телейлĕ тăвассине пĕлтерет. Анђах никам та халех тĕнђере пĕр кулђттурă тăваcси çинђен шухăшламаст. Тĕнђере пур халăхсен те

пěртен пěр култтура пуласси ђи малтан пур халăхсем те пěр ђěлхепе калаçассине пěлтерет, вара тин тěнђере пěр литтераттура, искусства пулма пултарат. Анђах çапла тěнђери ěçлекенсен массисене тăван ђěлхене мантарса тěнђере йышăнна пěр интернатсионаллă ђěлхепе калаçма тытăнтарасси вăл такçан ўлěмрен пулас ěç çеç—халě вăл пěтěмпех уттопийă. Пыра киле, нумай ěмěрсем иртсен, тěнђере пěр хуçалăх йěрки пулсан, халăхсем пěрлешше пурăнса çапла пěр ђěлхе те пулма пултарě, анђах вăл халě айакри вăхăтра пулмалли ěç çеç. Çавăнпа пирěн саманара епěр уйрăм халăхсен: вырăс, нимěç, тутар ыттисен те уйрăм пролеттарлă култтура тавашшăн тăрăшатпăр. Çав халăхсен пролеттарлă култтурăсен ăшђикě, ђунě пěр пулмалла, анђах вěсен хурми пěр пěриђен уйрăмрах пулма пултарат Çав ђи малтан халăхсем тěрлě ђěлхесемпе калаçниђен килет. Çакăн синђен епěр сăмаха варăмрах тăсса ак мěншěн каларăмăр: нумайěшě айванрах ђăвашшем халě епěр интернатсионалистсем, çавăнпа епěр ђăваш култтурěшěн, урăхла каласан ађасене шкулра ђăвашла вěрентессишěн, ђăвашла хаçатсем, шурналсем, кěнекесем кăларассишěн, ђăваш искусствине малалла йарасишěн тăрăшма пултараймастăпăр теççě. Анђах апла пулсан мěншěн вырăс пролеттариађě вырăс пролеттарлă култтура, йеврей пролеттариађě йеврей пролеттарлă култтура туни çинђен вěсем шухăшламаççě. Унтан ђăваш пролеттарине хирěç пыракан ђăвашшем хăйсен сулăнăçне çапла тěрěслеме тăраççě: вырăс култтурě аслă култтура, вăл тěнђери ытти култтурăсемпе çыхăнса тăракан култтура, вăл пулас инттернатсионаллă култтура, çывăхрах култтура, çавăнпа ђăвашшем хăйсен ђăвашлăхне манса ђасрах вырăсланса каймалла теççě. Çакна хирěç çапла калатпăр: нимěç култтурě вырăссенђен хисенсěр нумай çўлте тăрат, анђах мěншěн вырăссене нимěçленме хушшан кулăшла, ухмах сăмах пек туйăнат? Вырăссем паттăр, ђăвашшем вăйсăр халăх, вырăссен малашнехи ěмěђě пур, ђăвашшен çук тепи вăл авалхи пек шухăшлашине пěлтерет: империалисăмлă капиталисăм вăхăтěнђе ђăнахах та паттăр халăхсем çеç телейлě пурăнса пынă, вак вăйсăр халăхсем пěтсе пынă, анђах çак вак халăхсене аван пурăнса ěрђеме мěн ђарěши? Мěђйунçурăллă ђăваш халăхне хăй ирěкěпе, култтурланма мелле хăват ђарса тăрěши? Унтан çаплах пултăр ěнтě: ђăвашшем интернатсионаллă култтура пађах вырăс култтурě урлă çеç йышăнмалла пултăр. Çапла пулсан пирěн ђасах вырăс култтурине йышăнмалла пулат. Çапла тума айвантарах çынсен шухăшěпе ђăвашшене ирěксěр тăван ђěлхине мантарса, парахтарса вырăс ђěлхипе халăха калаçтарма тытăнтармалла пулат. Çапла тăвас тесен, авалхи йăлапа ђăвашла шкулсенђе вěрентме, ђăвашла хаçатсем, кěнекесем кăларма, ђăваш театтăрăсем тума пăрахас пулат, ђарас пулат. Анђах çапла майпа ђăваш халăхě çумне вырăс култтурě çыпăçма пултарайманнине патша тарçисемех лайăх сисчě: вěсем темисе çěр

ҫул тӑршшӗпе вак халӑхсене ирӗксӗр пусмӑрласа вырӑслантарашшӑн пулнӑ, анҁах ҫакӑнтан нимӗн те тухман, ҫавӑнпа кайран хӑйсен руссихвикатлӑ политтиккӑна вак халӑхсен тӑван ҁӗлхи урлӑ тума тытӑннӑ. Ҫапла вак халӑхсене тӑван ҁӗлхепе кӗлтума парсан, вӗсене тӑван ҁӗлхепе вӗрентме тытӑнсан ҫеҫ ҫав халӑхсем вырӑс йенне ҫавӑрӑна пуҫлавӑ. Тӑван ҁӗлхерен пуҫне куҁттурӑн ытти йенӗсенҁен пуҫне ҁаваш халӑхӗ вырас куҁттурӗне йышӑнаймасси пире виттӗр курӑнса тӑрат: халӗ пӗрер ҫын ҁаваш хӗрарӑмсене ирӗксӗр приккас парса вӗсен натсилӗ тумтир вырӑнне сарахвансем тӑхӑнса майралантарас тесен, ҫав ҫынна ӑсран кайнӑ тиӗҁҁӗҫ. Мӗҁйунҫурӑллӑ халӑхшӑн хӑй ҁӗлхине пӑрахса вырӑс ҁӗлхине йышӑнасси ҁаваш кӗпине пӑрахса сарахван тӑхӑнассинҁен пин хут йавӑр. Ҫавӑнпа ҁаваш куҁттурӗ ан пултӑр тенӗ сӑмах вӑл йе айвансен, йе халӑх тӑшманӗсен сӑмахӗ ҫеҫ.

Анҁах ҁаваш куҁттурӗ тесе епӗр мӗне калатпӑр? Епӗр ҫапла ҁаваш ҁӗлхине, ҫыруне, искусствине калатпар. Аслӑлӑх, техниккӑ, пур маттериаллӑ куҁттура тӗнҁере пӗр пек, вӗсен натсилӗ хурмӗсем ҫукӗх теме йурат. Анҁах ҁӗлхе кашни халӑхӑн уйрӑм, ҫавӑнпа пур ҁӗлхепе ҫыхӑнса таракан куҁттура та халӑхсен уйрӑм хурмӑллӑ. Ҫавӑнпа епӗр ҁаваш куҁттурӗ тесе ҫав ҁӗлхепе, унтан унпа ҫыхӑнса тӑракан ҁунлӑ пурӑнӑҫӑн уйрӑм йенӗсене ҫеҫ калатпӑр. Унтан епӗр ҁаваш куҁттурӗ интернатсионал ҫулӗпе пымалла тетпӗр. Вӑл ак мӗне пӗлтерет: ҁавашшен хушшинҁе ытти халӑхсен пекех кивӗ йӗрке йенне туртӑнса тӑракан ҫынсем пур, вӗсем ҁаваш халӑхне йалсенҁе ҫеҫ авалхи хуҫалӑх йӗркипе ҫӗр ҁавалаcа ҫеҫ пурӑнтарашшӑн, вӗсем халӑх хуласемпе хапӑрксене кайсан пӑсалат теҫҫӗ, вӗсем халӑх авалхи йӑлипе пурӑнсан, тӗнҁерен йутшӑнса, натсилӗ хупӑпа хупӑнса пурӑнсан телейлӗрех пулат теҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем куҁттурӑ ӗҫне те ҫав хупӑпах хупса тӑрашшӑн: вӗсем ҁаваш ҁӗлхине пӗр йут сӑмах кӗмелле мар, ҁаваш йурри-кӗвви авалран йулни ҫеҫ пулмалла, ҁаваш мусӑкӗ сӑрнайпа шапӑр пулмалла, ҁаваш тирӗ емӗр пӗтмн авалран йулнӑ тум ҫеҫ пулмалла теҫҫӗ. Епӗр калатпӑр: ҁаваш ҁӗлхине интернатсионаллӑ сӑмахсемпе ҁасрах пуйанлатмалла, ытти ҁӗлхерен куҫарнӑ, йе ҫӗнӗрен ҁавашпемех кӑларнӑ йурӑсемпе кӗвӗсене йышӑнмалла, шӑпӑрна аппалавитҁен пиҥанинӑпа, ройаҁпа выҁама вӗренме тӑрӑшмалла. Сурпан вӑл авал хӗрарӑм ҁуралӑхра пурӑннӑ саманаран йулнӑ, вӑл сывлаха сийенлӗ, ҫавӑнпа ӑна сырмасан авантарах тетпӗр. Йепле епӗр пурӑнӑҫра ҫӗнӗ йӗрке йенне, хуҫалӑхра интустрипе техниккӑ йенне халӑха ҁӗнетпӗр, ҫавӑн пекех куҁттурӑ тӗлӗшпӗнҁен те тӗнҁе ҫулӗ ҫине тухма ҁӗнетпӗр, ҫавӑна пирӗн хушшӑмӑрти сурпанлӑ патриотисӑма хирӗҫ пыратпӑр, вӑл кӑтартакан ҫула суйа сийӗнлӗ ҫул тетпӗр.

Ҁаваш куҁттурӗн пӗр тӗп никӗс пуканӗ шкул ӗҫӗ ҫинҁе ларат. Ҫав ӗҫӗн ҁи пысӑк ыйтӑвӗ пӗтӗм хура халӑха науккӑн

пĕлĕвĕсемпе паллаштарассинҫе тăрат̆. Хура халăх ҫăнтан куљттурлантăр тесен ун хушшинҫе пĕр ҫын та ҫыру пĕлмесĕр ан пурăнтăр. Ҫапла пур ҫынсем те аҫаран шкулра вĕренсе тухсан ҫеҫ пултарат̆. Анҫах авал правиттĕлствă халăха вĕрентме тăрăшманнипе, пирĕн хушăмăрта халĕ ҫыру пĕлекен ҫын 60%-ран ытла мар, ҫапла пирĕн халăх ҫуррине йахăн ҫырăва пĕлмест, ҫавăнпа вал тĕнҫен куљттурлă пурăнаҫан тутине пĕлмесĕр, ун ҫинҫен илтмесĕр тĕттĕмре пăнҫăхса иртерет. Ытларах та пирĕн хĕрарăмсем тĕттĕмре пурăнаҫҫĕ, вĕсен хушшинҫе ҫыру пĕлекен 10-15%-ран та ытла мар. Ҫапла ҫыру пĕлес тĕлĕшĕнҫен ҫăвашшем вырăссенҫен пайтах кайра тăраҫҫĕ. Халĕ пирĕн онлăҫра мĕнпурĕ йал кĕҫĕн шкулĕ ултҫĕр ҫеҫ, весенҫе 46 пин аҫа веренет, ултҫĕр ытларах вĕрентекен вĕрентет. Ҫапла пирĕн виҫĕ йала пĕр шкул, 1300 ҫын пуҫне пĕр шкул ҫеҫ тивет. Ҫак шкусенҫе халĕ халăхан ҫурри ҫеҫ ҫăнтан вĕренсе тухма пултарат̆. Ҫавăнпа пирĕн ҫи пысăк, ҫи кирлĕ ĕҫ: ҫав кĕҫĕн шкулсене йепле те пулсан йышлатас пулат̆, сывăх ҫулсенҫех кашни йалта шкул уҫма тăрăшас пулат̆. Унтан шкулсем пирĕн халĕ питĕ йухăнса саланса тăраҫҫĕ: вĕсен ҫурҫĕсем кивелеҫҫĕ, ишĕлеҫҫĕ, шкулĕнҫе кĕнеке, хут ытти вĕрентме кирлĕ йапала сахал. Ҫакна халăх хăй харăссăн вăйпа тапрансă тумасан нийепле майпа та ҫук. Унтан револљутсиренпе йышăннă йеркепе ҫăвашшен кĕҫĕн шкулĕсенҫе ҫăвашлах вĕрентмелле, вырăс ҫĕлхине те тĕплĕ вĕренмелле, анҫах ăна ҫăваш ҫĕлхи урлă ҫеҫ вĕренмелле, ҫавăнпа пур ҫăваш кĕҫĕн шкулĕсенҫе ҫăваш вĕрентекенсен йе ҫăвашла пĕлекен вырăс вĕрентекенсем ҫеҫ пулмалла. Халĕ ҫăваш йалĕсенҫи шкулсенҫе ҫăваш вĕрентекенсем 70%-ран ытла мар. Ҫавăнпа пирĕн ҫăваш вĕрентекенсене хатĕрлекен шкулсене йышлантареса тĕреклентермелле. Ҫăваш шкулĕнҫе ҫăвашла вĕрентме ҫăваш ҫĕлхипе ҫырнă кĕнеке нумай кирлĕ, ҫавăнпа кĕҫĕн шкула ҫăнтан тăвас тесен ҫăвашла кĕнекесем кăларас ĕҫе вăйпа малалла йамă тăрăшмалла. Шкул ĕҫĕ, ăна ҫăнтан тума халăхран нумай тăкак ыйтат̆, ҫавăнпа вăл ҫасах тĕплĕ пулаймĕ. Ҫакăнтан пушшех халăх хăй вĕренме, аҫисене те вĕрентме мĕн вăй ҫитнĕ таран тăрăшма кирли курăнса тăрат̆. Ҫăваш хушшинҫе малашне ҫырăва пĕлмесĕр йулас йала пăҫах пĕттĕр тесе епĕр ҫунтан сунатпăр: шкулта вĕрентме май пулмасан пĕр пĕринҫен те пуљин вĕренсе ҫырăва пĕлесех пулат̆. «Ҫырăва пĕлмен ҫын суккăртан уйрăм мар» тесе ваттисемех каланă сăмах пирĕн саманара та асра тытмасан пĕтĕмпех намăс.

Ҫăваш куљттурĕн тепĕр никĕс пукапĕ вăтам шкулсене йышлă та, тирпейлĕ те тăвассинҫен килет. Малашне ҫĕнĕ пурăнăҫ йеркине йышăнас тесен пире акрономсем, инщенерсем, техниксем, тухтăрсем ытти тĕрлĕ вĕреннĕ ăстасем кирлĕ. вĕсем пулмасан пурăнăҫа нийепле майпа та ҫĕнетме ҫук. Анҫах ҫак ĕҫ пирĕн питĕ наҫар, вăрҫă уммĕн вăл пăҫах пăнҫăхса тăраҫҫĕ: ҫăвашшен пĕр вăтам шкул та ҫукҫĕ. Халĕ те

ђаваш вăтам шкулĕсем ђантанах йĕркеллĕ мар. Вĕсем мĕнпурĕ те 12 çеç, вĕсем те нумайĕшĕ йе хуласенђе, йе аслăрах вырăс йалĕсенђе. Çавăнпа вĕсенђе ђаваш ађисем питĕ сахаллăн вĕреѕме пултараççĕ Ытларах та йалта пурăнакан хресђене ађисене вĕсенђе вĕрентме йăвăр, нумай расхутлă. Унтан çак вăтам шкулсенђен пуçне ултă çул йе сакăр çул вĕрентмелли шкулсем пур, анђах вĕсем те питĕ сахал. Авал епĕр вăтам шкул çинђен шухăшлама та пултарайман: вăтам шкул пурпуаçи ађисемшĕн çеç пулнă. Çавăнпа та ђавашран ĕлĕк аслă шкулсенђе 50-çул тăршшĕне 50 çынран ытла та вĕренсе тухайман. Малашне апла пулмалла марри куç умĕнђе: ђаваш çĕрĕнђи вăтам шкулсен ђи малтан ĕçлекен массăсемшĕн пулмалла, çавăнпа унта пуринђен ытла ђаваш вĕренмелле. Малтаң ăсăннă 12 вăтам шкулра халĕ 1800 ађа вĕренет, çавсенђен 1500 ђаваш пулсан, вĕсем çуллен çавăн ђухлĕн аслă шкулсене кайса тăрсан пирĕн çĕр 10-15 çул хушшинђе паламалла мар улăшăнса кайĕ; емĕр теттĕмре пăнђăхса пурăннă ђаваш хура халăхĕн нихăçан тĕлĕкре те тĕлленмен хăватлă пролеттарлă интелликентси пулса тăрĕђђĕ, вăл пурăнăçа çĕнĕ çул çине тăратма вăйлă пулăшĕђђĕ. Сывăх çулсенђе вăтам шкулсенђе те науккăсене ђавашла вĕрентмелле: вăл вăтам шкусенђе кăтартакан пĕлӳсене, унта вĕренекен науккăсене ђаваш хура халăхĕ те анланмалла пултăр тенипе, хура халăхшăн тĕнђе ăслăлăхне унтан питĕрсе тăракан хапха йăр уçălса кайтăр тенипе, унтан ытларах та унта вĕренсе тухса пулнă инпенерсем, тĕрлĕ ăстасем хура халăхпа пĕрлешӳлĕ, пĕр урапа çинђе пурăннине ан манђђăр, унпа пĕрлех пурăнса иртерме хăнăхђăр тенипе пулаť. Çапла тăвас тесен çав вĕреннĕ çынсем хура халăхпа çыхăнтарса тăракан ђĕлхе çыххине татмалла мар. Халĕ вăтам шкулсенђе ђавашла вĕрентме пирĕн хал çук, кĕнекесем те, вĕрентекенсем те çук, анђах çакă 5—6 çултан ытла пымĕ: пролеттарлă интелликентси пирĕн çулран çула хунаса пыраť. Халĕ вăтам шкулсенђе епĕр ђавашла, ђаваш ђĕлхипе, историне, кулђтурĕне, етнокрахвине унтан таван çĕршывне çеç ђавашла вĕренетпĕ, анђах малалла апла пулмĕ: пур науккăсене те ђавашла вĕрентĕç. Йулашкинђен çакна асанмасăр йулмалла мар: пирĕн халĕ 70 пап çынна пĕрех ватам шкул, çав вуникĕ вăтам шкулсенђе ĕлĕк хула çыннисен ађисем çеç вĕренме пултарађђĕç, хресђен ађисене выран çукђĕ. халĕ те вăтам шкул ĕлĕкхинђен нумай та ытла мар, çавăнпа вĕренес тейекен ађасем те халĕ çуллен пиншерĕн вăтам шкулсене кĕреймесĕр йулаççĕ. Вăтам шкул ĕçне ђантан лайăхлатас тесен малашне кашни вулăсрах пĕрре те пулин вăтам шкул пулмалла.

Унтан оплăçра прохвеççилĕ вăтам шкулсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Çав шкулсем: виçĕ петтехниккум—Шупашкарта, Канашра, Хĕрлĕ Ђутайра. çак петтехнуккумсенђе ђаваш вĕрентекенсене хатĕрлеççĕ: пĕр вăрман техниккумĕ, вăл Сĕнтĕрвăрринђе, унта вăрмансене пăхса ӳстерсе тăракансене

хатӗрлеҫҫӗ: икӗ йалхуҫалӑх техниккумӗ: пӗри Вӑрнарта теприӁӗмпӗрте (ӗлӗкхи Ӂӗмпӗр шкулӗн херми ҫумӗнӁе). ХалиӁӁен Ӂӑвашшем вӑрманпа йалхуҫалӑх техниккумӗсенӁе сахаллӑн вӗренеӁӁӗҫ: Ӂӑваш авалран аӁине вӗрентес пулсан уӁӁиттӗле каларсан кӑмӑлне тултараӁӁӗ. Халӗ апла мар: Ӂӑвашшем ҫав шкулсене те тула пуҫларӗҫ. Пирӗн оплӑҫра ҫӗр ӗҫне те, вӑрман хуҫалӑхне тӗп тымарӗпе ҫӗнетсе ҫӗнӗ йӗркепе йарасси синӁен епӗр малта асӑнсаттӑмӑр. ҫавӑнпа ҫак техниккумсене те епӗр пӗтӗмпех Ӂӑвашлатма сунатпӑр.

Ӂӑваш оплӑҫӗн аслӑ шкул вырӑнӗнӁе тӑракан шкулсем те пур, вӗсем малашне Ӂӑвашшен Ӂӑнтанах та аслӑ шкулсем те пуласине пӗлтерсе тӑраҫҫӗ. Ҫав шкулсем: Ӂӗмпӗр институӁӗ, унтан Шупашкарти ӗҫлекенсен ХваккуӁтеӁӗ. Ӂӗмпӗр институтне канаш влаҫӗ ӗмӗрне Ӂӑваш халӑхӗн аллине пиллесе пана, пӗтӗм Ӂӑваш халӑхӗн ӗмӗӁӗ Ӂӑваш хура халӑхӗ хӑй йӗркипе пурӑнакан Ӂӑваш ҫӗрӗ ҫинӁе, ҫавӑнпа та ҫав института Ӂӑваш оплаҫӗ тытса тӑрат. Ҫак институт пире исторнлӗ асӑнусемпе калама ҫук хаклӑ: ҫав Ӂӗмпӗрти Сӗве хӗрринӁи шкулра Ӂӑваш куӁттурӗ шӑтса тухнӑ, унтах аллӑ ҫул тӑршшӗпе ӳсе сарӑлса пӗтӗм халӑх пурӑнӑҫне илем пама тытӑннӑ. Халӗ те ҫав институт пирӗн хӗвел вырӑнӗнӁе тӑрат: ҫав институтра Ӂӑвашшен аслӑ вӗрентекенӗсем вӗренмелле, ҫав институтра Ӂӑваш историйӗ, Ӂӗлхи искусстви Ӂӑнтан ӑслӑлӑх урапи ҫине лармалла, Ӂи малтан ҫав институтах Ӂӑваш вӑтам шкулӗсем валли вӗрентекенсем хатӗрлемелле. Шупашкарти Ӗҫлекенсен ХваккуӁтеӁӗ те ҫав институт пекех паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат: унта ҫитӗннӗ, ҫамрӑкран вӑтам шкула лекеймен хресӁенсемпе ӗҫлекенсем вӗренеҫҫӗ, вӗсем вӗренсе тухсан пур Раҫҫейри аслӑ шкулсене кӗме пултараҫҫӗ, ҫак хваккуӁтетра пирӗн пулас тухрӑрсем, иншенерсем, акрономсем вӗренеҫҫӗ. ҫавӑнпа вӑл пур шкулсен хушшинӁе Ӂи паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат.

Шкулсен хушшинӁе уйрӑм вырӑн парттипе канаш шкулӗсем йышӑнса тӑраҫҫӗ, ҫавӑн пек шкулсем оплӑҫра иккӗ, вӗсенӁе малашне канаш политтиккине хӑйсен хулпуҫҫийӗсем ҫинӁе ҫӗклесе пырас ҫынсем вӗренеҫҫӗ.

Оплӑҫра тата ӑсталӑха вӗрентекен маҫтерскуйсем пур, вӗсем улттӑ. ҫавсенӁен Ӂи Ӂапли СӗнтӗрвӑрринӁе йӑвӑҫ каскалакан инструктӑрсене хатӗрлекен шкул.

ШкулсенӁе ҫамрӑксем ҫеҫ вӗренеҫҫӗ. АнӁах халӑх хӑвӑртрах ҫутӑланас тесен вӑл хӑй те йалан пӗр Ӂарӑнми вӗренсе пымалла. ШкулсенӁе вӗренсе тухнӑ аӁасем те, ӳссен те вӗрениессине ӗмӗрех манмалла мар. Пӗлес пулат: кам м а л а л л а каймаст, ҫавӑ кайалла Ӂакат. Ҫавӑнпа куӁттурӑ Ӂӑнтан пултӑр тесен халӑх хушшинӁе хисепсӗр нумай халӑха ҫутатакан вырӑн кирлӗ. Ҫавӑн пек вырӑнсем те оплӑҫра сахалтарах пулсан та ҫапах пур. Ҫав вырӑнсенӁен паллӑрахисем: пиплиотексем 33, вӗсенӁен тӗп аслӑ Ӂӑваш пиплиотекки Шупашкарта,

унтан Ҫӗмпӗр институтӗнҫе, мусейсем иккӗ, пӗри Шупашкарти тӗп мусей, тепри Ҫӗмпӗр институтӗнҫи ҫаваш мусейӗ, халӑх сурҫӗсем 19, вуламалли пӳртсем 23, клупсем 5, аҫа сурҫӗсем 25. Ҫак вырӑнсенҫен ытларах та епӗр мусей ӗсне санамалла: мусейсем пур вулӑссенҫе те пулмалла, вӗсем халӑх пуранасне пур йенҫен те куҫкӗски виттӗр кӑтартнӑ пек кӑтартса тӑмалла.

Ҫапла епӗр хамӑрӑн шкулпа халӑх сутӑланас ӗсе пӑхса тухрӑмӑр. Епӗр куртӑмӑр: пирӗн халӑх нумай ӗмӗрсем тӑрлшӗпе тӗттӗмре йапӑхса пурӑннӑ. Ҫаваш шкул ӗсӗ тапранса кайни аллӑ сул сес ытларах. Ҫапах та ҫак вӗсӗмсӗр ӗмӗрте кусхуппи вӑхӑҫӗ пек кӗске вӑхӑтра та ҫаваш халӑхӗ питӗ айакка малалла йарӑнса пуснине куртӑмӑр. Халӑх мӗн ҫухле аллӑ сул хушшинҫе малалла кайнине халӗ епӗр нумайӗшӗ енсместӗпӗр, анҫах пӗлес пулат: аллӑ сул кайа ҫаваш йалӗ хаҫхинҫен хисепсӗр нумай тӗттӗм пулнӑ. Ҫапла ҫуралӑхра, капиталисӑмлӑ та, натсиле те пусмӑрта пурӑнса та халӑх аллӑ сул тӑршшӗнҫех прокресс сулӗпе нумай мала кайнӑ пулсан, малашне сав сулпа вӑл сӗр хут хӑвӑртрах кайса, ҫаваш кулҫтурӗ туса тӗнҫе кулҫтурӗ сумне сыпӑнассине епӗр пӗтӗмпех шанатпӑр.

Ҫӗлхе, сыру, халӑх сӑмахӗ.

Ҫаваш ҫӗлхи питӗ авалхи ҫӗлхе. Унӑн тӗп тымарӗ тӳрк йӑхӗсен ҫӗлхисемпе пӗр вӑрлӑхран шӑтса пулнӑ. Сӑмах тымарӗсем, хурмисем сӑмах саврӑнӑсӑн саккунӗсем пурте ҫаваш ҫӗлхи тӳрк ҫӗлхи иккӗнне кӑтартса тӑрассӗ. Анҫах ҫаваш ҫӗлхи ытти тӳрк ҫӗлхисемпе тӑван пулсан та вӗсенҫен нумай уйрӑм. Вӑл авалран пин сул ытла ҫаваш халӑхӗ вӗсенҫен уйрӑм пурӑннинҫен килнӗ. Ҫӗлхе те тӗнҫери ытти пур йапала пекех йалан улшӑнса пырат, вӑл улшӑнса пыни пурнӑс улӑшӑннинҫен килет; пыра киле ҫӗлхе улшӑнса пырса пӗтӗмпех урӑх йеверлӗ пулса кайат, ҫапла вырӑссем халӗ авалхи хӑйсен славин ҫӗлхине ӑнлама та пултараймассӗ. Ҫӑвашшен авалран сырулла памӗтниксем йулман, савӑнпа пирӗн авалхи ҫӗлхе мӗлле пулнине епӗр пӗлейместпӗр. Ҫапах та хаҫхи ҫӗлхере нумай йут сӑмахсем пурринҫен епӗр пирӗн ҫӗлхесен историне кӑпит та пулин ҫухлама пултаратпӑр. Ҫӑваш ҫӗлхинҫе семит ҫӗлхисенҫен кусна сӑмах питӗ нумай, ҫапла пирӗн ӗмӗрхи тӑван сӑмахсем пек илтӗнекен сӑмахсем: киремет, йӗрӗх, хӑйамат, есрелӗ, пирӗшти, халӑх, етем, вӑхӑт, сехет, тамӑк ытти савӑн пек сӑмахсем те семит ҫӗлхинҫен куснӑ сӑмахсем. Ҫак сӑмахсем авал ҫӑвашшем семит йӑхӗсемпе сутилӳпе, ытти ӗспе те паллашша пурӑннӑ вӑхӑтра куснӑ. Савӑн пек сӑмахсене ӑслӑлӑхсӑсем ҫӑвашшем арапсемпе йеврейсенҫен йышӑннӑ тессӗ. Ҫак пӑлхари патшалӑхӗн саманинҫе пулнӑ пулмалла. Ҫак саманаҫҫен ҫӑваш ҫӗлхи нумай ҫухӑн пулнӑ: пӗр вырӑнтан тӗпӗр вырӑна кусса сӳрекен ҫӑвашшен пурӑнасӗ

култтура йенҫен ҫухăн пулнă. ҫавăнпа тĕрлĕ ăнлавсемпе вĕсене пĕлтерекен сăмахсем сахал пулнă, ҫапла уйрăм ăрусемпе пĕр пĕринпе йаланах вăрҫҫа кĕтӳсем кĕтсе пурăннă вăхăтра вĕсем халăх тенине те пĕлмен пулмалла. Пăлхари самани нҫен кивĕ масарсем ҫинҫи ҫырулла ҫулсене вуласан вĕсене ҫăваш ҫĕлхи йеверлĕ ҫĕлхепе ҫырни паллă. Хăш ăслăлăхҫăсен шухăшĕпе ҫав ҫĕлхе авалхи ҫăваш ҫĕлхийех пулма пултарнă теҫҫĕ. Ҫак вăхăтсенҫех ҫăваш ҫĕлхине перссен, ерменсен ытти хĕвелтухăҫри авалхи халăхсен те сăмахĕсем кĕрсе йулнă. Хвин йăхĕсемпе кӳршĕленсен ҫăвашшем хвин сăмахĕсене хайсем те пумай йышăннă, хайсен сăмахĕсене те ҫармăссене, вутексене, мăкшăсене, ирҫесене, маҭарсене, сыренсене, пермексене йышăнтарттарнă. Йулашкирех саманасенҫе ҫăваш ҫĕлхине тутар сăмахĕ пайтах, ытларах та вырăс сăмахĕ питĕ нумай кĕнĕ. Авалранах ҫăваш ҫĕлхине авалхи крексемпе латтинсен. унтан халĕ пурăнакан Йевроппă халăлăхĕсен сăмахĕсем те кĕркеленĕ. Револютси пуҫланнăранпа ҫавăн пек сăмахсĕм ытла та нумай кĕре пуҫларĕҫ, мĕншĕн тесен ăслăлăх тĕрминĕҫем пурте ҫав ҫĕлхесенҫен йышăннă сăмахсемпе калăнаҫҫĕ. Йепле ҫăваш ҫĕлхийĕн саккунĕсем, сăмах ҫавăрнăҫĕсем авалран улăшăнса пынине ăслăлăх ҫухлама пултарат, анҫах хăш ĕмĕрте ҫăвашшем мĕлле калаҫнине, ҫĕлхе йепле улăшăнса пынине виттĕр кăтартаймаст. Анҫах пирĕн ҫакна пĕлес пулат: ҫăваш ҫĕлхи ĕмĕртен тĕнҫери ытти халăхсен ҫĕлхисемпе сыхăнса хăватланса пынă.

Ҫăваш ҫĕлхине ăслăлăхҫăсем пуйан ҫĕлхе. авалхи ҫĕлхе теҫҫĕ. Ана пуйан тесе ытти култтурăсăр нумай халăхсен ҫĕлхисемпе танлаштарсан калаҫҫĕ. Анҫах култтурлă халăхсен ҫĕлхисемпе танлаштарсан, пирĕн ҫĕлхере сăмах икĕ хута йахăн сахал. Вăл пирĕн халăх култтурăн айаларах пусми ҫинҫе тăнинҫен килет: пирĕн ҫĕр ҫаваласа ҫеҫ пурăнакан халăхăн пурнăҫĕ тĕксĕм, йалан пĕр тĕслĕ, халăхăн шухăшĕ, ҫунĕ ҫĕр ĕҫĕпе йалти ĕҫҫемпе ҫеҫ сыхăнса тăрат. Ҫапах та ҫăваш ҫĕлхипе кирек мĕлле шухăша, ăнлава та ăнланмалла калама, ҫырма пулат. Халĕ пирĕн ҫĕлхе те револютсиллĕ еттапра пурăнат: пурнăҫ тепĕр йенне ҫавăрăнса ӳкнипе ҫĕлхе те ҫулленех питĕ хăвăрт улăшăнса пырат: хура халăх умĕнҫе тĕнҫен ирĕклĕ култтурлă ҫулĕ уҫăлнипе халăх пурăнăҫĕ ҫĕнеле пуҫларĕ, ун пуҫĕ ҫĕнĕ ăнлавсемпе тулҫĕ, ҫав ăнлавсене ҫĕнĕ сăмахсемпе ҫеҫ калама йурат. Халĕ ҫамрăксем, унтан вĕренпĕрех ҫăвашшем калаҫакан ҫĕлхе пирĕн аттесен ҫĕлхинҫен питĕ нумай уйрăм. Пирĕн шухăшпа, ҫывăх ҫулсенҫех ҫăваш ҫĕлхи питĕ улшăнса кайĕ: ҫĕнĕ сăмахсемпе пуйса вăл култтурлă ҫĕлхе пулса тăрĕ, ҫавă литтераттура ҫĕлхи пулĕ, ҫăваш халăхĕн ҫырулла ҫĕлхи пулса тăрĕ. Ҫав литтераттурăллă ҫĕлхе пулмасан ҫăвашла шкулсенҫе вĕрентесси, ҫăваш ҫĕлхипех пĕтĕм науккăсене ҫавăрса илсе ҫырасси, ҫăваш ҫĕлхипех хамăр ҫĕрти патшалăх вырăнĕсенҫе калаҫасси те, ҫыру ҫӳретесси те пулас ҫук. Ҫавăнпа епĕр литтераттурăллă ҫĕлхе тăвас

ĕçе пирĕн култтурăн пикĕслĕ ыйтăвĕ, тĕп проплеми тетпĕр. Кунта йепле майпа епĕр литтераттурăлла ђелхе тума пултарни çинђен калама вырап çук, çавăнпа ун çинђен çакна çеç асăнса хурăпăр: ђăваш ђелхи халĕ ђухăн, ана литтераттурăлă ђелхе тăвас тесен çĕнĕ сăмахсем йышăнмалла: çав сăмахсене йе ытти халăхсен ђĕлхинђен йышăнмалла, йе ђăваш сăмах тымарĕсенђенех çĕнĕ сăмах тумалла: çапла ăсăлăх ăнлавĕсене епĕр интернатсионаллă йе вырăс сăмахĕсемпе каламасăр пултараймастпăр, çапла епĕр: сотсиалисăм, политтикка, происвотствă тетпĕр; унтан пумай çĕнĕ ăнлавсене ђăваш сăмахĕсенђенех çĕнĕ сăмах туса калама пулаї, çапла епĕр ăсăлăх, илемĕш, тыта , канаш сăмахĕсемпе авал ђăваш ђелхинђе пулман ăнлавсене пелтеретпĕр. Çапла ĕнтĕ пирĕн пĕтĕм култтурă ĕçĕ ђăваш литтераттурĕ, сырулăхĕ тăвассн çине тайанса тăраї. Апла пулсан пирĕн халĕ мĕлле литтераттурă пур?

«Ђăваш кĕнекине ĕне çинĕ» теççĕ ваттисем. Çака хăçан та пулсан ђăваш халăхĕн çырупа кĕнеке пулса пĕтсе ларнине пелтеретши йе вăл ђăваш çырăвĕ нихăçан та пулманнине пĕлтеретши — епĕр татса калаймастпăр. Авал ђăвашшем ђантан сырулăхпа паллашкалама тытăннă пулсан та çав Пăлхари патшалăхĕн йулашки ĕмĕрĕсенђе çеç пулма пултарнă. Анђах ун ђухне те йалта пурăнакан хура халăх çыру таврашне пĕлеймен пулĕ. Çав халăхăн пур култтурăн айаларах пусми çинђе тăракан тĕнђери ытти халăхсен пекех хăйсен çырăвĕ пулнă, анђах çав çыру литтераттурă вырăнне хисеплеиеймен. Çапла авалран ђăвашшен тĕрлĕ çыру паллисем пулнă: вĕсем пăнђа пĕлнĕ, вĕсем шăпа йапă ђух, ана валеçнĕ ђух, тĕрлĕ кирлĕ хутсене тĕрĕсленĕ ђух килйыш паллисене çырнă: ђăхă ури, сенĕк, ытти тĕрлĕ паллăсене лартнă, çав паллăсене вĕсем хапхасем çине, вĕлле пахђисенђе туса хунă, етнокрахсем кăтартнипе — нумайĕшĕ çав авалхи паллăсем римсен ђихвăрĕсем йевĕрлĕ.

Ђăваш ђелхипе çыру çырас ĕçе малтан вырăс миççионерĕсем тапратса йапă, вăл XVIII-мĕш ĕмĕрĕн çуррннђе пулнă. Миççионерсем келĕсемпе тĕрлĕ тĕп кĕнекисене ђăвашла куçарнă. Çапла ђăвашла кĕнекесем ђантан пиђетленме XIX-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çуррипђе çеç тытăнаççĕ. Çак ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри пуçламĕшĕнђе ђăвашла тĕп кĕнекисенђен пуçне ытти кĕнекесем те тухкалама пуçлаççĕ. Çав кĕнекесене тĕрлĕ етнокрахсем кăларкалаççĕ. Пыра киле ђăвашла словарсем, калентарсем, букварсем тухаççĕ. Çак кĕнекесене ђăвашла лайăхах пĕлмен вырăссем куçарса, çырса кăлараççĕ, вĕсене вырăс алхвавитђĕне çыраççĕ, çавăнпа вĕсене ăнлама питĕ йăвăр, çавăнпа та вĕсене ђăваш хура халăхĕ йышăнман. Çав авалхи кĕнекесем ђăваш ђерине çыру йенне туртăнтарма пултарайман, халăх вĕсенђен йутшăнса тăнă. Çавăнпа çав авалхи кĕнекесене халăх халĕ пăђах маннă, асран çухатнă. Çак кĕнекесене вирйал калаçăвĕпе куçарнă. Çапла малтан пирĕн литтераттурăлă ђĕлхе вирйал калаçăвĕнђен тапранса кайнă.

Епӗр пӗлетпӗр, ҫăваш халăхӗ калаҫу йепӗпе ҫурмалла икӗ пайа уйралса тăрат: пӗр пайӗ—анатри, тепри вирйал ҫăвашшем; вир тени вирллӗ тенӗ сăмахпа пӗр тымартан, вăл ҫӱлти, тури ҫăвашшем тепине пӗлтерет, ҫăнахах та вирйалсем ҫăваш таврип ҫӱлти тури уйесӗсенҫе: Ҫикме, Йетӗрне, Кăрмаш уйесӗсенҫе, унтан Шупашкарпа Ҫӗрпӱ уйесӗн хăш вулăсӗсенҫе пурăнаҫҫӗ. Вирйалпа анатри калаҫусен уйрăмӗ питӗ сахал: вирйалпа анатри ҫăвашӗ пӗр пӗрне пӗтӗмпех ăнлама пултараҫҫӗ. Ҫак калаҫусен уйрăмӗсем: вирйалсем анатрисем *у* калапă ҫух *о* тесе калаҫҫӗ, унтан вирйалсен ҫӗлхинҫе хвин йăхӗсенҫен йышăннă сăмах ытларах, анатрисен тутарсенҫен йышăнна сăмах ытларах. XIX-мӗш ӗмӗрӗн 70 мӗш ҫулсенҫе Иван Йаккăлҫă ӗҫлеме тапратсан вăл кӗнекесене анатри ҫӗлхепе кăларма тытăннă. Анҫах малтан вăл та ҫăваш пукварне вырăс алхвавиҫӗпех кăларнă. Вăл 1875-мӗш ҫулта ҫеҫ ҫăваш халҫхи алхвавитне йышăннă. Ҫак ҫулрап ҫеҫ епӗр ҫăнтан ҫăваш ҫӗлхине тӗрӗспе кăтартакан ҫыру тухма тапратнă теме йурат. Малтан Иван Йаккăлҫа кӗнекесене Пăва уйесӗнҫи калаҫупа ҫеҫ кăларкаланă, кайарахпа ун патӗнҫе ҫăвашла кӗнеке куҫарса, ҫырса нумай вирйалсем те пурăннă, ҫавăнпа кайарахпа ҫăваш литтерăттурăла ҫӗлхе улшăнарах пынă: вăл анатри калаҫу йевӗрлӗ ытларах пулсан та вирйал калҫăвӗнҫен те питӗ нумай уйрăм пулман. Ҫавăнпа Ҫӗмпӗр шкулӗнҫе кăларнă кӗнекесем пӗтӗм ҫăваш халăхӗшӗн лайăх ăнланмалли кӗнекесем пулнă. Пирӗн литтераттурă ҫӗлхи халӗ те ҫак йӗрпех пырат. Револҫутси пулнăранпа епӗр ҫав ҫулран кăшт ҫеҫ пăрăнтăмăр, вăл ак мӗншӗн кирлӗ пулҫӗ: ҫăваш ҫӗлхийӗн авалхи те, халҫхи те тăшманӗсем ҫăвашшен ҫӗлхи те пӗрре мар, ăҫтан вӗсем литтераттурă тума пултарайӗҫҫӗ тесе кăтартаҫҫӗ, вӗсем вирйалпа анатрийӗн уйрăмӗ Ҫулхулапа Мускав вырăсӗсен калаҫăвăн уйрăмӗнҫен ытла маррине асăрхамаҫҫӗ, ҫавăнпа тӗрлӗ руссихвикаттăрсем йаланах хаҫатсемпе шурналсем ҫинҫе ҫăваш литтераттурине вирйалсем ăнлаймаҫҫӗ тесе ҫыраҫҫӗҫ, ҫăвашшем хăйсем те Ҫӗмпӗр шкулӗнҫе анатри ҫӗлхепе ҫеҫ кӗнекесем кăларнипе йӱҫӗнкелеҫҫӗҫ. Ҫăнахах та пӗр калаҫăва ҫеҫ литтераттурăн никӗсӗ туни килӗшӱллӗ ӗҫ марҫӗ. Халӗ ҫакă пӗтӗмпех йурамаст, мӗншӗн тесен ҫăваш хура халăхӗ хăй ирӗкӗпе пурăнма тапратнă саманаранпа ҫăваш халăхӗн историллӗ пурнăҫӗ пӗтӗмпех тури ҫăвашшен ҫӗрне куҫрӗ: малашне ҫăваш историне, куҫттурине, ҫырулăхне, илемӗшне Ҫăваш оплăҫӗ туса пымалла пулат. Ҫапах Иван Йаккăлҫă саманинҫе тӗрекленнӗ литтераттурăн пӗр йышăннă ҫулне пăсас мар тесе халӗ вирйалсем о вырăнне у ҫырас йалана йышăнаҫҫӗ, анҫах уйрăм сăмахсемпе уйрăм сăмах ҫаврăнăҫӗн тӗлӗшӗнҫен халӗ анатри те, вирйал калаҫăвӗ те пӗр тан хисепленет, ҫапла майпа ҫеҫ епӗр пӗтӗм халăх виттӗр ăнламалла пӗр литтераттурăлă ҫӗлхе тума пултарăпăр. Унтап вирйал калаҫăвӗнҫе о сасă пуррине халӗ епӗр йут ҫӗлхесенҫен куҫакан

сӑмахсенҫе ӑслӑлӑхӑн интернатсионаллӑ терминӗсенҫе о сасса анатрисем нихӑҫан та апла каламасан та ҫав пуквӑпах ҫыратпӑр.

Унтан револҗутси пулнӑранпа ҫӑваш литтераттурлӑ ҫӗлхи ак мӗлле ҫӗнӗ йапала йышӑнҫӗ: авалах Иван Йаккӑлҗӑ ҫӑваш кӗнекисене вырӑс алхвавиҫӗпех кӑларма тытӑннӑ, унтан вӑл ҫӑваш алхвавитне йышӑнсан та ӑна пур кӗнекесене те ҫӑваш ҫыруне вырӑс саспаллисемпе пӑлхатса ҫырнӑ, ҫапла вӑл ӑслӑлӑх термӗнӗсене, тӗн тӗрмӗнӗсене, ҫын йаҫӗсене, ытти нумай сӑмахсене те вырӑслах ҫырнӑ, ҫапла ӗлӗк кӗнекесенҫе букварь, календарь, евангелие тесе ҫыраҫҫӗҫ. Ҫапла ҫӑваш алхвавитне йышӑнсан та ӑна хирӗҫ пырса пӑтранни вырӑнлӑ ӗҫ пулман. Револҗутси пулнӑранпа пирӗн литтераттурӑлӑ ҫӗлхе ҫак тӗлӗшӗнҫен ҫӗнӗ ҫулпа кайрӗ: халӗ епӗр халӑх йепле каласаӗ ҫапла ҫырас тетпӗр, пур йут сӑмах та пӗр ҫӑваш ҫӗлхине кӗрсен тӑван сӑмах пулса тӑраӗ, ҫавӑнпа вӑл ҫӑваш алхвавиҫӗпе ҫырӑнмалла тетпӗр, ҫавӑнпа епӗр автономия вырӑнне ахтономи, букварь вырӑнне пуквар тетпӗр. Хаҗхи алхвавита епӗр килӗшӳлӗ тетпӗр, ӑна улӑштарма асапӗ ҫук тетпӗр, хӑшӑ ҫӑваш ҫыруҫисем арапсен йе латтинсен алхвавитне йышӑнас тенине уттопийа тетпӗр.

Пирӗн ҫырулӑх историйӗн пуҫламӑшӗнҫе кӗнекесем вырӑсларан ҫӑвашла ҫеҫ куҫарӑнса ҫапӑннӑ. Иван Йаккӑлҗӑ та ытларах та кӗнекесене вырӑсларан куҫарса ҫеҫ пиҫетлеме тӑрӑшнӑ, ытла та вӑл тӗп кӗнекесене ҫӑвашла куҫарашшӑн тӑрӑшнӑ, ҫапла вӑл пур Пипли кӗнекисене те куҫарнӑ. Унтан вӑл тӑрӑшнипе йалхуҫалӑх, халӑх сывлӑхӗ ҫинҫен пайтах вырӑсларан куҫарӑннӑ ҫӑваш кӗнеки тухнӑ. Анҫах ҫапла куҫарнӑ литтераттурӑран пуҫне авалранах ҫӑвашла орикиналлӑ ҫырулӑх та тапранса кайнӑ. Ҫав орикиналлӑ ҫырулӑх ҫи малтан пукварсем кӑларнӑ ҫух тапранса кайнӑ: пукварсене йаланах ҫӑвашшем хайсем ҫырнӑ йе халӑх сӑмахӗнҫен ӳкернӗ йапаласене кӳртнӗ. Пыра киле пиртен 30—40 ҫул кайарах пайтах ҫӑваш ҫыруҫисем хайсем шухӑшласа тӗрлӗ калавсем ҫырма тапратаҫҫӗ. Анҫах вӗсене пиҫетлеме майӗ пулман: ахтӑрсен мул пулман, хысна ҫак ӗҫ ҫине хӑррӑн пӑхнӑ, ҫапла паллӑ ҫыруҫӑ Йуркка Иванӗ 1892 мӗш ҫулгах ҫӑвашла хаҫат кӑларма ыйтсан ӑна правиттӗлствӑ ҫав хаҫата кӑларма ирӗк паман. Ҫапла пирӗн литтераттурӑ пайтахҫен пусмӑр айӗнҫе пӑнҫӑхса тӑнӑ. Иван Йаккӑлҗӑ саманинҫе ҫӑвашла пин тӗслӗ ытла кӗнеке тухнӑ, анҫах ҫав кӗнекесем йе тӗн кӗнекисем йе ытти ҫӗлхесенҫен куҫарӑннӑ кӗнекесем ҫеҫ пулнӑ. Урӑхла пулма та пултарайман: Иван Йаккӑлҗӑ урӑхла халӑха кирлӗ кӗнекесем, ытларах та орикиналлӑ кӗнекесем ҫампа тытӑннӑ пулсан самотершави ун ӗҫне пӗтӗмпех сӳнтерсе лартнӑ пулӗҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫак саманара ҫӑваш литтераттурпе вӑйне панӑ ҫыруҫӑсем ҫырӑвӗсене пиҫетленнине кураймасӑрах вилсе пӗтнӗ, ҫав ҫыруҫӑсенҫен питӗ паллӗ „Арҫури" ҫыракан Хветӑрӑв;

çав „Арçури“ алçыравĕ авал пĕтĕм ҫăваш çĕренҫе темиçе кĕпĕрнене саралнă, ăна интелликентсем çеç мар, хура халăх та пĕлнĕ. XIX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнҫе ҫăваш çыруçисем йышлăлана пыраççĕ, ҫăваш çыруçисен ҫăваш çинҫен вырăсла çырас авалхи йăлана пăрахса вĕсем ҫăваш хура халăхĕ валли ҫăвашла хăйсенҫен çырусĕм кăлараççĕ. Çапла тĕрлĕ йурă, халлап, такмак, унтан пурăнăçра кирĕ тĕрлĕ йапаласене кăтартакан кĕнекесем тухкалама тытăнаççĕ. 1905-мĕш çулхи револьутси хыççăн ҫăваш литтературĕн çулĕ нумай уçăлать: ҫăвашшем хаçатсем, тĕрлĕ политтиккă литтературĕ, унтан тĕрлĕ орикиналлă илемлĕ литтература кăларма тапратаççĕ. Ҫăваш хăлăх хушшинҫе çĕр ытла çыруçă палăрать. Анҫах пиҫетлеме мул çуккипе ҫăвашла çырнă çырусем сайа кайса арҫасенҫе çеç выртаççĕ.

Çак ĕçе йупа револьутсийĕ çеç татса пăрахать: ҫăваш ĕçлекенсемпе хресҫенсем хăйсен прĕкĕне пурăнма тытăнсан ҫи малтан çав ҫăваш литтературне тăвас ĕçе тĕреклĕ çул çине лартассишĕн тăрăшма тытăнаççĕ. Ҫăваш оплăçĕнҫе ĕмĕрте пулман ҫăваш типокрахвийĕ пулса тăрать (ăна тăвашшăн 1905-мĕш çулта ҫăваш револьутсионерсем пуç хунă), ҫăвашла кĕнекесем çапакан хăватлă уйрăм уҫрештени пулса тăрать. Халĕ ҫăваш литтературĕ шкулсенҫе вĕренмелли, тĕрлĕ аслăлăх йе политтиккă кĕнекисемпе тата илемлĕ çырулăх кĕнекисемпе çулран çула пуйса пырать. Ҫăваш халăхĕ хушшинҫе халĕ ҫăваш литтературине малалла йарас тийекен çынсем питĕ йышлă: халĕ пирĕн темиçе çĕр çыруçă: вĕсен хушшинҫе трамартурксем, романистсем, поэтсем, калавçăсем, такмакçăсем пур. Унтан нумай ҫăваш ăслăлăхçисем ҫăвашла ăслăлăх кĕнекисем çыраççĕ. Анҫах мул çитменнипе халĕ нумай алçыравĕсем пиҫетленеймесĕр выртаççĕ. Малалла та апла пулмассине епĕр пĕтĕмпех шанатпăр. Ҫăваш хура халăхĕ ҫăваш çыравĕшĕн. Пирĕн çĕрте нумай тĕлте хресҫенсем литтературă ушкăнĕсем уçаççĕ. Нумай шкулсенҫе вĕренекен аҫасем алăпа çырса ҫăвашла шурналсем кăлараççĕ. Çапла пур ҫăваш çамрăкĕсем те ҫăваш çыруне ҫăнтан урапа çине лартас тесе вĕриленсе ĕçлеме ҫăваш литтературĕн малашнехи ĕмĕҫĕ пысăккине, унăн умĕнҫе çул вĕçĕмсĕррине пĕтĕмпех шантарать. Урăхла пулма та пултараймасть: прĕке тухнă ҫăваш хура халăхĕ телейлĕ культтурлă пулас пулсан вăл литтературăсăр пурăнма пултараймасть.

Çырулăха, литтература халăх тăвать, ăна уйрăм çыруçăсем тума пултараймаççĕ. Вырăс халăхĕн хăйĕн хăваҫĕ пулман пулсан унăн тĕнҫере ҫаплă аслă литтературĕне Пушкинсем тума пултараймасҫĕç, халăхра сăмах хăваҫĕ пулман пулсан вĕсем хăйсем те пулмасҫĕç. Анҫах ҫăваш халăхĕн сăмахлăхĕ йепле хăватлăшш?

Халăх сăмахлăхĕ тесе епĕр халăх хăй кăларнă йурăсене, такмаксене, халлапсене, авалхи тĕрлĕ калавсене, йуптарса каланисене, тупмалли калавсене, ваттисен сăмахĕсене, халăхăн

ытти тĕрлĕ сăмахне те калатпăр. Халăх паттăр пулсан, унăн сăмахлăхĕ те паттăр пулаĭ. Çавăнпа ђăваш сăмахлăхне вырăсăннĕпе танлаштарсан епĕр кайарах тăни паллă, çапла пирĕн натсилĕ керойлă епос çук, историллĕ йурăсемпе калавсем питĕ сахал. Çакă ђăваш халăхĕ историлĕ пурнăçпа пурăнманнинђен килнĕ. 700-çул тăршшĕпе ђуралăхра пурăнса иртернипе ђăваш халăхĕ хăй авалĕ çинђен халлаплакан епослă калавсене манмалла пулнă. Епосра кирек хăçан та тĕрлĕ паттăрсем мухтавланаççĕ, унта халăх ытти халăхсемпе кĕрешни мухтавланаĭ, епосра халăх хăй малтан натсилĕ пурăнăçпа пурăнма тытăннипе çунатланса ђапланаĭ. Çавăн пек калавсем пирĕн авал пулнă пулсан та, вĕсене халăх халиђђен ирĕксĕрех манмалла пулнă Ӗмĕрхи хурлăхлă пурăнăçра савăнăçлă сăмах килĕшмен, мăшкăллă пурăнăçра тĕрлĕ паттăрлăха та мухтани килĕшмен. Çав керойлă калавсенђен пирĕн уйрăм калавсем çеç халиђђен йулкаланă, çав тĕнђене пĕр хушăмра виççе тухакан вăрăм уралă, пĕлĕт çўлĕшлĕ упăлсем авал ђăваш халăхĕ тĕнђе тăрăх пĕр çĕртен тепĕр çĕре нумайђен куçса çўренине пĕлтерет. Авал ђăвашпен çавăн пек калавсем нумай та, вăйлă та пулнă теме йураĭ: вырăссем авалхи калавсене нумайĕшне тўрксенђен йышăннă теççĕ, çапла çав калавсенђе асăнакан пăхаттырсем, пуйансем тўрех ђăваш сăмахĕнђе паттăр, пуйап тенĕ тўрк сăмахĕсене пĕлтерет теççĕ. Ђăвашшем ытти тўрк йăхĕсенђен сивĕри славенсенђен маларах пăлдашнă, çавăнпа вырăс епосĕ хăш калавсене авалхи ђăваш епосĕнђен йышăнма пултарнă теме те йураĭ. Историллĕ калавсем мĕншĕн пирĕн сахалли те паллă: ирсĕр, усал ђăваш историйĕ йалан халăха лăсканă, ăна тăптан йанă, унăн ăсне çухаттарнă, çапах та пирĕн Хайар Иван, Çтаппан Раçин. Пукађђов, тĕрлĕ паттăр ђăваш патшисем çинђен калакан калавсем пур. Унтан пирĕн Христос çуралиђђен, Христос çуралсан кăшт кайарах пулнă ĕççем çинђен халиђђен ђăваш сăмахĕнђе йулнă йапаласем те пур теççĕ, çапла христианлă ерăђђен Вăтам Аçийе пăхăнтарнă, Аçи халăхĕсен хушшинђе Искентер йатлă ђĕппĕ Макетоңи патши Аслă Елексантăр ђăваш сăмахĕнђе асăнаĭ теççĕ, унтан Аçире авалхи тутарсен хайар хапĕ Тимур асăнаĭ теççĕ. Ђăваш сăмахлăхне халиђђен никам та тишкерсе тĕплесе пĕлмен, çавăнпа халĕ ваттисен хушшинђе епĕр пĕлмен калав нумай пулĕ. Çав калавсене ђасрах пухас пулаĭ, вĕсене пухса пиђетлемесен вĕсем малашне пăђах çухалĕç.

Халлап тĕлĕшĕнђен ђăваш сăмахĕ питĕ пуйан. анђах халлапсене те епĕр халиђђен пухса. çиçтема кўрсе, ытти халăхсен халлапĕсемпе тăнлаштарса никам та ĕçлемен. Халлапсене пухма нумай çын тăрăшнă, ђăвашшем хушшинђе халлапсене ўкерсе çырнă çырусем те пайтах, анђах вĕсем тĕрлĕ çынсен аллинђе пиђетленмесĕр выртаççĕ. Халлапсем тăрăх тĕп авал етемсем йепле пурă: нине ђухлама пулаĭ, пирĕн ĕлĕкех етеме етем çинĕ вăхăта пĕлтерекен халлап та пур, вăл амаçурапа

тӑлӑх хӗр ҫинҗен калакан халлап. Тӗрлӗ нумай пуҫлӑ, вӗҫекен, ҫын ҫийекен ҫӗленсене асӑнакан халлапсем җӑвашшем авалах Аҫире ҫӗлен нумай ҫӗрсенҗе пурӑннине пӗлтерет, арӑслансене, ӑмӑрткайӑксене, ҫунатлӑ урхамахсене (арапсен лаша йӑхӗ), упӑтесене асӑнакан халлапсем авал җӑвашшем вӗсемпе паллашша ӑшӑ йенҗе пурӑннине кӑтартаҭ. Арҫурисене, етеме ҫыварнӑ җух пусакан хӗртсуртсене, вутӑшшене асӑнакан халлапсем авалхи җӑвашшен ӗненӳ йӗркине кӑтартаҫҫӗ. Ҫавӑнпа халлапсене епӗр малашне хӑвӑртрах пухса ҫыру ҫине ӳкермелле.

Җӑваш йуррисене, сӑввисене, такмакӗсене, ытти халӑх сӑмахлӑхӗн тӗсӗсемпе танлаштарсан нумайрах пухнӑ. Җӑваш йуррисем, сӑввисем кӗске, нумай стихлӑ мар. Вӗсен сӑмахӗсем ытларах хурлӑхлӑ. Йурӑсенҗе җӑвашшем йал пурӑнаҫӗ ҫинҗен, ҫӗршывпа ҫутҫанталӑк ҫинҗен ҫеҫ асӑнса йурлаҫҫӗ. Җун пӑшӑрханнине, кӑмӑл ҫӗкленсе туланине, җӗре ҫуннине хӑватлӑ кӑтартакан йурӑсем пирӗн сахал, вӑл халӑх пусӑрӑнса халран кайса пурӑннинҗен килет. Ҫапах ҫавӑн пек уйрӑм җун хавалӗпе хӗрӳлле сӑвӑланӑ йурӑсем пирӗн сахал пулсан та пур. Пирӗн хура халӑх ҫӗр җаваласа асапланса пурӑннине, ӑна ҫуклӑх антӑратнине, ӑна патшалӑх салтака йе ӗҫе хӑваласа асаплантарнине кӑтартакан йурӑсем те пур. Авалхи йурӑсем тӑрӑх та епӗр авалхи халӑх пурӑнаҫне җухлатпӑр, ҫапла халӗ авал җӑвашшем Атӑл тӑрӑх пурлакра ҫӳренине пӗҗах маннӑ, анҗах авалхи пурлак йурри ӑна пирӗ виттӗр кӑтартса параҭ. Такмаксем, йумахсем, ваттисен сӑмахӗсем, авалхи кӗлӗсем, сӑнаса каланӑ сӑмахсем пурте вӗсем питӗ нумай вырӑссенӗнҗен нумай та сахал мар. Ҫакӑн пек сӑмахра халӑх ӑсӗ, унӑн җун вӑйӗ пӗтӗмпех пӑлӑрса тӑраҭ. Ҫавӑнпа ӑна та пухса пиҗетлеме тӑрӑшмалла.

Ҫапла ӗнтӗ җӗлхе, сӑмахлӑх, ҫырулӑх пурте вӑл халӑх хӑйӗн җун хӑваҗӗпе тунӑ йапала. Ҫав җӗлхепе сӑмахлӑх пирӗн паттӑрри халӑх җунпа хӑватлине кӑтартаҭ. Пур җӑваш кулҗтурӗ пулаймӗ тийекенсене йе пуласси тӗлӗшӗнҗен иккӗленекенсене епӗр халӑх сӑмахне итлекелесе пӑхма сунатпӑр. Халӗ епӗр ҫапла шухӑшлакансем те ҫапла калакансем вырӑс шкулӗсенҗе вӗренсе тухнӑ пирки җӑваш сӑмахне нимӗн вырӑнне те хумастпӑр, ӑна тишкерсе итлеме, тӗплӗ ӑнласа асра тытма тӑрӑшмастӑпӑр. Нумайӗшӗ пиртен вырӑсла та ӗмӗрне җӑнтан вӗренмесен те җӑваш сӑмахӗсене те манса пыраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах җӑваш хура халӑхӗ хӑй пурӑнаҫӗпе пурӑнаҭ: пӗр пӗрнпе кирек ӑҫта та җӑвашла калаҫаҭ, хӗллехи вӑрӑм ҫӗрсенҗе хӑйӗн җунне җӑваш халлапӗсемпе, йумахӗсемпе йӑпатаҭ, ӗҫре те, ҫул ҫинҗе те, уйавра та җӑваш йурӑ йурласа хавасланаҭ, туйсенҗе, тӗрлӗ вӑйӑсенҗе җӑваш такмакласа, җӑваш сӑввисем сӑвӑласа, җӑваш таппписем, таплаcа вӑл кӑмӑлне вӗҫтерет, ӑна хӑпартаҭ.

Ҫапла мӗҗӗйунҫурӑлӑ җӑваш хура халӑхӗ хӑйӗн хӑватлӑ сӑмахне ҫыру ҫине ӳкерме тапратрӗ. Йепле унӑн авалхи җӗл-

хипе сăмахлăхĕ вайлă, пуйав пулнă, çавăн пекех сывăхри малашрах унăн сырăвĕ, унăн литтераттурĕ хăватлă пулĕ.

Пирĕн илемĕш.

Илемĕш йе искусствă та ђăвашшен тĕп авăлранах пуçланса кайнă. Илемĕш тесе епĕр йапалана усăллă çеç мар, илемлĕ те пултăр тесе тунине калатпăр. Çапла ђăвашшем авалран тума тĕрĕпе тĕрĕлесе илемлетнĕ, савăтсапана, килçурта тĕрлĕ сăрпа сăрласа, тĕрлĕ йĕрĕпе йĕрлесе йапала сăнĕсем йе кĕлеткисем туса илемлетнĕ, вĕсем пурăнăçра савăнăçлă уйавсем уйавланă ђух, кĕлĕсене туса иртернĕ ђух, хурлăхлă ĕçе вилĕ тавралшне асăнса иртернĕ ђух илемлĕ йурăсем, такмаксем сăвăланă, сасăпа, унтан тĕрлĕ мусăк инструменђĕсемпе тĕрлĕ илемлĕ кĕвĕсем кĕвĕленĕ, тĕрлĕ илемлĕ ташшем ташланă. Хăйсен пуççапакан киреметсемпе йĕрĕхсен кĕлеткисене вĕсене йе йăвăçран, йе ђултан тунă, ађасене выђама хитре пуканесем тунă (çак сăмах пике анне тенĕ сăмахсенђен пулнă, çапла вĕсене ђăваш улпуђĕсен арăмĕсем пикесем пек илемлĕ тума тăрăшнинђен каланă). Çапла ђăваш халăхĕ авалран хăйĕн пурăнăçне тĕрлĕ йенђен илемлетме тăрăшнă. Çакăн пек авалхи искусствăран халĕ етемĕн илемĕш тенĕ ĕçлĕвĕ тухса кайнă.

Ђăваш илемĕшĕн пуçĕнђе сăмахлă искусствă тăрат. Йурăсем, такмаксем, халлапсем, йумахсем тĕп авалтанах илемлĕ сăвăланса каланнă. Ђăвашшен орикиналлă литтераттурă тапрансанах та ђи малтан пирĕн илемлĕ çырулăх тапранса кайнă. Ђăваш çыруçисем çав илемлĕ халăх сăмахпе çыру çине ўкерсе хăйсем те çавăн йевĕрлĕ йурăсем, такмаксем, сăвăллă калавсем çырма тытăнаççĕ, çавсенђен ђи малтанхи паллăрах поемă малта асăннă „Арçури“ пулат. Çав ђăваш çыруçисем çырнă алçырăвĕсене ĕлĕк пиђетлеме хушман, мĕншĕн тесен правиттĕлствă ђăвашшем натсилĕ куђттурă тавассинђен шиклене тăнă. Унтан вĕсене пиђетлеме çыруçăсен мул пулман. Çапах та 1905-мĕш çулхи револютси хыççăн пирĕн илемлĕ çырулăх хăйĕн çунађĕсене сарма тытăнат. Ђăваш çыруçисем вăрттăнлă та пулин, хăйсен мулĕпе те пулин орикиналлă илемлĕ çыруçем пиђетлеме тапратаççĕ. Çак ĕçе малтан пирĕн ватă çыруçă Йуркка пуçласа йарат, унтан авалхи хаçатра „Хыпарта“ çавăн пек çырусем çапăнма тытăнаççĕ, çак вăхăтра ђăваш поеђĕ Тайăр палăрат—ăна правиттĕлствă Çĕпĕре пуçилĕ йарса унăн пуçне вăхăтсăр çирĕ. Кайарахпа ђăнтан паттăр сăвăçăсем Иван Кĕçтенĕпе Шупуççынни палăраççĕ, Иван Кĕçтенĕ „Нарспи“ йатлă паллă поемă çырса хăварат (вăл хăй çамрăклах вилсе кайрĕ). Çак вăхăтрах Коређкăв Кевĕрли нумай илемлĕ пасńăсем çырат, Турхан Ентрийĕ трамăсем çырат. Револютси самани çитсен пирĕн çыруçăсем йышланаççĕ, çавсенђен ытларах палăрнисем: траматтурк Аким Хветĕр Михайли, Тал-Мăрса

(„Çилпи“ йатлă хăватлă поемă çырса хăварнă, хăй çамрăклах вилсе кайнă), сăвăçăсем Çĕçпĕл, Ђĕкеç, Унтритсăв, Ваçанкка, Елкер, романист Тăхти. Çапла ђăваш çĕрĕ çинђе илемлĕ литтераттурăн вăрлăхĕ шăтса тухрĕ. Çав уйрăм тĕпсенђен кайу шавласа кайнă пирĕн илемлĕ çырулăх çывăх çулсенђех аслă кашлакан вăрман пулса кайĕ. Çак тĕлĕшĕнђен пирĕн умра икĕ питĕ пысăк ыйту тăрать: вырăссен классикĕсенпе пур тĕнђери ђаплă классиксене, унтан халђхи ђаплă вырăссен пролеттарлă çырулахне ђăвашла куçарасси пĕри, унтан орикиналлă йапаласем çырса, халăх епосне çĕнетсе ђăнтан ђăваш поеçи. ђăнтан ђăваш илемлĕ çырăвĕ тăвасси—тепри Çак ĕçе тума пирĕн çамрăк йăх тапратса ун йавăрне хăй çине вăл илмелле. Пусмăртан хăтăлнă ђăваш хура халăхне тĕнђе çулĕ çине тухма çунат кирлĕ, çав çуната поеçи çеç парать.

Ђăвашшен мусăкĕ те питĕ авалран тапранса кайнă. Аслă лăх кĕвĕ кĕвĕлес йĕрке авал етемсем мĕн те пулса пĕрлешше ĕçленĕ ђух тухса кайнă тет: кĕвĕпе вĕсем пĕр пĕрин вăйхăватне çĕкленĕ, унтан пĕрне пĕри хăш вăхăтра харăс тармакланса ĕçлемеллине систернĕ. Ытларах та кĕвĕ йĕрки авал пирĕн халăх çеçенхирсенђе кĕтӳ кĕтсе пурăннă саманара пулса йулнă пулмалла: ыђăх таврашĕнђе уйра çӳрекен кĕтӳçĕ йурласа ђунне йапатмасăр пултарайман. Ђăваш кĕвви Йевроппă халăхсен кĕввинђен нумай уйрăм хисепленет, вăл Киттайсен кĕвви йевĕрлĕ. Ђăваш кĕвви сахал тонлă, пĕр тĕслĕрех ĕнĕрешет, ытларах та пĕр сасăпа кĕвĕленет. Çапла ђăваш кĕвви кулђттурлă халăхсен кĕввинђен пайтах кайра тăрсан та вăл ытти халăхсен кĕввипе танлаштарсан тĕнђери нумай халăхсенĕнђен хăватлă. Нумай кĕвĕçĕсем ђăвашшене пур хĕвелтухăçри халăхсенђен те кĕвĕллĕрех теççĕ Ђăваш йуррисемпе кĕввисем çинђен авалран вырăс çыруçисем те ытти патшалăхсен çыруçисем те пайтах çырнă, ђăвашшем хăйсем те нумай çырнă. Авалранах ђăваш йуррисене пухса пиђетлесси те тапранса кайнă: ђи малтан ђăваш йуррисене 1856 мĕш çулта Спойĕв пиђетленĕ, халиђђен ђăваш йуррисене пухса пиђетленĕ йе пиђетлеме хатĕрленĕ уйрăм 16 кĕнеке пире паллă. Унтан ђăваш кĕввисене хорпа йурлама тата мусăк калама хитрелетсе кăтартакан кĕнекесем халиђђен 8 уйрăм кĕнеке çыранни пире паллă. Çапла ђăваш кĕввисем, мусăкĕ çинђен нумай кĕнеке çапăнни ђăваш халăххи мусăклă халăх иккенне пĕлтерет. Ђăваш мусăкĕн пĕлӳçи Павăл Хветĕрĕ кăтартнипе ђăвашшен ђи паллă йурăсем: ĕçкĕçикĕ йурри, кĕреке йурри, пиђке пуçламĕш йурри, ташă йурри, хĕрйĕрри йурри, хĕрçум йурри, кĕрӳ йурри, хăйматлăх йурри, Сурăхури йурри, çăварни йурри, мăнкун йурри, уйав йурри, улах йурри, салтак йурри, кĕрхи сăра йурри, хăнасем пухăннă уйав йурри, ађапăђа йурри, сăпка йурри, историллĕ йурăсем. Унтан ђăвашшем ĕç çинђе тĕрлĕ уйрăм йурăсем йурлаççĕ, çапла пирĕн хĕрсем тăла пуснă ђух, кĕрĕшпе вырма кайнă ђух, ут çулнă ђух

хайне уйрăм йурăсем йурлаççĕ. Тата ђăвашшен тĕрлĕ вĕçен кайăксен йуррисене ўкерсе йурлаççĕ, çапла ђĕкеç, кăсйа ытти тĕслĕ йурăсем те пур. Йурă кĕввисенђен пуçне тата пирĕн тĕрлĕ ташăсен кĕвви пайтах, çапла кĕвĕсенђен паллăрах: ахаљ ташă, хĕр ташши, ваттисен ташши, уйав ташши, вилнисене асăннă ђух ташлакан ташăсен кĕввисем. Унтан ђăвашшен уйрăм шăпăрпа сăрнай кĕввисем пур. Йулашки çулсенђе ђăвашшен хушшинђе ытти халăхсен кĕввисем питĕ сăрăла пуçларĕç. Çакă ђăваш хушшинђе тĕрлĕ мусăклă инструмĕнтсем сарăлма тытăнсан пула пуçларĕç. Ђăвашшем халĕ çапла инструмĕнтсемпе кĕвĕлеççĕ: купăс (ђăвашăн тĕп мусăк инструменђĕ), пĕђĕк кĕсле, мăн кĕсле, уралла тăваткăл кĕсле, мăн купăс йе виолонђђел, кунтăрпас (ђи мăн купăс), тăмра, киттара, мантолина, кармоњ, сăрнай, шăпăр, шăхлиђĕ, тутут, параппан, пупăњ, варкан, шатăрма. Унтан ђăвашшем кĕленђе шаккаса, тимĕр шаккаса тĕрлĕ кĕвĕсем кĕвĕлеме йуратаççĕ. Инструмент пулмасан ђăвашшем тутапа та пулин кĕвĕсем калаççĕ йе шăхăрса кĕвĕлеççĕ. Йулашки çулсенђе хăш йалсенђе ђăваш ăстисем ройаљсем, пианинăсем те тăва пуçларĕç, халăх пурлăхлансан, ытларах куљттурлансан çак инструмĕнтсем те ун хушшинђе пулĕç. Мусăк тĕлĕшĕнђен пур ытти тĕлешĕнђен пекех ђăвашшем çулран çул вырăс кĕввисене, ытти куљттурлă халăхсен кĕввисене йышăнса пыраççĕ, авалхи ĕсĕклесе, ĕнĕрсе пĕр тĕслĕ кĕвĕленекен кĕвĕсен вырăнне вĕсем тĕрлĕ сасăлă, сасă нумай выљанакан кĕвĕсене йышăнаççĕ. Нумай йалсенђе халĕ ђăваш сăввисене вырăс йуррисенђен ўкернĕ кĕвĕсемпе кĕвĕлеççĕ. Çапла майпа, пур вырăс йуррисене ђăвашла куçарса, вĕсене унтан ђăваш сăвăç сăввисене вырăс кĕввисемпе кĕвĕленипе çеç епĕр авалхи аçиатлă кĕвĕ йĕркине çĕнетсе вăйлăлатма пултаратпăр. Тĕнђери мусăк техниккине йышăнсан, унăн инструмĕнђĕсене йышăнсан, ытти халăхсен кĕввисене йышăнсан çеç епĕр ђăнтан мусăклă çул çине тухма пултаратпăр. Çавăнпа пĕр йенђен ђăвашшен авалхи кĕввисене, вĕсене калакан инструмĕнтсене епĕр лайăхлатма тăрăшмалла, тепĕр йенђен епĕр çаван пекех тăрăшша йут кĕвĕсене, инструмĕнтсемпе палашша хамăр пурнăçа илемлетме тăрăшмалла. Çакна тума та илемлĕ литтераттура малалла йама та пур йалсенђе, вулăссенђе уйрăм ушкăнсем тумалла, çав ушкăнсем пур халăхăн сăвви, йуррисене пухса пиђетлеме тăрăшмалла, илемлĕ сăмахпа мусăк çпектаккăљсем выљамалла, пĕрне пĕри лексисем вуламалла, çав ушкăнсемех пур йалсенђе те хорсем, оркестăрсем тумалла. Пĕлес пулаť: етем ђунне мусăк пек нимĕн те çўле хăпартаймасť, халăх пурăнăçне ун пек илем нимĕн урăх йапала та пама пултараймасť. Халĕ пирĕн оплаçра пĕр мусăк шкулĕ пур, анђах унта ђăвашшем сахалтарах вĕренеççĕ. Çапах та пирĕн хушăмăрта паллă композиттăрсем те пур, вĕсем ђăваш кĕввисене хорпа йурлама, тĕрлĕ инструмĕнтсемпе выљама нумай сасса хурса лайăхла-

таççĕ, çав композиттăрсенҫен паллăрах Павăл Хветĕрĕ, Максăм Çтаппанĕ, унтан Лискăв Кĕркурийĕ. Оплăçри аслăрах шкулсенҫе, унтан авантарах йалти шкулсенҫе те ҫăваш хорĕсем вайлă: вĕсем йаланах концертсем тăваççĕ. Унтан йалсенҫе хăш аластисем аваллранпа мусăк инструмĕнҫĕсем туса пурăнаççĕ, çав инструментсенҫен паллă вырăнта ҫăваш кĕсли тăрат. Çав кĕсле ĕлĕк пур таврари айакри çĕрсене те сутăнса тăраҫҫĕ. Унтан кўршĕ çармăс çĕрĕнҫе Ҫикмере хĕлĕх купăсĕ тума вĕрентекен шкул пур, çав шкулра ҫăвашшем те вĕренкелеççĕ. Çапла пирĕн оплăçра та купăссем, тĕрлĕ мусăк инструмĕнҫĕсем тăвас ăсталăха малалла йама питĕ тăрăшмалла: пĕр йенҫен çав ĕç тупăш парат, тепĕр йенҫен вăл аслăлансан çеç ҫăваш халăхĕ ҫăнтан мусăклăланма пултарĕ.

Илемĕшпе пăҫах çыхăнса тата театтăр ĕçĕ тăрат. Театтăр тĕнҫере авалхи кĕлĕ йĕркинҫен, унтан тĕрлĕ уйавсенҫен тухса кайнă. Ҫăвашшен те тĕп аваллранах театтăр вайи пек йаласем нумай пулнă: ҫўк йĕркисем, акатуйсем, хĕр сăрисем, кĕшерписем, уллахсем, сурăхури тытписем, шуйттан вайисем (çветкă), çулахи уйав вайисем, çăварнире йарăнас йĕркесем, çимĕк таврашшем çаксем пурте театтăр вайисем пекех пулнă. Çак вайĕсенҫе театтăрти пекех пĕрисем выҫаççĕ, теприсем пăхса тараççĕ. Ĕлĕк те, халĕ те пĕтем театтăрлă спектакҫ вырăнне пирĕн туй хисепленет: туй питĕ нумай тĕрлĕ тĕслĕ айкашупа пулат, унăн ĕмĕртен йулнă йĕрки пур, унăн хайне уйрăм тсеремониймештер уртакçă пур, артиссем пек выҫакан, йурлакан кĕрўçумсемпе хĕрçумсем пур. Йалта туй пулсан, ăна курма пĕтĕм халăх пухăнат. Çапла театтăрăн никĕс вырăнне шутланакан йăласем ҫăвашшен хушшинҫе аваллран пулнă, анҫах натсилĕ пусмăрта пурăннипе ҫăваш театтăрĕ револҫутсиҫҫенех пуçланса кайайман. Ытти хĕвелтухăçри паттăртарах халăхсен те театтăр нумайранпа тапранман, çапла ерменсен театтăр тапранни 50 çул та иртеймен, тутарсен театтăр 1905-мĕш çулхи револҫутси хыççăн çеç пулма тытăннă, нумай хĕвелтухăçĕнҫи халăхсен халĕ те театтăр çук. Ҫăвашла спектакҫ вылас йалана малтан Ҫĕмпĕр шкулĕнҫе, унтан унта вĕренсе тухнă вĕрентекенсем йалсенҫе выҫама тапратнă. Анҫах ҫăнтан театтăр тăвасси çинҫен ун ҫухне шухăш та пулман, пулма та пултарайман: ҫăваш хулисем пулманнипе, аслăрах хапрăксаватлă ҫенттăрсем пулманнипе театтăр хăй расхутне саплама пултарайман, çав вăхăтрах патшалăх та, çемствăсем те халăха театтăрпа паллаштарнисене хурĕç пулнă. Револҫутси уммĕн хăш ҫăваш вĕрентекенсене йалсенҫе ҫăваш спектакҫсем выҫанăшăн сута парса, тĕрмене лартса та айкашнă. Револҫутси пулсанах пирĕн ҫăнтан театтăр пулса тăрат: малтан тĕп театтăр Хусанта пулат, унтан вăл Шупашкара куçат. Çак ĕçе Максăм Йакимĕ пуçласа йарат: вăл хăй етсенă ĕçне вĕренсе малтан вырăс артисĕ пулса ҫăвашшене вĕрентсе вĕсенҫен артиссене хатĕрлет, хăйех тăрăшнипе Шупаш-

карта ђăваш театтăрĕ валли уйрăм ђул çурт йышăнса ăна театтăра йурăхлă тăваҭ, пур театтăра кирлĕ йапала: тĕрлĕ тум, париксем, мепĕђ туйанаҭ. Çапла ђăнтан ђăваш театтăрĕ, ђăнтан ђăваш артисĕсем пулса тăраççĕ. Çав театтăрăн тăкакĕсене ђăваш оплăçĕ хăй вăйĕпе тÿссе тăраҭ. Ђăваш театтăрĕнђе вырăсларан куçарнă пйессăсене, унтан тĕрлĕ ђăвашлах çырнă пйессăсене выђаççĕ, ђăваш театтăрĕнђе ђăваш артисĕсем тĕнђере ĕмĕртен ђаплă класçиклă трамăсене те выђаççĕ. Çак театтăр хулара, ђăваш халăхĕ йалта пурăнаҭ, çавăнпа вăл çак театтăр çинђен сахалтарах пĕлет: ăна вырăнта йе ĕçре пурăнакан ђăвашшем çеç курма пултараççĕ. Çавăнпа çак театтăрăн артисĕсем оплăçа кайса пысăкрах йалсенђе те спектаклђсем выђакаласа кăтартаççĕ. Çак театтăра туни пĕтĕм ђăваш историнђе питĕ паллă ĕç: вăл пирĕн ђăнтан театраллă шкул пуçланса кайнине, йалта пурăнса иртернĕ ђăваш хура халăхĕ хула куђттурне йышăннине пĕлтерет, çавах малашне ђăваш халăхĕ ђăваш хуласем туса, хуласен куђттурлă пурăнăçĕпе пурăнас йенне сулăннине пĕлтерет. Халĕ ђăвашшен хуласем йе хапрăксавăтлă пысăк куђттурлă ђенттăрсем çук, çавăнпа театтăр та Шупашкарта тăлăхрах ларнă пек туйăнаҭ. Анђах çав пиђĕ çине сурпан карса витнĕ театтăр малашне Шупашкар ђăвашшланассине, ђăваш çĕрĕнђе ђăваш хулисем пуласçине пĕлтерет. Пирĕн театтăр çул кăтартакан йалав вырăнĕнђе тăраҭ: çав йалав ђăваш хура халăхне хула куђттурĕ йенне, пĕтĕм тĕнђен сивилисатсиллĕ пурнăç йенелле ђĕнсе, туртса тăраҭ. Çак театтăрах пирĕн тĕп театтăрлă шкул пулса тăраҭ: вăл ђăвашшенђен прохвеççиллă артиссене хатĕрлет. Иртнĕ çулсенђе ђăваш театтăрĕсем Хусанта, Ђĕмпĕрте, Ĕпхÿре, Пелепейра ытти ђăваш çĕрĕнђи хуласенђе те пулма тапратрĕç те пулаймарĕç, сÿнсе ларђĕç, мĕншĕн тесен вĕсене пулăшакан пулмарĕ. Çавăнпа пирĕн театтăра тÿрех ахтономи парни, револђутси пиллĕхĕ теме йураҭ. Ђăваш хура халăхĕ хăй çĕрĕнђе хăй ирĕкĕпе пурăнма тапратман пулсан епĕр ђăнтан театтăр ĕçне нихăçан та тĕреклĕ çулпа йама пултараймастпăр. Йулашкинђен епĕр пур аслăрах та кĕçĕн шкулсенђе те, халăхпа ађа çурђĕсенђе те, тĕрлĕ ђăваш уђрештенисенђе йаланах ђăваш спектаклђсем выђђама сунатпăр; пур йалсенђе ÿсекен çамрăксене уллахсемпе вăхăта иртерес вырăнне спектакăђсем выђђаса савăнма епĕр сунатпăр.

Ђĕрçыру, вырăсла шивопис та ђăвашшен хушшинђе йеррипен аталанаҭ. Ђăваш халăхĕ авалранах тĕрлĕ тĕсе пĕлнĕ, уйрăм тĕссене ытларах уйăрнă, йапалана сăрласа илемлетнĕ. Çак ĕçпе сыхăнса паллă вырăнта авалран йулнă хĕрарăмсен алĕçĕ тăраҭ: ђăваш тĕррисем пĕтĕм тĕнђере мухтавлă, вĕсене нимĕççемпе акăлђансем Перлинпа Лонтон муçейĕсене пухса илсе кайса хунă, çав тĕрĕсенђен ÿкерсе нимĕç промăшлĕнникĕсем тĕрлĕ тĕрĕллĕ манухвактурă тĕртсе кăларнă. Тĕрĕсенђен пуçне урăх йенђен те ђăвашшем тума хитрелетме пĕлнĕ. Çакă

ҫӑвашсем тӗрлӗ тӗс илемне уйӑрма, тӗрлесе йе сӑрласа йапалана илемлетме ӑстине пӗлтерет, ҫавах халӑхӑн хутошествӑлла вкус пуррине пӗлтерет. Ҫавӑнпа ҫӑвашсем вӗренме тытӑнсанах вӗсен хушшинҫе хутошниксем палӑраҫҫӗ: нумайӗшӗ вӗсенҫен вӑтам ҫӗрҫыру шкулӗсенҫе, хӑшӗ ҫавӑн пек аслӑ шкулсенҫе те вӗренсе тухаҫҫӗ. Анҫах ҫӑвашшен куӆттурлӑ ҫенттӑрсем пулманнипе ҫав ҫӗрҫыруҫӑсем ытти вырӑс хулисенҫе саланса пурӑннӑ. Малашне ҫӑвашшен натсиллӗ муҫейсем пулнӑранпа ҫӑваш пурӑнӑҫӗ пир ҫине сӑрланас ӗҫ тӗреклӗленессине епӗр пӗтӗмпех шанатпӑр. Халӗ те пирӗн тӗп муҫейсенҫе ҫӑваш пурӑнӑҫне кӑтартакан карттинӑсем йышлӑлана пуҫларӗҫ. Халӗ ҫӑваш пурӑнӑҫне кӑтартакан тӗнҫере паллӑ карттинӑ пӗре ҫеҫ: вӑл ҫармӑс ҫӗрҫыруҫи Хвешин сӑрланӑ ҫӑваш туйӗ. ҫав карттинӑшӑн Хвешин револютси умӗн пӗтӗм Раҫҫейӗн выстӑвкинҫе преми илнӗ, ӑна америккансем нумай хак парса Америкка илсе кайнӑ. Малашне ҫӑваш ҫӗрӗнҫе ҫӑваш пурӑнӑҫне ҫӑваш ҫӗрҫыруҫисем сӑрласа ҫӑваш хура халӑхне те ҫак искусствӑпа палаштарасси тӗлӗшӗнҫен епӗр иккӗленместпӗр.

Ҫак ӗҫпех ҫулран, тӑмран йӑваҫран тӗрлӗ кӗлеткесем тӑвас соҫҫествӑ йе вайаӆи йатлӑ искусствӑ ҫыхӑнса тӑрать, унтан ҫак ӗҫпех ҫуртйӗре тӑвас архитектурӑ йатлӑ ӑсталӑх ҫыхӑнса тӑрать. Ҫак искусствӑсем те ҫӑваш халӑхӗ хушшинҫе авалран пулнӑ, анҫах вӗсем аталанса ҫивҫӗленеймен: вайаӆи турӑсен кӗлеткисене тӑвас тӗлӗшӗпе ҫеҫ пулкаланӑ, архитектурӑ пурӑнӑҫра паллӑрах вырӑн йышӑнса тӑнӑ: ҫӑвашсем ҫурт тӑвас та, ӑна тӗрӗпе хитрелетес йӗркепе хӑйсен уйрӑм стиӆ пулнӑ. Анҫах ҫӑвашсем ҫак искусствӑсене ҫӑнтан ҫивҫӗленсе тӗреклӗлентерме пултараймаӑн. Ытти куӆттурӑ вӑйлӑлансан ҫӑвашсем хушшинҫе ҫак искусствӑсем те пуласси паллӑ. Ҫӑвашшен хушшинҫе талантсем пулмӗҫ тесе иккӗленекенсене ҫакна калама пултаратпӑр: пур ҫунлӑхлӑ куӆттурӑ йенҫен ирҫесем ҫӑвашшенҫен те кайра хисепленеҫҫӗ, анҫах пирӗн ӗмӗрте пӗтӗм тӗнҫере ҫаплӑ вайаттӗл ирҫе ҫынни, вӑл ҫӑваш тавринҫе Улатӑр уйесӗнҫе Пай йалӗнҫе ҫуралса ӳснӗ, ун хушамаҫӗ Ерҫа, вӑл Итталире пурӑнать, пур Йевроппӑри ҫӗрҫыруҫӗсенҫен те, вайаттӗлсенҫен ҫи кениаллӑ ҫын вырӑнне хисепленет. Ҫавӑнпа ҫӑвашшен хушшинҫе те малашне талантсем те, кенийсем те пулӗҫ. Ҫапла ӗнтӗ пур искусствӑсем те ҫӑваш хушшинҫе авалран тапраннӑ, вӗсене тапратса йама халӑх хӑйех пултарнӑ, ҫавӑнпа ҫӗнӗ пурнӑҫра вӗсене тӗнҫе ҫулӗпе ҫивҫӗлетсе хӑватлӑлатса йама та вӑл хӑйех пултарӗ.

Ҫӑваш ӑслӑлӑхӗ.

Наукка тӗнҫере интернатсионаллӑ: унӑн уйрӑм халӑх наукисен уйрӑм саккунӗсем, уйрӑм пӗлӳ шыранас йӗркесем пулма пултараймаҫҫӗ. Ҫакӑ пӗтӗм тӗнҫе, ҫутҫанталӑк, ҫӗршыв пӗр саккунсемпе тытӑмланнинҫен килет. Ҫапах та пирӗн са-

манара тĕнђере натсилĕ патшалăхсем пурăннипе, тĕрлĕ халăхсем ăслăлăха йышăнас йе малалла йарас тĕлĕшĕпе тĕрлĕ пусмасем ҫинђе тăнипе, унтан кашни уйрăм халăхăн ăслăлăхлă тĕплўсем авалран йулнă йалапа кашни уйрăмраххипе халĕ вырăс наукки, нимĕҫ, акăљђан науккисем теҫҫĕ. Анђах ђăваш халăхĕн револјутсиђђен науккă пăђах пулман, ђăваш университеђĕсем пулиђђен пулма та пултарайман. Ҫавăнпа епĕр ђăваш наукки тесе урăхларах смыҫăлпа калатпăр: ҫапла епĕр ђăваш халăхĕ ҫинђен тĕплесе пĕлекен: ђăваш ђĕлхине, историне, ҫĕршывне, йăлисене тĕплесе пĕлекен науккăсене калатпăр. Ҫак ăслăлăхсем ђăнахах та ђăваш ăслăлăхĕсем, мĕншĕн тесен вĕсен опйекђĕ ђăваш халăхĕ, мĕншĕн тĕсен вĕсене ђăвашшем хăйсем ҫеҫ малалла йама пултараҫҫĕ. Вырăс наукки ђăваш халăхĕпе авалран интересленет, анђах Раҫҫейре 110 тĕслĕ халăх пурăнаť, ҫавăнпа ҫав науккă пĕђĕк ђăваш халăхĕ ҫинђен уйрăм ђăнтан тĕплешшĕн тăрăшма пултараймаť. Вăл пире авалран йулнă ђăваш ҫинђен калакан ăслăлăх тĕплĕвĕсен историнђен палла. Ђăвашшем ҫинђен вырăс литтераттурĕнђе нумай ҫырнă, анђах ҫав ҫырусем ђăвашшем ҫинђен XVI-мĕш ĕмĕртех ҫырма тăпратаҫҫĕ: ҫапла Хайар Иван ҫарпуҫлăхĕ Курпски Ентрийех Хусана илнине асăнса ҫырнă кĕнекинђе ђăвашшене асăнаť. Унтан ђăвашшене XVIII-мĕш ĕмĕрте пурăннă ҫыруҫăсем асăнаҫҫĕ, ҫавсенђен паллăраххисем: хресђен Посошкăв, историҫĕ Татишђĕв, кеокрăхсем, ăслăлăхҫăсем: Рыђкăв, Лепехин, Паллас, Хваљк, Кеорки ыттисем те, ҫак ĕмĕртех ытти вак халăхсен сăмахĕсене те, ђăваш сăмахĕсене те тупса славарсем кăларма тапратаҫҫĕ. XIX-мĕш ĕмĕртен пуҫласа ђăваш халăхĕ ҫинђен питĕ нумай ăслăлăхҫăсем асăнмасăр иртмеҫҫĕ: ђи малтан ђăвашшене кăшт та пулин асăнмасăр пĕр историҫĕ те иртме пултараймаť, ҫапла Карамҫин, Соловйĕв, Кљуђевски, Платонăв, Иловайски, Шђапăв ыттисем те ђăвашшене асăнаҫҫĕ: ђăвашшене асăнакан историллĕ кĕнекесен хушшинђе Пушкинăн Пукађђов пăлхавĕ ҫинђен ҫырнă кĕнеки паллă вырăнта тăраť. Унтан ђăвашшем ҫинђен нумай тĕплĕрех етнокрахсемпе ђĕлхеҫĕсем нумай ҫыраҫҫĕ, ҫавсенђен паллăраххисем: Хвукс (1840 ҫ. ђăвашшемпе ҫармăссем ҫинђен уйрăм кĕнеке кăларнă), Спойĕв (1851 ҫ. ђăвашшем ҫинђен питĕ тĕплĕ ҫырнă уйрăм кĕнеке кăларнă), Куник, Ратлăв, Торн, Миллер, Василлевски, Солотнитски, Ильмински, Каттанăв—ҫак ђĕлхеҫĕсем пăлхарсем ђăвашшем тенĕ теорийе йышăннă йе ун йенне сулăннă, ҫак тĕнђере ђаплă ăслăлăхҫăсен йеннех питĕ паллă антрополок Ануђђин та сулăннă. Унтан ђăвашшем ҫинђен нумай ҫырнă ҫыруҫăсем: Макнитски, Исноскăв, Малов, Вишневски, Протопопăв, Смирнов, Майнăв, Шпилевски, Артемийĕв, Савельйĕв, Крикорйĕв, Попровникăв, Путиловиђ, Ђиђерина, Машанăв, Шестаков, Ентри ерхерей. ыттисем те. Ҫав вăхăтрах илемлĕ ҫырупа ҫыракан писаттĕлсем те ђăвашшене асăнкалаҫҫĕ, вĕсенђен паллисем: Пушкин, Толстой, Пеђерский Ентри, Мамин-

Ҫиҫирек, Карин-Михайловски (вӑл ҫӑваш пурнӑҫӗ ҫинҫен „Сорӑ“ йатлӑ уйрӑм трамӑ ҫырнӑ). Унтан ҫак ӗмӗрте ҫӑвашшене асӑнакан тӗрлӗ уҫепниксене, славарсене, шурналсене, хаҫасенҫе ҫапӑннӑ статйасене хисеплесе пӗтерме те ҫук. Унтан ҫӑвашшем ҫинҫен пайтах ытти халӑхсен ӑслӑлӑхҫисем ҫырнӑ: ҫи малтан ҫӑвашшене асӑнакан ҫыруҫӑ та нимӗҫ ӑслӑлӑхҫи Керпенштейн пулнӑ. (Раҫҫейе 1526 ҫ. килсе кайнӑ, ҫӑвашшем кимӗ тума ӑста, унтан вӗсем питӗ лайӑх ҫар ҫынписем тесе ҫырса хӑварнӑ). Халӗ ҫӑвашшене Йевроппӑри халӑхсен литтераттурӗсенҫе пуринҫе те асӑнаҫҫӗ. Ҫӑвашшем ҫинҫен XVIII-мӗш ӗмӗрте, унтан XIX-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӗшӗнҫе ҫӑвашшене асӑнакан паллӑ ӑслӑлӑхҫӑсем: Тунман, Енкел, Хврен, Тсейс (ҫак ӑслӑлӑхҫӑсем нимӗҫле ҫырнӑ). Пирӗн ӗмӗре сывӑх йе халӗ те пурӑнакан ҫӑваш халӑхӗ ҫинҫен тӗплесе пӗлсе кӗнекесем кӑларакан тӗнҫе ӑслӑлӑхҫисем: майар ӑслӑлӑхҫисем Мункаҫи, Кунхвалли, Кой̆поҫ, Мессараш, Тӑнай пӑлхарийӗн ӑслӑлӑхҫисем Шишманӑв, Микола, Слатарски, хвин-суоми ӑслӑлӑхҫисем Вихман, Рейсенен ыт. те. Ҫак ҫулсенҫе Йевроппӑра ҫӑвашшем ҫинҫен тата та нумай тӗрлӗ кӗнекесем тухнӑ теҫҫӗ, анҫах Раҫҫейпе Йевроппӑ хушшинҫе ҫул питӗрӗнсе тӑнипе епӗр вӗсем ҫинҫен тӗплӗ пӗлейместпӗр.

Ҫапла ҫӑвашшем ҫинҫен нумай кӗнеке, нумай хут вырӑсла та, ытти тӗрлӗ ҫӗлхесемпе те ҫырӑннӑ, анҫах ҫапах та ҫӑваш ҫӗлхи, историйӗ, унӑн халхи пурнӑҫӗ, авалхи йӑлисем — ҫакӑ нимӗн те ҫӑнтан ӑслӑлӑхлӑ йӗркепе тӗплӗ пӗлӗнмен. Мӗншӗнши вӑл? Мӗншӗн халиҫҫенех ҫӑваш халӑхӗ мӗлле ӑру йӑхӗ, унӑн мӗлле ҫӗлхе, йӑласем тесе ӑслӑлӑх тавлашуллӑ хирехирӗҫлӗ кӑтартусене ҫеҫ кӑтартай? Ҫакӑ ҫав ӑслӑлӑхҫӑсем ҫӑвашпа уйрӑм интересленменрен, ҫӑваш ҫине хӑйсен науккӑллӑ тӗплӳсенҫе кӑшт ҫеҫ пӑхса хӑвӑрттӑн иртсе кайниҫен килнӗ. Хӑшӗ ҫав ҫыруҫӑсенҫен ҫӑвашшемпе тӳрех тиллеттантлӑ ҫеҫ интереслӗннӗ.

Ҫавӑнпа ҫӑваш халӑхӗ ҫинҫен верентекен ӑслӑлах ӑна ӗмӗрне ҫӑвашпа кӗрмешпе иртерекен ӑслӑлахҫӑсем хӑйсен аллине илсен ҫеҫ хӑй ӗҫне тума пулатарайни виттӗр палӑрса тӑрай. Ҫавӑн пек ҫынсем ҫи малтан ҫӑваш хушшинҫен тухнӑ унпа пӗрле пурӑнса иртерекен ҫӑваш ӑслӑлахҫисем ҫеҫ пулма пултараҫҫӗ. Вӗсем ҫеҫ ҫӑваш ҫинҫен тӗплекен науккӑсене ҫӑн тӗрӗс ҫулпа йама пултараҫҫӗ.

Ҫӑваш ҫыруҫисем ҫӑваш халӑхӗ ҫинҫен вырӑсла ҫырса унпа тӗнҫепе паллаштарма авалран тытӑннӑ. Малта асӑннӑ ытти халӑхсен ҫыруҫисемпе ӑслӑлӑхҫисем те нумайӗшӗ ҫӑваш ҫинҫен ҫӑвашшем хӑйсем кӑтартса панипе ҫеҫ паллашша ҫырнӑ. Ҫапла ӗлӗкренех ҫӑваш ҫинҫен тӗплекен науккӑ ҫӑваш халӑхӗ ҫинех тайанса тӑнӑ. Анҫах ҫӑваш халӑхӗ хушшинҫе нумай вӗреннӗ ҫынсем пулманнипе ҫӑвашшем ҫӑваш науккине хӑйсем ҫавӑтса пыма пултарайман, вӗсем ытти халӑхсен ӑслӑлӑхҫисене тӗрлӗ ҫӗрӗ маттериал ҫеҫ парса тӑнӑ.

Ҫ̌аваш халӑхӗ ҫинҫ̌ен ҫ̌аваш крепӑҫлӑ саманарах ҫырма тытӑннӑ: вӑл хресҫ̌енрен тухнӑ Ҫ̌икмере вырӑнта тӑракан Михайла Ҫпиритунӗ пулнӑ, вӑл 1851-мӗш ҫултан пуҫласа ҫ̌авашшем ҫинҫ̌ен йаланах хаҫатсенҫ̌е ҫырнӑ. Кайарахпа Иван Йаккӑлҫ̌ӑ ӗҫлеме тапратсан вӑл хӑй те упӑн вӗренекенӗсемпулӑшуҫисем те йаланах ҫ̌авашшем ҫинҫ̌ен вырӑсла кӗнекесем кӑларма, хаҫатсемпе шурналсенҫ̌е ҫырма тытӑннӑ. Унтан вӗсемех тӗрлӗ вырӑс ӑслӑлӑхҫисен упкӑнӗсеп умӗнҫ̌е ҫ̌авашшем ҫинҫ̌ен токлатсем тунӑ. вырӑс ӑслӑлӑхҫисене тӗрлӗ маттериалсем пуҫса парса тӑнӑ. Ҫав ҫ̌авашшем ҫинҫ̌ен вырӑсла ҫырпӑ ҫыруҫӑсенҫ̌еп паллӑраххисем: Реккей Елекҫейӗ (Ҫ̌ӗмпӗр шкулӗнҫ̌е ҫ̌и малтан вӗренсе тухнӑ), Хӗлимун Танили, Пӳркелсем Савели Илҫ̌и, Иван Антонийӗ (ҫ̌авашшем ҫинҫ̌ен кӑтӑртакан пиплиокрахви ҫырса пиҫ̌етленӗ), Микихвӗр Хветӗрӗ, Прукухви Кӗҫтенӗ, Хӗлип Иванӗ ыт. те. Ҫ̌аваш ҫинҫ̌ен ҫыракан ҫ̌аваш ҫыруҫи тата та нумай пулнӑ, анҫ̌ах вӗсем пурте хӑйсене ӑслӑлахҫӑсен вырӑнне хисеплемен, ҫ̌аваш ҫ̌ӗлхипе историйӗн никӗсре тӑракан проплеммисене сӳтме тытӑнма вӗсен кӑмӑл ҫӗкленмен, пӗлнӗлӗх те ҫитмен пулӗ. Ҫав вӑхӑтра ватӑ ҫыруҫӑ ҫ̌аваш хӗрӳлӗ натсионалисҫ̌ӗ Йуркка Иванӗ ҫеҫ ҫ̌авашшем авалхи скихсем тесе унтан ытти ҫ̌аваш халӑхӗн паттӑрлӑхне кӑтартакан теорисем кӑларса вырӑс ӑслӑлӑхҫисен умӗнҫ̌е токлатсем тума тапратнӑ, хӑйӗн теорисем ҫинҫ̌ен ҫырма та тапратнӑ, анҫ̌ах пӗлнӗлӗх ҫитменнипе вӑл хӑйӗн теорисем ҫине вырӑс науккин вниманине ӳкереймен.

Ҫ̌аваш ӑслӑлӑхне ҫ̌ӑнтан пуҫласа йарса ӑна тӗреклӗ никӗс ҫине лартакан Ашмарин Микулайӗ пулат. Ашмарин йӑхӗпе вырӑс, анҫ̌ах пӗтӗм хӑйӗн пурӑнӑҫӗпе, хӑйӗн ҫунӗпе вӑл ҫ̌авашран та ҫ̌аваш, ҫавӑнпа епӗр ӑна хамӑр ӑслӑлӑхҫӑ вырӑнне хисеплетпӗр. Ашмарин пирӗн хуппӑмӑрта ӗҫлеме тапратсан пирӗн историре ҫӗнӗ еттап тытӑпса кайат, ҫавӑнпа пирӗн историре унӑн ролҫ̌ӗ калама ҫук пысӑк. Ашмарин ҫ̌аваш ҫ̌ӗлхипе унӑн авалхи историне тӗплеме пӗтӗм тӗнҫ̌ери ӑслӑлӑх пӗлӗвӗсемпе авӑрланса тытӑнат. Ҫавӑнпа унӑн пур ӑслӑлӑхлӑ тӗплевӗсем те вырӑс науккинҫ̌е те, тӗнҫ̌е науккинҫ̌е те шӑнӑҫаҫҫӗ. Ашмарин сахал пиҫ̌етленнӗ: ӗлӗк правиттӗлствӑ унӑн ӗҫӗ ҫине сиввӗн пӑхнӑ, ҫ̌авашшем хӑйсен пиҫ̌етлеме вӑй пулман. Ашмаринӑн ҫ̌и пысӑк ӗҫӗ малтанхи томсем пиҫ̌етленнӗ сӑмахпуххи, ҫав славар вӑтӑр том ытла пулмалла, ӑна ҫ̌авашла, вырӑсла, латтинла ҫырнӑ. вӑл пиҫ̌етленме тытӑнсанах пур тӗнҫ̌ери ӑслӑлӑхҫӑсен хупшинҫ̌е паллӑ пулнӑ. Ашмарин ытти патшалӑхсенҫ̌е пурӑннӑ пулсан унӑн славарӗ ҫирӗм ҫул ытла кайа пӗтӗмпех пиҫ̌етленсе тухнӑ пулӗҫ̌ҫ̌ӗ. Ҫакна самотершавлӑ патшалӑх пулӑшман, ҫ̌арса та тӑнӑ, ҫак ӗҫе хӑвӑртрах ҫ̌авашшем хӑйсем туса хумаллӑ: Ашмарин ватӑлса килет, ун славарне те ытти тӗплевсене те вӑл сыв ҫ̌ухне пиҫ̌етлесе пӗтерсен лайӑх пулӗҫ̌ҫ̌ӗ. Унтан Ашмаринӑн паллӑ кӗнекесем: „Пӑлхарсемпе ҫ̌авашшем“. тата ҫ̌аваш ҫ̌ӗлхийӗн

етимолокипе çинтаксçисĕ, Ҫăвашшем пăлхарсем тенĕ теорипе Ашмарин пĕтĕм тĕнҫере паллă аслăлăхçă пулса тăнă: вăл хăй теорине ҫăнтан аслăлăх кăтартăвĕсемпе тĕрĕсленĕ. Ашмарин тата хисепсĕр нумай йапала çырнă, унтан вăл хисепсĕр нумай ҫăваш халлапĕсене, йуррисене йумахĕсене такмакĕсене ытти ҫăваш сăмахне те пухнă: Ашмарин аллинҫе пĕтĕм ҫăваш халăхĕн сăмахĕ пухăнса тарат. Ашмарин хăйĕн ĕçĕсемпе вырăссене те, пĕтĕм тĕнҫене те ҫăваш çине урăх куçпа пăхтарттарма тытăннă: вăл ҫăваш ҫĕлхин пур пуйанлăхне, илемлĕхне, ҫăваш халăхĕн авал хăватлă култтурă пулнине систерпĕ. Ытларах та тата Ашмарин ҫăвашшен хăйсен тăнпуçне пĕтĕмпех çавăрса пăрахнă: вăл вĕсене пур халăх сăмахне те йуратса пухма хăнăхтарнă, ҫăвашла кĕнекесем кăларма пулăшнă, вăл ҫăваш историне, ҫĕлхине, йалисене тĕплесе ҫăваш аслăлăхçисем тĕнҫе науккин çулĕ çине те тухма пултарнине кăтартнă. Ҫапла майпа Ашмарин ҫăвашшене авалран пулман шухăшшем йертме тытăннă. Авал Иван Йаккăлҫҫă саманинҫе ҫăвашшем пирĕн пуквар пулсан, халăха питĕ кирлĕ йапаласене çеç ăнлантаракан кĕнекесем пулсан, шкулсенҫе пĕр ик çул ҫăвашла вĕрентсен пире çитет тенĕ. Ҫăваш литтераттурĕ, натсилĕ култтурă тăвас шухăш çав ҫăвашшен хушшинҫе уйрăм пуççенҫе çеç курăнмасăр пытанса тăнă. Ҫаваппа çав саманара Иван Йаккăлҫҫă хăй те, хăй пурăнăçĕнҫе ҫăвашла питĕ сахал çырнă, малта асăннă унăн пулăшуçисем те вырăсла çеç ҫăваш çинҫен çырма тăрăшнă. Ҫак саманара ҫăвашшенҫен аллă утмăл çын ытла аслă шкулсенҫе вĕренсе тухнă, çамрăк ҫухне вĕсем ҫăваш халăхне çутăланма пулăшас тенĕ, аслă шкулсенҫе ҫăвашшем çинҫен тиссертатсисем çырнă, анҫах малалла вĕсем ҫăваш халăхне сахал усă кӳнĕ: ҫăваш хушшинҫе вĕсене вырăн пама патшалăх та питех килĕшмен, хăйсем те вĕсем нумайĕшĕ карйерă шыраса йут çĕрсене кăмăллăрах кайнă. Ҫапла вĕсем пыра киле тĕттĕмре пăнҫăхакан тăван хура халăха манса пынă. Ҫакна пула пирĕн интелликентсийĕн çулĕрех си ĕлĕк ҫăваш хура халăхĕнҫен уйрăлса пырса çак мĕскĕн хăлăхшăн сахал усăллă пулнă. Ҫав ĕлĕк нумай вĕреннĕ çынсен хушшинҫе „ҫăваш ҫĕлхи хура халăх ҫĕлхи, вăл плепейлă ҫĕлхе, унпа култтурлă етемсем каларма пултарайма̣ççĕ, ăна лайăхрах йалсенҫе пĕҫĕк аҫасене вĕрентекенсем çеç пĕлҫҫĕр, ҫăвашла кĕнекесене те вĕсемех кăларкалаҫҫăр“ тенĕ сăмах та илтĕнкеленĕ. Ака мĕншĕн ĕлĕк нумай вĕреннĕ ҫăвашшем ҫăвашла пĕр кĕнеке те çырса хăварман. Ҫăваш çинҫен çырас тесен те вĕсем вырăсла çеç çыркаланă, çакă тата вăл вăхăтра ҫăваш хура халăхĕ ҫуралăхра пурăнса унăн опҫĕствăллă мнени тавраш пулманнинҫен килнĕ, хура халăх хăй пурăнăçне хăй хуçа пулманнинҫен килнĕ: унăн хуçи вырăс патшалăхĕ, вырăс творенсемпе пуршуаçи, унтан вырăс йе вырăсланнă интелликентси пулнă. Анҫах çак саманарах пиртен вăтăр çул ытла кайа Ашмарин хăй пурă-

нăçĕпе, еçĕпе урăх култтурлă сулăнăçа кăтартса тăнă: çав сулăнăç çине ҫăваш хура халăхе хăй çĕрĕнҫе хăй ирĕкĕпе пурăнма тытăнсан çеç тухнă. Ашмарин политтиккă çынни пулман, анҫах вăл хăй те сисмен — йеппле вăл аслă политтиккăн урапине кӳлĕннĕ: вăл вырăсланса, хура халăха манса пыракан ҫăваш интелликентсине каласа тăнă: ҫăваш ҫĕлхи паттăр ҫĕлхе, вăл култтурлă халăх ҫĕлхи пулнă, малашне те пулма пултарать, ҫăваш сăмахĕ шухăшпа çавăрса илме çук аслă сăмах, вăл култтурланма пултаракан, натсилĕ култтурă тума пултаракан халăх сăмахĕ: епĕ йунпа вырăс пулсан та ҫăваш култтурне мала йарас ĕçе ҫуна патăм, нуçа хутăм, сывлăха пиллерĕм, тесе тăнă. Çак култтурлă сулăнăçран ҫăвашшен пысăк натсилĕ сатаҫҫă тухса тăнă: вăл хура халăх класселă та, натсилĕ те ирĕке кĕрешше илмесĕр ҫăнтан хăй култтурăн çулĕ çине тухăймассине кăтартса тăнă. Ак мĕншĕн самотершавлă патшалăх Ашмарин çине вăл вырăс пулсан та йалан сиввĕн те, хăррăн та пăхнă, ак мĕншĕн Ашмарин пирĕн историре Иван Йаккалҫă пекех пысăк историлĕ етем.

Ҫăваш çĕрĕнҫе Ашмарин сапнă варлăхсем ҫасах шăтса усме пуçлаççĕ. Ҫи малтан ун çумĕнҫе вĕренсе Николски Микулайĕ етнокрахви прохвессăрĕ пулса ҫăваш историне, пурнăçне, йăлисене тĕплесе пĕлсе нумай кĕнеке кăларать, унтан вăл ҫăваш вĕренекен аҫисем сырнă нумай ҫăваш кĕнеки кăларать, анҫах Николски ҫунĕпе, култтуралă сулăнăçпа пĕтĕмнех халиҫҫенех Иван Йаккалҫă еппохинҫе тăрать: вăл ҫăваш пулса, прохвессăра çитиҫҫен вĕренсе те ҫăвашла сырма та вĕренеймест, пур кĕнекесене те вырăсла çеç кăларать. Çапах та Николски ҫăваш ăслӑлăхне малалла йарас тĕлĕшĕнҫен питĕ пысăк историллĕ ĕç тăвать. Унтан ҫăваш хушшинҫе тепĕр ăслăлахçă Комиссар Курийĕ сиксе тухать: вăл ҫăваш истори синҫен вырăсла та ҫăвашла ăслăлăхлă тĕплӳсем пиҫетлет, наукăра хăй уйрăм теорисем йышăнса вĕсене тĕрĕслеме тăрăшать. Унтан вăрçăҫҫенех Комиссар историçĕ тӳрех ҫăваш халăхĕ ҫăваш натсилĕ култтурă тумалла тесе сырма тытăнать. Çака пур вырăс руссихвикаттăрсен çӳçне пĕтĕмпех вирелле тăратать: Комиссара пур шурналсенҫе, хаçатсенҫе, кĕнекесенҫе тĕрлĕ йенҫен вĕскĕртсе тулама тапратаççĕ. Çапах та вăл хăй ĕçне пăрахмасть: халиҫҫенех ҫăвашла кĕнекесем кăларса пурăнать. Ашмарин çумĕнҫех вĕренсе Матви Тимахвийĕ ҫăваш крамматикки сырса пиҫетлет. Тимахви Хветĕрĕ ҫăваш ҫĕлхи синҫен, ăна мĕлле шкулсенҫе вĕрентмелли синҫен кĕнекесем кăларма тапратать. Петĕр Миххайли ҫăваш авалне тĕплесе пĕлес ĕçпе тăрăшша ĕçлет. Милли Елекçейĕ ҫăвашла истори; ҫĕлхе, йăласем тĕлĕшĕнҫен тĕплесе пĕлес ĕçпе çеç ĕçлеме тытăнать. Çапла йулашки çулсенҫе ҫăваш наукки аслăланса тĕрекленсе пырать. Ҫăваш оплăçĕнҫе 1921-мĕш çултанпа Шупашкарта ҫăваш ăслăлăхçисен ушкăнĕ ĕçлеме тытăнать: вăл ҫăваш халăхне, унăн пурăнăçне пур йенҫен те: унăн истори-

не, ђёлхине, пурлăхне, сывлăхне, йăлисене тишкерсе тĕпле-се пĕлме тăрăшаť. Унтан Шупашкартах кĕнеке пиђетлекен Уйрăм çумĕнђе Науккăла-Меттотиклă Канаш ĕçлеме, Халăха Çутăлантаракан Ńай çумĕнђе Патшалăхăн Аслăлăхлă Канашĕ, Оплăçри Ĕçтăвкком çумĕнђе Аслăлăхлă-Еккономиклă Камиççи ĕçлеме тапратаť. Унтан Ђĕмпĕр институтĕнђе ытти ђăвашшен аслăрах шкулĕсенђе ђăваш халăхне тĕрлĕ йенђен тĕплесе пĕл-мелли упкăнсем уçăлаççĕ.

Çав вăхăтрах ђăваш хура халăхĕн хушшинђе те науккă-сен йеннелле пысăк интерес çĕкленсе кайаť, çапла çак çулсен-ђе шкулра вĕренмен хресђен Кевĕрле Пурисĕ хăй тĕллĕн вĕ-реннипе акронома тухаť, хăй шухăшласа тĕнђере пулман çе-рем уçмалли акапуç шухăшласа кăлараť, ђăваш йалхуçалăхне тĕплесе пĕлсе уп синђен усăллă кĕнекесем кăлараť.

Çапла ĕнтĕ ђăваш хура халăхĕ те аслăлăх урапине кӳлĕнĕ пуçларĕ. Малашне ђăваш çинђен вĕрентекĕн аслăлăха ђăваш-шем хăйсем малалла туртса пырассине епĕр пĕтĕмпех шанса пыратпăр, унтан епĕр ђăвашшем интернатсионаллă науккăсен урапине те кӳлĕнсе çав науккăсене малалла турт-ма пулăшма пултарнине шанатпăр.

IV. КИЛТИ ПУРĂНĂÇ, ЙĂЛАСЕМ, ЁНЕНӲСЕМ.

Ђăваш хура халăхĕ çĕр халăхĕ, йал халăхĕ. Унăн авалранпа наттурăллă-потрепиттĕллĕ хуçалăх пулнă. Вăл тĕнђерен йутшăнса, ытапса, питĕрĕнсе пурăнма тăрăшнă. Вăл ĕмĕрхи класслă—натсилĕ пусмăра пĕр йенђен çапла майпа кăшт та пулин сирсе тăма пултарнă Анђах çапла нумай ĕмĕрсем тăртшĕпе натсилĕ хупăпа витĕнсе тăрса пурăнни халăха нумай сийен тунă: вăл ăна авалхи пурăнăç йĕркипе авалхи йăласене хытăрах парăнса тăма хăнăхтарнă. Ђăвашшен хуласем, интустри пулман, авалхи саманара вĕсен куђттурлăрах сийĕсем: çĕрхуçисем, улпутсем, сугилӳçĕсем халăхран татăлса йе тутарланса йе вырăсланса пĕтнĕ, кайарах та пуршуаслă саманара ђăваш пуршуаçи шăтса аталаниђђенех ђăвашлăхне çухатнă; револђутсиђђенхи куђттура пуринђен ытла пуршуаçи тунă, çавăнпа пирĕн пуршуаçи пулманнипе пуршуаслă куђттурă та пулайман. Вырăс пролеттариађĕ, вырăс хресђенĕсемпе ĕçлекенĕсем пуршуаçине пăрса пăрахсан унтан пысăк наслетствă илнĕ—çав пуршуаçийĕн интустрийĕ, техникки, куђттурĕ пулнă; ђăваш ĕçлекенсемпе хресђенсем çавăн пек наслетствă илеймен: ăна вĕсем йапйака вырăнта хăйсем çеç тумалла. Унтан ђăваш хура халăхĕ унăн куђтгурă сĕткенне çӳретекен кăвапа тымарĕ ĕмĕртен татăлса, питĕрĕнсе тăнипе вăл вырăс хура халăхĕнђен айаларахри куђттурă пусми çинђе тăрса йулнă. Пирĕн ђăвашшем йал пурăнăçĕпе çеç пурăнма йуратарах параççĕ, пĕтĕм йăлисемпе йал йенне çеç туртăнса тăраççĕ, вĕсен пурăнăç сăнĕнђен йӳрĕклĕ кĕтӳусравлă саманасенђен йулнă пиђетсем те халиђђенех çухалса пĕтеймен. Çавăнпа епĕр йепле хуçалăх тĕлĕшĕнђен. куђттурă тĕлĕшĕнђен ђăвашшене çĕнĕ çул çине хăвăртрах тухма ђĕнетпĕр. çаплах хăвăртрах пĕтĕм пурăнăçра çĕнĕ йĕркесем, йăласем йышăнма ђĕнтепĕр. Пурăнăçра пур авалран йулнă йапалана та тĕрлĕ йенђен тишкерсе пăхса унăн сийенлĕхне йе усăллăхне пĕлес пулаť, пур сийен йĕркене, йăлана пăрахса çĕнĕ йĕрке йышăнас пулаť. Çав çĕнĕ йĕркесене, çĕнĕ йăласене ђи малтан пире хула пурăнăçĕ, интустриллĕ ђенттăрсен пурăнăçĕ кăтартса тăраť. Çавăнпа халăхăн пурăнăç сăпне, унăн пытне, правĕсене, йăлисене; ёненĕвĕсене çĕнĕ çулпа йарасси пирĕн ђăваш хулисемпе интустриллĕ ђенттăрсем пулассинђен ытларах та килет.

Авал ђăваш халăхĕ çинђен çыруçăсем унăн тĕрлĕ правĕсене, йăлисене, ёненĕвĕсене çеç кăтартса çырађђĕç, унăн исторйне, куђттурине, хуçалăх йĕркине тĕплесе çырма тăрăшмаç-

ҫӗҫ. Ҫырнӑ ҫух та пур авалран йулнӑ йаласене ӳстерсе, ҫӑвашшене тиккарсем пек кӑтартса ҫыраҫҫӗҫ. Ҫапла майпа вӗсем йе йури, йе йуримар ҫӑваш халӑхӗ ҫуралӑха ҫеҫ тивӗҫлине суйа кӑтартупа тӗрӗслеҫҫӗҫ. Револҫутсиҫҫенех вырӑс шкулӗсенҫе вӗрентекен тӗрлӗ кӗнекесенҫе ҫӑваш халӑхӗ ҫинҫен ҫырнӑ ҫырусене вулама намӑс та, хурлантараҫҫӗ те. Анҫах епӗр хамӑра хамӑр лайӑх пӗлсе тӑратпӑр: хамӑр сийене епӗр хамӑрах сисетпӗр, хамӑра мӗн ҫитменнине, мӗн кирлине те епӗр хамӑрах сисетпӗр. Епӗр пӗлетпӗр — пирӗн пурнӑҫ наҫартарах, анҫах епӗр ҫав вӑхӑтрах пӗлетпӗр: пӗтӗм авалхи пыт халӗ пирӗн пӗтӗмпех ишӗлсе ҫӗнелсе пырат, ун вырӑнне ҫӗнӗ пыт ҫуралса аталанса пырат. Халӑх пурӑнӑҫӗ тинӗс пек тӗпӗ тымарӗпе хумханса тӑрат: авалран йулнӑ йаласем ҫухалаҫҫӗ, ҫӗнелеҫҫӗ, ҫӗнӗ тӗрлӗ йаласем йышӑнӑнаҫҫӗ. Ҫӑваш пролеттариаҫӗ ҫуралса аталанат, ҫӑваш ҫӗрӗнҫи авалхи ҫӑваш хулисене ҫӑвашшем шӑнӑҫаҫҫӗ, ҫӑвашран пин ҫын ытла Раҫҫейӗн аслӑ шкулсенҫе вӗренеҫҫӗ, нумай пин ҫын вӑтам шкулсенҫе вӗренеҫҫӗ, йалсенҫе ҫӑваш хушшине тӗнҫе кулҫттурне кӳртешшӗн вӗрентекенсем, унтан пур ҫамрӑксем те вӗриленсе ӗҫлеҫҫӗ. Ӗмӗрне мишҫенлӗ-пуршуаслӑ, унтан вырӑсла-великотершавлӑ кулҫттурӑн опеккинҫе пурӑнса ҫӑваш хура халӑхӗ пӑнҫахнӑҫем пӑнҫахнӑ, ҫакнӑҫем кайалла ҫакнӑ; халӗ ҫӑваш ӗҫлекенӗсемпе хресҫенӗсем хӑйсен ирӗкӗпе пурӑнма тытӑнсан ҫеҫ халӑх пурӑнӑҫӗ ҫулран ҫула ҫӗнелсе пырат, ҫулран ҫула вырӑссен, ытти кулҫттурлӑ халӑхсен пурӑнӑҫӗ патне ҫывӑхарса пырат. Ҫапла пулса пынине епӗр малалла кӗскен пурӑнӑҫа тӗрлӗ йенҫен тишкерсе пӑхса кӑтартӑпӑр.

Килҫурт. Килҫурт тӗлӗшӗнҫен ҫӑвашшем вырӑссенҫен те, тугарсенҫен те уйрӑмтарах. Ҫӑваш пӳрҫӗ пӗҫӗкҫӗ, мӗнпурӗ 3-4 кантӑклӑ ҫеҫ, лутра, ун вырӑнне ҫӑваш ҫурҫӗ йӗритавра тирпейлӗ ҫавӑрнӑ: унӑн вите, кӗлет, картасем, лаҫ, нӳхреп пур. Авалах ҫӑваш пӳрҫӗ виҫкӗтеслӗ пулнӑ, кайарахпа пыра киле пӳрт тума ӑсталансан ҫӑвашшем перенерен тӑваткӗтеслӗ пӳртсем тума вӗреннӗ. Ҫав пӳрт хура пулнӑ: унӑн урайӗ ҫӗр пулнӑ, урай варринҫе вуҫах пулнӑ, кӑмака пулман, ҫавӑнпа пӳрт хура пулнӑ, пӳртӗн пӗр кантӑк пулнӑ, тӗтӗм кӑлармалли тӗпӗ, йапаласене усрама пӳрт ҫумӗнҫе пӑлтӑр пулнӑ, пӳртпе пӑлтӑра пӗр тӑтӑш тума тӑрӑшнӑ, ҫапла ҫак пӳрт пӗтӗмпех йурт тенӗ хӳшӗсем пек пулнӑ. Унтан хӑмаурайлӑ, кӑмакаллӑ шурӑ пӳртсем тума вӗренсен ҫӑваш авалхи хӳшӗ йеверлӗ лаҫ тума вӗреннӗ: ҫак лаҫра ун йапалисем сыхланнӑ, ҫу вӑхӑтӗнҫе вӑл унта пурӑнма та кусӑнӑ, лаҫ тӑвас йӑлана вырӑссем те йышӑннӑ: халҫхи пӗҫӗк пӳрте пӗлтерекен вырӑс сӑмахӗ лаҫукӑ ҫав лаҫ тенӗ ҫӑваш сӑмахӗнҫен пулнӑ. Пыра киле тирпейлӗрех пурӑнакан ҫӑвашшем пӳрте икӗ пӳлӗмлӗ тума тытӑннӑ: пӑлтӑр вырӑнӗнҫе йашка пӗҫермелли, ҫамрӑк выҫҫӑха сивӗре усрамалли хура пӳрт пулнӑ, тепӗр пӳлӗмӗ хӑма урайлӑ, шурӑ кӑмакаллӑ таса пӳлӗм пулнӑ, унӑн урайӗ ҫӳлӗрех тӑнӑран ӑна тӗпел тенӗ,

çак йат тӳпе тенӗ сӑмахран пулнӑ. Тӗпелте ваттисем пураннӑ, унтан унта уйавсенҫе хӑнасене ҫисланӑ. Çак саманара ӑрулӑ пыт пулнӑ, ҫавӑнпа пӗр килҫуртра нумай килйыш, нумай ҫемйе пурӑннӑ, ҫавсенҫен ҫамракрах мӑшӑрсем пӑлтӑрсемпе кӗлетсенҫе нумайрах пурӑнса иртернӗ, кӗлетсене йе ампарсене пӑлтӑр ҫумнех пӗренерех тунӑ, унта тырӑ тавраше те сыхланса тӑнӑ. Выҫӑха усрама ҫӑвашшем витесем, картасем тунӑ, ҫуна йе урапа тавраше сыхлама вӗсем витсе сарай йе ампарай тунӑ, апшӑша, сӗттурӑха, кайарахпа пахҫа ҫимӗҫне сыхлама нӳхрепсем тунӑ, нумайӗшӗ нӳхрепсене лаҫ ӑшнех алтса тунӑ. Çурта авалранах ҫӑвашшем хӳмепе йӗритавра ҫавӑрнӑ, кӗрсе тухма пӗр йенне уҫӑлакан хапха тунӑ, икӗ йенелле уҫӑлакан хапхапа калиткӑ тӑвассине ҫӑвашшем вырӑссенҫен йышӑннӑ. Авал ҫӑвашшем выҫӑх нумай усранӑ ҫух тырӑсене пӗр вырӑнтан куҫҫа тепӗр вырӑна акнӑ, тырӑ уйӗсене выҫӑх таптасран картапа пӳлсе ҫавӑрнӑ, ӑна анкарти (ана карти) тенӗ. Кайарахпа ҫапла ҫурт таврашӗнҫи тырӑ картине калама тапратнӑ. Анкартисенҫе тырӑ типӗтсе ҫапмалли авӑн пулнӑ, арпа сыхлама арпалӑх пӳлнӑ. Çапла авалранах ҫӑвашшем килҫурта ҫӗр ӗҫлесе, унтан выҫӑх усраса пурӑнма кирлӗшӗн тунӑ. Тӗп авал кайӑкҫӑласа пурӑннӑ саманара етем пурӑнмалли хӳшше хайар кайӑксем пымалла мар ҫӗрсенҫе, ҫӳллӗ ҫырансем хӗрринҫе тунӑ, ун ҫух етеме сыхлакан тус йӑтӑ ҫеҫ пулнӑ. Çав темиҫе пин ҫул малтан пулнӑ йӑлапа ҫӑвашшем халҫиҫҫенех ҫурт вырӑнне питӗ хисеплеҫҫӗ: никӗс хывсан никӗс пӑтти пӗҫереҫҫӗ, унтан нумайах та пулмасӑ пӳрт лартиҫҫен ун айне йӑтӑ вӗлерсе пытарнӑ. Тӗп авал етем вут тыткалама хӑнӑхсан ҫеҫ вӑй илнӗ, ҫинертерех пурӑнма тытӑннӑ: вуҫах кутӗнҫе вӑл ӑшӑннӑ. ҫимӗҫ пӗҫернӗ, вуҫахах хайар кайӑксене ун патне ҫывӑхарма хӑратса тӑнӑ. Çак вӑхӑтрах ҫӑвашшен вута хисеплесси, вуҫахпа кӑмакана хисеплесси тухса кайнӑ: вӗсен шухӑшӗпе вуҫаха уйрӑм ырӑ сывлӑш хӗртсурт упраса тӑнӑ, вӑл ҫурт пирштийӗ вырӑнӗнҫе хисепленнӗ, ҫавӑнпа халҫиҫҫенех авалран йулнӑ йӑлапа ҫӑвашшем кӑмака хывнӑ ҫух ун тӗппе тусан хӗртсура хисеплесе пӑтӑ пӗҫерсе ҫийеҫҫӗ. Килҫуртри савӑтсапапа орутисем ҫӑвашшен авалранах тӗрлӗ тӗрӗпе тӗрленнӗ, ҫав тӗрӗсем ӑслӑлӑх кӑтартнипе Скантинави халӑхӗсенҫен йышӑннӑ, ҫав ҫӑвашшем авалран варексемпе ҫыхӑнса тӑнине пӗлтерет.

Йалсемпе пурӑнма ҫӑвашшем кӗтӳусравлӑ хуҫалӑх йӗркине ҫӗрӗҫлӗвпе улӑштарнӑ вӑхӑтра тапратнӑ. Çав йӳрӗклӗ кӗтӳусравлӑ пурӑнӑҫ йӗркине йал вӗҫӗнҫи хапхасем, укӑлҫасем кӑтартса тӑраҫҫӗ. Авал йала пуҫланӑ ҫух йал пулас вырӑна кашкӑр йе йӑтӑ тытса вӗлерсе пытарнӑ, ҫапла туни хайар кайӑксене йал ҫывӑхне пыма хӑратса тӑрат тенӗ. Авалхи йалсенҫе ҫуртсем халҫхи пек йӗркеллӗ ларман: кашни ӑру ӑру тӗп ҫурҫӗ йӗри тавра ҫавӑрӑнса, ҫӑмӑртанса ларнӑ, ҫавӑнпа урамсем (ӑру сӑмахран пулнӑ пулмалла) кукӑрмаккӑр пулнӑ. Йал йаҫӗсене ӑна пуҫлакан ӑру йаҫӗпе йе ҫӗршыв йаҫӗпе хунӑ. Кай-

арахпа тутар колонисатсипе вырӑс колонисатсийӗн саманисенђе ђӑвашшем вӑрмана касса тасатса ларма тытӑннӑ, ҫапла урам выраӑнне кас йатлӑ сӑмах тухса кайнӑ. Кайарахпа пирӗн ҫӗрте вырӑссем йышлӑлансан вӗсен ђиркӳлӗ йалӗсене ђӑвашшем вырӑс сӑмахӗпе сала тесе ђӗнме тытӑннӑ.

Ђӑвашшен йалӗсем те килҫурђӗ те тирпейлӗрех те ҫӗр ӗҫӗне пурӑнма килӗшӳлӗрех пулсан та пӑхса тӑма халиђђенех тӗксӗмрех: вӗсен хура пӳртсем халӗ те пӗтмен, пӗр кантӑклӑ пӳрт нумай, урам тӗлӗшӗнђен йӗркесӗр ларнӑ йал нумай. Ҫакӑ ђӑвашшем ытти кӳршӗ халӑхсемпе танлаштарсан наттуралӑрах хуҫалӑхпа пурӑннинђен, унтан йурлӑрах пурӑннинђен тата пусмӑрта пурӑннинђен килнӗ. Ӗлӗк ђӑвашшем йури наҭар илемсӗр ҫуртсем, йӗркесӗр йалсем тума та тӑрӑшнӑ: наҭар ҫуртпа вӗсем куланай нумай хурассинђен хӑтӑлма тӑрӑшнӑ. унтан ҫак йӗркепех вӑрӑхурах пусмӑрлассинђен тӑрӑшнӑ. Вӑрӑхурах авал ђӑваша хӗсепсӗр лӑскана: вырӑс ушкуйникӗсемпе хусахсем, Аҫи йӳрӗкҫисем: тутарсем, кӑркӑссем, пуххарсем, калмӑксем киле киле пусса ђӑвашшене ҫаратса кайнӑ, ҫамрӑксене тытса ђуралӑха сутма та илсе кайнӑ, ҫавӑнпа халиђђенех ђӑваш сӑмахӗнђе „вырӑс кайсан выран йулат̆“ тени, пусмӑрлакан ҫынна тутар, ҫӑткӑна калмӑк, ђейе вӑрра кӑркӑс йе нухай тени йулнӑ. Ак мӗншӗн ђӑвашшем авал пӳртсенђе пӗђӗк ҫын кӗмелле мар кантӑк ҫеҫ тунӑ, урам йӗркине пӑхмасӑр пӗр пӗрин ҫумне ђӑмӑртанса ларнӑ.

Пирӗн ӗмӗрте килҫурт йӗрки ђӑвашшен пӗтӗмпех ҫӗнелсе пырат̆: хура пӳртсем пӗтеҫҫӗ, ђӑвашшен нумай та, пысӑк та кантӑклӑ пӳртсем тӑваҫҫӗ. йна тӗрлӗ тӗрӗсемпе хитрелетеҫҫӗ, крылђсасем, ђӑлансем тӑваҫҫӗ. тӑпмансенђен хӑтӑлма шаҫҫасем ҫине лаша пуҫӗсем ҫакас йалана (лашана тӑпманран тарассине пӗлтернӗ), йӑвӑҫ питӗркӗҫӗсемпе аппаланас йаласене пӑрахса ђӑвашшем ҫуртсене хулари вырӑссем пекех ҫавӑрма тӑрӑшаҫҫӗ. Унтан йулашки саманасенђе ђул, тӑм ҫуртсем тума, вӗсене вута парӑнман йапалапа: тӑмпа улӑмпа, ђерепитсӑ тавраппе витме тӑрӑшаҫҫӗ. Йалсенђе урамсене тӳрӗлетме, аслӑлатма, пушӑ вырӑнсенђе халӑх саҭӗсем ӗрђетме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫапла ђӑваш килҫуртне, ђӑваш йалне ҫулран ҫул кулђтурлӑ сӑн кӗрсе пырат̆.

Килҫуртсен ӑшђикӗ те ҫулран ҫул улӑшӑнса пырат̆: авалхи саксене нумайӗшӗ пӗтереҫҫӗ, сӗтелсем, тенкелсем, креват̆сем йышӑнаҫҫӗ, хӗрарӑмсем пӳртсене таса тытма тӑрӑшаҫҫӗ, авал урайне шӑлман хӗрарӑм пӑрахҫӑ ҫын вырӑнӗнђе хӗсепленнӗ, халӗ ернере пӗрре те пулин урайне хырса тасатса ҫуман хӗрарӑм пӑрахҫӑ, йал мӑшкӑлӗ вырӑнӗнђе хӗсепленет. Авалран йулнӑ ђӑваш тасамар пурӑнат̆ тенӗ сӑмаха сирешшӗн нумайӗшӗ хастарлӑ хӗрарӑмсем пӳртсене таптаса тыта пуҫларӗҫ. Малалла авалран йулнӑ йӑласене пӑхмасӑр кашни ҫын хӑй ҫуртне тӗплӗ, тӗрлӗ йенђен шухӑшласа, хуласенђи йе ытти тӗлсенђи лайӑх ҫуртсене сӑнаса хӑй кӑмӑлне йеппле килет ҫапла тума тарӑшмалла.

Тум. Йепле ђǎвашшем ђелхе тěлěшěнђен виçě калаçǎва уйрǎлса тǎраççě, çавǎн пекех вěсем тум тěлěшěнђен те виçě пайа уйрǎлса тǎраççě: вирйалсем пǎђах шурǎ тум тǎхǎнаççě, анат йенђисем шурǎпа тěрлě тěслě тум хутǎш, анатрисем шурра йуратмаççě, урǎх тěслě тум тǎхǎнаççě. Нумайах та пулмасť авал ђǎвашшем пурте шурǎ тум тǎхǎннǎ, кайарахпа çеç вырǎссемпе тутарсене кура анатрисемпе анат йенђи ђǎвашшем тěрлě тěслě тума йышǎннǎ, çапла ђǎвашшен авал пуриншěн те пěр тěслě шурǎ тум пулнǎ. Етнокрǎхсем каланипе, тěп авал ђǎвашшем сивěре туман тирпе витěнкелесе çеç иртернě. Анђах çакǎ питě нумай авал пулнǎ пулмалла. Пǎлхари саманинђе ђǎвашшем халђхи пекех тумланма пěлнě пулмалла. Пǎлхарсен хушшинђе кěмěл пǎлхарсем йатлǎ уйрǎм йах пулнǎ, хǎш историçǎсен шухǎшěпе çапла ђǎвашшене ђěннě, çапла вěсене шурǎ тум тумланнинђен каланǎ. Ђǎваш хěрарǎмсен авалранах çапла тум таврашě пулнǎ: кěпе, йěм, сурпан, сарǎ йе хивре, шупǎр, унтан çак тума тěрлě майпа хитрелекен тум таврашě: масмак, ама, алка, шǔђкеме, хушпу, тевет, тухйа, çеçтенкě пулнǎ. Авалранах ђǎвашшем тума кěмěл çакса илемлетме йуратнǎ, унтан авалранах пěрссенђен йышǎннǎ йǎлапа ǎна шǎрçа тирсе илемлетнě. Пуйантарах хěрарǎмсем авал Аçирен килнě хаклǎ йышши йе симěс, йе сарǎ тěслě пиртен те шупǎр çěленě, ǎна укапа тěрлесе пěтернě. Унтан пуйантарах хěрарǎмсем питě ђаплǎ тилě çěлěксем малахайсем тǎхǎннǎ: ун ǎшне тилě тирěнђен, çине хěрлě суккаран çěленě, унтан ǎна укапа тěрлесе пěтернě. Арçынсем авалранах килте тěртнě кěпе, йěм тǎхǎннǎ, пуç çине çǎм шлепке тǎхǎннǎ, пур тум та шурǎ пулнǎ, писихи пулман, сǎхманпа кěрěк çинђен çеç вěсем писихи сыхнǎ. Тǎлǎп таврашне ђǎвашшем сивě йенђе пурǎнакан вырǎссенђен йышǎннǎ. Авалранах ђǎвашшем тиртен сǎран тума пěлнě, сǎранран атǎ çěлеме пěлнě: арçынсем те, хěрарǎмсем те атǎ тǎхǎнса çǔренě. Кайарахпа выђǎх ђаксан, çука йерсен, вǎрман хушшине ђикěнсен ђǎвашшем çǎпата тǎхǎнмалла пулнǎ, вǎл çип атǎ тенине пěлтерет, çав ђǎвашшем пушǎтран çǎпата тума тытǎниђђен ǎна çǎм çиппинђен тунине пěлтерет пулмалла. Урана арçынсем те, хěрарǎмсем те авалранах тǎла ђěркенě.

Ђǎваш тумне, ытларах та хěрарǎмсен тумне нумай тěлěшěнђен çармǎссемпе мǎкшǎсем йышǎннǎ, çапла вěсен шупǎр, сурпан, масмак йевěрлě йапаласем пур. Ытларах та авалхи ђǎваш тумě терěсемпе ђаплǎ, çав тěрěсене те вěсем кǔршě халǎхсене йышǎнтарттарнǎ. Пирěн саманара тум пěтěмпех улшǎнса пыраť: арçынсем пǎђах вырǎсла тумланма тǎрǎшаççě, вěсем ђǎвашла тумланасси халě пасарлǎ тавар илме мул çитменнинђен çеç килет. Анђах хěрарǎмсем хǎйсен тумěшěн питě хытǎ тǎраççě: Николђски хисепěпе ђǎваш хушшинђе икçěр хěрарǎмран пěри çеç майралла тумланаť. Малашне халǎх çутǎланнǎ çемěн ђǎвашшем тумпа та куђттурлǎ халǎхсен йенне çавǎ-

ҫӑнса ӳкесси пире паларса тӑрат. Тум ҫӑмӑл, сывлӑха килӗшӳллӗ, нӳрӗпе сивӗрен сыхлама пултармалла пултӑр, унтан вӑл хитре пултӑр. Авалхи хӗрарӑмсен натсилӗ тумӗ питӗ хитре, ҫавӑнпа ӑна малашне хӑварсан та сийенӗ ҫук, анҫах сурпан пек сывлӑха сийенлӗ йапаласене сырас йе тӑхӑнас йалана пӑрахсах пӑрахмалла.

Пур ҫири тума та ҫӑвашшем хӑйсем тӑваҫҫӗ, ҫав наттуралла хуҫалӑх йӗркинҫен килет, ҫавӑнпа ҫапла пин ҫул тӑршшӗпе наттуралла хуҫалӑх йӗркипе пурӑннипе ҫеҫ вӗсем тума та пӗр улшӑнтармасӑр пурӑнма пултарнӑ. Малашне ҫӗнӗ хуҫалӑх йӗрки йышӑнсан ҫӑвашшем ирӗклӗ ирӗксӗрех тума хӑйсем тумалла мар, хапрӑк таварӗнҫен ҫӗлемелле пулат, ҫапла пулсан ҫӑваш натсилӗ тум йӗрки ирӗксӗр нумай улӑшӑнмалла пулат.

Ҫимӗҫ. Ҫимӗҫ йӗрки кашни халӑхшӑн ҫи пысӑк йӗрке: ҫимӗҫ лайӑх пулсан халӑх паттӑр, сывлӑхлӑ, ҫун халӗпе тӗреклӗ пулат, ҫимӗҫ наҫар пулсан халӑх пӗтсе пырат. Авал выҫӑх нумай усранӑ саманара ҫӑвашшем аш нумай ҫинӗ, ҫав аша пӗҫерме вӗсен пысӑк хурансем пулнӑ. Ҫӑвашшем ытларах та сурӑхпа лаша ашне ҫиме йуратнӑ. Ҫав саманарах вӗсем тӗрлӗ кӗрпесенҫен, ҫӑнӑхран, ҫуран, ҫӑмартаран тӗрлӗ ҫимӗҫ хатӗрленӗ, ҫав ҫимӗҫҫене халӗ те пӗҫереҫҫӗ. Ҫи ҫаплӑ ҫимӗҫ вырӑнне ҫӑвашшен ашлӑ пӑтӑ хисепленнӗ, ӗҫ вӑхӑтӗнҫе ҫи тутӑ тытакан апат ашпа пӗҫернӗ пултӑранлӑ салма йе ҫӑмах хисепленнӗ. Ҫаплӑ ӗҫкӗ шерпетпе пылсӑра пулнӑ, йаланах ӗҫмелли ӗҫкӗ уйранпа урпаран тунӑ йӳҫӗ пулнӑ. Хӑмлапа ҫӑвашшем Атӑл ҫине килсен ҫеҫ паллашнӑ, хӑмлаллӑ сӑра тума та вырӑссенҫен ҫеҫ вӗреннӗ. Ерехпе те ҫӑвашшем кайарахпа ҫеҫ хӗвелтухӑҫри унтан Капкас халӑхӗсем урлӑ паллашнӑ, хӑйсем ерех тума пӗлмен. Ҫапла авал ҫӑвашшен апат пӗр тӗслӗрех ҫеҫ пулнӑ, анҫах вӑл ашпӑшпа ҫу ирӗкӗннипе тутӑ пулнӑ. Ҫӗр ӗҫлеме ҫӑнтан тытӑнсан, ытларах та сатпа пахҫа ӗҫне йышӑнсан ҫӑвашшем нумай тӗрлӗрех ҫимӗҫ ҫиме тытӑннӑ. Анҫах пахҫа ҫимӗҫӗсене ӳстерес ӗҫе ҫӑвашшем питӗ ирӗксӗрленсе илешнӗ: ҫӗрулмине, купӑстана, хӑмлана нумайҫҫен вӗсем шуйттан ҫимӗҫӗсем тесе ҫӗннӗ, вӗсенҫен пӑҫах писсе пурӑннӑ. Ҫакӑ ҫӑвашшем авал ҫеҫенхирсенҫи йӳрӗклӗ пурӑнӑҫ йӗркипе питӗ хытӑ ҫыхӑнса тӑнинҫен килнӗ. Ҫав сатпа пахҫа ҫимӗҫӗсенҫен писсе тӑрас йӑла пирӗн хушӑмарта халӗҫҫенех паллӑ. Пирӗн саманара ҫӑваш апаҫӗ йурӑхсӑр наҫар: пирӗн ҫӑваш вӑтамлӑхран ҫулталӑкра вунӑ кӗрепенке аш та ҫийеймест, питӗ сахал ҫу, сӗттурӑх курат. Ҫака ҫи малтан ҫӑваш йурлӑ пурӑннинҫен килет. Унтан ҫакӑ пӗлменнинҫен те килет: ҫӑваш арӑмӗ тӗрлӗ техӗмлӗ апат пӗҫерме пӗлеймест. йалан пӗр тӗслӗ апат ҫеҫ пӗҫерет, унтан вӑл тӗрлӗ пахҫа ҫимӗҫӗсенҫен: хӑйартан, сухантан, купӑстаран, ҫарӑкран, ҫӗкӗнтӗртен, кавӑнран, пӑмитортан, ытти йапаласенҫен те, унтан кӑмпасенҫен лайӑх ҫимӗҫҫем хатӗрлеме пӗлсе ҫитерейместь. Ҫавӑнпа пирӗн хӗрарӑм-

сене тӗрлӗ лайӑх апат пӗҫерме вӗрентме тӑрӑшмалла. Ытларах та тата апата енӗр сатпа пахҫа ҫимӗҫӗсене ӗрҫетсе ӳстерсе лайӑхлатма тӑрӑшмалла. Пӗлес пулаҫ: лайӑх апатран пур халӑхӑн вӑйӗ, сывлӑхӗ, телейӗ килсе тӑраҫ. Нумайӗшӗ ҫӑваш халӑхӗ вакланса импераккеленсе пыраҫ теҫҫӗ, хӑшӗ вӑл ҫасах ҫакса пӗтсе те пымалла теҫҫӗ; ҫапла пулни ҫи малтан халӑх наҫар тӑранса пурӑннинҫен килет. Ҫимӗҫ тӗлӗшӗнҫен ҫӑвашшем ерех ӗҫҫе, ытларах та хӑйсем тунӑ ерех ӗҫҫе нумай сийӗн кураҫҫӗ. Сӑрана та ҫӑвашшем ытларах ӗҫеҫҫӗ. Пирӗн ӗмӗрсенҫе ҫеҫ ҫӑвашшем ҫей ӗҫме вӗрене пуҫларӗҫ, сӑмаварсем туйана пуҫларӗҫ. Ҫейӗн те усси сахал, сийенӗ пайтах: вӑл етеме хӑвӑртрах шӑнса пӑсӑлма пулӑшаҫ. Унтан ҫӑвашшем питӗ ытлашши хавасланса тапак туртаҫҫӗ. тапак авал Америккӑра ҫеҫ ӳснӗ, ӑна иевроппа илсе килни нумайах та авалран мар, ҫапах та вӑл халӗ пӗтӗм тӗнҫене сарӑлҫӗ. Тапак сывлӑха питӗ сийенлӗ йапала, ҫавӑнпа ҫӗлӗме ҫӑвартан пӑрахмасӑр тапак ӗмес йӑларан писме кирлӗ. Тапак ҫӑварпа туртаканни те, сӑмсапа туртаканни те пӗр пекех сийенлӗ—ҫавӑнпа вӗсенҫен иккӗшӗнҫен те писесех пулаҫ.

Ҫемйе йӗрки. Тӗп авал авлану йӗрки пулман, мӑшарлӑ пурӑнас йӗрке те пулман: етемсем хир кайаксем пек пурӑннӑ. Кайарахпа ӑрулӑ йӗркепе пурӑнас йӑла тухса кайнӑ. Малтанрах ҫӑвашшен ӑру пуҫӗнҫе ватӑ ама пулнӑ. кайарах ватӑ арҫын пулнӑ. Кашни ӑрӑвӑн пур пурлӑх та пӗрле пулнӑ. арҫынсем хӗрарӑмсем те малтан ҫӑптан мӑшӑрланмасӑр хутшӑнса пурӑннӑ. кайарах мӑшӑрлӑ пурӑнӑҫ йӗркипе пурӑнма тытӑнсан та мӑшӑрсене таван ӑруранах туйаннӑ. Тӑван йуна хутӑштарса пулнӑ йӑх наҫар пулаҫ, ҫавӑнна пыра киле мӑшӑрсене урӑх аруран илес йӑла тухса кайнӑ. Кӗтӳ кӗтсе ҫӳрекен ӑрусем пӗр пӗринпе йӑланах вӑрҫӑллӑ пурӑннӑ. ҫавӑнпа хӗре килӗшше илме майӗ пулман. ҫавӑнпа хӗрсене ытти ӑрусенҫен пусмӑрласа ҫапӑҫса йе вӑрласа илес йӑла тухса кайнӑ. Кайарахпа сутилӳпе, укҫапа паллашшан хӗрсене укҫа парса сутӑн илес йӑла тухса кайнӑ. Ҫак йӑласем пирӗн хаҫиҫҫенех йулнӑ, унтан тӗп авалхи ӑруллӑ пурӑнӑҫ ҫинҫен пирӗн ҫӗлхе те виттӗр кӑтартса тараҫ. Ҫапла пирӗн ӗлӗк ҫакӑн пек йӗрке пулнӑ паллӑ ӑру пуҫӗнҫе мӑпасатте пулнӑ, унтан кӗҫӗнрех унӑн ывӑлӗсем пулнӑ, вӗсене пур ӑрури ҫамрӑксем пысӑк тетесем йе ҫав сӑмахранах тухнӑ сӑмахпа пиҫҫесем тенӗ, вӗсен ывӑлӗсем те ӑрура уйрӑм си пулса тӑнӑ: вӗсене ҫамрӑксем тетесем йе пӗҫӗк пиҫҫесем тенӗ, ӑрӑвӑн тӑваттӑмӑш сийӗ аҫапӑҫа пулса тӑнӑ. Асатте, муҫи йе атте тенӗ сӑмах та тете тенӗ самахранах пулнӑ, ҫакӑ авал етемсем мӑшӑрсӑр пурӑннӑ саманара аҫасем хӑйсен ашшӗсене пӗлменнине пӗлтерет, ӑрури аслӑрах хӗрарӑмсене ҫамрӑксем акка йе аппа тесе ҫӗннӗ. ҫав вӑхӑтрах ҫуратса пӑхса ӳстерекен амӑна аҫасем уйрӑм сӑмахпа анне тесе ҫӗннӗ. Ҫапла тӗп авал пирӗн ҫамрӑксем амӑшне ҫеҫ пӗлнӗ пулмалла, ҫак саманара ӑрура хӗрарӑмра влаҫ ытларах пулнӑ

пулмалла. Çапла пирĕн авалхи ăрăвăн тăватă си пулнă: аҫапăҫа, вĕсен ашшĕпе пĕр тăван йе айаккарах тăван тантăшлă арçынсем, вĕсене пурне те пиҫҫесем тенĕ, вĕсен ашшĕсене асаттесем йе вĕсенпе тăван тантăшлă арçынсене ват йе мăн пиҫҫесем тенĕ, ăру пуçĕнҫе тăракан ватă ăру пуçлăхне мăнасатте тенĕ. Хĕрарăмсене те çав йĕркепех анне, асанне, мăнасанне, аппа, пысăк аппа (çак сăмахран ҫăваш улпутсен арăмĕсене пике тесе ҫĕнес йăла тухса кайнă), мăнакка, инке, ват инке тесе хисеплесе ҫĕннĕ. Хĕрарăмсене урăх ăрусенҫен иле пуçласан çамрăксем унти аслăрах тăвансене те хисеплесе кукка, мăнкукка, кукаçей, кукамай тесе ҫĕнес йăла тухса кайнă. Ăрусем пĕр çĕре вырăнаçса халăхпа пурăнма тытăнсан ҫăвашсем авалхи йăлапа пур аслăрах çынсене те хисеплесе пиҫҫе, акка, инке тесе ҫĕнес йăла йышăннă. Ăрулă пурăнăç йĕрки саланса мăшăрлă çемйепе пурăнас йĕрке тухсан та авалхи йăлапа ҫăвашсем пĕр тăван аҫасене те пĕр пĕрне хисеплесе пиҫҫе йе акка тесе ҫĕнме вĕрентнĕ. Çак йăла пирĕн хаҫиҫҫенех пыраҫ, вăл пирĕн халĕ те ăрулă пурăнăç йулашкийĕсем сирĕлсе пĕтейменнине пĕлтерет. Çапла пирĕн хаҫиҫҫенех аслăрах çынна хисеплесси, ватта хирĕç нихăçан та, нимĕн те каламалла марри пулса тăнă. Ĕлĕкрех ватăсем çамрăксене кирек мĕн тума та пултарнă: вĕлерме те, çаптарма та, çуртран пуçиле хăваласа кăларма та. Тĕнҫере ҫи хăрушă йапала аттеанне ылхавĕ шутланнă, ҫи хаклă йапала вырăнне аттеанне пиллĕхĕ хисепленнĕ. Ăрулă пурăнăç йĕркийĕн йулашкийĕсем ытларах хĕрарăм ҫуралăхра пурăннинҫен паллă. Тĕп авал патриархаллă йĕрке тĕреклепсе çитсен хĕрарăм выҫăх вырăнĕнҫе çеç хисепленнĕ: арçын вилсен хăш ҫух ун арăмне ирĕксĕр вĕлерсе унпа пĕрле пытарнă. Ҫуксенҫе, тĕрлĕ кĕлĕсенҫе хĕрарăм келĕ йĕркипе тытма пултарайман, кĕлтумалла пулсан та вăл арçын çĕлĕкне тăхăнса йе хулхушшине хĕстерсе кĕлтумалла пулнă. Пур килçутри пурлăх арçын сопствĕнăçĕ пулнă. Çавăнпа ĕлĕк хĕрарăма çĕре те пайа кўртмен. Кинсем хуҫашшĕне хаҫиҫҫенех çўçне йе урине кăтартма пултараймаççĕ, авалрах ҫăваш хĕрарăмĕсем çурпансем сырăнса тутарсем пек пиҫĕсене те хуплаçа çўренĕ. Çапла авал хĕрарăм ҫура вырăнĕнҫе пурăнни ытларах та пирĕн туй йĕркинҫен паллă. Кĕрў туйра саламатпа çўрени. хĕре ашшĕ çуртĕнҫен ирĕксĕр пек йĕрттерсе илсе кайни, хĕре вăрласа йе ирĕксĕр пусмăрласа каҫҫа илни, хĕршĕн хулăн тўлени—пурте авал хĕрарăм хисепре тăманнине пĕлтерет. Пирĕн самапара авалран йулнă ҫуралăхлă çемйе йĕркисем пĕтсе пыраççĕ. Халĕ хĕршĕн хулăн парасси вăл выҫăх вырăнĕнҫи тавар иккенне пĕлтермест, вăл ашшĕ çуртĕнҫе ĕçлесе усă парса пурăннине, çав хулăнпа вăл кайсан ашшĕ курас сийене сапланине çеç пĕлтерет. Унтан халĕ упăшка арăмĕпе питĕ усал пурăнсан, арăм пăрахса кайма пултараҫ, упăшкине уйрăлнă ҫух халăх ăна унăн пурлăхне уйăрса параҫ. Авал упăшкапа арăм

уйрӑлнӑ ӡух сурпан йе пир касӑкне шыв хӗрринӡе ҫурмашар туртса ҫурнӑ. Вырӑс тӗнӗ упӑшкапа арӑм уйрӑлассине питӧх мухтаман, вӑл вӗсене ӗмӗр уйрӑлми сыхӑпа сыхӑнса тӑраҫҫӗ тесе вӗретнӗ. Анӡах револӡутси пулнӑранпа ҫак йӗрке саланса кайрӗ: халӗ упӑшкапа арӑма нимӗнле хӑват та ирӗксӗр сыхса тӑма пултараймаст. Ҫавӑнпа малашне пирӗн ҫемйелӗ пурӑнӑҫ йӗрки пӗтӗмпех ирӗклӗ йӗрке пулмалла. Ҫак йӗркене пула пур авалхи ӑрулӑ пурӑнӑҫран йулнӑ йӑласем те пӗтсе, ҫӗнелсе пырӗҫ.

Ӡаваш йӑлипе кирек миҫе хут авланма та йурат. Анӡах пӗр вӑхӑтрах нумай арӑмпа пурӑнма йурамаст. Арӑм аӡа тумасан тепӗр ҫамрӑк арӑм туйанма йурат. Ҫапла пулсан ҫемйере асли вырӑнӗнӡе ватӑ арӑм хисепленет. Ӡанӡавашшен каӡӡа илме йурамаст: тӑван йӑмӑка йе аккана, атте йенӡен иксыпӑклӑ йе виҫсыпӑклӑ йӑмӑка йе аккана; анне йенӡен иксыпӑклӑ йе виҫсыпӑклӑ аккасене те, йӑмӑксене те илме йурат. Ӡанӡавашшен йӑлипех сыннӑн пиӡӡӗш йе шӑллӗ вилсен вӑл ун арӑмне илме пултарат, арӑмӗ вилсен унӑн тӑван аккӑшне йе йӑмӑкне илме пултарат. Икӗ пӗр тӑван сын пӗр тӑван хӗрсенех каӡӡа илме пултараймаҫҫӗ. Авал хӗрсене 25 ҫул иртсен ҫеҫ каӡӡа панӑ, каӡӡӑсене ҫамрӑкла 15 ҫултах авлантарнӑ; ҫӗр ирӗкрех ӡух килте ӗҫлекен кирлӗ пулнӑ, ҫавӑнпа хӗрсене памасӑр тытӑнса тӑнӑ, каӡӡӑсене хӑвартрах авлантарма тӑрӑшнӑ.

Аӡасене ӡавашшем наӡар пӑхса ӳстереҫҫӗ: наӡар ҫитереҫҫӗ, наӡар тумлантараҫҫӗ, тасамар тытаҫҫӗ, ҫавӑнпа пирӗн аӡасем ҫамрӑкла питӗ вилсе пӗтеҫҫӗ, ӳссен те импӗркке, сахал сывлӑхлӑ ӳсеҫҫӗ. Ӡаваш аӡисене апат тӗлӗшӗнӡен ытларах та ҫупа сӗт ҫитмеппи касса тӑрат. Унтан аӡасене амӑшӗсем асӑрхамасӑр ҫамрӑклах тӗрлӗ йерекен траххомӑ пек ӡир тавраш йертсе пӗтереҫҫӗ. Унтан тата ӡавашшем аӡасене ытла ҫамрӑклах ӗҫ ӗҫлеттерсе минкетеҫҫӗ.

Праҫниксемпе уйавсем. Ӡавашшен пур праҫниксемпе уйавӗсем те ҫӗр ӗҫӗпе сыхӑнса тӑраҫҫӗ, хӑшӗ ҫав праҫниксенӡен вӗсем ӡавашшем пӗр тӗлтен тепӗр тӗле куҫҫа ҫӳренӗ саманарах пулӑнса йулнине те пӗлтереҫҫӗ. Ӡавашшем вӑхӑта та ҫӗр ӗҫӗ йенӡен ҫеҫ асӑрхаса хисепленӗ: ҫапла пӗлӗтри уйӑх пӗтсе ҫӗнелнӗ тӑрӑх ҫулталӑкра 13 уйӑх хисепленӗ, вӗсен йаӡӗсем: ҫӗнӗ ҫулӑн малтанхи уйӑхӗ нарӑс, хаӡхи март уйӑхӗн вырӑнӗнӡе пулнӑ, ҫапла йата ӡавашшем перссен ҫӗнӗ ҫулӑн кирвайхи уйӑхӑн йатне йышӑннӑ. малалла ҫапла уйӑхсем шутланнӑ: пушӑ — вӑл уйсем йуртан пушаннине йе халӑх шывшур вӑхӑтӗнӡе ӗҫрен пушӑ тӑнине, унтан пӳлмесем те пушаннине пӗлтернӗ, ака — ҫурхи акана пӗлтернӗ, ҫу — ҫулла пулнине пӗлтернӗ, ҫум йе хӗр уйӑхӗ — ҫум ҫумлассине йе хӗрсене ҫураҫмаллине кӑтартнӑ, ҫӗртме — ҫӗртме сухалассине кӑтартнӑ. утӑ — утӑ ҫулассине пӗлтернӗ. ҫурла — тырӑ выраccине пӗлтернӗ. авӑн — авӑн ҫапас, вӑхӑта кӑтартса тӑнӑ, йупа — мал-

танхи уйăх тăхăррин̆е тыра пуҫтарнă йĕркене вилесене ĕҫкĕ-ҫикĕне асăнса вĕсен тăпри ҫине йупасем ҫапса лартнине пĕлтернĕ, ӳук—тырпулăшăн турăсене тавтуса ӳуксем тунине кăтартнă, сурхури йе мăн кăрлаҫ, унтан йулашки уйăх кĕҫĕн кăрлаҫ—ҫак уйăхра сурăхсем нутек тăваҫҫĕ, ҫакăншăн савăнса ҫак вăхăтра картара сурăх ури тытма унтăн ҫак тĕлĕшпе праҫник тумалли йăла тухса кайнă, кăрлаҫ тени тӳрксен ӳĕлхипе сулхăн, тĕксĕм тенине пĕлтерет. Ҫавăн пекех праҫниксемпе уйавсем те нумайĕшĕ ҫĕр ĕҫĕпе, унтан йал пурăнăҫĕпе ҫыхăнса тăраҫҫĕ.

Ҫĕнĕ ҫул каҫĕ ҫамрăксем анкартне кайса капансен̆ен шăлпа ыраш кĕлтисен̆ен пĕрер пĕрӳĕ улăм туртса кăлараҫҫĕ. туртса кăларнă пуҫах тырăлă пулсан вĕсен шухăшĕпе тыра лайăх пулаĭ. Унтан хире тухса ҫĕр ҫине выртса итлеҫҫĕ. ҫапла илтĕннĕ сасăсен̆ен малашне мĕн пулассине ӳухлаҫҫĕ. Хăш тĕлте ӳăвашшем ҫак каҫ ҫаврака шурă хăпартусем тăвар йамасăр пĕҫерсе ҫийеҫҫĕ, кайран йал тăрăх кантăксем патне пырса итлесе ҫӳреҫҫĕ, пӳртре мĕн калаҫнин̆ен хăйсен малашнехи телейне ӳухлаҫҫĕ. Унтан ҫĕнĕ ҫул каҫĕ аӳасене пăрҫа ăшаласа ҫитерес йăла пур—вăл ҫитес ҫулталăкра тутă пулассине ĕмĕтленнине пĕлтерет. Унтан ҫĕнĕ ҫул ернин̆е каӳӳăсемпе хĕрсем ҫĕрĕ урлă малашнехи телейе сăнамалла выӳаҫҫĕ, тата арҫын аӳапăӳа вырăссен̆ен йышăннă йăлапа шуйттан вăйилле выӳаҫҫĕ: тĕрлĕ упалла, кашкăрла есрейлĕле тумланса ҫĕрле йал тăрăх ҫӳреҫҫĕ. Ҫак вăйăсем вырăс праҫникĕ крешӳениӳӳен пыраĭ. Малалла авалран питĕ ӳаплă кĕшнерни праҫникĕ тапранса кайаĭ, вăл ҫитĕнеймен кĕҫĕнрех хĕрсемпе каӳӳăсен праҫникĕ пулаĭ, ҫавăнпа та ăна кĕҫĕнсен ерни тенĕ. ҫак праҫнике ҫамрăксем ҫеҫ тăваҫҫĕ: праҫник питĕ ӳаплă, йĕркелĕ пулаĭ, ҫамрăксем сăра ĕҫеҫҫĕ, йурлаҫҫĕ, ташлаҫҫĕ, уйрăм кĕшнерни такмакĕсем калаҫҫĕ, тĕрлĕ вăйăсем выӳаҫҫĕ. Ҫапла кĕшнерни ҫитĕнеймен ҫамрăксен праҫникĕ пулнă. вăл пĕр ерне пынă. Малалла ăшă йенне кайа пуҫласан авалхи праҫник ҫăварни тапранса кайнă. Ҫак праҫник авал ĕнесем пăрулана, сĕт, ҫу нумай пана вăхăтра пулнă, унтан вăл сивĕ хĕлпе ăшă ҫу тавлашнине, ҫу ҫĕнтерме тапратнине пĕлтернĕ, ҫавăнпа ҫăварнири кĕҫнерни куна ăшăпа сивĕ тавлашнă праҫник теҫҫĕ. Ҫак праҫникре ватăсем хăнана ĕҫкĕҫикĕ пĕр пĕрин патне ҫӳреҫҫĕ, ҫулă икерӳĕсем ҫийеҫҫĕ. ҫамрăксем тусем ҫин̆ен йарăнаҫҫĕ, лаша кӳлсе уҫăлса ҫӳреҫҫĕ. Малалла пушăра вĕсен кайăксем ăшă йен̆ен кайалла килме тапратсан кайăк праҫникĕ пулаĭ. Малалла аслă праҫник мункун пулаĭ, ҫак праҫнике ӳăвашшем вырăс тĕнне йышăнин̆енех йышăннă. Мункун ерне тесен кăӳăкă праҫникĕ пулаĭ, ун уммĕн шăмат кун мăнкалăм праҫникĕ пулаĭ, мункун уммĕн йун кун йункаламĕ пулаĭ, кĕҫнерни кун ӳăнӳăвашшем ваттисене асăнаҫҫĕ. ерне кунне ҫурта кунĕ теҫҫĕ (ваттисене асăнса йулашкин̆ен ҫурта ҫутса пиллешнине пĕлтерет, ҫурта ҫутас йăла ӳăвашшен

вырăс тĕнне йышăнитџенех пулнă), мункун ыран тенĕ џух шăмат кун вирĕм пулат: çамрăксем пилеш çаппипе хапхасене, пўртсене шаккаса çўресе усал сывлăшшене хăвалаççĕ. Мункуна џăвашшем тата кунџџир теççĕ. Мункунăн тепĕр кунĕ тĕне кĕнĕ џăвашшем ваттисене асăнаççĕ. Халĕ çак праçник вырăс тĕнĕн йăлисемпе пăтранса пĕтнĕ, авал вăл пĕр ерне пынă, ăна калăм ерни тенĕ. Çак праçникре авал џăвашшем сысна ашĕ çимен, кайарахпа вырăс тĕнне йышăнсан вĕсем сысна ашне çименни çинџен çапла каланă: Христос вилсен ăна çĕре пытарнă, ун шăтăкне сысна џаваласа кăларнă, çавăнпа ун ашне 40 кун тăршшĕпе çиме йурамаст тенĕ. Хăш ăслăлăхçăсем џăвашшем мункун йĕркине малтан йеврейсенџен йышăннă пулĕ теççĕ. Шывшур иртсен, çĕр типсен акана тухас уммĕн џăвашшем акатуй праçникĕ тунă, тутарсем, унтан хăш тĕлте џăвашшем те ăна сапантуй теççĕ (тутарла сапан акапуçне пĕлтерет). Çак праçниксем ĕлĕк питĕ џаплă пулнă: ăна йал тулашĕнџе çерем çинџе пĕтĕм халăх темиçе йалпа пĕрле пухăнса тунă; акатуйĕнџе канса тăнă лашасене тавлаштарса џуптарнă, етемсем тавлашша кĕрешнĕ, малта иртсе џупнă лашасене, унтан кĕрешше паттăра тухпă çынсене сурпансем, тутăрсем, пиçиххисем парнелесе панă. Унтан ака пĕтсен џăнтан тырă ĕçне тапратиџџен нумай џаплă праçниксем пулнă: вилнисене асăннă кун çимĕк, çулçă праçникĕ, çинçе ерни, çимĕкрен пуçласа халăхпа тăвакан џўксем тапранса кайнă, унтан çамрăксен џаплă уйавсем тапранса кайнă, çав уйавсем вăрманта кукку авăтма пăрахиџџен пынă, çак вăхăтрах џаплă туйсем пулнă. Çу варринџе аслатиллĕ çăмăрсем çунă вăхăтра аслатийе хисеплесе праçник тунă, ăна халĕ çĕлен праçникĕ теççĕ, çав праçникре ĭыха пусса џўк тунă. Хĕрўлĕ ĕç вăхăтĕнџе џăвашшем праçник тавраш пулман, сат çимĕçĕсем ĕлкĕрсен çеç çурла уйăхĕнџе улма праçникĕсем туса илнĕ. Тырăсене пуçтарса тирпейлесен йупа уйăхĕнџе ваттисене асăнмалли, унтан тырăпулăшăн турăсене тавтумалли кĕрхи сăрасем тапраннă. Вĕсем иртнĕпе питĕ џаплă хĕрсăрисем пулнă: çав хĕрсăрисем туйсем пекех џаплă пулнă, ăна хĕрсем çеç тунă, унта хĕрсем çеç хуçа пулнă. Çав хĕрсăрипе кĕшнерни тăвас йĕркесем џăвашшен хĕрарăмĕсем нумай авалран џуралăхран хăтăлма тытăннине пĕлтерет. Ĕççем пĕтĕмпех майлашшан, çуна çулĕ ўксен аслă ĕçкĕçикĕсем тапраннă: џăвашшем хĕрĕхшер витре сăра туса, вăкăрсем пусса пур таврари хăнасене џĕнсе силленĕ, çав ĕçкĕçикĕсем ернешер пынă, тĕрлĕ йалта вĕсем тĕрлĕ вăхăтра пулнă: çапла ватăсем ĕçкĕçикĕпе силленнĕ вăхăтра çамрăксем улахсем туса йăпаннă. Шартлама сивĕсем тапрансан, сурăхсем пăрулама тапратсан сурхури праçникĕ пулнă, вăл ерне кун тытăннă. Çак праçникре аџасем урамсем тăрăх, килсене кĕрсе выџăх йышлă пултăр тесе сухăрса çўренĕ, сĕрле картасенџе сурхури тытнă. уйсене тухса выџăх йышлăлантăр тесе кĕлтунă.

Çапла пирĕн авалран йулнă пур праçниксемпе уйавсем те йал пурăнаçĕпе, ытларах та çĕр ĕçепе çыхăнса тăраççĕ. Çав праçниксенђен нумайĕшĕ йулашки иртнĕ ĕмĕрте вырăс праçникĕсемпе пăтранса пĕтнĕ.

Ерне праçникĕ ђăвашшен ернекун пулнă: çав çĕнĕ ерне пуçламăшĕн кунĕ кăнтăрлађђен кăмака хутса тĕтĕм кăларма йураман, нимĕн ĕçлеме те йураман. Ернекуна уйавлас йалана ђăвашшем арапсенђен йышăннă. Вырсарни куна праçник вырăнне йышăнсан та ђăвашшем халĕ ăна питех хисеплемеççĕ—вăл кун ĕçлеме йурать, ваттисен шухăшĕпе вырсарни кун тапратнă ĕç ăнарах та пырать Çак шухăш авал ђăвашшене вырăс тĕнне пусмăрласа йышăнтарнă вăхăтран йулнă пулмалла: вăл халăх çав саманара вырăс праçникĕсемпе вĕсен йăлисене йуратманнине пĕлтерет.

Калама та кирлĕ мар пурăнăç улăшăннăçем уйавсемпе праçниксем те улăшăнса пыраççĕ. Малта асăннă праçниксем кин çул тăршшĕпе улăшăнмасăр тăнă—мĕншĕн тесен пин çул тăршшĕпе халăх пурăнăçĕ те нумайах улăшăнман. Малашне халăх култтурланса пынипе, хула пурăнăçĕпе паллашнипе, тĕнђе пурăнаçĕпе паллашнипе—авалхи уйавсемпе праçниксем пĕтсе пырĕç, вĕсен вырăнне халăх уйавлă, ĕçрен пушă кунсене пухусем туса, кĕнекесем вуласа, спектаклђсем курса, концертсем итлесе, хăй кăмăлĕпе тĕрлĕ вăйăсем туса иртерĕ.

Тĕн, кулђт, ĕненӳсем.

Тĕп авал ђăвашшем тĕрлĕ йапаласене: йăвăççене, ђулсене, çăлсене, çырмасене, тĕрлĕ тĕмесене пуççапса пурăннă. Вĕсен шухăшĕпе çав ђунсăр йапаласен те ђун пулнă, вĕсен ăшĕнђе етеме йе ырă, йе усал тума пултаракан сывлăшшем пурăннă пулать. Çапла ђунсăр йапаласене ђунлă вырăнне хунине анимисăм теççĕ, етемсем турăсен вырăнне хисеплесе пуççапакан йапаласене хветтишшем теççĕ. Çак хветтишисăм йулашкийĕсем пирĕн халĕ те пур: киремет йăвăçĕсене, тĕмисене, çырмисене, кӳлĕсене хисеплесе пуççапни, çавăн пекех тĕрлĕ ырăсен вырăнĕсене пуççапни—вăл авал çав йăвăççене, çырмасене, тĕмесене, кӳлсене турăсен вырăнне хисепленнине пĕлтерет. Киреметсемпе ырăсене пуççапса пурăнакан ђăвашшен уйрăм киремет йе ырă йатлă пĕр турă йе пĕр сывлăш пулман, вĕсен шухăшĕпе вĕсем хисеплесе пуççапакан кашни йăвăç, çырма ытти йапала та уйрăм киремет йе уйрăм ырă пулнă, çав йăвăççен ăшĕнђе, çырмасенђе, тĕмесем çинђе вĕсен шухăшĕпе уйрăм хăватлă сывлăшшем пурăннă. Çак саманара етем пуринђен ытла çĕршывпа çутçанталăкăп аслă хăваџĕсене хисеплесе, пуççапса тăнă: аслă шывсене сĕм вăрмансене, çиле, аслатийе, хĕвеле ытти хăватлă йапаласене те. Çав йапаласен хăваџĕ пĕр пек пулман, вĕсен етеме кӳрекен сийенĕ

йе усси те пĕр пек пулман. Çавăнпа етем те вĕсене пĕр пек хисеплемен: хăшне вĕсенҫен вăл асларăха хунă, хăшне кĕçĕнрех турăсен вырăнне хисепленĕ.

Пыра киле етем çемйе йĕркипе, ăру йĕркипе, унтан халăхпа пĕрлешше пурăнма тытăнсан вăл турăсем те çав йĕркепех пурăнаççĕ тесе шухăшлама тытăннă. Çапла вăл турăсен хушшинҫе те ҫи аслă вырăнта хисепленекен ватăсем пур, вĕсен ашшĕамăшĕ, аҫипăҫи пур тесе шухăшланă. Çакăн пек ĕнелĕвĕн йĕркине ăслалăх антропоморхвисăм тет, вăл турăсене етем тĕсĕ йе сăнпиҫĕ парса вĕсене пуççапса тăннине пĕлтерет. Çĕр çинҫе те, çутçанталăкра та етем тĕслĕ турăсем çук, çавăнпа етем вĕсен кĕлеткисене йăвăçран, ҫулран, металлран туса вĕсене пуççапса, кĕлтуса, парне кӳрсе пурăнма тапратаť. Çапла тура кĕлеткисене итăлсене пуççапас йĕрке тухса кайаť. Авалхи ҫаваш тĕнĕн антропоморхвисăм йĕрки ытла виттĕр палăрса тăраť, анҫах итăлсене пуççапас йĕрке ҫавашшен хушшинҫе сахал палăраť. Çапах та авал ҫавашшем те киреметсене йăвăçран çын кĕлетки туса йе пиртен пукăнесем çĕлесе пуççапса пурăнкаланă, унтан йĕрĕхсене хăма татăкĕ çине ĕне пуçĕн кĕлеткине туса, пилеш çулçнне таса пирпе, унтан хурăн хуппине ҫĕркесе, унăн çумне тăхлан татăкĕсем çакса пуççапса хисеплесе пурăннă. Тĕн йĕрки пирĕн авалхи крексемпе латтинсен тĕнĕ йеверлĕ: пирĕн те турăсем нумай пулнă, хăшĕ вĕсенҫен аслăрах, хăшĕ кĕçĕнрех пулнă, вĕсем авланнă, аҫасем çуратнă.

Пыра киле халăхсем кулҫттурланаçем ытларах та гата халăхсем пĕр патшасене пăхăнса апсолҫутлă патшалăх йĕркипе пурăнма тапратсан пĕр турра хисеплесе пуççапма тапратнă, çапла авалхи крексемех пур хăватлă туррисенҫен хăватлă вăй вырăнне пур тĕнҫере пулас йапалана малтан çырса хуракан суťпана хисепленĕ, ăна Мойрă тенĕ. Çапла крексем христианлă ерăҫҫен нумай пин çул малтан нумайтурăлăх вырăнне пĕртурăлăх йĕркине йышăнма тытăннă. Пĕртурăлăх йĕрки нутейсен, мăхамаťансен унтан христиансен виттĕртерех паллă, анҫах калиҫҫенех пур тĕнсем те пĕр турра çеç хисеплемеççĕ: пĕр турăпа пĕрле тĕрлĕ анкĕлсене, светтуйсене те пулин хисеплеççĕ. Çапла халиҫҫенех тĕнҫере нумайтурăлăха пĕртурăлăхпа пăтратакан тĕнсем çеç пур. Авалхи ҫаваш тĕнĕ те пĕр турра хисеплес йевне сулăнни паллă: ҫавашшен те креқсен пекех пуринҫен хăватлă вăй пулнă — ăна Çӳлти Кепе тенĕ, çак вăй кама мĕн çырнине, çак вăйа пула кама мĕн пӳрнине никам та, нимĕнле хăват та улăштарма пултараймаť, тенĕ, çапла Çӳлти Кепе пур турăсенҫен те аслăрах вырăнта тăни паллă. Çак Çӳлти Кепене хисеплени ҫавашшем те пĕр турра хисеплекен тĕн йĕркин пусми çине тĕп авалах хăйсемех пуснине кăтартаť. Нумайĕшĕ авалхи ҫавашшен тĕн йĕркине, халҫхи тĕне кĕмен ҫавашшен тĕн йĕркине ытла хурлаççĕ. Вĕсен сăмахĕпе—авалхи ҫавашшем киреметсемпе йĕрĕх-

сене çеç пĕлсе вĕсене пуççапса пуранна. Анҫах çак сăмах тĕрĕс мар: авалхи ҫăвашшем тĕрлĕ йапаласене çеç пуççапса пуранман.

Малта асăннă Çӳлти Кепе ҫăвашшен шухăшĕпе пĕлĕт ҫинҫе пуранна, çĕр çинҫе те, çĕр айĕнҫе те пур пулас йапала та ун ирекĕнҫен килнĕ. Çак Çӳлти Кепене ҫăвашшем куçа курăнми сывлăш вырăнне хисепленĕ. Çӳлти Кепен ун ирĕкне туса тăракан сывлăшшем Пӳлĕхпе Пихампар хисепленнĕ. Пӳлĕх етеме пурăнаçра мĕн пӳрнине çырса тăракан, етем çуралсан ăна ҫун паракан, унтан ăна йе телей йе телейсĕрлĕх пӳрекен сывлăш вырăнĕнҫе хисепленнĕ. Унтан çак сывлăш çĕр çинҫе етемсемпе мĕн пулнине Çӳлти Кепене пĕлтерсе тăракан сывлăш вырăнĕнҫе хисепленнĕ. Çӳлти Кепен тепĕр хыпарçи Пихампар пулвă: вăл етемсене вут хăватне туйантаракан, унтан вылҫăха усал кайăкран сыхлакан сывлăш вырăнĕнҫе хисепленнĕ. Çак Çӳлти Кепен хыпарçине ҫăваш сăра лартма вут ҫĕртес уммĕн уйрăм кĕлĕпе асăнна. Çак Çӳлти Кепене пуççапса хисеплес йăлана ҫăвашшем арапсенҫен йышăннă, çав сăмах арапсен тĕн тĕлĕшĕнҫен хисеплĕ Каапа хула йатĕнҫен пулнă теççĕ. Унтан ҫăвашшен тĕрлĕ турăсем пулнă, çав турăсенҫен тĕнҫене тăвакан, пĕлĕт çинҫи ҫи аслă турă Çӳлти Турă пулнă, ăна тата Мăн Турă йе Турă-Тала тенĕ. Çак турă ҫăвашшен ҫи аслă хисепре тăнă: ăна хисеплесе ҫăвашшем халăхпа уҫуксем тунă, унтан килсенҫе те уйрăм çемйесемпе йе ăрусемпе ҫӳксем тунă. уҫуксене çуркунне ака уммĕн йе хытсуха уммĕн тунă, уҫуксенҫе кăвак лаша пуснă. ытти вылҫăхҫĕрлĕх те пуснă. Килти ҫӳксене ҫăвашшем тырпул пуххсан хĕл пуçламĕшĕнҫе тунă, çав ҫӳксенҫе Мăн Турă йаҫĕпе ҫыхасем пуснă.

Мăн Тура хыççăн иккĕмĕш вырăнта кĕлĕсенҫе Çĕрти Патша хисеплĕннĕ. Çак турă çĕр çинҫе ҫи хăватлă ырă турă вырăнĕнҫе хисепленнĕ. Çак турра ҫăвашшем кĕрхи ҫӳк сăрисенҫе асăнна. Унтан ҫăвашшен тата та нумай турăсем пулнă, вĕсĕнҫен паллăраххисем: Сутă Тĕвҫе—ăшăна çутă паракан турă; Ҫун Çуратан Турă; Хĕвел, унăн арăмĕ, аҫисем. хĕвел хăлхисемпе урисем те уйрăм хăватлă сывлăшшен вăрăнĕнҫе хисепленнĕ; Уйăх Турă, унăн арăмĕ, аҫисем; Етем Турă—çисĕмпе аслати турри; Ырă Турă, Перекет Турă, Ĕмĕре Упран Турă—çак турăсем етемсене мăпăрланса пурăнма пулăшаççĕ, унтан пур çимĕçпе пурлăха вĕсем параççĕ тенĕ; Çӳрен Ырă—çул çинҫе асап куракансене пулăшакан турă; Çĕр Ашшĕпе Çĕр Амăшшĕ; Сурăх Ашшĕ—кĕтӳсене, вылҫăхҫĕрлĕхе сыхласа ĕрҫетекен турă; Çĕлен—сывлăшра вĕççе çӳрекен турă—унăн ырлăхĕпе аҫапăҫа ĕрҫет тенĕ; Ĕç Турă—ĕçре пулăшакан хăват: Килти Турă; Картари Турă; Шыври Турă йе Вутăш; Вăрман Турă; Хирти Турă; Çил Турă; çак турăн Амăшĕ, унтан çунаҫĕсем хисепленнĕ, çил çунаҫĕсене сăра туса, пăтă пĕçерсе, хур пусса ҫӳкленĕ; Вут Турă—çак турра вуҫах-

ра вут çунтарса, вуђах умне ђаркуçланса кӗлтунӑ, çак турӑ йађӗпе хур йе кӑвакал пуснӑ; тепӗр вуђах туррине Хӗртсурт тенӗ, çак турра пӳрте упраса тӑракан сывлӑш вырӑнне хисепленӗ, ун йађӗпе хӗртсурт пӑтти пӗçерсе ђӳкленӗ, çав ђӳке пӳртре кӑмака лартсан тунӑ; Хӑрпан Турӑ—çак сывлӑш ђӳкленӗ ђух хывнӑ парнесене турӑсем умне л е ç ç е тӑраћ тенӗ; Йуларан Паларан—кӗçӗн турӑ, вӑл ђӳксенђе асӑнса çинӗ йулашкисене пухса тирпейлесе çинӗ тенӗ, çак турӑн арӑмӗ, унтан ађисем пур тенӗ. Ђавашшен тата та турӑсем пулнӑ, анђах вӗсем çинђен епӗр халӗ тӗплӗрен каласа пама пултараймастпӑр—вӗсене халăх хăй те манса пӗтнӗ, ӗлӗкрен кӗнекеçӗсем те вӗсен çинђен çырса хӑварман.

Турӑсенђен пуçне ђӑвашшем тӗрлӗ сывлӑшшене хисеплесе пуççапса пурӑннӑ. Çапла христиансен анкелӗсен вырӑнӗнђе ђӑвашшен пирӗштисем хисепленнӗ. Пирӗштисем Мӑн Турӑн хыпарçисем вырӑнӗнђе хисепленнӗ, вӗсем етемпӗн ырӑ сывлӑшшен вырӑнсенђе ђӳксем тунӑ.

Çак ырӑ сывлӑшшенђен пуçне ђавашшем питӗ нумай етемсене сийен кӳме пултаракан сывлӑшшене пуççапса хисеплесе пурӑннӑ. Çав сывлӑшшенђен ђи паллӑ вырӑнта ырӑсем йе киреметсем тӑна. Авал кашни йалӑн хӑйне уйрӑм киреметсем йе ырӑсем пулнӑ. Киреметсемпе ырӑсем виçӗ тӗслӗ пулнӑ: аслӑ, вӑтам, кӗçӗн киреметсем йе ырӑсем. Çак сывлӑшшем вӑрмансенђе, кӳлӗсенђе, çырмасенђе, тӗмесенђе пурӑнаççӗ тенӗ. Вӗсене етем йураймасан, йепле те пулсан çилентерсен вӗсем çав етеме питӗ нумай сийен кӳме пултараççӗ тенӗ, çавӑнпа ђӑвашшем çав киреметсенђен питӗ хӑраса пурӑннӑ, вӗсене йурашшӑн вӗсене ђӳк туса хисеплесе, укçасем пӑрахса, çимӗç хывса пурӑннӑ. XVIII-мӗш ӗмӗрхи кӗнекеçӗсем кӑтартнӑ тӑрӑх—авал кашни ђӑваш йалӗ 5-6 киремете пуççапса пурӑннӑ, унтан кашни ђӑваш тата кӳршӗ йалсен киремеђӗсене пуççапса пурӑннӑ, çапла кашни çыннӑн 12 киреметрен кайа пулмалла пулман. Пур киреметсене асӑнса пуççапакан вырӑнсенђе те аслӑ Мамале йатлӑ киремете асӑнмалла пулнӑ, ӑна хисеплесе парне вырӑнне укçа хывмалла пулнӑ.

Киреметсенђен пуçне хӑрушӑ усал, анђах питех хӑватлӑ мар турӑсен вырӑнӗнђе çапла сывлӑшшем хисепленнӗ: есрейлӗ—етемпе выђӑхӑн ђунне илекен сывлӑш, ийе-мӑшкӑлçӑ кӗçӗн шуйттан, вӑл кӑмака айӗнђе, унтан мунђасенђе пурӑнаћ тенӗ, вӑл иртӗнсе етемсен алурине сиктерме йуратаћ, унтан хурт пахђисен хуçисемпе усламçӑсене пулӑшу параћ тенӗ; арçури—вӑрманта йалан ашкӑнакан сывлӑш, вӑл йала пыма йӑтӑсенђен хӑраћ тенӗ, вӑрманпа иртсе пыракан етемӗн ӳтпӳ тунисене хытарма пултараћ тенӗ.

Йулашкинђен ђи кӗçӗн сывлӑшшен вырӑнӗнђе йӗрӗхсем хисепленнӗ. Ђӑвашшен шухӑшӗпе йӗрӗхсем виçӗ тӗслӗ пулнӑ: хайар, йӑваш, тӳрӗ йӗрӗхсем. Йӗрӗхсем уйрӑм килçуртсен сывлӑшшен вырӑнӗнђе хисепленнӗ. Çак йӗрӗхсем çурт

хуҫи вёсен кăмăлне тупсан ăна тĕрлĕ ĕҫре пулăшма пултараҫҫĕ тенĕ, ҫав йĕрĕхсемех кӳрпĕсене, ытти йут ҫынсене хуҫи йăлăнсан сийен тума пултараҫҫĕ тенĕ. Йĕрĕхсем пурҫăн ҫине тирнĕ тăхлан пĕрҗи ăшăнҗе пурăнаҫҫĕ тенĕ; ҫав пурҫăн вĕҫне пилеш ҫӳҫи ҫакнă, унтан ăна таса пирпе җĕркесе, хурăн хуппипе ҫавăрса ҫыхса, тĕрлĕ тăхлан татăкĕсем ҫакса ҫӳлĕ ҫĕре вырăнаҫтарса хунă. Йĕрĕх вырăнĕ таса вырăн пулмалла пулнă; унта тирĕс тавраш пулмалла пулман, выҗăх перĕнкелесе ҫӳреме йураман, йĕрĕх тавраш ĕнҗе ҫынсене те шавлама йе вăрҫăшма йурамасӑ тенĕ. Нумайĕшĕнҗе киреметсемпе йĕрĕхсен вырăнĕнҗе вилнĕ йумҫăсен, унтан ăрури паллă ватă ҫынсен җунĕсем хисепленнĕ.

Ҫапла авалхи җăвашшен тĕнĕ ҫинҗен ҫакна калас пулаӑ: җăвашшем нумай турăсене хисепленĕ, ҫав турăсем етемсем йевĕрлĕ пурăнаҫҫĕ тенĕ. турăсен вырăнĕнҗе ҫутҫанталăк хăваҗĕсем хисепленнĕ, унтан җăвашшен шухăшĕпе ҫав турăсем пуринҗен ытла ҫĕр ĕҫлеме, тырпул тума, выҗăх усрама, килҫуртпа пурăнма пулăшаҫҫĕ тенĕ. унтан җăвашшем турăсенҗен пуҫне тĕрлĕ усал йе ырă сывлăшшене хисепленĕ; итăлсене пуҫапас йĕрке җăвашшен вăйлах пулман, анҗах вилнĕ ҫынсен җунĕсене турăсен йе аслă сывлăшшен вырăнне хисеплес йĕрке вăйлă пулнă, унтан җăвашшем хăйсемех тĕнҗере тĕссĕр, питсĕр пур турăсенҗен те аслă хăвата Ҫӳлти Кепене хисеплеме тытăнни вĕсем пĕртурăлăх йĕрки патне сывăхарнине пĕлтерет. Унтан авалранах җăвашшем ҫылăхпа тамăк ҫинҗен пĕлнĕ. Тĕн йĕркине җăвашшем питĕ нумай авалранпа нумайĕшне ҫемит халăхĕсенҗен йеврейсемпе арапсенҗен, унтан перссенҗен йышăннă, ăна пире җĕлхе виттĕр кăтартса тăраӑ: ҫапла тĕн йĕркинҗе асăнакан сăмахсем; Кепĕ, Тала, пихампар, пирешти. киремет, йĕрĕх, есрейлĕ, мамале, пĕсмĕлле, хăйамат, тамăк—пурте җăваш җĕлхине ҫемит җĕлхинҗен куҫнă теҫҫĕ. Унтан җăвашшен турă тĕнĕ сăмах авалхи скантинавсен тор тенĕ сăмах йевĕрлĕ, анҗах ăслăлăхҫăсем каланипе турă сăмах тӳрксен амаҗĕлхинҗен пулнă сăмах тымарĕнҗен те пулма пултарнă: ҫав сăмах пĕлĕте унта пурăнакан ҫӳлти хăвата пĕлтернĕ

Авалхи тĕттĕм җăваш шухăшĕпе унăн малта асăннă пур туррисем те етем кăмăллă пулнă: ҫавăнпа вĕсем ҫилленсен сийен тума, вĕсен кăмăлне тупсан ырă тума пултараҫҫĕ тенĕ. Етем пĕр пĕрин кăмăлне ĕҫкĕҫикĕпе тупаӑ, ҫапла майпах авалхи җăвашшем турăсен кăмăлне тупма тăрăшнă. Ҫак йĕркерен турăсене тĕрлĕ парне парас йăла тухса кайнă. Авалхи етем шухăшĕпе пур пурăнăҫри усал та турăсемпе сывлăшшем ҫиленнинҗен килнĕ, ҫавăнпа вăл йаланах вĕсемпе килĕшӳлĕ пурăнма тытăннă. Ҫавăнпа авалхи җăваш кашни ҫиме лармассерен—„турă, сана та пай пултăр“ тесе асăнса ларнă, унăн йаҗĕпе пĕр татăк ҫăкăрне, йе пĕр кашăк шӳрпине, йе пăттине айакалла ывăтнă. Парне кӳрес йăла, уҗуксен, җӳксен,

ђӳклемесен таврашӗнђе питӗ виттӗр палӑрса тӑраҭ. Ҫак йаласене тунӑ ђух ђӑвашшем хӑйсен туррисене ҫапла парнесем панӑ: лапа, вӑкӑр, сурӑх, така, хур, кӑвакал, ђӑхӑ, автан, улма, ҫӑмарта, сӗт, ҫу, ђӑкӑт, пыл, ҫӑвӑх, тӑвар, тӗрлӗ пӗҫернӗ ҫимӗҫҫем, сӑра, ерех. Унтан турӑсен кӑмӑлне тупас тесе хисеплӗ вырӑнсене вӗсен йатне укҫа леҫе леҫе пӑрахнӑ, пир тӑрӑхӗсем леҫҫе пӑрахнӑ, вӗсене хисеплесе ҫу ҫунтарнӑ, ҫурта ҫутнӑ. Тӗп авалах ђӑвашшем хӑйсен туррисене сынсене пусса та парнеленӗ пулмалла, вӑл тӗрлӗ йӗнђен ђухланнинђен паллӑ: ађа ђирлесен ђӳкре сырлахтарма ђӑвашшем ун кӗлеткине ђустаран туса парне кӳнӗ, арман лартнӑ ђух нумайах та авал мар ђӑвашшем Шыври Туррӑн кӑмӑлне тупас тесе арман айне катђа кайман хӗр тытса йанӑ, унтан халлапсенђе нумайӗшӗнђе сынна сын ҫипи ҫинђен каланаҭ. Пыра киле халӑх кулътурлансан етемсем пӗрне пӗри ҫиме пӑрахсан, ҫак ирсӗр йалана та пӑрахнӑ, сын вырӑнне выђӑха парнелеме тапратнӑ. ҫакӑ пусас выђӑха „ађана хӑвар“ тесе ӑсатнинђен паллӑ. Йулашки ӗмӗрсенђе выђӑх сахаллансан ђӑвашшем выђӑх вырӑнне унӑн кӗлеткисене ђустаран йе тӑмран туса та пулин парнелеме тапратнӑ.

Ђи аслӑ парнесене ђӑвашшем уђуксенђе (уй ђӳкӗсем) панӑ. Ҫак парнекӳрӗве вӗсем халӑхпа тунӑ. Кашни йал ҫултаӑкра икӗ уђук тумасӑр йулман: пӗрне ҫурхи ака, теприне ҫӗртме уммӗн тунӑ. Ҫак уђуксене ђӑвашшем турӑсенђен тырӑ лайӑх пултӑр тесе тунӑ. Унтан вӗсем халӑхшӑн тӗрлӗ хӑрушӑ ӗҫҫем: уйар ҫанталӑк, выђӑхсем мурпа ытла ӳкме йе етемсем йерекен ђирпе нумайӑн вилме тапрансан уйрӑм уђуксем тунӑ. Тата темиҫе йалпа пӗрлешше тӑвакан ђаплӑ ӳђуксем пулнӑ, ҫав уђуксена миҫе йал пӗрлешше тунӑ—ҫавӑн ђухлӑ ҫул урлӑ пӗрре ҫеҫ тунӑ. Ҫавӑн пек йалсен авал ҫӗршыв пӗрле пулнӑ, вӗсем пӗр хуҫа, мӑрса, тӑрӑн, турхан аллинђе пурӑннӑ, уђуксене те ҫав авалхи ђаплӑ хуҫасене асӑнса тунӑ. Халӑхпа тӑвакан парнекӳрӳсене уйрӑм аслӑ киреметсен вырӑнӗсенђе тунӑ. Ҫав киреметсен вырӑнӗсем йал тулашӗнђе уйра пулнӑ, вӗсене уйрӑм хӳмепе карталанӑ, уђук картишӗ тӑваткӑл пулнӑ, унӑн тӑршшӗ те сарлакӑшӗ те 50-60 хӑлаҫ пулнӑ. Уђук картишӗн виҫӗ хапха пулнӑ: ҫурҫӗр йенђи хапхаран уђук тунӑ ђух шыв турттарнӑ, хӗвеланӑҫри хапхапа сынсем ҫӳренӗ, хӗвелтухӑҫри хапха виттӗр парне вырӑнне пусмалли ђӗрђунсене илсе кӗнӗ. Карташ варринђе парнесене каскаласа тыткалама уйрӑм сӗтел пулнӑ, сӗтел патӗнђе икӗ йупа пулнӑ, вӗсен ҫине хунӑ урлӑш ҫине ҫимӗҫ пӗҫермелли хурансене ҫакнӑ, сӗтел ҫӳлтен уйрӑм крышшӑпа витӗнсе тӑнӑ; унтан уђук картишӗн ӑшӗнђе уйрӑм хӳшӗ пулнӑ, унӑн алӑкӗ хӗвелтухӑҫнелле тухнӑ, ҫав хӳшӗре сӗтелҫиттисемпе витӗннӗ сӗтелсем ларнӑ, ҫав сӗтелсем ҫинђе уђук ҫимӗҫӗсене ҫинӗ, ҫинӗ ђух ларса ҫимен, ура ҫинђе ҫинӗ. Уђука халӑх мунђа кӗрсе, таса тӑхӑнса пынӑ. Уђук тунӑ ђух выђӑх пусма,

кӗлтума, пур авалран йулнӑ парнекӳрӳ йӑлисене тӗрӗслеме уйрӑм пӗр ватӑ ҫынна суйланӑ, авалрах уҫуксен пуҫӗнҫе уйрӑм ҫаплӑ йумҫӑсем тӑнӑ. Уҫукра пусмалли выҫӑхсене халӑхна уҫукҫен темиҫе ерне малтан суйласа хунӑ, вӗсене лайӑх ҫитерне, ҫулман ҫарансенҫе, тырӑ пуссисенҫе ҫӳреме те ҫарман. Парнене пусас уммӗн ун ҫине шыв йанӑ вӑл ҫӗтӗресе силленсен турӑсене йурахлӑ пулҫӗ тесе шухӑшланӑ. Парнерен пусас уммӗн каҫару ыйтнӑ, унтан ӑна турӑсене халӑх асапӗ ҫинҫен каласа пама суннӑ. Хӑш ӑслӑлӑхҫӑсем каланине, ҫак парнерен каҫару ыйтни авал етемсем пӗрне пӗри пусса турӑсене парнеленине пӗлтерет: халӑх ӗҫӗшӗн пуҫне хуракан ҫынтан каҫару ыйтни килӗшӳллӗ пулнӑ, мӗншӗн тесен ӑна айӑпшӑн пусман (авал ытларах тыткӑна лекнӗ мӗскӗнсене пуснӑ); ӑслӑлӑхҫӑсен шухӑшӗпе кайарах турӑсене ҫынпа парне пама пӑрахсан, ҫынсен вырӑнне выҫӑхсене пусма тапратсан ҫав авалхи йӑлапа уҫукра пусас выҫӑхсенҫен каҫару ыйтас, унтан йӑпатас йӑла тухса кайнӑ. Парнене пуссан ун тирпе уҫук хӳмисем ҫине йе уйрӑм каштасем ҫине ҫакса хунӑ, апне пысӑк хурансенҫе пӗҫерме тытӑннӑ. Уҫук пӑтти пиҫҫен —кӗлӗ тытӑннӑ: кӗлтунӑ ҫух пурте хӗвелтухӑҫнелле ҫавӑрӑнса пӑхса тӑнӑ, ҫӗлӗкӗсене сулахай хулпуҫҫи айӗнҫе тытса тӑнӑ, кӗлӗ сӑмахӗсене уҫук пуҫӗ каласа пынӑ, ун ҫумӗнҫи ватӑсем ҫав сӑмахсене ун хыҫҫӑн тепӗр хут каласа пынӑ. Ҫав кӗлӗсем авалран йӑхран йӑха куҫҫа пынӑ, ҫав кӗлӗсенҫе халӗ ӑнланмалла мар сӑмахсем асӑпӑнаҫҫӗ, тӗрлӗ авалхи йатсем асӑнӑнаҫҫӗ, ҫав йатсем хушшинҫе Пӑлхари, унтан Хусан патшисен йаҫӗсем, унтан вырӑнти авалхи ҫӑваш кнеҫӗсен, тӗрлӗ „хуҫасен“ йаҫӗсем асӑнӑнаҫҫӗ. Ҫав кӗлӗсенҫе ҫӑвашшем тырпул, выҫӑх, аҫапӑҫа йышлӑ пултӑр тесе кӗлтунӑ, унтан хуйхӑсуйхӑ, ҫирҫӗр, тӗрлӗ асап сирӗлтӗр тесе кӗлтунӑ. Кӗлӗ пӗтсен мӗн пӗҫернӗ йапалана валеҫсе халӑхпа ҫинӗ, валеҫес уммӗн турӑсен йаҫӗпе уйрӑм пай кӑларса ӑпа ҫунтарнӑ, унтан уйрӑм пай кайӑк-ҫакак валли кӑларса ӑна айаккарах ывӑтнӑ. Уҫук пӑттине ҫисе йарсан халӑхпа сӑра ӗҫнӗ, ҫав сара пысӑк пиҫӗкесемпе касмӑксенҫе пулнӑ. Уҫук тунӑ ҫух ҫамрӑксем йурлапӑ, ташланӑ, выҫанӑ, кӗрешнӗ.

Халӑхпа тӑвакан уҫуксенҫен пуҫне—кашни ӑру, кашни ҫемйе килте уйрӑм ҫӳксем тунӑ. Ҫав ҫӳксене карташӗнҫе уйрӑм ӳсекен ҫӳк йӑвӑҫӗ патӗнҫе тунӑ. Ҫӳк йӗрки уҫук йӗрки некех пулнӑ. Килти ҫӳксене ҫулталӑкра темиҫе хут тунӑ, ҫав ҫӳксенҫен паллӑраххисем: авӑн пӑтти, ҫӗнӗ ҫакӑр, ҫӗнӗ сӑра, ҫӗнӗ пыл пӑттисем тата тӗрлӗ урӑх ҫӳксемпе ҫӳклемесем; унтан ҫав ҫӳксене ҫемйере ҫир пулсан, выҫӑх ҫирлесен ытти тӗрлӗ сийен пулсан тунӑ. Пӳртре кӗлтунӑ ҫух ҫӑвашшем алӑк йенне тӑрсе, кӑшт алӑка уҫса кӗлтунӑ, ҫак йӑла авал ҫӑвашшем хӳшӗсенҫе пурӑннӑ саманаран йулнӑ пулмалла.

Авалхи ҫӑвашшен тӗнӗпе ӗненӗвӗсем ытларах та виттӗр вӗсем вилӗм ҫине йепле пӑхнинҫен паллӑраҫҫӗ. Ҫӑваш-

шен шухăшĕпе етем вилсен те сывă ђухнехи пекех пурăнат. Етем вилсен ăна тирпейлес йĕрке çапла пулнă: çын вилме тапратсан кантăк çине шыв лартнă, çав вилекен çыннăн ђунĕ леш тĕнђене тасалса пымаллине пĕлтернĕ. çав шыва çын вилсен ун ўтне çăвас уммĕн ун çине тăкнă. Çын нумайђђен вилеймесĕр асаплансан, сăра пиђĕки пуçланă—вăл çын ђунĕ сăра пуçламасăр кайаймасăр мар турткаланса тăнине пĕлтернĕ. Çын вилсен пўртри пур йапаласене те тула илсе тухнă, çав йапаласем етеме есрейлĕ касвă ђух йунланнă тенĕ. Унтан çемйери йе ăрури пĕр хĕрарăм килти пĕр ђăхха тытса, ун пуçне татса хапха урлă урама ывăтнă, ăна çапла каласа ывăтнă: сан ђунна çак ђăхă çаватса кайтăр. Çак йала ђăвашшем вилнĕ çын ђунĕ килтен каймасăр йулассинђен хăранине пĕлтернĕ. Вилĕ ўте çумалли шыва илнĕ ђух шыв çине укçа йанă, çип йанă, унтан пуртă йанă; укçа йани шыва сутăн илнине, парăма йулманнине пĕлтернĕ, çапла майпа ђăвашшем килре урăх вилĕм пуласран хăтăлма тăрăшнă; çип йани вилнĕ çыннăн типпĕ пырне шыв çип тăрăх йухтăр тенине пĕлтернĕ, пуртă йани шыв çумне усал сывлăшшем ан çыпçăнђăр тенине пĕлтернĕ. Вилĕ ўте сулахай алăпа, алла пирпе ђĕркесе çунă, çав пĕр йенђен ђăвашшем вилĕ ўте алăпа тиме хăранине, тепĕр йенђен ђир йересрен сыхланнине пĕлтернĕ. Ўте çуса тасатсан—вилĕ çăварне йе укçа йе пухрат йе хаклă ђул хунă. хăххи, сăмсп, куçĕ çине пурçăн çип çыххи хунă. çакна çапла каласа тунă: леш тĕнђере санран „сан хыççăн тата кам шатăка килетха" тесе ыйтсан есĕ кала: хăлхамсем илтмен, куçăмсем курман, сăмсам шăршласа сисмен. Тупăк тума тытăнсан, тупăкçă ĕçе çапла калса тытăннă: ку ĕç витĕмлĕ ан пултăр. Çаксем пурте ђăвашшем çапла майпа тата вилĕ пулассинђен хăтăлас тенине пĕлтернĕ. Вилĕпе пĕрле тупăка ђăвашшем вилнĕ çын йуратнă йапалисене хунă: шĕшлĕ, ђĕлĕм. укçа ытти йапалине те. Халлапсенђен тĕп авал ђăвашшем вилĕпе пĕрле йуратнă лашисене, урăх ђĕрĕ ђунсене пытарни те паллă. Вилнĕ çынна пўртрен илсе тухиђђен икĕ хут асăннă: тупăк тунă ђух пулнă турпассем çине шыва сăпăх йурса тунă шĕвĕ ђустана хăйăпа иле иле пăрахнă. унтан çын ўтне тупăка хунă ђух хаймалу папалавĕсем пĕçерсе вĕсене ђашкă çине тĕпретсе хунă, çав ђашка вилнĕ çын пуçĕ вĕçне лартнă, ун пуçне йăвăç ђилекпе шыв лартнă. асăннă ђух асăнакансем вилнĕ çынна „умăнта пултăр" тенĕ Тупăка пўртрен илсе тухнă ђух— ăна алăк патĕнђе силлесе виçĕ хутђен алăк тунине перĕнтернĕ, çакна ђăвашшем вилĕпе пĕрле хĕртсурт тухса ан тартăр, унтан вилнĕ çын кайалла таврăнма ан шухăшлатăр тесе тунă. Тупăка урапа йе çуна çине хурса, тупăк çине ăлавçине лартса илсе тухса кайнă. Тупăкпа пĕрле уйрăм ăлав çинђе вилнĕ çын йапалисене, ăва çунă ђух ун айне хунă улăма, унтан йăвăç хуппине илсе тухса йал тулашне ывăтнă. Ђăвашшен шухăшĕпе вилнĕ çын масар çинђен тухса çўренĕ ђух çав йă-

вăç хуппи çинҫе ларса çÿренĕ. Тупăка пытарас уммĕн шăтăка укçа пăрахнă, вăл вилнĕ çын валли масарти вырăна сутăн илнине пĕлтернĕ. Авалхи çынсен шухăшĕпе масар çинҫе вилнĕ çынсем хăйсем уйрăм йĕркепе пурăннă: масарăн пуçлăхĕ хуçи пулнă, вăл малтан пытарăннă çын пулнă, масарăн уйрăм тÿре сутйе пулнă. унтан масарăн хуралçи пулнă. масар хуçи хушмасан нийепле вилнĕ çын ҫунĕ те масар çинҫен тухма пултараймаст тенĕ. Шăтăк алтакансем шăтăк алтма пуçличчен масар çинҫе çав масар пуçлăхĕсене çăкăрпа, унтан ҫăкăтпа асăннă: вĕсене тĕпретсе çĕр çине „çĕр ашшĕ, çĕр амăшĕ, çак масар тытки (пуçĕ, пуçлăхĕ) епĕр пиллени сирĕн умра пултăр" тесе пăрахнă. Пытарас уммĕн вилнĕ çыннăн çăпата кантăрисене кĕпейĕм çыххисене салтса пытарнă, çапла майпа вăл пытаракансем хыççăн сиксе тăрса хăвалаймĕ тенĕ; пытарсан шăтăк çине хăма, йупа, йупа çине çурта лартаççĕ те пытарнă çынна пашалупа васкаса асăнса масар çинҫен хăвăртрах таврăнаççĕ. Масар çинҫен таврăнсан çунапа урапана карташне илсе кĕмеççĕ, вĕсем çинҫе малтан вилнĕ тăвансем ларса килсе таврăнасран хăраççĕ. Унтан пытарса таврăнсан мунҫа кĕрсе тасалаççĕ те асăнса апат çийеççĕ; асăннă ҫух вилнĕ çын йаҫĕпе кĕтессе уйрăм çурта вилнĕ çынна асăнса лартаççĕ: çурта çутă çунсан вилнĕ çынна леш тĕнҫере лайăх, савăнăçлă теççĕ, çурта шăранса тумласан вăл хуйхăрса йĕрет теççĕ. Апат çисен пытаракансене каснă çип çыххинҫен вишшер çип туртса кăларттараççĕ: çав çипсем тăрăх ҫăвашшен шухăшĕпе вилнĕ çын ҫунĕ тамăкран райа кайма пултарнă. Унтан вилнĕ çынна 3-мĕш кунĕ, 7-мĕш куңĕ сурăх пусса асăнаççĕ, асăннă ҫух çимĕçĕн пĕр пайне вилнĕ çын йаҫĕпе хапха урлă ывăтаççĕ; унтан ăна йупа уйăхĕнҫи ваттисене асăнмалли вăхăҫҫен кашни кĕçнернире асăнаççĕ. Йупа уйăхĕнҫи аслă пумилкке питĕ ҫаплă пулат, çак вăхăтра авăрлама, йурлама, ташлама, мăшкăллашша кулма йурамаст тенĕ; пумилккеҫҫен икĕ кун малтан сăра лартса вилнĕ çынна ăслапа асăннă, пумилкке кунĕ лаша. ĕне, сурăх, ҫăхă пусса пысăк ĕçкĕ тунă. Ĕçкĕ тапраниччен йăвăç йупаран çын кĕлетки тунă, унтан хăмаран пĕҫĕк, сĕтелпе пÿрт кĕлетки тунă. Хăнасем пухăнсан çав йупана пÿрте илсе кĕнĕ, ун çине çурта лартнă, çумне сăкманпа çĕлĕк хунă, унтан витрепе ҫашкă тата çимĕç тулли сĕтел лартнă. Асăнса ĕççе çинĕ ҫух кашни асăнакан çимĕçĕн пĕр пайне йупа çумĕнҫи витрене ҫашка „сан умăнта пултăр" тесе йанă. Асăннă ҫух пурте йурланă, купăс калăнă, ташланă, ташласа пĕтĕрсен йупа патне пырса тайăлса „сан умăнта пултăр" тенĕ. Тепĕр кунĕ çав йупана, сĕтеле, пÿрт кĕлеткине. ҫашкăпа витрене масар çине леççе вилнĕ çын шăтăкĕ çине хунă. Çавăнпа та çак вăхăта ҫăвашшем йупа уйăхĕ тенĕ. Йупана масар çине леçнĕ каçпа вилĕ пулнă киле пĕтĕм йалĕ пухăнса вилнĕ çынна асăнат. Унтан пĕрик кунтан вилнĕ çынна унăн çемйи вăл уйрăлса ытти авалхи вилĕсемпе пĕр-

лешше пуранмаллине асанса иртереççĕ, çак ерне тухиа ђух тата тепĕр хут вилнĕ çынна çĕнĕ сарапа асанса ĕçеççĕ. Пур вилĕсене те. ытларах та ватăсене ђăвашшем çулталăк тăртĕпе 4 хут асанаççĕ: кĕркунне ĕççене майласан. йĕтем уйăхĕн малтанхи кĕçнернире ваттисен йађĕпе автан сăри тăваççĕ; йупа уйăхĕн малтанхи кĕçнернире ваттисене ђăхă пусса асанаççĕ; çуркуннепе мункун уммĕн кĕçнернире, вырăс тĕнне йышăнна ђăвашшем мункунтан тепĕр кунне ваттисене ђаплă асанаççĕ: урамсене тухса улăм, хурăн хуппи, çăпатасем çунтараççĕ, унта ĕçкĕçикĕ асанса тăкаççĕ, ваттисен ђунĕсене вут патне пырса ăшăнма ђĕнеççĕ, унтан килтен киле çурта çутса сăра ĕççе çӳреççĕ, çавăнпа çак асанăва авалран çурта кунĕ тенĕ; çула пулсан çимĕк праçникĕнђе ваттисене килте те, масар çине кайса та ĕçкĕçикĕпе асанаççĕ.

Çапла авалхи ђăвашшен тĕнпе ĕненӳсен йĕркинђе леш тĕнђери пурăнăçа ĕненни, унта етемсем çĕр çинђи пекех пурăннине ĕненни, унтан вилнĕ ватăсене питĕ хисеп туни ытла вăйлă палăрса тăрат.

Çапла турăсене, тĕрлĕ сывлăштене парне парса, кĕлтуса çырлахтарнинђен пуçне ђăвашшем вĕсене уйрăм ăспа калана сăмахсемпе çырлахтарассине ĕненнĕ, çак сăмахпа çырлахтарас йĕркерен кайарахпа кĕлĕсен йерки те тухса кайнă. Çак сăмахпа турăсене çырлахтарас, усал сывлăшшенс сăмахпа хăратас йĕрке пур халăхсен те пулнă, ăна ăслăлăх шаманисăм тет (шаман— çак йĕркене пĕлекен ăста). Шаманисăм йĕрки ђавашшен йумăçĕсенђен палăрса тăрат: ђăвашшен шухăшĕпе йумăçă хăйĕн темĕнле ăнламалла мар сăмахсене каласа усал сывлăшшене хăратма, вĕсене етем тавраш̆ĕнђен сирме, ырă сывлăшшен кăмăлне тупма пултарнă; çавăнпа йумăçăсем авал пур уђуксен, ђӳксен, ђӳклемесен пуçĕнђе тăнă, унтан çынсем йумăççем мĕн пулнине, малалла мĕн пулассине пĕлеççĕ тенĕ, çавăнпа вĕсем пурăнăçра мĕлле те пулин усал йе сийен пулсан йумăçран вăл мĕншĕн пулнине унтан çав усалпа сийене йепле сирмеллине йаланса ыйтмалла пулнă. Ытларах та йумаççене халăх ђир пуссан йалăнмалла пулнă: ђире сирме йумăççене хăйне уйрăм йĕрке пулнă: çав йĕркере ђи малтан „йумăç пăхни" тăнă—вăл укçа, шыв, çăкăр ытти йапала çине пăхса йумăç хăй курман та илтмен те йапалана тĕрĕсрен тĕплесе пĕлнине пĕлтернĕ; йумăç кĕлли—вăл кашни йумăça хăй çеç пĕлекен ахаљ çынсем ăнламалла мар кĕлĕсем, тĕрлĕ сăмахсем каланине, çав сăмахсене каланă ђух ухнине, вĕрнине, сурнине, йулашки ĕмĕрсенђе сăхсăхнине те пĕлтернĕ, çав ухас, вĕрес, çурас, сахсăхас йĕрке усала харатса хăваланине пĕлтернĕ. Йумăçăсем авал тĕттĕм халăха питĕ хăратса пăхăнтарса пурăнна. Унтан ђавашшем уйрăм хăватлă çынсем темĕн тума та пултарна тенĕ: куçпума, пĕр йапаларан тепĕр йапала тума, çутçанталăк хăвађĕсене пăхăнтарма пултарнă тенĕ, вĕсем çил, шыв, тимĕр ытти хăватсемпе йапаласен ђĕлхине пĕ-

леççӗ тенӗ çавӑн пек çынсене асамçӑсем тенӗ. Çак ӗненӳпе тухатас йӗркепе тухатмӑшшене ӗненни çыхӑнса тӑнӑ: тухатни уйрӑм өтемсем усал сывлӑшшемпе пӗрлешше ытти çынсене усал сывлӑшшем ҫухлӗ сийен кӳме пултарнине пӗлтернӗ. Çапла нумайӗшӗ ҫӑвашшем йумӑçӑсене, асамçӑсене, тухатмӑшшене ӗненни вӗсем халиҫҫенех шаманисӑм сӗрӗмӗнҫен урӑлайманнине пӗлтерет.

Малта кӑтартнӑ тӗн йӗркипе ҫӑвашшем тӗп авалран пурӑннӑ, халӗ те çав йӗркепе ҫӑвашшенҫен пӗр проҫҫӑн ытла пурӑнаҭ. Çав тӗне ҫӑвашшем авалран ҫӑн ҫӑваш тӗнӗ тенӗ. XVIII-мӗш ӗмӗртен пуçласа ҫӑвашшене ирӗксӗр христиансен тӗнне йышӑнтарнӑ, çав тӗне ҫӑвашшем вырӑс тӗнӗ тенӗ, халӗ те шыва кӗнӗ ҫӑвашшене ҫӑн ҫӑвашшем вырӑссем теççӗ. Малтан ҫӑвашшем пурте христианлӑ тӗне питӗ хирӗç пулнӑ: йалсене ҫиукӳ лартма паман, вӗсен тунӑ хвунтамӗнҫӗсене салатса ыватнӑ, хатӗрленӗ йавӑçа çӗрле айакка леççе пытарнӑ. Ҫӑвашшен хушшинҫе авал ҫиркӳ лартас вырӑна ӳсӗр çынна ҫӗррӗн ирӗксӗр шӑтӑка ҫиксе пытараççӗ тенӗ. Авал ҫӑвашшем ҫиркӗве пурӑнӑçра пӗрик хут çеç пынӑ. Ҫиркӗве çӳреме, кӗлӗсем тума, типӗ тытма, çылӑх каçарттарма ҫӑвашшене ирӗксӗр вӗрентнӗ. 30-40 çул çеç кайа ҫӑвашшем турӑшшене миççионерсемпе пупсене куланаҭ тӳлеме хушакан кӗлеткесен вырӑнне хунӑ, ҫӳксем тунӑ ҫух турӑш сӑнӗсен кӗлеткисен куçӗсене шӑтарса вӗсене кутӑн çаварса хунӑ. Пыра киле нумайӗшӗ турӑшшене авалхи итӑлсен вырӑнне хурса пурӑнӑç ҫипер пынӑ ҫух вӗсене хисеплесе кӗлтунӑ, пурӑнӑç хирӗççе пынӑ ҫух пӳртрен илсе тухса çаптарнӑ. Халӗ те халӑх хушшинҫе авалхи ҫӑваш тӗнӗпе вырӑс тӗнӗ пӑтранса тараҭ: ҫӑвашшем ҫиркӗве те çӳрекелеççӗ, ҫӳксем те тӑваççӗ, авалхи праçниксене те уйавлаççӗ, христианлӑ праçниксене те хунӑ йӗркепе иртерççӗ. пӗр çынсем пӗр вӑхӑтрах йумçӑсем патне те çӳреççӗ, Ишек турӑшӗ патне те ҫуптараççӗ. Çапла икӗ çӗр çултанпа шыва кӗнӗ ҫӑвашшен хушшинҫе те авалхи тӗн, кулҫт, ӗненӳсен йӗркисем халиҫҫенех нумай паллӑ улӑшӑнман, тӗплӗрен вӗсем улӑшӑнма та пултарайман, мӗншӗн тесен вӗсемпе христианлӑ тӗн, кулҫт, ӗненӳсен хушшинҫе уйрӑмӗ те сахал пулнӑ, çав уйрӑм нумай пулма та пултарайман: тӗн пӗлӳçисем кӑтартнӑ тӑрӑх—ҫӑваш тӗнӗ те тӗп авал шаманисӑм йӗркинҫен пуçланса кайса пин çул ытларанпа нумай йенҫен иутейсенпе ислам тӗнӗсен йӗркипе йӑлисене йышӑннӑ. Çавӑнпа ҫӑвашшем христианлӑ тӗн, кулҫт, ӗненӳсене йышӑнкалани вӗсен авалхи тӗн йӗрки тулаш йенҫен кӑшт çеç улӑшӑннине пӗлтернӗ. Ҫӑнахах та малта епӗр авалхи ҫӑвашшем аçалӑамалӑ çӳлти Мӑн Турра ӗненнине, пирӗштисене, есрейле, ырӑсене (çветтуйсене), тӗрлӗ усал сывлӑшшене (шуйттансене) ӗненнине кӑтартрӑмӑр, вӗсен кӗлтума, пуççапма, çурта çутса, парнесем кӳрсе турӑсене çырлахтармалли йӗркесем пулнине кӑтартрӑмӑр, вӗсен вилнӗ ватӑсене хисеплесе, асӑн-

малли йаласене, тĕрлĕ тĕн праçникĕсене иртермелли йаласене кăтартрăмăр, анђах тĕпрен пăхсан çав малта кăтартнă тĕн йĕрки вырăс православлă тĕн йĕрки çумне пĕтĕмпех, пăђах çыпăççа тарат: вĕсен уйрамĕ ытларах тĕн йапалисен йађĕсем пĕр пĕрипне танлаштарсан урăхларахчинђен, унтан тата тĕн йăлисем нумайĕшĕ кăпт урăхларахчинђен килет, анђах вĕсен иккĕшĕн те пĕр тымар, пĕр никĕс: çав никĕс вĕсем шаманисăм сĕрĕмĕнђен халиђђенех уйăралайманнине, унтан нумай турăсене етем йевĕрлĕ туса ĕненнине виттĕр кăтартса тарат.

Йулашкинђен пирĕн тĕнлĕ пурăнăç синђен çакна калас пулат: тĕн йĕрки пур халăхсен те тĕп авалран пуçланса кайнă. Тĕн пуçламăшĕн ђăн сăлтавĕ тĕнђере пур пулакан йапалана ăнлама етемĕн ăсĕ, унтăн пĕлни çитейменнинђен килкĕ. Авалхи етемĕн пурăнăçĕ питĕ йăвăр пулнă: пурăнăçа тирпейлĕ тума унăн орутисем нађар пулнă, машшинă тавраш пулман, çавăнпа хуçалăх йĕрки те ђухăн пулнă, етем çав самана выçăлăтутăлă, çаттаçарамас, килсĕрçуртсăр пурăннă: ун йĕритавра хайар кайăксем ытти тĕрлĕ усал тăшмансем пулнă; çапла мелсĕр, тирпейсĕр пурăнакан етемпĕн çĕршывпа çутçанталăк хăвађĕсем те йаланах питĕ хăрушă сийенлĕ пулнă: сивĕпе ăшăпа, кĕтмен çĕртен тулакан шывшур стихийĕпе ытти хăватсемпе кĕрешме вăл пĕлеймен. Çав вăхăтрах ун йĕритавра кунĕнçĕрĕн хисепсĕр нумай ăнланмалла мар йапаласем пулнă: пĕлĕт синђе тĕнђене ђĕтретсе аслати авăтнă, йаланах çĕр çине аçа çапнă, çав çапни çĕр синђи йапаласене вут хыптарнă, хăш ђухне выђăхсене те, çынсене те вĕлерсе пăрахнă, хĕвел, уйăх, çăлтăрсем пĕлĕт синђе вăхăђĕпе курăнса, вăхăђĕпе пытанса шуса çÿренĕ; çав вăхăтрах тата етем хăй пурăнăçĕнђе те нумай ăнлаймин йапаласем курнă: çывăрма выртсан вăл ђасах хăрушă тĕлĕксем курнă, тĕлĕксенђе вăл хăй нумай малтан вĕлернĕ тăшмансене йе хăйех пытарнă тăванĕсене курнă, йаланах вăл хăйĕн тăванĕсем ђирленине, вилнине, вĕсем асапланнине курнă. Çав пур курнă йапалана етем ăнласа илме пултарайман. Çапла ăнлайманнипе вăл пур тĕнђери йапала та: ÿсетăрансем, ђулсем, шывсем, çил, хĕвел, уйăх ытти йапаласем те хăй пекех ђĕрĕ ђунлă пулĕ тенĕ. Çав йапаласенђен нумайĕшĕ хăватлă пулнă, етеме усă та, сийен те кÿме пултарнă, çакна курађ етем ирĕксĕр вĕсене ђунĕпе пăхăнса хисеплесе пурăнма тытăннă. Çапла майпа тĕн пуçланса кайнă. Хађхи култтурлă халăхсен пур тĕнĕсем те çак йĕркепех пулса тăнă, вĕсем те çав урапа синђех лараççĕ. Пур тĕнсем те хăйсем каланине шухăпламасăр, тĕпђемесĕр, тĕплесе пĕлмесĕр ĕненме хушаççĕ. Анђах авалран çакна хирĕç тепĕр йĕрке пырат—вăл ăслăлăх пулат. Ăслăлăх тĕплесе пĕлмесĕр нимĕне те ĕненме хушмаст, хăй те вăл нимĕне те ĕненмест: пур йапалана мĕншĕн пулнине виттĕр пĕлме тăрăшат. Çапла майпа пирĕн ĕмĕрте ăслăлăх пур ĕлĕк турăсен выранне хисепленнĕ хăватсем мĕншĕн, унтан йепле

пулнине тĕрĕсрен пĕлсе çитрĕ. нумайăшне çав хăватсене вăл хăй аллине те илђе. çапла авалран пур етемсене хăратса тăнă аслатипе çиçĕме кӳлсе хăйне усă кӳртерттерме тытăнђĕ (електрă вăйĕ). Пур тĕнђери йапала та тура хăвађĕпе пулат̆ тенĕ вырăнне ăслăлăх çав пур йапала та çутçанталăкăн пĕр саккунĕпе пулат̆ тет: çав саккуна вăл кулленкун пĕлсе çитет. кулленкун тĕлĕнмелли йапаласем кăларат̆, ĕлĕк ăнлайман йапаласене ăнлантарат̆. виттĕр кăтартат̆. ĕненӳсен сĕрĕмне салатса сирет. Çапла тĕн, куђт. ĕненӳсен сĕрĕмĕнђен етемсене те, халăхсене те ăслăлăх çеç хăтарат̆. Çавăнпа авалран ђунĕпе, шухăшĕпе, тĕлĕкĕпе аташпа пурăннă ђăваш халăхĕ ултавлă ĕненӳсенђен хăтăлтăр тесен—ăна йепле те пулин ăслăлăх картишне кӳртес пулат̆. Халăха ăслăлăх картишне илсе пыракан кĕперĕн ђи малта тăракан тĕп йуписем ђăваш кĕнекипе ђăваш шкулĕ. Çав кĕнекепе шкул ырлăхĕпе ђăваш хура халăхĕ малашне тĕн ђуралăхĕнђен ирĕке тухĕ, тĕттĕм ĕненӳсен вырăнне çутă пĕлӳсем йышăнĕ.

ТУПМАЛЛИ.

I. **Тăван çĕршыв.**

Стр

Тĕнҫе, çĕр ҫăмăрĕ . . . 3
Раççей, Ҫăваш Оплăçĕ . . . 4
Территори, ҫикĕсем, кўршĕ çĕрсем . . . 5
Çĕр çийĕ . . . 10
Çĕр сийĕсем . . . —
Тăпрасем . . . 17
Шывшур . . . 18
Климăт . . . 20
Ўсетăран тĕнҫе . . . 22
Ҫĕрҫунлă тĕнҫе . . . 24
Çĕр айĕнҫи пурлăхсем . . . 25

II. **Халăх пурлăхĕ.**

Йалхуçалăхĕ . . . 29
Промăшлĕнăç . . . 46
Транспорт . . . 66
Çыхă (çвеç) . . . 70
Сутилў . . . 73
Кооператси . . . 78

III. **Халăх, унăн култтурĕ, пурăнăç сăнĕ, йăлисем.**

Пирĕн çĕршывăн тĕп халăхĕсем . . . 84
Пирĕн çĕрте халĕ пурăнакан йут халăхсем . . . 88
Пирĕн ăру . . . 96
Ҫăваш аваллăхĕ . . . 98
Ҫăвашшен ўт вăйĕ, ҫун халĕ . . . 120
Ҫăваш шкулĕ, халăх çутăланăвĕ . . . 125
Ҫĕхле, çыру, халăх сăмахĕ . . . 138
Пирĕн илемĕш . . . 146
Ҫăваш ăслăлăхĕ . . . 151

IV. **Килти пурăнăç. йăласем. ĕненўсем.**

Килçурт . . . 159
Тĕн, култ, ĕненўсем . . . 169

ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

В складе Чувашского Отделения Государственного Издательства на чувашском языке имеются следующие книги:

1. **А. Михайлов.** Сайра Майаксем (Политтикӑ пукварӗ).
2. Йумахсемпе Калавсем.
3. **П. Иванов.** Руководство к ведению первоначальных уроков русского языка в чувашских начальных школах.
4. Йалти шкулсенҭе малтанхи ҫул вӗренмелли Сатаҭ Кӗнеки.
5. Йалти шкулсенҭе иҫӗмӗш ҫулта вӗренмелли Сатаҭ Кӗнеки.
6. Йалти шкулсенҭе виҫӗмӗш ҫулта вӗренмелли Сатаҭ Кӗнеки.
7. **А. Е. Ефремов.** Траххом—ҭӑваш, чирӗ.
8. **А. Йевҫихнейӗв.** Ҫӗр котексин нихӗсӗсем.
9. **В.** Лункевӗҭ. Аслатипе Ҫиҫӗм.
10. РХСК Респупликки Ҫӗр котекси.
11. **К. Йакотовски.** Етем ӳгпӗвӗ, малтанхи шкулра вӗренмелли кӗнеке.
12. **Йуман.** Ахтономлӑ Ҭӑваш Облаҫӗ, (Родиноведение).
13. **М. П. Петров.** Правила чувашского правописания.
14. **Е. Д. Тимофеева.** Ҫулпуҫӗ (Букварь).
15. Календарь на 1924 год.
16. Пуквар хыҫҫӑн вуламалли 1-мӗш кӗнеке «Ҫутталӑ».

Печатаются на чувашском языке:

1. **Н. Ванерке.** Ҫитеннисене хута вӗрентмелли кӗнеке „Хресҭен Пуквар"
2. Грамматика чувашского языка.
3. Геометрия для школы 1 ст., 2-ая часть.
4. Русская история М. Н. Покровского.
5. Общая география.
6. География Р.С.Ф.С.Р.
7. Природоведение Трояновского.
8. К. Хламмарион. Астрономи кӗнеки.

Готовятся к печати: 1) Чувашско-русский словарь и 2) История чувашского народа.

С требованиями обращаться по адресу:

гор. Чебоксары Ч. А. О. ГОСИЗДАТ.

Оптовым покупателям делается скидка.